84
С43
24807-чув

Юрий Скворцов

Сăваплă вут

И 84
С 43

Юрий Скворцов

СĂВАПЛĂ ВУТ

Повеҫсем

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1982

84.3Чув
С43

ПРОВЕРЕНО
20 10 21 СЕН 2017

24807 – чув

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

Кĕненекене Аркадий Илларионович
Скворцов пухса хатĕрленĕ

Скворцов Ю. И.

С 43 Сăваплă вут: Повеçсем.—Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1982. 272 с., ц. 1 р. 10 коп.

Ку кĕнеке чăвашсен паллă писателĕ Ю. Скворцов çуралнăранпа 50 çул (1932—1982 çç.) çитнĕ май тухать. Унта «Хĕрлĕ măкăнь», «Сăваплă вут» повеçсем кĕнĕ.

84.3Чув.

С $\frac{0733-038}{М136(03)-82}$ 74—82 4702650000

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1982 ç.

Хĕрлĕ мăкăнь

ПĔРРЕМĔШ СЫПАК

Хĕрача хире тухрĕ. Вăл кĕр-çур тăхăнмалли хура пальтопа. Каялла çавăрса çыхнă шурă шел тутăр вĕçĕсене пальто айне янă. Виçеллĕ пальто хĕрачан çинçе кĕлеткине çăт тытать. Хĕрача, шухăша ӳксе, ерипе утать. Унăн йĕпкĕн кăвак куçĕ кун пек чух питĕ инçете пăхнăн туйăнать. Ури айĕнче малтанхи шăн кăчăртатса авăнать. Хăрах питçăмартине çурçĕр енчен вĕрекен сивĕ çил çапса чĕпĕтет, çатăрах сăхать. Ку вăл юр та мар, пăр та мар — кĕрхи «кĕрпе» çăвать. Хушшăн-хушшăн чечек çеçки евĕрлĕ юр пĕрчисем те ӳккелеççĕ.

Хĕрача питне аллипе хупласа та пăхрĕ, анчах тепĕр авăкран тутăр хĕррине те хăлха хыçне сирсе хучĕ, пуç тӳпинчен ĕнсе çинелле шутарчĕ, вара, çиле хирĕç çаврăнса, пуçне çĕклесе, янкарлăн курăнакан пĕлĕт хĕрринелле тинкерчĕ.

Пĕлĕт хĕрри тип тĕтре пек хура хăмăртарах. Çав енчен каç пулса килет... Сулахай енчи улăп тăпри пек мăкăр сăрт çинче çаралнă пĕчĕк вăрман ларать. Вăл кăвакрах сăрă тĕслĕ çеç. Хăйне хăех çĕтĕлекен хир сысни шăртне тăратса янă майлăрах. Çул хĕрринче кая юлса пулнă пиçен мамăкĕ, кĕрхи çумăрпа исленсе кĕççеленнĕскер, кăштăртатать. Пĕр хытхура тунипчен пăрçа уламĕ çакланса ларнă та çатăлтатать, çатăлтатать — вĕçерĕнеймест.

Хура тăпра муклашки айĕнчен хир шăшийĕ вĕтĕртеттерсе чупса тухрĕ те, хăй умĕнче çын пуррине асăрхаса, каялла çаврăнчĕ, хăй тухнă муклашка айнех чăмрĕ.

Тен, вăл кунта пасăртанпах çул пушанасса кĕтет-тĕр. Килте çурисем кĕтеççĕ пулĕ.

Хĕрача, хĕрхенсе, шăши кĕрсе кайнă çĕрелле пăхса тăчĕ те апа урлах улăха анчĕ.

Тăм ӳкнипе хуралса кайнă йăмра çулçисем хушшинче пĕр кĕтӳ çул кайăкĕ чĕмпĕлтеттерсе ларчĕ, самантран вăл, темĕн чухлĕ çăраççи çыххипе чанкăртаттарнă пек кĕвĕсĕр янăрашса, тепĕр йывăç çине вĕçсе кайрĕ.

Пĕчĕк çырмари шыв — çĕве шывĕ тĕслĕрех. Çил каскас сасартăк вĕрсе ярать те, шыв пичĕ çиййĕн — хура мĕлке шунă пек — вĕтĕ-вĕтĕ хумсем ĕрĕхсе иртеççĕ, йăс çĕкленсе юлать. Çыр хĕрринче тип сӳсен-шурути тайăлса вашкăрать.

Хĕрача çак кĕрхи сăн çине пăшăрханса пăхать. Вăл пуçне çилтен пăрмасть. Унăн вĕри пичĕпе тути çинче пилĕк кĕтеслĕ, ултă кĕтеслĕ, сакăр кĕтеслĕ çăлтăр евĕрлĕ юр пĕрчисем ирĕлеççĕ...

...Кăçалччен çут тĕнче питĕ урăхлаччĕ... Çулталăкăн кирек хăш кунĕнче те ĕрĕхтерсе, сиккелесе çеç çӳрес килетчĕ. Кирек хăш йывăç çине те хăпарса кайса кăшкăрас, куккук пек авăтас килетчĕ. Кĕр кунĕсемпе хĕвелсĕр кунсем те ун чухне тĕнчене салху сăн кĕртместчĕç.

Кăçал çуркуннереппе вара çутçанталăк улшăна пуçларĕ. Малтан хаваслăхпа савăнăç кăпа кӳнĕ çав чечексенчех, çав йывăç-курăкрах темĕнле эрлĕклĕ япала пур пек...

Çулсеренех çуркунне пулатчĕ, вĕсем ытарайми ырă та хаваслăччĕ. Кăçалхи çуркунне вара ырринчен ытларах темле ăнланма хĕн туйăмсем илсе килчĕ...

...Хурлă юрăсем аса килеççĕ. Чĕрене темĕн çитмен пек туйăнать, ним сăлтавсăрах ăш вăркаса тăрать... Малтан Тамара хурлă юрăсене кураймастчĕ, вĕсем çынсене епле килĕшнинчен те тĕлĕнетчĕ. Халь мĕн пулчĕ-ха вара? Темскер çухалнă чунран, çав вăхăтрах тем хушăннă. Çухаласса темĕнле ачалăх юмахлăхĕ-и е чунри темскер, пĕр татăкĕ, пур япалана та хăйне евĕр тĕс парса тăраканни, çухалнă пулмалла. Çавна май мĕнпур япаларан тем тарнă.

Çав çухалнă япалана шыраса, Тамара çаран-улăх тăрăх, вăрман-ката тăрăх çӳрет; йывăç-курăка, чечексене, çулçăсене мĕнпур тимпе тĕсесе сăнать; кайăк юррисене итлет.

...Чăнах та, тем çĕтнĕ, çухалнă, тарнă вĕсенчен... Улăх-çаранта, уй-хирте те вăрманта, садра кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, темле курăк шăтман пек, шăтнă пулсан, темле тĕсне шыраса тупайман пек туйăнать; темле кайăк кăнтăртан каялла таврăнман пек те, таврăннă пулсан, юрринчен пĕр-пĕр илемлĕ авăкне манса е çухатса хăварнă пек.

Çав чунран çухалнă тем япала, пачах ятсăрскер, анчах ырă та хавас кăмăл кӳрекенскер, тен, таçта курман-илтмен япаласенче сыхланса юлнă-тăр. Ăçта вăл, мĕнре?

Вăл, çĕр çинче малтан пулнăскер, халĕ те ăçта та пулин упранатех ĕнтĕ. Мĕнре те пулин пурах вăл! Тен, тытма хушман япаласенче? Тума юраман ĕçсенче?

Çакнашкал улшăну çын ӳсĕмĕнче пулмаллах пулсан, вăл Тамарăн кăна мар, ытти тантăшсен те сисĕнмелле пек. Анчах вĕсем йăлтах малтанхи пекех: выляççĕ, кулаççĕ, шӳтлеççĕ. Е Тамара хăй асăрхаймасть-и вĕсен улшăнăвне?

Анчах çав çухатăва хăш чух тĕлĕнмелле çĕнĕ туйăмсисĕм улăштарать. Чи малтанхи хут вăл чĕрене кăçал çуркунне пырса кĕнĕччĕ. Ун чухне ачалăхри пек тес... çук, ачалăхринчен тем тери урăхларах, хаваслă тес, хаваслă мар, телейлĕ тес, телейлĕ теме çук, анчах питех те хаклă çĕнĕ туйăм чуна пăлхатса ячĕ.

...Тамарăпа *вăл* шкулти пĕр вечертан таврăнатчĕç. *Вăл* лайăх ача иккенне Тамара пĕлет. Урокра та Тамара ун çине вăрттăн пăхкаласа илет. Ытти ачасем, унпа таплаштарсан, темле кăнттам пек, калаçасса та тӳрккес калаçаççĕ.

...Вăл Тамарăна ун чухне пĕр сăмах каларĕ. Ку — юрăсенчи сăмах. Çак сăмаха акă халь Тамара илтет!

Кун хыççăн кайран вĕсем иккĕш тепре акă çак çыр хĕррипе утрĕç... Темĕнччен утас килетчĕ ун чух. Йăмра сулçисем хушшинче селĕп ача пек çемçен те кăмăллăн ăшă çил пăшăлтататчĕ.

Тамара çавăн чухне ун çине куç уçса пăхман: утнă, утнă. Çав асамлă сăмах хăлхара янранă чух (тĕрĕссипе, çав сăмаха хăйне вăл каламарĕ те пулмалла, анчах вăл хăлхарах янăрарĕ) пуç çаврăнса каять. Пĕтĕм çутçанталăк: пур сасă та, пур япала та — çав сăмаха калать. Тĕнче калама çук ейпет, мĕнпур япала хăйĕн малтанхи илемне-тĕсне тупать, çук, унран та хитререх пулса каять.

Вăл темĕн калать... Тамара ăна итлемест те, хăлхара темскер илемлĕн йăс янравĕпе янăрать. Ним чĕнмесĕр пырса, çак кăшт эрлĕклĕрех, ыратуллăрах, анчах питĕ ырă саманта чĕрере ĕмĕрех тытса юлас килет. Анчах та çак ырă туйăм нумая пымасть-мĕн, тата вăл сайра хутра кăна пулать.

Унпа пĕрле чухне çеç çав туйăм таврăнать. Анчах *вăл* Тамарăран темшĕн пăрăнса çӳрет. Тамара тарăхать, пĕччен чухне йĕрет те. Кăмăл хавасĕ çухаласси йăлтах унран килет пек. Тамара хăй те *унран* курсанах тарать. Класра çеç халĕ Тамара ун çине вăрттăн пăхкаласа илет. Вара чĕрере темĕнле ыраттаракан савăнăç хускалать. Те-

пĕр чух *вăл* çав мăскаллă пĕр сăмаха чунтан мар, выляшса çеç каланă текен шухăш пуçа пырса кĕрсен — чуна çав тери йывăр пулса каять.

Ку чăнах çапла пулсан, Тамара хăйне хăй мĕн тăвасса та ăс çавăрса калаймасть...

Ку шухăша Тамара çийĕнчех сирсе ярать. Ун пек пулма пултараймасть!

Юлашки вăхăтра вара кун пек шухăшсăрах чуна лăпкă мар. Тамара пĕлет: ку вăл *унран* кăна килмест. Чун канăçĕ *унпах* çырлахса ларманнине ку яхăнта вăл ытларан ытларах туять, çав малтанхи хаваслăх таврăнасса та шанса тăрать. *Унпа* çеç-и вара пурнăç хаваслăхĕ? Çук ĕнтĕ! Вăл унсăрах таврăнать. Çак вырăнтан урăх çĕрелле кайсан... Акă, калăпăр, вăтам шкул пĕтерсе, аслă шкула кĕрсен, ачаран ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çулĕ çине тухсан... Анчах унччен инçе-ха: халĕ 9-мĕш класра çеç-çке-ха, тата икĕ çула яхăн кĕтмелле!

Мĕн тери тĕлĕнмелле! Çак çул Тамара хăйĕншĕн хăй те темĕнле йывăр тупмалли юмах пек пулса тăчĕ-çке...

Тавралăха каç ĕнтрĕкĕ çапма ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ. Хĕрачана кунта тăма сасартăк хăрушă пулса кайрĕ. Çак тарăн çырмаран ача чух илтнĕ юмахсенчи арçури е мĕн те пулин унран та хăрушăрахскер сиксе тухса аçтаха пек кăшкăрса ярассăн туйăнчĕ. Халь çеç куранна шăши те — шăши мар, кам пĕлет, темскер. Çырма тăрăх, юмахри суккăр Хвери пек, хура вăрăм аллисемпе тавралăха хыпашласа, каç хăпарать.

Хĕрача тарăн çырма хĕрринчен варт çаврăнчĕ те ял еннелле васкарĕ. Яла çитес умĕн вăл хуллен утрĕ. Çырмари пĕчĕк кĕпер çинче каллех чарăнчĕ. Кунта та нимĕнех те ырри çук. Аялта çеç пĕр кăвакал, пĕр вырăнта урисемпе хăвăрт-хăвăрт авăсса, шыв тĕпĕнчи лĕкĕре чавалаa пăтратать те, пуçне шыва чиксе, кутăн тăрать, пĕр самант урисемпе тапкаланса тăрмашнă хыççăн, шыв тĕпĕнчен тем туртса кăларса, пуçне силле-силле çиет.

Сакăлтăклă-сакăлтăклă, вак пусахлă шыв çу каçа чупса ывăннă ĕнтĕ, ӳркенсе юхать.

Кĕпер айĕнчен пĕр кăвак кăвакарчăн çатăлтатса вĕçсе хăпарчĕ.

Вăл çунаттисене мĕнпур вăйран ăнтăлса, май килнĕ таран çӳлелле-аялалла сулнипе тăвата çунатлă пек курăнчĕ.

...Хура кĕрти тĕксĕм çанталăк чуна мĕнле салхулатать иккен. Халĕ те ăçта та пулин чечек çеçке çурать ĕн-

тĕ. Пăттăм-пăттăм тĕрĕллĕ, куçлă-куçлă çунатлă лĕпĕшсем вĕçеççĕ.

Çак кулленхи пурнăçпа пĕрлех Тамара асĕнче тепĕр пурнăç сăрланать; ку вăл вуланă кĕнекесенчен чăмăртаннă, малаллине ĕмĕтленсе, ăстăн хăй йĕркеленĕ тĕнче, тепĕр майлă каласан, çак пурнăçа хăвăн мĕнлерех курас килни, пуласлăх тĕнчи, Тамара тĕнчи. Унта çыннисем пурте хитре, ăслă, хаваслă. Унта ху мĕн ĕмĕтленни тĕппипех чăна тухать, кирек кам пулам ан те — кăмăл çеç пултăр... Унта çитме май пурри пирки иккĕленӳ çук. Анчах унта каяс çул шкул витĕр выртать-мĕн. Вăл çул алтăклă, тылапуççиллĕ. Ун тăрăх юстав лаша пек ĕрĕхтерсе пыраймăн.

Ку та сахал — унта сăнпуçран хитре, чунтан тĕлĕнмелле, ăслă, пултаруллă тус-йыш. Савăнăç, юрă-ташă, чăн-чăн юлташсем çав тĕнчере...

Акă вăтам шкул пĕтеретĕн те — аслă шкула кĕретĕн. Çу кунĕсенче яла курма таврăнатăн, çавăн чухне ку тавраш та тепĕр хут ача чухнехи илемпе йăлтăртатма тытăнать!.. «Студентка!.. Студентка!» — тейĕç пурте. Тамара ун чухне чупса пырĕ те амăшне ыталĕ: «Анне, эпĕ студентка»,— тейĕ; юрласа ярĕ те улăх-çаран тăрăх утĕ; кайăк сассине пĕрчĕн-пĕрчĕн сӳтсе тăсĕ, кĕвĕ кĕвĕлĕ...

Çакна шутласа илнипех килес телейпе хăпартланнă чĕре кăкăрта хыттăн тапа пуçларĕ. Тамара савăккăн кулса илчĕ. Çывăхри карта юпи шăтăкне пĕр кăсăя хаваслăн чилетсе кĕре-кĕре тухрĕ. Пурçăн чалка мăйне симĕсĕн-кăвакăн йăлтăртаттарса, пĕсехине каçăртса, кĕпер карлăкĕ тăрăх кăвак кăвакарчăн уткаларĕ.

...Хăш института вĕренме каймалла-ха, вăтам шкул пĕтерсен? 9-мĕш класра чух никамах та хăй ăçта вĕренме каяссине пĕлмест пулмалла. Тамара нумай ачаран ыйткаласа пăхнă — никам та уççах калаймасть.

Мĕнтен начар-ха вăл хăйĕн ытти тантăшĕсенчен? Ак пурăна киле ун тантăшĕсем-çке халь ĕçлекен паллă çынсене: тĕрлĕ ученăйсене, врачсене, артистсене, патшалăх пуçлăхĕсене — улăштараççĕ. Тамара тантăшĕ пĕр-пĕр ученăй е дипломат пулĕ. Ан тив, Тамара юлташĕ мар, кирек те кам эс палламанскер пултăр, çапах вăл Тамара тантăшĕ-çке-ха. Тамара вара хăйпе пĕр ӳсĕмри, пĕр тапхăрти тантăшран кĕçĕн ятсăр-сумсăр çын пулать-и?

Тамара пĕчĕкрех чухне пĕр тапхăр çĕвĕçĕ пулма ĕмĕтленнĕччĕ. Ун пек çĕвĕçĕ тĕнчипе те çук: вăл çĕленĕ япалана тăхăнсан, асат хуçнă çын та тӳрленет, илемсĕр маймăл

та хитреленет... Тамара, чăн та, çĕвĕ çĕлеме вĕренчĕ — майра кĕпи те çĕлет. Çапах та ку тĕп ĕç мар ĕнтĕ Тамарăн пурнăçĕнче, ерçнĕ чух аппаланмалли алă ĕçĕ çеç.

...Тен, юрăçсем хатĕрлекен шкула каймалла? Тамара хăйне тĕлĕкре юлашки вăхăтра час-часах чаплă юрăç пек курать. Сасси унăн — дискант — уçă, янăравлă... Е мĕнех-ха халĕ кăшт начартарах пулсан? Вĕрентмеççĕ-им юрлама?

Хĕрача хăйĕн сассине тĕрĕслес тесе сăмсапа юрласа пăхрĕ. Чиперех пек. Вара вăл сасăпах юрласа ячĕ. Пăвăнчăк тухакан тăкăс сасă çырма тĕпнелле пушă консерва банки пек анса кайса чанклатрĕ.

— А-а!— илтĕнчĕ çинçе сасă. Ку хĕрача хăй юрлас тени пулмарĕ. Вăл çакна тепĕр хут туса пăхрĕ.

— А-а!..— терĕ çуй, виртлешнĕ пек, кĕпер айĕнчен.

...Хĕрача шарт сикрĕ. Такам кĕпер çине утса кĕни курăнчĕ. Тамара тутăрне тӳрлетрĕ те чупса кайрĕ — çаврăнса пăхрĕ. *Вăл!*

Тамара чарăнасшăнччĕ — ури темшĕн итлемерĕ. Тамара вĕрлĕк хапха тĕлне çитсен тепре çаврăнса пăхрĕ. Арçын ача çывхарнăçем çывхарать. Вăл, ахăр, хĕрача хăйне темиçе те çаврăнса пăхнине асăрхарĕ пулас. Тамара, ку шухăш хăй хыçĕнчи çын пуçне пырса кĕресрен именсе, тимлесех тӳпенелле пăханçи турĕ.

Тӳпери пĕлĕтсем халь, çуркунне сарлака шывра пăр тапраннă евĕр, капланса, таткаланса юхаççĕ.

Тамара чĕри хăй сисмесĕрех хытă сике пуçларĕ.

Хыçри çын ĕнтĕ сылтăмалла пăрăнакан сукмакпа утрĕ. Хăйне хыçран пăхса ăсатакан хĕрачана вăл асăрхамарĕ те пулас.

ИККĔМĔШ СЫПАК

Пĕлнĕ алăк хăлăпне Тамара тĕттĕм çенĕкре алă сĕмĕпех хыпаласа тупрĕ те пӳрте кĕрсе тăчĕ.

Хутăр хутăрлакан хĕрарăм, Варук, Тамарăн амăшĕ, хĕрача кĕрсен, пĕр хушă ырă та, усал та чĕнмерĕ, курак урине кăшт сиктерчĕ, лампа çутрĕ.

Пӳрт çуталчĕ те, урам енчи стенан икĕ пĕрени хушшинче шурă çиплĕ йĕп йăлтăртатса илчĕ.

Хĕрача пальто хывса çакрĕ, кăмака çи каррине, уçăлса кайнăскерне, туртса карчĕ, вара, пĕтĕм пӳрте йышăннă ярмуççи айĕпе тухса, сĕтел умне иртрĕ.

— Ăçта çӳрерĕн, ара, ачам?— ыйтрĕ амăшĕ ӳпкелĕш-

се. Хĕрача çакна юри вăрçма йӳтĕм тупас тесе шахвăртни вырăнне хучĕ.

— Ниçта та мар,— касса татрĕ вăл.

— Аннӳпе ма йĕркеллĕ калаçмастăн, ара?— терĕ амăшĕ чирлĕ çын сассипе.— Эпĕ Энтри пасарĕсем мар-иç. Сана çуратса, кăкăр ĕмĕртсе ӳстернĕ аннӳ пулатăп эпĕ, чупкăн!

— Анне! Мĕншĕн текех вăрçатăн мана эс, э?— Хĕрача вĕчĕрхенсе пуçне çĕклерĕ.

Амăшĕ çакна илтсен кăтăрса кайрĕ.

— Эй!.. Эп вăрçни—вăрçни-и!—кăшкăрсах ячĕ вăл.— Вутă çурмалла, тырă типĕтме кĕртсе хумалла... Кун каçа пĕр ура шывра, тепри вутра. Эсĕ пур — çӳре ярура! Каламасăр пĕлместĕн-ши ĕнтĕ çавна тума? Эп çук пулсан, мĕнле пурăнĕ-ши ку? Эх, пĕрре вилсе чĕрĕлсе пăхасчĕ ман: мĕн хăтланĕ-ши мансăр. Пӳрте тепĕр енчен кĕрсе тухмалла тунă пулăттăн çав. Кĕтессенче çĕлен-калта чашкăрса çӳрĕ... Хăйне эрешменсем яваласа лартса вĕлерĕç-и?.. Кай!.. Ма çуратса ятăм пĕрех хут! Тăрантар вĕсене, тумлантар — виçĕ пуслăх уссине курма çук. Пакарти кĕре пуçласан — пуçран пама тапратĕç ак хам ватăларахпа! Халĕ хырăм тутă, çи питĕ — куçран пăхтарасшăн, ачам.

Çак пĕрре кăна мар хăлха йӳçĕхичченех илтнĕ йӳтетмĕш ятлаçăва, чĕрене çурсах яраканскерне, Тамара паян вĕçне çити итлесе тăма тӳсĕм çитерейменĕ.

— Анне!— кăшкăрса ячĕ вăл.— Чунăм ыратать манăн! Эпĕ чăтма пултараймастăп урăх!

Хĕрача, пуçне минтер çине чиксе, ĕсĕклесе макăрса ячĕ.

Хĕрарăм, сасартăк шăпланса, урай варринче хытса тăчĕ. Унтан вăл аллинчи йӳрекне хучĕ те сӳлтен кайнă çын пек халсăррăн сак çине кайса ларчĕ. Алли чĕтре пуçларĕ. Пĕркеленчĕк пичĕ тăрăх куççуль тумламĕ йăрăлтатса анчĕ. Вăл, ерипе ура çине тăрса, хĕрĕ патне çывхарчĕ, вырăн хĕррине ларчĕ.

Самантран пӳртре тахăш пĕрени ăшĕнче шĕкĕ хурчĕ пĕчĕк ал сехечĕ шакканă пек такăлтаттарса тăни çеç илтĕнчĕ.

— Ан макăр, хĕрĕм,— терĕ хĕрарăм, хĕрачана пуçĕнчен шăлса.— Сана хăвна хĕрхеннипе эпĕ...

— Хĕрхенетĕп,— терĕ хĕрача, тутипе мăкăртса.— Ахалех вăрçатăн.

— Вăрçмастăп эпĕ, хĕрĕм,— терĕ амăшĕ лăпкăн,— вĕрентсе калатăп. Эпĕ вĕрентмесен, кам вĕрентĕ сире? Шкулне çӳрени те — вăхăт сутса çӳрени çеç пулĕ. Вĕренсе тухсан та — ниçта та каяймăн. Пĕччен ĕçлесе килйыш тăрантарма çăмăл мар-çке мана. Халĕ, ав, виççĕн тан вĕренетĕр. Çынсем вĕренмесĕрех вербовкăпа ĕçлеме каяççĕ те — сăмса курăнми кулач çиеççĕ. Пирĕн пурнăçăмăр каялла кайса пырать. Мĕне кирлĕ сана, тепĕр тесен, вĕренни? Вĕреннĕ çын канасрах пурăнасшăн, якарах тăхăнасшăн. Яка тăхăнсан — тăрăх пăхас килет, тӳрĕ çӳрес килет... Пул хамашкал çĕр çынни. Текех кипкери ача мар ĕнтĕ. Чипер ĕçлесен — çипуçĕ те пулать, çимелли те... Çапах ниçта та каяймастăн ак, ялтах юлатăн. Çӳре-çӳре те вунă çул хушши тумтир çĕтсе, çăкăр çĕртсе, каллех манпа — сĕм-ухмахпа — юнашар тăр çум çумлама. Ав, Вальăсем çӳреççĕ йытă хăваласа. Мĕн, лайăх тетĕн-и? Хура ĕçрен писрĕç, тасине вĕренеймерĕç. Аслă çынна анчах пайталлă вăл вĕренни. Ухмах çын алла кĕнеке тытан йăланки тăвать те — хӳри шарт! тути мăрт! Хирĕç каласан — сиксе тавлашать; урлăрах илсен—ишши-пăшшипуртăшши — çапма та хатĕр. Пирĕн, ачам, пилĕк авмасăр хырăм тăранас çук. Эсĕ пур — шкултан килсен те кĕнекепе çеç ларатăн. Мĕн, хырăм тути-и вăл?

...Амăшĕн чĕлхи вĕçне татах темтепĕр килнĕччĕ, анчах вăл, хĕрне каллех хурлантарасран сыхланса, урăх шарламарĕ.

— Çăкăр çырткала та эппин — Валя патне кай,— терĕ вăл самайран.— Эсĕ çук чух килчĕ те пыма каларĕ. Килте пĕчченех, тет. Хăратăп, тет. Амăшĕ текех командировкăсенче çӳрет пулас та.

Валине хăйне Варук инке пит юратса каймасть те — Тамара унпа туслăран çеç ачан кăмăлне хуçас килмест: унсăр кичемрех пуль ăна. Кĕлетки каять; хĕр шутне кĕрет ĕнтĕ. Пĕве кĕрекен хĕрача ялан амăш юмаххине итлесе лараймĕ. Çамрăк — çамрăках: калаçмалли те, кулмалли те тупăнать вĕсен хăйсене май. Тепĕр тесен, ятламаллах пăсăк марччĕ-ха ун хĕрĕ. Хушнă ĕçе тăваканччĕ. Паян та, шкултан килсен, пĕр шетник шыв кӳрсе тултарчĕ. Мĕншĕн вăрçмалла пулчĕ-ха? Чун ыратнипе мар-и. Кам хаяр сунать хăй ачи-пăчине. Çав пурнăç ăнăçманнипех çапла харкаштарать хăш чухне...

Ашшĕсĕрех ӳсрĕ шеремет. Шоферччĕ леш. Салтакран чипер таврăннăскер, ӳпке шыççипе вилчĕ. Вара тăватăмçул Варукăн, çемйипех куçса кайса, темиçе çул ирĕкре

çӳренĕ хыççăн пĕлтĕр çур енне тăван ялах таврăнмалла пулчĕ. Юрать-ха, кунта колхоз пĕчĕк пӳрт лартса пачĕ. Çăмăл мар çав пĕччен пуççăн пурнăçа саплаштарса пыма, ниçта та пĕр тĕкĕ çук. Шутласа пуç мими шĕвелсе кайрĕ, тăн тухрĕ. Çăкăр ямшăкĕсем пӳрт тулли...

Тамарине вĕрентсех кăларсан аванччĕ те — темĕнле хăват çитеркелĕ. Пыратчĕ уйăхне пĕрер çĕр тенкĕ ӳкермелĕх ĕçлеме вĕренсен. Вальăпа явăçни, тепĕр тесен, ачана ырра вĕрентмест-ха та — çĕвĕ машини пур-çке вĕсен. Çавăншăнах иленчĕ ĕнтĕ унта.

Кĕçĕннисене, Алешăпа Лизине, çичĕ класс пĕтерттерсен — куç курĕ. Мишши пĕчĕк-ха.

Тамара кайнă хыççăн амăшĕ чылайччен çакăн пек упи-супи шухăшсемпе анăш-тĕнĕшленсе ларчĕ. Унăн шухăш çăмхине урамран тĕпĕртеттерсе килсе кĕнĕ икĕ ывăл ачипе тепĕр хĕрачи татрĕç.

ВИÇÇĔМĔШ СЫПАК

...Ытарми улăх, ката. Çĕмĕрт шап-шурă çеçкере. Таврара чапăр курăкĕн тутлă шăрши. Çӳлтен чечек сарри çăвать. Тамара кăкăр таран çаранра ашса чечек шырать. Татас тесе алă тăссанах, чечекĕсем хĕрлĕ, сарă, кăвак, кĕрен лĕпĕшсем пулса вĕçсе тараççĕ. Тамара та аллисене сулать те вĕсем хыççăн вĕçсе çĕкленет. Вăл та çунатлă иккен. Унăн çунатти — чечек çеçкисенчен... Таçта каллех палланă сасă илемлĕ сăвă калать:

Шывшăн ĕннĕ çамрăк вăрман
Лăстăртатса силленет.
Улăх тăрăх тĕплĕм çаран
Чечексемпе витĕнет...

...Тамара виçесĕр телейлĕн вăранса кайрĕ. Тулта та çуркунне пуçланнă пек, хĕвел ăшăтса пăхнă пек туйăнчĕ.

Анчах тулта кичем хура кĕр тăрать. Сивĕ çил кастарса вĕрет. Пӳрт те сивĕнсе кайнă. Пӳртре Тамарăн йăмăкĕ Лиза çеç сĕтел умне мăн тутăрпа пĕркенсе ларнă та, сасăпа вуласа, сăвă калама вĕренет. Илемлĕ тĕлĕк пĕтĕмпех çав сăвăран килнĕ иккен.

Ăшă вырăн çинчен тăрас та килмест... Мĕн тери аван çапла тĕлĕкре хускалнă хавас кăмăлпа, хӳхĕм ĕмĕтпе илĕхсе выртма!

Хĕл кунĕнче те чечеклĕ улăх-вăрманта çӳреме пулать...

...Тĕнчере сан пек хитри те, пултарулли те çук... Вĕренме те сана çăп-çăмăл. Пĕрре кĕнеке уçса пăхатăн çеç— пуçа кĕрсе те юлать, урăх ĕмĕр тăршшĕнче те аса илме кирлĕ мар. Ачасем анкă-минкĕленсе кĕнекепе ларнă чух — эсĕ ерçӳллĕ те. Ку ерçӳллĕ вăхăт йăлтах вылямакулма каять.

Тамара пуç ҫинченех пĕркенсе выртасшăнччĕ — йăмăкĕ репродуктора пăрчĕ те, Мускаври Кремль куранчĕ çапни, унтан гимн сасси илтĕнчĕ.

Ултă сехет çитрĕ те-и?

Тулта çутăлман та, кăвак сăн çеç çапнă.

Тамара вырăн çине тăрса ларчĕ, чылайччен çӳçне турарĕ. Хĕрлĕ хăю вĕçне шăлĕпе çыртса çиттуни турĕ. Вăл ура çине тăрсан, икĕ вăрăм та тачка çивĕт сулмаклăн усăнчĕ.

Амăшĕ ĕнерхи яшкапа ăшатрĕ, çăкăр касрĕ, пилĕк тĕле çавра чĕлĕ хурса тухрĕ, вĕсем çумне пĕрер йывăç кашăк та какай татăкĕ хучĕ.

Кунта çакăн пек йăла-йĕрке çирĕпленнĕ.

Сĕтел хушшинче тӳп-тӳрĕ лармалла. Яшка ăснă чухне сĕтел çине ӳпĕнме те, чавсаланма та юрамасть. Яшка тăкăнасран кашăка чашăкран кăларсанах ун айне çăкăр татăкĕ тытмалла е кашăк тĕпне чашăк хĕррине сĕрсе илмелле. Çăкăр тĕпренчĕкĕсене пуçтарса чĕлĕ çине хумалла. Çын умĕнчен ăсмалла мар.

Кĕçех сĕтел варринчи чашăка, пĕр вакка тăрăннă çерçисем пек, кашăксем чыхăнчĕç, черет кĕтсе чарăна-чарăна тăчĕç.

Ирхи апат çак сĕтел хушшинче шавсăр сайра иртнĕ. Паянхи апат йĕркеллех иртес пекчĕ. Амăшĕ те чиперех ăш кĕлесе çиетчĕ. Мишша, чашăкра çаврăнакан какай татăкĕ хăй тĕлĕнче чарăнасса кĕтсе лараканскер, аппăшĕн çăварĕнче хăй сăнаса ларнă çимĕçне курчĕ те — шапăрр! турĕ яшка ун кашăкĕнчен, унтан ун чавси сĕтел хĕрринчи какай татăкне перĕнчĕ те — лач! турĕ çĕре. Çавăнтах кушак, савăнăçлăн мăрăлтатса илсе, сĕтел айĕнчен кăмака айнелле тапса сикрĕ.

— Ак... Ак çапла! Пăрах ăна,— терĕ амăшĕ, çиме чарăнса.— Мĕн, аллуна туп тивмен пуль? Тапам та ак пĕрре — тухса кайăн стена витĕр! Ĕçлесе илтĕн-и эс кушака пăрахса пама какай? Мĕн, халь шуйттан мăйраки катса парас-и ман сана?..

— Ху пĕчĕккĕ паран та,— терĕ Мишша, хăй вара амăшĕ хĕпесе тăкасран куçĕ тĕлне чавса çĕклесе тытрĕ.

— Епле пулать-ши вăл пысăкки?! — сасартăк кăшкăрса ячĕ амăшĕ.— Ĕçлĕр те хăвăр — çийĕр вара пысăкки... Пĕри те ĕçлекен çук, йăлтах ман тăрантар пур мăн тĕвене!

Тамара çак хирĕлĕве текех чăтса лараймарĕ, çисе тăранмасăрах сĕтел хушшинчен тухрĕ те шкула кайма сумка йăтрĕ.

Ял çинче, мăрьесенчен тухакан тӳп-тӳрĕ тĕтĕм юписем çине тĕревленсе, кăвак мачча пек тĕтĕм пĕлĕчĕ тăрать. Çул çинче шăнса кайнă çерçисем сиккелеççĕ, вĕсем, тĕкĕсене тăратса янăскерсем, ытти ăшă кунхинчен шултрарах та тĕклемесрех курăнаççĕ. Телефон пралукĕсем те пасарса мăнтăрланнă — сӳреккене шур çип вырăнне шурă вĕрен кумнă, тейĕн, çерçисем ларса паса тăкнă тĕлте çеç «вĕрен» татăлать.

Тамара килкартинчен тухса çул урлă каçрĕ те, шатри пĕтнĕ калуш шунипе асăрханса утса, сĕвек тайлăмран хăпарчĕ.

Ăна амăшĕн ĕнер каланă сăмахĕсем шухăша ячĕç. Пĕр енчен, вăл каланипе килĕшме те пулать — чăнах та, мĕн тума вунă çул таран вĕренмелле-ха, аслă шкула кĕреймесен?.. «Кĕреймесен» — паллах. Анчах кунпа ăстăн ниепле те çырлахасшăн мар. Çав хăй ĕмĕтленнĕ пек пурнăça та, хăй ăнланнă пек телее те астивсе пăхаймасть вара Тамара...

«Вăтам шкул пĕтерсен, çич енне те çул уçă»,— тетчĕç вĕсене учительсем мĕн пĕрремĕш класранах. «Аслă шкула каятăр»,— тетчĕç. Тамара ачаранах çав аслă шкул ĕмĕчĕпе пурăннă. Çавăнпа вĕреннĕ те... Халĕ вара малтан ĕçлемелле, теççĕ. Хуларисен—хулари заводсемпе фабрикăсенче, ялтисен колхозсемпе совхозсенче ĕçлемелле.

Пĕр-ик çул ĕçленĕ хушăра шкулта мĕн вĕреннине те йăлтах манса каятăн. Пурнăç та нумай улăштарать сана ку хушăра. Вара аслă шкула вĕренме кайса кĕрĕп тесе ан та шухăшла. Ĕмĕрлĕхех çакăнта юлмалла пулать вара Тамарăн та... Эппин, тĕнче пурпĕрех уншăн çакăнтан ырăрах, хавасрах пулмасть-и? Курмалли-илтмелли, хĕпĕртемелли, эппин, йăлтах çакăнта-и? Апла мĕншĕн-ха санăн, хăвна ху питĕ чаруллă тытса, ахаль киленӳсенчен те пăрăнса, хăрăнса çӳремелле?

Шухăшсем — çăртасăр шăрçана çип çине тирме ăнтăлнă пек — нимле татăклă тупсăм уйласа кăларма та çыхăнмаççĕ,— сапаланчăк, йăпăлка. Пуçра теменле çăксăр, сулăмсăр япала кăпăшланса тăрать пек.

Тамара пĕлет: малтан производствăра ĕçлемелле тесе ахаль вăтам шкул пĕтерекенсем акăш-макăш нумайййипе, пурне те аслă шкул шăнăçтарайманнипе, вырăн тивĕçменнипе калаççĕ. Ĕмĕтне тат та—яла юл...

Тамара çак чĕн чăмланă евĕр ним саланмасăр çаврăнакан шухăшсемпе шкул патне çывхарчĕ.

Райцентр вĕçĕнчи сăрт çинче акă вĕсен икĕ хутлă шкулĕ. Шкул карти çумĕнчех — çӳллĕ вышка. Шкулăн шитте карта хушăкĕсенчен урамалла çамрăк акаци тураттисем кăнтарăнса тăраççĕ. Шалта чанасем ларнипе чăрăш лăссисем ухăнса илеççĕ.

Тамара çул çинче, коридорта хăйсен класĕнчи пĕр ачана та тĕл пулмарĕ. Коридорта пурĕ те икĕ арçын ача çеç, çĕлĕкĕ-сумкисене те хывманскерсем, тăраççĕ. Учительсен пӳлĕмĕ енчен пĕр хĕр, сулахай хулне дежурнăй хăйăвне çыхнăскер, тухрĕ те вăраххăн коридорпа утрĕ. Ку вăл — студентка. Пĕр виç-тăват кун каялла хуларан ку шкула темиçе студент практикăна килчĕç. Хăш чух вĕсем мĕнпур йышĕпех урока пырса лараççĕ, пĕри урок ирттерет, ыттисем вăл урокне мĕнлерех ирттернине, ачасемпе мĕнле калаçнине, мĕнле вĕрентнине сăнаççĕ. Тамарăсен класне те Геннадий Васильевич ятлă пĕр студента класс пуçлăхне çирĕплетнĕ. Тамара ăна вăл класа пымассерен хăй çумне пырса ларнăшăн килĕштермест. Студент Тамарăн кĕнекине-и, тетрадьне-и е дневникне-и тыта-тыта пăхать: «Ку мĕскер?», «Çак мĕнле?», «Мĕншĕн?», «Ма?»— тесе ыйтать.

...Тамара, дежурнăй-студенткăна çапăнсах иртес мар тесе, коридорпа чупса кайрĕ. «Паян политинформациçке... çичĕ сехет çурăрах килме хушнăччĕ»,— сасартăк аса илчĕ вăл, класс умне çитсен. Анчах нумай шухăшласа тăма вăхăт пулмарĕ. Алăк темле майпа-çке — е Тамара ăна хăех туртрĕ-и — хăлăпне перĕннĕ-перĕнмен уçăлса кайрĕ те, сĕтел умĕнчи учитель тӳрех алăк еннелле пуçне пăрчĕ.

— Кĕме юрать-и?

Политинформацие Геннадий Васильевич студент-практикант ирттерет иккен. Ун умĕнче вăрахчен алăк патĕнче тăма кăшт намăсрах та. «Акă пуçлать ĕнтĕ тĕпчеме: «Мĕншĕн?.. Ма?»— чĕкелесе шухăшларĕ Тамара.— Хăçанччен ура çинче тăратать-ши ку мана? Валентин та куçранах пăхать ĕнтĕ... Хĕрелсе каяс марччĕ çеç...»

Студент-практикант Тамара çине пăхмарĕ те тейĕн,

таталнă сăмахне сыпăнтарма хăтланнă пек, пĕр хушă шăп ларнă хыççăн пуçĕпе сулса мала иртме ирĕк пачĕ.

Студент-практикант сасси витĕмлĕ те янравлă. Ирĕксĕрех хайне итлеме хистет. Чăн та, хăшпĕр учителĕн сассинче питĕ хиставлĕ вăй сисĕнет. Уйрăмах Вера Федоровна сасси çавăн пек. Унăн пĕр тĕрлĕ сасси итлесе ларма чĕпет, тепри шухăша ярать, виççĕмĕш асаилӳсем вăратать, тĕк ларма хушать. Алхасакан ачана вăл асра-тĕсре çеç сăмахпа чарать, ытларах чух е куçпа пăхса илсе, е урок ăнлантарнă хушăрах, темăран пăрăнмасăр, сассине кĕтмен çĕртен пĕрре пусарса, тепре хытарса асăрхаттарать. Çак студент-практикант сасси те шухăша урок йĕрĕнчен пăрăнма памасть. Халĕ вăл Инди çинчен калать. Инди хĕвелĕ, çимĕçĕсем, туслăх йывăççи çинчен асăнкалать.

Ку, тепĕр тесен, сарăплах та мар-мĕн. Тамара кунашкаллисене итлеме юрататъ. Тамара хăй те шухăшсемпе пĕрре мар çав Инди еннелле, хĕвел çути нумай çĕрелле, вĕçнĕ. Çавăн пек илемлĕ çутçанталăклă çĕршыв çыннисем хырăм выççи, тумтир питти çинчен шутлаççĕ тенине те ĕненме йывăр пек. Унта, калăпăр, Инди океанĕнчи пиншер утравран пĕр утравĕ çинче те пулин виçесĕр халăх та пурах пулĕ. Ученăйсем унта халĕ те цивилизаци мĕнне те пĕлмен тĕрлĕ йышши халăхлă утравсем шыраса тупаççĕ-çке. Калаçасса та вĕсем ахаль эпир калаçнă евĕрлĕ мар — оперăри пек е кайăксем пек — пĕр-пĕринпе юрласа калаçаççĕ-тĕр. Учительсем те юрласа урок каласа параççĕ... Хăçан та хăçан, ӳлĕм, тен, чăнах çапла пулĕ... Ун чух çуралаканни — пĕр юрăçă ăсталăхĕпе çуралĕ те... Вăрман çине пĕрре тĕсесе пăхса илсенех сăмахĕ те сăвăланĕ, çемми те кĕвĕленĕ...

Хыçалти парта хушшинче пĕччен ларма канлĕрех. Кунта учителĕн вичкĕн куçĕ ачан кашни хусканăвнех асăрхаймасть. Тимлесе итленçи пулса ларатăн та — кирек хăш шухăш çиппи те чăлханмасăр тăсăлать. Учитель сăмахĕсем ун чухне, пим пĕлтерĕшсĕр сĕрлеве куçса, пачах илтĕнми пулаççĕ е — пите çумăрлă пăр çапнă пек — чуна вĕчĕрхентереççĕ çеç. Учитель ятран чĕнсен вара — шухăш çиппи панлаттарса татăлса каять те, самантлăха тĕтре ăшне путнă класс каллех кичеммĕн куç умне шуса тухать...

Вера Федоровна урокĕнче куп пек шухăша кайса ларма майĕ çук вара. Вăл урок ăнлантарнă хушăра та çинеçинех ыйтать, тата унăн урокĕсене итлеме те кăмăллă.

Национальная библиотека Чувашской Республики
24804-чув

Вăл ним мар япаланах ăша хывмалла кăсăклăн ăнлантарма ăста.

Ытти учительсен урокĕнче таçта шухăша кайса ларнă пирки, тӳррипе, час-часах хăй шухăш-ĕмĕтре йăпаннă пирки, Тамара çапла шухăшланă: çын хăйне хупăрласа тăракан тавралăх килĕшмесен шухăш-ĕмĕт тĕнчинче йăпану шырать пулĕ,— çавăнпа мана ĕмĕт тĕнчине чун туртать...

Тамара хăш чухне хăй маниловла ĕмĕтçе тухасран та шикленнĕ. Тепĕр енчен илсен, ку кăшт хаваслăх та кӳнĕ: кун пек чухне пурнăçра мĕн çуккине ĕмĕтленнĕ ĕмĕтре тупатăн.

* * *

Тамара предметсене пайăррăн уйăрмасăр, пурне те пĕрешкел юратнă. Нихăш предметпа та тытăннă ĕçе тĕплĕ туса пĕтермесĕр чунĕ канăçман. Пĕр-пĕр задача ниепле те тухман чухне Тамара пĕтĕм вăхăта çав задачăна шутласа ирттернĕ, ытти предметсемпе хатĕрленме вара вăхăт та юлман. Амăшĕ çур çĕр çитсенех хăйă сӳнтерме хушнă. Е ĕнтĕ Тамарăн хăйĕн те пуçĕ ыратнă, ыйхи килнĕ. Çапла вара кунсерен майлах темиçе урок хатĕрленмесĕр юлнă. Çавна май Тамара истори вĕрентекенсене тĕрлĕ вĕт-шакăр датăсемпе çунтарнăшăн, хăшпĕр предметсемпе тĕрлĕ чĕлхе вĕрентекенсене кăтьăр-катьăр правилăсене лапах кĕнекери пек сăмах хыççăн сăмах чăмлаттарса калаттарнăшăн, литература вĕрентекенсене чуна çыпăçман сăвăсемпе калав сыпăкĕсем пăхмасăр вĕренме нумай парса янăшăн килĕштермен. Уроксем хыççăн тӳрех пусăрăнса ларсан та, шкулта парса янă ĕçсене йăлтах туса пĕтерсе пĕр-пĕр илемлĕ литература кĕнеки тытса ларăп тесе ан асăн: кун иртнĕ, çĕр иртнĕ. Кунсăр пуçне, уçăлса та çӳремелле, киносене те кайса курмалла, пĕччен шухăшласа çӳрени те кирлĕ, кил таврашĕнче те пулăшмаллах.

«Экзамен»,— теççĕ учительсем.

Экзаменĕ кирлех пулĕ-ха та, анчах ача пĕлĕвне вăл çулталăк тăршшĕпе мĕнле вĕренсе пыни тăрăхах хаклама пулать-çке, вăл вунă çул хушшинче мĕнле вĕренсе, мĕне вĕренсе çитни те учительсемшĕн йăлтах паллă... Экзаменĕ хăй те карт вăйăи пек: пĕр-пĕр пĕлмен ачах ăнсăртран «пиллĕк» илме пултарать.

Хăшпĕр ача, Гомерпа Аристотель хăçан пурăннине, вĕсем мĕн-мĕн çырса хăварнине тĕрĕс каланăшăнах «пил-

лĕк» илсе, пĕтĕм Гомерпа Аристотеле «пиллĕклĕх» пĕлнĕ пек кăмăллăн утса тухса каять.

Çакă Тамарăна тарăхтарнă, анчах, хăй те вĕсен шайĕнчех тăнине пула, вăл шăлне çыртнă. Çапах та такама та тӳрех курăнать: пурнăç никĕсĕсене пачах тĕкĕнмен çав вак ыйтусене çиелтен пĕлнипех ачан литература пĕлӳ шайне хаклама çуках ĕнтĕ.

* * *

Вера Федоровна физикăпа биологи вĕрентет. Юратаççĕ ачасем ун урокĕсене. Вăл, ытти учительсем пек, правилăсене те лап кĕнекери пек калаттармасть. «Мĕнле ăнланатăр, çавăн пек каласа парăр»,— тет вăл. Киле ĕç панă чух та чи кирлисене çеç суйласа вĕренме хушать. Вăл панă ĕçсене хăш чух переменăра туса ĕлкĕрме те пулать.

Паян Вера Федоровна урокĕ чи малтанхи пулчĕ. Вăл физикăпа Тамарăран икĕ правило ыйтрĕ те унтан пĕр формула çыртарчĕ, вара ăна «тăваттă» лартса пачĕ. Ытти уроксенче, истори урокĕнчисĕр пуçне, ыйтмарĕç.

Историпе вара шкул директорĕ Петр Петрович пĕтĕм материала Тамарăран ыйтрĕ. Тамара, хăй шучĕпе, чиперех каларĕ пек, анчах юлашкинчен Петр Петрович истори датисене урлă та пирлĕ пăтраштарса ыйтма пикенчĕ те — хăй тĕрĕс пĕлнĕ çинчех иккĕленсе, арпашăнса кайрĕ Тамара. «Виççĕ» палла хĕрача хапăлах йышăнманнине директор хăй те туйрĕ, çавăнпа вăл çапла хушса хучĕ:

— Программа! Программăра пур вĕсем. Эпир программăран иртейместпĕр. Вĕсене çур çĕрте тăратса ыйтсан та — пĕлмеллех сирĕн.

Юлашкинчен директор — хăйĕн урок пĕтиччепхи ытлашши вăхăчĕпе ним тума аптраса-и е юри — урокăн тĕп йĕрĕнчен пăрăнса каласма пикенчĕ.

— Сирĕн — çамрăксен — халь пур енне те çулăрсем уçă,— терĕ вăл, хăйĕн ăс парасла сăмахне яланхи умсămахĕнчен пуçласа.— Кирек кам пулас те: инженер-и, врач-и, учитель-и...

Директор аслă шкул урлă илмелли мĕн пур пек сумлă ĕç ăсти ячĕсене асăнса тухрĕ те, тахăшĕ унран çапла ыйтрĕ:

— Аслă шкула кĕреймесен, кам пулас? Пĕлтĕр те кунта вĕренсе тухнисенчен икĕ ача çеç аслă шкула кĕпĕ.

— Пĕр шкултан кашни çул икшер ача института лек-

ни — начар мар, тейёттём эпё. Питё аван ку пирён шкулшăн... Сирён — ял ачисен — яла юлма тăрăшмалла,— терё директор.

— Çыннăн чун туртăмё, таланчё урăх енне пулсан?— ыйтрё унран татах тахăшё.

— Талант вăл çухалмасть, талант, пултарулăх пурри, хайлалли — аслă шкула та кёрет. Кунта ёнтё «талант» сăмахне мёнле ăнланнинчен килет.

— Эсир талант харкам пёринех пур, талант вăл тăрăшни, тимлени теттёрччё-çке? Пирён яла юлмалла пулсан, апла эпир пурте талантсăррисем-и?

Директор аптраса ўкмест, хăйне хăй хирёçлет пулин те.

— Хм... хм,— тет вăл.— Талант вăл пысăкки те пёчёкки те пулать. Эпё пётёмпе çёмёрсе, çёпсе тухакан талант çинчен калатăп! Анчах пурнăç вăл ахаль çынна хăйён ăшне пултарулăха-таланта кура çеç мар, хăйне кирлё енне ытларах туртса илет. Пултарулăхăм манăн, сăмахран, инженера та, юрăç пулма та çитетчё-тёр — вёсене ачарах чух аталантарнă пулсан,— анчах пурнăçа эпё учитель пулни кирлёрех килнё, шкул енне туртса илнё мана пурнăç. Сирён те çавăн пекех... Килёшет-и, килёшмест-и сире пёр-пёр ёç — пурнăçра кирлё вăл ёçе туни, ун валли çын çитмест, сирён çав енне сулăнмалла. Ман пултарулăхăм урăх енне тесе, çав питё кирлё ёçрен пăрăнни — айăпа кёни. Ăна тумасан — производство чарăнса ларать, общество пётет. Пурнăç йёрки çапла, ăна пирён ирёксёрех пăхăнмалла. Сире эпир халь çак пётёмёшле пёлў паракан шкулта пултарулăха-таланта кура мар вёрентетпёр: çёршыва ăçта кирлё, çавăнта кайма юрăхлă çынсем тăватпăр сиртен. Ăна та, кăна та чухлатăр çын — кашни ёçрех пултармалла сирён.

«Хура ёçре те пултармалла,— вёчёрхенсе илчё Тамара хăй ăшёнче, директорăн малалли сăмахне пачах илтми пулса.— Тин кăна инженер, врач тата такам та пулма çул уçă терё-çке ку, халь акă: «Вăтам шкул пётеретёр те «хура ёçе» кёретёр»,— тет. Мёнле ёç-ши вăл хальхи вăхăтра хура ёç? Кёреçепе çёр чаваси-и? Тислёк хырасси-и? Ăна та фермăсенче машинпа хыраççё... Тен, «ăна та, кăна та» тума пултарни?

«Ăна та, кăна та тăвакан» çын вăл нихăш ёçне те тёплесе çитерейместпулё.

«Тытăнсан» кирек хăш ёçе те «пултармалла» çын вăл Ломоносов-çке, пин çулта пёрре çуралакан улăп, гени!

Пирĕн — ахаль çынсен — чăн-чăнах «çынна» кĕрес тесен, хамăрăн пĕр-пĕр енĕмĕре аталантармалла пулĕ, тепĕр майлă каласан, хамăрăн пултарулăхăмăра тупмалла пуль. Çыннăн ача чух çитмĕл те çичĕ пултарулăх тĕввипапки пур пулсан — ачаранах çав пĕр-пĕр вăйлăрах тĕп тĕввĕн пултарулăхне йăл илме пулăшмалла-тăр. Пурне те харăс — Петр Петрович каланă пек — «аталантарса» пырсан, çитмĕл çич мулкача харăс хăваланă пек, пĕр тĕвви те ашкăрса кайса «пултарулăх» картине ӳссе çитеймĕ. Апла çавăн пек «аталанса» хăйĕн нихăш пултарулăхне те ярпайтарса ярайман, хăйĕн пултарулăхĕ ăçтамĕнре пулмаллине те пĕлмен, ăна пачах çухатса ярса, кăшт-кашт унта та, кунта та тĕккеленекен, чăннипе вара ниçта та пайта кăтартайман тăхатсăр кĕреçепе çын пулмалла-и? Паян вăл çавапа утă çулма кирлĕ, ыран кĕреçепе юпа шăтăкĕ чавма...»

Çук! çук!.. Тамара кун пек çын кĕлетки пуласшăн мар. Анчах мĕнре-ха Тамарăн пултарулăхĕ? Хăш пултарулăхне аталантармалла унăн? Çав «пултарулăх» унăн халь хăйне те нихăш енчен курăнмасть-çке. Вăл пултарусăр çын пулĕ, эппин? Çыннăн çуралнă чух вăранман хайлалăх папки тем тумалăх та тĕвĕленнĕ пулсан, Тамарăн мĕншĕн курăнмасть-ха вăл? Çапла, курăнмасть. Пĕр папки те вăранман Тамарăн. Çапла çитмĕл çичĕ тĕрлĕ «аталантарнипе»-тĕр пĕри те ешерсе пултарулăх картне çитеймен? Çавăнпа-тăр Тамара халĕ те хăй вăтам шкул пĕтерсен хăш института вĕренме каяссине пĕлмест, çавăн пиркиех пуль нихăш предмета та пайăррăн юратса пăрахни çук...

Çавăн пек шухăшсем çаврăнчĕç Тамарăн пуçĕнче директор сăмахне итленĕ май.

ТАВАТТАМĔШ СЫПАК

Пĕр эрне тĕлĕнмелле улшăнмасăр иртсе кайрĕ. Ку эрне тăршшĕпех — хытса ларнă пĕр кун тăсăлчĕ пек... Çакнашкал кунсенче ху хăçан пуăннине те манса каятăн, умри килес кунсене те çак пĕрешкел кунсемпе пăтраштарса яратăн та — те виçĕмкун çапла пурăннăччĕ, те эс халь е виçмине пурăнатăн...

Çак юлашки эрне Тамарăшăн шăпах çавăн майлăскер пулчĕ.

Мĕн улшăнчĕ-ха çак эрнере?

Юр ӳкрĕ, çуна çулĕ ӳкрĕ — çавă çеç. Вара каллех мал-

танхи пек кунсем кайрĕç: тунтикун, ытларикун, юнкун...

...Акă каллех кĕçнерникун. Каллех çав уроксемех пуçланчĕç...

Акă ун умĕнче — ачасем, учитель. Ачисем те, учительсем те, вĕсен çипуçĕсем те çавах. Ĕнерхи-виçĕмкунхи пекех, нимĕç чĕлхи кĕнеки алла тытнă Елена Сардоновна тахçанах янтă сăмахсемпе çапла ыйтать: «Класра кам çук?» «Киле мĕн вĕренме парса янăччĕ?», «Кала-ха, мĕн терĕмĕр эпир?» Ĕнерхи пекех — кантăкра кăшт çил улать, класс хăми умĕнчи ача пурăпа шуралнă аллине типĕ татăкпа чуна хăйăрттармалла кăштăртаттарса шăлать.

Йăлтах ĕнерхи-виçĕмкунхи пек...

Мĕн пур-ха шкулта кăсăкли? Уроксем? Кружоксем?..

Хор кружокне Тамара çӳрекеленĕччĕ. Унта та хальхаççăн çӳремен.

Аван ĕнтĕ халь тулта.

Пĕтĕм ӳт-пĕве сывлăхлăн çӳçентерсе, çанçурăм тăрăх сивĕ сывлăш чупса иртет, кăкăра юхса кĕрсе, юпа васкатать, пите хĕрлĕ тĕс, нар кĕрет. Тухасчĕ те халь — вутă çеç татас. Е Валя патне кайса çĕвĕ çĕлес — кун пек чухне, чăн та, пĕтĕм ăшчик уçăлса каять.

...Тамара инçе шухăшласа кĕрсе каяймарĕ, ăна хушаматран чĕнчĕç.

— Голубева,— илтĕнчĕ иккĕмĕш хут.— Халĕ çеç мĕн сăмах каларăмăр-ха эпир?— Унтан учительница сасси çилĕллĕн хытрĕ:— Учительпе калаçнă чух ура çине тăраççĕ!

Тамара учительница тӳрех вĕресе кайнăран кăмăлĕ хуçăлнипе калама тăхтаса тăчĕ. Çак учительницăна вăл çакнашкал пĕчĕк ыйтусемшĕнех кăшкăрма тытăннăшăн, аслă класс ачисене халĕ те 5-мĕш класри ачасем вырăнне хурса ыйтнăшăн юратман.

— Соловьев! Аса илтер-ха Голубевăна, халь çеç эпир мĕн терĕмĕр?— терĕ учительница малалла, тепĕр ачана ура çине тăратса.— Илтмен вăл ав...

— Faterland,— сăмах тавăрчĕ арçын ача.

— Илтрĕн-и, Голубева? Кала-ха, мĕн терĕ Соловьев?

Ку вара Тамарăна кӳрентерчĕ çеç мар, чĕрери чи ыратакан вырăнтан пырса тивсе,— тарăхтарса ячĕ... Халĕ ĕнтĕ вăл, хăйĕнчен темĕн чухлĕ ыйтсан та, хирĕç пĕр сăмах та тавăрса каламастăпах, терĕ хăй ăшĕнче.

Учительница вара арçын ачана çав сăмахах тепĕр хут калаттарчĕ те хĕрачана, попугай пек, ун хыççăн калама хушрĕ. Хĕрача çав-çавах чĕнменнине кура, вăл, çав сăма-

хах тепӗр ик-виҫ ачана калаттарса, каллех хӗрачаран ыйтрӗ. Хӗрача пурпӗр шӑл шурри те кӑтартмарӗ.

Тамара, пит-куҫне хатарлӑн хытарса, хӑлхасӑр-чӗлхесӗр пекех тӑчӗ.

Учительница:—Лар!! Единица!!—тесе кӑшкӑрса ярсан та, вӑл вырӑнтан хускалмарӗ. Пырать-ха, лӑпах ҫак самантра коридорта, пӗтӗм класа чун кӗртсе, шӑнкӑрав сасси йӑнкӑлтаттарса илчӗ, унсӑрӑн Тамара ҫак лару-тӑрура малалла хӑйне мӗнлерех тытмаллине те пӗлмен пулӗччӗ.

— Мӗнле лайӑх вӗренекен ача япӑхса кайрӗ,—илтрӗ вӑл учительницӑн хӗрхенӗҫлӗ сассине, хӑй коридоралла васкаса утса тухнӑ май.

Ҫапла вӑрҫса илнӗ хыҫҫӑн ҫурма ырларах каланӑ сӑмаха илтсен, тата куҫӑн мар, хыҫран, хӗрхеннӗ пекрех сасӑпа каланине илтсен, темшӗн-ҫке чун тӑвӑлнине темӗнле эрлӗк путарса хурать.

«Тамара япӑхса кайрӗ-и вара?»

Тамара хӑйне хӑй ытларах ӑнланакан, туякан, сисекен пулнӑ тесе шутлатчӗ. Апла мар-мӗн. Вӑл япӑх еннелле улшӑннӑ-мӗн.

Пӗчӗкрех чух, чунӑн туяс-сисессисем питех вӑранман чух, чӑн та, Тамара кун пек марччӗ ӗнтӗ.

Ун чух чун-чӗрене кӗлермен ҫип пек тем вӑтӑрса тӑмастчӗ. Ырӑ та савӑкчӗ ун чух чуна пур ҫӗрте те. Халӗ вара темскер ҫухалнӑ чун-чӗререн... Тем ҫитмест унта, тата тем ҫӗнни пур... Мӗн ҫухалнӑ? Мӗн хушӑннӑ?.. Куна вара никам та пӗлесшӗн мар. Урок вӗренсе кил вӗсене — вара ҫитрӗ те.

...Тамара, мӗн вӑрӑм перемена тӑршшӗпех коридор кантӑкӗнчен урамалла пӑхса, шухӑша кайса тӑчӗ.

Тулта чунлӑ вӗт кайӑксем пек юр сапакисем ҫӗре ӳкиччен нумайччен ҫаврӑнса ҫӳреҫҫӗ. Упа ҫури пек кӗрӗсмерӗс тумланнӑ пӗчӗк ачасем, ахӑртнех, хӑйсем астӑвасса малтанхи хут юр курнӑскерсем, сӑпрам юра ывӑҫласа илсе чӑмӑртаҫҫӗ, ҫуйхашаҫҫӗ. Вӗсене хӑйсене, «мукка ҫурисене», темшӗн-ҫке тытса чӑмӑртас, юратса йӑвалантарас, кӑмӑлтан савса кӑшкӑртас килет.

Тамара юлташӗн — Вальӑн — ҫавӑн пек «мукка ҫури» шӑллӗ пур: Коля. «Тӑмая аки» тет вӑл Тамарӑна. Тамара вара, вӗсем патне кайсан, сывлӑш ҫавӑрма памасӑр йӑвалантарать ӑна, хӑй те пӗчӗк ача пулса каять унпа выляса.

Чӑнах та, мӗн тери аванччӗ ҫавӑн пек чухне. Пӗрене урлӑ ӳрлӗк хурса ярӑннӑ чух. Ним хуйхӑ-суйхӑ ҫук! Ан-

чах ӳссе ҫитсен, тăн кĕрсен, ҫав пĕчĕк Кольăн та, Тамарăн пекех, чунĕ канăҫсăрлана пуҫлĕ-ши? Тен, апла мар? Ку, тен, пĕтĕмпех ачана сак урлă выртнă чух мĕнле пăхса ӳстернинчен килет?

Тамарăна малтанах, ача чух, ĕмĕтленессе — урăхларах ĕмĕтленме, шухăшласса — урăхларах шухăшлама, пурнăҫ ҫине урăхларах пăхма вĕрентнĕ пулсан, халĕ, тен, унăн ним сăлтавсăрах ăш ҫунса тăмастчĕ пулĕ.

Кирек мĕн те — ҫав пĕчĕк Кольăсене Тамарăн хăйĕнни пек ăш вĕҫҫисем, чун кӳттисем сунас килмест. Юрласа парасчĕ вĕсене сăпкара чух савăк-савăк юрăсем, чĕрене вĕсем ĕмĕрлĕх хаваслă кăмăл, телейлĕ туйăм хăварччăр... Е ачашлас, лăпкас... Анне каланинчен нихҫан та чун ан ыраттăр. Уйрăммăнах Тамара амăшĕ пек калани — мĕн тери йывăр чуна!.. Савăк, ăшă пултăрччĕ анне сăмахĕнчен...

Тамара та хăҫан та пулин ача амăшĕ пулмалла-ҫкеха...

Кĕтмен ҫĕртен ҫакăн пек шухăш пырса кĕнипе Тамара хăйĕнчен хăй вăтанса ӳкрĕ те — шухăшне такам сисмерĕ-ши тенĕ пек — йăпăрт каялла ҫаврăнса пăхрĕ, пуҫне силлесе илчĕ.

Ҫак вăхăтра Тамара ҫумĕнчен, васкамасăр та тăп-тăп пусса, ҫӳллĕ, тĕреклĕ ача Валентин иртрĕ.

Тамара канăҫсăррăн хускалкаласа илчĕ, хăй сисмесĕрех хĕрелсе кайрĕ.

...Мĕн тери кичем пулмалла-мĕн шкулта Валентин та ҫук пулсан! Тамарăн халĕ, тен, вăл пуррипе ҫеҫ шкула чун туртать?

Анчах Валентин ку яхăнта чăтма ҫук тӳрменленсе, никресленсе кайрĕ. «Сывлăх та сунми пулчĕ-ҫке вăл — сасартăк хăраса аса илчĕ Тамара.— Тăхта-ха, хăҫан тĕл пулнăччĕ вĕсем юлашки хут? Ҫуркунне... Тата? Урăх ҫук та! Чăн та, ҫуркуннеренпе вĕсем урăх тĕл пулман-ҫке! — сасартăк ҫӳҫенмеллипех ҫӳҫенчĕ Тамара.— Сывлăх сунманни те ик уйăх иртрĕ-и?..»

Чĕрере тем шыҫнă пек тан тапса ыратса килчĕ. Юлашки вăхăтра тăтăшах ҫапла. Валентина курсан ҫеҫ вăл кăшт лăш пулать.

* * *

Валентин юлашки вăхăтра, чăн та, питĕ улшăнчĕ. Акă паян та вăл, пуҫне икĕ енчен икĕ аллипе тĕкĕлесе, кунĕпе пекех класра ларать, переменăсенче те коридора

тухмасть. Аяккалла та, хыҫалалла та пăхмасть. Учитель те унран пĕрре: «Чирлĕ мар-и эсĕ?» — тесе ыйтрĕ. Валентин хирĕҫлесе пуҫĕпе сулларĕ ҫеҫ. Ҫумĕнчи юлташĕ унпа сăмах пуҫарма пикенсен те, хулпуҫҫине ҫеҫ сиктерчĕ вăл.

Тамара вара темиҫе хутчен Валентин ҫинелле куҫ ывăтса илчĕ. Валентинăн хăлхи те паян темшĕн хĕп-хĕрлĕ.

Тамарăн ăна хăй енне пĕр чĕрĕме те пулин ҫаврăнса пăхтарас, унпа мĕн те пулин сăмахласа илес килчĕ. Кулленхи пурнăҫ ҫинчен те, паянхипе ыранхи шухăш-ĕмĕт ҫинчен те сăмах нумай-ха. Вĕсем, тĕрĕссипе, ним те каласман-ҫке-ха. Ҫуркуннеренпе те... Ун чухне те мĕн каласнă-ха?

Валентинăн шухăш-ĕмĕчĕ, чун-чĕри, кăмăлĕ нумай чух хăйĕннипе пĕрешкелех тесе шутланăччĕ Тамара. Ку яланах апла мар иккен. Хăш чухне Тамарăшăн эрлĕклĕ самантрах Валентин хавасланă кулать, шӳт тăвать. Кун пек хушăра вăл ним шухăш-туйăмсăр та этем чунне ăнланма пултарайман ҫын пек курăнать. Ҫавăн пек чух вара Тамарăн ăна ҫилĕ килет, мĕнле те пулин кӳренмелле сăмах каласа татса хурас килет.

Паян Валентина темшĕн хĕрхенмелле пек. Тен, вăл Тамара пирки шухăш тытса пăшăрханать? Тамара унпа кăшт сивĕрехшĕн ҫапла мар-ши вăл? Пăрăнасса та ҫавăн пиркиех пăрăнса ҫӳрет пулĕ? Тен, вăтанать?

Тамара тимлесех Валентин пит-куҫĕнчен пăхма тăрăшрĕ. Куҫ, сăнпит хутра-ситре нумай япала ҫинчен калама пултараҫҫĕ. Вĕсем тăрăх ҫыннăн хăй каламан е хăй те пачах ăнланайман туйăмсене пĕлме пулать. Ҫапла майпа Тамара час-часах Валентин шухăш-кăмăлне пĕлкелет... Вăлименчĕклĕн, кăшт хăйăнрах, ыйтуллăн пăхсан — Тамара пăшăрханма пăрахать. Тамара пĕлет: Валентин ăна ăшрах тытать-ха, курнăҫас-калаҫас кăмăлĕ те пур. Тамарăшăн ку — ан тив, иккĕш ҫеҫ куҫма-куҫ тĕл пулмаҫҫĕ, сăмах хушмаҫҫĕ — пурпĕр класрах, йыш хушшинчех пĕр-пĕринпе ним сăмахсăр, никама систермесĕр нумай япала ҫинчен калаҫса илнипе шайлашать. Кун пек чух Тамара киле те хавасла таврăнать.

Анчах Валентин паян пĕрре те сăнпитне кăтартмасть. Тамара ăна пурпĕрех хăй енне пăхтарса илме шутларĕ.

Валентин, парта ҫинчен урайне кĕнеке шаплатса ӳксен, чăнах та, йăпăрт ҫаврăнчĕ...

Валентин ҫаврăнса пăхсан — Тамара тĕлĕнсе кайрĕ. Йĕкĕт йăлтах сăнран ӳкнĕ, вăл темĕнле чирлĕрех те ҫи-

лĕллĕ курăнать. Яланах яп-яка çамки çинче — ăна вăйран хĕстернипе — сăмса тĕлĕнчен çӳлелле кăшт кулăшла та сивлек виçĕ карт хутланать. Куçĕнче хăмăр куç шăрçи мар — шурри ытларах. Валентин такама çилленни, вăл кăмăлсăрри сисĕнмеллипех сисĕнет.

Тепĕр самантран Тамарăна, учитель сисиччен каялла çаврăнса, пĕр хăйпашка хĕрача, Зина, алгебра кĕнеки тăсса пачĕ. «Варрине пăх»,— пăшăлтатрĕ вăл.

Тамара кĕнеке варринчен çиеле «Голубевăна» тесе çырнă тăваткал хут кăларса илчĕ те кĕнекине хăвăрт каялла пачĕ.

Çыруçă аллине хĕрача тӳрех пĕлчĕ. Чĕре сисмесĕрех хăвăрт сике пуçларĕ... Ахăртнех, çырăва пăлханса та васкаса çырнă пулас — саспаллисене кукăртса, хуçкаласа пĕтернĕ. Тамара çакăнпа пĕрлех Валентинăн хăлхи паçăрхинчен те хĕрлĕреххине асăрхарĕ.

Тамара çырăва çийĕнчех вуласшăнччĕ—учитель асăрхаттарни илтĕнчĕ те, хĕрача ăна хărах ывăçа хытă чăмăртаса тытрĕ, юсанса ларчĕ. Ăна вăл тек парта айĕнчен кăларма та шикленчĕ. Çыру, йăвинчен кăларса илнĕ чĕкеç чĕппи пек, ывăç тупанне пĕçертрĕ, кăтăклантарчĕ, ывăçа уççсанах, вăл вĕçсе тарассăн туйăнчĕ. Çыруран кĕтмен япала сиксе тухасси хăратрĕ те, пăлхатрĕ те. Валентин çине хĕрача хальхинче пуçне çĕклеме те хăймарĕ. Çак çырура та, Валентинра та темĕнле пĕрешкелех пăлхатакан, хăратакан хатарлă япала пурри сисĕнчĕ. Ăна ывăçра тытса ларни Валентинăн аллине чăмăртаса ларнăн туйăнса кайрĕ, вара пит пĕçерсе килчĕ, ачасем те çакна сисрĕç пулмалла, Тамара еннелле пăхса кулкаласа илчĕç пек...

Тамара çырăва саппун кĕсйине персе чикрĕ те мĕн урок пĕтиччен пуçне класс çине çĕклеме хăяймасăр ларчĕ.

Шăнкăрав сасси илтĕнсе кайсан тин вăл çăмăллăн сывласа ячĕ. Ачасемпе пĕрле, хăйне хăй ним те пулман пек лăпкăн тытма тăрăшса, коридора тухрĕ.

Коридорта ялан шавлă. Çак шăв-шав Тамарăна паян килĕшмерĕ. Кун пек чух кăмăла канăçсăр та, пуçра пĕтĕмпех кисренет, çаврăнать.

Тамара уçă сывлăша тухрĕ.

Кунта та канлĕ мар. Çаралса юлнă шăн çĕр çийĕн кастарса сивĕ çил вĕрет. Çиле хирĕç вĕçме талпăнакан пĕр чана, тӳрĕ вĕçеймесĕр, çупаттине мĕнпур вăйран хытарса, тайкаланса, вашмăккăн çĕрелле анать те çӳле хă-

парса каллех аялалла чӑмать. Ҫапла меслетпе вӑл аран-аран малалла каять. Пӗчӗк ҫул кайӑкӗсем ҫеҫ, сарӑрах хӗрлӗ пӗсехеллӗскерсем, хуралтӑ хӳттисемпе сикӗмӗн-сикӗмӗн ярӑнса, хӑвӑрт иртеҫҫӗ.

Тамара йӗри-тавралла пӑхса илчӗ те, спорт площадкинчи бум патӗнче тӗрмешекен ачасем хӑйне чӑрмантарманнине кура, картлашка умӗнчи алӑк хыҫне тӑрса, карлӑк ҫумне таянчӗ, кӗсъерен леш ҫырӑва кӑларчӗ.

«Тамара!— вуларӗ вӑл,— каҫарӑр...»

Ҫывӑхра такам тӗпӗртетсе иртсе кайрӗ. Тамара ҫырӑва вӑшт-вашт чӑмӑртаса тытрӗ. «Каҫар-ӑр...»— пӑшӑлтатрӗ вӑл, «ӑр» сыпӑк ҫинче сассине хӑпартса.— Мӗншӗн-ха «ӑр»? Ҫавӑн пекех ютшӑнтӑмӑр-и эпир пӗр-пӗринчен? Юлташ та, тус та мар ҫынсем ҫеҫ пӗрне-пӗри «эсир» теҫҫӗ...

Ура сасси йӑнсан, Тамара каллех ҫыру вулама пикенчӗ. Вӑл мӗн пуҫласа вӗҫне ҫити куҫпа йӗрлесе тухрӗ. Нимӗн те ӑнланмарӗ. Тепӗр хут вуларӗ. «Улталарӑм... Эпӗ пӗтӗмпех ӑнлантарса парӑп... Хӑҫан курнӑҫӑпӑр...» Мӗн ҫинчен ку? Кам кама улталанӑ?.. Ҫук, йӑнӑш вулатӑп пулӗ... Мӗншӗн пӑлханмалла-ха, тепӗр тесен?

Чун ҫапах та ырӑ мара сиссе ҫӳҫенчӗ. Тамара муталаннӑ хут татӑкне ерипе вула пуҫларӗ. «Ун чух эпӗ сана улталанӑ. Эпӗ сана мар — урӑххине... юратнӑ... Эпӗ хама та улталарӑм. Ман сана пӗтӗмпех ӑнлантарса памалла. Эпир ҫапах малтанхи пекех туслӑ пулӑпӑр. Эпӗ пӗтӗмпех, тӗппипех каласа парсан, эсӗ мана, Тамара,— курӑн акӑ— каҫарӑн та, пӗрре те ҫилленмӗн... Эпӗ ун чухне ҫеҫ ҫапла пулнӑ. Халӗ урӑхла. Халӗ эпӗ йӑлт сан енче... Хӑҫан курнӑҫӑпӑр? Ҫырса пӗлтер, тархасшӑн. Валентин»,— уҫҫӑнах вуларӗ хӗрача.

...Тамара пӗтӗм вӑйпа карлӑкран ҫатӑрласа тытрӗ. Вӗри ҫамкана пӑрланнӑ карлӑк перӗнсе шӑнтрӗ. Ачасем тӗпӗртетсе картлашка ҫине чупса хӑпарни те ӑна хӑнк! та сиктермерӗ. Тамара карлӑкран вӗҫерӗнчӗ те картлашка ҫинчен сикрӗ, хӑй ӑҫта кайнине пӗлмесӗрех спорт площадкинелле вирхӗнчӗ, анчах ӑна тахӑшӗ урока лармашӑнкӑравлареҫ тесе пӗлтерчӗ.

Тамара класа пуҫне ҫирӗппӗн ҫӗклесе, сӑнпитне хатарлӑн хытарса утса кӗчӗ. Ачасем те ҫакна тӳрех асӑрхарӗҫ.

— Кур, мӗнле утать...

Хӗрача мӑнаҫлӑн утса пырса парта хушшине кӗрсе ларчӗ.

— Ан çулăх!— тесе хучĕ вăл хăйне тем асăрхаттарса илнĕ комсорга.

Урок ларсан вара Тамара ачасене тата ытларах тĕлĕнтерчĕ. Елена Сардоновна, чăваш чĕлхипе те вăлах вĕрентекенскер, урок калама ыйтрĕ те, Тамара ăна кĕскен çеç касса татрĕ:

— Пĕлместĕп! Хатĕрленмен!

Кунтан та тĕлĕнмеллереххи çак урокрах пулчĕ. Елена Сардоновна сăмах майĕн хальхи çамрăксем çине çитнĕччĕ.

— Сирĕншĕн — çамрăксемшĕн,— терĕ вăл,—пĕтĕм çулсем уçă. Кирек кам пулас те — кăмăл çеç пултăр: учитель-и, инженер-и, артист-и... Эсир чи телейлĕ çамрăксем...

Елена Сардоновна каласа пĕтереймерĕ, çăварне тем кĕрсе кайнă пек — сасартăк чăп пулса — хыçалти парта патне утса кайрĕ, Тамара умĕнче чарăнчĕ те ăна тӳрех хулĕнчен çăлса тытрĕ:

— Атя директор патне! Халех, халех!—терĕ вăл, хĕрачана туртса.

Парта кĕтессинчен хĕрачан кĕпи çакланса чĕрĕлмен пулсан, вăл ăна, тен, чăн та, директор патне сĕтĕрсе каятчĕ пулĕ, анчах Елена Сардоновна хăй ытла виçерен тухнинчен хăй ытларах хăраса ӳкрĕ те хĕрачана аларан вĕçертрĕ, вара тӳрмĕннĕн ятлаçса вăрçма тапратрĕ:

— Ав, епле вăл иртĕхсе кайнă! Кам сирĕн комсорг? Паянах ăна комсомол пухăвĕнче сӳтсе явăр! Мана та систерĕр! Директора, завуча чĕнĕр!

Тамара çăвар та уçмарĕ. Сумкине йăтрĕ те, мăнкăмăллăн утса, класран тухса кайрĕ. Ачасенчен нумайăшĕ Елена Сардоновнăпа Тамара хушшинче мĕн пулса иртнине ăнкарса та юлаймарĕ. Пĕр Рая комсорг çеç хăй айăпа кĕнĕн пуçне чикрĕ. Елена Сардоновна вара хĕрача тухса кайсан та час лăпланаймарĕ:

— Ха, иртĕхсе кайнă!— çуйхашрĕ вăл.— Учителе чĕлхе кăларса кăтартать? Мĕнле сăмах каланă чухне-ха тата!..

ПИЛЛĔКМĔШ СЫПĂК

...Ку вăл — иртнĕ çур пулчĕ.

...Валентин хăйшĕн çĕнĕ туйăма хăй те ăнланман.

Рая варринчи ретре хыçалтан виççĕмĕш парта хӳш-

шинче ларатчĕ, Валентин — хĕрринчи ретри пиллĕкмĕш парта хушшинче.

Çак çырă куçлă, çырă çӳçлĕ пĕчĕк хĕрача-шим унăн чĕри малтан суйласа илнĕ çын? Валентин вăл ку тавраш-рах иккенне шутламан та. Вăл таçта аякра пулмаллаччĕ. Хăй те вăл ачаранпах Валентина шырать. Паллашасса та вĕсем халĕ мар — вăтам шкул пĕтерсе «çын пулсан» паллашмалла.

Ăна, тĕлĕнмелле хитрескерне, никам та юратмасăр тăраймасть. Анчах вăл çĕр çине Валентиншăн çуралнă. Уншăн та Валентинран та хитререх, ăслăрах, ырăрах çын çĕр çинче çук. Вăл такампа паллашсан та — çĕр çинчи хăйне пӳрнĕ Валентинах шырать.

Тĕл пуласса вĕсем пĕр илемлĕ кун, çĕмĕрт çуралнă вă-хăталла, вĕренӳ асапĕсем çук чухне, тĕл пулмалла.

Хĕрача уп чух, Валентин умне ăнсăртран килсе тухса, пĕр-пĕр инкек е ырату кӳмелле... Кун хыççăн вĕсем пал-лашнă, çывăхланнă... Кайран вĕсене савма чаракан те-мĕнле чăрмав е хĕвĕтмĕш, анчах пĕр-пĕринчен сивĕтме мар, пачах урăхла, вĕсен юратăвне аталанма пулăшакан-скер, тухмалла та — ăна Валентинăн е хута кĕрсе, е хăй-не пĕр-пĕр паттăр хӳтĕлевçĕ пек кăтартса сирмелле...

Çав хĕрача-ши вара вăл? Рая ятлăскер-и? Темиçе çул пĕрле вĕренсе те Валентин асăрхаман хĕрача-и?

Рая йăпăрт пăхса илнĕ самантра Валентина вăл шăп çавă пекех туйăнать. Уйрăмах ку Рая пуçне кăшт пĕксе, кăшт чалăш ларнă чухне, Валентин çине ăнланма çук тĕмсĕлсе, хăйийăнрах пăхса илнĕ чух çапла. Валентин ăна пит-куçран тĕсесе пăхсан, тата вăл хăйне Валентинпа мĕнле тытнине шута илсен, Райăна вăл пулма татах тем çитмест пек... Лешĕ Валентина кирек ăçта та, кирек хă-çан та асăрхамасăр тăрайман пулĕччĕ, хăйĕн чунне мĕн-ле те пулин уçса панă, кăмăл туртăмне систернĕ пулĕч-чĕ. Вăл чун-чĕреçе кĕтмен хăна пек килсе кĕреймест, ак халь вăл куçа курăнсанах, вăл килни çинчен чуна сис-терекен темĕнле туйăм кăлт тĕртсе илмелле... Чăннипе, çавăн пек туйăм кăлт тĕртсе илчĕ те ĕнтĕ Валентина.

Ку питĕ кĕтмен çĕртен пулчĕ: уяр кун çиçĕм çиçсе ас-лати авăтнă пек... Валентин переменăра хăйсен класĕн-чи чӳречерен урамалла пăхса тăратчĕ. Вăл пуçне пăрчĕ те, сасартăк унăн куçĕсем хăй çинелле пăхакан мăшăр куçа тĕл пулчĕç... Çав куçсенче темĕн, вĕрискер, пĕтĕм ăшчике вут хыптараканскер, сисĕнсе кайрĕ, вăл пĕтĕм ăспуça кисретсе ячĕ... Куçĕсем хăйсем вара самантрах

аяккалла пăрăнчĕç. Анчах вĕсем амантма ĕлкĕрчĕç иккен. Çав куçсем чăнахах Райăн пулпине те Валентин аранаран ĕненчĕ.

...Валентин куллен-кунах Рая çине пĕр ĕненсе, пĕр иккĕленсе пăхкаларĕ. Юлашкинчен вăл ĕмĕтри Райăпа пĕрлешсех кайса пĕр çын, ĕмĕтри-пурнăçри çын, пулса тăчĕ.

Шăп çак вăхăтра, çуркунне, Валентин юлташĕ, вĕренекенскер, район хаçатĕнче час-часах сăвăсем пичетлекенскер, пĕр эрнелĕх çурхи каникула таврăнчĕ. Вăл Валентина хут татăкĕ тыттарчĕ те — Райăна кайса пама ыйтрĕ. Валентин, паллах, вăл мĕн ыйтнине тумасăр тăраймарĕ.

...Кайран Валентин вĕсене иккĕшне темиçе хут та пĕрле курчĕ.— Валентин юлташĕ, именсе те хĕрелсе, Рая хăйне юратни çинчен каласа пачĕ...

Çакăн хыççăн тин Валентин лайăх ăнланчĕ: Рая вăлах пулнă-мĕн.

Анчах пĕркун унăн куçĕсем пĕрре те Валентиншăн мар çиçнĕ иккен... Ун чухне вăл хăйĕн студентшăн хыпса илнĕ чĕре вутне, уншăн ку вут юрăхлă-ши тесе, урăх айванрах çынсем çинче тĕрĕслесе пăхма шут тытнă пулмалла. Вара вăл Валентин чĕрине амантмаллах пĕçертсе янă.

Валентинăн чунĕ тăвăла-тăвăла килчĕ. Рая майĕпен ĕмĕтпе те çитме çук, ун çинчен Валентинăн шутлама та тивĕç çук çын пулса тăчĕ.

Вăл — Валентинăн чĕрине малтанхи хут тăваллăнçиçĕммĕн пырса кĕнĕ çын; вăл — Валентинăн пĕтĕм пурнăçне, пĕтĕм чун-чĕрине халиччен тӳссе курман çĕнĕ туйăмсемпе тултараканскер; вăл пĕрре те канăç, савăнăç кӳрекенни мар иккен.

Вăл сан çинчен пачах шутламасть, сана тĕлĕкĕнче те ĕмĕрте пĕрре тĕлленмест, эсĕ ăна килĕшместĕн кăна та мар, йĕрĕнтеретĕн кăна. Эсĕ ăна савни — уншăн йыт çӳппи çеç! Ăна халĕ çĕр çинче çав сăвăç-студентсăр пуçне урăх никам та кирлĕ мар. Вăл Валентинран çĕр хут лайăхрах, хитререх!

Эппин, Валентин хăйне хăй кăна лайăх пек туйăнать. Çĕр çинче çав студент та — хураскер, попугайăн пек кукăр сăмсаллăскер — Валентинран хаклăрах!

Валентин пĕрре мар илтнĕ: çĕр çинче чăн-чăн юрату пĕрре кăна пулать. Эппин, Валентинăн йăлтах пĕтрĕ-и? Урăх унăн никам енне те чун выртмĕ-ши?

Çук, ку капла мар пулĕ. Валентин кăмăлĕ урăх çын

енне те çаврăнма пултарĕ. Ĕçĕ пачах Валентин кама та пулин юратма пултарнинче мар, Валентина кам та пулин савма пултарнинче. Валентин юратнине хирĕç Рая хуравăша чĕлхе çеç кăтартрĕ-çке. Ку ĕнтĕ — Валентин уншăн илемсĕрринчен килнĕ япала. Çапла, Валентин уншăн илемсĕр. Анчах Валентин никамшăн та хитре маршим? Кам та пулин «сана юрататăп» тени çеç çак ыйтăва тĕрĕс татса пама пултарать.

Ун чух вăл хăй ытти нумай çынран киревсĕр те йĕрĕнчĕк маррине, хăй кирек те камшăн илемлĕ иккенне тӳррипе пĕлнĕ пулĕччĕ...

...Валентин çакăн хыççăн пĕр çурхи каç шкулти вечертан киле таврăннă чухне шкултан час-час пĕрле килкеленĕ пĕр класри Тамарăна, иккĕмĕш уйăх çеç хăйсемпе пĕрле вĕренекен, ялан Валентинпа пур ăçтиçукшăн сăмах пуçаракан хĕрачана, сасартăк пăлханăçлăн ятран чĕнчĕ:

— Тамара...

Тамара кăвак куçлă, çырă çӳçлĕ, икĕ вăрăм çивĕтлĕ стайлă хĕрача, Валентин çине йăпăрт пăхса илчĕ. Каччă сасси чĕтренсе тухни хĕрачана пăлхатрĕ. Валентин юлашки вăхăтра тăтăшах Тамарăпа пĕрле пулма тăрăшатчĕ. Вĕсен килĕсем пĕр енчехчĕ те — шкула та, киле те вĕсем пĕрехмай пĕрле çӳретчĕç. Тата Тамара, тепĕр тесен, Райăран нимпе те катăк мар... Валентин хăйне çапла пăлханса ятран чĕннĕ хыççăн Тамара, тем туйса-ши, йăлтах ăшталанса ӳкрĕ.

— Ман санпа пĕр сăмах пур...

Валентинăн — çакна каласан — чĕлхи çĕтрĕ. Ăшри никам умĕнче асăнман пĕр сăмаха каличчен çырантан кутăн сикме çăмăлтарахчĕ те пуль.

Çак сăмаха пуçласа каламалла-çке-ха... Пуçласа та юлашки хут. Çав сăмаха пĕр çынна каласан, санăн ĕнтĕ тек ăна никама калама та ирĕкӳ çук. Е эсĕ хăвăн сăмахна тытаймасан — киревсĕр çын пулса тăратăн. Тата кунçул тăршшĕнче пĕр çынна çеç пĕр хут ĕмĕрлĕх каламалли çак сăмаха юлташа, туса калама уйрăмах намăс та хăрушă... Вĕсем пĕр-пĕринпе ыранхи уроксем çинчен калаçкалама çеç хăнăхнă. Кун пек чухне сăмах та килĕшет. Хăйсене хăйсем те ирĕк туяççĕ, кăмăла, чĕлхене нимĕн те çыхмасть. Çак пĕр сăмаха каланă хыççăн вара унпа малашне мĕнле-ха кĕнекесем, уроксем çинчен калаçма, хăвна малтанхи пекех нимĕн пулман пек тытса, уп çумĕнче пыма хăятăн? Акă халь пĕр сăмах каласа хурсан, çав

малтанхи юлташла-тусла çыхăну пĕтĕмпех пĕтсе ларать. Вĕсем ĕнтĕ ӳлĕм туссем пулма та пăрахĕç? Тата тӳрре килет-и-ха çак сăмах?

...Валентинăн халиччен никам умĕнче çăвар уçса каламан темĕнле хатарлă сăмах чĕлхи вĕçĕнче пуррине хĕрача чĕрипе сисрĕ. Вăл, Валентин енне çаврăнмасăрах, кăшт çул хĕрринерех пăрăнчĕ те ăшталанса та шăппăн çапла ыйтрĕ:

— М-мĕн-ши?

Вĕсем хăйсем сисмесĕрех васкаса утса кайрĕç. Валентин Тамарăна аран-аран çеç ĕлкĕрсе пычĕ. Тамарăсен килĕ тĕлне çитме те пĕр çĕр утăма яхăн çеç юлчĕ ĕнтĕ. Валентин çапах ун çине пуç çĕклеме хăяймарĕ. «Каллех Райăпа мĕнле пулнă пек килсе тухсан?» — шухăшларĕ вăл.

«Хам мĕнле? — хирĕçрĕ унăн чунĕ. — Çук... хăй юратсан — Райăпа та манăн, тен». Валентин урăх çăвар та уçаймарĕ — вĕсем Тамарăсен тĕлне çитрĕç.

— Эппин... ан та кала... Хамах ăнланатăп пулĕ... — терĕ хĕрача хăвăрт, Валентин çине пăхмасăр. Юлашки сăмахне вăл хапха умĕнче каларĕ, вара килкартине вирхĕнчĕ. Валентин çул варринчех тăрса юлчĕ, пĕр хушă шалтлатса хупăннă кĕçĕн алăк çине пăхса тăчĕ, унтан чупсах малалла вĕçтерчĕ, питрен-куçран вут тăкăнчĕ, куç уймăлчĕ, ылмашрĕ.

Тамарăран Валентин тепĕр эрнерен çыру илчĕ. Унта пĕр сăмах çеçчĕ: «Да!.. Тамара». Ку «да» мĕне пĕлтернине вĕсем çĕр çинче иккĕш çеç ăнланнă.

Çакăн хыççăн вĕсем пĕтĕмпе те пĕрре çеç иккĕш пĕрле шкултан таврăнчĕç. Ун чух пĕр-пĕринчен пĕр чалăш аякра утрĕç, пĕр-пĕрин çине те куç уçса пăхмарĕç, сăмах хушмарĕç... Кайран тата вĕсем шкула кайнă чухне е шкултан таврăннă чухне çулсем майлă пуласран та сыхланчĕç. Валентин хăйсен тĕлнелле çывхарнине курсан, Тамара тӳрех каялла килкартине чăматчĕ. Валентин та шкултан юри Тамара умĕн е ун хыççăн тухма тăрăшатчĕ.

Валентин шкула Тамарăсен пахчи хыçĕпе çӳреме тытăнчĕ. Çав вăхăтрах Валентин хăйĕн Тамара енне туртăм пĕтсе пынине, темшĕн Рая асран тухманнине сисрĕ.

Пĕрре çурхи кун, çĕмĕрт-чие çеçке çурсан, каç еннелле Валентин умне пахчаран Тамара сиксе тухрĕ.

— Атя кĕçĕр кино курма каяр, — терĕ вăл хавассăн. Валентин килĕшрĕ.

...Вĕсем кинора иккĕш икĕ çĕрте ларчĕç: кинoран тух-

сан, вăрă тунă çынсем пек, иккĕшĕ икĕ çулпа кайса, каллех пахча хыçĕнчи çырма хĕрринче тĕл пулчĕç.

...Вĕсем чылайччен хире-хирĕç пăхса, ним тума пĕлмесĕр аптраса тăчĕç. Хире-хирĕç пăхса та мар — Валентин мĕн те пулин çавăрса калас тесе сăмах шырарĕ. Анчах темĕнле ăш вĕççи пуçа ним шухăшласа илме те памарĕ кăна мар — ăса пĕтĕмпех пăтратса ячĕ. Тамара çĕрти пĕр çавра патака урипе пусса йăвалантарчĕ. Енчетрен, куçсем хирĕç пулсан, иккĕшĕ те вĕсем самантрах пуçĕсене аяккалла пăрчĕç, çакна хăйсем те сиссе, тата ытларах хĕрелсе, сухалса кайрĕç, иккĕшĕ те куç уçайми капăçсăрланчĕç.

— Атя утар...— терĕ Тамара юлашкинчен, çак кăйттă саманта текех тӳссе тăраймасăр.

Валентин, сасартăк тăна кĕрсе, çырма хĕррипе утса кайрĕ.

— Атя,— терĕ вăл, утма тытăнса.

Вăл пачах хăйшĕн те ют сасăпа каларĕ. Ку сасăран вăл хăй те тĕлĕнчĕ. Кунта именӳ те, айванлăх та, суйни те, юратни те — пурте пурччĕ.

— Ăçта? Пĕркунхи çулпа-и?

Хĕрача шăппăн ыйтрĕ, пăшăлтатса. Пĕркун вĕсем сукмакпа аслă çул çине утнăччĕ.

— Çук, урăххипе...

Вĕсем шыв хĕррипе пычĕç. Çырмана чупа-чупа анчĕç, каллех хăпарчĕç. Тарăнах мар варака кĕрсе тухрĕç. Пĕр-икĕ тĕлте такамăн пахча карти урлă каçрĕç... Тамара питĕ васкарĕ, каялла та пăхмарĕ. Валентинран вăл пĕр утăм малта пычĕ. Валентин та васкарĕ, хăшпĕр тĕлте Тамарăран иртсех кайрĕ, унтан каллех хĕрачана аран-аран çеç ĕлкĕрсе пычĕ. Ăнсăртран Валентин уп хулĕ çумне сĕртĕнсе илсен — хĕрача кăрт! сикрĕ те тата хăвăртрах утрĕ. Ăçта васкаççĕ вĕсем? Куна вĕсем хăйсем те пĕлмерĕç. Часах вĕсем ял тулашĕнчи мăн кĕпер çине пырса тухрĕç.

Хĕрача кунта çитсен, сывлăш çавăрма пек чарăнса, карлăк çине чавсаланчĕ. Валентин унран икĕ утăм мала иртрĕ.

Кĕпер айĕнче шыв шăнкăртатрĕ. Шыв юххи çине уйăх çути ӳкрĕ. Ылтăн шыв юххи пĕтĕрĕнчĕ, явăнчĕ, сӳтĕлчĕ. Тамарăн çивĕт вĕçне те çил яврĕ, сӳтрĕ, суйларĕ...

...Валентин хĕрачана аллинчен тытрĕ те хăй çумне туртрĕ. Çакă темĕнле кĕтмен çĕртен те сарăмсăр пек пулса тухрĕ. Хĕрача, пуçне аяккалла пăрса, хăрах аллипе

Валентин кăкăрĕнчен тĕреленчĕ. Валентин хытăрах туртрĕ те — хĕрача, кăрт! сиксе, ун енне çурăмĕпе çаврăнса тăчĕ. Валентин вара самантрах ун аллине вĕçертрĕ.

Вĕсем пĕр самант, ниепле те сывлăш çавăрса яраймасăр, йывăррăн сывласа, иккĕшĕ икĕ еннелле пăхса, пĕрпĕринчен ик-виçĕ утăмра тăчĕç.

— Тамара...

Хĕрача чĕнмерĕ.

— Эсĕ йăнăшмастăн-и?

Куна пачах Валентин мар.— Валентин çăварĕпе такам, питĕ киревсĕр те йĕрĕнчĕкскер, каларĕ. Пит-куç çунса тухать. Хĕрача — хăй çумнелле Валентин çывăхарнăçемĕн — хуллен-хуллен аяккалла тарса пычĕ. Валентин чарăнсан, хĕрача та чарăнчĕ.

Вĕсем çапла пĕр хушă шăпăрт тăчĕç.

— Тамара, сана... ахаль çеç çапла... туйăнать пулĕ?

Хĕрача сасартăк хирĕç çаврăнчĕ те Валентина хĕрлĕ тулли уйăх çутинче пĕр хушă чăрлаттарса куçран пăхрĕ.

— Эпĕ тухмастăм та эппин!.. (Хĕрача сасси чĕтренчĕ.) Эсĕ ху!.. ху... юратмастăн! Шанмастăн пулсан — юратмастăн!

Тамара вăрт! çаврăнчĕ те кĕпер çинчен чупса тухса тĕттĕмре çухалчĕ. Валентина чылайччен хĕрачан ура сасси илтĕнсе тăчĕ.

Чылайччен илтĕнчĕ вăл... Малтан çывăхра. Кайран аякра-аякра. Ăна итлесе тăрсан-тăрсан, чунра çав тери хурлă пулса кайрĕ. Темшĕн, мĕнпур вăйпа кăшкăрса ярса, хурланса макăрас килчĕ.

Валентин карлăкран вĕçерĕнчĕ те, пĕтĕм вăйне пухса, ун хыççăн вĕçтерчĕ. Акă инçе те юлмарĕ. Хĕрачан ура сасси те йăнман-ха. Анчах Валентин такăнса ӳкрĕ. Каллех тăрса чупрĕ. Çул ăна таçта хирелле сулăнтарать. Çулĕ вĕçĕмсĕр. Малта нимĕн те курăнмасть.

Ку вăл кайрантарах тĕлĕкре çаплаччĕ... Ун чухне Валентин карлăк çумĕнчен те уйрăлмарĕ. Хĕрача, пĕр самантлăха чарăнса, çаврăнса та пăхрĕ, анчах, Валентин çаплах карлăк çумне таянса тăнине кура, чупсах кайрĕ.

...Валентин чылайччен анра-сухраланса тăчĕ. Уйăх та, сасартăк хăйĕн хăш енне каймаллине манса кайнă евĕр, тăна кĕме хăтланса, кĕпер çине ыйтуллăн пăхрĕ, унтан, çемçе пĕлĕт ашĕнче пута-пута, çул урлă каçрĕ.

Акă унтанпа ĕнтĕ пилĕк уйăх çуралса кивелчĕ, каллех çĕнĕ уйăх тухрĕ. Тамарăпа вăл унтанпах пĕрре те куçа-куçăн тăрса калаçман...

Мĕншĕн улталарĕ-ха ăна Валентин ун чухне? Хăйне те улталарĕ мар-и? Çавна пула вăл лайăх юлташа çухатрĕ. Валентин, эппин, киревсĕр çын пулса тăчĕ? Ултавçă?

Çук! Капла юрамасть! Эппин, çакăн çинчен тĕппипех, пим тунмасăр хăйне каласа памалла! Вара, тен, каллех малтанхи пек юлташла çыхăну сыпăнĕ.

Валентин вара Тамарăна çыру çырса пачĕ... Вăл çапла шутларĕ: Тамара вĕçне çити итлесе пĕтеретех, каçаратех — каçармалла. Ун чухне Валентин айван пулнă-çке, мĕншĕн-ха çав айванлăхшăн юлташлăха татас? Кайран, тен, çав юлташлăхран туслăх та çуралĕ, кам пĕлет, тен, айванла мар урăх туслăх та...

Кирек мĕн те, çав çыру хыççăн Тамара çапла улшăнса каясса, учителе кӳрентерессе сунманччĕ Валентин.

«Тамарăна Елена Сардоновна класран кăларса ярсан...» — çакăншăн Валентин хăй айăплине ăнкарса илчĕ.

Унăн чĕри ыратса хĕсĕнчĕ; нихçанхинчен те ытларах халь Тамарăпа куçма-куç тăрса калаçас килчĕ.

УЛТТАМĔШ СЫПАК

Елена Сардоновна учительте ĕçлеме нимĕнле институт та, училище те, курс та пĕтермен. Вăл Тăван çĕршывшăн вăрçнă аслă вăрçă вăхăтĕнче вуннăмĕш класс пĕтерсенех учительте ĕçлеме тытăннă. Ялта унăн çирĕп килçурт, пахча, ĕне-качка пулнă. Ăна, хăйĕн хушма хуçалăхĕнчен уйăрса, вĕренме яма та, шкултан кăларма та май килмен.— Шкулта вăл малтан чăваш чĕлхи вĕрентнĕ, халĕ ăна тата нимĕç чĕлхи панă. Учительсем те ăна хисеплесех кайман, пур кирлĕ-кирлĕ марах директор патне çитернĕшĕн — тарăхнă та. «Унпа сăмахлама чĕлхе те, хăйла та çитерме çук»,—тенĕ. Урокра хăйне тыткалас енĕпе те вăл час-часах педагогика виçинчен, учитель картинчен туха-туха кайнă. Ачасемпе тӳрккес калаçнă. Вăл тăваттăмĕш çул ĕнтĕ институтра заочно вĕреннĕ — ниепле те виççĕмĕш курса пĕтереймен. Урокĕсене кивĕ, йăлăхтармăш мелсемпе ирттернĕ. Унăн çăварĕнчен паянхи кушăн кивелнĕ, якалса тĕссĕрленнĕ сăмах çаврăнăшсемех, çаварса çитереймен мăтăк шухăшсемех тухнă. Комсорг Рая хăй те çак учительницăна питех хисеплемен. Ун урокĕнче чăтма çук кичемрен ыйхă килнĕ. Учителе хисеплеме кирлипе çеç Рая ун урокĕнче те йĕркеллĕ ларнă. Çапах учитель — учителех. Чăнах та, Тамарăна вăл парта хуш-

шинчен тӳрккессĕн туртса кăларчĕ ĕнтĕ, кикене кĕрсех капла хăтланма кирлĕ марччĕ. Çапах вăл Тамарăшăн та вĕрентекенех. Ма кӳрентермелле-ха ăна?

Юлашки вăхăтра Тамара, чăн та, ытла чĕкелсе кайрĕ, паллама çук улшăнчĕ. Шкулти ĕçсене те хутшăнмасть. Пĕр ачапа та этем шутлă калаçмасть, килĕштерейместь. Паян тата вăл шкула килмен, халĕ ак вечерта пур.

Çук, унпа пĕрре чун татса калаçса пăхмалла: мĕн шутлать вăл?

Рая, чи малти ретре лараканскер, хыçалалла çаврăнса, варринерехри парта хушшинче ларакан Тамара çине пăхса илчĕ.

Иккĕмĕш хутри коридор вĕçне партăсем лартса сцена майлаштарнă та, икĕ хĕрача акробат номерĕ кăтартрĕ, кун хыççăн спектакль пуçланчĕ.

Спектакль пĕтсен, Рая ура çине тăчĕ те, партăсем тăрăх пăхса, Тамарăна шыраса кайрĕ. Тамара, тин çеç кунта ларнăскер, йăп пулчĕ: халĕ ниçта та курăнмарĕ.

— Голубевăна курман-и?— ыйтрĕ алăкран кĕрекен Валентинран.

Валентин темшĕн çилĕллĕ те пăшăрханчăк сăнлă. Куçĕ ялкăшса тăрать.

— Çук,— терĕ вăл сӳрĕк кăмăлпа, хăйне ку ыйту пач тивмен пек.

— Мĕн эсĕ? Макăрман пуль?— тĕлĕнчĕ Рая, Валентина пит-куçран пăхма тăрăшса.

Валентин урăх ним шарламасăрах пăрăнса каясшăнччĕ,— ăна Рая çаннинчен тытса чарчĕ:

— Тăхта-ха,— терĕ вăл.— Чăн та, мĕн пулнă сана?

— Кай,— терĕ Валентин, хĕрачаран вĕçерĕнсе, вара çапла хушса хучĕ:— Вăл киле кайрĕ...

* * *

...Валентин калани тĕрĕсех пулман: Тамара киле каймарĕ...

Рая Валентина куриччен пĕр минут каялла шкул картлашки çинче акă мĕн пулса иртрĕ.

...Валентин залран тухрĕ те картлашка тăрăх пĕрремĕш хута аннă чух кĕтмен çĕртен Тамарăна асăрхарĕ. Валентина курсан, лешĕ карлăк çумне пăрăнса тăчĕ.

— Мĕн пĕчченех эсĕ?— терĕ Валентин хăйсем туслă чухнехи пек.

— Мĕн, санпа тăмаллаччĕ-им?— уçкăртрĕ хĕрача.

Валентин, çухалса кайса, сассине сасартăк улăштарчĕ.

— Ма манпа? Ачасемпе,— таварчĕ вăл илтĕни-илтĕнми хуллен.

— Сана мĕн ĕç? Кирек кампа тăрам!— касса татрĕ хĕрача, малтанхи пекех тарăхса.— Эсĕ мĕн тума чарăнтăн кунта? Кай!.. Кураймастăп сана эпĕ!

— Тамара,— терĕ Валентин шиклĕн.— Ман санпа калаçмалли пур... Эпĕ унта йăлтах уçăмлă çырман. Эсĕ ман çырăва тĕрĕс ăнланмарăн пулас...

Хĕрача — иртнĕ çуркуннехи майлах — Валентина хирĕç вăрт! çаврăнса тăчĕ.

— Ăнлантăм! Ăнлантăм!— терĕ вăл хăвăрт.— Йăлт ăнлантăм! Йĕксĕк эсĕ!.. Ултавçă, суеçĕ, киревсĕр!

Тамара çапла каласа тăкнă хыççăн картлашка тăрăх курнăçланарах та мăнаçлăн утса анчĕ. Вăл шкул килкартинчен тухрĕ те сăртран анакан сукмакпа сӳлтен кайнă çын пек ĕшенчĕклĕн утрĕ.

...Тамара халь хăйĕн мĕнпур чун ыратăвĕ мĕнреп килнине пĕлет ĕнтĕ. Малтан çакна пĕлмен чухне унăн сăлтавне вăл çутçанталăкра, хăй курман-илтмен çынсенче шыранăччĕ.

Ача чухнехи хаваслăх тарнăшăн та, çанталăк тĕксĕмленнĕшĕн те — пуриншĕн те, пуриншĕн те пĕр çын айăплă! Пĕтĕм çилĕ ун çине тăвăнать. Вăл çынна таварас килет. Унăн чунне те çапла ыраттарас килет. Ку çын вăл — Валентин. Анчах мĕнле ыраттарăн-ха ăна? Шăмшак, ӳтпӳ ыратни — чун ыратни мар-çке. Ку вăл чун ыратнинчен урăхларах.

Тамарăн темшĕн-çке — çакна тума хăй вăйсăррине туйса-и — ăш кӳтсе, тулса çитрĕ те, чун хурланчĕ.

...Çапла иккен вăл пурнăç! Мĕн ачаран ĕмĕтленнĕччĕ Тамара чăн-чăн лайăх тус, пысăк туслăх, майĕпен хĕрӳ юратăва куçакан туслăх çинчен. Чăн-чăн пысăк туслăх вăл çакăн пек лăпкă пурнăçра çук та пулĕ. Вăл пысăк ĕçре, пысăк кĕрешӳре, тен, хаяр вăрçă вутĕнче çирĕпленнĕ çыхăнура çеç пулать-тĕр. Тен, вăл пин çулта пĕрре тĕнчене килекен гени пек çеç çуралать? Ак çак кулленхи пурнăçра ытларах чухне, тен, тĕссĕр те илĕртӳсĕр пĕчĕк туслăх çеç — «юрату пекки»— тĕл пулать пулĕ? Вăл Тамара ăнланăвĕнчи пекки мар иккен. Тамара ăнланăвĕнчине çак халь куллен харпăр çыннăн палăракан туслăхпа (ку чăнчăнниех тесе ĕнентерсех ĕнентереççĕ) танлаштарсан, вăл чăн-чăннин ĕмĕлĕ çеç, темелле. «Санăн ку чăн-чăн туйăм мар, эсĕ ăна курман, чăн-чăнни вăл вăйлăрах, хĕрӳрех» тесе сивлесе тăкасран çеç — хăйне çакăн пек «кӳ-

рентернине» тӳсеймесӗр — вӑл (пысӑк туйӑма тӳссе курман, тӳссе курма та пултарайман ҫын) «ку чӑн-чӑн туйӑмах ман» тесе хӳтӗленет, хӑйне тӳрре кӑларса, пӗчӗк туйӑма чи пысӑк туйӑм тесе сӑрласа кӑтартма, ӑна, чӑнчӑннин ӗмӗлкине, ку вӑл япали хӑех тесе ыттисемшӗн ӗмӗт ҫути тума пӑхать. Пӗрре кӑна илтнӗ-им Тамара хӗрсенчен «Эп ҫав качча юрататӑп» тенине... Чӑн-чӑн туслӑхпа юрату ҫапла ҫеҫ-и вара?

Чӑн-чӑнни, тен, Тамарӑн та пулмасть? Тамара кӑшт чун туртнинех, кӑмӑл вылявнех — суя туйӑма — чӑн-чӑнни вырӑнне йышӑнмасть-и? Сӑмахран, Валентин енне Тамарӑн мӗнле туйӑм-ши? Ку чӑн-чӑнни тейӗпӗр. Апла Тамарӑн та, тен, тӗрлӗ романсенчи пек, Валентин сивӗннӗшӗн йӗмеллеччӗ, ӑнсӑр пулса ӳкмеллеччӗ? Тамара куншӑн ӑнтан кайса ӳкес ҫук-ҫке. Пачах урӑхла — ӑна халь ҫилӗ килет! Апла пулсан, Тамара ӑна юратман пуль нихҫан та? «Юратман»? Тивӗҫ пур-и-ха Тамарӑн «юрату» тесе калаҫма? «Тамара юратать» тени вӑл «пулӑ юрлать», «калта вӗҫет» тенипе пӗр мар-и? Тамара пек ахаль ҫынсен, тен, пӗтӗмпе те кӑмӑл вылявӗ ҫеҫ пулать пулӗ. Ӑмӑрткайӑк «ҫунат» тепӗрен каппайчӑк ырашпӑтри «манӑн та ҫунат пур» тени пек ҫеҫ пулӗ ку...

Мӗнле-ха кӑпла? Апла Тамара хӑйне хӑй ҫеҫ ултталать!

Тамара хӑйӗн туйӑмӗсене ыттисенчен хӑватлӑрах, хӗрӳрех, ҫирӗпрех тесе шутлатчӗ, вӑл куншӑн — хӑйне ҫутҫанталӑк ҫавӑн пек пысӑк туйӑм панӑшӑн — савӑнатчӗ, хӑй ҫакӑнпа ыттисенчен уйрӑлса тӑнӑшӑн мӑнкӑмӑлланатчӗ.

Эппин, Тамара ытти ахаль ҫынсенчен нимпе те уйрӑм мар. Тамарӑн Валентиншӑн вӑраннӑ туйӑмӗсем пек туйӑм кашни улах ачинех пулать!.. Вӗсен те-ҫке кулянма, пӑшӑрханма, чун-чӗрепе ҫунма, хӗрхенме Тамарӑран кая мар тахат ҫитет. Хӑйсене хӑйсем вара вӗсем, эпир те «юрататпӑр» тесе, ӗненсех ултталаҫҫӗ. Апла пулсан мӗншӗн-ха ҫав никамӑннинчен те уйрӑм мар туйӑмсене, шутсӑр пысӑк хака хурса, кӑкӑрта такам пӗр ҫын валли упраса усрамалла? Тен, сана хӑвӑнни пысӑкӑш туйӑм тавӑрса парайман ҫын валли те? Хӑвӑн мӗн пуррипе ҫырлахмалла-тӑр. Пысӑк туслӑха ӗмӗтленсен—ӑна, питӗ сайра тӗл пулаканскерне, ҫӗр ҫинче тупаймасӑр телейсӗре юлатӑн. Телей вӑл ху мӗн чухлӗ мӗскер ӗмӗтленнине тупни мар-и-ха? Пӗчӗкрех ӗмӗтленсен, ӑна тупма ансатрах,

вара ёмётленнё ёмёт çитет. Ёмёт çитни мар-и-ха вăл телей тени çĕр çинче?...

Таçта каçа юлса шыв ăсма каяканăн пушă витрисем кăринклетсе йынăшрĕç, кăшт тăрсан, пушă витре шăп çĕр çине перĕнсе чанклатни, пирчек юр ура айĕнче кăштăртатса ванни илтĕнчĕ, унтан пусă тараси лăй-лай туса сасă пачĕ.

Сивĕ тӳперен, шăлсăр аптранă карчăк хура тутăрне хăрах питçăмарти çинченех çыхса лартнă пек, катăк уйăх ёшенчĕклĕн пăхать. Йăмра çинчен — лĕкĕ юхнă пек — кас-кас пас тăкăнать.

Тамара, çакăн пек шухăшсемпе пăтранса, хăй пасăрах йăмра кутне тăнине шăмшак шăнса çӳçенсен тин тăна илчĕ.

Чуна салху пулса кайрĕ.

Ăçта хавасла-ши халĕ? Тен, шкулти вечертах лайăхчĕ? Унта, паллах, çак пас тытнă йăмра айĕнчи пекех мар ёнтĕ. Анчах унта Валентин! Çĕр çинче чи курайман çын! Тамара шкула кайса каллех Валентин куçне тăрăнать-и вара? Тен, киле каяс? Ун амăшĕ халь, ахăртнех, шурă çип сӳтет-тĕр. Тамара пӳрте кĕрсен ёнтĕ вăл аллинчи ĕçне сак çине хурать. Вара хурлă сасăпа хăйĕн вил хӳххи майлă юррине пуçлать: «Ăçта çӳрерĕн ара, хĕрĕм?..»

Ăçта чун канĕ-ши, чăн та?

Тамара сасартăк йăл кулса илчĕ: ăна Вальăн шăллĕ Коля аса килчĕ. Унран ырă ача ялта та урăх çук пулĕ. Селпӳ чĕлхи хăех пĕр ылтăн. Питĕ сывлăхран «икĕ чĕреллĕ» теççĕ ăна. Вăл сак çине хăпарса тăрать те, пĕр ури çинчен теприн çине ылмаш пускаласа, енчен енне сулкаланать. Зоопаркри пĕчченупа, тигр, урăх тискер кайăк çавăн пек малти урисем çинче сулкаланса тăраççĕ. Пĕчĕк ачасем те çавăн пек. Кунта, тен, çутçанталăкăн хăйне евĕр пĕрлĕхĕ пур-тăр: малашлăх çинчен ним шухăшламасăр, çак самантри ырлăхпа — тутă хырăмпа, пӳрт ăшшипе киленни е кичемрен хăйне хăй йăпанни...

Таçта тискеррĕн кушак çухăрса ячĕ те — Тамарăн çан-çурăм сăрăлтатса çӳçенсе илчĕ. Хĕрача хыпаланса ӳкрĕ, çырмаран чупса анчĕ те, аслă çулпа кăшт аналла ансан, ултă кĕтеслĕ çурт хапхине пăрăнса кĕчĕ.

Валя килте пĕчченех пулчĕ.

— Ой, Тамара! — терĕ вăл, хĕрачана тӳрех мăйран ыталаса илсе.— Мĕн тери кĕтрĕм эп сана паян! Ларатăп ак — эс те çук. Кăмăл пăтранса килчĕ.

Тамара, вăйранах кулăнçи тукаласа, Вальăран вĕçерĕнчĕ те пальто хывса çакрĕ.

Валя пит тавçăруллă, сисĕнкĕллĕ хĕр мар, çавăнпа вăл Тамара сăнпитĕнчи улшăнăва та, унăн кăмăлĕ пусăрăнчăкраххине те асăрхамарĕ. Вăл, çур çул хушши тӳпене уйăх хăпармасан та, «мĕншĕн ку çапла?» — тесе ыйтма чухламĕччĕ. Унăн мĕнпур сăнпитĕнчен темĕнле ним шухăшсăрлăх, маншăн пурпĕрех текен тӳлеклĕх тапса тăрать. Куншăн вара пур ăçтиçукран сăмах туса пакăлтатма тата çапах та, халăх халапĕсенчи хĕртсурт пек, кĕсле каланă майлă çемçе юрăсене юрататъ. Тамара çакăншăн хисеплет те ăна.

Валя тӳрех пакăлтата пуçларĕ.

— Килте пĕчченех-ха,— терĕ вăл, тĕпел кукринче хăмлаллă йĕпе алапа çаврăнкаласа.— Сăра тунăччĕ. Сĕртĕм. Анне дежурствăра, çурçĕр иртсен пĕр виçĕ сехетсенче тин таврăнать...

— Сирĕн Коля ăçта?— ыйтрĕ Тамара, Валя пакăлтатнине хăлхана та чикмесĕр.

— У-у, Коля çук ĕнтĕ халь,— каларĕ Валя савăнăçлăн.— Ача садне ăсатрăмăр. Эрнере пĕрре çеç киле таврăнать ӳлĕм.

Тамара пĕр ăстрăм чĕнмерĕ.

— Çĕвĕ машини те курăнмасть, тем, сирĕн паян?—йĕри-тавралла пăхкаларĕ Тамара.— Сăмса тутри хĕрри пӳклемеллеччĕ ман...

— Аппа илсе кайрĕ çав ăна,— тавăрчĕ Валя.

Тамара кантăк çинелле пăхса ларчĕ.

— Валя,— чĕнчĕ вăл тепĕр авăкран.— Ку мĕн сан?

Валя чупса пычĕ те алăпа çырнă çĕтĕк кивĕ кĕнекене Тамарăран туртса илчĕ.

— Юмăç кĕнеки. Маруçран илсе килтĕм. Пăхар-и?— терĕ вăл, вара, кĕнекен пĕрремĕш листине уçса, сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

— Пăхар,— килĕшрĕ Тамара.— Мĕн суйма пĕлет вăл?

— Суять сана!— терĕ Валя шурă хутпа кăранташ шыранă май.—Суймасть вăл. Тĕнчере пайтах çавăн пек вăрттăн япала. Эсĕ куна тĕшмĕш тетĕн пулĕ? Нимĕн чухлĕ те тĕшмĕш мар. Сăмахран, асăрхана-и, хăвăн умăнта пыракан çын çине хыçран хытă-хытă тинкерсе пăх — тӳрех каялла çаврăнса пăхать.

Валя Тамара умне хутпа кăранташ хучĕ.

— Акă,— терĕ вăл,— асăнта шухăшла та ху мĕн пĕлес тенине — çак хут çине ним шутламасăр йĕркипе па-

таксем туртса тух — тăватă рет; вара тăватшар патакăн чĕрсе пăрах.

Тамара Валя кăтартнă пек патаксем туртса тухрĕ те тăватшарăн-тăватшарăн чĕрчĕ, ретсенчи тăватта çитеймесĕр юлнă патаксен хисепне уйрăммăн çырчĕ. Унăн вара 0, 1, 3, 2 хисеп шучĕсем пулчĕç. Валя вĕсене 01 — 32 туса çырчĕ те çав хисепе кĕнекере шырарĕ.

— Ытлашши пысăка ĕмĕтленетĕн: савмасть,— вуларĕ Валя кĕнеке тăрăх.

Тамара, кăрт! сиксе, пит-куçне пĕркелентерчĕ.

— Эй, пĕлмест вăл,— терĕ хĕрача, хăвăрт ура çине тăрса. Вăл тĕкĕр умне пырса тăчĕ те, икĕ çивĕтне малалла туртса, тĕкĕр витĕр пăхрĕ, унтан тĕкĕр çинчи сăнне, пĕчĕк ача пек, чĕлхе кăларса кăтартрĕ.

— Кирлĕ тата вăл мана! Халь ир-ха...

— Тепре пăхар-и?— сĕнчĕ Валя.

— Кай!

Хĕрачасем пĕр хушă сăвă-юрă альбомне пăхкаласа ларчĕç. Тамарăна юрăпа юрă хушшине çырса хунă каларăшсем кăсăкла пек туйăнчĕç. Вĕсем, тĕрлĕрен кĕнекесенчен çырса илнĕскерсем, ытларах — юрату çинчен. «Любовь — не вздохи на скамейке и не прогулка при луне», тет пĕр каларăшĕ. «Умри, но не давай поцелуя без любви»,— тет тепри.

Альбома уçкаласа тухсан, Валя тĕпеле чупса кайрĕ.

— Эпĕ сана ăшă сăра ĕçтерем-ха, тип сĕртĕм,— терĕ.

— Уй, ан ухмахлан,— терĕ Тамара.— Эп нихçан та ĕçмен.

— Ĕçмен? Кай, ухмах! Вăл чей вырăнне çеç-çке.

Валя тĕпелтен сăра ленкесĕ йăтса тухса сĕтел çине лартрĕ, кукăль касрĕ, стакансене сăра тултарчĕ те пĕр стаканне хăй тытрĕ, теприне Тамарăна сĕнчĕ.

— Учительсем пĕлсен ĕнтĕ — пĕтереççĕ,— терĕ Тамара; вара вăл, чупса кайса, урам енчи чӳрече каррине лайăхрах туртса карчĕ, каялла сĕтел патне таврăнса, стаканне тытрĕ, хăй ĕçичченех ы-ых!— тесе çӳçенсе илчĕ, тутанса пăхрĕ те кулса ячĕ:— Э-э, ку пылак япала çеççке. Эп йӳçĕ тесе.

Хĕрсем стакансене пушатрĕç те, ăшĕ тăкăнасран икĕ алăпа тытса, пĕр хушă кукăль касăкĕсемпе тăрмашрĕç.

— Пирĕн шкула студентсем практикăна килнĕ халь,— пĕлтерчĕ Тамара пĕр хушă шăпăрт ларса кукăль çинĕ хыççăн.— Пирĕн класри — каччă, Геннадий Васильевич ятлă. Çав темшĕн мана сăнанă пек туйăнать.

— Юратса пăрахнă вăл сана, эппин,— терĕ Валя, Тамарăн стаканне татах сăра тултарса.

— Ухмах,— терĕ Тамара.— Учительсем те юратаççĕ-и вара?

— Ĕç тепре.

— Аюк!— пуçĕпе хирĕçлесе сулларĕ Тамара.

— Эппин, кукăль çырт.

— Тавах, çирĕм ĕнтĕ.

— Итле-ха, Тамара, Маруç хĕрĕх чĕрнеллĕ, тет...

— Аташассипех эс!

— Аташасси сана! Эп хам çапла пулса тăрас пулсан-и? Уйăхшăн-хĕвелшĕн хам пуçа хам...

— Кай... Кам калаçтарать-çке сана çавăн пек сăмах? Чĕлхе вĕçне килни — пуç вĕçне килет, тет.

Кун хыççăн вĕсем каллех альбом тытса ларчĕç. Унтан Тамара альбома пăрахрĕ те Вальăна мăйĕнчен ыталаса илчĕ.

— Ой, Валюçă,— терĕ вăл, пичĕпе Валя пичĕ çумне сĕртĕнсе.— Эсĕ мана сăра мар, темскер ĕçтертĕн пулмалла?

— Мĕншĕн?— терĕ Валя.

— Ой, эсĕ нимĕн те пĕлместĕн. Мана халь çав тери аван пулса кайрĕ. Чăн та! Акă сана пăхатăп, йĕри-тавра... Темĕнле ырă тĕлĕкри пек! Ача чухне тахçан тĕлленнĕ тĕлĕк куç умне тепĕр хут тухса тăнă пек! Тĕлĕк те мар, пурнăçах-ха, анчах темшĕн вăл ялан çакăн пек мар.

Валя хăйĕн хĕр-тусĕ çине тĕлĕнсе пăхрĕ. Тамари сӳтĕлсех кайрĕ.

— Валя, Валя!— терĕ вăл малалла.— Пĕлетĕн-и, халь мана мĕн аса килчĕ? Ача чухнехи пĕр илемлĕ ир... Ирхине хĕвелĕн малтанхи пайăркисем çурт тăрринчен шуса анаççĕ те — кантăкран кĕреççĕ, вара икĕ чӳрече мĕлки лапкăшĕпех стена çине ӳкет те, тепĕр стенаран та кантăк каснăнах туйăнать, çутă-çутă... Тулта вара, килкартинче — сулхăнрах иккен. Кăшт сивĕ çил вĕрет. Ман çине йăмра мĕлки... хĕвел çути те тин çеç картлашка çинчен çĕрелле анать-ха. Курăк çинче — тăп-тулли сывлăм, алла сăтăратăн та — шыва чиксе кăларнă пек йĕпенет. Уçă хăй... Пĕтĕм килкарти сывлăмне пуçтарса тухатăп. Пите те çавăнпах сăтăратăп. Тӳпе вара... те хĕвелĕ йăмра хыçĕнчен куçа шартманнипе — кăн-кăвак! Кăн-кăвак, Валя!.. Хăш чухне сивĕрен кун çурла уйăхĕн вĕçнелле çавăн пек пулать. Ун чухне çил сасси те улшăнать, темĕнле кĕрхи сасă... çупа кĕр тавлашнă вăхăт-и вăл... Темĕн-

ле сывлăш çулăмĕ пырса çапать те — пĕр касси сивĕ, тепри вĕри... Ман ăшри кăмăл та халь юлашки вăхăтра çав çурла уйăхĕнчи çанталăк пек... Ой, Валя, эсĕ ăнланмастăн мана! Аван! Валентинсăрах аван çĕр çинче! Валюç, э, Валюç! Юрлар-и, Валюç?

Хĕрачасем урмăшнă çинçе сасăпа: «Таня, Таня, Танечка!» — тесе юрласа ячĕç. Тамарăн сасси уйрăмах çинçелнĕ.

На Танечку внимания
Никто не обращал.
Не может быть, представь себе —
Никто не обращал...—

юрларĕ вăл, сассине çак тĕлте хăпартса. Унтан вăл каллех Вальăна ыталаса илчĕ.

— Пĕлетĕн-и, Валюç,— терĕ вăл.— Арçын ачасем çав тери ултавçă иккен... Валентин та çавнашкал тесе эпĕ ăша та илмен.

— Саватăн-им эс ăна?

— Çук! Халь кураймастăп! Тавăрас килет ман ăна. Ыраттарас килет!

— Айван эс, Тамара!— терĕ Валя.— Мĕн тăван çав йĕпе сăмсапа? Каччăсем вĕсем хĕрсене тепĕр каччăпа çӳренине курсан питĕ тарăхаççĕ, тин вара юрата пуçлаççĕ.

— Чăнах-и?

— Айван,— терĕ Валя каллех, унтан кĕтмен çĕртен çапла сĕнчĕ:— Атя клуба каяр. Ташлама пĕлетĕн-и эсĕ? Атя.

— Атя!..

Хĕрачасем пĕр çаврăм вальс ташласа пăхрĕç. Тамара вара хыттăн кулса ячĕ те пуçне Валя кăкăрĕ çине чикрĕ:

— Каяр часрах,— терĕ вăл.

Кăмăлĕпе çĕкленсе кайнă хĕрачасем, хаваслăн шуйхашса, вăр-вар тумланчĕç те клуба тухса утрĕç.

...Клуб умĕнче икĕ яш çын, ялккас калпаклăскерсем, пăр катăкне хире-хирĕç тапкаласа тăраççĕ. Матрос тумĕ тăхăннă йĕкĕт, хĕрачасене курсан, пăр катăкне вĕсен еннелле тапса ячĕ.

— Туп-йытăлла!— кăшкăрчĕ вăл, аллине теветлĕн сулса.— Йытă хĕрсенче!

«Йытă» Валя ури айне кусса кĕчĕ, Валя ăна каялла матроса тапса пачĕ те, лешĕ, «йытта» хуллен-хуллен шутарса пырса, унпа Тамарăна хăвала пуçларĕ. Тамара, хаваслăн шуйхашса, ахăлтатса, Валя тавра тарса çаврăнчĕ.

Тамара «Геннадий Васильевич студент-практикант мана сăнанă пек туйăнать» тенинче тĕрĕсси пулнă. Геннадий Васильевич ку хĕрача çинчен психологилле характеристика çырма хатĕрленнĕ, çавăнпа ăна пур енчен те сăнама, тĕпчеме тăрăшнă. Вăл Тамарăсем патĕнче те пулнă, Тамара пирки ăçта май килнĕ унта, камран май килнĕ унран ыйтнă.

Психологилле характеристика çырма вăл, теп, ку хĕрача çинче чарăнман, пачах урăх ача суйласа илнĕ пулĕччĕ-и, анчах Тамарăн студентсем практикăна килнĕ кунхинех Гена куçĕ тĕлне лекмелле пулчĕ.

Студентсен практикăри малтанхи канашлăвĕнче студентсене классем уйăрса панă хыççăн Генăна 9-мĕш класс пуçлăхĕ Максим Миронович хăйĕн ачисемпе паллаштарма ертсе кайрĕ. Гена класпа паллашнă хыççăн, урок ларсан та, класрах юлчĕ. Урока шкулта чылай хура-шур курнă Вера Федоровна иртерет.

Вера Федоровна урок ăнлантарнине ачасем пурте тăнласа итлеççĕ. Пĕр ача çеç, Гена çумĕнчи хĕрача, учитель енне те пăхмасть. Вăл хăрах питçăмартине ывăç тупанĕпе тĕревлесе, типĕтмелли хут çине кăранташпа тем чĕркелесе ларать. Переменăна тухас чух Гена хĕрача умĕнчи дневник патне алă тăсрĕ, «Юрать-и пăхма?» — ыйтрĕ вăл. Хĕрача дневнике карт! туртса илчĕ те партăна чиксе хучĕ...

Характеристика пама çак хĕрачана суйласа илес сăлтавĕ ку кăна пулмарĕ-ха. Практика пуçлансан иккĕмĕш кунне Гена уроксем хыççăн учительсен пӳлĕмĕнче пĕчченех ларатчĕ. Kaç сĕмĕ çапнă пӳлĕмре пысăк стена сехечĕ çеç юлхавлăн таклаттарса сасă парать. Вăхăтăн-вăхăтăн коридорта техничкăсем шакăртаткалани, таçта партăсем куçара-куçара лартни илтĕнет.

Тепĕр авăкран учительсен пӳлĕмĕ енне, вĕттĕн таклаттарса, ура сасси çывхарчĕ.

Ку — Вера Федоровна завуч пулчĕ.

— Эсир халĕ те кайман-çке? — терĕ вăл, пӳлĕме кĕрсен, сĕтел хушшине ларса.— Мĕн, класс журналĕпе паллашатăр? Юрать, юрать. Аван-ха ку сирĕнпе курнăçни,— терĕ вăл малалла.— Ну, мĕнле, килĕшрĕ-и сире пирĕн шкул? Хăвăрăн класăр епле?

Вера Федоровна ку класпа ĕçлеме Генăн хăйĕн çирĕп пулмалли çинчен, Максим Миронович, ватăлса йӳтес ен-

нех сулăннăскер, хăйĕн пенсие каймалла пулин те учительтех ĕçлекенскер, япăх ĕç пуçĕ иккенни çинчен, вăл ачасене ытлашши ирĕке янипе класс йĕрки те, пĕрлелешӳлĕх те хавшани, класс тулашĕнчи ĕçсем пăчланса ларас патне çитни çинчен каларĕ.

— Максим Мироновича ачисем хăйсем ертсе пыраççĕ,— терĕ Вера Федоровна.— Миçе хут ыйтмарăмăр пуль çĕнĕ учитель,— çук та çук, теççĕ. Килес çул ĕнтĕ пулатех, терĕç. Хăйĕн предметне вăл — истори — лайăхах пĕлетха, лайăхах ăнлантарать, анчах ачасемпе ĕçлеме вара... ватăлчĕ çын, мĕн тăвас тен. Ĕçлеймест... Халь, ав, паян килмен те — чирлесе ӳкнĕ, тет. Больницах кайса выртнă. Сирĕн, Геннадий Васильевич, çак эп каланисене йăлтах шута илмелле...

Гена ертсе кайнă ачасем улмуççи лартнă çĕртен тарса пĕтнине пĕлсен, Вера Федоровна кăшт шухăшларĕ те çапла каларĕ:

— Кунта ачасем мар, хăвăр айăплă. Вĕсене йĕркене кĕртес, айтаса пырас пулать. Эсир тĕслĕх кăтартас тесе хăвăр ĕçлеме тытăннă та—ачасене тĕллеттерсе пыма маннă. Апла эпир начар ĕç пуçĕ.

Вера Федоровна ырантан декретлă отпуска каять иккен, çавна май вăл юри студент-практикантсемпе калаçса ларма килнĕ. Ытти практикантсемпе вăл паçăрах калаçнă, методист хушса янă ĕçпе хулана кайнă пулнă студента акă халь тĕл пулчĕ. Геннадий Васильевича вăл 9-мĕш класри хăшпĕр ачасемпе уйрăммăн ĕçлеме хушрĕ.

— Уроксем хыççăн хăварăр, харпăр хăй ятне ĕç парăр, килĕсене çӳрĕр,— каларĕ вăл.— Куçран ан вĕçертĕр пĕр ачана та... Урок ăнлантарнă чухне те сăмах хушшинченех ыйткаласа илĕр — çывăрса ан кайччăр. Оркестр дирижерĕ пек пулмалла учителĕн.

Сăмах Голубева Тамарăпа Савельев Валентин çине çитсен, Вера Федоровна тенкелĕ-мĕнĕпех Гена çывăхнерех сикрĕ.

— Савельевшăн хăрамалли çук пулĕ,— терĕ вăл.— Голубева пирки — урăх ыйту... Вăл шанăça çухатнă çын пулса юласран та хăратăп эпĕ. Мĕнле хĕрача вăл? Эпĕ ăна ниепле те пĕлсе çитерейменрĕм. Хăй вăл ухмах марха; пултарулăхĕ те, тимĕ те çук мар унăн. Тăватăмçул вăл кунта 5-мĕш класс пĕтерчĕ — йăлт «отлично» паллăпа. Кайран каллех Куйбышев тăрăхне куçсе кайрĕç, пĕлтĕр март уйăхĕнче çĕнĕрен таврăнчĕç. Халĕ пăхатăп та: «тăваттă» паллăсем те сайраланса пыраççĕ унăн. «Тăват-

тăлăх» вăй çемĕнех вĕренме пултарать вăл. Унăн пуçĕпе «пиллĕк» паллăран кая вĕренмелле мар пек. Хальхаçсăн тата сисĕнмеллех улшăна пуçларĕ. Уроксенче сӳрĕк ларать, шкул ĕçĕсене хутшăнмасть. Халлĕхе шăв-шав çĕклемелли йӳтĕм çук-ха, çапах та ку учителĕн сехрине хăпартакан япала. Учительсене те шанса, хисеплесех каймасть, юлташĕсемпе тӳрмен. Мĕншĕн çапла? Ним калама та аптравлă. Çийĕнчех тытăнмасан, вăл пирĕн алăран вĕçерĕнсех кайма пултарать.

Вера Федоровна, шкапран журнал кăларса, Голубева мĕнле вĕренсе пынине тата ун çинчен хăй мĕн çырса пынисене кăтартрĕ.

Хĕрача улшăнса пыни, чăн та, курăнсах тăрать. Малтанхи кунсенче унăн «пиллĕк» паллăсем ытларах пулнă, Вера Федоровна ун чухне Голубева çинчен «Тимлĕ ача, тăрăшать» тесе çырса хунă, кайран çырнисенче «хушнине тăвасшăн мар», «урока тăнласа лармарĕ» тенĕ йышшисем нумай.

— Кусем хам сăнанисем çеç-ха. Эпĕ, тен, йăнăшатăп та пулĕ. Ытти учительсенчен ыйткаларăм та, вĕсем ним те апла-капла шарламаççĕ,— терĕ Вера Федоровна малалла, унтан вăл журнала хăй вырăнне кайса хучĕ те Гена енне çаврăнчĕ:— Акă мĕн, Геннадий Васильевич, эсир сăнăр-ха, тĕпчĕр вăл ачана. Майĕ килсен — пулăшăр та. Çывăхланăр... аслă юлташ пек. Эпĕ хам унпа ниепле те уйрăм-уççине тупаймарăм. Манăн хамăн вăхăтăм та çитмерĕ кун валли, асăрхани те тахçанах мар. Ку енчен илсен, сирĕн пысăк майсем пур: хăвăр та халь вĕренекен шутĕнче-ха. Кун пек чух çынсем час туслашаççĕ. Ăнлантăр-и эсир мана?

— Ăнлантăм,— терĕ Гена.

— Анчах сирĕн хăвăр педагог, учитель иккенне нихçан та ниçта та манмалла мар. Тен, ăна йыш ĕçне шанса памалла, тен, класс тулашĕнчи ĕçсене хутшăнтармалла, тен, лайăх юлташ тупма та пулăшмалла пулĕ — кунта ăна сăмах вăйне кĕртме талпăнни çеç сахал. Йыш, йыш!— çакна манмалла мар. Чех педагогĕ Коменский мĕн калать-ха... «Йывăç вăрманта, курăк улăхра, пулă мăн шывра лайăх çитĕнет. Çавăн пекех ача та йышра лайăх аталанать»,— тет. Вунçиччĕмĕш ĕмĕртех ав мĕнле каланă...

Учительсен пӳлĕмне дежурнăй-учитель пырса кĕрсен, Вера Федоровна сехет çине пăхса илчĕ.

— У-у, вунпĕрмĕш сехет!— терĕ вăл.— Кайма вăхăт.

Ну, çапла, Геннадий Васильевич, эпĕ сире шанса тăратăп. Йывăр килсен, ан именсе тăрăр — пулăшатпăр. Ман патăма канаш ыйтма кирек хăçан та пыма пултаратăр.

...Гена тепĕр куннех Тамарăн шкулти мĕнпур хутне пăхса тухрĕ, унтан унăн килне кайса курчĕ.

Амăшĕ хĕрне вĕрентесшĕн. Чăн та, вăл кăшт иккĕленет ĕнтĕ ачи вăтам шкул пĕтерсен урăх ниçта та вĕренме кĕреймĕ тесе. Тамара кӳршĕри Валя ятлă хĕрупраçпа туслине те каласа пачĕ амăшĕ. Валя текенни виçĕмçул вăтам шкул пĕтернĕреннех ниçта ĕçлемесĕр аслă шкул ĕмĕчĕпе пурăнать-мĕн. Амăшĕ унăн уйрăм çынсемпе предприяти хуçалăхĕсене страхлакан агент, командировкăсене пит тăтăш çӳренĕ май, Валя час та час киле хăй тĕллĕн çеç юлать, пĕччен çĕр каçма хăратăп тесе, Тамарăна илсе каять.

Класри комсорг Рая шкулта Тамара никампа та килĕштерсе кунăçа кӳрейменни, унпа вĕçне-хĕрне тупма йывăрри çинчен, Райăна хăйне те итлеменни çинчен каласа пачĕ. Чурăс та чăркăш ача-мĕн.

Паян вара Рая çапла каларĕ:

— Геннадий Васильевич,— терĕ вăл, мăн çын пек шухăшлăн сăмах пуçарса,— эпĕ ĕнер Тамарăна клубра ӳсĕр куртăм. Кайран вăл пĕр матроспа çавтăнса кайрĕ... Эпĕ малтан хăйĕнпе каласса пăхасшăнччĕ, анчах калаçма майĕ çук унпала: «Эсĕ кăнтăрлах симĕс тĕлĕк курса çӳретĕн»,— тесе тутине мăрт турĕ те çаврăнса утрĕ. Мăн кăмăллă вăл питĕ. Мĕн тумалла халь манăн, Геннадий Васильевич? Канаш парăр-ха тархасшăн.

— Тен, йăнăшрăн пулĕ?

...Гена, чăн та, çакна ĕненме пултараймарĕ. Анчах ăш вĕçрĕ. Акă ĕнтĕ практика пуçланни икĕ эрне иртрĕ; Вера Федоровна отпуска кайни икĕ эрне çитрĕ, анчах Гена ку таранччен Тамара çинчен ним те уçăмлăн пĕлмест-ха, Тамарипе хăйпе те куçа-куçăн калаçса пăхман.

САККĂРМĔШ СЫПĂК

Хăшпĕр çын — çăва тĕпне кайтăр та — пĕрре пăхсах килĕшмест. Çынни хăй, тен, лайăхскерех-и...

Малтанхи кун хваттере пырсанах Генăна çавăн пек Митюк килĕшмерĕ. Гена хваттер шыраса çак çурта кĕрсе тăрсанах:

— Мĕн кирлĕ?— тесе ыйтрĕ вăл, çӳç тураса тăракан-

скер, каялла çаврăнмасăрах, Гена çине стена тĕкĕрĕ витĕр пăхса.

Гена унпа калаçса-туса çăвар тутине сая ямасăрах тухса каясшăнччĕ — пӳрте пĕчĕк хĕрарăм пырса кĕчĕ. Ку вăл кил хуçи пулчĕ иккен. Карчăк самаях кăмăллине кура, Гена хваттере çакăнтах юлчĕ. Унăн ывăлĕ вара пĕрре те хăйне хуман.

Митюк виçĕмçул Вальăпа пĕрлех вăтам шкул пĕтернĕ, Валя пекех, ниçта та ĕçлемен. Вăл пĕр-пĕр çар училищине вĕренме кĕрес шутпа икĕ çул умлăн-хыçлăн, кутамкка çакса, кӳршĕ-аршăпа, амăшĕпе сывпуллашса, килтен туха-туха кайнă, хăй тепрер уйăхрап — уйăх çурăранах каялла таврăннă. Çынсем каланă тăрăх, вăл унта вĕренме кĕме экзамен тытайман имĕш. Кун пирки кам та пулин сăмах хускатсан, Митюк калаçăва аяккалла пăрнă. Халь вăл пĕр-пĕр урăх çар училищине кайма военкомат чĕнессе кĕтсе пурăннă.

Каçхине Митюк киле çур çĕр иртсен таврăнать. Ирхине вăл Генăран çывăрса юлать. Амăшĕ вăл çывăрнă чух хыттăн калаçма та чарать. Гена таврăннă çĕре Митюк пĕрмай килте çук. Гена ăна район библиотекине кайнă май хăш чух клубра бильярд сĕтелĕ умĕнче е коридорта хĕрсемпе айкашса тăнине куркалать.

Гена унпа пĕрре те калаçмаллах калаçман. Митюк çеç хăш чухне Генăран пĕрер-икшер пирус ыйтса илет, пĕр эрне каялла тата вунă тенкĕ укçа кивçен илнĕччĕ.

...Паян кĕтмен çĕртен вĕсем хушшинче çакăн пек кăйттăрах калаçу пулса иртрĕ.

Гена, çиччĕрех тăнăскер, илĕм-тилĕм ир çинчех алăкăн-тĕпелĕн уткалама тытăнчĕ, çук ӳслĕкех ӳсĕркелесе илчĕ. Митюк амăшĕ шăпрах çӳреме хушнине те хăлхана чикмерĕ. Карчăк тулалла тухсан, вăл Митюк вырăнĕ патне пычĕ те Митюк çийĕнчи çиттие туртса сирчĕ.

— Тăр, ыйхă чăпти... Аякку шăтса кайĕ тата,— терĕ вăл çурма шӳтлерех.

Митюк ирĕксĕрех тăрса ларсан, Гена каллех ун умĕнче чарăнчĕ.

— Итле-ха,— терĕ вăл.— Ĕнер каçхине эс ăçта пулнă?

Митюк шурă куçне мĕкĕл çавăрса кăтартрĕ.

Гена ним хускалмасăрах вăл мĕн тавăрса каласса кĕтсе тăчĕ.

— Сана мĕн ĕç?

— Çук, çук, кала-ха чăннипе... кампа пулнă?

Митюк амăшĕ пӳрте кĕрсе Гена çине кăнн тинкер-

сен — калаçу татăлчĕ. Гена каллĕ-маллĕ уткаларĕ те урăх ним чĕнмесĕрех шкула тухса кайрĕ. Вăл кунĕпех вĕчĕрхеннĕ кăмăлпа çӳрерĕ.

«Тем тесен те, Митюкахчĕ вăл,— шухăшларĕ Гена тек-текех,— çавахчĕ, урăх никам та мар». Ку анкă-минкĕллĕ шухăшсем акă мĕнрен килчĕç.

...Виçĕмкун Гена практикăна килнĕренпе пĕрремĕш хут ерçӳллĕ вăхăт тупрĕ те — клуба тухса утрĕ.

Гена çитнĕ çĕре кино пуçланнăччĕ.

— Журналĕ çеç-ха,— терĕ алăк умĕнче билет сутса ларакан хĕрарăм. Гена, экран çинелле каякан хĕвел ури пек çутă ярăмĕпе çеç çуталнă зала кĕрсе, куç тĕлне пулнă малтанхи пушă вырăнах, хĕрринчи тенкел çине ларчĕ. Журнал пĕтсен, зал çуталса кайрĕ. Малти ретрен Генăна студенткăсем кăчăк туртса илчĕç, темшĕн йăл-йăл кулкаласа илчĕç, хăйсем хушшинче тем пăшăлтатрĕç. Гена çакăн хыççăн тин хăй çумĕнчи хĕрача çине çаврăнса пăхрĕ.

— Тамара,— терĕ вăл, кĕтмен çĕртен ун çумне çакланнипе тĕлĕнсе.

Хĕрача пăркаланса илчĕ те Генăран аяккарах сикрĕ. Ун çумĕнче тулли питлĕ, сарлака туталлă хĕр тата яка пӳ-силлĕ йĕкĕт — Митюк, пиччĕшĕ ярса панă матрос тумне тăхăннăскер, ларaççĕ.

Кино «Красное и черное» ятлăччĕ. Тамара çак картинăна курма килнĕшĕн пăшăрханса та илчĕ Гена. Шкул ачисене пăхса ларма çăмăлах мар йĕрĕнчĕк те намăссăр сценăсем сахал мар кунта.

Хĕрача экран çинче мăшăр курăнса каймассерен пуçне аяккалла пăрать те пуçне чикет, чылайччен çĕклемест.

«Яр-уçăмлă чăнлăх çирĕпленеймен çамрăк чуна амантмаллах пырса тивет пулас»,— шутласа пычĕ Гена çакăн пирки, кино хыççăн килелле утнă май.

...Ансăр укăлчаран тухнă чухне Гена куçĕ ирĕксĕрех йăмра тĕлĕнче тăракан мăшăр енне туртăнчĕ. Гена малтанласа кун çине тепре çаврăнса та пăхмарĕ, анчах киле çитерехпе мăшăр темшĕн куç умне тухса тăчĕ. «Митюк пекехчĕ-çке йĕкĕчĕ?— сасартăк астуса илчĕ вăл.— Чăнах çавă пулчĕ-ши?» Чĕрере тем вĕçерĕнсе кайнă пек пулчĕ.

Пуçран темĕнле урăм-сурăм шухăш туха та пĕлмерĕ. Хĕр, тем йăлăнса, каччинчен аяккалла туртăнмин те — Гена, тен, кун çинчен шухăшламастчĕ те пулĕ, паян ирхи калаçу та хускалмĕччĕ.

Хӗрача ҫав йӗксӗке савать-и вара? Апла вӑл мӗншӗн аяккалла туртӑнать-ха? Ҫук пулӗ. Митюк ку енӗпе—вал ҫерҫи. Хӗрсем пирки мӗн калаҫнине (калама намӑссине те) илтнӗ Гена унран. Хӗрача ҫумне вӑл ирӗксӗр ҫулӑхать. Ҫавӑ ҫеҫ...

Гена, ҫакӑн пек шухӑшсемпе упи-супиленсе сехете яхӑн умӗнчи кӗнекен пӗр страницине ниепле те вуласа тухаймасӑр ларчӗ.

Сехет йӗпписем сакӑр сехет кӑтартрӗҫ.

Гена пиҫиххине туртса юсарӗ, тумланчӗ те урама тухрӗ.

Тулта шӑнтса кайнӑ. Ҫӑлтӑрсем те ҫӑрарах. Анӑҫ енчи горизонт хӗрринче анса ларма патне ҫитнӗ ҫӗнӗ уйӑх месерлерех ҫакӑнса тӑрать. Урамри электричество юписем ҫинче ҫунакан лампочкӑсем тавра куҫа курӑнми вӗтӗ юр пӗрчисем сывлӑшра ылтӑн хӑйӑрӗ ҫунӑ пек чӑлтлатачӑлтлата сӳнеҫҫӗ.

Гена ҫӗлӗк хӑлхине антарчӗ те ботинка кӗли айӗнче хӑвӑл пекех янӑракан тӑкӑс ҫулпа клуб енне утрӗ. Ҫул айккинче телефон юписем янӑраса ҫеҫ лараҫҫӗ, хыҫри юпа сасси йӑнсан, малти янӑраса ҫывхарать. Пасарса кӳпченӗ пралуксем татӑласлах каранна.

«Митюк сӑнпуҫ енчен хурламалла мар ӗнтӗ,—шутларӗ Гена каллех.— Анчах хӗрача ӑнланса илме пултарӗши ӑна?»

Ҫапах та мӗнле хӗрача-ха вӑл?

Учительсем те ӑна ӑнлансах пӗтерейменҫҫӗ. Малтанхи шкултан панӑ характеристикинче нимех те ҫук: хушнӑ ӗҫе тӑвать, тирпейлӗ, тӑрӑшать, аташмасть... Вӑл, чӑн та, ытти ачасем пек аташмасть, шавламасть, вылямасть те. Анчах шкул пурнӑҫӗпе, ытти ачасен пурнӑҫӗпе пурӑнмасть. Вӑл пӗтӗмпе те пӗр хор кружокӗнче ҫеҫ тӑратьмӗн, унта та асра-тӗсре ҫеҫ ҫӳрекелет. Ӑна, чи малтан, шкул йышӗпе явӑҫтармалла. Ҫакна Гена лайӑх ӑнланать. Куна тума ҫӑмӑл мар; куна тӑвас тесен, шкулта та темӗнле улшӑнусем кирлӗ.

...Генӑна ҫул ҫинче тахӑш класри икӗ палламан арҫын ача ҫеҫ — те вулав ҫуртне кайнӑскерсем — хирӗҫ пулчӗҫ. Вӗсем, Генӑна паян пӗрремӗш хут курчӗҫ пулин те, ҫӗлӗкӗсене тытса, «До свидания» тесе юлчӗҫ.

Шалтан темле авӑнчӑклӑ, сикчевлӗ ташӑ ҫемми илтсе, Гена клуб умӗнче кӑшт тытӑнса тӑчӗ те зала кӗчӗ.

Залра, тенкелсене сцена ҫине куҫарса лартса, ҫаврӑн-

каламалăх пушă вырăн тунă. Стенасем çумне çеç — лармалăх — тенкелсем хăварнă.

Çамрăксем мăшăрăн-мăшăрăн çаврăнаççĕ. Кунта шкулти ачасем те — уйрăммăнах, 10-мĕш класрисем — курăнкалаççĕ. Купăс вырăнне — радиола кĕвĕ калать.

Клубра тăтăшах кино е юрă-ташă каçĕсем пулаççĕ пулин те, Гена кунта иккĕмĕш хут çеç-ха. Пĕрмаях вăхăт çук. Тетрадьсем тĕрĕслесси, уроксене хатĕрленесси, класс тулашĕнчи тĕрлĕ вак ĕç вăхăта çав тери нумай илеççĕ. Кунсăр пуçне хăйне çирĕплетсе панă класра эрнере пĕрре политинформаци ирттернĕ май — ку яхăнта кăçалхи хаçат-журнала та пĕтĕмпех тепĕр хут тĕплĕн пăхса тухма тивет. Малтанхи эрнере кино курма та вăхăт ӳкереймерĕ Гена. Ташăсене вара вăл, хăй ташлама пĕлнине пăхмасăрах, хисеплесех хисеплемен.

Ташă ĕнтĕ вĕçленсе пырать. Яшсем пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн килелле саланчĕç. Тепĕр самантран кунта тăват-пилĕк мăшăртан ытла юлмарĕ.

Яшсем пирус мăкăрлантараççĕ, çăмăлçах сăмах, тăрлавсăр шӳт, кулă янкăшать.

Зал кĕтессине икĕ мăшăр кайса ларнă та — илемсĕррĕн чăх-чăхлатса кулаççĕ, пĕр-пĕрне тĕрткелесе илеççĕ, аллисене пăчăртаççĕ. Ташă каçĕн вĕçнелле кирек ăçта та çавнашкал çамрăксем тăрăлса юлаççĕ вара...

...Тамара кунта пачах шкулти çипуçпа мар, хĕрлĕ лĕпĕш çунатти пек пăч-пăч тĕрĕлллĕ майра кĕпипе. Ташласса та вăл таса ташлаймасть: урисем текех çакланаççĕ. Çаврăннă чухне вара ăна «матрос» — йăтса-сĕтĕрсе пекех çавăрать...

Вĕсем ташланă хушăра эпир вĕсен çакăн умĕнхи утăмĕсем çинчен ик-виç сăмах каласа хăварар.

ТАХХАРМĔШ СЫПАК

Тамара Митюка тахçанах пĕлет, анчах ку таранччен ăна вăл курсан та асăрхаман. Шухăш нихçан та ун çинче чарăнман. Пур-и вăл, çук-и — ним те улшăнман тĕнчере. Тамарăшăн тесен, урамри юпасем çĕр çинче кирлĕ пекех, Митюк та пулма кирлĕ пулнă çеç. Çавнашкал çын кăначчĕ Митюк Тамарăшăн пĕр каçхине клуба кайиччен.

Пĕр каçхине Вальăпа клуба кайсан — Митюк, Петька киномеханик, Валя тата Тамара — тăваттăн пĕрле «туп-

йыталла» вылярӗç. Кайран Митюкпа киномеханик хӗрсенчен юлмарӗç, вӗсем хыççăн клуба кӗчӗç. Тамарăна çине-çинех Митюк ташлама пырса чӗнчӗ. Тамара никампа та мар — Вальăпа çеç ташласшăнччӗ, анчах Вальăна Петька хăй çумӗнчен вӗçертмерӗ, ташă самантлăха вӗçленсен те, ун таврах явăçрӗ.

Тамара, кам чӗнсен ташлама тухам-ши тесе, зал тавра пăхса илчӗ те — никам енне те чӗре выртмарӗ, вара — пурпӗр тесе — чи малтан ума пынă çынна хирӗçех пăхăнуллăн çаврăнса тăчӗ. Чи малтан ума пырса тăраканни пуринче те Митюк пулчӗ. Çакна Тамара хăй те юлашки ташă умӗн çеç асăрхарӗ те, ун пуçӗнче: «Мӗншӗн пӗр вӗçсӗр мана чӗнет-ха ку?» — текен шухăш вӗлтлетсе илчӗ.

Митюк сăнпитӗнче чуна килӗшекенни те пур. Уйрăмах хăйă çутинче, кăшт аяккарахран пăхсан, çывăхран пăхсан вăл ватă сăнлă, пичӗ çинче амăшӗн пекех кӗве çинӗ евӗрлӗ çинçе йӗрсем хуçкаланса тăраççӗ. Кунсăр пуçне унăн сăнпитӗнче темскер—те виçерен иртсе киревсӗрлӗх картинех кӗре пуçланă хăюлăх вăл—йӗклентерекенскер тапса тăрать. Вăхăтăн-вăхăтăн çав «темскер» çухалнă пек пулать, уйрăмах Митюк таçта инçетелле пăхнă пек тăнă чух: лутра çамки пӗрӗнет, питӗнчен епре кулă тарать, тута кӗтессисем тӗлӗнчен пит шăмми патнелле хытă мускул хускалса илет. Кун пек чухне вăл самаях килӗшмелле.

Вăл калаçма тытăнсан е епресе кулсан — çав йӗклентерекен япала палтах сиксе тухать. «Харпăр çыннăн сăнпитӗнчех çавăн пек япала пур пулмалла,— шутларӗ Тамара.— Тен, ман хамăн та пулӗ вăл?»

Тамара асăрханă: малтан курнă чылай çын сăнпитӗнче çав «темскер» килӗшменни пур; Валентин сăнӗнче те пурччӗ... Анчах вăл унăн çухалса-çухалсах пычӗ. «Çак Митюк сăнпитӗнчи халлӗхе килӗшмен йӗр те кайран, тен, пӗтӗмпех пӗтсе ларӗ?» — шутларӗ Тамара. Çакна вăл ахаль çеç шутларӗ, шутларӗ те Митюк çине тепре пăхрӗ, самантрах куçне илчӗ, хальхинче унран вӗçерӗнсе тарас килчӗ... Митюк куçӗ хӗрлӗ те — çулланса тăрать, хăй шăлне ейсе кулать... «Çапах та аван ташлать. Хăюллă,— шухăшласа хучӗ Тамара.— Мӗншӗн Валентин çакнашкал мар-ши?»

Валентина аса илсен, Тамара шарт сикрӗ. «Халӗ пӗтӗмпех пӗтнӗ-çке! Мӗншӗн шухăш пӗрмаях ун çине ӳкетха?»

...Тамарăн ури çыхланчӗ, такăнчӗ. Хӗрача хутра-ситре ӳкмех тăчӗ те — вăйлă алăсем ăна тӳрлетсе тăратрӗç, ни-

кам çумне перĕнтермесĕр çăмăл çавăрчĕç. Митюкпа ташланă чух майсăр пуснă утăм та ятарласа çапла ташланă пек пулса тухать.

Тамара, хăй чиперех ташлама пултарнипе киленсе, текех çаврăнчĕ.

Унăн хăлхи патĕнче, йӳтетмĕш сăпса нăйăлтатнă пек чуна вĕчĕрхентерсе, шухăша татса, Митюкăн сасси илтĕнсе пычĕ. Тем ыйтрĕ вăл, Вальăпа Петькăна тем юптарма пăхрĕ; хăйсене пырса çапăннă мăшăра ятласа илчĕ, унтан Тамарăран тем тĕпчесе пĕлме хăтланчĕ.

«Миçемĕш класра?»,«Килӳ хăш тĕлерехчĕ-ха?»—уçăмлăнах илтĕнеççĕ пуçне аяккалла пăрса хунă Тамарăн хăлхине.

«Мĕн... Манпа калаçать-и вăл? Мĕне кирлĕ-ха ăна эпĕ миçемĕш класра вĕренни, ăçта пурăнни?»

Тамара пуçне силлесе илет те хуравăша кĕскен пĕрер сăмах тавăрса хурать:

— 9-мĕшĕнче. Ялтах.

Çакна вăл леш хăйĕнчен хăптăр, ыйтусемпе шавах ан минреттĕр тесе çеç калать.

Ташă пĕтсен, Тамара Вальăна хулĕнчен пырса тытрĕ. Вĕсем хыççăнах клубран Митюкпа Петька тухрĕç.

— Ирĕк парăр сирĕнпе пыма,— уçкăртрĕ Петька, çавтăннă хĕрачасем умне тухса тăрса, унтан вăл Вальăна хулран çаклатрĕ.— Тыт тепĕр енчен,— хĕтĕртрĕ хăй Митюка.

«Мĕн пирĕн хыççăн сĕтĕрĕнсе çӳреççĕ вĕсем?— шутларĕ Тамара. Каллех Митюк мана çулăхать-и?— Аслă-çке ха вăл манран?..»

Петькăпа Валя пĕр-пĕринпе куçран куçа хĕссе çеç калаçрĕç. Хулĕ çумне Митюк алли перĕнсен, Тамара туртăнса вĕçерĕнчĕ те мала чупса кайрĕ, анчах Вальăн витĕмлĕ сасси ăна çийĕнчех чарса тăратрĕ:

— Тамара! Мана пăрахса хăваратăн-и?

— Эп пĕчченех каятăп!

— Тамара!..

Тамара кĕтсе тăчĕ. Вăл Валя çумне тĕршĕнсе утрĕ, сылтăм хулран лаххан çакса янăнах туйăнса пычĕ — унтан Митюк тытнă. Хăй тата темскер намăс туса калаçать.

Тамара, Митюк калаçнине илтес мар тесе, темиçе хутчен Вальăпа сăмах пуçарма пикенчĕ. Валя вара, йĕкĕчĕшĕн каçăхсах кайнăскер, илтмерĕ те, ухмах пек шав кулчĕ. Самантран ăна Петька хăй çумне туртса илчĕ.

— Эсир мала иртĕр,— хушрĕ вăл Митюкпа Тамарăна.

— Тамара, мана пăрахса кай сана!— хытарса каларĕ Валя.

— Эп каятăп, Валя!

Тамара хăйне хултан çатăрласа тытнă Митюкран туртăнса уйрăлчĕ те чупса кайма тесе икĕ утăм тунăччĕ ĕнтĕ, умра кĕтмен çĕртен пĕр арçын ача курăнчĕ. Вăл хуллен çулпа утса килет. Тем шухăша ӳкнĕ, хăрах аллине кĕсъене чикнĕ, хул хушшине кĕнеке хĕстернĕ.

Тамара ăна уттинченех палларĕ...

Пуçра сасартăк пăтравлă шав кĕрлесе кайрĕ. Чĕре сăкăлтăклăн кăрт! турĕ... Тамара тăпах чарăнчĕ. Хăйне Митюк каллех хулран тытнине те сиссе ĕлкĕреймерĕ, сиссессĕн те вара хирĕçлесе турткалашма шутламарĕ... Хирĕçлемерĕ кăна мар, пачах урăхла, пуçне каçăртрĕ те Митюк çумнерех тĕршĕнчĕ, унтан хытă кулса ячĕ. Куласса юри ахăрашса та хирĕç килекен арçын ача вĕсен тĕлне çитсен кулчĕ. Хирĕç килнĕ çын тĕлĕнчен Тамара, ăна пачах курмăш пулса, çумĕнчи Митюкпа калаçса пынă пек кăшт ун еннерех пăхса, мăнаçлăн утса иртрĕ...

Çапла вĕсем виç-тăват кил тăршшĕ утрĕç. Тамара тек нимĕн те курмарĕ. Хăлхара çеç, йӳçĕхтерсе, Митюкăн минревлĕ сасси вĕчĕлтетрĕ.

Тамара сасартăк туртăнчĕ те — вĕçерĕнчĕ. Малалла чупма тăчĕ, анчах ăна вăйлă алăсем пилĕкрен ыталаса тытрĕç.

Митюк темĕн ыйтрĕ.

— Мĕн? Хăçан тĕл пулăпăр? Ну, ыран!

— Ăçта?

— Ăçта?.. Ма ăçта? Таçта та... Ну, клубра!

Тамара хăй мĕн каланине хăй те ăнланмарĕ, унăн ăсран малтан чĕлхи калаçрĕ. Вăл тепре туртăнчĕ те вĕçерĕнсе малалла вĕçтерчĕ.

«Тен, вăл пулмарĕ?— кĕтмен çĕртен шухăш вĕлтлетрĕ пуçра.— Валентинăн кĕске пиншак çукчĕ-çке?.. Чăнах та, кӳршĕри вуннăмĕш класа каякан Вова, çав тери мăн кăмăллăскер, вăрă (вăл пĕлтĕр Тамарăсенне кантăк умĕнчен алă сехечĕ вăрласа кайнăччĕ), амаçури амăшне хĕнекенскер, çавăн пек тумланса çӳретчĕ мар-и?»

Чĕрере кӳренӳ хускалчĕ.

«Çапах кăтартатăп эп ăна! Кăтартатăп! Ыран е тепĕр кун...»

...Тепĕр кунне Тамара чăнах «кăтартрĕ». Ку хутĕнче вара ним иккĕленмелли те çукчĕ — Валентинахчĕ, клуб-

ран тухатчĕ. Тамарăпа Митюк — Валентин çулне пӳлсе—ун умĕнченех иртсе кайрĕç...

Ыратрĕ-ши Валентин чунĕ? Куна Тамара пĕлмест. Анчах Тамарăн хăйĕн чунĕ кун пирки паян пĕрре те савăнмасть.

Валентин умĕнчен çапла Митюкпа хулран çавтăнса иртсе кайсан, вĕсем анаталла анатчĕç.

...Тамара сиссе те ĕлкĕреймерĕ (чăнах та, мĕнле çапла пулса тухрĕ-ха. Питĕ вăрă-хурахла-çке),— сасартăк Тамарăн питне шăртлă янах перĕнчĕ, унтан, сывлăша йӳçек чĕлĕм шăрши пӳлсе лартнипе пĕрлех, тутана сарлака нӳрĕ тута хĕстерсе тытрĕ...

...Пуçра вара сасартăк мăн саслă чан çапнă пек кĕрлесе кайрĕ, чĕрере, шартах сиктерсе, тем татăлса анчĕ.

Тамара пĕр хушă, шалкăм çапнă пек, вырăнтан та хускалмарĕ, чĕлхе çĕтрĕ, пит-куçран чăтма çук кӳренӳ вучĕ пĕçерсе тухрĕ.

Тамара пĕр сăмах та çавăрса калаймарĕ, пĕтĕмпех çухалса кайрĕ, вара сĕмсĕр каччăран мĕнпур вăйпа туртăнса вĕçерĕнчĕ те ухмаха ернĕ çын пек килелле чупрĕ. Тăна кĕрсен — кӳренӳпе те тăвăлса çитнĕ çилĕпе хутăш — чĕрене йĕклентерекен туйăм пиелесе илчĕ. Çул тăршшĕпех тутаран йытă çулланă пек туйăнса кĕçĕтрĕ, сăрăлтатрĕ, темĕн, сивĕскер, тута ӳтне çисе пычĕ...

Çакăнпа пĕрлех Валя альбомĕнчи сăмахсем аса килчĕç.

«Вил те — юратман çынна чуптума ан пар», «Ĕмĕр тăршшĕнче пĕр çынна çеç чуптума ирĕк пар», «Санăн турру — сана чи малтан чуптунă çын...»

Çаксем аса килсен, пуçра малтанхинчен те ытларах йăлт пăтранса пĕтрĕ. Ăнпуç нимĕнле татăклă шухăш-туйăм çинче те чарăнма пултараймарĕ кăна мар, Тамара халĕ хăй малтан тĕрĕс ăнланнă япаласем пирки те иккĕлене пуçларĕ.

Мĕнле? Тамара вара хăй савман çынна чуптума ирĕк пачĕ-и? Мĕнле пулса тухрĕ-ха ку?

...Унтанпа ĕнтĕ темиçе кун иртрĕ. Халĕ те Тамара ним шухăшлама та хайла çитерейместь-ха, хăйне хăй те ăнланмасть, иртнĕ кунсем çинчен шухăшлама та хăрать.

Уншăн халĕ пĕр япала çеç татăклă та паллă: Тамара халь — унăн...

Тамара — Митюкăн!

Çапла, Митюкăн... Акă халĕ те вăл унпа... Митюкпа... Вальс ташлать... Чĕрере халĕ темскер ларать. Ăшри çав

темскер, чуна ыраттараканскер, пурнăçра ырри йăлтах хыçа тăрса юлнине систерсе тăраканскер, Митюк мĕн ыйтнине йăлтах тума хушать. Хушать! Ăна хирĕçлеме тем чарса тăрать. Темĕнле шик евĕрлĕскер хăй. Сехри хăпнă мулкач хăйне çăтса яма хатĕрленсе тăнă çĕленрен тарас вырăнне ерипен ун патнелле çывхарнă пек шик ку!.. Ĕрĕхсе кайнă ут çинчен ӳкес мар, ӳкес мар тесе, ху сулăннă еннех тайăла панă евĕрлĕ. Тен, Тамарăн та çавă мар-и? «Санăн ĕнтĕ тек никам çинчен те ĕмĕтленмелле мар, никам çине пăхма та ирĕкӳ çук сан тек, санăн турру — Митюк»,— тет çав темскер. Çак сасăпа кĕрешме хал та, мехел те çитмест. Кĕрешмелле-ши унпа, кĕрешмелле мар-ши? Ку ыйтăва лартма та шуламан-ха Тамара. Çав темскер — шăпа пӳрнĕ пек — чуна сăхăнса кĕрсе ларнă. Ăна нимле те кăларса пăрахмалла мар.

Анчах Тамарăн пĕрре те туртăм çук-çке Митюк енне. Туртăм çук кăна та мар — çав йĕклентерекен те йĕрĕнтерекен туйăм ниепле те сирĕлмест. Çакăн çинчен Тамара халь шухăшласа пăхман-ха. «Эпĕ ăна юратмастăп»,— тесе шутлама та хăрать-ха. Ăшри сасă çеç — ырату — çавна систерсе тăрать.

Тен, ку вăхăтлăх çеç çакнашкал? Тен, Тамара ăна пурăна киле юратма та пуçлĕ? Унран чун ютшăнса та кăмăл пăрахсан... Вăл вăраха пымасть-çке-ха. Вăл иртмелле! Тен, чăн-чăн юрату тени çавăн пек пулĕ? Тамара, тĕрĕссипе каласан, курса пăхман-çке-ха ăна. Темле вăл — те ырă туйăм, те кăмăллă та мар...

Çук, ку вăхăтлăха çеç пулма кирлĕ! Анчах... мĕн-мĕн те — Тамара Митюкăн. Тен, начарах та мар вăл?..

...Тамара, Митюкăн лайăх енне çеç курас шутпа, тĕплĕн сăнаса ăна питрен пăхрĕ те — хăвăрт пуçне пăрчĕ... Ташлакансем хушшинче те Митюкран хитрисем чылай.

«Кам-ха çав тенкел çинче лараканни?.. Ма çав марши Митюк?» Унăн пит-куçĕнче чи малтан пăхнă чухне те нимĕнле йĕклентерекен япала çук.

Тăхта-ха. Вăл Геннадий Васильевич-çке, студент.

...Акă каллех вальс çемми янăраса кайрĕ. Самантлăха клуб умне тухнă Митюк зал урлах Тамара патне çул тытрĕ. Тенкел çинче ларакан Тамарăн чунĕ сӳ-ӳ кайрĕ те, вăл — хăйĕн мĕн пуррипе ирĕксĕр килĕшмелли çеç юлнă пек — пуçне чикрĕ.

— Сире ташша чĕнме юрать-и?— илтĕнчĕ сасартăк.

Тамара, ют сасса илтсе, пуçне вăльт çĕклерĕ, хăй сисмесĕрех ура çине тăчĕ.

Ун умӗнче Геннадий Васильевич тӑрать иккен. «Вӑл та ташлать-и вара?» — тӗлӗнчӗ Тамара, ҫав вӑхӑтрах Митюк килсе ҫитиччен студент ташша ертсе кӗнӗшӗн хӗпӗртерӗ. Анчах ташӑ тӑршшӗпех Тамара куҫӗ умӗнче Митюкӑн йӳҫенчӗклӗн пӗрӗнтерсе хупӑ тути, шурӑ куҫӗ чуна ҫӳҫентерсе тӑчӗҫ.

...Студент иккӗмӗш ташша та Тамарӑпах тухрӗ. Ку хутӗнче вара хӗрача хӑйне хӑй ирӗкрех те ҫӑмӑлрах туйрӗ. Чӗрене пусса тӑракан пӑшӑрхануллӑ шик ирӗлсе кайнӑн, ун айӗнчен кӑшт хурланчӑклӑрах ҫӑмӑл кӑмӑл ҫиеле тухнӑн туйӑнчӗ. Темшӗн-ҫке ҫак каҫ тӑршшӗпех студентпа ташлас килчӗ, анчах студент иккӗмӗш ташӑ варринчех киле кайма пулчӗ.

— Эсӗ пымастӑн-и? — ыйтрӗ вӑл Тамарӑран.

Тамара сцена ҫине чупса хӑпарчӗ те, хӑра-хӑра, тенкел ҫинчен мӑн тутӑр илсе ҫыхрӗ, пальто тӑхӑнчӗ. Кунта татах тем юлнӑ пек, темиҫе хутчен ташлакансем ҫинелле пӑха-пӑха илчӗ. Унтан, такамран тарнӑ майлӑ, хӑвӑрт алӑк патнелле утрӗ. Студент, хӗрачана мала ирттерсе, хӑй ун хыҫҫӑн тухрӗ.

Тамара, малалла та, каялла та кайма хӑяймасӑр, картлашка ҫинче чарӑнчӗ. Вӑл студент мӗн те пулин каласса кӗтрӗ, тата ҫак студентпа — ҫапла ташласа илнипех — ачаран туслӑ пурӑннӑ пек хӑвна ху тыткалама ирӗклӗ, кӑмӑла ҫӑмӑл пулнӑшӑн савӑнчӗ те.

Хӗрача тытӑнса тӑнине асӑрхаса-и, студент ик утӑм ярса пусрӗ те каялла ҫаврӑнса тӑчӗ.

— Мӗнле ҫемӗ ҫак? — пуҫӗпе сулчӗ вӑл зал еннелле. Залра ҫӗнӗ ташӑ ҫемми янӑраса кайрӗ иккен. Тамара, ку ҫемӗпе хӑй пӗрре мар ташланӑ пулин те, ун ятне-шывне пӗлме шутламан.

— Пӗлместӗп, — суймарӗ вӑл, картлашка ҫинчен ерипе ҫӗрелле анса.

Студент Огинский ҫинчен калама тытӑнчӗ. Ку унӑн полонезӗ иккен, тепӗр майлӑ каласан, «Тӑван ҫӗршывпа сывпуллашни» ятлӑ ля минор. Вӑл юрӑ хывас тӗлӗшпе ытлашши паллӑ мар-мӗн — революци ҫынни шутланнӑ. Унӑн пайтах ют ҫӗршывсенче пурӑнма тивнӗ. Ҫак полонеза вара Тӑван ҫӗршывран — Польшӑран — тухса кайнӑ чухне, кайма хатӗрленсе тӑрсан, сывпуллашма пек пианино умне ларать те самантрах ҫырса хурать.

Чӑн та, ку таранччен юлташла-тусла пурӑннӑ ҫын пекех ҫывӑха хурса каласа пачӗ ҫакна студент ҫула май.

Тамара итлесе ҫеҫ пычӗ. Темшӗн-ҫке студентӑн сӑ-

махĕ час пĕтесрен те хăрарĕ, хăй вăл сăмах пуçарма та, калаçура ертсе пыма та пĕлмест.

— Халь, çав кĕвĕпе екеленсе, аташса танго ташлаç-çĕ,— тăсрĕ студент хăй сăмахне малалла.—Кам, епле майпа, мĕнле туйăмпа çырнине те пĕлесшĕн мар, ку кĕвĕ хурлантармасть те вĕсене. Ташласа киленсе, юп курса пултăр... Огинский çавна валли çырнăччĕ-ши ăна? Тăван çĕршывран уйрăлма мĕн тери хĕнни, уншăн темĕнле асап тӳсме те хатĕрри тан тапса тăрать-çке унтан. Залри çав çилхăвансем çак пархатарлă туйăмсене упра пĕлесшĕн мар.

Хĕрача студентран пĕр-икĕ утăм аякра утрĕ. Унăн сăмахĕ хăйне тивнине пĕле тăркачах — пĕр вăхăтлăха çак калаçу юлашки эрнери асапсене мантарнă пирки-и е çĕр çинче урăх япала пирки те шутламалли пайтах иккенне аса илнипе-и—çăмăл пулса кайрĕ.

— Çапла çав,— терĕ Тамара хăвăрт, чăннипех ки-лĕшсе.

Çакна каланă хыççăн кĕтмен çĕртен Тамара çак сту-дентпа юнашар пыма та хăйĕн тивĕç çук пек туйрĕ.

— Çук, эпĕ сан пирки мар,— терĕ студент хĕрача йы-вăра илесрен-тĕр.

Çак ахаль çеç каланă пек сăмах Тамарăна хăюлăх та-вăрчĕ, самантлăх татăлнă калаçăва та хĕрачан темшĕн хă-йĕн сыпăнтарас килчĕ.

— Эп учительсем ташламаççĕ пуль тенĕччĕ,— терĕ вăл кинет.

Çакна вăл чĕлхи вĕçне килсенех персе ячĕ. Хăй сарăм-сăр каласа янине туйсан, хĕрелсе кайрĕ те — хыпăнса хĕ-рӳллĕн хушса хучĕ.

— Пирĕн шкулта ташламаççĕ.

— Эпĕ учителех тухайман-ха,— шӳтленçи пулчĕ сту-дент, вара хăй еккипе ыйтрĕ:— Эсир клуба тăтăш çӳре-тĕр-и?

«Шăхвăртса ыйтать,— шухăшларĕ Тамара.— Вăл, тен, эп Митюкпа çӳренине пĕлнĕ?..»

Тамара ним те шарламарĕ. Митюка аса илсен, ун чун-не каллех ăнланма хĕн кăмăл çавăрса илчĕ. Çак кăмăл— Тамара хăйĕнне темскер чи хаклине çухатнăн, тĕнче умĕнче каçарма çук айăп тунăн туйăнтарса тăрать. Ку яхăнта тăтăшах çапла.

Умра — темĕнле «хура хӳме», каçма çукскер. Пĕтĕм пурнăç — шкул та, хаваслăх та, вăй-хал кӳрекен ĕмĕт те—йăлтах çавăн хыçĕнче. Куллен-кун тума май пур

ахаль ĕҫсем те, ним ĕмĕтленмесĕр-тумасăр хăй тĕллĕн пулса пыракан ахаль утăмсем те, сăмахран, юлташпа шӳтлесси, пĕр-пĕр мыскараран каҫса кайса куласси, хирĕҫ килекен ҫынна куҫран чăрсăррăн пăхса пуҫ чиктересси — йăлтах, йăлтах халĕ нихҫан тума май ҫук, тума тивĕҫ ҫук япаласем пек туйăнса тăраççĕ.

Мĕн вăл? Митюкпа явăҫни-и? Митюк чуптуни-и?.. Ҫапла ҫав! «Санăн турру — сана малтан чуптунă ҫын...»

Кирек кампа та пулин калаҫса пăхасчĕ ҫак асаплă туйăмсем, ăш ҫуннисем пирки... Пур-ши ҫакнашкал кăткăс туйăмсене ним кулмасăр, хута кĕрсе, вĕҫне ҫити итлесе пĕтерекенни тата, пĕтĕмпех ăнланса, сана мĕнпе те пулин пулăшма пултараканни?

Ыран каллех акă — Митюк, вечер... Ҫапла, вечер. Ыран Митюкăн ҫуралнă кунĕ иккен. Тамарăна та Валя парнелĕх тесе вăйпах арҫын пуҫ тури илтерчĕ.

Каллех ĕнтĕ пилĕк ҫинче Митюкăн аллисем, хăлхара унăн мăрăлти сасси...

Тамара ҫӳҫенсе чĕтренчĕ те васкарах утрĕ.

Сасартăк ҫакна пĕтĕмпех, пĕтĕмпех, ним пытармасăр, ним тунмасăр, ҫак студента каласа парас килсе кайрĕ.

«Ҫук, вăл ăнланать! Кулмĕ те, йĕкĕлтемĕ те...» — терĕ темĕнле шанчăклă сасă ăшра.

Тамара темиҫе утăм — сăмах пуҫарас шутпа — пĕр пăлханса, пĕр сывлăш ҫавăраймасăр канăҫсăрланса пычĕ, темиҫе хутчен студент енне пуҫне пăрса пăхрĕ, унтан студент тем кĕтнĕ пек хирĕҫ куҫ ывăтсан — хĕрелсе кайрĕ те, хăпарса ҫитнĕ хăюлăх каялла татăлса анчĕ.

Ҫул урлă кусăрка кусса каҫрĕ. Ҫул хĕрринчи йăмрасен шăпăрлă шăн тураттисем пĕр-пĕринпе ҫапăнса шакăртаттарчĕҫ. Шкул пахчинчи чăрăшсем ҫеҫ юр пусарнă йывăр лăссисене хускатмарĕҫ те.

— Ыран хулана пыратăн-и? — терĕ студент сасартăк.— Тен, пĕлместĕн те — эпир ыран класĕпех театр курма каясшăн.

Хĕрача каллех чĕнмерĕ, ун вырăнне вăл, хăйсен тĕлне ҫитсен, чарăнса, темĕнле пусăрăнчăк сасăпа:

— Ырă каҫ пултăр,— терĕ хуллен.

— Ырă каҫ,— тавăрчĕ студент.— Ыран ирччен.

Студент, хĕрача киле кĕрсен, тем шухăша ӳксе, ерипе урам тăрăх утрĕ, пĕрре ял вĕҫне утса тухрĕ, унтан каялла килчĕ, хăй шăнса чĕтреве ерсен тин хваттере ҫул тытрĕ.

* * *

Кăçал хĕл сивĕ килчĕ. Раштав сиввисем те питĕ ир пуçланчĕç.

Çавăнпа та Геннадий Васильевич студент-практикант шăматкунхи каç валли хулана театра кайма билетсем илсе килсен, учительсенчен нихăшĕ те хĕпĕртемерĕ.

Директор та пĕрре каяс шут тытса чĕвен тăнă класа урăхла ӳкĕте кĕртме çуккине кура çеç ирĕксĕр килĕшрĕ. Геннадий Васильевича вара вăл хытă тăн парса ячĕ: «Пĕр ачан сăмсине тăм илтĕр çеç — эсĕ явап тытăн»,— терĕ.

Шкула автобус чĕнсе илчĕç. Кунĕ уярччĕ. Анчах ачасем хулана тухса кайнă каçхинех асар-писер çил-тăман çĕкленчĕ. Тепĕр кунне, мăн çула йăлтах юр хӳсе кайнипе пула, пĕр машина та хуларан тухаймарĕ. Çакăн тĕлнех тата кун сиктерсе çӳрекен пуйăс та пулмарĕ.

Шкулта учительсем лара-тăра пĕлмерĕç, вĕçĕмсĕр хулана телефонпа шăнкăртаттарчĕç:

— Ыран ирхине 9 сехет тĕлне ачасем шкулта пулччăр! Çурăлăр та — çитĕр!..

Пĕр каçлăха кăна тесе тухнă ачасем выçă ларчĕç. Гена каялла килме билетлăх хăварнă юлашки укçине те ĕнтĕ виçĕ пус юлмичченех ачасене ирхи апат çитерсе ячĕ. Вăл пĕтĕм хулипех, юлташ патĕнчен юлташ патне чупса, укçа шырарĕ. Шкул директорĕ «ман пĕр пус та çук» терĕ, икĕ хутчен телефонпа ыйтсан та.

Институтăн икĕ аудиторине вырнаçнă ачасем вара — вĕçсе кайманни çеç. Вĕсем хăйсене паттăр çулçӳревçĕсем вырăнĕнчех туйрĕç, çил-тăман витĕрех çуран çула тухма сĕнекенсем те тупăнчĕç.

Гена вара:

— Киле тунтикун кăнтăрла иртсен пуйăспа каятпăр,— терĕ татăклăн, никам ним каланине хăлхана чикмесĕр.

Тунтикун кăвак çутăллах Генăна телефон патне чĕнтерчĕç. Шкултан директор калаçрĕ. «Эпĕ сана çакăн пек пăтăрмах тунăшăн министерствăна çитеретĕп! Ку вăл — патшалăх умĕнче явап тытмалли япала,— вăрçрĕ вăл,— 9 сехет тĕлне шкула çитнĕ пултăр! Укçа пирки çăвар та ан уçăр».

Çутĕç министерствине кĕрсе ыйтма ăс çитерни çеç Генăна укçа-тенкĕ асапĕнчен хăтарчĕ. Гена, хăй пăшăрхансан та, ачасем умĕнче ним пулман пекех хаваслă çӳрерĕ. Вĕсене вашаватлăн кăна столовăйне, унтан пир-авăр комбинатне ертсе кайрĕ. Кун хыççăн тин ачасем чугун çул станцине хускалчĕç, часах пуйăс çине ларчĕç. Киле вĕ-

сем уроксем хыççăн çитрĕç. Хăйсен разъездĕнче вĕсене ачисемшĕн хăраса ӳкнĕ виç-тăват хĕрарăм та дежурнăй-учительница кĕтсе илчĕç.

Ачасене хулана ертсе кайса пĕр кун уроксенчен хăварнă пирки ӳкĕнсен те, çак çулçӳрев, пĕр енчен, ачасен йышне çирĕпрех чăмăртанма пулăшаканни тата, тепĕр енчен, хăрпăр ачана уйрăммăн курма май параканни тесе шутларĕ Гена.

Тамарăна та вăл çакăнта çеç витĕртерех курчĕ. Тамара калаçма юратакан, хăш чухне чарусăр хавасланма пĕлекен хĕрача тесе шутламанччĕ Гена. Хĕрача ăна вĕçĕмсĕрех салху та чĕмсĕр пек туйăнатчĕ. Чăн та, шкулта Тамара питĕ салху çӳрет. Тен, ун вĕренес килмест? Тен, ун хуйхă пур? Тен, шкул унăн чун туртăмне тивĕçтерейместʼ? Мĕн-ши унăн чун туртăмĕ?

Çак ыйтусем тăраççĕ Геннадий Васильевич студент-практикант умĕнче.

Практикантшăн халĕ çакă çеç уçăмлă: темĕн çитмест шкулта ăна.

Шкулта мĕн çитменни енчен вара институтри хăшпĕр преподавательсем, пичетре тухса калакан учительсем пĕрпĕр уйрăм шкулăн кăна та мар, чылай шкулăн пĕтĕмĕшле çитменлĕхсем пурри çинчен (тӳрремĕнех мар пулин те) калаçаççĕ.

Программа йĕркеллех марри, шкулта, наука никĕсĕсене çеç вĕрентнĕ май, ачасем нихăш предмета та тĕплĕн вĕренсе çитейменни, вăтам шкул пĕтерсе тухнă тĕле нихăш предметран та пурнăçра усă курмалăхне нумай илейменни,— çаксем пурте çитменлĕх-мĕн.

Халлĕхе пĕр япала çеç лайăх паллă: ку хĕрачапа асăрханулла пулмалла, шкулта сарăмсăр вĕçерĕнсе кайнă сăмах та ун чунне тивме, ăна шкултан сивĕтме пултарать.

ВУННАМĔШ СЫПАК

Тамара амăшĕ ку ялтан пĕр утмăл çухрăмри пĕчĕк хулана пиччĕш ывăлĕн туйне кайрĕ. Хăй кайнă чух вăл кил пăхма кӳршĕри 10-мĕш класа каякан Вовăн амаçури амăшне каласа хăварчĕ. Вовăн амаçури амăшĕ, аллă çулалла çывхаракан хĕрарăм, ахаль чухне те кунсерен майлах Тамарăсем патне пыра-пыра ларать; пырасса Вовăн мыскарисем çинчен каласа ăшне лăплантарма пырать.

Халь вара вăл, кил пăхма хăварнăскер, Тамарăсем патĕнчен туха та пĕлмест, Тамарăна Вова çинчен кала-кала парса тăннех илет.

— Тамара,— терĕ вăл паян ирхине,— пирĕн услап (Вова ĕнтĕ) манăнне каллех вунă тенкĕ укçа вăрланă. Таçтан уçă тупса, уçă юраттарса, арчаран кăларса илнĕ.

Тамара йăлăхса çитнĕ ĕнтĕ унран кун пеккисене илтсе, тата çак хĕрарăм, вунă пусшăн ӳксе вилекенскер, вунă тенкĕшĕн çапла лăпкă калаçни ĕненмеллех те пулмарĕ.

Акă халĕ те — Тамара пӳрте кĕчĕ çеç — килсе ларма та ĕлкĕрнĕ уксах хĕрарăм ăна Вова пирки чухса калама тытăнчĕ.

— Тамара,— терĕ вăл, кĕсйинчен темле блокнот кăларса,— вуласа пар-ха çакна. Ман çинчен мĕн те пулин çырса хуман-и... Хамăн куç курмасть, тем чĕркелет — вулама майĕ те çук...

— Мĕн вăл?— алла тытрĕ Тамара блокнота.

Ку Вовăн дневникĕ иккен. Ăна вăл пĕр-ик уйăх каярах çырма тытăннă пулас. Тамара дневнике хăвăрт-хăвăрт уçса тухрĕ те каялла пачĕ.

— Ман вăхăт çук.

— Ну, ерçсен вула, эп хăварам. Кайран каласа парăн.

— Юрĕ,— терĕ Тамара, вĕчĕрхенсе, вара çӳлĕк çинчен кĕнеке илчĕ те хăвăрт пӳртрен тухрĕ.

Унăн ниçта васкамалли те çукчĕ. Ку хĕрарăм ăна халь килте канлĕ ларма та, вулама та парас çук тесе çеç тухрĕ Тамара, тата ун халь темшĕн пĕччен пулас килчĕ. Урама тухсан, вăл ниçта кайма аптраса тăчĕ, вара Вальăсен килĕ еннелле хускалчĕ.

Тăвайккине çитсен, вăл чарăнса тăчĕ.

Ун умĕнче яланах яка тĕплĕ çуллахи ботинкăпа çӳрекен студент Геннадий Васильевич, пăрлак сукмак тăрăх сăрт хысакĕнчен ниепле те улăхаймасăр, шăва-шăва, юр ăшшĕн чаваланать.

Геннадий Васильевич халĕ темшĕн-çке класа та переменăсенче çеç кĕркелесе тухать, малтан урока пымассерен хыçалти парта хушшинче пĕчченех ларакан Тамара çумне пырса вырнаçатчĕ. Тамара юлашки вăхăтра ăна темле юлташ пек, пичче пек килĕштере пуçларĕ. Çав вăхăтрах унран шкулта чухне чун шикленет. Тамара нихçан та унашкал çынпа калаçса курман. Ăна итлетĕн те — ху нимĕн те пĕлмен пек, ахаль япаласенех ăнланман пек туйăнать.

Студент — хӑй ҫине хыҫалтан такам пӑхнине сиссе-и — ҫаврӑнса пӑхрӗ те сывлӑх сунчӗ.

Тамара та, иртсе кайма май пур ҫӗртех хыҫалта пыма аван мартан, васкарах утса, студентпа танлашрӗ.

— Ман шумасть, Геннадий Васильевич, кӳрӗр алӑра,— терӗ вӑл, аллине тӑсса.

— Хамах хӑпартӑм ӗнтӗ,— хуравларӗ студент. Вӑл, чӑн та, ячӗшӗн ҫеҫ аллине тӑсрӗ, хӑй ҫавах:

— Тавах,— терӗ хӑпарса ҫитсен, унтан хул хушшинчи кӗнекисене кӑтартрӗ: Олдингтон, Хемингуэй.

— Кунта сахал вулаҫҫӗ,— каларӗ вӑл.— Кур, мӗнешкел кӗнекесем вӗр-ҫӗннипех выртаҫҫӗ.

Тамара ку писательсенчен пӗрин ҫинчен те илтмен. Ҫавӑнпа та вӑл ку кӗнекесем ҫине ӑмсанса пӑхрӗ.

— Эсӗ ыран шкула пыратӑн пулӗ?— ыйтрӗ студент, ҫул юппине ҫитсен.— Ман кӑшт калаҫмалли пурччӗ... Халь ӑҫта каятӑн-ха? Клуба-и?

Тамара хирӗҫлесе пуҫӗпе сулларӗ.

— Митюк билет илнӗччӗ унта сан валли,—студент хӗрачана сӑнаса пӑхрӗ, унтан асӑрхануллӑн хушса хучӗ:— Эс, Тамара, итле-ха, Митюк ӑҫта чӗннӗ — пур ҫӗре те сиксе ӳксех ан кай. Вӑл таҫта та ертсе кайӗ...

Кирек те кам урӑх ҫын кӗтмен ҫӗртен ҫапла каланӑ пулсан, вӑл Тамарӑн вӑрттӑнлӑхне ҫапла шӑршласа тупнӑшӑн, унтан ҫавнашкал лаплаттарса хурса асӑрхаттарма хӑйнӑшӑн Тамара ӑна шарт! кӳренсе лартӗччӗ те «Сана мӗн ӗҫ!» тесе ҫаврӑнса утӗччӗ ҫеҫ. Хальхинче вара — тӗлӗнмелле!— ҫак сӑмахсемшӗн нимӗнле кӳренӳ те, намӑслану та хӑйӗн чунне тивсе ыраттарнине туймарӗ Тамара. Студент ҫапла каласса тата пӗтӗмпех ҫапла пулса тухасса хӑй тахҫанах пӗлнӗ-кӗтнӗ пек, хӗрачан чунне сасартӑк темле ҫӑмӑл пулса кайрӗ. Студентран уйрӑлсан, вӑл хӑй сисмесӗрех таҫта ҫав тери васкарӗ.

...Пуҫ пӗр самант ним шухӑшлама та пултараймарӗ, унта йӑлт пӑтранса пӗтрӗ. Амӑшӗ темӗнле пысӑк айапшӑн вӑрҫас вырӑнне кӑмӑллӑн каласа хунӑ чухнехи пек, чун ҫемҫелсе килчӗ. Хӑй ӑҫта кайма тухнине те хӗрача ял вӗҫне утса тухсан тин аса илчӗ.

Валя килте пӗчченехчӗ.

Тамара темӗнле чирлӗрех сӑнлине вӑл та асӑрхамасӑр тӑраймарӗ.

— Валя!— кӑшкӑрса ячӗ Тамара кӗрсенех, темӗнле сывӑ мар хӗпӗртӳпе хыпса илсе.— Кичем мана сансӑр, тупата!

Валя Тамарăна ёшенчĕклĕн хăрах аллине сирчĕ:

— Шăпрах ёнтĕ эс! Радиона та хăратсах пăрахрăн ав.

Тамара, хăйĕн тусĕн тӳрккеслĕхĕшĕн кӳренсе, тенкел çине ларчĕ те чылайччен чĕнмерĕ.

Пӳртре пĕр хушă пушаннă сехет çăмахĕ çеç кĕриклетсе сулланчĕ, тукмакĕ сехре хăпартмаллах шалтлатса пĕр карт анчĕ. Кантăк тĕлĕнчи çӳлĕк хыçĕнчен пĕр пысăк хура шăрчăк стенана чăкăртаттарса утса тухрĕ те мăк тăрăх кайса пĕрене çурăкне кĕрсе кайрĕ.

— Уй,—терĕ Валя çӳçенсе,— шăрчăк курăнни ырра мар вăл.

Вăл ура çине сикса тăчĕ те хăйă илсе сак çине хăпарчĕ.

Тамара хăлхинче вăрахчен шăрчăк çунаттисем лăчăртатни илтĕнсе тăчĕ. Чунра темĕнле йĕклентерекен туйăм хускалчĕ, çанçурăм тăрăх сивĕ хум сăрр! кайрĕ. Тамара пĕр хушă чакăр куçĕпе чӳречерен урамалла пăхса тăчĕ те, темĕнле çыпçăнчăк шухăша сирсе пăрахнă евĕр, пуçне силлерĕ.

— Валя,— терĕ вăл хуллен.— Эсĕ сивĕ чунлă иккен, чăн та.

Валя куна хирĕç мăштах пулчĕ. Çак сăмахсем ун чунне тивнинчен вара — çыннăн сисĕни-сисĕнми туйăмĕсене хăш чух туйма пултараслăхĕ ун тăнчах пĕтменни курăнчĕ.

— Каçар, Валя... эп ытлашширех каларăм... Сана кӳрентерес теменччĕ эпĕ...— терĕ Тамара чăн та айăплăн, унтан Валя çине пĕр хушă ним чĕнмесĕр пăхса ларчĕ те хĕр-тусне пилĕкĕнчен ыталаса илчĕ.— Пĕлетĕн-и эс, Валя,—хыпăнса калаçа пуçларĕ вăл.—Хăшпĕр çынпа чухне çак шăрчăкăн та темĕнле асамлă пĕлтерĕш пур пек, çĕр çинче уншăн та пурăнма кирлĕ пек туйăнать. Чăнах, чăнах. Çакăнта эпир куллен курнă, алăпа тытнă, тахçанах хамăра йăлăхтарнă япаласенчех тем çĕнни, халиччен асăрхаманни, чуна туртаканни пур пек. Тепĕр çынпа вара — пач хирĕçле. Чипер ырă çынсенех темшĕн курайми пулатăн.

— Çынна тиркессӳпех эс,— тăсăлнă тути халĕ те вырăна ларсах çитеймерĕ-ха Вальăн.— Эс ытла çӳлтен вĕçен. Шкулта вĕреннĕ чухне пурте çапла... Акă вăтам шкул пĕтер-ха, курăпăр ун чух. Эс аслă шкула вĕренме кĕретĕп тетĕн-и хăв хăраххăн? Эпĕ те сапран кая мар вĕреннĕ... Кайран та нумай хатĕрленнĕ... Çитес çулла çавах пĕр-пĕр аслă шкула кĕретĕп. Петькăн куккăшĕ инсти-

тутра пĕр кафедра пуçлăхĕ, тет. Çав пулăшма пулчĕ мана. Хам та хатĕрленетĕп... Пурпĕрех хăçан та пулин учительница пулатăп... Санăн, ав, ăçта каяс тĕллевӳ те çук...

Тамара, пит-куçне асаплăн пĕркелентерсе, Вальăн сак çинчи кивелсе кайнă истори кĕнекине çавăркаласа ларчĕ. Кĕнеке çумĕнчен пĕр пĕчĕк эрешмен хăйĕн çиппи тăрăх йăрлаттарса урайнелле анчĕ.

Тамара кĕнекене пăрахрĕ те Валя çумне пырса ларчĕ.

— Итле-ха, Валюç,— терĕ вăл чăнахах чирлĕ çын пек,— сана кам та кам мĕн тусап... ну, чуптусан — эсĕ вара унăн пулатăн-и, э? Ĕмĕр-ĕмĕр унăн?

— Чуптусан — паллах,— терĕ Валя.— Вара унталла-кунталла пăркаланасси пĕтет.

— Валя, мана Митюк чуптурĕ... Анчах хамăн пĕрре те чĕре выртмасть ун енне. Ун чухне ман темĕнле ăш йĕрĕнсе килчĕ. Ялан çапла-и вăл, Валя? Халь ман Митюка курсанах ăшра темĕнле йĕкленӳ хускалать. Эпĕ ун чух Валентин çине тарăхса юри унпа кайрăм. Халĕ вара хăрушă-хăрушă мана. Ой, Валюç... Кай! Ăнланмастăн эсĕ мана!

Тамара тутине чăп! тытрĕ те хăвăрт ура çине тăчĕ, пальто тӳмине тӳмелерĕ.

Кăнтăр енчи кантăкран хĕллехи сивĕ хĕвел кутăнла пăхрĕ. Унăн хĕрлĕ пайăркисем чӳрече çипе лап ӳкрĕç те, алăк çине унпа тĕлме-тĕл çавăн пысăкăшех хĕрлĕ чӳрече мĕлки выртрĕ.

Валя, тĕкĕр витĕр пăхса, кăтри кая пуçланă çӳçне йăвалакаларĕ.

— Итле-ха, Тамара,— терĕ вăл сасартăк.— Аçу сан кам пулнă — пĕлетĕн-и?

Тамара шарт сикрĕ.

— Атте? Мĕн тума кирлĕ пулчĕ сана вăл?

— Вăл вăрă пулнă, çапла-и?

— Валя!!— Тамара сасартăк урипе çĕре тапса илчĕ.— Ан хăйнă пул ун çинчен çапла калама! Илтетĕн-и? Тепре ман аттеме асăпатăн пулсан — эпĕ сана тус мар! Асăн тепре, асăн!..

Валя, хăраса ӳкнĕ пек туса, юриех пĕр утăм каялла ярса пусрĕ.

— Юрĕ, лăплан, лăплан. Урăх шарламастăп.

Тамара шăлне çыртрĕ те, тем шухăша ӳксе, пĕр хушă кантăкран пăхса тăчĕ, вара хăвăрт алăк патнелле утрĕ.

— Тăхта ĕнтĕ, эпĕ те пыратăп,— чарчĕ Валя ăна.

Хĕрачасем, пӳрт питĕрсе, урама тухрĕç.

— Итле-ха, Тамара,— терĕ Валя хаваслăн.— Манăн тепĕр эрнерен менелник. Анне шăпах çак кунсенче командировкăра пулать. Вăл киличчен уяв туса илме ĕлкĕретпĕр эпир. Çапла-и, Тамара? Юрать-и?

— Сан ялан менелник.

— Эпĕ сана, темле турткалансан та, хăвармастăп. Пĕркун та улталарăн. Халĕ те килмесен — çилленетĕп! Курăн акă, питĕ хаваслă пулать.

Хĕрачасем парикмахерски тĕлне çитрĕç.

— Эс çӳç кастаратăн-и?— чарăнчĕ Тамара, Вальăран вĕçерĕнсе.— Ман мĕн тума кĕмелле вара?

— Э ĕнтĕ, Тамара.— Пит-куçне пĕрсе, тутине илемсĕр тăсса йăлăнчĕ Валя.— Атя юлташла. Эппин, эсĕ те кăтралат. Юрать-и? Чăн, чăн, Тамара! Питĕ хитре пулать. Санăн кăтралатмаллах! Сана питĕ килĕшет кăтралатсан, курăн акă! Ак халь мĕн ĕрепки пур санăн. Курха, мĕн, çакă пăру хӳри пек çивĕте шеллетĕн-и? Кăтралатсан-и, хĕр тĕсĕ кĕрĕ. Хула хĕрĕсене курнă-и эсĕ?

ВУНПĔРМĔШ СЫПĂК

Геннадий Васильевич студент-практикант, паян ирхине хăйĕн класне кĕрсен, ачасем яланхи пек мар шавланине асăрхарĕ. Урок итлеме студентсемпе методист килсе ларнине пăхмасăрах, класра питĕ шавлă: темшĕн кулаççĕ. Пĕрре лăпланса çитнĕ хыççăн та — пĕр-пĕр чараксăр кулăллă ача ниепле те чăрănаймасăр хихиклетсенех — пĕтĕм класс шав! кулса ячĕ.

— Мĕн пулнă? Мĕнрен кулаççĕ?— ыйтрĕ практикант — пĕрре тĕксĕммĕн ларакан Соловьев Валентин çине, унтан пуринчен те хытăрах кулакан Петров çине пăхса. Валентин кĕпеке листине çеç канăçсăррăн уçа пуçларĕ; Петров, «Эп анчах-им» тенĕ евĕр, унăн-кунăн пăркаланчĕ. Геннадий, аптранипе, хамран кулмаççĕ-и кусем тесе пăлханса ӳкрĕ те никам сисмесле хăй тăрăххăн унтан-кунтан пăхкаласа илчĕ.

Çак вăхăтра ачасем каллех кулса ячĕç.

Хăй тавраш̆енче ним кăлтăк та асăрхаманнипе Геннадин пăлханни хăвăртах иртсе кайрĕ, вара ун кĕлетки те яштах тӳрленчĕ, кăнттамрах çаврăнкалăшĕ те йĕркеленчĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку?— терĕ вăл шкулта хура-шур

курса пиçнĕ вĕрентекен пекех, класс çине çирĕппĕн пăхса.

Ачасем, тӳрех чăп пулса, каптăк тĕлĕнчи хыçалти парта еннелле пăха-пăха илчĕç.

Практикант тинех класс мĕншĕн шавланине пĕлчĕ... Вăл литературăпа урок калама Голубева Тамарăна ура çине тăратнă иккен. Анчах та... илемлĕ кĕске çивĕт тунилĕ хĕрача вырăнне — кăтра пуçлă Голубева тăра парать!

Гена хăй те пĕр ăстрăм тĕлĕннипе çăвар уçаймарĕ. Урокра мар пулсан, Гена хĕрачана, тен, ятласа тăкнă пулĕччĕ-и, анчах ачасем умĕнче вăл хăй тĕлĕннине те палăртмарĕ. Çитменнине, хĕрачи ахаль те кĕç-вĕç йĕрсе ярасса çитнĕ.

Геннадий Голубевăна ларма хушрĕ те чыхăна-чыхăна кулакан ачана класс умне кăларчĕ.

Методистпа учительница та, студентсем те вĕчĕрхенме тытăнчĕç курăнать, вĕсем, тахçантанпах шыранă сăна акă халĕ тупнă художник пек, хăвăрт кăна Гена çине куç çĕклесе пăхаççĕ те тимлесех тем çыраççĕ. Вĕсем, паллах, Генăп çитменлĕхĕсене сăкă сăкса пыраççĕ: акă ĕнтĕ урок ларнăранпа вуншилĕк минут та иртрĕ — киле панă ĕçе пĕр ыйтупа та тĕрĕслеме ĕлкĕреймен-ха. Çапах Генăна ку ытлашши пăлхатмарĕ. Вăл пĕрехмай кăтра пуçлă хĕрача енне пăхкаласа илчĕ.

Урок пĕтсен те, Геннадий пăшăрханма пăрахмарĕ, хĕрачапа калаçса пăхма майлă вăхăт çаврăнасса, аслă перемена çитессе кĕтрĕ, анчах пысăк переменăра кĕтмен чăрмав сиксе тухрĕ... Гена хăй ун чухне учительсен пӳлĕмĕнче çукчĕ-ха; вăл, вуннăмĕш класра урок панăскер, хăйне тĕрлĕ ыйтусемпе тапăннă ачасен картинче тăратчĕ те — аллинчи журналне те учительсен пӳлĕмне леçме ĕлкĕрейменччĕ.

...Учительсен пӳлĕмне Сардонова çавраçил пек вирхĕнсе кĕчĕ.

— Акă курăр, мĕн вĕренеççĕ 9-мĕш класра,—терĕ вăл, сĕтел çине çӳхе хуплашкаллă кĕнеке пăрахса.

Пурте сĕтел патне тăкăлчĕç.

— Уход за новорожденным,— вуларĕ тахăшĕ кĕнеке ятне.— Советы молодым супругам.

Пĕр самант шăплăх тăчĕ.

— Ак — ача-пăча те вĕсене!

— Качча кайма хатĕрленет-ши ĕнтĕ?

Тахăшĕ хӳтĕлекен те тупăнчĕ.

— Мĕнех-ха... Вулатăр. Эп ним сиеплине те курмастăп кунта. Эпир ахаль те ку ыйтупа пачах вĕрентместпĕр вĕсене. Çавăнпа вĕсем хăйсемех шыраса тупаççĕ мĕн кирлине. Тен, ун ĕмĕт туртăмĕ ачасем енче? Кĕненике тăпăлтарса илме те кирлĕ пулман.

Директор вара пуçран çапнă майлах пĕр хушă анраса тăчĕ.

— Мур пĕлет, мĕн тăваççĕ ку класра,— терĕ вăл, кĕнеке листисене çилĕллĕн уçкаласа.— Класс пуçлăхĕ камха унта пирĕн? Максим Миронович чирлĕ? Геннадий Васильевич? Ăçта вăл халь? Килсенех ман пата пытăр!..— Директор çӳхе кĕнекене кĕпçелесе тытрĕ те — ун хыççăн пӳлĕм алăкĕ шалтлатса хупăнчĕ.

Гена, хăйне директор чĕннипе пĕлсен, учительсен пӳлĕмĕнчен тухса юнашар пӳлĕме кĕчĕ.

Директор хăй пӳлĕмĕнче пĕчченехчĕ. Унăн симĕсрех вичкĕн куçĕсенче кас-кас директор ĕçĕсĕр пуçне урăх ним те пĕлесшĕн мар пек çиçекен хĕлхемсем ялкăшса илеççĕ.

— Вырнаçăр,— терĕ вăл тараватлăн, вăрăм аллипе сĕтеле хирĕç ларакан диван çине кăтартса.

Унăн сассинче пысăк калаçу умĕнхи çынна пăлхатса яракан лăпкăлăх сисĕнчĕ.

Директор васкамарĕ. Умĕнчи хутне çырсах пĕтерчĕ, ăна папкăна чикрĕ, темĕнле хутсене ерипе пăлхаткаласа сĕтел хĕррине шутарчĕ, икĕ-виçĕ хутчен сĕтел сунтăхне уçса хупрĕ, вара хăй умне тухса выртнă кĕнекене сылтăм аллипе хуллен çапрĕ те, сĕтел çине сулахай енчен çутă ӳкерекен пӳлĕмри пĕртен-пĕр пысăк чӳрече çинелле пăхса, хăй умĕнче çын пуррине асăрхаман пекех шухăша кайрĕ, унтан сасартăк пуçне Гена еннелле пăрчĕ.

— Учительсен пӳлĕмĕнчен хăвăр класăрăн журналне илсе килĕр-ха,— терĕ вăл малтанхинчен те лăпкăн.

Гена учительсен пӳлĕмĕнчен класс журналне илсе килсе директор умне хучĕ те каллех хăйĕн вырăнне ларчĕ.

Директор, журнал çине тепĕр аллине хурса, хальхинче алăкалла пăхрĕ.

— Хăвăр класăрăн çыру тетрачĕсене илсе килĕр-ха.

Гена пĕр çĕклем тетрадь йăтса кĕрсе каллех сĕтел çине хучĕ.

Директор çаплах тем шухăшласа ларчĕ.

Каламан сăмах çынна хăш чухне ытларах та хăратать. Хăйне нихăш енĕпе те кăтартман, эс ун пултарулăхне пĕлмен çын та темĕнле «турă сывлăшлĕ» япала пек

чĕнмесĕр, никампа хутшăнмасăр, питĕ ĕçлĕн çӳренĕ чухне, пысăк хайлаллă та куç пăвас çын пек туйăнса, ирĕксĕрех чуна çӳçентерет.

Директор умĕнче ларнă самантра Генăн чĕринче шăп çавăн пек шиклĕрех туйăм хускалчĕ. Чун темĕн ырă мара кĕтсе канăçсăрланчĕ.

— Геннадий Васильевич! — витĕмлĕ сасă шарт! сиктерчĕ Генăна самантрах. — Мĕн пулчĕ сирĕн çав Голубевăна?..

Гена кун пек ыйтăва хирĕç тӳрех мĕн тавăрса каламаллине те пĕлмерĕ.

— Ача пĕтĕмпех пăсăлса кайрĕ-çке, — терĕ директор малалла, унăн сасси хăпарнăçемĕн хăпарса, хаярланса пычĕ. — Уроксене вĕренмест, чарусăр, пухусенчен тухса тарать, учительсене кӳрентерет, мур пĕлет, мĕнле киносене çӳрет, мур пĕлет, мĕнле кĕнекесем вулать. Урокра кирлĕ мар ĕçпе аппаланать. Çӳç кăтралатать, каçсерен ташăра!.. Ыйтатăп эпĕ: мĕн пулнă ăна? Пĕлетĕр-и, Геннадий Васильевич, эсир çакна?..

— Пĕлетĕп.

— Пĕлетĕр?.. — директор студента çăвар уçма памасăр, хĕрсе кайса, тата хытăрах калама тытăнчĕ. — Эсир çапла вĕрентетĕр-и ăна?! Е сире пурпĕрех-и? «Студент-практикант! Маншăн пулсан — ик айкки те тăвайкки! Икĕ уйăх çурă пурăнатăп та — хӳрене тĕвĕлетĕп!» Çапла мар-и сирĕн шухăшăр?

— Эсир йăнăшатăр, Петр Петрович, — терĕ Гена лăпкăн. — Эпĕ класпа уйăха яхăн çеç ĕçлетĕп-ха...

— Эсир уйăх ĕçлени пирĕн варăмăрсенех çапрĕ, — каллех касса татрĕ директор. — Çаксем пĕтĕмпех пĕр уйăхра пулса иртрĕç... — Акă, унăн шкулти тĕп ĕçне — «вĕренӳ» тенине — илсе пăхар, — класс журналне хăвăрт уçкалама тытăнчĕ вăл. — Акă эсир киличченхи... Литература — 5, 4, 3, 4. Акă эсир ĕçлеме тытăннăранпа — 3, 3, 2, 2. Алгебра — 3, 2, 3, 2.. Кусем пĕтĕмпех эсир килнĕренпе. Акă, малалла каяр...

Директор листа хыççăн листа уçса, Голубевăн вĕренӳ паллисене каларĕ.

Гена шăпăртах ларчĕ. Директор хĕрнĕçем хĕрсе пычĕ.

— Эсир унăн дисциплинине класра сӳтсе явас пирки те пӳрнене пӳрнепе тĕкĕнмен! — терĕ вăл малалла кăшкăрсах. — Эсир ăна шкул тулашĕнчи ĕçсене хутшăнтарас, вĕрентес пирки ним туман кăна та мар, эсир ăна шкул йышĕнчен те пистернĕ.

— Çук, Петр Петрович,— терĕ Гена.— Ăна пуху-канашлусенче ятлани тăн паман пулĕччĕ. Ятланисĕр пуçпе пирĕн тата шкулти çитменлĕхсене пĕтерес пирки те шухăшламалла. Хăшпĕр учительсем ачасене вĕрентме мар, хăйсем вĕрентекен предметран та сивĕтеççĕ... Сăмахран, эпĕ литература пирки çакăн пек калаçнине илтетĕп: «Пĕр-пĕр произведени шкул программине кĕнине пĕлсенех — унран чун сивĕнет»,— теççĕ.

— Тăхтăр-ха, Геннадий Васильевич, халь сăмах ун çинчен мар. Тăхтăр-ха, мĕнле каларăр-ха эсир? Йышпа ятлани ним те памасть терĕр-и? Мĕн тумалла вара? Эсир мĕн тума сĕнĕттĕр?

— Çын йышра, йышăн пĕр пайĕ пулсан тин ăна йыш ятлани пулăшать. Çын хăйне хăй йышăн пĕр пайĕ тесе шутламасан, йышпа ятланин усси сахал.

— Мĕншĕн ăна йыша явăçтарман? Эсир учитель-и е кам? Мĕншĕн ăна кружоксене хутшăнтарман? Ма вăл пĕччен? Ма унăн тусĕсем çук?

— Ачан, калăпăр, юрлама кăмăл туртăмĕ çук пулсан, епле-ха ăна вăйпах юрлаттаран? Харпăр хăй ачан хăйĕн чун-чĕре туртăмĕ пур. Çавна тупас пулать пирĕн. Çавна тивĕçтермелле учителĕн.

— Акă унăн туртăмĕ!..— Петр Петрович сĕтел çинчи çӳхе кĕнекене çĕклесе çапрĕ, унтан, паркетлă урайĕнче ботинкипе канăçсăррăн нăтăртаттарса, каллĕ-маллĕ ута пуçларĕ. Хапха пек кантăкран шăн çăка тăрри курăнчĕ те пăркаланса сулланчĕ, каллех кантăкăн çӳçеллĕ карри хыçĕнче çухалчĕ.

— Акă унăн туртăмĕ!— терĕ сĕтел патне утса çитнĕ директор, çав кĕнеке варринченех темĕнле ĕлкĕ кăларса пăрахса.

Гена хăйĕн хăюсăрлăхне сирсе пăрахнă пек пуçне силлесе илчĕ те чĕрре кĕрсех калаçма тытăнчĕ:

— Мĕнех вара — ача çĕвĕ çĕлеме юратать пулсан? Ман шутпа, ăна уншăн тирĕс шăлмалла мар. Тен, шкулта çĕвĕ кружокĕ уçмалла пулĕ. Эсир калатăр: мĕншĕн Голубевăна йыша явăçтарман, мĕншĕн вăл пĕччен, мĕншĕн унăн тусĕсем çук, тетĕр... Акă халь илĕпĕр: ачасем пĕр класра, пĕр парта хушшинче лараççĕ; вĕсен пĕр-пĕринпе калаçма та, сăмах хушма та юрамасть. Çакăн пек чухне вĕсем хушшинче туслăх-юлташлăх пур тетĕр-и эсир? Нимĕн чухлĕ те. Ан тив, ачасем пĕр класра ик-виç çул пĕрле ларччăр — пурпĕрех вĕсен пĕр-пĕринчен ютшăнасси пĕтмест, çирĕп туслăх чăмăртанмасть, пулăшса

ĕçлесси çук. Ачасене, класĕ-класĕпе, ушкăнĕ-ушкăнĕпе, ĕçе сахал хутшăнтаратпăр эпир. Хулари шкулсем ку енĕпе пиртен маларах кайнă, кружокĕсем те ытларах вĕсен. Хулари спорт клубĕсем, техника клубĕсем, Пионерсен çуртĕнчи тĕрлĕ секцисем — пурте вĕренӳпе воспитани ĕçне тăваççĕ.

Иртнĕ ĕмĕрте хамăрăн Иван Яковлевич уçпă Чĕмпĕрти чăваш шкулпех аса илер... Ун ачисем çĕр сухаланă, акнă, пуçтарнă — хăйсем валли хăйсем тырпул, пахчаçимĕç туса илнĕ... Ун ачисем хресчен те, столяр та, тимĕрç те, артист та, художник та, музыкант та пулнă. Йыш та çирĕп чăмăртаннă вĕсен, туслăх та çирĕп пулнă. Яковлев традицийĕсене манса пыратпăр эпир...

— Эсир ĕмĕтленме юрататăр иккен. Ку ухатер аван!.. Анчах пирĕн шкул программинче ун пек япаласене палăртма темшĕн астуман вара. Министерствăрисен ăс çитеймен-тĕр,— йĕкĕлтесе каларĕ директор.— Çырса пĕлтерес мар-и — ăслă çын тупăнчĕ тесе... Кĕтӳри пĕр путек шырлана кĕрсе ӳкрĕ пулсан, чи малтанхи ĕç—шырланне пĕтересси мар, шырланĕнчен путекне туртса кăларасси пулать... Пирĕн умра халĕ чи малтанхи ĕç тăрать. Иккĕмĕшĕ — пирĕн ĕç мар, ăна пирĕнсĕрех тăвĕç... Апла пулсан та, кам чарать сире тĕрлĕ кружоксем йĕркелеме? Ку вăл комсомол ĕçĕ, пĕлесех тетĕр пулсан, пионер ĕçĕ! Класс тулашĕнчи ĕç!.. Пирĕн тĕрлĕ кружоксемпе ытлашши аташса кайма, тӳрĕ каласан, вăхăт та, ытлашши пус та çук. Талăкра 24 сехет мар, 34 сехет пулнă пулсан — тăваттăшне тĕрлĕ кружоксем валли парăттăмăрччĕ. Халь эпир вĕренӳ программине те аран-аран çеç тĕкĕнтеркелесе, вăхăта татса-сыпса çеç çитеркелесе пыратпăр. Вăхăт çитмест ачасен: паян кружока хăвар—ыран вăл пĕр-ик урок хатĕрленмесĕр килет, пĕрре экскурси ту—тепĕр кунне пĕтĕм шкулĕпе пăтăрмах. Эпир харпăр ачашăн уйрăм кружок йĕркелеме пултараймастпăр. Кунта пирĕн ултçĕр ачан ултçĕр туртăм, ултçĕр енне... Çĕр çинче мĕн пурри, мĕн кирли енне туртăм вăратмалла. Тата çакна манма кирлĕ мар: сирĕн алăрта аслă класс. Сирĕп алăрта мăп çынсем, паян-ыран хăй тĕллĕн пурăнма тытăнас çынсем... Пионер мар вĕсем тек — тĕрлĕ вак-тĕвек кружоксем, çĕвĕсем-темсем çинчен калаçма. Çавна ăнланмастăн эсĕ, хисеплĕ Геннадий Васильевич! Программа, программа! Акă мĕн пурнăçа кĕртмесен ĕнсе хыçтараççĕ пире. Ăна министерство çирĕплетнĕ. Халĕ кунта эпĕ директор чухне — тархасшăн — программăпа ĕçлĕр! Вĕрентĕр ачана!

Гена, чăтăмлăн итлесе ларнăскер, хальхинче вĕчĕрхене пуçланине пытараймасăр ура çине тăчĕ.

— Петр Петрович, эп калам сире тĕрĕссине,— терĕ вăл.— Çав Голубевăнах илер... Ăна çак программа йăлăхтарса çитернĕ. Ятланипе кунта ним те тухмасть. Малашне те кун пекех пулсан,— эпĕ татсах калатăп — вăл шкула çӳреме те пăрахать, пачах йăнăш çул çине тăрать... Эсир ачасене ятласа тăн парасшăн...

— Тăхта-ха, тăхта, пушмак — пĕтĕм кашкăр санăн пулĕ!... Акă мĕн иккен! Ав епле! Ирĕк парăр-ха, тархасшăн, сире пӳлме. Мĕн тăвасшăн вара эсир? Мĕнле йĕрке тăвасшăн шкулта? Мĕнле çĕнĕ программа йышăнасшăн? Ку питĕ тĕлĕнмелле япала маншăн,— терĕ директор.

— Сăмахран... Хăвăрах каларăр-çке: ачана паян пĕрпĕр кружока хăвар — вăл ыран темиçе урок хатĕрлеймесĕр килет, терĕр. Ачасен ним тума та вăхăт çук. Кунсăр пуçне эпир хамăр шкулăмăртан чĕртавар кăна хатĕрлесе паратпăр.

— Тăхта-ха, мĕн тăвасшăн вара эсĕ?— малтан хăй хисеплесе чĕннĕ «эсиртен» халĕ ĕнтĕ хисепсĕр «эсĕ» çине куçрĕ директор.— Мĕн, çĕнĕрен педологи вĕрентĕвне шкул никĕсне хывасшăн-и? Ăна вăтăрмĕш çулсенчех çапса хуçнăччĕ. Тен, каллех лабораторно-бригаднăй меслет кĕртесшĕн? Тавтапуç! Куртăмăр пурне те!.. Эс суннă ырлăхсене эпир эсĕ çураличченех тĕпрен тăпăлтарнă. Пирĕншĕн вĕсем çĕнĕ мар, пирĕншĕн вĕсем çӳп-çап пулнă.

— Çук, Петр Петрович,— хирĕçлерĕ студент.— Ачасене вунă çул вĕрентсе пĕтĕмĕшле пĕлӳ çеç парасси, ачапа аслă шкула кĕме çеç хатĕрлесси—çаксем вĕсем çĕнĕ-и? Ку вăл революцичченхи гимназисен йĕркинчен мĕппе уйрăлса тăрать тетĕр эсир? Пирĕн вăхăтри вĕрентĕве ĕçпе çыхăнтармалла. Кунсăр пуçне тата... Пирĕн ачасем часчасах—10-мĕш класс пĕтерсен те — хăйсен пултарулăхĕ хăш енне иккенне хăйсем те пĕлмеççĕ, вăтам шкул хыççăн вара — аслă шкула кĕме çеç пĕтĕмĕшле пĕлӳ илнĕскерсем — хăш института кĕме майĕ пур, çавăнта вырнаçаççĕ, пурпĕрех вĕсемшĕн: учитель пулас-и, инженер-и, бухгалтер-и...—аслă шкул тулашне çеç тăрса юлас мар. Кун пек çынран, паллах, пархатар сахал. Çыннăн пултарулăхĕ мĕн патне пулмаллине ача вуннă-вуниккĕре чухнех асăрхама пулать, çав пултарулăх палăрнă вăхăтра пулăшмалла вĕсене, ачан çав палăрнă туртăмне, пултарулăхне аталантарма май памалла. Тен, хайлаллисем валли шкулта тĕрлĕ уйрăмсем йĕркелемелле пулĕ,.. 6—8-мĕш

классенчех пĕр-пĕр туртăм палăрнă ачана, уйăрса илсе, унăн çав вăраннă пултарулăхне пайăррăнах йăл илме май туса памасан, кайран 10-мĕш класс пĕтернĕ çĕре çав палăрнă пултарулăх çине е каю шăтать, е вăл сĕвĕрĕлсе каять — ачан пуçне вара «эпĕ пурне те пултаратăп, манăн таçта кайса тем тума та, кирек кам пулма та пултарулăхăм пур» текен йăнăш шухăш, тăвар каснă пек, çапса-касса лартать çеç...

— Итле-ха, Геннадий Васильевич, тĕрлĕ ăпăр-тапăр шухăша ытлашши ним сăвăрмасăр, ним алламасăр хăвăн пуçна тултарнă эсĕ... Хаçатсенче те тĕрлĕ ăс пур... Акă кур, паянхи хаçатра пĕр тăмппайĕ мĕн калать: хальхи саманара опера, симфони тавраш — ухмахла, никама кирлĕ мар япала иккен. Çакна калаканни тата ахаль çын та мар — инженер... Сана, Геннадий Васильевич, алă айне лекнĕ тĕрлĕ теорисенчен киввипе çĕннине уйăрса илме ăспуçунтан марксизм-ленинизм алли çукки пӳлсе, чăлхантарса пырать.

— Апла мар, Петр Петрович... Каçарăр-ха, каласа пĕтерем шухăша... Акă халь çеç эпĕ каланă йышши ачасем аслă шкулта вĕренсе нумай усă параяççĕ-и? Çакăн пек ачасем пирĕн шкулта пĕрре-иккĕ кăна тетĕр-и? Çурри ытла! Акă пирĕн ачасене илер,— терĕ студент малалла, ытларах та ытларах чĕрре кĕрсе пынă май,— вăтам шкул пĕтернĕ, çитĕнсе çитни çинчен хут илнĕ, пурнăç путевки илнĕ — ним ĕçе те çыпăçаймасть, нихăш ĕçре те алли çаврăнмасть...

— Эс тĕрлĕ ăпăр-тапăрпа ман пуçа ан çавăр!— сасартăк сĕтеле çапса кăшкăрса ячĕ директор.— Тӳрĕ каласан, ку — политика ыйтăвĕ... Ку... ку — парти ыйтăвĕ, тепĕр тесен!.. Эпĕ икĕ вăрçăра пулнă! Эс — чĕчĕ пăрушĕ — мана вĕрентме хăятăн! Эп сана паянах шкултан тапса сирпĕнтеретĕп! Шкул системи килĕшмест ăна, совет шкулĕн йĕрки! Иртнĕ ĕмĕрти чăваш шкулĕн йĕркине никĕсе хурасшăн вăл, турра та патшана пăхăнса-парăнса пурăнма чĕннĕ çын традицине!..

— Çырлахсамăр, Петр Петрович! Мĕн калаçатăр эсир! Ман пирки ĕнтĕ, атя, тем каласан та чăткалăп, тейĕпĕр... Яковлев çинчен епле çапла лаплаттарса хума хăятăр?

— Вăл монархист, турра ĕненекен çын пулнине тата эсĕ турта курман юпах тиха иккенне лайăх пĕлетĕп эпĕ... Йăптăхна тăк малтан! Марш кунтан!

Гена урăх çăвар уçма та ĕлкĕреймерĕ, директор хăй пӳлĕмĕн алăкне уçса кăшт пăрăнчĕ те уçă алăкра, алли-

пе хăлăпрап вĕçертмесĕрех пĕр çын тухмалăх вырăн хăварса, студент тухасса кĕтсе тăчĕ.

Гена, çакă пĕтĕмпех кĕтмен çĕртен килсе тухнипе анăш-тĕнĕшленсе, малтанхи самантра ним шухăшлама та ăс çавăраймарĕ.

Вăл пăтранчăк кăмăлпа тепĕр сехет-сехет çурăран учительсен пӳлĕмне кĕчĕ. Кунта студентсем иртнĕ уроксене сӳтсе яваççĕ-мĕн. Александр Семенович, практикăри студентсен пуçлăхĕ, çав вăхăтрах методист, алăка хирĕçле кантăк тĕлĕнче лараканскер, ура çинче тăракан Коршунова студенткăна педагогика йĕркипчен пăрăнсах тăн парать.

— Мĕн чаваланса тăратăн эс унта, кала-ха?— тет вăл хытах.— Ачи ахаль шăрчăк, эсĕ тата çĕтĕлтеретĕн. Пĕтĕм урока пăсса хучĕ-çке, э?

— Ара, урокпе пĕлмест те,— сиксе тавлашать Коршунова та, тачка лутра хĕр, тутине ялан такампа кăмăлсăр пек тăсса çӳрекенскер.

— Эсĕ ху та мĕн чухлĕ теорилле, мĕн чухлĕ методикăлла, педагогикăлла йăнăшсем туса тултартăн. Мĕн кинора пулнисене, ташланисене, çӳç пирки асăнса тăратăн? Хĕрачи ахаль те патне çитнĕ...

...Методист, учительсен пӳлĕмне Гена кĕрсен, те юри вара калаçăва чат урăх енне пăрчĕ.

Генăна никам та сăмах хушмарĕ. Пурте, ăна асăрхаманçи пулса, курнă куçа курмăш, илтнине илтмĕш турĕç. Те Генăна хăйне çеç çапла туйăнчĕ. Директор хăй патне мĕншĕн чĕнтернĕ пирки те никам та ыйтас, пĕлес темерĕ.

Кунта темĕнле тĕплĕ калаçса татăлнă кавар сисĕнсе тăнăн туйăнчĕ.

Гена хăй те никама ним каламасăрах учительсен пӳлĕмĕнчен тухрĕ. Вăл шкултан мĕншĕн халех кайнине унран ыйтакан та, практикант йĕркине çапла майпа пăснишĕн ăна асăрхаттаракан та пулмарĕ.

ВУНИККĔМĔШ СЫПАК

Тепĕр кунне шкулти учительсем хушшинче кунĕпех шавлă лару-тăру тăчĕ. Пурте Геннадий Васильевич студент-практикант çинчен калаçрĕç.

Шкул йĕркисем те килĕшмеççĕ иккен ăна. Пирĕн шкул чĕртавар çеç хатĕрлет имĕш... Ĕлĕкхи шкул йĕркисене никĕсе хывмалла имĕш... тата ыт. те, т. ыт. те.

Пурте ахлатса тӗлӗнчӗҫ.

— Ку хӑрушӑ япала-ҫке!

— Мӗнле майпа шкула килсе ҫакланма пултарнӑ вӑл?

— Епле асӑрхайман ӑна ку таранччен?

Хӑшӗ-пӗри тата ҫапларах та суйланчӗ:

— Васильев Геннадий Васильевич ҫавнашкал тесе — тӗлӗкре те тӗлленмен. Пӑхатӑн: чипер ӑслӑ-пуҫлӑ ҫынах!

Геннадий Васильевича тепӗр енӗпе те вӑрҫрӗҫ. «Вӑл хӑйӗн класӗнчи хӗрачан пуҫне ҫавӑрса янӑ, вӑл пӑсса янӑ Голубевӑна»,— терӗҫ уҫҫӑнах.

Ку кун Гена хӑй шкулта ирех курӑнмарӗ. Ӑна никам та кӗтмерӗ. Текех кунта вӑл ура ярса пусас ҫук пуль тесе шутларӗҫ учительсем, вара: «Йӳҫ кӑшманӑн сайри паха»,— терӗҫ.

Анчах та Геннадий шкула пычӗ. Аслӑ перемена вӑхӑтӗнче ҫитнӗскер, вӑл пӗрремӗш хутри коридор алӑкӗ тӗлӗнче хӑйсен Феня ятлӑ студенткине, практикӑри студентсен ушкӑнӗн старостине, тӗл пулчӗ. Феня Генӑна курсан алӑк хӑлӑпне аллинчен вӗҫертрӗ те ерипен каччӑ умне утса пычӗ.

— Ырӑ кун, Гена...

— Ху та сывлӑхлӑ пул, Феня,— тавӑрчӗ Гена ҫирӗппӗн те йӗркеллӗн.— Александр Семенович пур-и?

— Вӑл ӗнерех хулана кайрӗ, паян юлашки урок тӗлне кӑна ҫитетӗп пуль, терӗ. Институтра ун кафедра ларӑвӗсенче пулмалла, тет. Сана курасшӑнччӗ вӑл питӗ. Мӗн эсӗ ӗнер никампа ним калаҫмасӑрах тухса кайнӑ?.. Никам та сисмен эс кайнине. Александр Семенович мана ятлаҫать. Иртӗхтерсе ятӑн, тет. Йӗркене те пӑхӑнмастӑр, тет. Сана вӑл шутсӑр хытӑ тарӑхнӑ. Кун пек пулсан, эп ӑна зачет памастӑп, ан тив, тепӗр хут практикӑна кайтӑр, тет.

— Ан патӑр тата...— Гена аллине сулса илчӗ те иккӗмӗш хуталла хӑпарма картлашка ҫине ура ярса пусрӗ.

— Ан васка-ха эсӗ,— ҫаннинчен тытса чарчӗ ӑна хӗр.— Мӗн пулнӑ сан ӗнер директорпа? Питӗ шавлаҫҫӗ паян кунта учительсем.

— Мӗн тесе?

— Тем текен те пур унта...

Ҫӳлтен ачасем кӗпӗрленсе чупса анчӗҫ те вӗҫӗмсӗр «Здрасте», «здрась»... тесе икӗ студент хушшипе ирте пуҫларӗҫ, вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрсах ячӗҫ.

— Юрӗ, тепӗр чух калӑп...— Феня енне аллине сулчӗ Гена, картлашка тӑрӑх ҫӳлелле хӑпарнӑ май.

Иккӗмӗш хутри коридор алӑкне уҫса учительсен пӳлӗмӗ еннелле сулӑнсанах, хӑйсен тепӗр студенткине пырса ҫапӑнчӗ Гена.

— Ха, Васильев пулчӗ-ҫке ку — ҫын ҫумне пӑван пек пырса ҫапӑнаканскер,— терӗ студентка йӗкӗлтевлӗ сасӑпа мӑшкӑлларах. Хӑй вӑл Коршунова Зина пулчӗ.—Ҫапса ӳкертӗн пулсан, илсе пар кӗнекене...

— Каҫар,— Гена хӑвӑрт пӗшкӗнсе Зина аллинчен ӳкнӗ кӗнекене илсе пачӗ.

— Ну-и-ну-у, Ген-на-ди-ий...

Коршунова куҫне чарса Геннадий ҫине тӑрӑнчӗ. Унта те йӗкӗлтевлӗ, те мӑшкӑллӑ, те ҫын инкекӗшӗн савӑннӑ чухнехилле, туппине тӳрех тупма ҫук хӗлхемсем ҫиҫсе тӑраҫҫӗ.

— Мӗн вара эпӗ?— тӗлӗнсе пӑхрӗ ун ҫине Гена.

— Ну-и-ну-у эс... Ну, тӗлӗнтере-е-ен!..

— Мӗн ара, мӗн?

— Ну-и-ну-у-у!..— ҫаплах шӑл йӗрсе уласа тӑчӗ Коршунова.

Генӑн ӑна ҫак самантра ҫав тери питӗнчен ҫутӑлтарса ярас килсе кайрӗ, вара вӑл, хӑйӗн ҫилли тулсах ҫитиччен тӑхтас мар тесе, вӑрт! ҫаврӑнчӗ те учительсен пӳлӗмӗ еннелле утрӗ. Пӳлӗм алӑкӗ умӗнче ун ҫулне Данилова Нина студентка пӳлсе хучӗ. Вӑл, лутра та тачкаскер, хулӑн сасӑпа калаҫаканскер, тӳрех Гена сӑмси айне пуҫне чикрӗ.

— Итле-ха, Васильев, мӗн туса хунӑ эсӗ ӗнер? Чӑпах ҫапла калана-и эс директора?— ыйтрӗ вӑл, темле хӑйӗн ҫеҫ пӗлме тивӗҫ вӑрттӑнлӑх ҫинчен сӑмах пынӑ пек, пӑшӑлтатса та йӑпӑлтатса.

— Мӗнле калана?!— Коршуновӑна капланнӑ ҫиллипе пачах урӑх ҫынна кӑшкӑрса пӑрахрӗ Гена, вара, коридорти ачасенчен вӑтанса, самантрах шӑлне ҫыртрӗ, учительсен пӳлӗмӗ умӗнчен вашт! пӑрӑнчӗ те коридор тӑрӑх утса кайрӗ. Коридор вӗҫне ҫитсен, «Мӗн тума килтӗм-ха эпӗ кунта?» тесе чарӑнчӗ. Класс алӑкӗ ҫине мӗн ҫырнине ӑнланмасӑр пӑхса тӑчӗ. 9«А» тесе ҫырса хунӑ унта. Мӗне пӗлтерет-ха ку?.. Э-э... Ҫакӑнта класс пуҫлӑхне ҫирӗплетнӗччӗ-ҫке ӑна практика ирттерме.

Геннадий, алӑка май килнӗ таран лӑпкӑраххӑн туртса уҫса, класа кӗчӗ. Класра пӗртен-пӗр дежурнӑй ача кӑна, Петров хушаматлӑскер, форточкӑсене йӑлт уҫса пӑрахнӑ та йӗпе тутӑр татӑкӗпе доска шӑлать.

— Ытти ачасем ӑҫта?— ыйтрӗ Геннадий унран.

— Урама хăваласа ятăм... Атту класа уçăлтарма памаççĕ.

— Голубева пурччĕ-и паян?

— Пурччĕ те — кайрĕ.

— Мĕнле кайрĕ?

— Нимĕç чĕлхи урокĕнче Елена Сардоновна ятлаçрĕ те,— пĕлтерчĕ Петров.

— Мĕншĕн?

— Голубева урок пĕлмерĕ,— ирĕксĕррĕн каларĕ Петров.— Елена Сардоновна: «Сан çӳç кăтралатма çеç»,— тесе хучĕ. Тамара: «Сан урокусене итлессĕм килмест ман»,— терĕ, Елена Сардоновна вара ăна урокран тухса кайма хушрĕ...

Геннадий класран тухсан ниçта кайма аптраса тăчĕ. Учительсемпе студентсен куçĕ тĕлне те пулас килмерĕ унăн текех. Урока ларма шăнкăрав янраса кайсан, вăл хыпаланса ӳкрĕ, учительсен пӳлĕмĕ енне ура ярса пуснăскерех чарăнса тăчĕ те коридортан тухмалли алăк еннелле утрĕ, хирĕç кĕпĕрленсе килекен ачасем ăна çапăна-çапăна иртрĕç, сывлăх сунакан ачасене сӳрĕккĕн пуç сĕлтсе хуравла-хуравла, вăл шкул килкартинех тухрĕ, унтан килкартинчен те тухса кайрĕ.

«Юрĕ, Александр Семенович киличчен кĕрем мар унта,— шухăшларĕ вăл.— Урок пĕтнĕ тĕле кайăп».

Геннадий райцентрпа тĕкĕнсех тăракан яла хăйĕн хваттерне утнă май каллех Тамара инкекĕсем пирки пăшăрханса шухăшларĕ.

«Чăн та, шкултан пачах сивĕнме пултарать-çке ку...»

Кайран, кăнтăрла иртни икĕ сехет тĕлнелле, хваттертеп тухса шкулалла утнă май, Геннадий Тамарăсем патне кĕрсе тухма шутларĕ.

«Амăшĕпе канашласа пăхас, хăйĕнпе калаçса илсен тата лайăхчĕ»,— ĕмĕтленсе пычĕ вăл çул çинче.

Тамарăсем патне кĕрсе тухас шухăш Генăн паçăр хваттерте ларнă чухнех, Митюк валли амăшĕ кĕпе-шăлавар якатнине курсан, çуралчĕ.

— Ма хăйне якаттармастăн? Ача мар ĕнтĕ вăл текех,— терĕ Гена карчăка.

— Э-эй, пĕртен-пĕр ывăла та кĕпе-йĕм якатса памасан, камшăн, мĕншĕн пурăнас ман...— утюгне йăпăртлăха лартсах аллисемпе хăлаçланса илчĕ карчăк.— Хĕрсем вечера чĕнеççĕ, тет. Каччă пулчĕ ĕнтĕ, хĕр шучĕ кĕнĕ... Авлантармалла çеç, Çинахви Валин менелник, тет-и, ыран.

Эсӗ пӗлетӗн-ха ӑна, пирӗн пата та час-часах килкелесе каять. Ӗнер те кӗрсе тухрӗ...

— Зиновьева Валя-и? Кӗпер патнерех-ха вӗсен килӗ...

— Ҫавӑ ҫав. Вӗсен тӗлӗнче пӗр пысӑк хурама пур.

«Тамара Голубевӑп тусӗ-ҫке ку Ҫинахви Вали» тени... Эппин, паян Тамара та унта пулать...» — тавҫӑрса илчӗ Гена.

Ун чӗри хӗсӗнсе ыратса кайрӗ...

Килӗнче Тамара хӑй те, амӑшӗсемпе шӑллӗ те, амӑшӗ те ҫукчӗ. Кил пӑхма хӑварнӑ мӑнтӑркка уксах хӗрарӑм ҫеҫ, майралла тумланнӑскер, чӑлха ҫыхса ларатчӗ. Ку вӑл кӳршӗри Вовӑн амаҫури амӑшӗ пулнӑ.

— Амӑшӗ ял-ял урлӑ, тахӑш хулана терӗ, пиччӗш патне кайрӗ-ха, ырансем-виҫминесем таврӑнать пулӗ, — терӗ вӑл, Тамара пирки ҫапла каларӗ: — Паян шкултан ирех таврӑнчӗ. Урӑх каймастӑп, тет. Шкулӗнче те, ман хӑраххӑм, пур чухне те пуҫ тавра шутласа калаҫмаҫҫӗ пулмалла. Кӳрентернӗ ачана. Каччӑсемпе ҫӳрет имӗш. Хӗрӗн шухӑшне малтан амӑшӗ сисекенччӗ те, амӑшӗ ун пек-кун пек шарламастчӗ. Ашшӗпе хур тӑваҫҫӗ, тет, тата. Хӑйне такам кӑтралатса янӑ... Амӑшӗ килсен тем калӗ ӗнтӗ...

Гена Тамарӑна кирек мӗн пулсан та шкула яма хушрӗ.

— Шкулне каять пуль-ха. Халӗ те шкула кайрӗ-ха. Хӗр-тантӑшӗсем килсе чӗнсе кайрӗҫ. Комсомол пухӑвӗ тет-и вӗсен паян...

«Мӗнле вара эпӗ куна пӗлмесӗрех юлнӑ? Хӑҫан йышӑннӑ-ши пуху ирттерме? Ма мана никам та ним те систермен?..»

Гена шкула васкарӗ. Шкул картлашки тӑрӑх иккӗмӗш хуталла чупса хӑпарчӗ. Вӑл коридор алӑкӗн хӑлӑпне тытса туртрӗ ҫеҫ, леш енчен те ӑна такам ҫав вӑхӑтрах тӗртнипе йывӑр алӑк шалт уҫӑлса кайрӗ те, тухакан ҫын Гена ытамнех тирӗнсе анчӗ.

— Тамара? — тӗлӗнсех кайрӗ студент. — Аҫта васкатӑн эсӗ капла?

Гена сасартӑк ҫӑварне хупрӗ. Хӗрачан шывлӑ куҫӗ хаяррӑн йӑлтӑртатса илчӗ, питҫӑмарти тӑрӑх хӑйӗн нӳрӗ йӗр анать. Хӗрача пӗр самант — хӑйӗн умӗнчи ҫынна паллаймасӑр-и — куҫне чарса пӑхса тӑчӗ-тӑчӗ те пуҫне хыҫалалла вӑрт! ывӑтрӗ, картлашка ҫипелле ыткӑнчӗ.

— Тӑхта-ха, — чарчӗ ӑна Гена.

Хӗрача карлӑкран тытса чарӑнса тӑчӗ.

— Мӗн пулнӑ сана?

— Эпĕ кил-мес-тĕп урăх кунта! Пĕрре те, пĕрре те!..

— Мĕн унта?

— Пуху...— терĕ хĕрача, вара ĕсĕклесе илчĕ те, сасăпах макăрса яма хатĕрскер, пуçне карлăк çине хума тăчĕ, анчах, алăк сассине илтсе, апла тумарĕ, карлăкран вĕçерĕнсе аялалла чупрĕ. Картлашка çине тухса тăнă Елена Сардоновна çине вăл епле куç çиçтерсе пăхса илнинчен Гена кунта мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех ăнланчĕ.

— Голубева! Вĕренекен-и эс е кам?— кăшкăрчĕ Сардонова, икĕ картлашка аялалла анса.— Пĕтнĕ ку ача!

Вăл Генăна асăрхасан чарăнчĕ.

— Тарчĕ,— терĕ вăл хăй ăссĕн калаçнă пек, унтан кĕтмен çĕртен Гена çине тăрăнчĕ.— Курăр, Геннадий Васильевич, савăнăр... Çакă вăл — сирĕн ĕçĕр!..

Гена тем065 каларĕ-çке, те «Ман кăна-ши?» терĕ вара, çакна вăл хăй те астăваймарĕ, анчах учительница хаяр çилĕпе хыпса илчĕ:

— Сăмсуна чиксе вараласа хăвараттăн та, халĕ çакăн пек калама хăятăн?! Тасат кунта халь сан хыççăн. Эсĕ пăсса ятăн ăна пĕтĕмпех! Каçсерен клубра, кинора! Эс пуçне çавăратăн ăс кĕрсе çитмен ачанне! Улах мар кунта пирĕн — шкул!

«Шкул» сăмаха мĕнле сасăпа калани — Генăн пĕтĕм чĕлхи-çăварне, ăстăнне çыхса лартрĕ. Чун тăвăлса килнĕ чухне вăл ялан чĕнейми пулать, кайран тин хăй ун чухне ним те хирĕç калайманшăн пăшăрханма тытăнать. Ун чухне калас сăмахсем те кайран тин чĕлхе вĕçне килеççĕ...

Ав мĕн шутлаççĕ иккен ун çинчен! Эппин, Гена пăсать хĕрача ăсне. Ав мĕншĕн иккен пурте, пĕр çăвартан калаçса килĕшнĕ пекех, Гена çине сиввĕн пăхаççĕ. Гена пĕлет: директор ăна е ăнланаймарĕ, е ăнланасшăн мар, е хăнăхнă, çирĕпленнĕ йĕркесен тыткăнĕнче тарăн ларать, çавăнпа тăшман турĕ вăл Генăна.

Пуçра тĕрлĕ шухăш аварчĕ. Халĕ шкула кĕме те, учительсемпе студент-практикантсен умне тăма та, ачасемпе курнăçма та, чăнахах хăйĕн тивĕç çуках пек, хăй каçарма çук айăп тунă пек туйăнчĕ Генăна.

Вăл Сардонова кĕрсе кайнă хыççăн та ик-виç минут крыльца картлашки çинчех ним тума аптраса анраса тăчĕ. Унтан ерипен каялла çаврăнчĕ те васкамасăр утса аялалла анчĕ.

Ун чунне сасартăк сивĕ те хатарлă пек туйăнса кайрĕ кунта. Вăл васкасах шкул килкартинчен урамалла тухрĕ.

«Мĕн тума учитель пулас шут тытнă-ши эпĕ пилĕкултă çул каялла?— ӳкĕнсе калаçрĕ вăл хăй ăшĕнче.— Чăн та, ман ĕç мар пуль ку... тĕртсех калаççĕ пуль шкулта хура-шур курнă çынсем...»

Мĕнех? Кая мар вĕт-ха халь пурнăçа улăштарма... Çирĕм иккĕре... Ватах мар...

«Пăрахатăп та каятăп... Кирек мĕн пултăр унта кайран!..»

...Геннадий хваттерне çитсенех койка айĕнчен хăйĕн чăматанне туртса кăларчĕ, çӳлĕк çинчи кĕнекесемпе тетрачĕсене майлаштарса унта тултара пуçларĕ...

* * *

Студент-практикантсен ушкăнĕн пуçлăхĕ Александр Семенович методист хăйĕн студенчĕсем патне хуларан шкула тепĕр кунне тин кăнтăрла иртни виçĕ сехет тĕлнелле тавраннчĕ. Учительсенчен нумайăшĕ ĕнтĕ урокĕсене вĕçлесе килĕсене саланса пĕтнĕ. Практикантсен вара хĕрӳ ĕç тин пуçланнă темелле: уроксем хыççăнхи, класс тулашĕнчи мĕнпур ĕç халĕ вĕсем çине тиеннĕ. Пĕри ачасене стена хаçачĕ кăларма, стенд йĕркелеме пулăшать, тепри дискусси ирттерет, виççĕмĕш вĕренӳре юлса пыракан ачасемпе уйрăммăн ĕçлет, учительсен пӳлĕмĕнче ларакансем те ĕççĕр мар — тăрăшсах ыранхи зачет урокĕн конспектне хатĕрлеççĕ. Пĕр Васильев практикант çеç класра та, учительсен пӳлĕмĕнче те курăнмарĕ.

— Килнĕ-и вăл паян шкула?— ыйтрĕ методист ушкăн старостинчен.

— Ĕнер ирхинерех кунтаччĕ, паян курăнмарĕ,— тавăрчĕ Феня.

— Тепĕр зачет урокĕ хăçан унăн?

— Виçмине-и-ха е тăватмине-и...

— Урок конспектне е планне хатĕрленĕ-ши вăл, ма мана кăтартмасть?

—«Васильев», тетĕр-и?.. Вăл хулана кайрĕ пулмалла,— пĕлтерчĕ кĕтмен çĕртен Нина Данилова студентка.— Пĕр вунă-вунпилĕк минут каялла столовăйран тухсан куртăм: тем пысăкăш чăматанне суллантаркаласа хула автобусĕ патнелле утатчĕ.

— Камран ирĕк ыйтнă вăл?!— кинет тарăхса кайрĕ Александр Семенович.— Мĕнле çапла дисциплинăна пăхăнмалла мар!.. Ыранах деканата çырса паратăп эпĕ ун çинчен! Юрамасть çапла... Ахаль те хăй пирки темтепĕр калаçаççĕ... Вăл пур, леш юмахрилле, çунакан улăм ури

ӑшӗнчи кашкӑр пек, шатӑртатнӑҫемӗн шаларах кӗрет!.. Чӑматанӗ-мӗнӗпех тетӗп?..

— Чӑматанӗпех.

— Хм...— сасартӑк ҫиллине шӑнарса шӑпӑртах пулчӗ пуҫлӑх, ура ҫине тӑрса, учительсен пӳлӗмӗнче каллӗ-маллӗ уткаларӗ.— Кампа канашланӑ вӑл? Ма манпа та пулин калаҫман?..

— Курасшӑнччӗ вӑл сире...

Шкул директорӗпе студентсен ушкӑнӗн пуҫлӑхӗ хушшинче виҫӗмкун Васильев пирки самаях кӑра калаҫу пулса иртнӗччӗ.

Васильев студента директор тӑшман вырӑннех хурать. Унӑн «пӑнтӑх идейисене» сӑвӑрманшӑн Александр Семеновича ятлать. Мораль енчен те педагог пулас ҫын мар вӑл, тет. Вӗрепекен хӗрачасенче улах хӗрӗсене курать вӑл, тет.

Ак пыр та калаҫ!

Васильев студент институтра преподавательсемпе профессорсем пуринчен ытла хисеплекен студентсен шутӗнче тӑрать. Александр Семенович та ӑна нумай вуланӑшӑн, лайӑх вӗреннӗшӗн, кашни ыйтӑвах тенӗ пек ҫӗнӗлле татса пама пӑхнӑшӑн хисеплет. Шкул директорӗ виҫӗмкун каланӑ сӑмахсем ӑна, чӑн та, апратсах ячӗҫ.

Хӗрачапа студент хушшинчи ҫыхӑнусем пирки Александр Семенович халлӗхе, студентпа хӑйпе калаҫса пӑхмасӑр, ним калама та аптӑрать. Унӑн «пӑнтӑх идейисем» пирки... Тем, кунта директор хӑй йӑнӑшать пулӗ. Институтра никам та асӑрхаман унӑн ҫавнашкал идейӑсем пуррине...

«Студентсем ӗнтӗ — хӗрӳллӗ халӑх. Вӗсем ытларах ҫӗнӗлле шухӑшлама юратаҫҫӗ. Чӑн та, йӑнӑш шухӑшсем те пулаҫҫӗ вӗсен... Анчах куншӑн тӳрех ҫапса хуҫма кирлӗ мар вӗсене»,— тесе хӑйӗн студентне хӳтӗлеме хӑтланса пӑхрӗ ӗнер Александр Семенович директор умӗнче, анчах студентпа хӑйӗнпе калаҫмасӑр нимӗн те татӑклӑн йышӑнма пултараймарӗ.

Халӗ акӑ чӑматанӗ-мӗнӗпех тухса кайнӑ, тет. Пӗтет капла вӑл...

Ыранах деканата пӗлтерес пулать.

Студенткӑсем тата Александр Семеновича 9 «а» класра, Васильев класӗнче, ӗнер комсомол пухӑвӗ пулни ҫинчен каласа пачӗҫ. Шкул директорӗпе Елена Сардоновна учительница хушнипе пухӑннӑ иккен комсомол пухӑвӗ— ятарласа Голубева Тамара дисциплинине сӳтсе явма...

Комсорг хирĕçсе тăрайман — пуху пухнă. Комсомол пухăвĕнче комсомолецсем мар, директорпа Елена Сардоновна хуçаланнă: ачасене вĕсем сăмах панă, вĕсем калаçтарнă. Тамара кунта та нумай итлесе тăман иккен — каллех тухса тарнă.

ВУНВИÇÇĔМĔШ СЫПĂК

...Хĕрача хире тухрĕ. Çийĕнче ун — кĕр-çур тăхăнмалли хура пальто, уринче — çăматă, пуçĕнче — çăм тутăр.

Хĕрача, яштак кĕлеткине тӳрĕ тытса, ерипе утать. Ун вăрăм та çăра куç хăрпăкне пас тытнă, тутăр хĕрри те пасарнă.

Хĕрача шухăша кайса утать. Ун ури айĕнче хĕллехи шăн юр кăштăртатса ванать.

Тавракурăм хура хăмăртарах. Пĕтĕм тӳпе темĕнле уçăмлă мар куç шăрçи пек: хĕррисенче çăра тĕс, хăмăртарахскер, варринелле вăл çӳхелсе шĕвелет те кăвак тĕсе куçать. Çил юра, кĕрт хысакĕсенчен туртса, витĕр курăнакан çӳхе пир пек çĕклет; хăй шăхăрать — çил ачи хăйĕн утне шăхăрса юрпа шăварать, тейĕн.

Хĕрача çак тавралăха тĕсесе сăнать...

...Хăçанччĕ-ха çул кайăкĕсем, янăрашса, эшкерĕ-эшкерĕпе пĕр йăмра çинчен теприн çине вĕçетчĕç? Шыв пичĕ çийĕн куçа палăрми вĕтĕ хумсем лаптăкăн-лаптăкăн шурă çутă ӳкнĕ пек шуса иртетчĕç. Хăçанччĕ-ши пурçăн мăйлă кăвакарчăн тăвата çунатлăччĕ? Кĕркунне?..

Çав териех ырăччĕ-им ун чух?

Мĕншĕн, эппин, йĕрес килетчĕ-ха? Çав саманта та таврăнми тапхăр тесе аса илет-и халь Тамара?

Çапла. Пур çавăн пек мăскаллă самант. Чун хурланнă самант та хаваслинчен ытларах каялла тавăрма çук ырлăх пек аса килет. Мĕншĕн тесен кунта çамрăк чунăн юмахлă-ĕмĕтлĕ енĕ пурнăçра мĕн пурри çумне пырса çапăнни, унăн пăлхавĕ. Çак çапăну вăл çитĕннĕ, «шăнăрланнă» çыншăн ыратуллă та, пăлхавлă та мар, мĕншĕн тесен унăн «юмахлă-ĕмĕтлĕ енĕ» ĕнтĕ, ху тавра мĕн пуррипе килĕшсе,— çĕр çинче ансатăнах мĕн тупма-илме май пур шая çитсе — хытса ларнă. Вăрмана мăйăр татма каяс сунăм пур — мăйăр татса та таврăнать, пулă тытма кайсан — пулă тытать, тен, хăй ĕмĕтленнинчен те ытларах...—вăл вара телейлĕ. Тамарăна илсессĕн, вăл, сада асамлă кайăк сассине итлеме кĕнĕскер, ахаль шăпчăк юррипе çеç илтет. Вара чуна эрлĕк пусать. Тамара çав

хӑй ӗмӗтӗнчи япаласене пурнӑҫра шыраман чухне, ӗмӗтленсе ҫеҫ, ҫавсем пуррине ҫирӗп ӗненсе ҫеҫ тӑнӑ чухне — телейлӗрех те... Ҫын ытла пысӑк ӗмӗт тытсан ҫапла пулать пулӗ вӑл. Ху тавра мӗн пуррипе ҫеҫ ҫырлахса, хӑвна ху телейлӗ туясси ырӑ-им-ха тата? Пысӑк ӗмӗт тытса, ӗмӗр тӑрӑшӗпех ҫавна пурнӑҫа кӗртме ӑнтӑлса пурӑнни сана нихҫан та «ак паян ман мӗн ӗмӗтленни ҫитрӗ» текен лӑпкӑлӑх патне, хӑвна ху ҫителӗклӗ, сапӑр туясси патне илсе пымасть. Ӗмӗрех тем ҫитмест сана. Ҫакӑ мари-ха чӑн-чӑн ӗмӗт тытни? Апла Тамарӑн кӗркуннехи кӑмӑлӗ пӗтӗмпех пархатарлӑ ӗмӗт-шухӑшран килнӗ...

Ун чухне, эппин, Тамарӑн чунӗ вичкӗн сисӗмлӗрех, анлӑрах ытамлӑ пулнӑ пулӗ; вӑл пурнӑҫлама йывӑррисене ӗмӗте тытма хӑраса тӑман; ун чухне Тамарӑн тем ӗмӗтленме те, тем шухӑшлама та, ҫавсем йӑлтах чӑна тухассине ҫирӗп шанма та ҫирӗп хевте, мехел тата кӑмӑл ирӗкӗ пулнӑ-мӗн.

Халь епле вара? Тен, ӗмӗтсем пӗчӗкленчӗҫ. Тен, ҫав пысӑк ӗмӗтсем чӑна тухассине ӗненес шанчӑк — чун хытнӑ май — сӳне пуҫларӗ.

Тӑхта-ха... Мӗн ҫинчен ӗмӗтленнӗччӗ кӗркунне Тамара, мӗн ҫинчен шухӑшланӑччӗ?

Тамара хӑйне хӑй ҫӗр ҫинче кама та пулин ҫав тери кирлӗ тесе шутлатчӗ. Кама та пулин кӑна мар — пурне те· Аслӑ ӗҫшӗн, пысӑк ҫыншӑн, пысӑк туслӑхшӑн, пысӑк юратушӑн ҫуралнӑ тетчӗ вӑл хӑйне хӑй. Хӑйӗн ҫакна тума мӗн кирли пурте пуррине пӗлетчӗ — вӑй та, хитрелӗх те, тасалӑх та... Ҫак унӑн вӑйне, хитрелӗхне, тасалӑхне тивӗҫ пӗр ҫын ҫеҫ ҫукчӗ, мӗншӗн тесен Тамарӑн вӗсем ҫав тери пысӑкчӗ те, Тамара — вил те — хӑйӗн ҫав «мӗн пуррине» пӗр ҫынна ҫеҫ халал тума килӗшмен пулӗччӗ. Анчах Тамарӑн «мӗн пуррине» пӗтӗмпех тивӗҫ пӗр ҫын таҫта пурччӗ, вӑл ӗмӗтреччӗ. Кайран, ҫав «мӗн пуррине» тивӗҫ ҫын та пурнӑҫрах тупӑнчӗ пек. Тупӑнасса тупӑнчӗ те, вӑлах пулмарӗ ҫав ку ҫын: Тамара, хӑйне хӑй улталаса, ку ҫын — вӑлах тесе ӗненме тӑрӑшни ҫеҫ пулчӗ.

Ой!.. Мӗн тери улшӑнса ларчӗ иккен Тамара! Ҫак хӑйӗн «мӗн пуррине» унран пачах урӑх ҫын илме пуҫларӗ! Пачах чуна сивӗ этем! Митюк!

Ҫав «мӗн пурри» хутӑрти ҫип пек пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗнех чуна сивӗ этемӗн кӑшкарӗ ҫине ирӗксӗрех хӑйне пӗчӗккӗн туртса ҫӑмхалакан вӑй еннех туртӑнать! Чунри ӑнланмалла мар шик ун умӗнче хӑйне чарса тӑма та, хирӗҫлеме те памасть...

Унăн ĕнтĕ Валентин е урăх çын енне туртăнма кăпа мар, вĕсем çинчен шухăшлама та ирĕк çук пек.

Мĕн ку? Кун пек ыйту лартман-ха Тамара. Тĕрĕссипе илсен, Тамара çак хăйĕн пăхăнтаракан шикĕ çинчен вăл мĕнрен килни, мĕн пирки пулни çинчен шухăшласа пăхман-ха, «шухăшламалла» текен шухăш таврашĕ те пуçа килмен, мĕншĕн тесен çакна тума шиклĕ туйăмĕ хăй чарса, пӳлсе пырать. Тамара, ку шиклĕ туйăма сӳтсе пăхнă пулсан, çав сăнчăр пек куçа курăнакан çинçе çипе татса пăрахма вăй çитеретчех-тĕр.

Митюк енне Тамарăн, чăн та, питĕ пăтравлă туйăмсем ĕнтĕ. Анчах та кам пулнăччĕ-ши Тамарăшăн Валентин? Чун кĕтнĕ, чун савнă çынахчĕ-ши? Çук пулĕ. Вăл — чун йăнăшĕ пулчĕ пулĕ.

Чăн та, Тамарăн халь Валентиншăн пĕрре те ăш çунмасть.

Анчах чуна, кас-кас çӳçентерсе, çĕçĕ çивĕчĕшĕ пек пĕр чăнлăх касса каять. Тамара халь çав Валентинран та йĕксĕкрех çынпа çӳрет-çке!..

...Хĕрача, çул çинче чарăннăскер, хăй кунта паçăртанпах тăнине сисрĕ те сасартăк каялла çаврăнса утса кайрĕ.

Кĕпер çине кĕрсен, вăл, кĕркуннехи пекех, карлăк çине таянчĕ.

Аялта ĕнтĕ кăвакал çук, тăватă çунатлă кăвак кăвакарчăн та вĕçсе хăпармарĕ унтан, анчах кĕпер айĕнче пĕр тĕлте халĕ те шыв юхать: шартлама сивĕ те шăнтса лартайман çав чăрсăр пĕчĕкçĕ юхăма! Парăнман вăл!

Тамара?.. Çав сĕмсĕре чуптума ирĕк пачĕ!

Ой! Мĕншĕн-ха, тепĕр тесен, текех ун çинчен шухăшламалла? Мĕнле ирĕк пур çав сĕмсĕрĕн Тамарăн асне кĕме?!

Тӳррипе каласан, мĕн пулнă-ха унпа Тамара хушшинче?.. Ну, вăрă-хурахла чуптуса илчĕ тейĕпĕр... Мĕнех уншăн?..

Çавăншăн вара Тамарăн ăна чĕре çумĕнче ăшăтса çӳремелле-и? Мĕн тери мăтăк шухăшсем! Çĕр çинче вара çакăн пек вак шухăш шухăшласа шуралмалла-и? Майĕ çук-им урăххи çинчен шухăшлама? Пысăк япала, пысăк ĕç çинчен, уроксем çинчен, ӳлĕмрен ăçта вĕренме каясси çинчен? Геннадий Васильевичпа калаçнă чух ирĕксĕрех çавăн пек йĕр çине ӳкет-çке шухăш! Юлашки вăхăтра Тамарăн пĕтĕм ăстăнĕ, шухăшлав йĕрки пăсăлса, çывăрса кайнă пулĕ? Чи кирли, тен, ăстăнăн пĕр-пĕр улах кĕ-

тессинче ним вăранмасăрах выртать-тĕр... Халь вăранмасан, çав шухăшсем кайран хытса, пачах пĕтсе ларĕç. Тамара вара, айван та мĕскĕн çын пек, пĕчĕк çырлахтарусемпех, пĕчĕк ĕмĕт пĕрчисемпех пурнăçра «телейлĕ» пула пуçлĕ-и? Ку, тепĕр тесен, çын пурнăç вĕтĕр-шакăрлăхне лакса ларнине пĕлтермест-и? Пурнăçран шушшу шӳрпи кăна илме çурални?

Çапах та кичем-çке Валентинсăр...

Валентинсăр?.. Валентин иккĕ-çке: пĕри — ĕмĕтри, тепри — шкулти. Ĕмĕтри Валентин... Теп, пурнăçра çук та пулĕ вăл. Ячĕ те унăн Валентин мар, урăхла пулĕ. Ăçта вăл? Кам? Мĕншĕн, ăна аса илсен, нумайччен хурланса йĕнĕ хыççăнхи пек, кăкăртан сывлăш та, капланса, хӳхлĕн-хӳхлĕн тухать?

Анчах шкулти Валентин... Ку — киревсĕр Валентин. Ку Валентина ыраттарас килет. Ăна хăйне тĕкĕнме кирлĕ мар, хăйне усал тунипе мар... Темĕнле майпа вăл Тамарăшăн пăшăрханмалла тума кирлĕ. Çав ĕмĕтри Валентина тӳрре кăларайманшăн. Тамарăна ыраттарнăшăн çапла тумалла — Тамара хăйне хăй тем тусан-и е инкеке лексен...

Çапла шухăшсемпе пăтранса тăрса самай вăхăт иртрĕ.

...Хĕрача, кĕпер çине çын утса кĕпине асăрхаса, шарт сикрĕ. Вăл!.. Валентин?.. Валентинăн кĕске пиншак çукчĕ-çке.

Хĕрача тепĕр хут çаврăнса пăхрĕ те, чĕрере кӳренӳ çĕкленчĕ. Вова! Кӳршĕри Вова!.. Тĕлĕнмелле! Мĕнле-ха çакăн пек вăхăтра ялан вăл тĕл пулать Тамарăна! Тата кашнинчех Валентинпа пăтраштарать ăна Тамара. Кĕркунне те Валентин мар, çак Вова пулнă пулĕ кĕпер çине утса кĕрекенни.

* * *

Вовăна Тамара пиллĕкмĕш класранпа пĕлет.

...Пилĕк çул каяллаччĕ-ха... Вова, ашшĕне сăнӳкерчĕкĕсем тăрăх çеç пĕлекенскер, амăшĕ патĕнчен ашшĕне курма тесе килчĕ те — акă ĕнтĕ паян кун та кунтах пурăнать. Ашшĕпе амăшĕ унăн Вова кипкере чухнех, кашни икшер ача хăй çумне илсе, уйрăлса кайнă. Амăшĕ урăх çынна киле кĕртнĕ, ашшĕ пĕр уксах хĕрарăма качча илнĕ.

Ашшĕ патне Вова — вирьял тăрăхĕнчен анат тăрăха — пуш уйăхĕнче килсе çитрĕ. Тепĕр тăватă кунтан ача

каялла амăшĕ патне таврăнма тесе çула та хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ, вуниккĕри ывăлне ашшĕ хирĕç лартрĕ те:

— Эсĕ миçе çул вĕреннĕ?— тесе ыйтрĕ унран.

Вова, тăван ялта тăватă çул вĕренсе хăйне чипер хут пĕлекен çын тесе çирĕп ĕненсе лартнăскер, тата çак «пысăк пĕлӳ» хыççăн çулталăк çурă урапа-тукăн тăвакан артельте вĕренекен шутĕнче ĕçлекенскер, ашшĕ çапла ыйтсан хăраса ӳкрĕ. Ашшĕ вара хыçалалла чĕвенсе пыракан ывăлне çавăтрĕ те шкул енне уттарчĕ.

Çакăнтан ĕнтĕ Вовăн каялла амăшĕ патне таврăнасси пĕтрĕ — çĕнĕрен вĕренӳ пуçланчĕ.

Амаçури амăшĕ Вовăна, тем тесен те, кунта хăварасшăн марччĕ. Вова шкула çӳре пуçласан, вăл ашшĕ патне юлмаллипех юласси паларсан, амаçури йăлт кăтăрса кайрĕ.

Тепĕр куннех вăл: «Ман çĕр тенкĕ укçа çухалнă! Вова вăрланă!»— тесе кăшкăра пуçларĕ.

Çакăнтан пуçласа амаçури кунсерен майлах кӳрше чупнă. «Вова ман арчан çăрине çĕмĕрнĕ», «Тутăр такама кайса сутнă», «Вова кĕсйинче гильза тупрăм, мана вĕлерме хатĕрленнĕ...»

Амаçури сарнă тĕрлĕ сас-хурана пула Вова çамки çинче мăйракасемех курăна пуçланă кӳршĕсемшĕн.

Вова та пусăрăннă. Çын çине куç уçса пăхаймассах çитнĕ тапхăр-тапхăр. Чĕмсĕрленнĕ, пĕччен çӳреме тытăннă.

Малтан кĕнекесем ыйтас йӳтĕмпе те пыркалатчĕ Тамара ун патне. Анчах амаçури Вовăна пуринчен ытла Тамара умĕнче намăс тăватчĕ. Вова çинчен усал сăмах çĕр çинче никам та Тамара чухлĕ илтмен.

Вова хăшпĕр чух суя намăс-симĕсрен ытларах хăй шеллеве тивĕç çын пек курăннăшăн тарăхнă. Çавăнпа вăл Тамара çине час-часах сиввĕн те тарăхса пăхса илнĕ. Çакă вăл: эсĕ те мана мĕскĕн çын тесе шутлатăн пулмалла, тенине пĕлтернĕ.

Çапах Вова çине Тамара ытла шанчăксăр пăхни сисĕнмен. Вăл та ытти кӳршĕсем пекех сиввĕн пăхнă пулсан—Вова ун чухне, тен, хĕрачана çилĕ хывнă та,— ăна асăрхама пăрахнă пулĕччĕ çеç.

Пĕлтĕр çуллаччĕ-ха... Амаçури таçта эрнелĕх хăнана кайрĕ те пĕтĕм хĕрарăм ĕçĕ Вова çине тиенчĕ.

Чи чăкăлтăшши Вовăшăн качака сăвассиччĕ. Качаки ниепле те вырăнта тăра пĕлмест, пăлтăра кĕртнĕскер, текех çаврăнать. Çак вăхăтра сасартăк пăлтăр алăкĕ уçăлса

каять те, качака тулалла тапса сикет. Вова умне аларан варканса кайпа тимер чашак та урайне юхса сарална «сет кулли» çеç тарса юлать. Тата уса алакра аран-аран çеç паранса юлма елкерне Тамара, шикленсе укнескер, айаплан пахса тарать.

— Йалтах таканса кайре-и?— харaса та херелсе ыйтать вал.— Каçар, Вова, эп айапла.

Вова херача çине çилеллен куç ыватать те палтартан тухать.

— Тытса пар халь качакана,— тет вал, тарахса.

— Атя иккен хупарласа тытар,— сиксе анать Тамара картлашка çинчен.

Килкартисер пурт тавра виççе-таватта чупса çаврансан, весем иккеш качакана аран-аран витене хаваласа кертеççе.

— Эсе тытса тар, эпе сауатап,— хушать херача, хай, кеске платйине юсакаласа, качака айне кукленет. Тамара ике алапа чарлаттарса савин те, качаки машал та тумасть.

— Эс ун çиллине ыраттарса петерпе, çаваппа тарахна вал сана,— тет херача.

Вова, сых ятне качака уменчех тарса, херачан çере перенсе таракан ике çиветне, кашт каçар самсипе варам куç текне, кукленне май ярт паларса тухна хер келеткине курать, вара юнтарна ача пек аяккалла пахса тарать. Весем çапла майпах тепер качакине те саваççе.

Çакан хыççан Вова Тамарапа курсанах чун выранта маррипе туя пуçларе. Анчах тепер эрнеренех çав чун варттанлахе çине машкалтак шыв сапакан тамаша сиксе тухре...

Вова таçтан-çке киле тавранатче. Тамарасен пурт кетессине çитсен, ана такам, çелен пек чашкарса, ятран ченче:

— В-вв-ова!..

Вова, ют кил кетессинче амаçури тапине курса, теленсех кайре. Çав вахатрах вал, мен кунта килнереппех унран харама веренпескер, апри теменле ирексерлекен шиклех хетертнипе ун умне пычe.

— Пах-ха ава... Пах!

Амаçури амаше пуçепе уса кантак енне сулса кaтартре. Шалта çын çук-мен. Кантак сули çинче кенеке тата печек ал сехече выртать.

— Мен?— анланмаре Вова.

— Сехет... Ил-ха, ил...

Çакă мĕнле пулса тухнине Вова ку таранччен ăнкарса илеймест. Ăшри темскер çак хĕрарăмран хăратса тăнипе пуç ним шухăшласа ĕлкĕричченех вăл аллине тăсрĕ те сехете илсе амаçурине тыттарчĕ...

Çак вăхăтрах хăй халь çеç мĕн тунине шутласа илни ăна карт сиктерчĕ, хăй халь çеç тунă чăтма çук пысăк айăп ун чĕрине пăчăртаса тытрĕ, вара вăл — ухмаха тухнă çын пек — килелле ыткăнчĕ. Ун хыççăнах амаçури персе çитрĕ.

Вова, чунпăта пулнă çын пек хытса, куçĕпе амаçурине тинкерсе, тенкел çинче ларчĕ. Пĕр çур минутран унăн çакăн пек сăмахсем хĕсĕнсе тухрĕç:

— Эп-пин, вăрларăмăр!

Çак вăхăтра ĕнтĕ Тамарăсем те хыпăнса ӳкнĕ. Урамра унта-кунта чупкала пуçланă.

— Кайса пар халех! Унсăрăн... унсăрăн ак хам кайса каласа паратăп! — сиксе тăрать Вова сасартăк, хăй кампа калаçнине те манса кайса. Амаçури çакна кура хăй те аптраса ӳкет, анчах çухалса каймасть.

— Эпĕ мар, эсĕ вăрă! — кăшкăрса ярать вăл кĕтмен çĕртен, унтан Тамарăсен еннелли чӳречине уçать те урамра чупкалакан хĕрачана кăшкăрать:

— Тамара! Сехетӳ сан кунта! Вова вăрланă! Вăрă усратăп эп килте!

Йĕксĕклĕхре те ăстаçăсем пур. Вĕсем тĕрĕслĕхе те аяла тăваççĕ, чăнлăха та çĕнтеркелеççĕ.

Уçă кантăк умĕнче вăл, хурах пуснă пек кăшкăрса, алла мĕн лекнине-пĕрне Вова çине вăркăнтарать.

Вова сыхланмасть. Вăл, этем çакнашкал киревсĕрлĕхе те çитме пултарнинчен тĕлĕнсе, урнă хĕрарăм çине пăхса тăрать. Пĕрре çеç хирĕç чĕнме хăтланчĕ вăл — Тамара амаçури аллинчи сехете илсе кайнă чух:

— Эп мар! Хăй вăл!..

Анчах çакă амаçури çухăрашăвĕ айĕнче илтĕнмерĕ, илтĕннĕ пулсан та, кунашкал арăш-пирĕш самантра вăл Вова чăн-чăнах айăплине çеç çирĕплетнĕ пулĕччĕ.

Мĕнле ĕнентермеллеччĕ-ши Вована?

Тамарăсем патне кайса куççуль витĕр «эп айăплă мар» темеллеччĕ пулĕ? Анчах ку — Вовăн талайĕпе мар. Çапах та кайран вăл пӳртрен тухрĕ те, пĕчĕк ача пек, пĕтĕм кĕлеткипе туртăнса макăрса ячĕ.

Çакăн хыççăн хăй çĕр çинче утса çӳрени те, ытти çынсем пек чун-чĕре туйăмĕсем çинчен шутлани те — этемĕн кулленхи тивĕçĕсем намăс ĕç тупи пек туйăна

пуçланă ăна. Тамарăна курсанах вăл унран хăвăртрах пăрăнма васканă.

Халĕ вăл хĕрачана курмарĕ пулас.

Тамара, асаплăн йăл кулançи туса, хулпуççи çине михĕ çавăрса хунă йĕкĕте хыçалтан пăхса илчĕ те васкамасăр килелле утрĕ. Килкартине кĕрсенех вăл ăшри темĕнле ăспуçран уйрăм ĕçлекен вичкĕн сисĕмĕпе эрнелĕх хăнана кайнă амăшĕ таврăннине пĕлчĕ, вара çанçурăмĕ сăрăлтатса çӳçенсе илчĕ.

ВУНТАВАТТАМĔШ СЫПĂК

Кăнтăрла иртни пĕр виçĕ сехетсем тĕлнелле Вальăсем патне лутрарах ватă хĕрарăм пырса кĕчĕ.

Çак хĕрарăм Тамарăн амăшĕ пулчĕ. Вăл хăйĕн хĕрачине Тамарăна шырать.

— Кунтах килекенччĕ-çке,— терĕ вăл, сĕтел хушшинче çыру çырса ларакан тулли питлĕ, хĕрлĕ сăнлă тачка хĕр Валя сӳрĕккĕн кунта çук тесе тавăрсан.— Ăçта кайрĕ пулать-ха, эсремет? Эх, ку ача-пăчана! Вĕсемшĕн ăша пĕçерсе, чĕре патĕнчи çу та ирĕлсех пĕтрĕ ĕнтĕ.

Хĕрарăм кайма тесе алăк патне хăлăпĕнчен тытсан тепре каялла çаврăнчĕ:

— Ай, ачам, Валя, тупата, кунтах пуль,— терĕ вăл йăлăнса.— Пытанмарĕ-и таçта?

— Çук, инке, курман эпĕ ăна,— тепĕр хут каларĕ Валя витĕмсĕртерехкĕн.

Хĕрарăм пĕççине шарт çапрĕ.

— Ăш пиççи! Кăшт ятларăм та ĕнтĕ çӳç кăтралатнăшăн, ăçта çĕр каçрĕ пулать-ха?.. Эй, пĕрре — таврăнтăр çеç! Çак тарăхшăн-и? Пĕр шăмă тĕрĕслеменни хăвармастăп! Курсан-тусан, Валя, кала-ха, эппин, ăна: ял касса ан çӳретĕр. Ха, мĕн килĕшӳ вăл мăн кĕлеткепе хĕр пуççăн ял тăрăх янккаса çӳрени?.. Ырлăха пултăр анчах!..

— Юрĕ, юрĕ,— терĕ Валя, хăйĕн хĕр-тусĕ çинчен мар, пачах ниме тăман вак-тĕвек çинчен сăмах пынă пек, пуçне çĕклемесĕрех.

Хĕрарăм вут илме килнĕ пек йăпăртлăх пӳрте кĕрсе çапла каласа хăварнă хыççăн кил хапхи шанклатсанах— кăмака хыçĕнчен кăтра пуçлă çинçешке хĕрача тухрĕ те ерипе сĕтел умне пырса ларчĕ. Куçĕ унăн юнăхнă, сăнпитне хурланчăк тĕс çапнă.

— Илтрĕн-и?— терĕ Валя, хут çинчен пуçне çĕклесе.

Тамара чĕпмерĕ.

— Тен, киле каймалла пуль сан? Саншăн манăн ят илтсе лар.

Тамара çав-çавах куçне сиктермесĕр, сылтăм аллипе сĕтел çине чавсаланса, ывăç тупанĕпе питçăмартине тĕкĕлесе, маччаналла пăхса ларчĕ.

— Ну, юрĕ, юрĕ, Тамара, лăплан ĕнтĕ, ан хăра, паян килмест вăл урăх... Кăмăлна уçма çыру вуласа парам-ха сана, эппин,— терĕ Валя:— Итле: «Çыру çырап васкаса, шурă хута хуратса...»— вулама пикенчĕ вăл, кун хыççăн «еплерех» тенĕ пек Тамара çинелле куçне çиçтерсе илчĕ.

Сулчă сăмахсемпе ним каламасăр тенĕ пекех «Ну, Ванюк» та «Ну, Ванюк» тесе тăват-пилĕк страница çырса тултарнипе вăрахчен киленсе вуласа ларчĕ хĕр.

Тамара ăна итлесех итлемерĕ. Унта кăсăкли нимех те пулман. Валя çырăва ялан çавăн евĕрлĕ çырнă, унти çын ятне улăштарса лартсан, ăна кирек кама та ярса пама пулнă. Халĕ вăл пĕр класра вĕреннĕ иккĕмĕш çул салтакра тăракан кӳршĕ ачи патне çыру çырнă.

Тамарăн хăлхине халĕ те амăшĕн сăмахĕсем илтĕнсе тăчĕç.

Тамара паян шкула та, киле те кайман...

Епле киле кайса кĕрес-ха ĕнерхи шăв-шав хыççăн?

Чăнах та, мĕн тума чипер çӳçе пăсмаллаччĕ? Тамара кайран, куçкĕски витĕр пăхсан, хăйĕнчен хăй хăраса ӳкрĕ. Хăйне хăй вăл çивĕтпе ытларах килĕшетчĕ. Алла халь куçкĕски те тытас килмест. Валя минретсе ӳкĕтленипе пулчĕ ку. Кам пĕлнĕ-ха малтан Тамарăн хăйĕн ирĕкĕ çеç пек туйăннă пĕчĕк япала пысăк пăтăрмахсем патне илсе пырасса?

Кунĕ те ĕнер Тамарăшăн пайăрах ăнăçсăрскер пулчĕ... Пур теççĕ вĕт çавăн пек ăнăçсăр кун кашни çын нурнăçĕнчех. Уйăхсерен килет-мĕн вăл пĕрре. Çуралнă кунтан пуçласа шутлаççĕ-мĕн ăна, хăш числара килессине тĕптĕрĕс шутласа кăлараççĕ, вара кашни çынна хăйне уйрăм календарь туса параççĕ, ăнăçсăр кун хăçан килессине шутласа кăларса паракан автоматсем лартаççĕ. Наука çыннисемех ĕçлеççĕ-мĕн уппала ют çĕршывсенче. Японире çав ăнăçсăр кун шоферсем машина çине руль умне лармаççĕ, тет...

Шăпах çав хăйĕн ăнăçсăр кунĕ тавранчĕ пулас ĕнер Тамарăн.

Малтанах, ав, нимĕç чĕлхи урокĕнче Елена Сардонов-

пăпа çĕтĕлсе кĕрсе каймалла пулса тухрĕ... Унтан пухура вĕрентекен умĕпче вĕренекен çăварĕнчен тухма тивĕçлĕ мар сăмахсемех сирпĕнчĕç... Кайран килте...

Тен, амăшĕ хăнана каймин те — Тамара халĕ ним хуйхăсăрах килте ларĕччĕ. Ун чухне Тамара — çӳç кăтралатнă чухне те, Елена Сардоновнăпа хирĕçсе кайнă чухне те — темшĕн-çке амăшне пĕрре те аса илмен...

...Тамара каçпа киле таврăннă çĕре — амăшĕ те тин кăна килсе çитсе тумтир хывма çеç ĕлкĕрнĕччĕ.

Амăшĕ малтан асăрхамарĕ-ха. Тамара та, амăшĕ умне урăхла пуçпа тӳрех курăнма хăймасăр, тутăрне салтмарĕ — май килнĕ таран амăшне тӳртĕнтерех тăма тăрăшрĕ.

Амăшĕ малтан ачасене арбуз касса çитерчĕ. Пӳрт-çурт хăтне янăшăн — урайĕнчи çӳп-çапшăн, сĕтел-сак таврашне чусталаса пĕтернĕшĕн, пӳрт маччине кăвакартса янăшăн — никама та уйрăм асăнмасăр, пурне те тивекен, тĕрĕссипе никама та чуннех тивмелле мар ятлакаласа илчĕ, выльăх-чĕрлĕх пирки ыйтса пĕлчĕ.

Кил-çурт таврашĕ пирки пĕтĕмпех Лиза каласа пачĕ, кайран вăл хăй сăмахне шăллĕ итлеменни, аппăшĕ кӳрентерни енне çавăрчĕ.

— Ларать, ларать те килте кӳштесе, кайран таçта йăрккаса çӳрет, çĕрле те час таврăнмасть,— терĕ вăл аппăшĕ çинчен.— Выльăхсене те хам пăхрăм, вуттине те хам хутрăм.

Аппăшĕ хăй çипе сиввĕн пăхкаласа илнине тата амăшĕ ăна вăрçма шутламаннине курса пулас, Лиза сасартăк амăшне çаннинчен пырса туртрĕ.

— Анне, анне!— терĕ вăл хăвăрт.— Тамарăнне çӳçне пăх-ха. Кăтралатнă!

Амăшĕ ерипе пуçне çĕклерĕ.

— Уй, мĕн пуплен! Чипер калаç!— терĕ вăл, аллинчи арбузне те сасартăк чĕрçи çине антарса.

— Чăн, чăн, анне! Кур ав.

Мишша, хыçа пырса тăнăскер, Тамара пуçĕнчи тутăра карт! туртрĕ. Сĕвĕнсе аннă тутăр айĕнчен пĕтĕрке путек çăмĕ пек кăтра çӳç тухса тăрсан, амăшĕ шак хытса, çăварне карса пăрахса ларчĕ-ларчĕ те пĕççине шарт! çапрĕ. Пӳртре калама çук шăп пулса тăчĕ. Унтан вăрăммăн тăстарса юрласа янă майлă сасă илтĕнчĕ:

— А-а-й-йу-уй, ачам, ача-а-ам!..— Тепĕр хушă пӳртре каллех ним сас-чĕв те илтĕнмерĕ. Çав шăплăха самантран хурлă-ӳпкевлĕ сасă татрĕ:— Ай, пĕтрĕмĕ-ĕ-ĕр!

Çырлахах!!! Чĕрĕллех çĕре чикет-иç ку ача мана, эй! Такам умĕнче тем каласа çылăха кĕрсе пĕтессĕм пулĕ... Ак тĕнче кулли! Кăтра çӳçӳптен çăлса илем те пĕрре — так шăлам урай! Ай, турăçăм! Кама курса çапла муталарăн çӳçне, ачам? Эп туса пани килĕшмерĕ-и? Кала-ха? Ара, хитре тетĕн-и ĕнтĕ? Кăмака милĕкĕ пек-иç! Халех кайса кастарнă пултăр! Йăлт хыртар! Йăлт, йăлт! Шакла пултăр! Шакла! Халех, халех! Унсăрăн пуçна касса пукан тăватăп!.. Капла пуçпа эп сана киле кĕртетĕп-и? Ха!.. Капла пуçпа эп сана хам умра тăрататăп-и? Уй!

Тамара килкартинче тăна кĕчĕ. Тепĕр самантран çенĕк алăкĕ уçăлчĕ те — ун ури айне пиншак лаплатрĕ, сарăлса-явкаланса тутăр вĕçсе ӳкрĕ...

...Акă ĕнтĕ Тамара паян киле те, шкула та кайман. Ĕнер каçхине Вальăпа çывăрчĕ, анчах çĕрĕпех ыйхă килмерĕ.

Пуçра — тĕрлĕрен ыраттаракан шухăшсем. Тамара темиçе хутчен те кăшт кăтăш пулсапах йынăша-йынăша ярса вăранса кайрĕ.

Паян та кунĕпе пуç ырататать. Ак ĕнтĕ халь каç пулса килет. Кĕçĕр те çакăнта çĕр каçмалла-и?

Тамара тарланă кантăк çинче тумламсем епле пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн чăмăртаннине, епле сике-сике, пăркалана-пăркалана, катăрка хура йĕр хăварса, ерипе шуса аннине сăнаса ларчĕ.

— Тамара, мĕн эсĕ кунĕпех йӳçенкĕ сăнпитпе ларатăн?— кăмăлсăрланчĕ Валя, арчара платье суйланă май.— Эп çуралнă кун та пулин çапла салху ан пул-ха. Мĕн, аннӳнтен хăраса сĕлкĕшленетĕн-и? Иртсе каять вăл. Шырама тухрĕ пулсан — каçарать. Кĕçĕр манăнне менелник ирттеретпĕр те — каятăн,— астутарчĕ вăл.

Тамара чĕнмерĕ.

— Эп çуралнă куна паллă тăвасшăн мар-и вара эсĕ? Асту сана! Çын хăй ĕмĕрĕнче пĕрре çеç çирĕмре пулать. Ăна уявламаллах... Сĕтел хушшине ларсан, ак, хуйху-суйху та чăл çеç сирĕлсе кайĕ.

Тамара пит-куçĕнче çав-çавах пĕр йĕр те хускалмарĕ.

* * *

...Хăнасем йышлă пулмарĕç. Пĕри — япшар киномеханик Петька, тепри — Митюк.

Хăнасем часах сĕтел хушшине ларчĕç.

Сĕтел çинче менелник иртсерме мĕн кирли пурте пур: эрех те, тăварланă хăяр та, пулă та.

Чи малтанах, Вальӑна ҫирӗм ҫул тултарнӑ ятпа саламласа, пӗрер черкке симӗс эрех шаклатса ӗҫрӗҫ, унтан хӗрлине сыпрӗҫ, кайран татах...

Кунта пӗри те йӗркеллӗ калаҫу пуҫармарӗ: ҫӑвара мӗн килнине печӗҫ, култармалли сӑмахсем шыраpӗҫ. Куласса вара — ӗнес выльӑх апат тиркемен пек — пылаккишӗн те, йӳҫҫишӗн те кулчӗҫ.

Валя пӗр ҫавра юрӑ пуҫларӗ те, ӑна Митюк пӳлсе хучӗ:

— Юрӑра кӑна «каким ты был — таким остался», пурнӑҫра йӑлтах улшӑнать... Эп сире луччӑ путиш каласа парам,— терӗ вӑл.

Митюк пӗр чикан хваттере яма ыйтни ҫинчен юптарчӗ. Вӑл хӑй калама тытӑниччен кула пуҫларӗ, хӑнасем те, малтанах кулма хатӗрленсе тӑнӑскерсем, калавҫӑ хӑй каҫӑхсах кайнине кура, чӑтса лараймарӗҫ: вӗҫӗмсӗр ахӑлтатрӗҫ, Митюк чи кӑсӑклӑ вырӑна ниепле те час каласа яраймарӗ — кулӑпа чыхӑна-чыхӑна супрӗ. Анекдот вӗҫӗ киревсӗр пулнӑ. Митюк йӑвалансах кулчӗ. Кӗҫех Петька юрӑ пуҫларӗ.

«Гоп со смыком» песня интересна, да, да,
25 куплетов всем известно, да, да...»—

юрларӗ вӑл, ейкеленсе. Часах Митюк та хутшӑнчӗ:

«Как известно, по субботам
Мы не ходим на работу,
А у нас суббота каждый день...»—

тӑстарчӗ вӑл, пуҫне юрӑ кӗвви май енчен енне пӑркаласа. Унтан иккӗш ылмаш-тӗлмеш каллех тӗрлӗ анекдот калама тытӑнчӗҫ.

...Ҫакӑнти калаҫусене, шӳтсене пӗр Тамара ҫеҫ хутшӑнмарӗ. Вӑл тӑваткал сӗтел хушшинче, урам енче, Вальӑпа юнашар ларчӗ. Вӑл кӗҫӗр ҫӑвар уҫса пӗр сӑмах кӑлармарӗ, кулмарӗ те, вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн ҫеҫ юрлакансем ҫине куҫ айӗн пӑхкаласа илчӗ. Унӑн ҫилӗллӗ сӑнпичӗ хӑлха таранах писев сӗрнӗ пек хӗп-хӗрлӗ, Митюк ун ҫине пӑхса, чӑвашла пӗр ҫавра такмакларӗ:

Ах-чух кӑрчами
Пуҫа кайрӗ пулмалла,
Хӗрлӗ сӑнлӑ эреххи
Сӑна кайрӗ пулмалла.

Сӗтел ҫинчи черккесем, юрӑ сассипе чӗтренсе, хуллен янӑрарӗҫ.

Тамарăна кунта сасартăк чуна сивĕ пулса кайрĕ. Çакăнти пĕтĕм калаçу, шӳт-юп та тăрлавсăр путиш чуна тарăхтарчĕ. Çакна май темшĕн-çке Геннадий Васильевич куç умне тухса тăчĕ. Халь çакăнта пулас — вăл та çакнашкал йăх-ях япала каласа парса ларĕччĕ-ши?

Çук, вăл мĕн те пулин урăх пулĕччĕ. Пĕр-пĕр кĕнеке тăрăх... Валя та, Митюк та, унпа таплаштарсан, ниме тăман вак чунсем пек туйăнса каяççĕ. Вĕсен чĕлхи çинче пĕр çыпăçуллă, шухăша яракан сăмах çук çеç те мар, вĕсен çăварĕнчен çăмăлттай та вĕçкĕн, киревсĕр те йĕрĕнчĕк, итлесе ларакана кирлĕ-кирлĕ маршăнах намăс тăвакан йăх-ях кулăпа шӳт çеç тухаççĕ — лайăх япаласенчен сивĕтекенскерсем.

Тамара хăпасем калаçнине, юрланине итлесе ларнă май хăй кăкăрĕнче сисмесĕрех хаяр çилĕ йӳçсе хăпарнине туйрĕ. Çавăнпа пĕрлех ăна хăрушă пулса кайрĕ. Вĕсенчен хăранипе мар. Çук. Ак халь хăй çаксем хушшинче ларма, вĕсемпе хăналанса, вĕсен киревсĕр калаçăвне итлеме пӳрнĕ çын пулса тăнăшăн.

Тамара та вара çаксен юлташĕ-и? Вăл та вĕсен тусйышĕнче-и? Тен, Тамара та аякран сăнаканшăн çаксем пекех киревсĕр пулĕ?..

Амăшĕ, тен, тĕрĕсех ятлать пуль Тамарăна? Тамара çеç унăн сăмахне нихçан та чĕре патне илсе шухăшласа пăхман. Вăл каланисенче: эсĕ те — Валя, Митюк хăраххиех, вĕсенчен нимпе те уйрăм мар, тенĕ шухăш та пулнах-тăр. Тен, шкулти ачасене те, учительсене те, Геннадий Васильевича та Тамара çаксем пекех йĕрĕнчĕк курăнать пулĕ...

...Тамара, куçне чарса, тутапа кĕвĕ каласа çаврăнакан мăшăр çине тинкерчĕ. Анчах куç, шурă карав илнĕ пек, ним те палăртмарĕ, тĕтреллĕн, уймăллăн кăтартрĕ. Лампа хăй тавра тем тăршшĕ йĕплĕ куç хăрпăкĕсем пек çутă сапаласа ярать. Çав пĕрре тăсăлса, тепре кĕскелсе йăлтлатакан çутă йĕпĕсем витĕр, темĕнле çӳхе пир витĕр пăхнă евĕр — пĕтĕмпех тĕлĕкри пек курăнать. Лампа хăйăвĕ кукарланса çунать, тĕтĕм кăларать, труба хырăмĕ хăрах енчен хуралса ларнă. Тимĕрсем çинче: койка пуçĕнче, кĕмĕл чей кашăкĕ, хуçмалла çĕçĕн туй кăпăлĕ çинче лампăран ӳкнĕ çутă пăнчăсем ылтăн эрешменсем пек ташлаççĕ.

...Акă такам мĕлки, сулкаланса, Тамара патне çывхарчĕ. Кам ку? Мĕн калать вăл? Тăхта-ха... Чăнах тĕлĕкре-и ку? Вăл акă кунтах тăрать-çке. Çывăхрах... Мĕншĕн-

ха сасă пит аякран та ян пек уçăмсăррăн илтĕнет? Сăмахĕсене уйăрма хĕн. Çын хăлхаранах калать-çке. Тамара хăлхасăр пулса ларман-и?..

Тамара йывăрланнă пуçа тĕлĕнсе те вăйран кайса çĕклерĕ. Кам ку? Митюк-и?

Митюк çине пăхсан, каллех Геннадий Васильевич сăмахĕ аса килчĕ. «Вăл таçта та ертсе кайĕ...»

Çапла, çапла! Тĕрĕс калать вăл! Чуптунă-и?.. Пултăр, пултăр! Тĕрĕс калать!

Анчах хăй ăçта вăл халь? Валя пасăр: «Студентсен практика пĕтнĕ пулас, сан студенту чăматанĕ-мĕнĕпех хулана тухса кайрĕ»,— тесе пĕлтерчĕ. «Сан студенту...» Ма çапла калать-ха вăл? Ма сывпуллашмасăр, ним каламасăр кайрĕ-ха? Сана çын килĕше пуçлать çеç — уйрăлмалла та... Ялан çавăн пек... Никам та ăнланмасть сана. Геннадий Васильевич та... Уншăн та Тамара—вĕренекен ача çеç. Çапла, вĕренекен çеç! Вăл та, вĕренсе пĕтерсен, ыттисенчен нимпе те уйрăлса тăман учитель пулса килет. Вара Елена Сардоновна пекех вăрçать, парта хушшинчен туртса кăларать...

Тамарăн сасартăк чун тăвăлса килчĕ. Халĕ çакăнта Геннадий Васильевич тăрас пулсан, ăна ăшра мĕн каплланнине йăлтах каласа тăкĕччĕ Тамара... Куншăн, паллах, Геннадий Васильевич хăй тарăхман пулĕччĕ, мĕншĕн тесен вăл çапах та ăнланакан çын...

Халĕ ĕнтĕ акă каллех Митюкпа ташла... Тамара — Митюкăн!.. Тăхта-ха... Ăçта вуланăччĕ Тамара çакăн пек сăмахсене: «Çĕр çине çуралнă харпăр çынах тĕнчен пĕр пĕчĕк пайĕ, тĕнчен пĕр хăйне евĕр илемĕ. Тĕнче илемĕ— пурин те, ăна пурте тивĕç. Пĕр-пĕр хапсăнчăк ăна «манăн» тесе çавăрса илчĕ пулсан, тĕнчен çав пĕр пĕчĕк илемĕ — уншăн çеç пурăна пуçласа — ыттисене хăйĕн илемĕпе çутă та, тĕс те, кăмăл çĕкленĕвĕ те кӳме пăрахрĕ пулсан, çав — тĕнчене пуянлатма тесе çĕр çине килнĕ çын — тĕнчене чухăнлатать». Тĕрĕсех мар-и çав сăмахсем? Анчах кам калапăччĕ, ăçтанччĕ вĕсем? Э-э, ку кӳршĕри Вовăн дневникĕнчен-çке, амаçури килсе панă тетрадьрен. Çав сехет вăрланă ачан тетрадĕнчен. Çав киревсĕр ачан пуçĕнче те çавнашкал шухăшсем çуралма пултараççĕ-ши?

Тамара шухăшпе урмăш мăн сасă татрĕ:

— Мĕн кĕç-çĕн ç-çын пек... ларатăн?

Кам ку? Каллех Митюк-и? Е вăл пасăртанпах кайман-и Тамара патĕнчен? Чăнах та-çке! Вăл Тамара çум-

нех ларнă! Мĕнле асăрхамарĕ-ха Тамара вăл килсе ларнине? Хăш вăхăтра ĕлкĕрнĕ? Мĕн кирлĕ ăна Тамара çумĕнче? Мĕн калать вăл?

Кам? Эпĕ кĕçĕн çын пек-и? Кусăнах кулать-иç ку. Эсĕ ху кам пек-ши? Мĕн çĕлен пек авкаланатăн кунта! Кĕçĕн çын темех мар-ха. Эс... эс...

Тăхта-ха? Ман пилĕкĕмрен тытать-çке ку?

Çак усал? У-у, йĕксĕк!..

— К-кай...

Сасă хăйне те аран-аран çеç илтĕнчĕ. Тамара пĕтĕм вăйне пухса кăшкăрчĕ: «Кай! Кай! Кай!» Унăн сасси илтĕнмерĕ, тути çеç хускалкаларĕ.

Мĕн пулчĕ-ха, чăнах та? Вăл тин çеç шухăшласа ларатчĕ-çке, халь те шухăшлать. Пуç чиперех ĕçлет. Алурана, чĕлхе-çăвара, хăлхана тем пулнă.

Пӳртре пăчă. Чуна тăвăр. Чĕре анинчен, пĕтĕм ăшчике тапратса, тем капланать... ăша пăтрататать, пыралла хăпарать...

Тамара пĕтĕм вăйне пухса ура çине тăчĕ те сулăнса кайрĕ, анчах чăлан хăми ӳкме памарĕ. Тамара алăкалла вăркăнчĕ. Пуçа тем çапăнчĕ, çапах ыратни пĕрре те сисĕнмерĕ.

Тамара алла çатăр çыпăçтарса лартнă шăн тимĕртен, çенĕк алăк хăлăпĕнчен, вĕçерĕнчĕ те килкартишне анакан крыльца çине тухрĕ, пусма картлашки умĕнчи карлăкран уртăнчĕ.

Тĕттĕмре сивĕ çил кастарса вĕрет, вĕри пуçа пурпĕр витерсе усăлтараймасть.

Пуç сасартăк чăтма çук ыратса килчĕ. Кун пек пуç ыратнине Тамара хăйĕн ĕмĕрĕнче пĕтĕмпе те пĕрре çеç астăвать. Ку вăл пĕлтĕр мунчара вăйлă-вăйлă, куç курми сĕрĕм тивсе лартнă хыççăн — сивĕ пăлтăра тухса тăрсан — пулнăччĕ. Халĕ çавăн чухнехи пекех ыратса, пăчăртаса килчĕ, пуç мимине такам тăпăлтарса кăларать, тейĕн. Кун пек ыратăва тӳсиччен — чунна хăвăртрах пама та турткалашмасăр килĕшмелле. Çак асап çеç тек ан тăсăлтăр.

Акă куç умне каллех такам мĕлки тухса тăчĕ. Кам ку? Мĕн кирлĕ ăна? Каллех Митюк-и? У-у, чунсăр кĕлетке! Кай кунтан! Кай! Кай!

Тамара чышкине вăйранах чăмăртарĕ те — сулчĕ, чышки халсăррăн аялалла усăнчĕ.

«Кай, йĕксĕк! Ан çыпçăн!»

Тамара каллех, мĕнпур вăйне пухса, Митюка кăкă-

рĕнчен тĕртрĕ. Анчах вăл пуçĕпе çав хăй тĕртнĕ кăкăр çинех тирĕнсе анчĕ.

«Митюк! Кай!..» — чунтан тарăхса кăшкăрчĕ хĕрача. Анчах сасси унăн, урмăшнăскер, илтĕни-илтĕнми хуллен тухрĕ. Чунсăр çил те, хăйĕн сивĕ кĕввине ĕнернĕ май, ку вăйсăр сасса аякка вĕçтерсе кайса чăрманмарĕ.

Тамара хăйĕн вăйĕ иксĕлсе пынине сисрĕ.

Унтан пуç çаврăнса кайрĕ. Хăйне вăл такам çӳлелле, сывлăшалла, пĕлĕт çине çĕклесе хăпартнăн туйрĕ. Хĕрача темĕнле пиншак çаннинчен хытă çатăрласа тытрĕ. Анчах вăл пурпĕр таçта аялалла-аялаллах ӳкрĕ, ӳкрĕ, ӳкрĕ... вĕçрĕ. Çăлтăрсем çаврăнма тытăнчĕç; çуртсем, йывăççем, тӳпе — кутăн-пуçăн чикелене пачĕç.

Акă вăл чăнласах çĕре ӳкрĕ. Çурăма темĕн сивĕскер, ахăртнех, юр пулас — шăнта пуçларĕ.

Пуçа сасартăк хăрушă-хăрушă шухăш касса кайрĕ...

Çак хăрушă шухăш пĕтĕм хул-çурăма, шăмшака кĕтмен çĕртен тĕлĕнмелле хăват пачĕ. Тамара мĕнпур вăйран туртăнчĕ те хăййăн çаврăнса ӳкрĕ, тепре туртăнчĕ... Тем хушăра ура çине сиксе тăчĕ, мĕнпур кĕлетке сулăмĕпе такама кăкăртан чышрĕ, шуса ӳкрĕ. Каллех ăна хăрушă шухăш хăвачĕ çиййĕнчех ура çине тăратрĕ... Вăл вăра хапха çумĕнчи кĕçĕн алăкалла вирхĕнчĕ. Урама сиксе тухрĕ те тăрăнса анчĕ. Çак вăхăтра урампа утса килекен çынна çеç асăрхаса юлчĕ вăл.

ВУНПИЛЛĔКМĔШ СЫПĂК

Автобус хуланалла вĕçтерет.

Кустăрмасем айĕнчи пирчек юр, çапталăк сивĕ пирки, çăмăл тимĕр пек йăнкăртаттарса янăрать. Тарланă маччаран тумламсем çакăнса тăраççĕ, вĕсем, автобус кайнăçемĕн йышланса пырса, татăла-татăла та анаççĕ.

Автобус вăрмана кĕрсен, мотор сасси юмансем тăрринчен илтĕнсе пычĕ. Вăрман хĕрринче сайраран пĕрре ларса тухнă ӳплесем, автобус сассине каялла таптарса, çумран тепĕр автобус иртсе кайнă пекех кĕрлесе юлаççĕ.

Шофер кабининчен сехет йĕпписем улттă çинелле шурĕç. Раштав каçĕ çывхарать ĕнтĕ. Хире-хирĕç килекен машинăсем те ĕнтĕ, фарисене çута-çута сӳнтерсе, куç хĕскеле пуçларĕç.

Гена, ним çинчен те шухăшлас мар тесе, автобус моторĕн сассине тăнларĕ.

Мотор сасси малтан питĕ хăварт тапакан чĕре пек

пĕрпеккĕн те тикĕс кăртлаттарчĕ, унтан, васкарах та васкарах тапса, шăхăрмах тытăнчĕ. Гена, сывлама чарăнса, пĕтĕм кĕлеткипе туртăнса, вĕчĕрхенсе, темшĕн вăл «татăлса каясса» кĕтрĕ. Анчах шăхăрнă сасă çинçелнĕрен çинçелсе пырса тăсăлчĕ, тăсăлчĕ...

Мотор сасси татăлса кайсан тин Гена кăкăра ирĕксĕр пухăнса тулнă сывлăша хашлатса кăларса ярать, анчах моторĕ çĕнĕрен хартлаттарма, унтан шăхăрса ӳлемех тытăнать. Чун канăçсăрланать, пăчă...

Практикăна янăччĕ вĕсене, педагогика институчĕн тăваттăмĕш курс студенчĕсене, ялти вăтам шкула икĕ уйăх çурлăха. Тата уйăх ытла ĕçлемеллеччĕ-ха унта... Анчах Васильев Геннадий Васильевич студент ăна йĕркеллĕн вĕçлеме вăй-хăват çитерейменрĕ. Ушкăнтан уйрăлса, пысăк айăп тунă çын пек тарать вăл халь шкултан.

Мĕншĕн?

Шкул директорĕ ятланăшăн.

Елена Сардоновна учительница тӳрккессĕн вăрçса тăкнăшăн.

Пуç тавра çавăрса пăхман шухăшпа тунă ĕç пулмарĕ-и ку Генăн?

Ку вăл шкулта хăвăн пирки сарăлнă ырă мар чапа «тĕрĕс» тесе йышăнни пулмасть-и?.. Хайла çитмерĕ-им ăна сирсе пăрахма?..

Студентсем, учительсем сап çинчен темтепĕр калаççĕ... Директор ăнланмасть.

Кусем сана хăвна кăна тивекен япаласем çеç-çке. Мĕн тăвас-ха, директорăн екки çавнашкал пулсан?

Студентсем Генăна час-часах «эсĕ ху çинчен нумай шухăшлатăн, çавăнпа кӳренетĕн, тарăхатăн» тесе асăрхаттаркалатчĕç. Чăнах-çке...

Генăн халь хăй пирки мар, ытларах çын шăпи çинчен шухăшламалла-тăр. Калăпăр, Тамара Голубева шăпи çинчен.

Гена пĕлет: унăн хĕр-тусĕ Валя паян менелник ирттерет. Эппин, унта Тамара та, Митюк та пулать. Унта — ĕçкĕ, ашкăну.

Тăхта-ха!.. Кам хушнăччĕ Генăна Тамарăпа ĕçлеме, ăна пулăшмалли май шырама? Вера Федоровна... Вăл та ăнланаймарĕ-ши Генăна халь?

Чим-ха! Вăл халĕ шкулта мар-çке, отпускра! Апла, вăл пĕлмест те пуль ним те! Çак кĕтмен çĕртен пуç çине аçа чулĕ пек татăлса аннă çурма чăнлă-суяллă сăмахшăн вăл та ятлĕ-ши?

Çук, çук! Вăл ăнланма тивĕç! Епле-ха Гена ун çинчен малтан аса илмен!

...Гена пĕр вăхăт каллех автобус моторĕ чуна ыраттарса кĕрленине тăнласа пычĕ, унтан сасартăк ура çине сиксе тăчĕ те шофера паллă паракан кантрана хыттăн туртса лăскарĕ. Автобуса уй варринче чарнăшăн кăмăлсăрланнă кондуктортан каçару ыйтса, Гена уçăлнă алăкран çĕре сиксе анчĕ те хăвăрт каялла утса кайрĕ, тепĕр самантран вăл чупмах тытăнчĕ...

* * *

Автобус çинчен анса каялла яла çитнĕ студент, йывăр чăматанне тайăларах йăтса, хăйĕн хваттерĕ еннелле утрĕ.

Хăрах питлĕ уйăх, е хуралтă хушшисенчен тухса пăхса, е çара йывăçсем ăшĕнче турат çинчен турат çине сиксе, йĕрлесе пынă пекех çынран юлмасăр, шăпланнă ял урамĕн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçнелле сулăнчĕ.

Гена виçĕ чӳречеллĕ пысăк мар çурт тĕлне çывхарнă май ирĕксĕрех хуллен утрĕ.

Çуртăн виçĕ чӳречине те çӳхе карăпа картланă, çӳлти пысăк куçĕсем çеç уçă. Вĕсенчен — уйрăммăнах варринчи чӳречерен — урама вăйлă çутă урисем анаççĕ. Юр çинче кантăк карри витĕр ӳкнĕ пуç мĕлкисем сулланаççĕ. Кунта арçын мĕлки те, хĕрарăм мĕлки те пур. Шалтан урмăш сасăсем илтĕнеççĕ. Генăна уйрăммăнах питĕ çинçелсе виçерен иртнĕ сасă чуна хăйăрттарса илтĕнчĕ.

Кантăкра пĕркӳлĕм çын пуç мĕлкисем элес-мелес куçкаларĕç. Кил хушшинче пӳртум алăкĕ йывăррăн хĕсĕнсе хупăнчĕ. Тен, Тамара та çакăнтах пулĕ?.. Гена хваттере васкарĕ. Митюк халь те таврăнманнине пĕлсен, вăл çĕлĕкĕпе тумтирне хывмасăрах алăкăн-тĕпелĕн çаврăнкаларĕ те каллех пӳртрен тухрĕ. «Çитетĕп те ним пулман пекех кĕрсе каятăп,— терĕ вăл ăшĕнче.— Ан тив, чĕнмен хăна пулам».

Гена хăй паçăрхи çурт патнелле çывхарнăçемĕн хапха умне çарамас çын вирхĕнсе тухса тăрăнса аннине курчĕ. Ун хыççăнах тепĕр мĕлке сиксе тухрĕ. Вăл темшĕн, вăрă тунă пек, унăн-кунăн пăхкаласа илчĕ те — çулпа пыракан çынна асăрханипе çиййĕнчех каялла тапрĕ.

Хапха умне тăрăнса аннă кĕлетке пĕр вăхăт хускалмарĕ. Тепĕр самантран вăл ура çине тăрсан, Гена ку хĕрача иккенне курчĕ. Хĕрача — çĕре япала ӳкернĕ пек —

пĕшкĕнчĕ, тем хыпаларĕ, унтан тӳрленчĕ, сулланкаласа, хапха çумне çурăмпа сĕвенчĕ, икĕ аллине саркаласа, пуç-не каçăртрĕ, каçхи çутçанталăкшăн тĕмсĕлнĕ çын пек тӳ-пенелле пăхса тăчĕ.

Çак хушăра Гена хуллен Вальăсен тĕлнелле çывхарчĕ.

Хĕрача çак вăхăтра хапха çумĕнчен хăйне такам тĕрт-се янă пекех уйрăлчĕ те сукмак çине ыткăнчĕ. Генăран пĕр виç-тăват утăмра вăл çĕре тирĕнсе анчĕ, ерипе ура çине тăчĕ, пĕр утăм мала ярса пусрĕ, вара каллех чарăнчĕ.

Хĕрача çӳхе тутăрпа çеç пĕркеннĕ. Унăн уринчи хура çăматă кунчи те юрланса пĕтнĕ, кĕске кĕпе айĕнчен çара чĕркуççи курăнать. Аллисене вăл, тутăрне пăчăртанă май, кăкăр умне хĕреслесе тытнă. Хăй умĕнчи çын çине хĕр-ача вăйранах куçне хĕссе пăхса тăчĕ.

— Тамара!...

Хĕрача пуçне вăрт ывăтрĕ те куçĕпе Гена çине тăрăп-чĕ. Унăн куç хăрпăкĕсем пăрланса шуралнă. Куç пакăл-тисенче тĕттĕм сĕм тăрать. Чарăлнă икĕ куçĕнчен икĕ çур уйăх сиввĕн пăхать.

Гена çӳçенсе илчĕ. Хăй умне юмахри симĕс кантăр сӳсĕ пек çӳçлĕ вутăш-хĕр, кăтăкласа вĕлерекенскер, тухса тăнăн туйăнчĕ. Калас тенĕ сăмахсем те пыра ларчĕç.

— Геннадий Васильевич!— тĕлĕнчĕ хĕрача сасартăк, татăлас пек çинçелнĕ вĕчĕх сассипе.

Ку сасă Генăна çухатса ячĕ, çанçурăма сивĕ çӳçенчĕк сăр-сăр саланчĕ. Ку сасса илтсен, Гена хăй умĕнче кам тăнă пирки те пĕр ăстрăм иккĕленчĕ. Тамара сассиех-и ва-ра? Чĕрере халиччен сĕртĕнме те хăймасăр упраса усра-нă таса хĕлĕх чуна ыраттарса татăлса кайрĕ.

— Эсир халĕ каятăр ĕнтĕ? Çапла-и? Алă та сулмастăр?

Гена, аллисене кăкăр умĕнчи чалăш кĕсъесене чиксе, куçне мăчлаттармасăр хĕрача çине пăхса тăчĕ. Хĕрачана типири тытнă, тейĕн.

— Э-э... Пĕлтĕм, пĕлтĕм! Эсир кайиччен малтан ман çинчен учительсене каласа паратăр ĕнтĕ,— терĕ хĕрача тĕлĕнмелле хăюллăн та чăрсăррăн.— Çапла-и?

Хĕрача хальхинче, чăн та, вутăш пек ахăрашса кулса ячĕ.

— Çапла пуль, э? Калăр, калăр! Эп хăрамастăп текех. Никамран та хăрамастăп! Пымастăп шкула эп урăх!..

Гена çав-çавах хускалмасăр, куçне ыратичченех хĕссе, хĕрача çине пăхса тăчĕ.

— Эсир, учительсем, улталатăр пире! Эсĕ те — учите-ле тухсан — ыттисем пекех пулатăн!— кăшкăрсах ячĕ

хĕрача.— Суятăр! Пур çĕре те çул уçă, тетĕр. Çынсем çав тери лайăх, ырă, тетĕр!..

Генăн çĕлĕкĕ айĕнчен çамка тăрăх тар юхса анчĕ. Хăлхара кашларĕ. Вăл икĕ утăм ярса пусрĕ те, хĕрача умне çитсе, ăна ерипен аллинчен тытрĕ, тепĕр аллипе унăн ĕнсе çинелле кайнă тутăрне хăпартрĕ.

— Эсĕ шăнса пăсăлатăн,— терĕ Гена май килнĕ таран лăпкăн.— Тата халь эс ывăннă та. Канас пулать сан, Ыран калаçăпăр. Юрать-и?

Хĕрача сасартăк лăштăр кайрĕ, пуçĕпе Гена кăкăрĕ çине тĕршĕнчĕ те ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

Гена ăна лăплантармалли сăмах шырамарĕ те, тупайман та пулĕччĕ, мĕншĕн тесен çынна кун пек чухне хăйĕн куççулĕ сăмахран ытларах çăмăллăх кӳрет. Çемçелсе кайнă хĕрачана, пĕтĕм кĕлеткипе туртăнса чĕтрекенскерне, Гена ним чĕнмесĕр хулĕнчен шăлчĕ.

Кам пĕлет, мĕнпе вĕçленетчĕ çак тĕлпулу, анчах унăн кĕтмен çĕртен урăхла вĕçленмелле пулчĕ.

Çак хушăра Вальăсем патĕнчен тухнă икĕ йĕкĕт Генăпа Тамара патне çывхарчĕç. Вĕсем, ӳсĕрскерсем, ахăрчĕç, кулчĕç. Митюк тӳрех Гена умне пычĕ. Унтан...

Ку пуçтахла сценăна ӳкерсе пама та кирлех мар. Гена хăлхине темĕнле намăссăр сăмахсем илтĕнчĕç. Унтан сасартăк хăрах пит пĕçерсе кайрĕ. Гена хăй те сулăнса илчĕ.

Малаллине вара Гена лайăх астумасть...

Боксерсене кун пек чух (Гена институтра боксерсен кружокĕнче тăнă) çын пит-куçĕнчи виçĕ вырăн тӳрех куç тĕлне пулать: икĕ тăнлав та янах айĕ. Хăрах тăнлавĕ çӳç чăмаккипе хупланнă, тепри — çын хăяккăн тăнипе — курăнмастчĕ. Сарлака янахĕ çĕкленерех те малалла тухса тăрать. Гена, мĕнпур тарăхне хăрах чăмăра пуçтарса, тăлпăвĕпе чикĕнсе, сылтăм чышкине çав янах айне тăрăнтарчĕ. Умри кĕлетке касса янă пек хыçалалла ывтăнчĕ.

Кайран вара пĕтĕмпех тĕлĕкри пек пулса пычĕ. Тахăшĕ Гена çине хыçалтан сиксе ларчĕ: тахăшĕ темле хытă япалапа чĕркуççирен лектерчĕ, кайран пуçран та темскер тиврĕ...

* * *

Чĕркуççи икерчи чăтма çук ыратнипе Гена вăрахчен тăраймасăр выртрĕ. Пуçа та кăшт хĕстерет, ыратнипчен ытла ăна юр шăнтать, ура пӳрнисем шăнса кӳтрĕç. Хăлха чиккинче — шавлать.

Самантран Гена уксахласа тăвайккинчен анчĕ. Те шăнса кайнипе — урасем Генăна хăйĕн мар пек, темĕнле транккаї çинче утнă чухнехи пек туйăнчĕ. Пăрлак çул тайкаланчĕ, шутарчĕ. Куç ылмашрĕ.

Тӳпере шăнса кайнă çăлтăрсем чĕтрерĕç.

Гена хăйĕн хваттерне мар — палланă юлташĕ патне кайрĕ. Юлташне вăл паянхи ăнкайсăр ĕç пирки нимĕн те шарламарĕ, ют хваттере пынă пирки «хамăннинче таракан шăнтаççĕ» текелесе çеç шӳт тăванçи пулчĕ.

Тепĕр кунне ирхине вăл чĕркуççи чашки, тӳш шăмми ыратнипе аптрарĕ.

ВУНУЛТТАМĔШ СЫПАК

Тамара кунĕпех чăлантан тухмарĕ.

Вăл пĕр тапхăр чăлан алăкĕнчен курăнакан шур илпĕ куç пек шуралса шăннă чӳрече çине пăхса выртрĕ, унтан пуç çинченех çиттипе витĕнчĕ те килте тĕртнĕ тӳшек çиттин йĕп çăртинчен те пĕчĕк çип куçĕ çине вăрахчен пăхрĕ, çип куçĕ, пысăкланнăран пысăкланса пырса, 15 пуслăх кĕмĕл укçа пысăкăш тĕтреллĕ çаврашка пулса тăчĕ. Çав çаврашка витĕр каллех çур чӳрече курăнчĕ. Вăхăтăн-вăхăтăн йывăç тăрри мĕлки, уйăх çутипе чӳрече çине ӳкнĕскер, суллана-суллана кантăка шăлчĕ.

Сасартăк кантăк умне çын пуçĕ шăвăнса тухрĕ...

Çын пуçĕ пĕр хушă ним хускалмасăр хытса тăчĕ. Тамара унăн усăнса аннă çӳç пайăркине те, темĕнле сиввĕн йăлтăртатакан хура куç шăрçине те курчĕ. Çын мĕлки çапла тăнă хыççăн пĕр утăм пек çывхарчĕ. Мĕнле çын ку? Пӳртрех-и вара вăл? Пӳртре пĕр чун та çукчĕ-çке. Валя та хальтерех çеç тухса кайрĕ.

Тамара çӳçенсе чĕтренчĕ те хăранипе куçне чарса пăрахрĕ.

Арçын тата тепĕр утăм ярса пусрĕ. Халĕ вăл кăкăр таранах тухрĕ, унтан каллех темиçе утăм турĕ. Акă вăл Тамара пуçĕ вĕçнех çитрĕ те хăрах аллине ерипе хăпарта пачĕ. Вăл никам та мар, Митюк пулас?

Хăлхара тем шавлама, кĕрлеме тытăнчĕ, шав ӳснĕрен ӳссе пычĕ, çавна май пĕтĕм кĕлетке чĕтреме тапратрĕ, чĕрере тытамаклă хăрушлăх шамалса çĕкленчĕ.

Тамара кăшкăрса ячĕ те, çиттие сирсе ывăтса, тĕлĕнмелле хăвăрт сиксе тăчĕ. Алчăранă куçпа арçын çине тинкерчĕ.

Ăçта-ха арçын? Çын йăп пулчĕ!

Пӳлĕмре çав-çавах никам та çук иккен, чӳречере те пĕр чун çук...

Мĕн япали ку? Тĕлĕк-и? Тамара çапла хăй сисмесĕрех çывăрса кайнă пулмалла.

Тĕрĕс. Çывăрса кайнă. Чӳречере ухăнса тăракан йывăç тураттн те çук иккен. Тулта та уйăх пăхмасть. Эппин, ку та тĕлĕк çеç? Чăн та, каç пула пуçланă çеç-çке. Анчах Тамара çак çитти кусĕ витĕр чип-чипер çак кантăка, пӳлĕме, чăлана курса выртатчĕ мар-и?

Тамара, сехĕрленнинчен халĕ те лăпланса çитеймесĕр, хăй вырăнне малтанхи пек майлашрĕ те çиттипе пĕркенсе пăхрĕ.

...Çитти çинче нимĕнле шăтăк та, çутă та палăрмасть. Унта ниçта йĕп кĕмелĕх çип кусĕ те çук-мĕн. Епле-ха ун витĕр Тамарăна чӳрече, пӳлĕм курăнма пултарнă? Эппин, ку та тĕлĕк çеç?

Тахçан, ача чухне, урайĕнче çиттипе пуç çинчен пĕркенсе выртнă чухне çаплаччĕ мар-и? Ирхине çиттие карăнтарса пăхса тăрсан-тăрсан, çиттин пĕчĕк çип кусĕсем кĕмĕл тенкĕ пысăкăшех ӳссе çавраланатчĕç, çав тенкĕ пек çавра çутăсем витĕр, чăн та, ним те палăрмастчĕ, вăл тĕтреллĕччĕ, хăш чухне тата çав шурă карав çинче Тамарăна хăйĕн кусĕнчи темĕнле пĕчĕк чĕрĕ пăнчăсем, кусаканскерсем, курăна пуçлатчĕç.

Ку пĕтĕмпех тĕлĕрӳ витĕр кĕнĕ урăм-сурăм тĕлĕк пулсан, ăçтан-ха шав, ăвăнса-ăвăнса пырса, пĕтĕм кĕлеткене лăскаканскер? Вăл чиперех илтĕнчĕ-çке. Тамара, сывлама чарăнса, тăнласа пăхрĕ. Пит-куç, тăнлав юн тымарĕсем карăнчĕç те, хăлхара паçăрхи майлах темĕнле шав тапранчĕ.

Юн кашлать иккен хăлхара. Хăлха пăсăлнă, ахăр. Е хăрапипе çапла шавлать-и вăл?

Хĕрача халĕ пуç çинчен витĕнме те хăрарĕ. Çиттие вăл пачах сирсе пăрахрĕ те вăрахчен маччаналла пăхса выртрĕ.

Вырăн тĕлĕнчи мачча хăми çинчен пĕр пысăк турат кусĕ Тамара çине чарса пăрахнă куç пек пăхрĕ. Тепĕр хăма çинче ăна мăшăрлă чапрас куç та тупăнчĕ. Çавăнтах сарса пăрахнă çăмлă çăвар та, капан шăллăскер, пур. Тискер пуç çывхарнăçемĕн çывхарчĕ. Тамара хăлхине вара тискер те шелсĕр сăмахсем илтĕнме пуçларĕç.

«Кам эсӗ?.. Ӗҫке ернӗ хӗр! Учителе темтепӗр каласа хӑртаканскер! Тӑван килтен писнӗ чупкӑн! Митюк варли!..»

Митюк... Кам-ха вӑл Митюк? Мӗншӗн-ха акӑ халь ун ҫинчен аса илсен — чӗре айӗнче темӗнле сивӗ япала йӑсӑлл! турӗ?

Чӑн та, мӗн тери киревсӗр этемсем пур ҫӗр ҫинче!

Тамарӑна, тен, Геннадий Васильевич хӑтарчӗ-тӗр? Вӑл-ҫке ҫулпа килетчӗ. Тамара ӑна... Ҫук, ҫук! Тамара ӑна ун пек каласа тӑкасшӑн марччӗ. Ку вӑл Геннадий Васильевича, ыттисенчен пачах уйӑрса, вӑл ҫыннӑн чунчӗрине ӑнланаканскер тесе ӗненнипе тата ӑна ҫеҫ хӑйне ӑнланакан пӗртен-пӗр ҫын тесе ҫывӑха хунипе пулчӗ. Гена мар, урӑх ҫын пулнӑ пулсан — Тамара ӑна сӑмах та хушмӗччӗ. Ку вӑл, тӗрӗссипе, кирек те кама, ӑнланакан ҫынна, ӑшра мӗн капланса-кӳтсе ҫитнине каласа парас тениччӗ, ҫакӑ ҫеҫ.

Мӗн шутлать халь вӑл Тамара ҫинчен? Пӗртен-пӗр чуна уҫса памалли ҫынна та ҫапла кӳрентерчӗ Тамара. Халь ӗнтӗ никам та ҫук...

Валя-и? Валя та... Ҫапла... Тамарӑн ӑна халӗ те тус тесе шутламалла?

Ку ҫӗркаҫ пулчӗ-ҫке-ха.

Тамара чӑланта выртатчӗ. Пӳрте иккӗн кӗчӗҫ. Чӑлан карри ҫине кӑшт тӑхтарахпа пӗр-пӗрин ҫумне таяннӑ икӗ пуҫ мӗлки ӳкрӗ. Пӑшӑлтатса пуплерӗҫ, кулчӗҫ. Куласса ҫеҫ вӗсем ним пытармасӑр мӗнпур сасӑпа кулчӗҫ. Ку вара ҫав тери чуна тарӑхтарчӗ. Тамара малалла хӑлхине хупласа выртрӗ те кайранхине ҫакна ҫеҫ пӗлчӗ: ҫутта сӳнтерчӗҫ...

Тамарӑн ӑшӗнчен темӗнле йӗклӗ туйӑм хӑвӑрласа тухрӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех хӑлха тӗлӗнче такам парапланпа ҫапса янӑ пек — пуҫра йӑлтах кисренсе кайрӗ. «Валя... Тамарӑн чун-тусӗ, халкӑ юлташӗ! Вӑл та ҫавнашкал-и?»

Валя! Ҫапах вӑл ҫакӑн хыҫҫӑн та хӑйне хӑй таса мерчен пек тытма, ҫын умне тӑрса калаҫма-кулма хӑюлӑх ҫитерет-ҫке. Эппин, вӑл, Тамара ӑна шаннӑ-хисепленӗ чухнех ҫапласкер, клуба ҫӳреме, Тамарӑна хӑй патне чӗнме, мӑйран ыталама чун калякӗ ҫитернӗ? Мӗнле-ха Тамара ӑна сӗм те асӑрхаман?

Ҫак шухӑшсем хыҫҫӑн Тамара, хӑйне хӑй ҫав тери тӑр-пӗчченнӗн туйса, хӑйшӗн хӑй сехӗрленсе ӳкрӗ. «Сан юлашки тусу та ултав ҫеҫ пулчӗ-и? Тен, эпӗ те Валя пекех?» Ӗнер вӑл кӗҫех Валя пек пулса тӑратчӗ-ҫке. Кӗ-

çех? Тамара Вальăн тусĕ-çке, çынсем вĕсене иккĕшне пĕрле кураççĕ. «Хăвна пĕлесчĕ»,— тет вăл. Тамара, тен, унран та киревсĕртерех? Валя килтен тухса тарман, вĕренме пăрахман, учительсемпе чĕрре кĕмен. Ун çинчен нимĕнле усал ят та тухман... Пур хитрелĕх те, эппин, çиелтен çеç çапла хитре курăнать пуль? Ку вăл эсĕ япалан тŷнтер енне пĕлменни пуль? Ху айван та ухмаххи çеç, санран çав икĕ енлĕ япалан пĕр енне пытарса, саншăн çав япалана «хитре» тăвать...

Тамара, шăлне шăтăрр çыртса, мĕнпур вăйран куçне хĕсрĕ те, куç тымарĕсем ыратса килчĕç. Вăл çапла пĕр тапхăр ним хускалмасăр выртрĕ.

Тулта — пăлтăрта — паçăр типшĕнме тухса лартнă тимĕр витре шăнса пынă май, хушăран хушă чăнк-чанк тутарса сасă пачĕ. Тĕпелте кăмака анинчи чейник, питлĕх çумĕнче вĕриленсе пыраканскер, çулла пŷрте çакланнă сăпса ирĕке тухасшăн кантăк çинче сиккеленĕ пек сĕрĕлтетсе năйкăшма тытăнчĕ. Мăрьере çил вил хŷххи пек кичеммĕн те йăлăхтармалла ŷлерĕ.

Тамара куçне уçрĕ те каллех мачча çинчи шăлпе ейсе пăрахнă пуçа курчĕ.

Хăлхана таçта ирра аватнă пек сасă илтĕнчĕ. Куна илтсен, мачча çинчи хăрушă пуç та, самантрах чăл-пар саланса, каллех ниме пĕлтермен турат куçĕсем пулса тăчĕ. Вăл хăйĕн тискерлĕхне пĕтĕмпех çав ирр-р текен сасса пачĕ тейĕн.

Тамара тепĕр хут тăнласа итлерĕ. Ирра — çĕр шапи — таçта çакăнтах вырăн таврашĕнче аватнă пек. Вăраммăн тăрр-р! тутарнă сасă таçта шарманкă çавăрнă пек илтĕнет. Кун пек сасă çулла сулхăнта çумăр умĕн пулать. Сакайĕнче мар-и вăл?

Хальхинче ирра вырăн çинче аватрĕ.

Хĕрача, сывлама чарăнса, хуллен тăрса ларчĕ. Ирра, чăн та, вырăн çинчех! Тамара хăвăрт çиттие сирсе пăлхатрĕ, вырăна, минтере хускатса пăхрĕ, унтан сасартăк шарт сикрĕ — сасă хальхинче ăшчикрен тухнă пек илтĕнчĕ... Тахăçан амăшĕ каласа панăччĕ: пĕр арçын ача выртмара çăварне карса çывăрнă имĕш те, ун хырăмне шапа кĕнĕ.

Çакна аса илсен, хăлхара каллех паçăрхи хăрушă шав кĕрлесе çĕкленчĕ. Хĕрача вырăн çинчен такам хŷтернĕ пек хăвăрт сиксе анчĕ те, чăлантан вирхĕнсе тухса, урай варринче чарăнчĕ. Тăркăшлă сивĕ урайĕнче чуна хайăрттарса тусан кăшăртатрĕ.

Пӳртре шăв. Пĕрене тăрăх çеç темскер, юплĕ хӳре-и, мăка чăкăртаттарса-кăтăртаттарса чупрĕ, мачча çинчен хăма хушшипе пĕр чĕптĕм пек тăпрас кăшăртатса юхрĕ. Унтан, карт сиктерсе, çав вăхăтрах, пĕтĕм кĕлеткене чун кĕртсе, кĕçĕн алăк шанлатрĕ, мачча тăрăх кил хушшинчен урам еннелле хура мĕлке шуса иртрĕ. Ку Валя пулчĕ иккен. Тамара тӳрех ăна хирĕç ыткăнчĕ.

— Паян райцентр мунчи ĕçлет-и?— хăраса ыйтрĕ вăл Валя кĕнĕ-кĕмен. Валяваскамарĕ, пальто хывса çакрĕ, тутăр салтрĕ, çӳç тураса юсарĕ. Тамара халĕ те хурав кĕтсе тăнине асăрхасан, тин ӳркевлĕн каларĕ:

— Мĕн, эсĕ паян каллех мунча кĕресшĕн-и? Виçĕмкун çеç кĕтĕмĕр-иç.

Тамара чĕнмерĕ. Валя çине шиклĕн пăхса илчĕ те чăлана таврăнчĕ.

Тамара амăшне Валя «вăл кунта çук» тесе тунчĕ пулин те, Тамара хăй патĕнче пурăнни уншăн чăрмав иккенĕ лайăх сисĕнет. Вальăн хăйĕн те — темĕнле чаракласан та — сăмахĕ вĕçерĕнсе кайрĕ: «Анне килсен вăрçать ĕнтĕ сахăр нумай пĕтернĕшĕн...»— терĕ вăл ирхине. Çиесси енчен Тамара ĕнер каç та, паян та — анмасть тесе— хĕлхем те ăша ямарĕ, ĕнер ирхине çеç «чун татăласран» кăшт çырткаларĕ. Унăн, чăн та, апат шухăшĕ те, çинĕ тĕлĕ те пулман... Тамара лайăх чухлать: текех кунта пурăнма юрамасть, анчах киле те кайма çук.

Чăлана хăмăр чаршав витĕр хăмăр çутă ӳкет. Кĕтессенче тĕттĕм кӳмерккисем лăпчăнса тăраççĕ, вĕсем сарăлнăçем сарăлса пычĕç, икĕ кĕтес стена тăрăх хыпашласа хире-хирĕç шурĕç. Тĕттĕм кӳмерккисем кĕçех, хура упасем пек, «урисене» чăлан варринелле ярса пусрĕç, тытăçса ӳксе, пĕтĕм чăлана тултарса лартрĕç, Тамара сасартăк каллех шарт сикрĕ те чăлантан чупса тухрĕ, урай варринче чарăнса тăчĕ.

— Чăп! Ан шарла-ха! Итле!— терĕ вăл, сехри хăпнăскер, шиклĕ сасăпа хуллен, аллине хăлха тĕлне çĕклесе.

Валя ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ, вара хăй те хăраса итлерĕ.

— Ирра!

— Уй, анра-сухра! Ан ухмаха ер-ха... Хĕл кунĕнче мĕн ирри?

Тамара каллех чăлана таврăнчĕ, самантран тепре пуçне кăларчĕ.

— Валя,— терĕ вăл.— Йӳçĕтнĕ панулми пурччĕ-и сирĕн?

— Йӳҫӗтнӗ панулми? Уй, епле ăша тытрăн-ке? Анне валли те юлмарӗ пуль.

— Эп сана укҫа паратăп.

Валя пӗр ăстрăм чӗнмерӗ.

— Халь шăнса ларнă ӗнтӗ,— терӗ вăл кăшт тăхтасан, кăмăлсăррăн.— Илсе кӗрем, эппин.

— Пăлтăра ларт,— хушрӗ Тамара хуллен.— Кайран ҫиӗп...

Валя хуравăша ним тавăрса каламасăрах Тамара ҫине кăмăлсăррăн пăхса илчӗ те чашăк йăтса тулалла тухрӗ.

Вальăн кăвакрах куҫ шурри ҫинчи сарăрах тӗссем палăраҫҫӗ. Куҫ пакăлтисем кăвак йӗрпе карталаннă.

Ҫакна курсан, ăшра темӗнле аван мар туйăм хускалчӗ. Кун пек туйăм хăш чухне ăшă пӳртре ним шухăшламасăр ларнă чухнех, такамăн мăрăлти сасси хуллен илтӗнсе ачашланă чухне, пуҫра тем ăшăнса-ирӗлсе кайнă пек туйăнса кăшт кăтăш пуснă чухне пулать. Ҫав ҫемҫе сасă, сана темӗнле ăнланма ҫук екке ярса, ăша темшӗн йӗклентере пуҫлать. Хăвăн чи ҫывăх ҫынну та пӗр кӗске авăка йӗрӗнтерсе ярать...

* * *

Тӗлӗре пуҫланă хӗрача карт туртăнса вăранчӗ те ансухланса кайрӗ; куҫне уҫма хăтланчӗ, анчах вăл уҫăлмарӗ пулас: ҫывăрнă чухнехи тӗттӗм ун ҫинчен пӗр сӗм те сирӗлмерӗ. Тамара куҫне сăтăрса пăхрӗ, куҫ уҫах-мӗн... Вăл аптранипе тăрса ларчӗ, хăй ăҫтине те, хăш енче стена, хăш енче чӳрече е мачча иккенне те ним ăнкартса илеймесӗр, пуҫне пăркаласа пăхрӗ, хăй халӗ мачча ҫинче пуҫхӗрлӗ ларнăн, кӗҫ-вӗҫ ҫӗре татăлса анассăн туйăнчӗ, вара пуҫ ҫаврăнса кайрӗ. Тамара хуллен каялла выртăн ҫине тӳнчӗ — ҫакă уншăн пӗлӗт ҫинчен ҫӗре татăлса аннă пекех хăрушă пулчӗ. Ҫак самантра вара куҫра кăшт тул ҫути чăлтлатрӗ те — тин чун кӗчӗ, тăн кӗчӗ. Вăл халӗ те Валя патӗнче чăлантах иккен, куҫ та курать, ҫӗр ҫав тери тӗттӗммипе ҫеҫ — куҫ уҫнăпа уҫман пӗрех ним палăрмасть-мӗн.

Тепӗртакран ыйхăллă-мӗнлӗ витӗр куҫ умӗнче тӗрлӗ арăш-пирӗш тӗлӗк хӗвӗше пуҫларӗ. Темӗнле ҫынсем шуса иртрӗҫ.

Такам-ҫке Тамарăна, тӗлӗнсе те хӗрхенсе: «А-й-й-а-а-ай!» — тет. «А-й-йяй!» — тесе кашлать вăрман, тавралăх. Ҫынсем иртсе каяҫҫӗ ҫапла каласа. Акă Геннадий Васильевич... «Ай-й-а-ай!» — тет вăл хуллен, вара пăрăнса утать.

Тамара, йынӑшса ярса, ӳпне ҫаврӑнса выртрӗ те пуҫ ҫинчен ҫиттипе пӗркенчӗ, минтере тепӗр енне ҫавӑрса хучӗ. Минтерӗн сивӗ енӗ вӗри пуҫа кӑшт лӑш панӑ пек. Самантлӑха пуҫра шыв лӑпкӑ юхнӑ майлӑ тем ирӗлсе тӑрать. «Халь ӗнтӗ ҫывӑратӑп»,— тет Тамара хӑй ӑшӗнче. Ҫапла шухӑшлама пултарнинчен хӑй те тӗлӗнет: «Ҫывӑратӑпах пулсан, мӗнле-ха ҫапла шухӑшлатӑп халӗ?»

«Ыйхӑра та шухӑшлатӑн, шухӑш ҫывӑрмасть»,— тет темӗнле пӗр хӗрарӑм, сарӑ кӗпеллӗскер, ума тухса тӑрса.

«Мӗнле-ха апла?»— тӗлӗнет Тамара.

«Акӑ сана пӗр япала каласа парам»,—тет вӑл; хӑй нимӗн те чӗнмест. Тамара ҫине, кӗҫ-вӗҫ темӗнле хӑрушӑ-хӑрушӑ хыпар калас пек, тинкернӗҫемӗн тинкерсе пӑхма тытӑнать, куҫ сиктермесӗр пӑхать, ҫапла пӑхнӑ май вӑл ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарса килет, куҫӗ сӑнсӑрланнӑҫемӗн сӑнсӑрланса, тискерленнӗҫемӗн тискерленсе пырать. Ӑшран тытамаклӑ хӑрушлӑх ҫӗкленет, сывлӑш пӳлӗнет... «Ак, кур!»— кӑшкӑрса ярать хӗрарӑм.

Тамара каллех хыттӑн йынӑшса вӑранса кайрӗ те ним хускалмасӑр куҫне чарса выртрӗ. Сарӑ тумлӑ хӗрарӑм халӗ те умрах тӑнӑ пек, унӑн карӑш авӑтнӑ пек сасси те хӑлхарах, аллинче ун — шӑн панулми.

«Чӑн та, мӗншӗн шӑн панулми ӑша кӗрет-ха? Валя халь те илсе кӗмерӗ-и ӑна? Манӑн мунча кӗме каймалла-ҫке. Ӑҫта-ха Валя?»

Тамара хуллен вырӑн ҫинчен тӑчӗ те пуҫпе чӑлантан кӑларчӗ.

Сехет ҫеҫ хӑрушшӑн криклетсе шаккать. Ҫын сывлаɴӑ тавраш илтӗнмест.

Тамара Вальӑн койкине хыпаласа пӑхрӗ — никам та ҫук. Халь те килмен-и вӑл? Тамара кантӑкран урамалла пӑхрӗ — пӗр хӑйӑ ҫути те курӑнмасть.

Хыҫалта такам тӑнӑ пек... Тамара ҫаврӑнса пӑхрӗ.

Э-э, пиншак-ҫке тенкел ҫинче выртать.

Хӑйӑ ҫутмалла мар-ши? Ӑҫта-ши шӑрпӑк?

Тӗпелтен, чуна тапратса, темӗнле ҫатлатнӑ сасӑ илтӗнчӗ.

Тамара, аллисене кӑкӑр ҫумне карт туртса илсе, хутланса тӑчӗ; вара шӑрпӑк тупмасӑрах каялла чӑлана таврӑнчӗ те ҫиттипе чӗркенсе выртрӗ. Чӗре сикме чарӑнсан, вӑл ҫапла шухӑшларӗ:

«Ҫапах та мӗншӗн чуна ҫакнашкалах канӑҫ ҫук? Мӗн туса лӑпланма пулать?»

Тепӗр авӑкран куҫ умне каллех сарӑ кӗпеллӗ хӗрарӑм хирӗнсе тухрӗ. Ку ҫын никам та мар, кӳршӗри вуннӑмӗш класа каякан Вовӑн амаҫури амӑшӗ иккен. «Эпӗ сана ҫавна каласшӑнччӗ те, эсӗ темшӗн хӑрарӑн манран»,— тет вӑл.

Хӗрача чылайччен лӑпланаймасӑр выртрӗ. Мӗншӗн ыйхӑ килмест-ха? Ҫывӑрасчӗ, ҫывӑрасчӗ!

Пур-ҫке ҫак меслетсем тӗнчере!

Шӑн панулми! Тамарӑна амӑшӗ нихҫан та ҫавна ҫиме хушмасть. Такам — тӑванӗ-и — ҫавна ҫисен эрнеренех вилнӗ имӗш. Эрне асапланнӑ ӗнтӗ — кайран лӑпкӑ-лӑпкӑ. Тамара халӗ пӗр-пӗр ӳт-пӳ ыратӑвне ҫак чун ыратӑвӗпе савӑнсах улӑштарӗччӗ. Ҫапах та Валя ма панулми илсе кӗмерӗ-ха? Ҫапах ма тек-текех панулми аса килет?

Тамара ҫамки ҫине сивӗ тар тапса тухрӗ, ҫак вӑхӑтрах чӗрене темӗнле ӑнланма ҫук сывӑ мар савӑнӑҫ пиелесе илчӗ.

Пуҫра пӗр енчен хатарлӑ та, тепӗр енчен савӑклӑ пӗр шухӑш, темӗнле кӗтмен хӗпӗртӳ парса, амаланма тапратрӗ.

Тамара ҫак шухӑш ҫинче чарӑнса пӗр тапхӑр ним тапранмасӑр выртрӗ, ыйхӑ та уҫӑлчӗ те, вара тутасем ирӗксӗр йӑл кулса илчӗҫ.

«Хӑҫан-ха вара?»

«Ыран!..»

ВУНҪИЧЧӖМӖШ СЫПАК

Вера Федоровна вунпилӗк ҫула яхӑн ӗнтӗ шкулта ӗҫлет, анчах нихӑш ҫулне те вӑл кӑҫалхи пек канӑҫ ҫухатман. Юлашки вӑхӑтра ӑна пуринчен ытла 9-мӗш класри Голубева хӑтланӑвӗсем хӑрата пуҫларӗҫ. Акӑ халь уйӑх ҫура яхӑн отпускра пурӑннӑ чухне те вӑл Голубева пирки тем ӗҫ юлнӑ пек пӑшӑрханса час-час шухӑша каять. Ахаль мар ӗнтӗ вӑл Геннадий Васильевич студент-практиканта, ҫав класа ертсе пыракана, уйрӑммӑн асӑрхаттарсах ӗҫ хушрӗ. Ун ҫине вӑл пысӑк шанӑҫ хучӗ. Анчах Вера Федоровна ҫакӑншӑн халь шкултан килнӗ тӗрлӗ сас-хурана пула пӑшӑрханса ӳкрӗ. «Голубевӑна Геннадий Васильевич пӑсса янӑ... Вӗсем пӗр-пӗринпе вӗрентекенпе вӗренекене, аслӑ юлташпа кӗҫӗн юлташа тивӗҫ ҫыхӑнупа мар явӑҫса кайнӑ»,— пӗлтерчӗҫ Вера Федоровнӑна шкулта. Апла Вера Федоровна хӑй пулӑшрӗ хӗрачана йӑнӑш ҫулпа кайма? Кунпа пӗрлех тата ҫапла

пĕлтерчĕç: Геннадий Васильевич ют шухăшлă çын иккен.

Çак хыпар ăша вăркатса ячĕ. Вера Федоровна вара хăй студентпа калаçнă чухнехи кашни сăмаха аса илсе шута кайрĕ те каллех иккĕленчĕ, чун студент енчех тăчĕ: çук, ку ача ун пек-кун пек пулассăн туйăнмасть. Кунта, тем, учительсем йăнăшаççĕ. Уйрăм-уççи урăхларах-тăр.

Çак шухăш çирĕпленсех пычĕ. «Татма кирлĕ марччĕ пулĕ унпа Голубева хушшинчи çыхăнăва,— шутларĕ Вера Федоровна.— Эппин, халĕ каллех пăтăрмахлă вăхăтра унран студента уйăрса — тĕрĕс мар турăмăр, çапла, хамăр уймăллă çул çине тĕртетпĕр ăна...»

Паян Вера Федоровна çак канăçсăр шухăшпа тата Геннадий Васильевича курас ĕмĕтпе шкула кайрĕ. Шкулта та вăл ăша вырттармалли хыпар илтмерĕ. Голубева йăлтах шкултан писнĕ иккен, вăл ĕнтĕ тăватă кун шкула пыман,— килте те çук имĕш. Геннадий Васильевич та килмен-мĕн. Директор ăна шкул çумĕнчен уйăрас пирки, методистпа студентсем ăна институтран кăларса ярасси, ку ĕç тарăнрах каясси çинчен калаçрĕç. Виçĕмкун каçхине Геннадий Васильевич хăйĕн хваттер хуçи ачипе хĕршĕн çапăçнă иккен, вара хваттерĕнчен тухса кайнă. Хваттер хуçи арăмĕ шкула пырса тухнă: сирĕн студент ман ывăла хĕнесе тăкнă, тенĕ.

Голубевăпа мĕн тăвас пирки никам та пат татса калайман.

Хăшпĕрисем унпа айланма та кирлĕ мар терĕç. Шкула юратмасть, учительсене хисеплемест, вĕренмест. Мĕн унпа чăрманса пуç тăнне яма? Аслă класра наука сĕткенне никам та чăпăри тесе ĕçтермест. Ытти ачасене çеç пăсса ярать вăл халĕ. Ан килтĕрин. Мĕн ăна питех айтаса пыма? Пурнăç тути-масине астивсе пăхтăр тата.

Вера Федоровна йывăр кăмăлпа киле таврăнчĕ. Ĕнер почта илсе килнĕ пысăк мар çырăва темиçе хутчен салата-салата вуларĕ, вара вăл сехет йĕпписем кăнтăрла иртсе тăваттă çинелле сулăниччченех хăйĕн килти ĕç пўлĕмĕнче лара-тăра пĕлмесĕр уткаларĕ.

«Мĕн тумалла ку хĕрачапа? Мĕн пулчĕ ăна? Геннадий Васильевичпа та ытлашши чунсăрла хăтланмастпăрши?»— çакăн пек шухăшсем аптратрĕç ăна.

..Пўрте каç сĕмĕ çапа пуçланăччĕ ĕнтĕ, такам алăка хытах мар шаккани илтĕнчĕ. Вера Федоровна, хăпăл-хапăл халат тăхăнса ярса, алăк патне утрĕ. Уçалнă алăкран çенĕк хыçĕнче юр вĕçтерсе çил шăхăрни илтĕнчĕ. Пўрте пĕтĕмпех юрланса пĕтнĕ çамрăк çын кĕрсе тăчĕ.

— Геннадий Васильевич!— тӗлӗнмеллипех тӗлӗнчӗ Вера Федоровна, ҫав вӑхӑтрах саванса кайрӗ.— Здравствуй, здравствуй, Геннадий Васильевич! Эпӗ сире пачах кӗтме пӑрахнӑччӗ ӗнтӗ. Ку пит аван-ха, питӗ аван. Ну, малалла иртӗр.

Вера Федоровна, чӗрне вӗҫҫӗн пусса, ҫамрӑка хӑй хыҫҫӑн чӗнчӗ. Вӗсем пӗчӗк пӳлӗме тухрӗҫ. Ку пӳлӗмре ӗҫ сӗтелӗпе кӗнеке шкапӗ, тенкелсемпе диван лараҫҫӗ, урӑх ытлашши япала ним те ҫук. Хӗрлӗ пуставпа витнӗ ҫавра сӗтел варрине маччаран электричество лампи усӑнать.

Вера Федоровна пӳлӗме кӗрсен студента кӑмӑллӑн алӑ пачӗ. Студент сӑнпичӗ хурлӑ сӑпатлӑ, вӑл темшӗн пуҫне чикрӗ, чӗтресе илчӗ.

— Вера Федоровна,— терӗ Гена тытӑнчӑклӑн—те кусҫульпе, те сӑмахсемпе чыхӑнса,— эпӗ пӗтрӗм! Эпӗ... Эпӗ ӑпа ҫапса ятӑм!

Студент вӑйранах чунне хытарса тӑни сисӗнет. Анчах нервӑсене темӗн чухлӗ кару тытма тӑрӑшсан та, унӑн куҫӗ шывланчӗ. Инкек килсе ҫапсан, хӑвна ӑпланакан пӗртенпӗр ҫын умӗнче ӑшра мӗн капланса ҫитнине пытарса тӑма вӑйлӑ ҫын та хал ҫитерейместь пулмалла. Генӑн та, тен, Вера Федоровна ун ҫине амӑшӗ пек ӑшшӑн пӑхса илмин те — кӑмӑл ҫамҫелсе каймастчӗ-тӗр.

— Геннадий Васильевич, мӗн эсир?— Вера Федоровна студент хулпуҫҫийӗ ҫине аллине хучӗ те пӗр хушӑ ӑна куҫран пӑхса тӑчӗ.

— Лӑпланӑр,— терӗ вӑл самантран.— Пӗтӗмпех пӗлетӗп. Лӑпланӑр.

Вера Федоровна, алӑк патне кайса, ӑна тачӑрах хупрӗ те калла таврӑнчӗ.

— Ӗненместӗп эпӗ,— терӗ вӑл ним ыйтмасӑрах.—Ҫук, ӗненместӗп... Миҫере эсир?— сасартӑк ыйтрӗ вӑл.

Студент пӗр вӑхӑт ним калама аптранӑ пек ларчӗ, хуллен пуҫне ҫӗклерӗ.

— Ытла вӗри эсир,— терӗ Вера Федоровна, студента хирӗҫ тенкел ҫине вырнаҫса.— Макаренкӑна сан ҫапах та тӗплӗ вуламалла,— каларӗ вӑл малалла.—Пӗлетӗн-и, ҫынна ӑнсӑртран ҫапса янишӗн вӑл хӑй епле ӳкӗннине? Ӑна ӑнлапас пулать. Пирӗн Митюк пеккисене те тӳрлетмелле, анчах апла мар — урӑх меслетпе. Ӑна, тирӗ хулӑнланса ларнӑ пулсан, паллах, сӑмах вӑйне кӗртеймӗн. Халь ӗнтӗ вӑл шкул ирӗкӗнчен тухнӑ. Анчах ӑспуҫ, чӗлхе ҫивӗчлӗхӗ ҫитейменнине чышкӑпа ҫырлахтара пуҫлани ку пирӗн вӑйсӑрлӑхӑх. Пирӗн ӑна витерекен сӑмах тупмал-

лах. Ăна юсама ансат мар. Эпир малашне хамăр шкултан чăн-чăн çĕнĕ самана çыннисем хатĕрлесе кăларса çеç вĕсемпе кĕрешме пултаратпăр. Вĕсен йышшисемпе кăмăллăн калаçакансем мĕн чухлĕ сахалтарах хатĕрлетпĕр — Митюксем те çавăн чухлĕ сахалланĕç. Тен, вĕсем те пирĕн урапа çине куçса ларĕç.

Студент, çак учительница ятласа тăкнă пулсан, тен, хăйне ирĕкрех те туйнă пулĕччĕ-и, халĕ вăл темшĕн йĕп çинчи пек ларчĕ.

— Геннадий Васильевич,— терĕ Вера Федоровна самайран.— Сирĕн мĕн пулса иртнĕ вара директорпа иксĕр хушăрта? Шкулта темтепĕр калаçнине ĕненеймерĕм эпĕ.

Гена хăйпе директор хушшинче мĕнле калаçу пулнине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ. Вера Федоровна чăтăмлăн итлесе ларчĕ.

— Эсир калани тĕрĕс те пулĕ,— терĕ учительница, итлесе пĕтерсен.— Эпĕ хам та пĕрре мар шухăшланă кун пирки. Чăн та, чипер лайăх вĕренекен ачасемех пăсăлса кая пуçларĕç. Ку вăл, пĕр енчен, вĕрентӳпе воспитани ĕçне хамăр сӳрĕклетни çинчен калать ĕнтĕ, мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра пирĕн ку ĕçе уйрăммăнах тата пысăк тимлĕхпе туса пымалла, малтанхи шайра юлма çук. Акă пĕркун эпĕ Савельевпа калаçрăм. Пирĕн ĕмĕрте, тетĕп, мĕнле чаплă çамрăксем пулнă: Олег, Шура, Зоя, Матросов...

Савельев тăрать те мана çапла калать: «Олег вăхăтĕнче, Олег вырăнĕнче çуралнă пулсан — эпĕ те герой пулăттăм, Олег халь ман вăхăтра, ман вырăнта çуралас — вăл та ман пекех никам пĕлмен ятсăр çын пулатчĕ...» Ак, пыр та калаç эс унпала!

Çав Савельев сăмахĕнче тĕрĕсси те пур, çав вăхăтрах — пирĕн айăп та. Вĕсем пурте пысăка ĕмĕтленеççĕ, паттăрсем, геройсем, паллă çынсем пуласшăн. Хамăр та çапла вĕрентетпĕр. Тĕрĕс, ĕмĕтленччĕр. Вĕсем пысăк ĕçре çеç паттăрлăх кăтартма пулать, теççĕ. Çавăнпа аслă шкул çинчен ĕмĕтленеççĕ. Тĕрĕс, ĕмĕтленччĕр. Анчах пурте аслă шкула кĕме пултараймаççĕ-çке. Вăтам шкул хыççăн яла юлма хушатăн та — çав пысăк ĕмĕтлĕ, паттăр пулма шутланă çынна — пуçланать хайхи трагеди!

Акă мĕн: эпир вĕсен ĕмĕчĕсене кунта шкулта ытла вĕрсе хăпартса яратпăр. Çав вĕрсе хăпартнă ĕмĕт пурнăçланмассине кураççĕ те ачасем — пуçлаççĕ нăйкăшма!

Кунта эпир ытларах айăплă. Эпир, чăн та, ачасене аслă шкула кайма çеç вĕрентетпĕр.

Ачасем хăйсем халь çакна урăхларах ăнланма пуçла-

рĕç. Вĕсен кăмăл-шухăшĕ халь ак çакнашкал... Вĕренетĕн-и, çук-и — пурпĕр аслă шкула кĕрейместĕн... Пурпĕр ниçтах та каяймастăн. Мĕн хавхаланупа вĕренес, çав вĕренĕве пурнăç тĕллевĕнче (эпир вĕрсе хăпартнă тĕллевре) усă курма çук пулсан. Атя, алă сулас. Пурнăç мĕнле усрать пире — çавăн пек пурăнас...

Ачасен унта та кунта «ĕмĕт татăлать». Вĕсен чăн-чăн ĕмĕчĕ мар, çав эпир вĕрсе хăпартнă ĕмĕт... Ачасем вара çакна чăн-чăн ĕмĕт татăлни вырăнне йышăнаççĕ. Кунта эпир айăплă. Ытла асла çеç вĕрентетпĕр: шкулĕ аслă, çынĕ аслă, юратăвĕ аслă, ĕçĕ аслă. Ку, чăн та, аван-ха, анчах ахаль çын çинчен, ахаль ĕç çинчен, ахаль сăпайлă юрату çинчен каламастпăр эпир. Пурнăçри паттăрлăх çавсенче иккенне вĕрентместпĕр. Эсĕ калани тĕрĕс... Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн производствăна кайма халĕ ачасем психологи енчен пачах хатĕр мар, çавăнпа трагедилле йышăнаççĕ те вĕсем пурнăçа — пурнăçĕ хăйсем малтан мĕнле ăнланни-ĕмĕтленнинчен кăшт пăрăнсанах. Пирĕн умри чи пысăк задача вăл халь — ачасене вăтам шкул хыççăн производствăна кайма психологи енĕпе «духовнă» хатĕрлесе çитересси. Шкул программине çĕнĕлле пăхса тухса улăштармалла...

Çапла... Ну, юрĕ,— кун пирки пирĕн пĕтĕм шкул йышĕпе канашласа пăхас пулать; пĕтĕм шкул йышĕпе кăна та мар, ку вăл патшалăх ыйтăвĕ. Халĕ пирĕн, Геннадий Васильевич, урăххи çинчен шухăшламалла. Хĕрача шăпи çинчен...

...Каç пулмасăрах, çил-тăмана пула, пӳлĕм тĕксĕмленсе килнĕрен Вера Федоровна включателе пусрĕ те, пӳлĕм çуталса кайрĕ. Хĕрлĕрех тĕслĕ электричество çутинче студентăн сăнпичĕ айăпа кĕнĕ пĕчĕк ача сăнĕ пек курăнчĕ. Вăл хăйне кунта, чăн та, айăплă туйрĕ.

Вера Федоровна ассăн сывласа ячĕ те пĕр хушă чĕнтĕрлĕ пысăк чӳрече çинелле пăхса ларчĕ. Унăн куçĕ чӳрече çине мар, таçта шалалла, ăстăнра вĕлтлетсе илнĕ пĕрпĕр шухăш еннелле кайрĕ пулас.

— Паян шкула пынă-и вăл?— ыйтрĕ учительница сасартăк, унтан хăвăрт кĕнеке шкапĕ патне утрĕ.— Пыман,— терĕ вăл хăех.— Эсĕ те темиçе кун курăнмарăн тет-и?

Вера Федоровна шкапран ӳкерчĕклĕ конверт илсе Гена умне пычĕ.

— Çап-çамрăк хĕрача, çав тери пуян шухăш-туйăмлăскер... Геннадий Васильевич, пĕлетĕр-и, мĕн пулса иртет

халь çав хĕрача чĕринче? Мĕнле-ши халь ун кăмăл сĕрелти?

Вера Федоровна аллинчи çырăвне студента кăтартрĕ.

— Акă эп унăн малтанхи класс пуçлăхĕнчен хам çырнă çыру пирки хыпар илтĕм,— терĕ вăл.— Эс çакна вула.

«Вăл çав тери мăн кăмăллă, мăн ĕмĕтлĕ хĕрача,— вуларĕ Гена çырăвĕн хĕрлĕ кăранташпа туртнă тĕлти йĕркисене.— Пули-пулми кӳрентерни, ятлани — хĕрачана пăсса ярать çеç. Кӳрентерсен, вăл хăйне хăй те тем туса хурĕ...»

Вера Федоровна Гена аллинчи çырăва илчĕ те сĕтел çине кайса хучĕ, унтан чарăнса тăмасăрах алăк патнелле утрĕ, пăтаран Генăн пальтоне вĕçертсе илчĕ, çавăн пекех хăвăрт каялла килсе, ăна икĕ алăпа саркаласа тытрĕ те Гена умĕнче чарăнчĕ:

— Тăхăнăр!— терĕ вăл хыттăнах.— Тăхăнăр та пĕр самант çухатмасăр, ниçталла пăрăнмасăр Голубева патне вĕçтерĕр. Ăнлантăр-и?

— Ăнлантăм.

— Шкулти шăв-шав пирки ан пăшăрханăр. Эпĕ унта хам калаçса пăхăп.

...Студент хыççăн алăк шалтлатса юлсан, тепĕр пӳлĕмрен пĕчĕк ача макăрни илтĕнчĕ. Вера Федоровна, ăна илтмен пекех васкаса, сĕтел патне пычĕ те телефон трубки тытрĕ.

— Шкул!— илтĕнчĕ пӳлĕмре унăн темĕнле шанăç паракан сасси.

ВУНСАККĂРМĔШ СЫПĂК

Гена райцентртан тухса Вера Федоровнăсен ялнелле утнă чухне Вальăсен килĕнче акă мĕн пулса иртрĕ...

...Тамара кăнтăрлаччен чăлантан пĕр сас-чĕв те памарĕ. Кăнтăрла иртнĕ тĕле вăл сасартăк кăшкăрса ярса чăлантан сиксе тухрĕ. Çӳçĕ унăн сапаланнă, тăмаланнă, куçĕ ялкăшса çунать.

Валя ăна курсан, хăраса, каялла чакса тăчĕ.

— Мĕн пулнă сана?— терĕ вăл сехри хăпнипе аран-аран.

Чăн та, мĕн пулчĕ-ха капла? Мĕнрен хăрать-ха Тамара çавнашкалах? Тĕлĕкрен-и? Çапла, вăл тин çеç хăрушă-хăрушă тĕлĕк курчĕ.

...Ку тĕлĕкре çын та, чĕрчун та, никам та çук. Тĕлĕкĕ пачах сăнарсăрскер, хăй хăрушлăх. Анчах ăна ниепле те манма çук. Çак тĕлĕке Тамара виçĕмçул ярмаркăран таврăннă хыççăн пĕрре тĕлленипĕччĕ. Ун чухне те çакăн пекех хăрушăччĕ... Тамара çакна çеç астăвать. Çуллаччĕ. Тамара пӳртре пĕччен сивĕ кăмака çинче выртатчĕ. (Темĕнле майпа çулла кăмака çине хăпарнă вара.) Кĕтӳ яла кĕменччĕ-ха. Тамара сывăрнă пулмалла, те ăна кăтăш çеç пуснă. Куç умĕнче темĕнле пĕчĕк япала, ним кӳлепесĕрскер, çивĕчскер, чуна ыраттараканскер, ылмашăнсаулшăнса, ӳсет, темĕнле тĕрĕс калăп, хăмпă пек кӳмеркке илме хăтланса хăпарать, анчах хăпараймасть, кирек те мĕне пĕлтерекен япала пулаймасăрах пĕтсе ларать, хăмпăланма тытăнать те çухалать. Çав пĕтсе ларнă вăхăтра чунра калама çук хăрушă пулса каять. Çав пĕчĕк япала хăпарайманшăн хăрушă. Куншăн Тамара айăплă пек. Тамара хăйне хушнă ĕçе туманнипе-и е урăх сăлтавпа — амăшĕ вилсе кайнă пек...

Тамара ун чухне те паянхи пекех, сивĕ тара ӳксе, хăрушшăн кăшкăрса ярса сиксе тăчĕ те амăшĕ патне ыткăнчĕ. «Анне!—çухăрса ячĕ вăл.— Хăрушă мана!» Амăшĕ те хăраса ӳкрĕ: «Уй-уй,— терĕ вăл, ачана хăй çумне чăмăртаса.— Мĕн пулчĕ? Мĕн пулчĕ?..»

Тамара пĕр сăмах та çавăрса калаймарĕ. Пĕр уйăха яхăн ун чухне Тамара çав хăрушлăх тыткăнĕнчен хăтăлаймарĕ. Вăл çывăрма та, тӳшек-минтертен те хăрарĕ, каçсерен асăха-асăха сиксе тăракан пулчĕ. Кайран чылайран та çав тĕлĕк тепре курăнасран, çав тĕлĕк аса килесрен сехĕрленчĕ. Ăна тепре курас мар тесе—тем тума та хатĕрччĕ... Виççĕри Тамарăна та, тен, çĕр çурринче вăрмана тухса кайма, куçа-куçăн юмахри аçтахапа тăма кун чухлĕ хăрушă марччĕ ĕнтĕ. Кун пек хăрушлăх, тен, пурнăçра çук та. Ку, тен, ача ăс-хакăлĕ тĕлĕкре вышкайсăр ӳстерсе янă хăрушлăх, çĕр çинче пачах тĕл пулманскер, пулнă?

Тен, Тамара ун чухне ăсран туха пуçланă. Çавăн палли пулнă-тăр вăл. Тен, чирленĕ?

Тамара çав хăрушă тĕлĕке акă халĕ паян тепре курчĕ. Çавăнпа кăшкăрса вăранса кайрĕ вăл.

Тамара çавна аса илнĕ май халь хăй, чăн та, сывă маррине туйрĕ. Пуç та ыратать, шăмшак çӳçентерет, çав вăхăтрах хул-çурăм такам чăмласа тăкнă пек сурать, пĕтĕм кĕлеткере ĕшенӳ, халсăрлăх, ирĕксĕрлĕх сисĕнет.

Çапла выртнă май Тамарăна каллех урăм-сурăм кăтăш

пусрĕ. Хальхинче вăл чăнлă-ыйхăллă витĕр çуллахи яла курчĕ. Кăнтăрла... Апла пулин те, хĕвел тĕттĕмленес чухнехи пек тĕттĕм. Таçтан вăрман хĕрринчен пир çапнă пек сасăсем илтĕнеççĕ: «Тăпăр-тăпăр-тăп! Тăпăр-тăпăр-тăп!»

...Тамара йынăшса ячĕ те сиксе тăчĕ, анчах самантрах тăна кĕчĕ: «Валя каллех хăраса ӳксен?» Тамара уйăх çапнă çын пек йăпшăнса пуçне чăлантан кăларчĕ те саланса кайнă куçпа Валя çине пăхрĕ.

Валя, тумланса тăнăскер, сехре хăпнипе пулас, шиклĕн чăлан енне пăхать, Тамара пуçне курсан, вăл каллех шарт сикрĕ те тĕпелелле тарма тăчĕ.

— Валя,— терĕ Тамара шăппăн.— Эпĕ мунча кĕме каятăп.

«Эсĕ ĕнерех каясшăнччĕ-çке»,—тесшĕнччĕ пулас Валя, анчах, сехĕрленсе кăвакарсах кайнăскер, ним калама аптрарĕ.

— Эсĕ йӳçĕтнĕ панулми çитермерĕн-çке мана,— терĕ Тамара каллех.

— Ĕнертенпех вăл пăлтăрта ларать.

— Пăлтăрта? Ма каламастăн эппин? Эпĕ ĕнертенпех панулми кĕтсе выртатăп. Мунча кĕме те çавăнпа каяймарăм.

«Ăс вĕçнĕ!»— вĕлтлетрĕ Валя пуçĕнче.

Тамара каллех чăлана кĕчĕ, уринчи чăлхине хывса, çараллах пушмак тăхăнчĕ, кофтине хыврĕ те хăйĕн çӳхе пальтоне тăхăнчĕ, çĕрçĕн тутăрне çыхрĕ.

— Панулми ăçта?— илтĕнчĕ самантран ун калама çук пусăраннă сасси.

— Эсĕ çиесшĕн-и-мĕн?

— Çук, çук, çук!— каласа пĕтерме памарĕ Тамара.— Эпĕ мунчара ăшăтса çиетĕп.

Тепĕр самантран Тамара урама тухрĕ.

Тулта сивĕ çатăр! тытать. Райцентрти «Парикмахерски» тесе çырса çапнă çурт тĕлне çитнĕ çĕре Тамарăн шăлĕсем хире-хирĕç шаккама та тытăнчĕç. Кунта хĕрача кăшт тытăнса тăчĕ. Унăн сăнпитĕнче пăшăрханни мар, тĕлĕнни палăрчĕ, вăл темшĕн йăл кулăпа çиçсе илчĕ.

Шалта ахаль çынсенчен никам та пулмарĕ. Ĕç халачĕ тăхăннă пĕр хĕрарăм çеç такамăн хĕрлĕ пăру çăмĕ пек çӳçне шăпăрпа алăк патнелле шăлать. Хĕрарăм сăмах чĕнмесĕрех пысăк тĕкĕр умĕнчи хыçлă тенкел еннелле пуçпа сулса кăтартрĕ.

— Сана мĕн? Кăтралатмалла-и?— илтĕнчĕ самантран унăн аçатуккан пек хулăн сасси. Унăн хускатса янă ма-

шин евĕр выляса тăракан пӳрнисем хушшинче хачă касма пуçличченех вĕçĕмсĕр чăкăлтаттарчĕ. Унăн ыйтăвĕ темшĕн чуна вĕчĕрхентерсе, тарăхтарса ячĕ.

— Шакла!— терĕ хĕрача çилĕллĕн.

Хĕрарăм улшу илтрĕм терĕ пулас.

— Мĕнле?

— Шакла!

— Шакла кирлĕ пулсан — шакла! Мĕн кăшкăрмалли пур уншăн? Шакла та пĕлетпĕр.

...Тамара шăлне çыртса, куçне хупса ларчĕ. Хачă малтан çӳлелле хăпарма хăймасăр ĕнсе хыçĕпе, хăлха тавра тăнлавсемпе çӳрерĕ, кайран тин сивĕ тимĕр пуç тӳпи урлă ерипе шуса каçрĕ, унтан çине-çинех хăпарчĕ, тăнлавсене те шăнтрĕ, вĕçĕмсĕр чакăлтатрĕ. Урайне, чĕрçи çине, ункăллăн-ункăллăн явăнса, ука пек çӳç юхрĕ.

Самантран Тамара, ерипе те мăнкăмăллăн, аллисене теветлĕн сулласа, мунчана утрĕ.

Мунча маччинчен калама çук шултра тумламсем çакăнса тăраççĕ. Кун пек тумламсене Тамара халиччен нихçан та курман. Вĕсем çара пуç çине татăлса ансан — кăвар ӳкнĕнех вĕтелентерсе пĕçертсе илет, анчах Тамарăна вĕсем пачах ыраттармарĕç — тĕлĕнмелле — темшĕн чун хĕпĕртерĕ те... Сăмсана çурса каякан типĕ вĕри пăс та, мунча чул шăршиллĕскер, темшĕн савăнтарчĕ.

Тамара юлашки хут вăйлăн тарласа сивĕ-сивĕ шыв хăй тăрăххăн ячĕ те — тухрĕ. Вăл типшĕнмесĕрех тумланчĕ. Çара ура çине пушмак тăхăнчĕ. Ăшăнса сарăлнă çара ура пушмака тăвăррăн кĕчĕ, вĕри шывра нумай тытнипе картлăн-картлăн пĕрĕнсе ыратакан пулса ларнă пӳрнесем пушмак тынасене аран-аран йăлмакларĕç.

...Цемент урай та, чул картлашка та пушмак тĕпĕ айĕнче темĕнле чуна хайăрттарса кăштăртатрĕ. Ун çине йăшнă мунча чул е акшар хăйăрĕ тăкăннă пулас. Кун пек чуна хайăрттаракан сасă тепĕр чух тутăхнă витрене, питлĕхе е кантăка тăпраллă типĕ ал чĕрнипе асăрхамасăр чĕртерсе илсен пулать. Ун чухне чуна темĕнле сивĕ, чĕрне тăрăх хăпарса, çӳçентерсе илет.

...Çакăн хыççăнах Тамара чĕрине тепĕр аван мар туйăм, ĕнер Валя çине пăхса илнĕ чухнехи пек йĕклĕскер — çавăрса илчĕ. Анчах паян вăл çынран мар, пуринчен ытла хăйĕнчен хăй йĕкленчĕ.

...Тамара кĕсъерен панулми кăларчĕ, ăна, шăннăскерне, качăртаттарса çие пуçларĕ. Шăлсене сивĕ тиврĕ. Вăл тата икĕ панулми çисе ячĕ. Кайран шăл тунисем шанса

кайрĕç. Сивĕ çил, пальто аркине туласа, пĕтĕм кĕлеткене çатăрласа тытрĕ. Шăлсем темĕнле тытса чарма хăтлансан та — тĕлме-тĕл лекмерĕç, чĕркуççи чĕтрерĕ. Ура тунине сивĕ чĕпĕтрĕ, çурăм çине шуса хăпарчĕ, кайран ăшран тем касса шăнта пуçларĕ.

Тамара çулпа утрĕ. Ăна хыçалтан пĕр трактор çеç хăваласа çитсе иртсе кайрĕ. Тракторĕ пуçри пĕтĕм шухăша пăтратса, пуç мимине кисретсе кĕрлерĕ.

Тамарăна хирĕç çулпа икĕ çын тухрĕ. Пĕри çунашка туртнă, тепри — пуш алăпах. Тамара, урăх çул çине пăрăнас мар-и тесе, пĕр самант шухăша кайса чарăнчĕ те, мĕнпур нервисене хытарса, хăюллăн хирĕç кайрĕ. «Кирек кам пултăр!.. Анне пулсан та — çавах».

Хирĕç килекен çынсемпе танлашсан, Тамарăн ирĕксĕрех куçĕсем кулса илчĕç. Каллех Вова-и? Чăнах çавă! Амаçури амăшĕ ăна кĕпе çума çырмана илсе каять иккен. Хăй вара, уксахскер, танлăн уксахласа, каçăрăлса, пуш алăпах хыçалтан пырать. Каччă хĕрача тĕлĕнчен яланхи пекех ун çине пач куç уçса пăхмасăр васкаса иртрĕ, çав вăхăтрах хĕрелсе кайрĕ, ахăртнех, хăй хĕрарăм ĕçне тунă пирки хĕр умĕнче именчĕ-ши. Амаçури вара чарăнсах Тамарăпа калаçа пуçларĕ.

— Кур,—терĕ вăл, Вова çине пуçĕпе сулса кăтартса.— Лаши епле чăхăмлă ман... Ĕнер табак туртнă çав... Пахчана тухрăм та — пăхатăп...

Тамара тарăхса кайрĕ, варт пăрăнчĕ те малалла утрĕ.

Вăйлă çил таçтан шкул енчи сăрт çинчен вĕрет. Унталла пуçа пăрсанах куçран куççуль вĕртерсе кăларать. Тамара чĕтрекен аллисемпе Вальăсен вырăсла хапхине уçрĕ. Пӳрте кĕрсенех пуç ыратса килчĕ, хĕсрĕ. Вар хытрĕ, ăш тулса килчĕ. Кĕлетке вара тытамак тытнă пек силлекен чĕтреве ерчĕ.

...Вăл чăлана кĕрсен тӳрех хăйĕн вырăнĕ çине тăсăлса анчĕ, Валя тем каланине те илтмерĕ.

Тепĕр пĕр-ик сехетрен Валя чăланта Тамарăн çамкине тытса пăхрĕ те — хĕрачан çамки вут пек пĕçернине асăрхарĕ, вара кӳрше тухса чупрĕ.

Кайран Тамара хăйне такамсем хупăрласа илнине сисрĕ, калаçкаланине илтрĕ... Амăшĕпе йăмăкĕн сасси те пурччĕ. Унтан ăна таçта çĕклесе кайрĕç. Вара йăлтах пăтрашăнса пĕтрĕ. Тĕлĕклĕ-мĕнлĕ витĕр такам кĕчĕ, такам такама вăрçрĕ. Геннадий Васильевич сасси те илтĕннĕ пек туйăнчĕ. Анчах Тамара амăшĕ ăна темшĕн вăрçать, турчкапа хăвалать.

ВУНТАХХАРМӖШ СЫПĂК

Каç пулса килет. Куçпуç курми çил-тăман ахăрать. Пилĕк-ултă утăмри те ним курăнмасть. Пĕр çын, чĕркуççи таран юр ашса, уй хапхинчен тухрĕ те çывăхри ял еннелле чупрĕ.

Çынни пĕтĕмпех юр айне пулнипе аякран шур упа пек курăнать. Çывăхран пăхас пулсан — çине вăл чĕркуççи те витеймен пиншак, урине çăматă, пуçне хăлхаллă çĕлĕк тăхăннă. Çĕлĕк çамки те, çăматти те пăрланса ларнă.

Çын урлă хӳнĕ юр кĕрчĕсем çине çăмăллăн касса кĕрет. Çакăнтан ĕнтĕ вăл çамрăк та вăйлине чухлама пулать.

Ун тавра, çуллахи шăрăх кун тарлă ута сырăннă пăвансем пек, шултра юр пĕрчисем явăнаççĕ, вĕсем сăхаççĕ, ыраттараççĕ... Çамрăк çын раштав сиввине те уямасть: вăл çĕлĕк хăлхине те антарман, хăй çавах чăм тара ӳкнĕ. «Часрах... часрах!..»— пăшăлтатать вăл.

Çынваскать, чупать. Хирĕç вĕрекен çил, сывлама памасăр, антăхтарса ярать.

Çамрăк çын кĕçех яла пырса кĕчĕ. Хирĕç пулакапсем ăпа тĕлĕнсе пăха-пăха ăсатрĕç.

Ялта хăйă çутисем те мĕлтлеткелеççĕ.

Çамрăк çын турпас витнĕ пӳрт тĕлне çитрĕ те ăшне путнă вĕрлĕк алăка тĕртрĕ, кил хушшине хирĕнсе кĕчĕ, çепĕк пусми çине чупса хăпарчĕ, унтан вăл, йăваласа тунă кĕлетке майлах юрланса пĕтнĕскер, çапă шăпăрпа урине шăлкаларĕ, тумтирне силлерĕ. Пăрçаланнă пăр пĕрчисем шакăрча пек шăкăртатса илчĕç. Çамрăк çын, шăпăра пăрахса, алăк хăлăпĕнчен ярса тытрĕ.

Ăшă пӳртре виç-тăват хĕрарăм виле çинчи пек шăпăрт тăраççĕ. Ахлатса та хашлатса сывлаççĕ. Алăк патĕнчи вырăн çинче, симĕс çăм утиялпа кăкăр таран витĕнсе, пĕр ача — те арçын ача, те хĕрача выртать. Куçĕ унăн кăвак, куç харши çинçен аванса тăрать. Тăсăкрах пичĕ шуранка. Уçă мар кăкăрĕ йывăррăн та тытăнчăклăн çĕкленсе анать. Хушăн-хушăн вăл пĕтĕм кĕлеткипе туртăнса ӳсĕрет· Ӳсĕрнĕ чухне унăн пуçĕ минтер çинче сиккелесе илет те... ку вăл пĕр вуннилĕк-вунултă çулсенчи хĕрача пулни палăрать, анчах шакла кастарнă çӳçĕ пиепле те «хĕрача» тени çумне çыпăçмасть. Хĕрача пуçĕ вĕçĕнче ларакан пĕр аллă çулсенчи типшĕм хĕрарăм шăппăн ĕсĕклесе илет.

Çамрăк çын кĕрсен, хĕрарăм йĕме чарăнчĕ. Пӳртре тата шăпрах пулса тăчĕ. Çамрăк çын çĕлĕкне хыврĕ те выртакан хĕрача çине куç ывăтрĕ, хальхинче вăл пĕр çирĕм ик-çирĕм виç çулсенчи каччă пулни курăнчĕ.

Вăл пӳрте кĕрсен тепĕр минутран тин сывлăх сунчĕ. Ăна хирĕç никам та çăвар уçмарĕ. Çамрăк çын вара иквиçĕ утăм мала ярса пусрĕ те хĕрача койки умĕнче чарăнчĕ.

Сасартăк пурте калаçа пуçларĕç.

— Акă вăл килчĕ!

— Акă вăл!

Койка пуçĕнчи хĕрарăм, çамрăк çынна чарăлнă куçĕпе шăтарас пек пăхса, ерипе ура çине тăчĕ. Пĕр хушă вăл çапла пăхнипех хытса тăчĕ, унтан тем аса илнĕ пек тĕпелелле вирхĕнчĕ. Тĕпелтен вăл турчка йăтса тухрĕ. Хĕрарăм турчкине икĕ аллипе çатăрласа тытрĕ те çамрăк çын çине сулса ячĕ. Çамрăк çын ăна хăрах аллипе хăвăрт тытса ĕлкĕрчĕ.

— Кай тухса!.. Кай!—кăшкăрса ячĕ хĕрарăм.— Пуçна çапса çуратăп!

Çамрăк çын турчкана аллинчен ерипе вĕçертрĕ.

— Кала, мĕн турăр ман ачана?! Кала!— тилĕрсе кайрĕ хĕрарăм. Турчкине вăл пĕрехмай çамрăк çын умĕнче силлерĕ, сасси унăн хаярланнăçемĕн хаярланса пычĕ.

Хĕрарăм, тен, татах та кăшкăратчĕ-и, анчах вырăн çинчи хĕрача тип ӳслĕкпе чыхăнса ӳсĕрме тытăнчĕ. Çак шăв-шав ăна питĕ асаплантарни сисĕнчĕ. Çакна кура хĕрарăм шăпланчĕ те, çиллине шăнарса, куçĕпе хăй çав-çавах çамрăк çынна çисе, ӳпкелешсе макăра пуçларĕ:

— Ма ятăм-ши пĕрех хут шкулне! Хăйĕн пуçне çиме вĕрентеççĕ ав унта...

Çамрăк çын, тем калама хатĕрленсе, паçăрхи пекех ним хускалмасăр малтан хĕрарăм çине, унтан хĕрача çине пăхса тăчĕ.

Тӳшек çинчи хĕрача ăшĕ капланса тухас пек ӳсĕре пуçларĕ.

Çамрăк çын, хăйне кунта никам та иртсе ларма сĕнес çуккине кура, хăех малалла сĕтел умне иртсе ларчĕ, кĕсъерен сăмса тутри кăларса, унпа тарласа кайнă çамкине шăлса илчĕ; çакăн хыççăн вăл, хăйне мĕн-мĕн каласа вăрçнине пурне те чăтма е хăйĕнпе кирек мĕн тăвас пулсан та йăлтах тӳсме хатĕр çын пек, пăхăнуллăн кил хуçи еннелле çаврăнчĕ, кил хуçи макăрса чарăнасса кĕтрĕ, анчах куна кĕтсе илейменнипе асăрханса сăмах хушрĕ.

— Тархасшăн, лăпланăр, инке,— терĕ вăл хуллен. Пӳртри çынсем (кил хуçисĕр пуçне тепĕр икĕ хĕрарăмпа хĕрупраç) ун çинелле пăхрĕç, вăл мĕн калассине кăсăкланса, чунтанах итлеме хатĕрленчĕç. Кил хуçи те, чĕтренe-чĕтрене хӳхлекенскер, чĕтреме чарăнса, ерипе çамрăк çын еннелле çаврăнчĕ. Хăй çаврăннăçемĕн унăн куçĕ те чарăлса, сăнĕ те тискерленсе пычĕ.

— Эс... тухса кайман-и-ха халь те?!— чышкине чăмăрласа тытрĕ вăл. Çак вăхăтра пĕр хĕрарăмĕ ăна чавсаран тĕртрĕ:

— Итлесе пăхсам ĕнтĕ — мĕн калать.

Кил хуçи сăнпуçне тискерлетсе пăрахнипех пĕр вырăнта хытса тăчĕ.

— Эсир шкула, мана вăрçатăр,— терĕ çамрăк çын.— Эпĕ хам шкул çынни, учитель пулма хатĕрленекен пулнăран айăплă ĕнтĕ... Анчах кунта шкул çеç айăплă--ши? Килйыш айăпĕ пачах çук тетĕр-и? Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, сирĕн килйышра вĕрентӳ енĕ тахçантанпах тĕрĕс мар йĕркеленсе кайнă... Кирлĕ-кирлĕ маршăнах ятласси, ним сăлтавсăрах тенĕ пек вăрçса е çапкаласа илесси, йăпатас чух кӳрентересси — сирĕн йăлана кĕнĕ йĕркесем. Сирĕн хĕрĕр тăван килтех ют ача пек ӳснĕ...

— Эсĕ, эсĕ... мана тăван килтех ятласа хăртса хăварасшăн-и? Ĕнтĕ халь эпĕ айăплă. Пăхса ӳстерсе кур-ха эсĕ пĕччен пуççăн пӳрт тулли ача-пăча!.. «Шкул! Шкул!»— тетĕр. Шкул мĕнпе пулăшнă мана?.. Мĕн ыррине вĕрентрĕр эсир ăна унта? Çӳç кăтралатма-и? Клуба чупма? Каччăсемпе явăçма? Амăш ирĕкĕнчен тухма? Е хăйĕн пуçне çиме вĕрентрĕр-и?..

Çамрăк çын куç харшине те сиктермерĕ.

— Ăна никам та апла вĕрентмен,— терĕ вăл лăпкăн.— Шкул та айăплă пулĕ, ыттисем те... Сывă кăмăллă, ăслă-тăнлă, йĕркеллĕ çамрăк ăрăва пăхса ӳстерессипирĕн — шкулăн, килйышăн, ялйышăн — пĕрле тумалли ĕç. Кунта пĕрне-пĕри турчкапа хăвалани ним усă та памасть. Эпир килĕштерсе ĕçлеймерĕмĕр... Анчах халĕ кая мар-ха. Чи хăрушши çапах та пулман. Ытлашши нимех те пулман... Малашне килĕштерсе ĕçлесен — йăнăша тӳрлетме пултаратпăр.

Çамрăк çын, калама чарăнса, каллех пӳртри хĕрарăмсем çине куç ывăтрĕ. Лешсем, те унăн хăюлăхĕнчен тĕлĕнсе, те ун чăрсăр сăмахĕпе килĕшмесĕр, кĕç-вĕç тытăçса ӳкме хатĕрленнĕн, шăтарас пек пăхса тăчĕç.

Учительсен пӳлӗмӗнче ирхи шăв-шав. Пурте ĕçлĕ: хыпаланаççĕ, калаçаççĕ, ыйтаççĕ. Пĕри кĕнеке-журнал йăтса класа тухса каять. Тепри кĕпçелесе тытнă хутне салатса пăхать. Студент-практикантсем урок конспекчĕсене тĕрĕслеттереççĕ, ыттисем кĕнеке çине пуçне чикнĕ.

Пĕр Генăн çеç нимĕнле ĕç те çук тейĕн. Пĕр вăл çеç кĕтесри тенкел çинче ним тумасăрах ларать.

Ăна, пуçне шурă тутăр татăкĕпе çыхнăскерне, никам та асăрхамарĕ. Юлташсенчен те никам «Пуçна мĕн турăн?» е «Мĕн тăлăххăн ларатăн?» тесе те сăмах хушмарĕ кăна мар, пурте унран пăрăнарах тăни, куçĕсене тартни сисĕнчĕ. Коршунова чухлĕ Коршунова та, Гена ун çумĕнчи тенкел çине ларсан, тӳрех урăх вырăна тăрса кайрĕ. Литература методикине вĕрентекен Эмма Давыдовна, институтран практикантсен ĕçĕпе паллашма килнĕскер, ытти студентсен конспекчĕсене ыйтса илсех тĕрĕслерĕ пулсан, Генăран вара — унăн халĕ урок памаллине пăхмасăрах — план та ыйтмарĕ. Кам вăл, мĕн тума килсе ларнă вăл кунта, пур-и ун ĕçĕ, çук-и?

Санран никам ним ыйтакан, сана усал сунмасăр ятлакан çук пулсан, ку татах та йывăр иккен çĕр çинче! Уроксем умĕнхи çав вуниилĕк-çирĕм минут Генăшăн ĕмĕр тăршшĕн туйăнчĕ. Методист та шкулта çук паян. Вăл, юмарт чĕлхеллĕскер, Генăна кирек те мĕншĕн хăтăрса илетчех пулĕ, ку авантарахчĕ те-и. Хăвăн таврашăнтисене ним чухлĕ те кирлĕ маррине туйса, вĕсемпе хутшăнассинчен, çитменнине, юлташсем хушшинче çапла хисепсĕр ларассинчен йывăрри мĕн пур-ши тата?

Гена, малтанхи урока ларма пĕр пилĕк минут юлсан, Эмма Давыдовна умне пычĕ те хăйĕн урок планне пăхса тухма сĕнчĕ.

— Урок конспекчĕ ăçта?— ыйтрĕ Эмма Давыдовна тӳрех, унтан, Гена тепĕр тетрадь тăсса парсан, пит-куçне пĕркелерĕ:— Учительница алă пуснă-и?

— Пуснă.

— Эпĕ пусмастăп,— Эмма Давыдовна Генăн урок конспектне сĕтел çине хучĕ, вара кăшт тăхтарĕ те студентăн шурă татăкпа çыхнă пуçĕ çине тĕллерĕ:— Çакăн пек питкуçпа ачасен куçĕ умне курăннă пултăр сана! Пит пиççи!..

...Гена учительсен пӳлӗмӗнче пĕчченех ларса юлчĕ. Иккĕмĕш урока кайнă чухне çеç Феня, пур ăçтиçукшăн та

Генӑна чӑрмантараканскер (юлташӗсен сӑмахӗ тӑрӑх, Генӑна вӑрттӑн саваканскер), йӑпӑртлӑха ун ҫумне пырса ларса, хӑлхаран ҫапла пӑшӑлтатса хӑварчӗ:

— Эс, леш кашкӑр юмаххинчи пек, улӑм ури ҫунса шатӑртатнӑҫемӗн шаларах кӗретӗн иккен...

...Аслӑ переменӑра учительсен пӳлӗмне йӑлтах сӑнтан ӳкнӗ директор вашт кӗрсе тӑчӗ. Вӑл сӗтел умне иртрӗ те сылтӑм аллипе Генӑна тӗллерӗ, пуҫне Эмма Давыдовна енне пӑрчӗ.

— Ку сирӗн студентӑр-и?— ыйтрӗ вӑл, пат татса.

Директор хӑрах аллине Гена ҫине тӗлленипех хурав кӗтсе тӑчӗ.

— Пирӗн-ҫке.

— Эмма Давыдовна,— терӗ директор малтанхи пекех хытса тӑнӑ май.— Илсе кайӑр ӑна эсир хальтерех пирӗн шкултан! Эп ӑна кунта урӑх пӗр сехет те тӳсме пултараймастӑп!

Эмма Давыдовна, хыткан та шуранка хӗрарӑм, хӑй тем айӑпа кӗнӗ пек пулса кайрӗ.

Пӳлӗмре пӗр вӑхӑт сарӑмсӑр кӗххӗмлетсе илме те хӑймарӗҫ. Гена ҫине вара хӑшӗсем тӗлӗнсе, теприсем хута кӗнӗн те кӑшт хӗрхенсе, виҫҫӗмӗшӗсем, тахҫанах ҫапла кирлӗ тенӗ евӗр, ҫӗнтерӳллӗн пӑхса тӑчӗҫ.

Генӑн пит-куҫӗ ҫеҫ айӑпсӑррӑн туртӑнса илчӗ. Хура куҫ харшисем йывӑррӑн ҫӗкленсе анчӗҫ, сӑмса ҫунаттисем хускалчӗҫ. Вӑрӑм куҫ тӗкӗсем айӗпе икӗ хура куҫ кӑтӑрса кайнӑ директор ҫине мӑчлатмасӑр пӑхрӗ.

Директор, пӳлӗмре каллӗ-маллӗ уткаласа, эпир пурте пӗлекен япаласене хӑйне май ӑнлантарса калама тытӑнчӗ (пӳлӗмрисем, ӑна уткалама ирӗк пултӑр тесе, пӑрӑна-пӑрӑна тӑчӗҫ е, стена ҫумӗнчи тенкелсем ҫине ларса, вырӑн пачӗҫ):

— Ачан халлӗхе ӑна тивӗҫ мар туйӑмӗсем, ытла ир ирӗксӗрлесе вӑратнӑскерсем, унӑн пуҫӗнчи вӗренӳ шухӑшне йӑлтах пӗтерсе хураҫҫӗ. Унӑн халь ҫавӑн пек вӑхӑт. Халь вӑл ҫилеке пек: ҫил ӑҫтан — унталла. Мӑннисене курать те—унӑп та ҫавна туса пӑхас килет. Лешӗ ҫине тӑраканскер те мӑйракаллӑ мар пулсан — кӑмӑл туртӑмӗ ҫук ҫӗртенех каять уппа! Хирӗҫлеме те хӑяймасть! Сирӗн студентӑр ухмах мар: пӗлет хӑш шывра мӗн пулли кӗнине. Хӗрачан вӑхӑтлӑх йӑнӑшӗсемпе усӑ курать. Ун пек ҫын ҫинчен: чун кӗриччен ӑс кӗнӗ, теҫҫӗ. Эпӗ куна малтан юсама пулать пулӗ тенӗччӗ, ҫавӑппа калаҫса пӑхма шутларӑм та — анчах уппа йӗркеллӗ калаҫма та ҫук.

Вăл шкул тытăмĕсем, программисем, темисем çине кĕрсе кайрĕ. Хĕрачана вăл ку тапхăрччен ĕнтĕ ахрат çырминех илсе çитернĕ...

Директор — кам та пулин çăвар уçса хута кĕрессе кĕтнĕ пек — кăшт тăхтаса тăчĕ те, пурте шăпăрт ларнине курса, хăйĕн шухăшне нимпе çыхăнтармасăрах тăсрĕ.

— Туйăмсем вĕсем хамăртан килмен, алăра тытма çук япала мар,— терĕ вăл малалла,— хăйсене хăйсем ирĕке янă, хăйсемпе кĕрешме чун вăйĕ çитерейменсем хевтесĕр, мехелсĕр çынсем çеç, «юрату пек туйăмсем хамăртан килмен асамлă япала» текен «теори» маччаран туртса кăларса, хăйсен чун вăйсăрлăхне хӳтĕлеме пăхаççĕ. Хамăн нервăсене пушă ярсан, кирлех пулсан — эпĕ те хĕрĕх пиллĕкре çичĕ хут юратса пăрахса çичĕ хут килйышран уйрăлма пултаратăп. Анчах эпĕ апла тумастăп, мĕншĕн тесен ман чун вăйĕ пур-ха хама аллăмра тытмалăх, ăстăн пур-ха килйыш чысăмне упрамалăх. Геннадий Васильевичăн тăна кĕме вăхăт· Халь ĕнтĕ вунпиллĕкри ача мар. Вунпиллĕкри ачана çеç хăйĕн туйăм-туртăмĕсене çĕнме тахат çитерейменшĕн каçарма пулать. Вăйлă çынна ун чухне те, паллах,туйăмсем ертсе каймаççĕ, хăй вăл туйăмсене йĕркелесе хăйне май ертсе пырать. Учителĕн тата вăйлăрах пулмалла. Вăйлă çынна çитменлĕхшĕн нихçан та каçармаççĕ. Унăн хăйĕн ыттисене тӳрĕ çул кăтартмалла. Пирĕн пур — Геннадий Васильевич хĕршĕн янахсем тăрăх кĕрсе каять! Арлан тăпри чавса кăларать! Ак ĕнтĕ халь пĕтĕм шкул ятне вараларĕ. Çĕртрĕ учитель ятне! Намăс! Питне кĕççе çĕлемелле! Ав, курăр, çамкасем епле унăн...

Гена вĕçне çити итлесе лармарĕ, пиншакĕпе çĕлĕкне илчĕ те, ерипе тумланса, учительсен пӳлĕмĕнчен тухрĕ, ăна никам та чарса тăмарĕ.

Шкул картлашки çинче вăл хăйне такам пикенсех ятран чĕннипе чарăнчĕ. Ку вăл — хуларан таврăнакан методист пулчĕ иккен.

— Мĕн эсĕ, Геннадий Васильевич, хăлхасăр мар пуль?— терĕ вăл, ун умĕнче чарăнса.— Атя-ха, ман санпа питĕ пысăк калаçу пулать. Сан çинчен темтепĕр калаçаççĕ-çке. Тĕрĕсех-и вăл?..

* * *

— Хăшпĕрисем урокра пăлханаççĕ пулсан — Коршуновăн вара намăс-симĕсĕ те çук,— терĕ Александр Семенович методист.— Çӳрет лаплаттарса партăсем хушшипе.

Тумланнă — патша майри пек. Сасси вара! Пит-куçне пĕрет! Виççĕр çул учительте ĕçленĕ те вăл — йăлăхтарса çитернĕ ăна пурте: çут тĕнче те, ачасем те. Ачасем айăплă-и эс пĕлменшĕн? Калаç ахаль чухнехи пек. Хăвăн çĕрĕк кăмăлна мĕн тесе ачасене кăтартса тăратăн? Таткаланчăк кукăль тулне — ăшĕ ан тăкăнтăр тесен—икĕ алăпа тытаççĕ. Кулаççĕ-çке ачасем хăвăнтан!

Коршунова хăйне çапла йывăр каланине аран çеç тӳсĕ келесе ларнипе кура, методист çемçерех калама тытăнчĕ:

— «Полный провал», тет кун пеккине Песталоцци. Учитель пулас тесен, ху пирки темтепĕр илтме тивет. Ачасенчен çеç çав сăмаха илтес марччĕ. Ав, Геннадий Васильевич ларать. Çамкине çыхса лартнă, кĕпе çухи пĕтĕрĕнсе ларнă. Мĕнле ятламăн? Ку пĕчĕк япала çеç тетĕр-и? Шкулта нимĕнле пĕчĕк япала та çук. Шкула çакланнă çӳпĕрен пĕри ту пысăкăш ӳссе каять. Ав мĕн пулса тухрĕ халь Голубевăпа. Çапла вăл учитель йăнăшсан. Сире кунта кăшт ятлатăн çеç—тутусене мăрт тăватăр та тухса каятăр. Эпир вăрçни вăл — сывлăхăра çеç, вăрçатпăр та — сĕвĕрĕлсе те каять: манатпăр, каçаратпăр. Эсир класра е класс тулашĕнче йăнăшсан вара, ачасем сире нихçан та каçарас çук! Пĕр пĕчĕк йăнăшшăнах вĕсем сире мĕн ĕмĕр тăршшĕпех юнĕç! Халĕ вĕсем—тин çурăлнă мăкăнь çеçкисем. Пирĕн вĕсене тусан пĕрчинчен те сыхламалла, уйрăмах халь, çирĕпленсе çитиччен. Хĕвел тӳррĕн пăхнинчен те сыхламалла халь...

Методист, хуллен те лăпкăн каласа лараканскер, хăйпе хирĕç ларакан студента пĕр хушă тимлесе сăнарĕ.

— Леш Митюкне, Митюкне... пĕлмен кайăка мĕншĕн хӳринчен туртмалла пулчĕ-ха санăн?— терĕ вăл малалла, студента куçран пăхса.— Вăл, ав, ят сарса çӳрет сан çинчен. Ун пеккисем чултан та пушăт сĕвеççĕ. Ĕçе пĕрле тăвас пулать, килĕштерсе. Манпа канашласан та, сарăп пулмĕччĕ. Час пĕшкĕнет пĕччен пуç... Выговорне тĕрĕс пачĕç сана институтра. Унта сан утăмна — пĕр виçсе, хак парса тăраççĕ. Тата хĕрачу мĕнле-ха халь сан, сывалать и?

Учительсен пӳлĕмĕнче самантлăха шăна вĕçни илтĕнмелле шăплăх тăчĕ, коридорта такам утнипе çывăхри класра тахăш учитель урок ăнлантарни те илтĕнчĕ.

— Мĕн, вăл апла шăн панулми çисе хăй пуçне пĕтерме шутланă?— терĕ методист.— Ав епле килсе тухать! Айăпĕ санра çук пулсан та, çын куçĕ умĕнче эсĕ айăплă!.. Хăвна ху учитель пек тыткалаймастăн. Часах ĕнтĕ ху тĕллĕн ĕçлеме тытăнмалла. Çак инкек пĕтĕмпех ĕçе ху

пĕччен тума тăрăшнипе сиксе тухрĕ. Пĕччен хăтланмин те — ача та çав таранах лакса лармĕччĕ. Пуçилле шухăшсем патнех çитерметтĕмĕр.

Методистпа студентсем тепĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕç. Унтан коридорта, урокран тухма вăхăт çитнине пĕлтерсе, шăнкăрав шăнкăртаттарчĕ, алăксем уçăла-уçăла хупăнни, тĕпĕртетни илтĕнчĕ.

— Ун патне халь кайсах тăрăр,— терĕ методист калаçăва вĕçленĕ май.— Пĕччен ан туйтăр хĕрача хăйне хăй. Ху та кай, ачасене ытларах яр...

Гена, методист сăмахĕпе килĕшсе, ача пек итлесе ларчĕ.

...Тепĕр ик-виç кунтан шкулта учительсем хушшинче пысăк канашлу пулса иртрĕ, майĕпен вăл шавлă дискуссиех çаврăнса кайрĕ.

Хамăр маларах каланă шухăшсене тепĕр хут асăнас мар, вулакансем хăйсемех пĕлекен е хаçатсенче пур япаласене тепĕр хут сĕнес мар тесе, тата юлашкинчен — хамăрăн вăрăма кайнă калава хăвăртрах вĕçлес тесе, автор ку дискуссие илсе кăтартма кирлех мар пуль тесе шутлать.

Тавлашу, тĕпрен илсен, шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне çĕнĕлле йĕркелесси пирки, шкулпа пурнăç хушшинчи çыхăнăва çирĕплетесси, шкул программисене, системине улăштарасси пирки пулчĕ. Ку тавлашура нумайăшĕ Генăна хӳтĕлерĕ, тепри (малашлăха курманни) ятларĕ. Директора та вăрçса илчĕç, çав вăхăтрах хӳтĕлерĕç те: программа вăл — программа, ăна çапла йышăннă пулсан, çӳлтен улăштармасăр, директор епле улăштарайĕ...

Голубева Тамара вара, пĕрисем каланă тăрăх, çак хамăрăн кивелнĕ шкул системин çимĕçĕ-мĕн, анчах ăслă, вичкĕн сисĕмлĕ хĕрача, теприсем каланă тăрăх, пăсăлса, иртĕхсе кайнă хĕрача т. ыт. те.

ÇИРЕМ ПĔРРЕМĔШ СЫПАК

Урай варринче тимĕр кăмака çунса ларать. Унăн айккисем те, кунча кукрашки те хĕрсе хĕрелсе кайнă. Хĕрлĕ йытă сиксе вĕрнĕ пекех — сиксе, кĕрлесе çунать кăмака.

Ăшăрханă хĕрача, çӳхе шурă çиттипе кăкăр таран витĕнсе, стена çумĕнчи вырăн çинче выртать.

Урам еннелли стена тĕкĕрĕ çинчен хĕрачана тĕпелте аппаланакан амăш пуçĕ, хăрах хулпуççийĕ курăнкаласа

каять. Тĕкĕр тăрринчен уртнă ăлшăлли пĕтĕм тĕкĕре çаварса илет. Унăн вĕçĕсене, тĕрри курăнмалла туса, икĕ еннелле уçса тытăнтарнă. Шывлампа тĕрленĕ чечек çинче кĕç-вĕç вĕçсе апас пек пĕчĕк кайăк. Вĕсене çулла Тамара тĕрленĕччĕ. Тамара кайăк сиккипе те, хантăсла та, кӳнчĕкле те тĕрлеме пĕлет. Халь ĕнтĕ алла тĕрĕ тытмаппи те вăрах.

Акă ĕнтĕ вăл эрне ытла вырăнпах выртать. Пуç ыратать, кăкăрта тем хăрăлтатса тăрать, тирет, хушшăнхушшăн тип ӳслĕк чыхăнтарса ярать; пыр шыçнă, чĕлхе кăмпаланнă.

Тамара виçĕ-тăватă кун хушши тăн пĕлми выртрĕ. Вăл çакна çеç астăвать: такамсем вырăн умне пухăнса тăраççĕ, шăппăн калаçаççĕ, хашлатса сывлаççĕ, ӳпкелешсе вăрçаççĕ; хул айне градусник лартаççĕ, вакă е тӳме пек çавра шурă, хĕрлĕ им параçĕ, укол тăваççĕ те — кайран каллех шăп. Каçсерен Тамарăна вĕрилентерсе пăрахать, чун пăчăхса каять, çăвар тути çук, пур çимĕç те темĕнле йӳçĕ, хĕрхӳ пек. Ир енне кăшт çăмăлрах. Амăшĕ час-часах, Тамарăна кăмака çине выртарса, кăкăр çине тин çеç пĕçерсе кăларнă çăкăр хурать, сĕлĕ шерепи, хура эрĕм шывĕ вĕретсе ĕçтерет.

Юлашки кунсенче Тамара хăйне кăшт уçăрах, хаманĕ пур пек туйрĕ. Ӳслĕк çемçелнĕ, кăкăрта чикен чикмест. Халĕ ĕнтĕ Тамара çынсене те уйăрса илет.

Кунсерен майлах ун патне шкулти ачасем çӳреççĕ. Вĕсенчен хăшĕсем премĕксем-темсем йăтса килеççĕ. Геннадий Васильевич та икĕ хут килсе кайрĕ. Тамарăпа вăл, ыттисем пекех, нумай калаçмасть. «Сывлăху мĕнле? Çăмăлтарах-и?» — тесе ыйтать те: «Часрах сывал. Ачасем сапа кĕтеççĕ»,— тесе хăварать çеç. Тамарăна хăйне ун умĕнче питĕ аван мар пек.

Ачасенчен пуринчен ытла кунсерен майлах Рая килет. Вăл кĕрсенех — килти çын пек — хывăнса ларать. Тамарăпа шкулти ĕçсем çинчен каласа парать.

Шкулта халĕ çур вĕренӳ çулĕшĕн тĕрĕслев ĕçĕсем пуçланнă-мĕн. Çывăх вăхăтсенчех тата шкулта тĕрлĕрен урăх уроксем, кружоксем хутшăнаççĕ-мĕн; çĕвĕ çĕлеме, тĕрĕ тума, юрма-варма, каскалама хăнăхмаллисем, «производство никĕсĕсем» — ĕç урокĕсем.

Çавăн пек чуна çыпăçуллă улшăнусем ялан е эсĕ çук чухне, е эсĕ унта урăх каяс çук чух пулаççĕ вара.

Халь ĕнтĕ Тамара текех шкула каяс пур-и? Çак синкерлĕ ĕçсем хыççăн, çапла пулса пĕтнĕ пуçпа, каллех хăй-

хи шкулах кайса, çав пӗлнӗ ачасем хушшинчех ларса, вӗсем йӗкӗлтесе кулнине, витленине тӳсмелле?

Çук, çук! Текех унта ура та ярса пусас мар! Таçти урăх шкула кайсан та — çак шкулах мар ӗнтӗ. Тен, ялтан та тухса каймалла? Калăпăр, вербовкăпа, пӗр-пӗр стройкăна.

Сывалса çитнӗ çӗре Тамарăн çак тӗлӗшпе пӗр-пӗр татăклă шухăш патне çитмеллех. Амăшӗ те ӗнтӗ — Тамара ура çине тăнă-тăман — çӗтӗлме, хирӗлме, ӳпкелеме тытăнӗ. Халь ӗнтӗ вăл малтанхинчен те хăрушăрах чуна ватӗ, кун кăтартмӗ. Çитменнине тата, иртнине сиввӗн аса илтерсе тăракан шакла пуç...

Çакăн пек шухăшсем пуçа килсен — çанçурăм та сӳлетсе каять. Пӗччен чухне кунашкал шухăшсем пит тăтăш çулăхаççӗ, вăрăмтунасем пек.

Рая та пулин часрах çитинччӗ!

— Валентин та килсе курасшăн сана,— терӗ вăл ӗнер, Тамара çине сăнарах пăхса илсе.

Тамара хирӗç ним те шарламарӗ. Темшӗн-çке ун ятне асăнни хӗрача асӗнче халь хӗлхем те чӗртмерӗ.

— Шкула пырсан, эп сана пӗр япала каласа парăп. Юрать-и?— тет Рая малалла·— Эсӗ шкула пыратăн-çке-ха,— тет вăл çине тăрсах.— Ну, мӗн эсӗ чӗнместӗн?

— Çак пуçăмпа ман епле класа пырса кӗрес,—тет Тамара.

— Ну, мӗнех-ха çӳççӗр?— хӗрсе каять Рая.— Мӗн, хăратăн-и?

— Сана аван мана ӳкӗте кӗртме! Ху çапла пулсанччӗ.

— Тамара!— чӗрре кӗрсех сиксе тăрать Рая, вара темшӗн кӳреннӗ пек тухса каять.

Тамарăн тӗкӗр витӗр пăхас килет. «Мӗн майӗ пур-ши вăл?» Анчах тӗкӗр темшӗн хăратать. Тата тăма та вăй çук. Пуç та, алă та çӗкленмест. Тамара çапла выртсах çывăрса каять. Тен, вăл çывăрман та пулӗ... Куçне хупнăччӗ çеç, уçрӗ те — тул çутăлнă, урăх кун пуçланнă акă. Анчах пурте виçӗмкунхи-тăватăмкунхи пекех, урай варринче тимӗр кăмака çунса ларать. Пуçра та ун чухнехи шухăшах, чунра та çав пăшăрханăвах, çав хуйхă-суйхах. Сывлăх енчен çеç — ăшра тем çемçелнӗ пек, кăмăл уçăлнă, шăмшак çăмăлланнă.

— Чей ӗçетӗн-и, хӗрӗм?

Ку амăшӗн сасси.

Вăл халӗ Тамарăна пӗрре те вăрçмарӗ-ха — ӳпкелесе те, ăс парса та. Сасси те унăн йăвашланнă пек, хăй них-

çанхинчен те кăмăллăрах пек. Вăл та ĕнтĕ хĕрне сыватма хăтланса упи-супи пулчĕ.

...Тултан алăк сасси илтĕнчĕ.

Пӳрте Рая кĕрсе тăрсан, Тамара куншăн нимĕн чухлĕ те тĕлĕнмерĕ, пуçне пăрмасăрах пăхса илчĕ, темшĕн-çке акă халь Рая килсе кĕрессе те унăн чунĕ малтанах туйса-пĕлсе тăчĕ пек.

Рая пӳрте кĕрсен, Тамара амăшĕ кĕрĕк тăхăнчĕ.

— Эпĕ пыл илме каям-ха, — терĕ вăл, тимĕр чашăк тытса.— Эсĕ, Рая, ларкала. Тамара, тен, шыв ыйтĕ, чейникрех унта. Пыл вĕретсе пама хушрĕç те-ха.

Çапла каласа вăл тулалла тухрĕ.

Рая сывлăх суннă чух Тамара шарт сикрĕ. Райăн пуçĕ пĕчĕкленсе юлнă пек курăнчĕ... Çамкинчен çӳлелле çара шурă ӳт каять, тутăр айĕнчен çивĕт курăнмасть.

— Рая!— хăраса кăшкăрса ячĕ Тамара. Вăл урăх нимĕн те калама пултараймарĕ, хăрах чавса çине вăйран кайсах çĕкленчĕ те хăйĕн тусне вĕри алăсемпе мăйĕнчен явăласа илчĕ. Самантран Рая кăкăрĕ çинче шăппăн хӳхлени илтĕнчĕ.

Рая нимĕн те чĕнмерĕ, чирлĕ хĕрачан пуçне çеç хăй çумне хытăрах пăчăртарĕ.

— Рая! Рая!— терĕ Тамара çине-çине.— Мĕн ухмахланнă эсĕ, кала-ха? Ăсран тайăлтăн-и?

Вăл чунне ыраттарса ĕнерхи калаçăва аса илчĕ.

«...Çак пуçăмпа ман епле класа пырса кĕрес»,— терĕ Тамара.

«Ну, мĕнех-ха çӳç çуккишĕн? Хăратăн-и?»

«Сана аван мана ӳкĕтлеме. Ху çапла пулсанччĕ...»

«Тамара! Эп сан пек... хăраса тăратăп тетĕн-и?»

Рая хăйĕн вăрăм та тачка çивĕт вĕçĕсене турткаласа илет те вĕсене хыçалалла ывăтса ярать, пуçне чăрсăррăн çĕклет, пĕр хушă вăл çапла хускалмасăрах тăрать, унтан Тамарăна сивĕ алăсемпе мăйран ыталаса илет:

«Тамара! Акă курăн эпĕ те кастаратăп... Чăнах, чăнах».

«Ухмах! Никам та пăхмасть вара сана».

«Кирлех мана такам пăхни!»

Рая кӳренсе тутине тăсать, унтан çапла кӳреннипех тухса каять. Ку вăл ĕнер пулчĕ. Паян акă, кур...

— Рая! Рая!— терĕ Тамара лăпланаймасăр.— Эсĕ маншăн турăн-и çакна? Маншăн? Ухмах эппин эс! Кур-ха, кур, кайса пăх тĕкĕр витĕр... Кам майĕ пур халĕ...

— Кай, кирлĕ мар! Эпĕ курнă,— терĕ Рая, Тамарăна

хăй çумне хытăрах чăмăртаса.— Нимĕн те хăрушă мар! Хитре мар ĕнтĕ. Ну, мĕнех? Тепĕр çултан малтанхи пек пулать. Ку вăл пирĕн туслăх силĕмĕ пултăр, юрать-и? Пĕлетĕн-и мĕн вăл силĕм? Хĕр-тантăшсем ĕмĕр туслă пулма сăмах панине çапла калаççĕ.

Райăн куçĕнче темĕнле хурланчăк хĕлхемсем çиççе илчĕç. Сасси унăн нумайччен татăлса йĕнĕ хыççăнхи пек илтĕнет, хăй сывласса та татăлса сывлать. Икĕ питçăмарти тăрăх унăн, чăн та, икĕ çутă йĕр выртнă.

— Çук, тепĕр çултанах ӳсмест,— терĕ Тамара, ăна çавçавах ытамран вĕçертмесĕр,— хитре мар капла.

— Ну, икĕ çултан... Виççĕрен,— терĕ Рая, мăн çын пек вĕрентсе.— Хитрине такам та пăхать· Витьăна эпĕ çапла килĕшместĕп пулсан — вăл мана кирлĕ те мар! Мана вăл çапла хитре мар чух та килĕштертĕр! Сăп улшăннăшăн чун хритремарланмасть-çке.

— Хитре маррисене юратмаççĕ,— терĕ Тамара.

— Çук, хитре маррисене те юратаççĕ,— хирĕçлерĕ Рая, хăвăрт-хăвăрт калаçма тытăнса.— Хитре маррисене паттăрла ĕçшĕн юратаççĕ. Ак манăн халĕ çак виçĕ-тăватă çул хушшинче — хитре мар чух — хамшăн çеç пулин те, пĕр-пĕр пысăк ĕç тумалла. Вара ун чухне хальхинчен икĕ хут хитререх пулатăп. Халь эпир санпа иксĕмĕр «Царевна-лягушка» юмахри пек: çиелтен пăхма питĕ хитре мар, леш шапа пек, анчах вăхăт çитсен — пиртен хитри те пулмасть. Çапла-и, Тамара?

Тамара шухăша кайрĕ.

— Чăнах, чăнах!— терĕ Рая, Тамарăна хăвăрт аллинчен тытса.— Акă эпир класра та пĕрле ларăпăр, юрать-и? Питĕ аван пулать. Ан тив, кулччăр кулакансем. Эпир вĕсене итлемĕпĕр.

— Шиклĕ,— терĕ Тамара пусăрăнчăклăн.— Ачасенчен те, учительсенчен те, уйрăмах Геннадий Васильевичран.

— Тамара, мĕн сӳпĕлтететĕн-ха? Мĕн лайăх марри пур?— текех ӳкĕтлерĕ Рая Тамарăна.

Тамара тем шухăша ӳксе пĕр хушă ним чĕнмесĕр выртрĕ.

— Аннӳ килчĕ,— терĕ Рая, кил хушши алăкĕ шăплатни илтĕнсен.

Тамара васкаваррăн тӳрленсе выртрĕ. Амăшĕ, пĕр чашăк пыл йăтнăскер, пӳрте кĕрсе тĕпелелле иртрĕ.

— Чей сивĕнмерĕ-ши?— ыйтрĕ вăл.

— Тин вĕреме кĕчĕ,— терĕç хĕрачасем, ним пулман пекех.

Тамара амăшĕ тимĕр кăмака çинчен чейник илсе унта пыл ячĕ, тепĕртакран стакансене тултарчĕ те хĕрачасене сĕтел хушшине ларса чей ĕçме чĕнчĕ. Тамара малтанхи хут ура çине тăчĕ. Икĕ хĕр-тантăш, юнашар ларса, вĕре-вĕре, чылайччен шăппăн чей ĕçсе ларчĕç.

Рая кайсанах, почтальон çыру илсе килчĕ. Ку çыру— Куйбышев хулинче пурăнакан Тамара куккăшĕнчен — Можаевран. Вăл, военкоматра ĕçлекен майор, çулленех отпускра Тамарăсем патне килсе каять. Пĕлтĕр те пулнăччĕ вăл. Çыруне Можаев Тамара ячĕпе çырнă.

«Тамара,— тет вăл,— пирĕн арăмпа иксĕмĕре ачасăр пурăнма кичем. Тата аннӳне те темиçе ачапа йывăр. Кăмăлу пулсан, кил пирĕн пата. Сана эпир хĕсĕрлес çук. Апат-çимĕç пирĕн тулăх. Вĕренме те сана никам та чăрмантармĕ. Хула шкулне кайăн. Тепĕр енчен, хула шкулĕнче вĕренни саншăн пĕрре те пăсăклă мар. Хулари ачасем ăстăн енчен те çивĕчрех аталанаççĕ. Хула хулах ĕнтĕ. Вăл, паллах, культурăллăрах тата ытти те. Куна хăвах пĕлетĕн... Кил, кĕтетĕп»,— вĕçлет Можаев хăйĕн çырăвне.

Ку çыру — пуç çине ырлăх çунă пекех пулчĕ Тамарăшăн. «Турри пур çав»,— теççĕ кун пек чух.

Тамара та, çырăва вуласа пĕтерсен, савăннипе хăй чирли çинчен мансах амăш патне тула чупса тухрĕ.

— Анне,— кăшкăрса ячĕ вăл.— Эпĕ Куйбышева каятăп. Кукка чĕнет...

Амăшĕ çыру пирки йĕркеллĕрех ыйтса пĕлнĕ хыççăн çапла каларĕ:

— Ху мĕн тăвăн ĕнтĕ. Апат-çимĕç килте тулăхах мар пулсан та, пурăнма пулĕччĕ-ха. Хăвăн ирĕкӳ...

* * *

Тамара, чиртен тăрса малтанхи хут уçăлма тухнăскер, киле май хуллен урампа утрĕ. Çак кунсенче вăл Куйбышева каять, çавăнпа юлашки хут урампа утса тухма шутларĕ. Ун умĕнче, кăшт маларах, 10-мĕш класра вĕренекен Вова Вирцов пырать.

Тамара ку арçын ачапа пĕр пилĕк çул каярах юлташлăччĕ те,— халь вĕсем çав тери ютшăнса кайнă иккен, сивĕннĕ. Тамарăна вăл халь хирĕç пулсан та сывлăх сунмасть.

Тен, хăйне темскер пекех мăнна хурать пуль вăл? Е Тамарăпа çеç çапла-и?

Тамарăна вăл, паллах, кураймасть ĕнтĕ, мĕншĕн тесен амаçури ун мыскарисем çинчен яланах Тамарăсем

патне пырса каласа папине, Тамара вĕсепе ĕнеппине пĕлет. Тамара çавна май пилĕк çул каяллах унран кулма, ăна çĕтĕлтерме пăхатчĕ. Çавăнпа пулĕ Вова кайран Тамарăсемпе пĕрле урамра выляма та пăрахрĕ. Чăнах киревсĕр ача-ши вăл?

Тĕрĕссипе илсен, Тамара ăна амаçури амăшĕн сăмахĕ урлă та тĕрлĕ сас-хурасем тăрăх çеç пĕлет.

Çынна тĕрлĕ сас-хурасем тăрăх çеç хаклас пулсан, сăмахран, Тамарăна хăйне Вова çапла хаклас пулсан... Мĕнле-ши? Мĕнлерех курăнать-ши Тамара уп куçĕ умне—уйрăмах çак юлашки сас-хурасем тăрăх?

Ку, тупата, хăрушă пулмалла-çке!

Апла Тамара та чăтма çук киревсĕр курăнать пулĕ. Çав хăй киревсĕр тесе шутланă Вовăна?

Тӳрĕ каласан, малтан çак ача, уп пирки тĕрлĕ ырă мар сас-хура сарăличчен, Тамарăна килĕшетчĕ. Пĕр вăхăтра чунра темĕнле ăшă кăмăл та вăраннăччĕ ун енне, анчах ăна тĕрлĕ чамасăр чап амаланма паман.

Тĕрĕссипе, çав сехет мыскари хыççăн та Тамара Вова пирки ытлашши пăсăклă шухăшлама хăйман.

Кунсăр пуçне амаçури халĕ Вова çинчен усал сăмах сарнипе те çырлахмасть, Тамара патне Вовăн дневникĕсене йăтса пырать.

Вĕсенче амаçури çинчен çырни, чăн та, пĕр йĕрке те пулман. Пуçа килнĕ шухăшсемпе пурнăç çине хăй еплерех пăхни çинчен çырнисем те хăйĕн сăввисем çеç пулнă унта. Тамара вĕсене вуламан та, тата хăшпĕрисене ăнланма пуç та çитмен. Çав дневниксенчен Тамара пуçĕнче пĕтĕмпе те пĕрер сăвă та тепрер каларăш çеç юлнă.

Çаксем йăлтах умра пыракан Вовăна курсан асра вăранчĕç. Тамара вара ирĕксĕрех çак ачапа çывăхрах паллашманшăн, унăн дневникĕсене тĕплĕн вуламаншăн пăшăрханса илчĕ: Тамара ăна урăх курас çук ĕнтĕ, ăна та, шкулти ытти ачасене те...

«Вăл, тепĕр тесен, питĕ лайăх çын пулĕ?— шухăшларĕ Тамара.— Ун çине эп хам шанмасăр пăхнăран çеç хăйне хăй çапла тытать пуль вăл? Тĕслĕхрен, эсĕ ху хăвна мĕнле тытнă пулăттăн-ха сана курайман, сана киревсĕр тесе шутлакан çынпа?»

Чăн та, Вова хăш чухне Тамара çине курăймасăр мар, пач урăхла, имеперех пăхнă пек туйăнать.

Тамара хăй сисмесĕрех умра пыракан арçын ача çине хĕрхенсе пăхрĕ. «Кӳр-ха, хăваласа çитсе сăмах хушса пăхам ăна»,— вĕлтлетрĕ пуçра чăрсăр шухăш.

Тамара васкарах утса качча хăвалаласа çитрĕ те, хăюлăх сасартăк хуçăлчĕ. Ентĕ иртсе кайма та, кая тăрса юлма та аван мар пулса кайрĕ. Вара Тамара çул хĕрринерех пăрăнчĕ, ăшталанса ÿкрĕ. Каччă та, хĕрĕн тем каласси пуррине сиссе, канăçсăрлана пуçларĕ.

Вĕсем ик-виç кил тăршшĕ пĕр-пĕрин çине сисиччен вăльть та вăльть пăхкаласа пычĕç. Вĕсен хушшинче темĕнле ахаль калаçу пуçарас енĕпе те тÿрех каçма çук «хÿме», сăмах хушма та, пĕр-пĕрин çине пăхма та чараканскер, пур иккен.

Вова хуллен утрĕ.

Тамара та васкамарĕ, анчах ăшри темĕнле сисĕм васкама хистет, çав вăхăтрах иртсе кайма та чарса пырать.

Çапах иккĕшĕн те калаçас екки пурри, иккĕшĕ те сăмах шыраса асапланни сисĕнет.

Вĕсем шăпăрт пычĕç.

Анчах çак чĕмсĕрлĕхре темĕнле хÿхĕм япала пур: ачалла тасалăх, тÿрĕлĕх, ним суйма-пытарма та пĕлменни, çĕр çинче пурăнма кирли.

Вĕсем Тамарăсен тĕлне çитрĕç.

Тамара хăйсен хапхинелле пăрăнчĕ. Вова ик-виçĕ утăм турĕ те чарăнчĕ, хĕрача çине пăхса илчĕ. Хĕрача та ик-виçĕ утăм ярса пуссан чарăнчĕ.

Анчах вĕсем нимĕн те каламарĕç.

Хĕрача кăшт тăхтаса тăчĕ те ерипе кил хушшине кĕчĕ. Чĕрере темĕнле хытă япала ирĕлсе кайрĕ пек.

«Чăн та, амаçури амăшĕ каланă пекех усал-ши вăл?— ирĕксĕрех шутларĕ хĕрача, унтан хăйне хăй вăрçса илчĕ:— Ырă айван! Мĕнле-ха пĕр сăмах та хушаймарăм эп ăна!..»

ÇИРĔМ ИККĔМĔШ СЫПАК

Тамара паян иртенпех ерçмерĕ. Çунă кĕписене, тутрисене утюгласа чăматана майлаштарса хучĕ, çуллахи туфлисене те тасатса чăматанах чикрĕ; кĕнекисене тĕркемлесе çыхрĕ. Амăшĕ çул çине валли укçа тупса килсе пачĕ, какай типĕтрĕ. Какайне Тамара пĕчĕк хутаçа тултарчĕ.

Çапла аппалансах кăнтăрла иртрĕ, икĕ сехет çитрĕ.

Ыранхи пуйăс çине ĕлкĕрме ĕнтĕ пурте хатĕр, пальтон пĕр-ик тÿмине хытарса лартмалли çеç юлчĕ.

Тамара хура çип пушкарĕ шыраса тупрĕ те, йĕп çăртине çип тирме тесе, кантăк умне пычĕ. Çак вăхăтра вăл хапхаран Рая чупса кĕнине курчĕ; хĕрача питĕ васкать,

хашкакан пулнă. Пÿрте кĕрсен те вăл хыпаланма пăрахмарĕ.

— Тамара,— терĕ Рая кĕнĕ-кĕмен.— Тумлан хăвăртрах, пĕр çĕре каятпăр.

— Ăçта?— ыйтрĕ хĕрача, питĕ ырханлапса кайнăрап пысăкланнă пек курăнакан куçне чарса.

— Шкула каятпăр.

— Шкула? Эпĕ... шкула? Эсĕ, Рая, пĕлместĕн-ха. Эпĕ ыран Куйбышева тухса каятăп.

— Куйбышева? Мĕн тума?

— Вĕренме.

— Мĕне вĕренме? Техникума-и?

— Çук, вăтам шкулах, 9-мĕш класах... Акă, вула çыру. Унта кукка пурăнать ман. Мана хăйсем патне чĕнет.

Рая пĕр хушă, Тамара çине пăхса, ним чĕнеймесĕр хытса тăчĕ.

— Эсĕ каятăнах-и?

— Каятăп.

— Ой, Тамара, эпир юлатпăр,— хыпаланса ÿкрĕ Рая.— Эппин, çул çинче калаçса каяр... Атя часрах. Унта паян— калас-и мĕн — Вера Федоровнăна чыслаççĕ, ăна тава тивĕçлĕ учительница ятне панă... Манăн ăна шкул ачисен ятĕнчен парне памалла...

— Рая, эпĕ ку шкула урăх ура ярса пусмастăп тесе хама хам сăмах панă.

— Ну, юлашки хут, эппин... Ну, мана кăшт та пулин хисеплетĕн пулсан, юлашки хут ут манпа юнашар... Анчах хăвăртрах, ман вăхăт çук.

— Рая, тăн тухать ман санпа, тупата!

— Тамара, тусăм!— ыталаса илчĕ Рая Тамарăпа.— Атя... Унта сана халь асăрхамаççĕ те.Тумлан часрах... Ăçта-ха сан пальто?

Рая пăтаран пальто вĕçертсе илчĕ те Тамара хулпуççийĕ çине уртса ячĕ, уптан кашта çинчен мăн тутăр илсе килчĕ.

— Кил, сана хам çыхса ярам,— терĕ Рая, Тамарăна чăнласах тутăр çыхса ярса.—Ну, атя халь,—алăрап тытса алăк патнелле туртрĕ вăл унтан.

Тамара сисмесĕрех кăмăлĕпе çаврăнчĕ, вара вăл, хăйпе хăй пурпĕр шкула кĕместĕпех-ха тесе лăплантарса, Райăпа пĕрле тухрĕ. Урама тухсан вара Рая, ним шухăшласа илме памасăр, текех васкатса пычĕ, тăна кĕме памасăр малалла хистерĕ. Çапла вĕсем шкул картипе çитсе те кĕчĕç. Кунта çитсен, Тамара хăй те ĕнтĕ туртаканмарĕ:

шкул ачисем курăнкала пуçларĕç. Рая вара Тамарăна аллинчен çирĕпрех тытрĕ те картлашка тăрăх туртса хăпартрĕ. Вĕсем иккĕмĕш хута хăпарчĕç. Коридорта, чăнах та, халăх лăк-тулли, алăк умĕнче те ачасем, студент-практикантсем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Вера Федоровнăна чыслама пухăннă пуху пуçланнă та иккен. Тамарăпа Рая кĕнине алăк патĕнчи пĕр-икĕ ача каялла çаврăнса пăхнисĕр пуçне никамах та асăрхаймарĕ. Рая Тамарăна алăран вĕçертмесĕр ачасем хушшипе хуллен малалла иртрĕ. Темĕнле пушă юлнă вырăнах илсе çитерчĕ. Вĕсем хĕсĕнкелесе скамейка çине юнашар кĕрсе ларчĕç.

Райăпа Тамара кĕрсе ларнă тĕле Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн представителĕ ĕнтĕ хăйĕн сăмахне вĕçлесе калатчĕ:

— Сирĕн шкулта Вера Федоровна пек хăйĕн ĕçне чунчĕререн парăннă учительсем пурри сирĕн шкулăр чысне çĕклет. Кун пек ырă ят илме хăй ĕçĕн чăн-чăн ăсти çеç пултарать. Сирĕн пурин те унран вĕренме тăрăшмалла, учительсен — ун пек учитель пулма, ачасен — ун пек çын пулма. Таса чунпа ĕçлекен кашни çынах пирĕн çĕршыври чыса, мухтава тивĕçлĕ. Хăвăр ĕçĕрте малашне татах ăнăçлăрах, кăтартуллăрах ĕçлеме сире, Вера Федоровна, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ ячĕпе иксĕлми вăй-хал, çирĕп сывлăх сунатăп.

Представитель хăйĕн сăмахне вĕçлерĕ те Вера Федоровнăпа хĕрлĕ хуплашкаллă хут тыттарчĕ. Пурте алă çупса ячĕç. Кун хыççăн шкул директорĕ Петр Петрович Вера Федоровнăна хăйне сăмах пачĕ.

Вера Федоровна трибуна умне пăлханса тухрĕ. Анчах ку пĕр кĕске саманта çеç, сăмах пуçличчен çеç пычĕ. Умра хăйĕн кулленхи вĕренекенĕсемех ларни ăна часах хăюлăх тавăрчĕ.

— Манăн ĕçĕм-хĕлĕме,—кăшт çыхланулларах пуçларĕ вăл,— çапла пысăк хисепе хунишĕн эпĕ партипе правительствăна чун-чĕререн тав тăватăп. Хамăн ĕçĕмре эпĕ чыса, хисепе тивĕç пулни — маншăн пысăк телей. Манăн ĕç паттăрла ĕç мар — кулленхи ĕç. Хăйĕн ĕçне чунтан юратса, тӳрĕ кăмăлпа тăвакан кашни совет çынниех кун пек чыса тивĕç пулма пултарать. Эпĕ хам ĕçлепĕ чух пĕрре те «ман чапа тухасчĕ-ха, тава тивĕçлĕ учитель ятне илесчĕ» тесе ушăнман, вăл шухăш пуçа та пырса кĕмен. Чи пысăк телей вăл маншăн, ачасем, эсир шкултан лайăх вĕренсе тухса çĕршыва усăллă çынсем пулни. Эпĕ хам пултарнă таран хамăн пĕтĕм вăй-халăма, ачасем, си-

ре вĕрентсе ăслă çынсем тăвас ĕçе пама тăрăшнă. Тăрăшса тунă ĕç, юратнă ĕç сая каймасть.

Пурнăçра чи кирли, апла пулсан, ачасем, вăл професси тĕрĕс суйласа илесси. Эсир, шкулта тĕрлĕ наукăсене вĕреннĕ май, хăвăра тĕрлĕ енчен тĕрĕслесе пăхатăр. Эсир хăвăрăн кăмăлăра кайнă наука тăрăх хăвăр пултарулăха палăртса ĕмĕт чăмăртатăр. Ĕмĕт вăл хăвăрăн пултарулăхăрпа килĕшсе, шайлашса тăмалла. Вĕсем хирĕçессĕ пулсан — ĕç ăнăçмĕ. Сирĕн пурин те пултарулăх пур, хăшпĕрисен ĕнтĕ палăрнă, теприсен халĕ, тен, палăрайманха, ку инкек мар... Ку енпе те сире шкул пулăшĕ, учительсем пулăшĕç.

...Тамара, хăй çине ачасем пăхкаласа илнине асăрхаманçи пулса, пуçне ниçталла пăрмасăр куç хӳрипе сулахаялла, сылтăмалла пăха-пăха илчĕ. Вăл хăйне малтанхи самантра йĕп çинчи пек туйрĕ, çапах та хăйне хăй май килнĕ таран лăпкă пек тытма тăрăшрĕ. Вера Федоровна калаçнă чухне çеç вăл, пĕрер чĕрĕме хăй çинчен манса, трибуна çинчен илтĕнекен сăмахсене итлерĕ. Çав вăхăтрах кунта ларакан кашни ачанах ăмсанчĕ: вĕсем çакăнта пурте Тамарăран телейлĕ, пурте тăван килти пекех, пĕри те хăйне кунта Тамара пек канăçсăр та ют туймасть. Рая — мĕн тери телейлĕ вăл! Акă вăл трибуна умне тухрĕ. Куçĕсем çиçеççĕ, сасси те чĕтремест.

Тамара сисмесĕрех хăй тантăшĕн кашни сăмахне тăнласа итлеме тытăнчĕ. Трибуна умĕнче Рая мар, Тамара хăй тăнă пек туйăнчĕ, çавăнпа та вăл Рая такăнасран е сăмахне манса каясран канăçсăррăн шикленсе ларчĕ, ун çине хытă пăхма та хăрарĕ.

— Хаклă Вера Федоровна! — терĕ Рая. — Эсир пире вĕрентсе çĕршыва усăллă çынсем тăвассишĕн ырми-канми ĕçлетĕр. Эпир, аслă классенче вĕренекен ачасем, сирĕн пур уроксене те питĕ юратса итлетпĕр, эсир вĕрентекен предметсене тарăн ăнланса пыратпăр, мĕншĕн тесен эсир уроксене ялан çăмăл та лайăх ăнлантарса паратăр. Çавăнпа та эсир вĕрентекен предметсемпе ĕлкĕрсе пырайманни никам та çук. Ку вăл эсир чăн-чăнах лайăх учительница пулнинчен килет. Эсир лайăх учительница кăна мар, ачасен çывăх тусĕ те. Сирĕн ĕçĕре партипе правительство пысăк хисепе хурса хаклани пирĕншĕн те, вĕренекенсемшĕн, пысăк савăнăç. Эпир, аслă класра вĕренекен ачасем, сире, Вера Федоровна, хамăрăн тава тивĕçлĕ учителĕмĕре, малашне тата лайăхрах вĕренме, хамăрăн малашнехи кунçулăмăрта сирĕн пекех хăйĕн ĕçне

чунтан паранна ёçченсем пулма, лайах юлташ, çĕршыва-мара усалла çынсем пулма самах паратпар...

Рая çакан пек умсамах калана хыççан Вера Федоровнана выраçсен палла педагогĕ К. Д. Ушинский çырнисен пуххине парне кўчĕ. Рая самах пĕтерсен, Тамара, хай калаçна пекех саванса, çамаллан сывласа ячĕ. Çаканпа пĕрлех пуху пĕтесрен хăраса ўксе палханма тапратрĕ. Ачасем ĕнтĕ вырансенчен тара пуçларĕç. Тамара выран-тан тарса тухса кайма та шикленчĕ, кашт пĕшкĕнерех ларса, чатамсарран Райана кĕтрĕ, анчах Рая темшĕн килмерĕ.

Тамара ĕнтĕ тухса тарассах çитнĕччĕ, унан телейне, часах коридор вĕçĕнчи сцена уçалса кайрĕ. Тин вара хĕрачан камалĕ лапланчĕ.

Сцена çине шкулти хор кружокĕ тухса тарсан, Тамаран ирĕксĕрех чĕри ыратса хĕсĕнчĕ. Тамара та, шкулта йĕркеллĕ пулна пулсан, çав ачасем хушшинче тарса юрламаллаччĕ ĕнтĕ. Е çак ачасем пекех пĕр чунтан саванса, киленсе итлемеллеччĕ. Халĕ хор юрлакан пĕр юра та — чуна ыраттарнисĕр пуçне — ним те кўреймерĕ. Мĕн тери ют иккен кунта Тамара!

Çапах та çак ачасене Тамара урах нихçан та тек кураймĕ-и?.. Темĕнле ĕненмелле те мар пек. Анчах тумаллине — тумаллах.

Хор темиçе юра юрлана хыççан Тамара çумне кĕтмен çĕртен Геннадий Васильевич пырса ларчĕ.

— Здравствуйте, Голубева!— терĕ вал.

— Здравствуйте,— таварчĕ Тамара, канаçсарланма тытанса.

— Эсир Куйбышева куçса каясшан тет-и?— ыйтрĕ студент тўрех.

— Романова Рая каларĕ-и?

— Вал та, вал та мар. Эпĕ хам та çапла шухашланаччĕ.

— Кукка ман пата çыру çырса ярасси пирки те малтанах пĕлнĕччĕ-и эсир?

— Эсир ку шкултан сивĕнессине пĕлнĕ...

— Сивĕнесси? Ним сивĕнесси те çук... Эпĕ сивĕнмесĕрех каятап,— вĕчĕрхенме пуçларĕ хĕрача, студент ун шухашне пĕлсех калаçнаран.

— Çук, Тамара, эсĕ тĕрĕс тумастан,— каларĕ студент шаппан.— Халĕ тухса кайни вал — эсĕ йывэрлахсенчен паранинне пĕлтерет...

Студента тин килсе çитнĕ Рая пўлчĕ.

— Сире Вера Федоровна чӗнет,— пӗлтерчӗ вӑл ӑна.

— Юрӗ, Тамара, эпир курӑпӑр-ха,— тесе хӑварчӗ Гена.

— Эсӗ пӑрахсах кайрӑн мана!— ӳпкелешме тапратрӗ Тамара.

— Тамара, мана учительсен пӳлӗмӗнче тытса чарчӗҫ, каҫар... Эпир часах каятпӑр...— хуравларӗ Рая.— Тамара, Тамара, итле-ха, мӗн тери лайӑх юрӑ!..

Сцена ҫинчи хор «Школьный вальс» юрра юрлать иккен. Тамара хӑйне юрӑ килӗшнине те, килӗшменнине те палӑртмарӗ, пачах урӑх шухӑшсемпе пӑтранчӗ; юрра лара-тӑра пӗлмесӗр итлекен Райӑна чӑрмантарас мар тесе ҫеҫ вӑл итленӗ пек пулса ларчӗ.

Вӗсем нумаях та лараймарӗҫ.

— Романова, вырӑн пар-ха эс мана Голубева ҫумне,— илтӗнчӗ паллана сасӑ. Рая тӳрех сиксе тӑрса вырӑн пачӗ. Ку Вера Федоровна пулчӗ иккен.

— Голубева,— тӳрех сӑмах пуҫларӗ учительница.— Геннадий Васильевич сан ҫинчен калани тӗрӗсех-и вӑл? Эсӗ куҫса каясшӑн тет-и?..

Тамара учительница ҫине пӑхса илчӗ те пуҫне чикрӗ.

— Эсӗ, Голубева, пуҫ таврах шухӑшласа пӑхрӑн-и? Чӑнах каятӑн-и?

Тамара ним чӗнмесӗрех пуҫне сӗлтсе илчӗ.

— Мӗншӗн ҫапла шутларӑн?

Тамара чӗнмерӗ.

— Эпӗ сана ӑнланатӑп, Голубева. Анчах лайӑххӑрах шухӑшласа пӑх: тӗрӗс тӑватӑн-и эсӗ, ҫук-и... Ну, тепре куриччен, Голубева.

Ҫапла каласа уйрӑлчӗ Вера Федоровна.

...Тамара шкултан пусӑрӑнчӑклӑн тухрӗ. Хӑйне ӑсатма пулнӑ Райӑна та вӑл, «пӗччен утас килет ман» тесе, шкул умӗнченех киле ячӗ.

Пуҫра тӗрлӗ шухӑш пӑтранчӗ. Вера Федоровна сӑмахӗсем асран каймарӗҫ.

Чӗрере темӗнле ӑнланмалла мар туйӑмсем хускалчӗҫ, темскере ҫав тери шел пек, темшӗн-ҫке чун хурланнӑ пек, тата вӑл хӑй питӗ мӗскӗн пек.

Ҫав вӑхӑтрах кӑмӑл темӗнле ҫӗпӗ еннелле ҫаврӑнать пек.

«Анчах чӑматана та хатӗрлесе хунӑ-ҫке; куккана кӗтме телеграмма та парса хунӑ... Тата анне епле тӑрмашрӗ мана ҫула хатӗрлеме... Ыран... Ҫапах та ыран ҫиттӗр-ха, курӑнӗ».

ÇИРЕМ ВИÇÇĔМĔШ СЫПАК

Хĕрĕх градусран та иртекен шартлама сивĕсем тăнă пирки чылай шкулсенче эрне ытла пуçламăш классенче вĕрентмерĕç.

Паян вара сивĕ ури хуçăлнă: çанталăк самаях ăшă. Çавăнпа паян пуçламăш класра вĕренекен ачасем те шкула кĕпĕрленсе килчĕç те — коридорсенче ирхине сакăр сехет çитичченех тĕпĕртетӳ, шăй-шай çĕкленчĕ.

Ăшă кунсенчи йĕркепе ялапхи пекех уроксем ларичченех вунпилĕк минут малтан — пĕтĕм шкул таппăн-таппăн пухăнса, спорт площадкине ирхи зарядкăна тухрĕ.

Ирхи сивĕ сывлăш, йĕс пек янравлăскер, сипетлĕслер, ачасен кăмăлĕсене çĕклесе, шăмшаксене вăр-варлатса, çирĕплетсе ячĕ те — тултан коридора чарусăр хавас шăвшав йăтăнса кĕчĕ. Уçă сывлăшпа хутăш коридорта йăрă та чĕрĕ ачасенчен сивĕ хут-кĕнеке шăрши, шăнса хĕреллнĕ сивĕ питсен варкăшĕ çапрĕ.

Тăххăрмĕш класра паян пĕр ача та килменни юлман. Кунта иртеннех темĕнле çĕкленчĕк шав тăчĕ.

Хĕрачасем малти парта тавра — хăшĕ ларса, хăшĕ тăрса — кĕпĕрленнĕ.

Кунта — Райăпа юнашар — чиртен тăнă хыççăн малтанхи хут шкула килнĕ Тамара ларать.

Вăл халь чир хыççăн йăл илсе те çитеймен-ха. Пичĕ унăн шуранка, туртăннă, куçĕ путса кĕнĕ. Сасси кăшт мăнăланнăн та, йăвашшăн, пăхăнуллăн илтĕнет, унăн кăмăлĕнчи темĕнле чăрсăр шăнăрĕ хуçăлнă пек туйăнать. Çаврăнкалăш, утти-тăрри вăрахланнă. Çын çине шухăшлăн та, ăна пĕтĕмпех ăпланнă евĕр, тăпласа, хыпаланмасăр пăхать; ыйтнине хирĕç ерипе тавăрса калать.

— Тамара, кил, манпа лар,— туртать ăна хулĕнчен хăйпашка хĕрача Зина.

— Çук, эпĕ кунтах,— тет Тамара. Уп енчен, именнĕ пек, вăраххăн пуçне пăрать.

— Çук, ĕнтĕ, ăна эп ямастăп хам çумран,— тет Рая.

Хĕрачасем иккĕш те шакла пуçлă... Анчах ачасем куна юри асăрхамăш пулаççĕ. Тем пирки çӳç çинчен çăвар уçма пикеннĕ ачана та сиввĕн тăрăннă куçĕсем тӳрех çăвара хуптарчĕç.

— Ой, Тамара та килнĕ,— теççĕ класа тин килсе кĕрекенсем.— Чиперех-и?

— Эс тутăрна çых,— теççĕ хĕрачасем.— Вĕрĕлетĕн ак.

Арçын ачасем сăмаха хутшăнмаççĕ. Апла пулин те,

хӗрсем ҫуйхашнине итленӗ май, вӗсен хаваслӑ лару-тӑруне пӑсасшӑн мар пулса, никама та тивмен шӳтсемпе перкелешсе илеҫҫӗ. Вӗсем — кам кӳренменнине кура — пуринчен ытла Райӑран тӑрӑхлама пӑхаҫҫӗ. Рая, хӑюллӑ та чӗрӗ хӗрача, нихҫан та, аяла пулса, ушкӑнти сӑмаха хӑй ҫинче тытӑнса тӑма памасть. Шӳте шӳтпе тавӑрма кӑмӑл ҫук чух мӗнле те пулин ӗҫлӗ калаҫу пуҫарма васкать.

— Итлӗр-ха, итлӗр, ачасем,— терӗ вӑл хальхинче, класа хирӗҫ ҫаврӑнса.— Ыран студентсен практика пӗтет... Атьӑр, Геннадий Васильевича ӑсатма каяр...

Сӑмах ҫинех класа «ҫылӑхсӑр ҫын» Геннадий Васильевич кӗрет. Йӗрке тӑрӑх ачасен учителе ура ҫине тӑрса ним чӗнмесӗр сывлӑх сунмалла пулин те — ачасем пӗр харӑс «здравствуйте» тесе яраҫҫӗ. Геннадий Васильевич йӑл кулса илет те класс хӑмине сӗрмелли лӑстӑка урайӗнчен сӗтел ҫине илсе хурать.

— Эсир вӗренекенсен йӗркине начар пӗлетӗр,— тет вӑл куларах.

Ачасем кӗр! кулса яраҫҫӗ.

— Эсир каятӑр-им?— ыйтать тахӑшӗ.

— Каймалла,— тет студент.

— Эсир вӗренсе тухсан — пирӗн шкулах килӗр,— тет тепри. Ачасем шавласа каяҫҫӗ.

— Эсир ҫыру ҫырӑр,— тет студент.

— Ҫыратпӑр, ҫыратпӑр,— теҫҫӗ ачасем.

Геннадий Васильевич класс ҫине пӑхать те ҫапла калать:

— Паянтан сирӗн класс пуҫлӑхӗ урӑх пулать.

Класс шӑпӑрт.

— Кам?

— Кам пулать?— илтӗнет самантран.

— Вера Федоровна.

Ачасем хаваслӑн йӑшӑлтатса илеҫҫӗ.

Каллех сӑмах ҫинех класа Вера Федоровна тата директор пырса кӗреҫҫӗ.

Директор таса класс хӑми ҫине, парта хушшисене пӑхса илет, сӗтел умне пырса тӑрать.

— Кам килмен паян сирӗн?— ыйтать вӑл.

— У-у, Голубева та килнӗ,— тет Вера Федоровна.— Мӗнлерех-ха сывлӑхӑр сирӗн? Ураланатӑр?

Тамара айӑплӑн ура ҫине тӑрать те пуҫне чикет.

— Лар, лар,— хушать директор.— Романова Райӑпа ларатӑн? Аван, аван. Йӗркене кӗрет класс майӗпе!

Тамарӑпа кӑшт аван мар пек. Ачасенчен те, учитель-

сенчен те... Анчах çапах та малтан хăй шутланă пекех мар. Çак малтанхи самантран пуринчен ытла хăранăччĕ ĕнтĕ вăл. Пĕрер урок ларсан — кайран татах хăнăхатăн. Чăн та, мĕн тери ютшăнса кайнă иккен вăл çак ачасенчен, юлташсенчен... Çапах та юлташсем-çке-ха вĕсем!

Вĕсем, ав, Тамара шкула килнĕшĕн савăннă. Тамара хăй те çакна туймасăр тăраймарĕ. Çакă тата ытларах вĕсем умĕнче каçарма çук айăпа, пысăк парăма кĕнĕ пек туйăнать.

Тамара вара вĕсене юлашки вăхăтра пĕрре те аса илмен. Усалпа та, ырăпа та. Вĕсенчен кирек те хăшĕ шкула килмесен те — асăрхаман. Вĕсем Тамарăшăн çĕр çинче çукпа пĕрехчĕ, мĕншĕн тесен Тамара хăйне те кунта пачах картусăр тесе шутланă.

Вĕсем пачах, Тамара шутланă пек, тимсĕр-чунсăрскерсем мар иккен.

Вĕсем Тамара чирлĕ чух киле пыра-пыра каяççĕ, тата пушă алăпа та мар... Кăмăл çук çĕртенех йăпатма, хавхалантарма пăхаççĕ.

Рая та хисеплет тесе Тамара пихçан пуçа илменччĕ. Вăл комсомол пухăвĕсенче мĕнпе те пулин чуна тивертсе илетчĕ-илетчех. Тамара ăна çавăншăн чăтма çук юратмастчĕ. Вăл хăйне Тамарăран лайăхрах, ăслăрах та пултаруллăрах пек кăтартасшăн ушăнса çӳрет тесе шутлатчĕ.

Валентин тата? Рая каланă тăрăх, унăн Тамарăна тем каламалли пур иккен. Унăн, тен, леш çыру пирки тем калаçмалла? Анчах мĕншĕн-ха ун çине пăхсан, ăна курсан — чĕрере пĕр хĕлĕх те чĕтренмест халь? Чăн та, мĕн тери айван туйăмсем пулнă Тамарăн ун чухне. Пачах юрату та мар, темĕнле юрату шыранă вăхăт пулнă пулас,— кама та пулин юратас, юраттарас ачалла айван туйăмсем... Çавсене вара Тамара чăн-чăн туйăмсемпе пăтраштарнă-и? Тамара халь кирек те кама савас пулсан та... Çук, çук! Кам пулсан та, вăл Валентин мар! Çапах та ăна мĕншĕн çиллενес-ха?

Учительсем тата? «Вĕсен ĕçĕ çавă та — муталаççĕ пире». Çапла шутлатчĕ Тамара. Акă халь вĕсем Тамара шкула таврăннăшăн хавас. Тамара вĕсене хăйĕн утăмне, хусканăвне пĕр курса, пĕр пĕлсе тăнăшăн кураймастчĕ. Вĕсем ним йӳп-йӳтĕмсĕрех вăрçма сăлтав шыранăн туйăнатчĕ.

Тамарăна усал тăвасшăн пулнă-ши вĕсем? Елена Сардоновна кăна мар-çке-ха шкулта. Çук-им ырă учительсем, ырă ачасем?

Райăпа малтанах туслашнă пулсан та, теп, çак инкексем, асапсем пуç çине йăтăнса анмĕччĕç. Ун чухне, теп, пурнăçăн тӳнтер енĕсенчен малтанах пăрăнса иртме май çаврăнатчĕ.

...Акă шăнкăрав! Пĕрремĕш урока ларма чĕнекен малтанхи шăнкăрав сасси... Шăнкăрав сасси паян шкулсăр, юлташсемсĕр тусăнса çитнĕ Тамарăшăн пачах çĕнĕлле янăрать: уççăн, шанчăк парса, таçта çирĕппĕн утма чĕнсе.

* * *

Студент-практикантсем автобус станцине пухăнчĕç. Чи малтан Гена çитрĕ, унтан Нинăпа Феня, кайран ыттисем те.

Нинăпа Феня, çӳхе пальто çеç тăхăннăскерсем, шăнса кайнă та ăшăнма тесе тĕрткелешеççĕ, пĕр урине теприн çумне тапкаласа, юра нăтăртаттарса, каллĕ-маллĕ уткалаççĕ. Ыттисем, хăйсене сырса илнĕ ачасенчен ниепле те уйрăлаймасăр, çул варринчех тăраççĕ-ха.

Гена мĕн килнĕренпех автобус кĕтмелли хӳшĕ умĕнче уткаларĕ.

Практика пĕтнĕ ĕнтĕ. Каллех вĕренӳ пуçланать...

Генăн хăйĕн те вĕренмелли нумай-ха — вĕрентме вĕренмелли!

Иртнĕ икĕ уйăх... Мĕн чухлĕ ăша вĕçермелли, кулянмалли пулнă унта! Анчах ку учитель ĕçĕн пуçламăшĕ çеç-ха, тĕрĕссипе, пуçламăшĕ те мар — умсăмахĕ çеç.

Пĕтĕмпех малта халь — йывăрлăхсем те, çĕнтерӳсем те. Çăмăл-им çĕнĕ ĕмĕрĕн çĕнĕ ăрăвне пăхса ӳстерме? Çĕнĕ ĕмĕрте пĕр япăх çын та ан пултăр, пĕр усал ача та...

Усал ача? Пур-и-ха вăл учительшĕн усал ача?

Учительшĕн нимĕнле усал ача та çук, вĕрентмелли ача кăна пур. Никам та çĕр çине «усал» çуралман, вăл кайран пăсăлса кайнă — учитель ачан пĕр-пĕр кăлтăкне вăхăтра асăрхаманнипе, ача япăх учитель аллине çакланнипе т. ыт. те. Çĕр çинче, кам пулсан та, япăх учитель çеç пулас марччĕ. Çĕр çинчи мĕнпур киревсĕр çынсемшĕн япăх учитель айăплă. Мĕнпур киревсĕр этеме вăл çуратнă...

Гена автобус киличченех çакăн пек шухăшсемпе уткаларĕ.

Автобуса кĕме тăрсан, вăл хăйне такам ятран чĕннипе каялла çаврăнчĕ.

— Геннадий Васильевич!— чĕнчĕç ăна.

Кусем 9-мӗш класс хӗрачисем иккен.

— 9-мӗш класс ячӗпе çакна йышӑнма ыйтатпӑр. Чӗп-чӗрӗ чечек! Ӑçтан тупнӑ вӗсем ӑна хӗлле?

— Тавах,— терӗ Гена.— Анчах шӑнса каймасть-и вӑл çитиччен?

— Эсир ӑна хӗве чикӗр,— терӗç хӗрачасем.

Гена ачасемпе сывпуллашрӗ, автобуса кӗме васкарӗ. Вара вӑл çул тӑршшӗпех хӑй куçӗ умӗнче 9-мӗш класс ачисене курса пычӗ.

Тамара пирки шухӑшларӗ.

Усси пулчӗ-ши Гена ӗçӗнчен?

Чӑн та, Гена ун çинчен тӗплӗ характеристика çырса хӑварчӗ ӗнтӗ. Вӑл учительсене кӑшт пулӑшма тивӗç. Çакӑншӑн директор хӑех Гена умне пырса ал тытрӗ.

Тата мӗн?

Тата çӳлтен вӗçсе анакан çынна ӳксе аманасран мӗнпе пулӑшма пулӗччӗ-ши?

Çапла, вӗçсе анакан çынна. Гена практикӑна пынӑ тӗле ӗнтӗ хӗрача «татӑлса аннӑ». Гена килнӗ вӑхӑтпа хӗрача хӗррине çитсе тӑнӑ вӑхӑт пӗр килни çеç — нумайӑшне Гена çине тӳртӗн пӑхтарчӗ.

Тамара — капла калама майӗ килет пулсан — шкулӑн, килйышӑн чи сисӗмлӗ тӗкӗрӗ.

Тамарӑна вара халь чи кирли — çывӑх юлташсем. Кун пек юлташсем халь уншӑн, Вера Федоровна шутланӑ тӑрӑх, иккӗ: пӗри — Рая, тепри — пӗрле вӗренекен Вова, Тамарӑсен кӳрши... Ку ачасемпе çыхӑну тытни Тамарӑшӑн пӗрре те сарӑплӑ мар. Кунсӑр пуçне Вовӑна та Тамара пек хӑюллӑ, чӑрсӑр хӗрача туслӑхӗ çеç усӑллӑ пулма пултарать-мӗн, мӗншӗн тесен ӑна килте амаçури пусмӑрласа çитерни иккен. Вӗсем пӗр-пӗринпе хутшӑнни вӗсене иккӗшне те ырӑ енне улӑштарма пултарнӑ.

ЭПИЛОГ

Ялтан вунултӑ çухрӑмри вӑрманта илнӗ утта çулма ик-виçӗ мӑн çынна тата шкул ачисене яма шутларӗç.

Вунвиçӗ çын виçӗ лавпа ирех çула тухрӗ.

Малти айтур урапа çинче виççӗн: колхозри экономист Мирон Титович Вирцов, типшӗмрех тӑлпан кӗлеткеллӗ те çӳллӗ çамкаллӑ, кӑвакарчӑн пек йӑваш кӑмӑллӑ арçын, отпуск вӑхӑтне усӑ сывлӑшра ирттерме шутланӑскер, унтан — унӑн ывӑлӗ Вова, пӳ-сирен те ашшӗнех пӑхнӑ та — ашшӗ пекех икӗ пуç çаврашкиллӗ, çырӑ çӳçлӗ, хӑмӑр куç-

лă йěкěт тата Настя, конюх, утă çулма каякансене леçме пыракан арçынла хěрарăм.

Иккěмěш урапа çинче пиллěкěн: тăватăм çул естествознани вěрентнě, халě пенсие тухнă Семен Павлович учительпе Геннадий Васильевич çамрăк учитель, унтан икě хěр-тантăш — Тамарăпа Рая, юлашки, Тамарăн курма килнě куккăшě, Можаев майор, вырăсра нумай пурăннă пулин те чăвашла таса калаçаканскер.

Хыçалти кěмсěркке урапа çинче—9-мěш класс пěтернě виçě арçын ачапа икě хěрача.

Шкул ачисене — кăçал институт пěтерсе, хăй çак практикăра пулнă шкулах ěçлеме килнě Геннадий Васильевич ертсе пырать. Çакăн пек шкул ачисен бригадисене вěрентěве производствăпа çыхăнтарас юхăм сарăлнă май — пур çěрте те йěркеленě. Кун пек бригадăсен усăлăхě колхоз ěçěшěн кăна мар, вěрентӳшěн те пуррине учительсем ěнтě туйнă. Класра пěрле ларакан ачасем те уй-хирте пачах урăхла: шкулта чěмсěррисем — кунта шавлă, харсăррисем — лăпкă, вěренӳре ěлкěрсе пырайманнисем — отличниксенчен те малта.

Учителěн те кунта — ялан ачасем хушшинче пулнăран — вěсемпе пěрле шӳт тумалла та, вылямалла-кулмалла та е, вăхăтлăха ху камне манса, ачасен шайне «анмалла» та килет,— паллах, вěсем асăрхами тантăш çеç пулса ларас шая çитиех мар ěнтě: учителěн кирек хăçан та учителех пулмалла. Кунашкал çěрте ахаль çеç каланă пек сăмах та ача чунне витерет.

Çавăнпа шкул ачисен бригадинчен нихçан та пěр-пěр учитель татăлман. Ачасем те ытларах класăн-класăн пайланса ěçленě.

Колхозăн çак инçетри утине çулма кайма çеç 9-мěш класса ачисемпе пěрле ытти çынсем те ерчěç. Çавăнпа пулě кăçал вăтам шкул пěтерсе тухнă Вова малтанхи самантра 9-мěш класс ачисем хушшинче хăйне хăй ытлашши пěччен пек туйса пычě.

Лавсем лапамра ларакан ялтан тӳрех улăха тухаççě те, çурçěр-хěвеланăçнелле пăрăнса, çухрăм инçěшěнченех сěвекленекен тӳпемелле хăпараççě.

Пěр-икě кун хăмăт курмасăрах тулăх апат çинче тăнă утсем ниепле те, кěлеткисене çăмăллатса, урисене çемçетсе, юртă çине куçма йěркеленсе çитеймеççě: чуманланаççě, юлхавланаççě, пěчěк сăлтавпах чарăна-чарăпа тăраççě те — урапа айěнчен кăпăк купи çатăртатса хыçалалла юлать.

Малти урапа çинче Вова, урисене çĕре усса, ашшĕпе çурăмпа-çурăмăн сылтăм ӳрече çинче ларать. Настя тилхепе тытнă май сулахай енне чи мала вырнаçнă. Пĕшкĕнмессерен упăн кĕпи витĕрех çурăмĕ çинче виçĕ мăкăль сиксе тухать. Вăл «Е-ей!» тесе уçкăртать те, тилхепене хуçлатса, малалла ӳпĕнет. Карт туртăннă урапа ăна каллех малтанхи пек тӳрлетсе лартать. Вовăпа ашшĕ вара, кĕлеткене тӳрĕ тытма ĕлкĕрейменскерсем, ӳкеслех сулăнса каяççĕ.

Тин тухнă хĕвел хыçран пăхать. Тӳпе янкăр тăрă. Хĕрлĕ хĕвеллĕ кун пуласси паллах.

Курăксем çинче — кăваккăн-хĕрхĕлтĕмĕн ялтăракан сывлăм. Çул çинчи тусан та çиелтен сывлăмпа пусăраннă. Тусанăн нӳрĕ сийĕ урапа кустăрми çумне çӳхен çыпçăнса хăпăнать те — хыçала урапа йĕрĕ тăрăх типĕ шурă тусан тухса юлать, сăмсана сунаслаттармаллах йӳççĕн пырса çапать.

Вовăна йĕри-тавралăх пĕтĕм талккăшĕпех темĕнле ыйхăран çывăрса тăранаймасăр вăраннă хыççăнхи пек тĕлĕклĕн-мĕнлĕн, кăтăшлăн-мĕнлĕн те асамлăн курăнать.

Сулахай енче тĕтреллĕ улăх, шыв армань пĕви. Улăхра та, пусу çинче те тин çеç ялтан тухнă ĕне, сурăх касăвĕсем çӳреççĕ.

Урапа çинчи çынсем шухăша кайсан, утсем те, айтаса пыманнине кура, хуллентерех те хуллентерех утма тытăнаççĕ, чарăнсах тăраççĕ. Настя вара каллех тилхепине хуçлатса сывлăшра çавăрать, çавăрать те ша-ап! тăсать лашана. Утсем тепĕр лам юртса илеççĕ. Хыçалти урапасем çинчи ачасем кĕçех юрă пуçлаççĕ. Вова тавралăха сăнанипе пĕрлех кайри урапасем енне те пăхкаласа илет. Хушшăн-хушшăн ăна малалла ӳпĕнсе пăхакан Тамарăн пуçĕ е симĕс кĕске чăлхаллă, кĕлĕсĕр пушмаклă ури курăнса каять.

Тамарăна курсанах нервăсем темĕнле питĕрленеççĕ. Çакăн пек самантра Вова хăй те айванла курăнать пулмалла. Темшĕн-çке Тамара умĕнче намăс пек туйăнать.

Тамара пек тӳрĕ чунлă, ăслă хĕрача хальччен тĕл пулманччĕ. Вăл хăй тĕнче илемĕ, хĕвел пекскер, хăçан та пулин пĕр-пĕр уйрăм çыннăн савнийĕ пулĕ тени те ăспуçа шăнăçман. Çĕр çинче вăл хăй пек илемлĕ çынна çеç шырать. Апла пулсан, сан енне чĕри выртман çынпа, хăвна тĕртсе ярассине пĕле тăркачах, мĕншĕн чунра

вĕри туйăм хускатса ăша кăлăх çунтармалла, сăмахран, хăвăнтан икĕ çул кĕçĕн хĕрачашăн?

...Тăвайккинчен хăпарнă чух пурте урапа çинчен анаççĕ. Вирцов йывăррăн туртакан лашана пулăшма урхалăх пушатать.

Лавсем лавккаллă ялта чылаях чарăнса тăнă хыççăн каллех малалла каяççĕ, вăрмана кĕреççĕ.

Çӳллĕ те яштак хырсен лăсси-турачĕсем чăн тăрринче çеç юлнă та, пĕрлешсе кайса, пĕтĕм вăрмана çиелтен аслăк çи пек витсе тăраççĕ. Çав «аслăк» айне вара тĕрлĕ лутра йывăçсемпе чăрăшсем кĕре-кĕре тăнă.

Йăмăх хĕвел çутипе шарнă куçсем, хырлăх айĕнчи тĕттĕме час хăнăхаймасăр, малтанхи самантрах — çуркунне «куç тула юлнă» пек — ним те палăртмаççĕ.

Кунта çулĕ тĕпренех йывăç тымарĕсемпе каркаланнă. Лакăмсенче халĕ те-ха виçĕмкунхи çумăр шывĕ кӳлленсе тăрать, тĕл-тĕл çăрăлчăк. Шӳсе тăраннă çĕр урăх пĕр тумлам та хăй ăшне сăрхăнтараймасть, шыв урапа кустăрми айĕнче тикĕт пек хуралса, çăралса пăтранать те кустăрма тавра явăнса юхать.

Вăрман сĕмлĕхĕнче ăçта пăхнă унта хăрăк шанкă япăнса выртать. Вĕсем выртнă çĕртех вутпуççи пек таткаланса-çĕрсе кайнă та — çĕр çумне пусăраннă, пĕр вĕçĕнчен çĕклесен, хăй йывăрăшĕпех пĕр-ик тĕлтен хуçланать, ăна, шӳсе çемçелнĕ тата хĕрсе кайнăскерне, пăрсан — вĕри шыв юхса тухать.

Утсем тавра ĕнтĕ шултра пăвансем явăна пуçларĕç. Утсем текех е аяк, е чара çинчи тирĕсене чĕтрете-чĕтрете илчĕç.

Вăрмана çитсен, ачасем, харпăр тĕллĕн саланса, вăрман ăшшĕн пычĕç. Геннадий Васильевич вĕсене: «Питех аякка ан кайăр, çĕтсе юлăр тата»,— тесе асăрхаттарса пычĕ. Хĕрачасем, унтан та кунтан ау! кăшкăрашса е сулахайра, е сылтăмра вĕлтлетрĕç. Кĕçех Райăпа Тамара та пĕрер шĕшкĕ туратти хуçса тухрĕç те, хаваслăн çуйхашса, ута тапăнакан пăвансене хăваласа утрĕç.

Малти лашана та е каçанĕнчен, е ырçинчен Вирцов ывăç тупанĕпе çапкаласа илчĕ, аллине вара пăван юлашкинчен атă кунчи çумне сăтăрса тасатрĕ.

Лавсем часах çӳллĕ хыр-чăрăш айĕнчен уçă вырăна тухаççĕ. Кунта вăрмана пĕр çич-сакăр çул каялла каснă та вĕсен вырăнне ретĕн-ретĕн юман, хыр, каврăç хупавĕсем лартнă. Вĕсене йăлтах вăрман курăкĕ, шĕшкĕ, ăвăс, çĕ-

мĕрт, пилеш пусса илнĕ. Çакăнта çулмалла ĕнтĕ утă: каврăç, юман хунавĕсене курăкран тасатмалла.

Сĕтеклĕ курăка утсем те пынă çĕртех çул çинчен пăрăнса пĕрер çăвар татса илмесĕр тӳсеймеççĕ.

Лавсем вăрмантан тухма пĕр çур çухрăма яхăн юлсан чарăнаççĕ. Арçынсем ут тăвараççĕ. Настьăпа хĕрачасем ут хатĕрĕсене урапа çине купалаççĕ, тилхеписене хутламăн-хутламăн хуçлатаççĕ.

Геннадий Васильевич ачасене урапа çинчен япаласем пушатма пулăшать, унтан хӳшĕ тума вырăн шырама каять, хĕрачасене шыв шырама чуптарать.

Можаевпа Вирцов, Семен Павлович тата Вова çулмалли çаран тавра утса çаврăнаççĕ.

— Паян çава тытса ятне те тăвас мар,— килĕшсе сăмах татаççĕ мăн çынсем.

Унтан арçынсем хӳшĕ валли йывăç касма каяççĕ, хĕрсем кăвайт пуçтараççĕ, шыв ăсса килеççĕ, çĕрулми шуратаççĕ.

— Хӳшшине хĕрсем валли тусан çитĕ,— хамăр ирĕкре те аптрамăпăр,— тет Можаев.— Лайăх йывăçсене касма шел.

Апат хыççăн Геннадий Васильевич шкул ачисене хăй тавра пухать. Вирцов, Семен Павлович, Можаев, Вова уйрăм ушкăна лараççĕ.

Каç енне таçтан вăрăмтуна тĕркисем çăмха çăмхаланă пек çаврăнса тапса килеççĕ. Вирцов вара кăвайт çине чĕрĕ чăрăш лăсси, чĕрĕ çулçă-çапă хуçса пăрахать те — вĕсем тивсе иличчен шап-шурă çăра тĕтĕм йăсăрланса тăрать, вăрăмтунасене кăвайт çывăхĕнчен хăваласа каять. Анчах тĕтĕм сирĕлсенех вĕсем, çапла тĕтĕмпе тарăхтарнăшăн хаярланса кайнăскерсем, каялла вирхĕнсе çитсе, малтанхинчен те хытăрах тапăнаççĕ. Ӳт çине пырса ларнă вăрăмтуна кĕлетки пăхса тăнă çĕртех мăнтăрланса, хĕрелсе-хĕрелсе пырать.

Вăрăмтунасем кĕпе витĕрех çыртнăран хĕрсем тутăрсемпе пĕркенсе лараççĕ.

Вовăсен ушкăнĕнчи арçынсем малтанах ачасем шавлăн калаçнине, юрланине ним чĕнмесĕр итлесе лараççĕ, чĕлĕм чĕртсе яраççĕ, кайран тин ун-кун çинчен сăмах хушкаласа илеççĕ.

— Ĕлĕк ку вăхăтра утă çулмап,— тет Семен Павлович.

— Халĕ халăх ăсланса кайрĕ,— тет Можаев.

— Да-а,— тет Вирцов.— Мĕн çăвара илчĕ — çавна тăватех.

Унтан Можаев кĕтмен çĕртен Вовăн амаçури амăшĕ çинчен сăмах хускатать:

— Мĕнле арăм тупнă эсĕ, Мирон Титович?— çамкине хĕссе илет вăл.— Е эсир хăвăр ăна çав тери картмастăр-и?

Амаçури Вовăна ашшĕ командировкăсенче чух ытларах асаплантарнă пулин те, Вирцов хăйĕн иккĕмĕш арăмĕ мĕнлине пĕлнĕ, анчах вăл амаçури картманлăхĕ çамрăк ача чунне йывăр тивет тесе шутламан. Чăн та: «Мĕн тăвас ку хăлăхсăр арăмпа?»— тесе шухăшламан мар вăл, анчах ват пуçпа арăм уйăрасси хăйĕншĕн те, Вовăшăн та пысăк хурлăх пек туйăннă.

— Кăмăлĕ çапла ун,— тавăрать Вирцов.— Нерви пăсăк.

— Нервăна ăна лăнчă яма юрамасть,— тет Можаев.

— Мĕн тăвас тен... Тытаймасть,— калать Вирцов.— Малтанхи упăшки вилнĕ. Хăй вăл çав тери ачашăн çуннă, анчах пĕр ача та пӳрмен ăна. Çакна май пурăна киле мĕнпур ача çуратакансене, унтан мĕнпур ачасене тӳсейми пулнă. Хам та, Вова та нихçан урлă каламан. Юратмасть ачасене. Пулать-çке çавăн пек. Сăмахран, пĕр-пĕр ăстаçă, калăпăр, юрăçă пулма ĕмĕтленсе ĕмĕрне ирттернĕ çынсемпе те çавăн пек килсе тухать. Тăрмашать, тăрмашать... Мĕнле юрă пурччĕ-ха.

«Çтаппан çăпата тăвать, тет,
Тăвать, тет, те макăрать, тет,—
Çăпати сулахай пулать, тет».

Çаплаччĕ-и? Унăн та çавăн пек. Юлашкинчен вăл мĕнпур юрăçсене тӳсме çук курайми пулса çитет. Вĕсем çинчен тĕрлĕ элек сарма, вĕсен ятне варлама пикенет. Çапла-и, Семен Павлович?

— Туйĕнче пулман, юррине илтмен,— тавăрать лешĕ ытарлăн.

Нумайччен калаçса лараççĕ арçынсем. Калаçу тарăнатарăна кĕрсе пыра пуçласан, ыйхă çинчен аса илеççĕ. Шкул ачисем çывăрма выртнă та ĕнтĕ. Хĕрачасем пĕр хӳшше, арçын ачасем — теприне.

— Ну, кĕçĕр çитĕ ку таранччен вăрăмтунасене тăрантарса ларнипе,— тет Семен Павлович та.

Тăватă арçын уçă çĕрех утă сараççĕ те юнашар тăсăлса выртаççĕ, çиелтен икĕ çиттипе пĕркенеççĕ.

* * *

Ирхине ашшĕ Вована хĕвел тухиччен вăратрĕ.

Вова пит çума вар хушшине анчĕ. Кунта пĕртен-пĕр ĕçмелли шыв лупашки. Шывĕ хĕрлĕ хăва айĕнче, тăппăмра. Тĕсĕ сарăрах та — тути техĕмлĕ мар, сĕлтĕ пек çемçе, кăшт тăварлăрах тата кăнтăрла ăшăнса каять: лĕп—ăша та уçăлтараймасть.

Çак шыв патнех юрлакаласа Тамара анчĕ. Ун сасси çывхарнăçемĕн Вова васкарах шăлăнкаларĕ те майкине тăхăнчĕ, хăй сисмесĕрех тĕмĕсем ăшнелле пăрăнса кĕчĕ. Пĕр хушă вăл хĕрача, кĕпе аркисене пăчăртарах хĕстерсе, çыран хĕррине майлашса ларнине, арçын ачан пек кĕске çӳçне туранине пăхса тăчĕ. Хĕрача ăна юмахсенчи çынна астарма кӳлĕрен тухса ларнă пирĕшти пекех туйăнчĕ. Вова вара тăвайккинчен хăпарчĕ. Тăвайккинчен васкаса хăпарнипе пулас унăн чĕри хытă сикме тытăнчĕ, чунĕ темшĕн эрлĕкленсе ыратрĕ.

Ирхи вăрмана кĕçех тапхăр-тапхăр кăшкаçпа çава çупни, халь кăна килсе иленнĕ çĕн кайăксем пĕрне-пĕри сасă парса чĕннĕ евĕр, е пĕр енчен е тепĕр енчен илтĕнсе хускатрĕ. Çава кăшкаçланă сасăсем хыççăн пĕтĕм уçланкă харăс сулнă çавасем айĕнче темĕнле улăпсем хаш-штик! хаш-штик! хашканă майлă илтĕнсе тăчĕ. Вăрман кайăкĕсем малтанах ку сасăран хăраса шăпăрт пулаççĕ, кайран тин, хăнăхса, хăйсем те сасă паркаласа илеççĕ.

Вăйран туртса кăларнă çава айĕнче сунчăк майлă варăш кĕпçипе, куккук урипе, сĕлĕ майлă сĕсенпе пĕрле хурăн çырлисем касăла-касăла ӳкеççĕ. Сулхăнра вĕсем шултра та таса, сăрт çамкинче — вĕтĕрех те, хуралнă, кайăк сăхнă. Çăвара хыпсан — уй хăнкăли тути калать.

Мăн çынсем çаранăн пĕр пуçĕнчен, шкул ачисем, хăйсем уйрăм тăрса, тепĕр пуçĕнчен çулаççĕ. Йывăççем хыçĕнче хăвăн умăнта çулакан та курăнмасть.

Курăк ăшĕнче ăçтан килчĕ унтан шăрчăксем сике-сике ӳкеççĕ.

Вова тапхăр-тапхăр çуласси çинчен мансах утă ăшне çырла шыраса кĕрсе каять, хĕвеле хирĕç пăхнипе çырлисем хура курăна пуçласа куçран çухалсан тин — çĕнĕрен çулма тытăнать.

Шкул ачисен ушкăнĕ енчен те Геннадий Васильевичăн: «Юрĕ, юрĕ, çырлине кайран çийĕпĕр»,— тенĕ сасси илтĕнкелет.

Ирхи тухăмра чылай çулаççĕ.

Кăнтăрла тĕлне çанталăк чăтма çук шăрăхлатать. Вова каллех шыва анать.

Пăвансем те шыв патне пухăннă. Çиелте шыв такисем ярăнса çӳреççĕ. Вова котелока шыв ăшнех путарать те хăвăрт туртса кăларать. Котелока çапла кăларнă май çӳпçап аяккалла сирĕлсе юлать, çав-çавах пĕр шыв таки те пулин лекетех.

Вова тăвайккинчен хăпарма та тăнăччĕ ĕнтĕ, çырмана хĕрсем чупса анчĕç.

— Вова, Вова,— терĕ Тамара, малтантарах чупса аннăскер.— Мана шыв ярса пар-ха, юрать-и?

Вова ним сăмахсăрах Тамарăн йĕкĕрлесе тытнă ывăçĕ çине шыв ячĕ. Вăл, куççем хире-хирĕç пулсан, хĕрачан куç шăрçи — те хĕвел çинче шарса кайнипе вара — çав тери пĕчĕккине асăрхарĕ, çил унăн кĕлеткине пăчăртаса кăтартнă май, хĕр епле халь йăлтах пĕве çитнине курчĕ.

— Итле-ха, Вова,— тет Тамара.— Сасăсенчен ылмаштарса тĕрлĕ юрă тума пулать, çапла-и? Ак, калăпăр, тĕрлĕ чечек шăршисенчен юрă тума пулать-и? Сăмахран, улăхра тĕрлĕ шăршăсене пула — темĕнле илемлĕ юрă итленĕ чухнехи пек туйăнса каймасть-и сана?

— Асран тайăлнисен пулать те пуль,— хăй тĕрĕс каламаннине пĕлсех сиввĕн калать ăна Вова.

— Çук, суятăн!— тавăрать Вовăна хирĕç Рая.— Пуян чунлисен!

Вова, хĕрсене хирĕçлесе калать пулин те, çак тавралăхра, чăн та, чуншăн пачах çĕнĕ юрă пуррипе туйса тăрать.

Кăнтăрлапа каллех кăвайт умне пухăнаççĕ. Хăмла çырли тата чей курăкĕ ярса чей вĕретеççĕ.

Вовăпа ашшĕ, пĕр куркаран ылмаш-тĕлмеш чей сыпкаласа, сухари çиеççĕ.

Тамарăпа Рая, пуринчен малтан çисе тăранса, çерем çине чавсаланаççĕ те кĕнеке вулаççĕ. Хăйсен кĕпе аркисене курăк симĕсси çапнă.

Тамара пĕрехмай Вова çине пăхкаласа илет. Вова тӳррĕнех пăхма хăймасть, ăнсăртран пек çеç пăхкалать; хĕрсем ура çине тăрсан, вĕсеп ал тунисем çине курăксенчен урлă-пирлĕ хĕрлĕ йĕрсем çапăннине асăрхаса юлать.

Вовăн ĕнтĕ Тамара кунта пулнишĕн чун тăварланмасть. Пачах урăхла, темскер ăшăтса тăнă пек вăл кунта чух.

Вăл çак купĕпех темĕнле ăнланмалла мар туйăм тыткăнĕнче çӳрет. Хушшăн-хушшăн шкул ачисем енчен Та-

мара сассине илтсен, çак туйăм çĕнĕрен амаланать. Каçхине вăл хăй сисмесĕрех кăмăлĕпе пăлханса кăвайт умне утать.

Каçхи апат хыççăн Геннадий Васильевичпа шкул ачисем çывăхри яла çамрăксен ваййине курма каяççĕ. Ытти арçынсем, Вовăна япаласем пăхма хăварса, çывăхри утар хуралçи патне утаççĕ.

Вова куç умĕнчех асамлăн илемленсе пыракан таврапăха ăвăнса сăнать.

Тапхăр-тапхăр çутçанталăк ăна юмахри пек туйăнса каять. Чăнах та... Хыçра хура вăрман, малта уçă вырăн. Хĕвел тин çеç çӳллĕ хырлăх хыçне аннă. Умри йывăççемпе курăксем çине туй тĕслĕн хĕрелнĕ пĕлĕт çути ӳкет.

Шăп. Çав тери шăп. Анчах таврара кас-кас пурнăç та, тĕнче те чарăнса ларнă пек, çак шăплăхран та шăплăх пулса каять. Вова вара тĕлĕнсе пуçне çĕклет те ăнкарма тăрăшать: «Мĕн ку?»

Э-э! Паçăртанпах пĕр вĕçĕмсĕр чăрлатса ларнă шăрчăксенчен пĕри чарăннă иккен. Сан хăлху, ăна илтсе йӳçĕхнĕскер, çав вĕçĕмсĕр пĕр евĕрлĕн тăсăлакан сасса та шăплăхпа пăтраштарса янă-мĕн. Тăнласа итлесен тин — таçта аякра-аякра, çырма леш енче-и, халĕ те-ха шăрчăк чăрлатнине илтетĕн. Анчах сана çырма леш енче пек туйăннă шăрчăк та — алă тăсса çитмелле çĕртех.

Вова çапла çутçанталăкпа киленсе ларнă май тахçанах каç еннине те сисмест.

Кĕçех утара кайнă арçынсем те, яла кайнă шкул ачисемпе Геннадий Васильевич та таврăнаççĕ. Утара кайнисем пурте кăшт хĕрĕнкĕ. Яла кайса килнĕ ачасем шавлă, хаваслă. Вĕсем темĕнле çĕнĕ юрăсем вĕренсе килнĕ.

— Вова,— тет Геннадий Васильевич,— эсĕ мĕншĕн пирĕн ачасенчен ютшăнатăн? Юрамасть апла. Аслă юлташа кĕçĕн юлташсем ялан хисеплеççĕ.

Унтан Геннадий Васильевич ал сехечĕ çине пăхса илет те кĕтмен çĕртен шăхăрса ярать:

— Фи-ю-ю! Çур çĕр çитнĕ! Вырăн çине, ачасем, вырăн çине!.. Ыран хĕвелтен çывăрса юлăпăр тата.

Шкул ачисем кунта вăрманта та хăйсен ĕç кунне лагерь режимĕпе йĕркелесе янă. Ирхине ултă сехетре тăмалла, зарядка тумалла, çăвăнмалла; çиччĕре апат çимелле, 8 сехетре ĕçе тытăнмалла. Пĕр ача черетпе дежурнăй пулать, вăл ĕçе каймасть, япаласене сыхлать, апат пĕçерсе хатĕрлет.

Ирхине вӗсене Геннадий Васильевич тăратать, зарядкине хăй тутарать. Вуниккӗ çурăра апат çиеççӗ, пӗрре çурăччен канаççӗ, унтан тепӗр сехет — вулав сехечӗ: мӗн те пулин вулаççӗ е каласа параççӗ.

Вова чылайччен çывăрса каяймасть.

Ана малтанах кӳршӗ ялта яшсем вăйă калани илтӗнсе тăрать. Тапхăр-тапхăр юрă ялтан мар, çакăнти уçланкăранах илтӗнет пек.

Тахăш йывăç çинче эрешмен çăварне лекнӗ темӗнле кăпшанкă сӗрлеме, нăйкăшма тытăнать.

Вова кӗске çиттие, вăрăмтунасенчен хӳтӗленсе, е ура çине е пуç çине туртса витет — вăрăмтунисем çапах хăлха патӗнчех нăйлатаççӗ, хӗве те кӗрсе каяççӗ. Вова пӗр авăк тӗлӗрсе кайма та пуçланăччӗ — инçех те мар ӳхӗ ӳхӗрсе янипе каллех вăранчӗ. Хăй шăнса кайнă, тата мӗн пур çара вырăна вăрăмтунасем ларса тулнă, пӗтӗм кӗлетке тӗлкӗшсе вӗтеленет. Ашшӗ ыйхă тӗлӗшпе ун çинчен çиттие туртса илсе хăй айне яваласа кӗртсе янă-мӗн. Вырăн çинче те кăпшанкăсем чупаççӗ.

Вова тăрса ларчӗ. Семен Павлович пыр шăтăкӗнче темӗнле çӳхе кантăк çӗмӗрӗлнӗ пек çартлаттарса ӳсӗрсе илчӗ. Çывăхранах, çывăракан çынсем çине чарăнсах пăхса тăрса, тилӗ юртса иртрӗ. Улăх енчен, кивӗ ал сехечӗн пушаннă вăйсăр пружинине пăрса хытарнă пек, çемçеп чăрлаттарса, карăш авăтрӗ.

Хӗрсен хӳшши енчен те çулçă чăштăртатни илтӗнчӗ.

— Вова!— илтрӗ йӗкӗт сасартăк.— Пăх-ха, мӗн çав?

Тем хушăра хӳшӗрен тухнă Тамара аллипе юман айнелле тӗллесе кăтартрӗ.

— Мӗн?— ăнланаймарӗ Вова, вара хӗрача кăтартнă çӗрелле пăхрӗ. Унта чăн та, пӗчӗкçӗ лампочкăсем çуннă пек, симӗсрех çутă пăнчăсем ялкăшса тăраççӗ. Вова хуллен çутă пăнчă çинелле утрӗ.

— Çутă хурт,— терӗ вăл, ун патне çитсен. Тамара та Вова умне чупса пырса кукленчӗ. Вова хурта йывăç тупанӗ çине илсе хучӗ.

— Кăтарт-ха, кăтарт. Çавăн пекех çутă çунать-и вăл?— Вовăн ывăçне хăй патне туртрӗ хӗрача.

Вова, тем калама çăвар уçнăскер, хӗрӗн вӗри сывлăшӗ пите çапăнсан, ура çине тăчӗ. Тамара та хăвăрт çӗкленчӗ.

— Ав лере татах пур,— терӗ вăл сасартăк, вара хырлăх айне чăмрӗ.— Вова, Вова!— кăшкăрчӗ вăл унтан.— Кур, ку епле хитре! Çыртмасть-и вăл?

Çак çĕкленчĕк сасса илтсе, Можаев вăранчĕ.

— Мĕн унта?— илтĕнчĕ ун ыйхăллă та çăвар тулли тем чăмланă пек сасси.— Ма çывăрмастăр эсир? Тамара!

Çамрăксем хирĕç ним чĕнмесĕр хăйсен вырăнĕсене утрĕç.

Вова ир енне çеç, вăрăмтунасем тапăннине пăхмасăрах, çывăрса кайнă.

Тепĕр кунне Вовăна кĕтмен çĕртен пĕр япала тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Вăрмантан чуна çав тери çывăх сăмахсем илтĕнсе кайрĕç.

Ăçта-ши эс манăн, чун-тусăм?
Эс кам-ши мана шыракан?
Сана ман курасчĕ,
Часрах тĕл пуласчĕ,—
Пăхса çеç илесчĕ куçран.

Ку Вова сăвви. Ăçтан вулама пултарнă ăна Тамара? Вова хăй сăввисене нихçан никама кăтартман-çке. Тата кам кĕвве хывнă ăна? Вова пĕрехмай чарăна-чарăна тăрса шухăша кайрĕ.

Килех эс, килех, кĕтнĕ тусăм.
Анчах эсĕ кам, чун-илем?
Куллен, тен, куратпăр,
Анчах чухлаймастпăр —
Ăçта пĕрлешеççĕ çулсем,—

çаплах янăрать юрă. Вова хальхинче пĕрре те иккĕленмест: ку чăнахах унăн сăвви, «Пулас тусăма» ятлăскер.

Вова, çĕр çинче мĕн пуррине йăлт манса, курăк çине ларать. Юрринчен чуна темшĕн кăшт эрлĕк пусать. Вовăн та ăш юрлать. Чĕре айĕнче темскер, мăян тăррине алла тытсан пŭрне вĕçне юлнă тусанĕ пек, çемçе те йăшăрка туйăнса тăрать.

— Çул, çул, эсĕ,— ура çине тăратать Вовăна ашшĕ сасси.— Мĕн вырханса ĕçлетĕн?

Вова пĕр хушă пикенсех çулать. Вирцов пирус чĕртет те ывăлĕ хăвалаcа çитиччен тăхтать.

— Эс, Вова,— тет вăл сасартăк,—карурах тыт-ха нервусене.— Хĕр сассине илтнĕ те — пĕтнĕ çын. Ак мĕн халь ĕнтĕ пĕр каврăça касса пăрахрăн: лесник курсан — штраф.— Ашшĕ касăлнă каврăça илет те утă ăшне пытарса чикет.

Ашшĕ çине Вова ним ăнланмасăр пăхать, хирĕç нимĕн те чĕнмест.

Тамара паян, ахăртнех, дежурнăй пулмалла, вăл иртеннех йывăççем хушшинче юрлакаласа çŭрет.

* * *

Паян, чăнах та, черет тăрăх дежурнăй — Тамара. Унăн ачасем валли кăнтăрлахи апат хатĕрлемелле, çавăнпа та ăна ĕçе илсе каймарĕç. Тамара ачасем ĕçе кайсанах икĕ сумка, пĕр котелок йăтса вăрман тăрăх кайрĕ. Сехет-сехет çурăран вăл пĕр сумкине кăмпа, теприне çемçерех кăшкарути, котелока ик-виç стакан чухлĕ çырла тултарса таврăнчĕ те шыв ăсса килсе кăмпа пĕçерме çакрĕ, унтан çĕрулми шуратрĕ. Кăнтăрла тĕлне унăн виçĕ тĕрлĕ апат хатĕр те пулчĕ: симĕс яшка, ăшаланă кăмпа, çырла кĕселĕ.

Апат умĕн пĕр çур сехет маларах Геннадий Васильевич килсе кайрĕ.

— Ну, мĕнле сап ĕçсем, повар? — ыйтрĕ вăл, вучах умне пырса.

— Пулчĕ-ха та, кăмпа ăшаласа çу ытларах пĕтерсе пăрахрăм пулас,— таварчĕ Тамара.

— Вăл юрĕ-ха, кăмписене çиме юрăхлисенех татрăн-и?

— Йăлтах масла кăмпи.

Геннадий Васильевич çатмари кăмпасене тĕрĕслесе пăхрĕ.

— Маттур,— мухтарĕ вăл хĕрачана, унтан витрери вĕри шыв патне пычĕ.— Ку мĕн? Чей-и?

— Вăл кĕсел тунă юлашки, вĕретнĕ шыв çеç. Чей ĕçме сахăр çук, йăлтах пĕтрĕ.

— Апла эсĕ акă мĕн ту,— хушрĕ çамрăк учитель.— Кĕселе малтан ан пар, вăл пуррине те тӳрех ан пĕлччĕр. Пурне те чей тултарса пар.

— Сахăрсăр-и?

— Çавăнпа калатăп та... Сахăрсăр чей пар.

— Мĕншĕн?

— Çавăн пек кирлĕ.

Геннадий Васильевич, ачасене çăвăнтарма тесе, пушă витрепе алшăлли илчĕ те каллех кайрĕ, тепĕр самантран вăл пĕтĕм бригадипех таврăнчĕ.

Апатне пĕр пысăк чашăкран çирĕç. Самаях ĕшеннĕ ачасем ытлашши сăмах вакламасăрах кашăксемпе ĕçлерĕç. Пуринчен ытла вĕсем кăмпана кăмăлларĕç.

Унтан Тамара чей лартса пачĕ.

— Мĕншĕн пылак мар?

— Сахăр çук,— терĕ Тамара.

— Мĕнле, пĕтнĕ те-и?..

— Пĕтнĕ,— тепĕр хут çирĕплетрĕ Тамара.

— Пӗрреле́хе пырӗ ӗнтӗ,— терӗ Геннадий Васильевич чеен, тӑр шыва чи малтан сыпса илсе.

Ачасем нумайӑшӗ тӑр чее тӗкӗнсе те пӑхмарӗҫ. Пӗр кук тӗрриллӗ хӗрача ҫеҫ, Сима, васкасах ӗҫме пуҫларӗ. Геннадий Васильевич васкамасӑр сыпа-сыпах пӗр стакан ӗҫсе ячӗ.

— Эх, ав-ван!— терӗ вӑл.— Тултарса парӑр-ха тепре. Мӗн тери ырӑ чее сахӑрсӑр ӗҫме.

Тамара ун ҫине ним ӑнланмасӑр пӑхса тепӗр стакан тултарса пачӗ. Ачасем те ерипе стаканӗсене тытрӗҫ. Геннадий Васильевич, ачасем ним чӗнмесӗрех тӑр чей сыпса ларнине кура, хӑйӗн мыскари ӑнманни пирки хӑй ӑшӗнче пӑшӑрханма та тытӑннӑччӗ ӗнтӗ, Рая, хӑйӗн стаканне халӗ те тӗкӗнсе пӑхманскер, Сима хӑй ҫине куҫ ҫӗклессе кӗтсе илчӗ те ҫапла каларӗ:

— Эсӗ тата, Сима, мӗншӗн тӑр чеех сыпса ларатӑн?

Геннадий Васильевич малтанхи купӑх асӑрхарӗ: Сима килтен сахӑр нумай чиксе килнӗ, вӑл йышпа пайлашмасть, никама та пӗр тӗпренчӗк памасть. Ҫавӑнпа та паян ачасене тӑр чей пама хушрӗ ӗнтӗ Геннадий Васильевич, унӑн хӗрачана тӗрӗслесе пӑхас килчӗ.

Рая сӑмахпа тӗртсе илсен, Сима хӗрелсе кайрӗ те ура ҫине тӑрса хӑшше кайрӗ, хӑшӗрен тӑватӑ пысӑк катӑк сахӑр илсе килчӗ.

— Мейӗр, Геннадий Васильевич, эпӗ килтен хам илсе килнӗччӗ...

— Санӑн сахӑр пур-и вара?— тӗлӗннӗ пек пулчӗ Геннадий Васильевич.— Ну, ачасем, кун пек ырӑ ҫынсем пур чух вилместпӗр... Тавтапуҫ, Сима.

Геннадий Васильевич сахӑра вакласа, ачасем умне хурса тухать, хӑйӗн куҫӗсем кулса пӑхаҫҫӗ. Кун хыҫҫӑнах Тамара кӗсел кӑларса лартрӗ.

— Кӗсел пур-и?..

— Паҫӑр апла юри кулнӑ вӑл пиртен.

Ачасем шавласах кайрӗҫ. Апат вара хаваслӑн вӗҫленчӗ.

Мӑн ҫынсем кая юлса ҫитрӗҫ. Тамара вӗсене юлашки яшкапа чей пачӗ, арҫынсем вара, ачасене тав туса, апата ларчӗҫ.

Апат хыҫҫӑн Геннадий Васильевич тунката ҫине ларать, ачасем ун тавра пухӑнаҫҫӗ.

— Геннадий Васильевич, ҫав Вова мӗншӗн пирӗн бригадӑна хутшӑнмасть? Вӑл шкул кӑҫал ҫеҫ пӗтерчӗ-ҫке,— ыйтать Петров.

— Çавна пĕлместĕп вара: эсир мĕншĕн аслă юлташа хисеплеменнине пĕлместĕп. Сирĕп хĕрачасемпе арçын ачасем хушшинче туслăх пачах çук. Ĕçленĕ чухне те уйрăм тăратăр. Малашне эпĕ сире хам тăрататăп-ха. Кам хыçĕнчен кам пымаллине те, парта хушшинчи пекех, çирĕплетсе паратăп.

Ачасем пĕр хушă чĕпмеççĕ.

— Геннадий Васильевич, каласа парăр-ха мĕн те пулин интереслĕ япала,— тет хăйпашка хĕрача Зина.

— Мĕн интереслĕ сирĕншĕн?

— Юмах каласа парăр ăна, нихçан пĕтми юмах.

— Хам каласа парам-ха, нихçан пĕтми юмах,— тет Рая.— Итлесе ларма çеç чăтăм çитерĕр.

— Ну, кала-ха.

— Пĕр кăвакал шурлăхра çӳрет, тет. Шапана курчĕ, тет, те тытас тесе сăхрĕ, тет, пуçĕ лачакана кĕрех ларчĕ, тет. Кăвакал пуçне туртса кăларчĕ, тет, те, хӳри кĕрсе ларчĕ, тет, хӳрине туртса кăларчĕ, тет, те, пуçĕ кĕрсе ларчĕ, тет. Пуçне туртса кăларчĕ, тет, те, хӳри кĕрсе ларчĕ, тет. Хӳрине туртса кăларчĕ, тет, те...

Рая çапла 6—7 хут каласан ăна чарчĕç.

— Эсĕ хитрине кала,— тет Сима.

— Эсĕ ху та хитре мар,— тет тахăшĕ.

— Эсĕ ху хитре-и-мĕн?

— Чăнах та, кам кунта пирĕн чи хитри?

— Зина.

— Çук, Рая.

— Çук, Тамара...

— Геннадий Васильевич, кам сирĕн шутпа кунта чи хитри?

— Чи хитри-и?— тет Геннадий Васильевич, шухăша кайса.— Ну, итлĕр эппин, каласа парам... Аслă турă кĕçĕн турра,— калама пуçлать вăл,— икĕ пĕрешкел хитре çын тума хушнă, тет. Кĕçĕн турă тунă, тет, вара икĕ хитре çын. Асли пăхать те куçне чарсах пăрахать: пĕри яштак, илемлĕ пӳ-силлĕ, сарă вар пуççи пек çӳçлĕ... Тепри вара лутра та илемсĕр пӳ-силлĕ.

«Эп сана иккĕшне те пĕрешкел хитре тума хушнăччĕçке,— тет асли.— Эсĕ мĕн турăн вара?»

«Çук,— тавăрать кĕçĕнни.— Вĕсем иккĕш те пĕрешкел хитре. Анчах эп пĕрин хитрелĕхне шала хутăм, теприне — тула».

«Мĕншĕн апла турăн?»— ыйтать асли.

«Мĕншĕн тесен шалти хитрине ĕмĕр тăршшĕпех хитре

юлма, хăйĕн хитрелĕхĕпе ыттисене те тĕс кӳме пӳретĕп, теприне — вăхăтлăх илем çеç...»

Геннадий Васильевич калама чарăнать те куçĕпе ачасене пăхса çаврăнать.

— Пĕтрĕ-и?

— Пĕтрĕ.

— Пирĕн хушăмăртан кам хитрине каламарăр-ха эсир çапах.

— Шухăшлăр та — хăвăр пăхăр. Сире чăмласа пама кирлĕ мар ĕнтĕ.

— Эсир питĕ ытарлă калатăр. Эпир хамăр хушăри çинчеп çеç ыйтрăмăр.

— Ну, юрĕ,— тет Геннадий Васильевич.— Ура çине тăрса.— Эсир тепĕртак канăр та ĕçе тытăнăр. Рая, эс йĕркелесе пыр. Эпĕ лавккана кайса килетĕп. Кам валли мĕн илсе килес?

— Шоколад канфечĕ мĕн хак тăрать вăл?— ыйтать Зина.

— Мĕне кирлĕ сире хакне пĕлни? Эсир хăвăра мĕн кирлине калăр. Шоколад. Тата мĕн?.. Çитет-им?

Геннадий Васильевич урăх калаçса тăмасăрах малалла утать, уçланкăран тухса вăрманалла кĕрсе çухалать.

...Кăнтăрла иртсе хĕвел каçалла сулăнсан, çил хускалчĕ, пĕлĕтленчĕ, вăрман хумханăвĕ пĕр юхăма куçрĕ. Унтан пĕтĕм вăрман темĕнле оратори вĕçленнĕ чухнехи пек шавпа кĕрлеме пуçларĕ те — пĕр касă пăрлă çумăр килсе çапрĕ.

Утă çулакансем, ĕç пăрахса, хӳттелле чупрĕç. Вова та пĕр лапсака чăрăш айне кĕрсе тăчĕ. Кунта — пӳртри пек — лӳпех. Кĕçех Вова тăнă чăрăш айне йăлт исленсе пĕтнĕ Тамара чупса çитрĕ. Унăн платйи йĕпенсе çыпçăнса ларнă та — хĕрĕн пилĕкĕ те çинçерех, кăкăрĕ çӳллĕрех, тепĕр майлă каласан, хĕрача самантрах пĕрер çул ӳссе кайнă пек курăнчĕ. Кунсăр пуçне тата вăл, мĕн чухлĕ çывăхрах, çавăн чухлĕ хӳхĕм те инçе пек туйăнса, таçта юмах тĕнчинех вĕçсе каять.

Хĕрача, чăрăш айне чупса кĕрсен, Вова епне çурăмĕпе тăрса, кĕпине кăкăр тĕлĕнчен пӳрне вĕçĕпе чĕпĕтсе уйăрчĕ те çумăр шывĕнчен силленчĕ:

— Кур, епле ахăрать,— терĕ вăл савăнăçлăн, унтан Вова хирĕç тавăрса каласса кĕтмесĕрех хăй калаçрĕ.— Итле-ха, Вова. Çил çук чух çанталăк епле лăпкăччĕ. Йывăççерен пĕри хăйĕн хусканăвĕпе хусканатчĕ. Ака штрум

килчĕ те — мĕнпур йывăçа пĕр пĕтĕмле пĕр шава хутшăнтарчĕ, пĕр еппелле тайрĕ.

— Çынсем те çапла тесшĕн-и?— терĕ Вова.

— Лăп çапла. Акă халь эпир те—лăпкă чух — часчасах харкам пĕри хамăрăн хуйхă-суйхăмăрпа пурăнатпăр. Пĕр-пĕр штрум килсе çапсан — пĕтĕм халăх пĕр тĕллеве парăнать. Тĕрĕс-и, Вова?

— Чăн та,— хĕр каланă сăмахсем пирки мар, пачах урăх япала çинчен шутланă пек тавăрчĕ Вова, хăй ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут хĕре кăмăллăн сăмах тавăрса.

Тамара вара именсе ӳкрĕ.

— Çак пăра çума чарам-и?— терĕ вăл сасартăк, унтан чăрăш айĕнчен чупса тухрĕ те пăр пуçтарса кĕчĕ.— Эп çулла çуралнă. Мап анне калать: çулла çуралнă çын пăр çисеп — чарăнать, тет.

— Эп те çулла,— тавăрчĕ Вова.

— Ме, эппин, сана та,— çур ывăç пăр пачĕ Тамара. Вова кăмăллăнах аллине тăсрĕ.

Чăн та, çанталăк вĕсемпе шӳт туса вылять тейĕн, пĕр касă пăр çуса йывăç çулçисене таткаласа-çурса хăварчĕ те, кăшт тăхтасан — курман-илтмен: çил те çук, каллех хĕвел пăхать.

— Эсĕ мĕпле юрă юрларăн паçăр?— сасартăк ыйтать Вова.

— Килĕшет-и?— тет хĕр, хăй чăтăмсăррăн Вова хирĕç хурав тавăрасса кĕтет.— Таçтан пуçа пырса кĕчĕ вăл.

— Сăввине ăçта илтнĕ?

— Пĕлместĕп,— хĕрелсе каять хĕрача.

Вĕсем пăр иртсе кайсан та пĕр авăк чăрăш айĕнчех тăраççĕ. Унтан кĕтмен çĕртен вĕри хулпа-хул перĕнет те—иккĕш те шарт сикеççĕ. Хĕрача шатăртаттарса пăр çиме пикенет, канăçсăрланса ӳкет, вара Вова çине вĕлт! пăхса илет те тепре çаврăнса вăраххăн пăхать. Вова та ним шухăшламасăрах — çын ӳкме сулăнса кайнă чух мĕнрен те пулин тытас вырăнне ирĕккĕнех ӳкнĕ енне тайăлнă пек — мĕнпур куç вăйне пухса, ачасем «куç шăтармалла» вылянă евĕр, хĕрачана куçранах пăхать. Анчах çав тери йывăр ун куçĕнчен çапла вăрах пăхса тăма... Çапах та хĕр хăй малтантарах парăнса куçне хупать. Вăрăм хура куç тĕкĕсем хире-хирĕç хуплашса çăралаççĕ те, куç айне икĕ пĕчĕк мĕлке ӳкерсе, хĕр сăн-питне темĕнле черчен сĕм параççĕ, хĕрача сăпĕ темскер ыратнă пек эрлĕклĕ курăнать. Хĕр, сасартăк вырăнтан хускалса, чăрăш айĕнчен чупса тухать. Вова та, тăна кĕрсе, пĕтĕм кĕлет-

кипе чĕтренсе илет, чĕрере темĕнле туйăм, ыратупа, халиччен тӳссе курман хатарлă шикпе тата вăрттăн телейпе хутăшскер, вĕресе каять, çак туйăм, çур минут каярах Вовăн пурнăçĕнче калама çук пысăк улшăну пулса иртнине систерсе, кĕлеткери мĕнпур юна хускатса ярать.

Каçченех çак ăнланма çук пăлхавлă туйăмпа çӳрет Вова. Тамара та урăх ун куçĕ умне курăнмасть, каçхине çеç ялтан кăшт хĕрĕнкĕ таврăннă куккăшĕпе калаçнă чух курать ăна Вова.

— Кукка, ма сыпнă эс?— ыйтать хĕрача.

— Аннӳ сана пысăк салам каласа ячĕ,— хĕрача ыйтнине илтмĕш тăвать лешĕ.

— Апла сана пысăк салам пусса антарнă пуль-иç,— тет Тамара.

— Юрĕ, юрĕ,— тавăрать куккăшĕ.— Кил-ха, хăлхунтан туртам.— Унтан ытарлăн Вова çине пăхса илет:— Санăнне те туртатăп... Иксĕрĕнне те...

Тамара хăлха таранах хĕрелсе каять, Можаев, çакна курса-и, сăмаха урăх енне пăрать:

— Аннӳ сана киле пыма каласа ячĕ. Кайса кил.

Тамара киле каяс хаваспа хавхаланса ӳкет.

...Çак кун утă çулакансем çĕр каçма çывăхри утара кайма канаш тытаççĕ. Вăрман хĕрринче пĕр путмар çăкалăх. Кунтах пыллăх, пыллăха хуратул акнă. Çакăнта вăрман пырĕнче — утар, утар пӳрчĕ тата ӳпле.

— Хирĕç-хура пирĕн çук,— тет утарçă, ватă çын.— Ӳплене выртăр — пӳртре хăнкăла нумай.

Утă çулакансем ӳпле урайне ешĕл утă сарса выртаççĕ. Хĕрачасем — пĕр енче, арçынсем — тепĕр енче.

Тамара, чи хĕррине вырнаçнăскер, вырăн çине ларать те çывăрма кĕрсе выртиччен, йăвари хур пек, чылайччен вырăнне, çиттине майлать.

Тепĕр кунне ирпе ирех вăл киле тухса каять. Арçынсем юлашки утта çулса пĕтереççĕ. Малтан çулнине тавăрса пуçтараççĕ. Геннадий Васильевич ачасене темĕнле кĕнеке вуласа парать.

Вова кунĕпех чĕмсĕр çӳрет. «Атте каланă пек, эпĕ, чăнах, нервăсене лăнчă ямарăм-ши?— шутлать вăл. Çак кун вăл ытти кунхинчен сахал ĕçленине пăхмасăрах нихçанхинчен ытла ывăнать: пилĕк сурать, каç пулмасăрах шăмшак сăлпăр каять. Каçхине вăл никамран малтан çывăрма кĕрсе выртать. Геннадий Васильевич тавра пухăннă ачасем калаçни, кулни, юрлани, выляни илтĕнсе тăрать ăна. Ывăннă пулин те, вăрахчен çывăрса каяймасть

вăл. Ӳплере пуç вĕçĕнчех таçта тĕклĕ тура йăви пур пулмалла — хуртсем тапхăр-тапхăр шавлăн сĕрле пуçлаççĕ. Тата пуç айĕнчи утă лăчăрăнса-пусăрăнса пынă май çĕрĕпех чунлă пек çăтăртатса тăрать. Кайран вăл тĕлĕк витĕр тахăш вăхăтра ялтан таврăннă Настя конюхпа Тамара сассине уйăрса илет.

Унтан Вова, шăнасенчен хӳтĕленсе, такам çинчен çиттие туртса илсе пĕркенет те хăй çумĕнчен çын хăпăл-хапăл сиксе тăнипе вăранса куçне уçать, хăйне мăшăр куç çивĕччĕн тĕллесе пăхнине асăрхасан — самантрах ыйхă сирĕлсе каять. Мĕн пирки вăраннине тăна илсен, хăй те сиксе тăрать. Ыттисем пурте тăрса пĕтнĕ-мĕн, кăвайт чĕртнĕ. Икĕ çамрăка темшĕн вăратман вара.

* * *

Тамара, тутлă тĕлĕк курса выртаканскер, хăй çинчи çиттие такам туртса илнипе вăранчĕ те, вăтанса ӳксе, ӳплерен чупса тухрĕ, вара çӳçпуç юсаса тирпейленнĕ май тĕнче тĕлĕнмелле илемленсе кайнинчен тĕлĕнчĕ.

Ирхи тӳлек сывлăшра тĕрлĕ пылак шăршăсен вылявĕ тăрать: çеçкери çăкалăхăн пыл шăрши, вăранакан çĕр шăрши... Çак тĕрлĕ шăршăсен вылявĕ, пĕри пĕтсе, тепри çиеле тухса пынă май, чăн та, темĕнле хăйне евĕр кĕвĕ майлă ылмашăнса, чун-чĕрене ăнланма çук çĕнĕ туйăм сăрхăнтарать. Çакăнта çывăхрах тепĕр çын пуррине туйса тăни татах илемлетет çав кĕвве... Эсĕ ху та, вăл та, ыттисем те çак çутçанталăк илемĕн пĕр пайĕ пек туйăнать.

Çырма хĕрринчи хăвалăхра, çаран çинче, йывăçсенче, тĕссен вылявĕнче, куçăмĕнче темĕнле сăмахпа калама çук япала чуна çĕклесе, юна вĕрилетсе ярать. Таçта пим-па! пим-па! тесе юрлакан вĕлтрентăрри сассинче, çӳлте вĕçĕмсĕр «Лĕç-лĕç-лĕç-иии!» текен лиç кайăк сассинче темĕнле илемлĕ те вĕçĕмсĕрлĕхе, ачалăха аса илтерекен çаврăм илтĕнсе каять. Тавралăх çакăнти шăплăхран та шăпрах сасăпа, хăлхана мар, чуна çеç илтĕнекен темĕнле сасăтуйăмпа çуралман юрра юрлать...

Тамара çак тĕпчене пĕрремĕш хут курнă пек утать йывăçсем хушшипе. Ура айĕнче типĕ симĕс мăк сухари пек кăштăртатса ванать те — тусанĕ сăмсана техĕмлĕн пырса çапать. Аçта пăхнă унта перĕнсенех тӳпсе каяс пек тия кăрăççем, çу сĕрнĕ çӳхӳ пек питлĕ хурăнай кăмписем йăлтăртатса лараççĕ. Пиçеймен кĕтмел çырлисем тупкăн-тупкан чăмăртаннă.

Таврара мĕн пурри йăлтах савăнать, вылять.

Ирхи уçă сывлăшпа пĕтĕм кĕлетке сывлать.

Хĕвел сарă тухрĕ. Йывăçсем хушшинче йăлтăр çутă ярăмĕсем, вылякан ачасем пек, вулăсем хыçне пытана-пытана илеççĕ.

Пĕтĕм чĕрчун, хурт-кăпшанкă ĕçе пикеннĕ. Пыл хурчĕсем çăкасем çине çăмăллăн вĕçсе пырса ларaççĕ те каялла йывăррăн вĕçеççĕ. Пĕчченшерĕн чечексем çине те, тунине çĕре çити авса антарса, пырса лараççĕ, шăрка тунисемпе выляççĕ, сулланаççĕ...

Утар хуралçи вучах умне пĕр тирĕк тин татса юхтарнă пыл, çăка пылĕ, пырса лартать.

— Эсир капла рехмете йӳнетсе яратăр, кăçал пыл тулăх.— тет вăл тав тунине хирĕç. Çак сасă та юмахри пек, юрă пек илтĕнет Тамарăна.

Хыр-чăрăшăн шăнкăр типĕ те сухăрлă тураттисем хĕрсе çунаççĕ, юрласа шăрапаççĕ, тĕтĕмĕ те палăрмасть. Шĕвĕ тĕтĕм ирхи нӳрĕ сулçăсем, курăксем çине çыпçăнса ларать те савăнтах ирĕлсе çухалать, витрери шыв çине те юхса сарăлать.

Мĕн тери илемлĕ-мĕн тĕнче!

Пурăнма тăмасть-и вара çĕр çинче пĕр сак илеме курса килепессишĕн çеç? Çут тĕнче, тавралăх куçа çапла илемлĕ курăнни хăй те телей мар-им-ха, тепĕр тесен? Пурин куçне те çапла илемлĕ курăнмасть-çке вăл... Çут тĕнче те унăн илемлĕхне туймалăх сап чун пуянлăхĕ çитет пулсан кăна илемлĕ мар-им-ха вăл?

...Утă çулакансем кăнтăрлаччен утă типессе кĕтрĕç. кайран пĕр çур сехетрех тавăрса пăрахрĕç те вучах умне пухăнчĕç. Унтан тахăшĕ вĕрепленĕ лаша йĕвенне сӳсе тарни çинчен пĕлтерчĕ. Чылайччен шырарĕç лашана. Юлашкинчен «лаша вăл киле каякан» терĕç. Вовăна райцентра чуптарчĕç.

Тамара, яла кайса килнĕ хыççăн паллама çук улшăнса кайнăскер, Вова райцентра кайсан, хуллен вăрман ăшнелле утать.

Кайран ăна Рая хурăн вулли кутĕнче тăнине курчĕ. Хурăнăн çулçисем хушшипе пин уралла ылтăн эрешмен пек хĕвел пăхать. Хĕрачан кĕпине хурăн шурри çапнă. Çӳçне çил кăтралатать. Пуçне вăл кăшт çĕкленĕ, куçне хупнă.

Хĕр чĕнсе те чĕнмест, вăрăм куç тĕкĕсем айĕпе темĕнле палласа илеймен çын çине пăхнă пек тĕмсĕлнĕ куçпа пăхать, унтан ерипе хурăнтан уйрăлать те, аллисене хыçала тытса, вăрмана кĕрсе каять.

— Тамара,— чĕнет ăна Рая.— Тамара!

Тамара хуллен çаврăнса тăрать. Унăн сăнĕ эрлĕклĕ, хĕрлĕ.

— Тамара, мĕн пулчĕ сана яла кайса килнĕренпе?

Тамара тӳрех Райăна ыталаса илет.

— Рая!— тет вăл, чун ыратакан çын пек, пуçне тусĕн кăкăрĕ çине чиксе.

— Мĕн эсĕ, Тамара.

— Раечка!— пуçне çĕклет Тамара.— Ним те, Рая, Рая! Эпĕ санран пĕр япала ыйтам. Эсĕ вара ним суймасăр кала. Юрать-и? Рая... Эпĕ хитре-и е çук-и?.. Эсĕ тӳрех кала, ним шухăшласа тăмасăр, унсăрăн эсĕ суятăн. Ну... кала! Эп йывăра илесрен ан хăра!

— Çук, Тамара, ăна тӳрех калаймăн,—тавăрать Рая.— Ку ыйту çине эпĕ сана виçĕмкун Геннадий Васильевич каласа панă юмахпа çеç тавăрма пултаратăп.

— Апла эп хитре мар? Ийя-и, Рая?

— Çук, çук!— терĕ тусĕ.— Сана, Тамара, хитрелĕхне ик енĕпе те пĕр тан панă. Анчах... Ну, мĕнле калас. Çынсем — ахаллисем тата генисем пулаççĕ-çке-ха. Эпир ахаль çынсем-çке-ха.

— Эпĕ ăнлантăм, Рая, урăх ан кала. Эпĕ хамах пĕлетĕп хам мĕнлине. Халь ман, Рая, пĕлетĕн-и, пĕччен пулассăм килет. Пулать-çке-ха çавăн пек... Анчах эс мана ан çиллен! Юрать-и?

— Тамара!— терĕ Рая, ăна пĕчĕк ачана ытакланă пек ярса илсе.— Кил, сана эп юратам!

Хĕрачасем пĕр-пĕринпе ыталанса илчĕç те уйрăлчĕç.

Тамара пĕчченех çӳрерĕ. Кăкăрта тапхăр-тапхăр тем шыçнă пек пĕçерте-пĕçерте килчĕ. Чун таçта туртăнчĕ. Çӳресен-çӳресен вăл темшĕн-çке пуç çаврăнса, ӳсĕрĕлсе кайнă пек туйрĕ.

Сывлăш вĕр-типĕ, вĕри, сипетлĕ.

Çеçкери çăкасем çинче йĕри-тавраллах, таçта сăрнай каланă пек, пыл хурчĕсем, тĕрлĕ шăна-пăван сĕрлени илтĕнсе тăрать. Е тата, ларсан-ларсан, такам купăс тăсса янă евĕр е пĕр çавра юрă пуçлама хăтланнă майлă илтĕнсе каять. Пушанса кайнă контрабас хĕлĕхĕ пек сӳрĕккĕн лĕр-р-р! туса кăптăл вĕçсе иртет.

Кăшт салху пулса каять. Тамара вара ăнланать: çак тавралăх кунта пĕр çын, ВĂЛ, пуррипе çеç çапла илемлĕ иккен. Анчах вăл инçе мар-çке. Райцентра лаша шырама çеç кайрĕ, кĕçĕр таврăнатех ĕнтĕ.

* * *

Тарнă ута Вова райцентр урамĕнче тытрĕ.

Вăл райцентртан тухнă çĕре ĕнтĕ хĕвел анасси инçе юлмарĕ. Тепĕр çур сехетрен тавралăха тĕтре карса илчĕ. Унтан Вова халиччен асăрхаман тĕлĕнмелле çĕнĕ уйăх тухрĕ. Вăл — çĕнĕ уйăх пулин те—унăн курăнман пайĕ те, тӳпе тĕттĕмĕнчен кăшт çутăрахскер, тĕксĕм сĕмлĕн курăнса тăчĕ.

Çурма çултан иртсен, каç пулчĕ.

Вова хăйсем утă çулнă çĕре тӳрех улăх тăрăх тухма шутларĕ. Улăхĕ вăрăм: вăрмана çитиччен çухрăм яхăнĕнченех пуçланать.

Кăнтăрлахи шăрăх тамалнă май — ут ӳсĕмлĕ юстапах юртрĕ. Хушшăн-хушшăн тылапуççисем çине такăнкаларĕ.

Вова айĕнчи хура сăрху ут, улăха кĕрсен, таçта инçе мар хăйĕн юлташĕ пуррине сиссе, хыттăн кĕçенсе илчĕ, вăрман ăшĕнчен ăна сасă парса тепĕр лаша кĕçенчĕ, Вова вара аллинчи чĕлпĕрне пушатрĕ те, ут хăех туссен сасси çинелле çул илчĕ. Часах Вова улăх тăрăх вăрман хĕррине çитрĕ. Улăх лапи кунта аялта çеç çара — икĕ енĕпе сӳлте вăрман, кăнтăр енче — касманни, тепĕр енче — лутра туйралăх.

Кунта халĕ пĕтĕм улăха, вăрмана шурă тĕтре хупăрласа илнĕ. Мамăк ăшĕнче пынă пек.

Хумханмалăх çилĕ çук пулин те, тапхăр-тапхăр хăва тĕмисене чун кĕрет.

Вăрман хĕррине çитерехпе туйралăхран ут кĕçенсе илнипе пĕрлех çинçе те уçă сасăпа такам хурлăрах, тунсăхлăрах юрă юрлани илтĕнчĕ.

«Тамара!»— пĕлчĕ Вова, пăлханма тытăнса, унтан çапла шухăшларĕ: «Тамара мĕн туса çӳрет пуль-ха ку таранччен çĕрлехи вăрманта?»

Тепĕр çирĕм-вăтăр утăмран каллех ут кĕçенсе илчĕ. Çын сасси татăлчĕ.

Вова, çĕре сиксе анса, лашана чĕлпĕр вĕççĕн çавăтса утрĕ. Кĕçех утă купи хыçĕнчен тепĕр лаша палăрса тухрĕ, çăварлăхĕпе чăнкăртаттарса тулхăрчĕ. Çавăнтах сăртран хĕрача сасси илтĕнчĕ:

— Кам унта?

Вова чарăнса тăчĕ.

— Тамара-и?— терĕ вăл.— Эсĕ пĕчченех-и кунта?

— Вова! Эсĕ-и ку?— кăшкăрса ячĕ те хĕрача, сăртран чупса анчĕ.— Кӳр лашине!— тӳрех чĕлпĕре ярса илчĕ вăл.— Ăçта тытрăн? Райцентрах çитрĕн-и?

Вова хирĕç таврăнса каланă хушăра Тамара ăна итлемесĕрех лашапа калаçрĕ, ăна ырçинчен ачашларĕ, çилхине якатрĕ:—Ăçта тартăн-ха эсĕ, э? Саншăн йăлт хуйхăрса пĕтрĕмĕр кунта.

Вова лаша çинчи йĕнер вырăнне сарнă фуфайкине илчĕ те, силлесе, çĕре пăрахрĕ, лаша мăйĕнчен тăлă салтрĕ.

— Кӳр, хам тăллам,— Тамара, каччă аллинчи тăлла туртса илсе, лаша ури патне кукленчĕ.

— Вова, хăш енчен тăллаççĕ ăна?

Вова та лаша ăмри айне пĕшкĕнчĕ. Вĕсен каллех хулĕсем перĕнчĕç. Вова питне хĕрĕн çӳç пĕрчисем сĕртĕнсе кăтăкларĕç. Тамара, лаша урине хускатнинчен хăраса, карт сикрĕ те сулăнса кайрĕ:

— Ой!— Вова хулĕнчен тытса ĕлкĕрчĕ вăл.

Вĕсем лашана васкамасăр тăлларĕç.

Унтан иккĕш те хăвăрт-хăвăрт сывла пуçларĕç, кăкăрĕсем пӳлĕнчĕç. Вара Тамара чи малтан ура çине тăчĕ те каллех лашан çилхине якатма пикенчĕ. Пĕр самант вăл ниçталла та пăхмарĕ.

— Эсĕ кĕçĕр кирек мĕн пулсан та таврăнаттăнах, çапла-и?— каласа хучĕ вăл — те лашана, те Вована.

— Мĕншĕн?

Вова та лашана ачашла пуçларĕ.

— Эсĕ мĕнле хăрамастăн кунта çĕрле ларма?— ыйтрĕ вăл тытăнчăклăн, хĕр чĕнменнине кура.

— Камран хăрас?

— Хăçанччен лараттăн вара?

— Çĕрĕпех. Пĕрре те каяссăм килмест,— пуçне Вова енне пăрмасăр хăвăрт каласа хурать хĕр.

— Ма апла?

Хĕр енчен хирĕç-хура пулмарĕ. Вова ун çине ăнланмасăр пек пăхрĕ, вăл ним шухăшламасăр лашан ăмрине васкарах сăтăра пуçларĕ. Тамара хăвăрт пуçне силлесе илчĕ.

— Ну, мĕн эпир! Лашана çиме те памастпăр капла!

Вăл çапла каласан, сасартăк икĕ аллине çĕклесе:

— Утăрья!— тесе ячĕ.

Лаша хăраса сикрĕ те çамрăксем енне самантрах хыçĕпе çаврăнса тăчĕ.

— Ай!— Вова енне сиксе ӳкрĕ хĕр, хăй сисмесĕрех ун хулпуççинчен ярса илчĕ. Вова та хăй тĕллĕн пулакан хускавпах хĕре хăвăрт пилĕкĕнчен çавăрса тытрĕ. Çак кĕтмен çĕртен пулнипе, çухалса кайса, вĕсем пĕр-ик чĕрĕм çаплипех тăчĕç, унтан иккĕш те тăна кĕчĕç, вара Тамара

вĕçерĕнме хăтланчĕ, анчах Вова ăна çав-çавах малтанхи пек тытса тăчĕ. Хĕр çапла тепĕр самант тăнă хыççăн темиçе çухрăм чупса хашкакан пулнă пек йывăррăн та кĕскен-кĕскен сывларĕ.

— Атя, ларар,— терĕ Вова.

— Анчах... анчах эсĕ ан тыт...

Тамара Вовăран уйрăлчĕ те сăрт çине чупса хăпарчĕ. Темĕнле йывăç туратти хуçса илчĕ.

— Вова, Вова,— терĕ вăл çав тери çĕкленчĕк сасăпа.— Кала мана: шăпчăк ялан пĕр юрă юрлать-и?

Вова ăнланаймарĕ. Тамара ик-виç утăм Вова патнелле анчĕ те хăвăрт-хăвăрт, лиç кайăк пек хăвăрт, каласа тăкрĕ:

— Çук, çук! Кунсерен çĕн юрă юрлать. Пире çеç вăл ялан пĕр юрă юрланă пек туйăнать. Мĕншĕн тесен ăна уйăрса илме пирĕн чун пуянлăхĕ, чун сисĕмĕ çитеймест. Сăмахран, ача чух мана мĕнпур тутар юррисем пĕрешкел пек, тутарсем ялан пĕр юрă юрланă пек туйăнатчĕ. Ун чухне хам айван пулнăран çеç çапла туйăннă иккен вăл.

— Аплах мар пуль те, кăшт тĕрĕсси пур,— терĕ Вова.— Чăн та, шăпчăк хăй тусĕн сассине пин шăпчăк сассинчен те уйăрса илет.

Тамара хăй хуçса илнĕ çулçăллă турата çĕре сарса ларчĕ.

— Вова, эсĕ ăçта вĕренме каясшăн, э?— ыйтрĕ вăл кĕтмен çĕртен.

Вова та çӳле хăпарчĕ, фуфайкине çĕре пăрахрĕ те хĕрача çумне ларчĕ. Тамара кăшт сисĕнмелле аяккарах сикенçи турĕ.

— Эсĕ Куйбышеври педагогика институтне хут янă, çапла-и? Енчен, кĕреймесен, мĕн тăватăн?

— Çавах киле юлмастăп,— терĕ Вова, кăшт шухăшласан.— Пĕр-пĕр завода е стройкăна каятăп.

— Кунта та завод пур-çке. Крахмал завочĕ.

— Çук, тем парсан та, юлмастăп.

Тамара та чĕнмесĕр ларчĕ.

— Эп пĕлетĕп эсĕ ма юласшăн мар иккенне. Çапла-и?— терĕ вăл самантран.— Анчах, Вова, вăл çынна ман ырăпа та асăнас килет.

Вова ырă та, усал та чĕнмерĕ.

— Ма ыйтмастăн мĕншĕн тесе?— терĕ хĕрача, Вова çав-çавах чĕнменнине кура, унтан сасартăк куккăшĕ парнеленĕ сивĕ ал сехечĕпе Вовăн хулне перĕнтерчĕ.—Вова, Вова... Астăватăн-и? Астăватăн-и пĕлтĕрхине?

Вова сасартăк шарт сикрĕ.

«Вăл халь мана çавна аса илтерет? Çав çынлăхран кăларакан япалана?»

Вовăн ăшчик вĕресе кайрĕ. Вăл сасартăк хĕрача енне çилĕллĕн пуçне пăрса ура çине сиксе тăчĕ. Унтан куçне çиçтерсе илчĕ те çырмана чупса анчĕ.

— Вова!— хĕрача çӳлтен вĕçсе аннă пек аялалла сикрĕ.— Каçар! Каçар! Эп сана пачах ху мĕн шутланине мар каласшăнччĕ, каçар...

Халь Тамара мĕн аса илни хăех Вовăна хăй çĕр çинче йĕрĕнчĕкрен те йĕрĕнчĕкрех чĕрчун пек туйăнтарса ячĕ. Вăл хĕрача аллине сирчĕ те таçта вăрман ăшнелле чупрĕ. Çыранăн тепĕр сăртне хăпарчĕ.

— Вова! Тăхта!

Тамара çиçĕмле хăвăртлăхпа ун умне тухса çул пӳлчĕ. Вова ăна каллех алăпа сирме шутларĕ, анчах пултараймарĕ.

— Вова! Эпĕ халь пĕлтĕм. Йăлтах пĕлтĕм... Эсĕ манран ма пăрăнса çӳренине те!

— Мĕн пĕлтĕн?— хаяррăн ыйтрĕ Вова.

— Пĕлтĕм! Эс... эс чăнах, чăнах мана... Ну, астăватăн-и, хăвăн дневникӳнте мĕн çырса хунине ман пирки? Пĕлтĕр çулла...

Вова сасартăк хĕрачана икĕ хулпуççинчен ярса тытрĕ.

— Эсĕ апла.. апла... Йăлтах пĕлетĕн?

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп!

— Тамара!— кăшкăрса ячĕ Вова.

Унтан хĕрачана вăл вăйлăн хăй çумне туртрĕ те, Тамара пуçĕпе унăн кăкăрĕ çине тирĕнчĕ.

— Тамара! Тĕрĕс! Тĕрĕс! Анчах ăна сан пĕлме тивĕç çукчĕ... Нихçан та, нихçан та! Ăна эп хам валли çеç! Саншăн мар!

— Эпĕ мар, Вова. Ĕнер яла кайсан, вăл кăтартрĕ мана. «Вуласа пар-ха, ман çинчен мĕн çырса хунă-ши унта»,— тет. Эп çавăншăн лайăх терĕм ăна. Вова, вăл ăна кăтартман пулсан... Кăтартман пулсан, пĕлетĕн-и, Вова, эпир нихçан та пĕрле пулас çукчĕ. Уйрăлса каяттăмăр... Ĕмĕрлĕхех... Тĕрĕс-и?

— Халĕ мĕнле? Эсĕ... Эсĕ мĕнле?

— Эпĕ те çаплах. Анчах, Володя, эс унта мана идеальнăй çын туса хунă. Çук, Вова, апла мар. Аплах кирлĕ мар.

— Тамара!

— Эсĕ тата питĕ мăн кăмăллă, Вова. Мĕншĕн, э? Ка-

лас-и? Эп пĕлетĕп! Чăн, чăн! Эс манпа мĕншĕн ялан тарăхса калаçнине те пĕлетĕп.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен... Мĕншĕн тесен эс ман çине тарăхма пултараймастăн. Эс манпа юри тарăхнă пек, кураймаи пек тытатăн хăвна. Чăн-чăнах тарăхнă пулсан, эс ун пек пулмастăн.

— Тамара!

— Вова, тата сана,— пĕлетĕн-и мĕн, чакак çăмарти çитермелле. Ытлашши чĕмсĕр эс. Калаçура та сана ялан ертсе пымалла. Мĕншĕнне калас-и? Сана амаçури пусахласа çитернĕ, суя сăмах пусмăрланă, пире те çавах уйăрса ячĕ... Пирĕн малашне яланах пĕрле пулмалла. Эпĕ те, Володя, Куйбышева тухса каятăп — кукка хăй патне чĕнет. Эпир пĕрле, пĕр хулара пулатпăр!

— Тамара! Тĕлĕнмелле хĕрача эсĕ, Тамара! Мана никам та сан чухлĕ ăнланман çĕр çинче, Тамара!

...Каччă хĕре хăй çумне çепĕçрех те хытăрах чăмăртать. Хĕр турткалашмасть, хирĕçлесех те хирĕçлемест.

— Вова, эс аплах мар! Вĕлеретĕн эс мана... Володя...

Çĕре йăтăнса аннă пĕлĕт пекех çăра тĕтре ăшĕнчи сăрт çинче каччăпа хĕр тăраççĕ. Вĕсем çак ирхи тĕтре ăшĕнче аякран пăхма, чăн та, пирĕштисем пек, пĕлĕт çинче ярăнса пынă пек туйăнать.

Ăвăссем çинче ĕнтĕ çĕр каça çывăрнă çил вăранма хăтланса хускалкалать. Ирĕккĕн сывлакан çĕрĕн темĕнле улăпла вăйĕ, ирхи вăйĕ, сисĕнсе тăнă пек. Чăн та, вăйлă çын ал тымарĕсем пек карăнса, йывăç тымарĕсем çĕр çине палăрса тухаççĕ.

Малта ирхи çутăсем хĕвĕнсе тăраççĕ. Унта, хĕрлĕ шуçăм пиелĕхпе чĕркенсе, вĕсен килес çĕнĕ кунĕ тухăç-сăпкара тĕлĕрет-ха. Ку — вĕсен кунĕ.

Каччăпа хĕр пуçĕсем çине сывлăм ӳкнĕ, иккĕшĕн те çӳçĕ пӳрелнĕ.

Вĕсене, пĕлĕт çинче тăракан икĕ пирĕштие, ирхи сивĕ те, хура ăшчиклисен хурри те, элекçĕсен усал чĕлхи те— нимле йывăрлăх та витмест. Вĕсене сивĕтме пултаракан вăй та çук пулĕ çак тĕнчере.

Сӑваплӑ вут

Ёлёкхи пурнӑçран илнĕ повесть

АВТОРТАН

Çулсереп эпĕ июнь-июль уйӑхĕсенче хамăр тăван яла Хурӑнкассине таврăнатăп.

Тăван тавралăх тăрăх çӳресси — маншăн пысăк киленĕç. Пĕр кунлăха çеç яла пырсан та, ним тăвиччен малтан тăван улăхсем, варсем, хирсем, вăрмансем тăрăх çӳресе çаврăнатăпах.

Пĕччен чух — шухăшлама-ĕмĕтленме ирĕк.

Акă умра Каçликка варĕ, шур, мутавкка, Окай варĕ, «Кăвакал кӳлли»...

Тин çеç аякран килсе çакăнта тухнăран-и, мана кунта пурте темле асамлă илемлĕхпе илĕртеççĕ. Кунта тахçанах пурăнакансем ĕнтĕ ку асамлăха, тен, курма та пăрахнă-и... Вĕсемшĕн çак улăхра халь, тен, тепĕр эрнерен çулма тухас кашма пек улăх утисĕр пуçне ним те çук пуль. Тен, мана çеç, тĕнче илеме кĕнĕ вăхăтра пĕр кунлăх яла таврăннăскерне, хӳхĕм курăнать пуль вăл... Мĕншĕн тесен эпĕ хулара чух тăван яла час-часах аса илетĕп, унăп сăнарне куç умне кăларса тăратма тăрăшатăп. Тĕлĕкре те куратăп ăна.

Çӳретĕп — улăх-варсем тăрăх... Манпа — кăшт эрлĕклĕрех, вăрттăнлăхпа тулнă пĕччелĕх, вăл мĕнрен килни мана халь уçăмлахмарскер. Анчах çапла тăван тавралăхпа нумай çӳресе, темиçе çул ют халăх хушшинче пурăнса вĕсен чĕлхине вĕренсе çитнĕ пекех, кунти хам тавра çӳрекен эрлĕк, вăрттăнлăх, асамлăх маншăн уçăлса пырать.

Ак умра Сурăм... Шыв нумай пурăннă çĕр çинче — вăл нумай пĕлет. Ак вар... Нумай курнă вăл — нумай пĕлме тивĕç. Вĕсем мана çакăнти аваллăх, вăрттăнлăх çинчен каласа параççĕ.

Акă лаша кĕтĕвĕ кĕтет Якку пичче. Çырă çӳçĕ ун хĕвелпе çуталса, шуралса кайнă. Вăл илтмест. Çавăнпа тӳрех каласа пама тытăнать.

— Сирĕн аслаçуна ĕлĕк Пăкача тетчĕç. Пĕтĕм раттине тĕп туратран пуçласах çапла каланă. Лашине те Пăкача тетчĕç.

— Ма апла каланă-ши?— тетĕп.

— Аслаçун аслашшĕ пулать-ши вăл — Пăкача восстанинче çар ертсе пынă, тет...

— Якку пичче,— тетĕп эпĕ, хăлхинчен кăшкăрса.— Çак вар хушшине мĕншĕн Каçликка варĕ теççĕ? Мĕн вăл Каçликка? Тата унта «çип ура тытать» тесе хăрататчĕç пире ача чух.

— Çип ура мар, Сибура вăл... Çавăн ятлă пуян пурăннă кунта. Хĕрлĕ кĕпе тăхăнса çӳретчĕ, тет. Каçликки чухăн старик, сана та тĕп аслаçу енчен турту тивекенскер, пулнă... Çак вырăнта ял ларнă ĕлĕк. Ячĕ те ун Хурăнкасси пулман... Шĕвĕшсем халĕ те пирĕн уйсене Пакăш уйĕ теççĕ-ха...

Эп малалла утатăп.

— Праски инке,— ыйтатăп сурăх кĕтӳ кĕтекен хĕрарăмран.— Çак тăвайккине мĕншĕн Чиккон тăвайкки теççĕ?..

— Чӳк хорн тени çапла Чиккон тенĕ пек илтĕнет пирĕн калаçура,— тет инке.— Чӳк хурăн тăвайкки тени ĕнтĕ вăл... Кунта Сайите ырри пулнă...

— Кам вăл Сайите?

— Сайите-и?..

Праски инке каласа парать...

Çулленех çапла пуçтарăнса пырать ман куç умĕнче кунти аваллăх; çулсерен уçăлса пырать вăрттăнлăх...

Кашни йывăç, вар, çыр, улăх мĕн те пулин çĕнни те урăххи хушса калать мана эп çав çынсенчен илтни çумне... Ĕнтĕ ачаранпах çапла пуçтарăнать, сăнарланать куç умĕнче кунти ĕлĕкхи пурнăç...

Çапла уçăлать манăç айне пулни.

Паян, эппин, хаклă вулаканăм, каласа парам сана çак таврара ман чуна мĕн çав тери пăлхатнине, шухăша янине... Хурăнпа юман амăшĕ çинчен каласа парам... Çук, ку леш хам пĕррехинче сăнласа панă хурăн мар, урăх хурăн. Анчах ку манăн пĕр чун тумламĕ...

Ĕнерем-ха, эппин, сассăма мăн асаттесен сăрнайĕ çемми май.

ВУНВИÇĔ ÇУЛ МАЛТАН

Йăм-уяр. Тӳпе хĕрсе кайнă. Çĕр çине çара уран пуссан — пĕçертсе ярать. Курăксем ĕнсе кайнă. Шăркари ыраш çийĕн тĕтре пек мăкăрланса тăрать. Янкар пĕрĕхет, алла çуркалантарать, тырра пĕтерет.

Ҫӑлсем типсе ларнӑ. Сывлӑм та ӳкеймест ир-каҫ.

Халӑх ҫумӑр кӗтет.

Ҫумӑр ҫук...

Ҫимӗк хыҫҫӑн ҫинҫе уявӗ пуҫланиччен ял халӑхӗ уй чӳкне тухрӗ.

Ял сурӑмӗ — киремет тӑвайккинче. Тӗпсӗр ҫӑл патӗнче.

Халӑхран укҫа пуҫтарса, тиха, салат, ҫӑмарта, ҫӑнӑх илнӗ. Сӑра тунӑ, чӳк ҫӑкри пӗҫернӗ.

Апӑс чӳк сӑмахне пуҫлать.

— Эй, мӑн-кӗл-илен,— тет вӑл, тухӑҫалла тайӑлса, унтан тӑхӑр ушкӑнри тӑхӑршар мӑнӑрах ырӑсене асӑнса тухать те чӳкне ҫапларах тӑсать:— Тӑвас чӳке ҫырлахтарӑр, илтелӗр. Сире карта тӗспе, хура халӑхпа таса уйра асӑнатпӑр, ӳкӗнетпӗр, витӗнетпӗр, тиха пусса выльӑхпа силлетпӗр.

Пӗтӗм халӑх тухӑҫалла тайӑлать. Апӑс сӑмахне малалла тӑсать.

— Эй, шултра алапа шыв ӑсса илекен! Ҫанталӑк эсӗ хушнипе улшӑнать. Ырлӑхлӑ ҫумӑр ҫутарса пар пире. Хура ҫумӑртан ырлӑх курма пар. Пирӗн валли тырӑ-пулӑ, тӗрлӗ ҫимӗҫ ҫителӗклӗ ӳстерттер...

Ҫичӗ тӗслӗ тырра тинӗс пек хумхантарса тӑр, хумхаҫҫи.

Тӑваҫҫи пултарнӑ тырра-пулла ан типӗт, ҫӗре ан хӑрт, типӗ амӑш...

Ирхи сивӗ тӑмӑнтан, йывӑр хӗвелӳнтен, каҫхи сулхӑнтан, пӑрӑнтан-юрӑнтан, путхах-шуртан, куршанакӑнтан, ана пыйтинчен сыхла, уй сыхчи.

Хавха чанӗ пек кӗрлет апӑс сӑмахӗ.

— Выльӑх-чӗрлӗхе хунаттар... Тӗвӗлӗхлӗ ту. Кӳлсе ҫӳремелли чуптар пулинччӗ, сӗтне суса ҫимелли шӗлпер пулинччӗ. Ут хыҫҫӑн хӑм ертсе пыма пар... Вӗрле енчен сасси пултӑр, кӗтӳ енчен курӑмлӑхӗ пултӑр...

Эй, Сурӑм киремет амӑш!

Сана пайсӑр пӗвӗпе, ал-валлипе, виҫҫӗшпе асӑнатпӑр...

Сана панӑ юпах тиха тяппи пек тӑпӑль-тӑпӑль пултӑр пурнӑҫ.

Айван кӗллӗмре хапӑл ил, сӗкӗл ту. Савса панине савса ил.

Кала пӗлместпӗр, ыйта пӗлместпӗр. Чӳк, ҫырлах! Ҫырлах!

...Мӑн ҫӑкӑрпа какайне вакласа ҫынсене ал валӗ тыттарчӗҫ, сӑра ӗҫтерчӗҫ, ҫӑмарта шӳрпи сыптарса тухрӗҫ...

...Сасартăк Чăваш Сурăмĕ енчен пуп, икĕ тияккăн, пĕр тиечук тата темиçе салтак курăнса кайрĕç.

Халăх чăл-пар саланчĕ. Салтаксем, нухайккасемпе хăваласа, вунпилĕк-çирĕм çынна каялла чӳк карти патне пуçтарчĕç.

— Çакăнтан тĕп пултăр сирĕн кирементсене пуççапасси! Çĕр çинче пĕртен пĕр турă çеç — Иисус Христос,— терĕ пуп.— Çунтарăр чӳк картисене... Пурин те çĕнĕ тĕне кĕмелле!

Чӳк картине çĕмĕрсе тăкрĕç, пĕр çĕре купаларĕç те вут чĕртсе ячĕç. Чӳк йывăççисемпе чӳк картинчен кĕл кăна тăрса юлчĕ...

Салтаксемпе тухнă пуппа тияккăнсем — халăха тĕне кĕме хăваласа ялсем тăрăх тухса кайрĕç...

Çăмăллăх паратпăр тенĕрен çеç пыркалаççĕ ялтан пĕрерĕн-икшерĕн. Пĕчĕк Пакăш ялĕнчен никам та пыман...

Пуп Пакăша хăйĕн йышĕпе виçĕ салтака илсе кайрĕ.

— Тĕне кĕмен турăсăр çынсем çине Христос турă ирĕкĕпе пысăк йывăрлăх килет,— терĕ пуп ял варрине пухнă халăха.— Шупашкар мăнастирне тума тата Сурăм чиркĕвне пулăшма сиртен пысăк налук илме хушнă...

...Тăпăлтарма тытăнчĕç килсерен — пăру, така, сурăх, чăх-чĕп... Çухăртрĕç инкесене, саламатпа ислетрĕç хирĕç тăракан арçынсене... Тиесе тухса кайрĕç темиçе лав пурлăх... Пĕр кĕтӳ выльăх...

Чăтаймарĕç арçынсем ку мăшкăла. Чăтаймарĕ Каçликка ывăлĕ Утиван — çак мăшкăл хыççăн тип сунартан таврăннăскер, ĕнесĕр тăрса юлнăскер... Чупса кайрĕ кӳршисем патне, çĕклерĕ халăха...

Йăтрĕç çынсем сенĕк, айпăлта, кӳсек... Чупрĕç хыççăн... Çавăрса килчĕç каялла выльăхсене, лавсене...

Пуппа тияккăна кăнтнă, терĕç, икĕ салтака çапса пăрахнă, терĕç... ыттисем тарса хăтăлнă.

...Килсе çитрĕ Пакăша тепĕр икĕ кунтан çирĕм çынлă отряд...

...Килсерен çухăрчĕç хĕрарăмсем, ачасем... Ахлатрĕç арçынсем... Ултă лавпа тиесе кайрĕç ялтан çыхса пăрахнă çынсене... Пĕр лавĕ çине тиерĕç 2—4 çулхи ачасене...

...Çĕрĕпех тĕшĕрчĕ яла вут-ама... Юлчĕç ялта ултă кил. Юлчĕç ялта вилес ватăсем те тарса пытанма ĕлкĕрнĕ арçынсемпе ачасем çеç... Каçликка старикĕн тăрса юлчĕ пĕр мăнукĕ те кинĕ... Кинĕ, хĕненипе сĕлтен кайнăскер, эрне те пурăнаймарĕ — вилчĕ...

Юлчĕ ял хура хуйхă айне...

СИБУРА ХУҪА

Ялти синкерлӗ ӗҫ хыҫҫӑн вунвиҫӗ ҫул иртрӗ.

Пурӑнаҫҫӗ Пакӑшра — мала ӗмӗт тытаҫҫӗ. Вилекенех пулмарӗ. Ултӑ ҫул каялла яла пӗр ҫын хутшӑнчӗ: Каҫликка хӑйӗн вуниккӗри мӑнукне авлантарса ячӗ.

Килӗ вӑрах хутшӑнать кунта. «Йытӑ пуҫӗ ҫине ларнӑ ку ял»,— теҫҫӗ таврара. Вӑл ҫичӗ килтен иртсенех ҫунса каять. Пилӗк ҫул каялла саккӑрмӗш ҫурт хутшӑнсан, «Ку ырра мар»,— терӗҫ ҫынсем.

Саккӑрмӗш ҫурчӗ вӑл — Сибуран пулчӗ.

Сибура, салтаксем яла ҫӗмӗрнӗ чух таҫта тухса тарнӑскер, сакӑр ҫул иртсен тин яла таврӑнчӗ... Арӑмӗ ун ҫав ҫулах хӗне кайса вилнӗ — Сибура хӑй хӗненипех, теҫҫӗ. Сибура вара хӑйӗн арӑмӗн малтанхи упӑшкинчен юлнӑ виҫ-тӑватӑ ҫулхи хӗрачипе юлнӑ пулнӑ... Ҫуртне салтаксем ҫунтарса ярса хӑварнӑ, хӗрачине илсе кайнӑ...

Сибура пӳрчӗшӗн те питех хуйхӑрман, вӑл ӗнтӗ тахҫанах ҫӗнӗ пӳрт лартма, мутавкка тытма укҫа хатӗрлесе ҫитернӗ пулнӑ. Сакӑр ҫул каялла ҫав укҫа ҫумне татах укҫа хушса таврӑнчӗ вӑл. Сурӑм шывӗ ҫинче Пакӑш тӗлӗнчех ларакан шыв арманне Етӗрне купцинчен сутӑн илчӗ... Кӗсйинчи укҫи ҫын куҫӗ умне тухса выртсан, вӑл кунта хуҫа пулса тӑчӗ. Таврӑннӑ ҫулах шур ҫурт лартма пӗренесем кӑларчӗ. Ҫулталӑкран вӑл пӳртне те хӑпартса пӗтерчӗ, хуралтӑсем лартрӗ, карта-хура тӑкӑ ҫаварчӗ.

Ӳсет Пакӑш ялӗ.

Яллӑхӗ унӑн—«ултӑ урамра ҫичӗ кил»... Урам хушши тӑтӑшӗпе ешӗл, улӑх пек курӑклӑ. Тӳррипе, урам тӗлӗ ҫук, пӳрчӗсем мӗнле килнӗ ҫапла сапаланса лараҫҫӗ.

Ялӗнче вӑрманти пек. Йӑмра, хурама, хурӑн витӗр хӗвел тухни те, анни те курӑнмасть. Аякран пӑхсан, пӗр пысӑк йывӑҫ ҫеҫ ҫак ял пӳрчӗсене, пусма ларнӑ хур пек, хупласа ларать тейӗн. Картасем ҫумӗнчи уничере вӗлтӗрен, хурлӑхан пек хура ҫырлаллӑ ҫумӑр ҫырли, чӑкӑт курӑкӗ, кӗренлӗ, хӑмӑрлӑ, шурӑллӑ пурҫӑн ҫеҫке кӑларнӑ ухмах курӑкӗсем лараҫҫӗ.

Ял варринче ҫур ял таран хурӑн пек шурӑ ҫурт ларать Сибуран. Ултӑ хӑлаҫлӑ, ултӑ кӗтеслӗ, вырӑсла. Пусми вӗҫне чул сарнӑ. Пӗренисем ҫинче тикӗтпе сӑкӑ сӑкнӑ паллисем те ҫаплах-ха. Мал енне виҫӗ картласлӑ алкум тухать. Пусмисем вӗт пусма. Хыҫалти пӳртӗнчен те крыльца валли кӑнтӑралла ум кӑларнӑ. Ҫурт ҫине турпас витнӗ. Алӑкне шуҫ пустарнӑ.

Чӗкеҫ пек ҫыпӑҫтарса тунӑ шур курницӑ майлӑ ҫурт ян-янраса ларать.

Кил-ҫурт йӗри-тавра ҫӳллӗ хӳме тытса ҫавӑрнӑ. Чи варринче — улӑх пек килкарти.

Ҫурт ҫумӗнчех ураллӑ урлӑ кӗлет. Вителӗкӗ — тӗренче. Ун ҫумӗнче айлӑ-ҫиллӗ нӳхреп. Лупаслӑ, сайхалӑхлӑ вите. Витесемпе ҫурт хыҫӗнче — йывӑҫ пахчи, улма пахчи, хӑй тарнӑранпах сыхланнӑскер. Улмуҫҫисене ытарлӑ лартнӑ. Вӗсене пахчара тӑвӑр пулнӑ тейӗн. Вӗсем урамаллах тапса тухса кайнӑ: карти пахча пиҫиххийӗ пек. Тӗрлӗ улма пур: маль, энӗҫ, чашки сып, Антун, ҫӑка, ӑвӑс улми; шатраллӑ та лапка, шултра та тутлӑ пулакан апӑрт; тӑсӑкларах, вӗтӗрех пылаклӑ купчӑк; шултра, хӗрлӗ кучул.

Выльӑх-чӗрлӗх Сибуран—тӳшлӗ, кӗрӗ, самӑр. Ҫӑмарта пек тутӑ. Виҫӗ лаша, пӗр урхамах турта тулли ҫӳреҫҫӗ. Ӗни ҫӳрет кимӗ пек. Сурӑхӗсем — куй сурӑх. Кӗрсерен — ҫитерсе кӗретнӗ сыснасем, вӑрманта ҫӳресе кайӑклансах кайнӑскерсем, харт тӑваҫҫӗ, ҫынна тапӑнаҫҫӗ. Амшай путексемпе икӗ пӑру лачкаса, ҫӑварӗсене кӑпӑклантарса чӗчӗ ӗмеҫҫӗ.

Хире ярсан — «курӑмлӑхран куҫлӑхӗ» пур, ҫухрӑмран сасси пур. Тӗкӗ-ҫӑмӗнчен те тӳлет Сибуран, кайрипе те самӑрлать.

Сурӑм шывӗ ҫинче ун пӗр шыв арманӗ, тепӗр мутавкка — ҫур-кӗр е ҫумӑрсем хыҫҫӑн авӑртмалли.

Пӗр анине те парлак вырттармасть вӑл.

Ывҫипе акса пӳлмипе илет. Тӑррине тутӑ, тӗпне питӗ панӑ ӑна перекет амӑш.

Ҫурт ҫумӗнче ҫурт ларать. Мул ҫумӗнче мул выртать—ӗйеленнӗ мул.

Килкартинче акар йытти сыхлать. Хӗртсурчӗ те упрать ун кил хӑтлӑхне. Ҫырлахнӑ турри ырлӑхра ҫӳрет. Ячӗ-шывӗ ун аслӑ, ял ҫинче кӑна мар, тавралла та пур. Сурӑма — пуп таврашне килнӗ кутавӑйсем те, тиек-тӑрӑнсем те кӗрех тӑраҫҫӗ ун патне. Сӗтел ҫинчен пыл-сӑра татӑлмасть. Тиексем килсен — пӑрчӑк чей кӑларать, сӑмавар лартать. Уявсене уяса эрнешер ӗҫкӗ тӑвать. Килте икӗ арҫын тарҫӑ усрать; арманта виҫҫӗ.

Аллӑ ҫын аллипе, хӗрӗх ҫын хӳттипе пурӑнать Сибура.

Хӑйне вӑл тивӗҫлипех мӑнна хурать.

Хӑнана пырсан та — турӑш пек — вӑл ҫеҫ аслӑ. Шурӑ кушма сарса, минтер хурса лартаҫҫӗ ӑна.

Çук çын çине куç вĕççийĕн анчах пăхать вăл. Çын хуйхине пĕлмест. Çыншăн нихçан та пушăхман, нăх! та туман.

Унăн — йĕс пырăн — киленĕçĕ: тутлă çиес те йӳçĕ ĕçес. Вăл ĕнтĕ мăн хырăмланнă. Хĕрлĕ ĕренкĕл кĕпи çинчен çыхнă пурçăн пиçиххийĕ — сăркавай пички çинчи кăшăл пек. Яту тумланать вăл. Çулла яштăрки пĕтнĕ пусма сăхман, тăрна тумĕ пек кĕскескер, хăмăш чаканĕ пек хăмăр тĕслĕскер, хĕлле — сарă кĕрĕк.

Тутлă ырлăхĕнче пурăнать Сибура — шур шăм. Утмăлалла çитет пулин те, урлă ураллăскер, упа пек ӳпĕнчĕкрех утса, питĕ йĕкерлĕ çӳрет. Кĕлетки — тапчам. Йывăр çын пулнăрап «ăтăр» теççĕ ăна. Сăнĕ-пуçĕ хĕрлемес. Хăлхи — пĕрмен хуран кукли пек. Аслăк пек сăмса. Пашалу пек тута. Кукша. Тăнлавсемпе ĕнсе хыçнелле çеç сайра вĕт хăвалăх майлă хытă шурă çӳç каять.

«Хăйă та кирлĕ мар, кукши çутипех пӳрт ăшчикĕ çутăлать унăн»,— теççĕ ял çыннисем. Сибура мар, Сибарит, теççĕ.

«Эс, Сибура хăта, çĕлен мăйраки тупса пуйрăн пуль,— тесен, Сибура кулса илет те: «Манăн хуралтăна ама йывăç кĕнĕ, хăта,— тет.— Çавăнпа хуралтă телейлĕ, пӳрт хуйхăсăр, кĕлет тыр-туллă». «Ама йывăç мар, хытрăн эс, Сибура, тӳртне кассан та, пĕр тумлам юну тухмĕ». «Хе-хе-хе,— кулать Сибура.— Пурнăç хытти — çăкăр çемçи вăл. Арчарине çын курмасть, тара тытсан çын курать, ана хура выртсан — ял кулать». «Кимĕ яракан хуçа та саланать, эпир атакланаймастпăр». «Эсир, çуна пек, çăвĕпех хăяккăн выртатăр. Хĕрсе ыраш вырнă чух, путене пек, симĕс хупах айĕнче. Ĕçлекенни выçать те çиет, ĕçлеменни выçать те — пуçне хыçать».

Таврари купцасемпе те, тӳресемпе те çывăх халь Сибура. Чулхулара та, Шупашкарта та, Етĕрнере те кĕтнĕ хăна вăл.

Вăл хĕрарăмсăрах пурăнать. «Арлăхĕ пĕтнĕ» теççĕ кун пирки. Апат-çимĕçне вăл хăй пĕçерет, сăрине хăй тăвать. Тарçи-тĕрçине выльăх-чĕрлĕх патне çеç ярать.

Кăçал вăл хăйĕн вилнĕ арăмĕпе пĕрлех килнĕ хĕрачи, Сибураран тăват çулта уйрăлнăскер, çинчен хыпар илтрĕ. Вăл Етĕрнери мăнастирте, тет. Ялтан тиесе тухса кайнă ачасене пурне те мăнастирсене ăсатнă, тет.

Етĕрнере хăнара чух Чулхулари пĕр тӳре, хăйĕн отпускри офицерĕпе пĕрлех килнĕскер, пӳрни çине хуçса шутласа кайрĕ те халĕ Сибура хĕрĕ вунулттăра е вун-

çиччĕрен мала мар иккенне уйласа кăларчĕ. Вара пурте кайса курасшăн пулчĕç. «Тен, тĕнче тытăнса ларнăранпа та чăваш курман хитре хĕр пуль вăл»,—терĕç вĕсем.

Мăнастире çитсен, «Сан хĕрӳ çакă» терĕç те, Сибура кăна мар, унпа пĕрле килнисем те çăварĕсене карсах пăрахрĕç.

Чăн та, мăнастирте çеç мар, таврипе те тиексен хушшинче те — кун пек таса та хӳхĕм хĕре кам та пулин курнине асăнмарĕç.

Сибура умĕнче малтан пăхсан майра пек, кайран пăхсан картин пек хĕр тăнă.

Ярăнса ӳснĕ хĕр пĕвĕ.

Сар хăмăш пек яштак çинçе пӳ. Çинçе пилĕкне пиçиххи çыхман, çĕрĕ тăхăннă тейĕн. Тулли уйăх шурри пек черченкĕ шурă ӳт. Икĕ пăчăр пек икĕ кăкăр. Сăнĕ-пичĕ пиçнĕ чиерен хĕрлĕрех. Куккук хуранĕ кăмпи пек хĕрлĕ пĕрĕлчĕк тута, çӳлти тути хĕрри ухă тыткăчи пек авăнчăк.

Тĕлĕнейсе кайрĕç хăнасем.

«Чи тирпейли, кăмăлли, ăсли»,— терĕç ун пирки кунта. Ăна пурте хисеплеççĕ-мĕн. Хăй вăл юлашки çулсенче алран кĕнеке ямасть-мĕн. Кунти мĕнпур кĕнекене вуласа тухнă-мĕн.

«Турра та ырă çынна юрăхлă»,— терĕç.

Чулхулари офицер çакна курсан—пĕтсех кайрĕ! Калаçаймасть те, пĕрре шуралать, тепре хĕрелет. «Эпĕ унпа аслă ĕмпӳ умĕнче те именмен пулăттăм»,— тесе пĕлтерчĕ вăл хăйĕн шухăшне. «Авлантарас сана,— терĕ ашшĕ.— Сибуран хирĕç-хура çук пулĕ?»

Сибура куна илтсен ирĕлсех кайрĕ.

«Вăйлă туй сиктерер пĕрре!— терĕ вăл, савăнăçне пытараймасăр.— Эпĕ ăна хам пата илетĕп...»

Сибура çавăнтах игуменпа калаçса пăхрĕ, леш: «Иккĕн пĕрле пăрçа пĕçерейсен — ман чару çук»,— терĕ.

Сибуран тепĕр ĕмĕт чăмăртанчĕ.

Хĕрне ăнăçлах качча парсан — хулăн укçийĕ те пулĕ, хурăнташĕ те — ĕç çӳретме кирлĕ çын. Ун чух влаç умĕнче те питех пуç пĕшкĕртсе тăмĕччĕ вăл...

Ăнать пурнăç Сибуран.

Ыр çын шутĕнче вăл купцасем, тӳресем, тиексем умĕнче. Çулсерен çĕршер-çĕршер пăтăн тырă ăсатать вăл Етĕрнене, Шупашкара та Атăл тăрăх.

Ялта çеç пит йӳнсĕр те мутлăхлă çын теççĕ ăна.

Арманĕ кĕр! кĕрлесе кăна ларать ун...

* * *

Хашкать шыв арманĕ. Ун сассипе хирĕçле çыран янрать.

Шалта çăнăх мыми вĕçет. Кунта Маттян, Катăк Васька та Патиар, ĕçрен кăшт ерçнĕ май, чĕлĕмĕсене мăл-л, мăл-л ĕмсе, калаçса лараççĕ. Вĕсем Шупашкара иккĕ хутланă иккен Сибура тыррисене леçме. Леш тара кĕрĕшнĕ укçисĕр пуçне урăх хушса тӳлесшĕн мар-мĕн.

Сибура килсе кĕрсен, Маттян çавăн пирки сăмах хускатать.

— Ну, Сибура хуçа, лаша чĕрнисене те хĕрхенмерĕмĕр... Ура тарлĕх хушса тӳлемĕн-ши?

— Ĕçĕ мĕнле, хакĕ çапла. Сире эпĕ уйăх тăрăх тӳлетĕп,— тет Сибура.

— Çак Сибуран сапăрри çук-çке. Кĕрĕшнĕ чух сăмах татмарăмăр та... Çапла çав... Ятсăр ача макăра пулать. Лаша урлă алă парам,— паян тесен паян ĕв! темелĕх çăнăхăм çук, Сибура хуçа.

— Ман хама пайта хăварас çук-и? Илĕр тырă — йӳн хакпах сутăп.

— Йӳнни-мĕнĕ... Пасарта хак уçăласса кĕтетĕн пуль-ха.

— Çын кăмăлне юракан хăй кăмăлсăр юлнă, теççĕ. Килти сутă — Мускав сутти вăл. Сирте кĕвелĕк çук. Тăрантар-тăрантар!

— Эс пире тăрантарнипе ан йĕк. Çĕр кăкри перекетлĕ. Çавă тăрантарать пире.

— Юрĕ,— терĕ Сибура.— Питех укçа илессӳ килет пулсан, Маттян, атя паян манпа Етĕрнене кайса килер... Пăртак пыл-çу, тепĕртак çăнăх тиесе каймалла пулать. Хĕрĕме илме каятăп. Çул çине тăмана шӳрпи сыптарăп... Ну, кӳнет-и?

— Юрĕ ĕнтĕ,— терĕ Маттян.— Усал сурăхран, ан тив пĕр тăлăм çăм... Халех каймалла-и?

— Халех лавпа çаврăнса килетĕп. Çăнăх хуратпăр та — каятпăр.

Сибура алăк енне çаврăнсанах Маттян ун хыçĕнчен икĕ пӳрне хушшипе «мулкач» кăтартрĕ.

— Улпут пуçне мĕн хуйхă?— терĕ вăл.— Туйăм-туйăм темесен, туя илсе каймаççĕ. Ыйтмасан, парассине аса та илмест. Ырри çухатнă, усалли тупнă... Пуçтарать вăл пирĕнне. Ĕçлеттерес тĕлĕшре маттур вара. Иçмалин укçи те макăрса тухать. Ут тăвать, вăкăр çиет тенĕ пек — хамăр выçă.

— Мана килĕнче вут татнăшăн та çуха тарне кăлармалăх та тӳлемерĕ,— терĕ Патиар.— Малтан кӳмерттен тӳлеме хĕсеп тусаттăмăр... Пĕрре пĕр курка сăра пачĕ, тепре апата чĕнчĕ — çаплах каçарса ячĕ пуль. Панă сăмаха та чăнламасть.

— Э-э, май пĕлекен çу çинĕ. Халăхĕ вăл хыт мăйлă.

— Арман шуйттансăр пулмĕ ĕнтĕ.

— Сави пит яка хăйĕн. Вăл евĕçсе çӳренипех ĕç тăвасшăн. Кăмăлĕ ун йăлтах çăтать.

— Атăл тăрăхнелле тухса тармалла-ши ĕнтĕ,— терĕ Маттян.— Те лашмана каяс? Кĕренкке çине мар, мăскал çине тăрса юлтăмăр.

— Вăкăр хуçине пуçĕ çук тенешкел, алманчă тӳлесех юхăнатăн.

— Атăл хĕрринчисем те пăлханаççĕ, тет-ха,— терĕ Катăк Ваçка.— Пурнăçа кунтах ункайлас пулать. Кăçал çур акнисем мĕнлетлĕ, аптрамăпăр та-и... Мирте пулсан — вилмĕпĕр.

— Эс ху мăнтăрупа кӳштетĕн-ха,— терĕ Маттян.— Саккусем сарă, сарлака. Ларса сума ĕнӳ пур. Сапса пама сĕллӳ пур. Кĕрекере — кĕрĕвӳ, тĕпел кукринче — ыр пике пек кинӳ. Ырă улпут пек ывăлу. Сибура умĕнче яту пур... Ун çумĕнче кушак пек шăлкăнса çӳресех уралантăн.

Катăк Ваçка мăк-мак тукалать те—чĕнеймест. Пичĕ ун çерçи çăмарти пек чăпар. Хăй çӳллĕ тӳпеллĕ шлепкепе. Уламас кипкепе. Сăхманĕнчен — лăстăкĕ çеç юлнă.

Тулта хĕвел вылять.

Вешникрен юхса шыв шаркать. Пĕчĕк кĕрленкĕсенче аш лĕкки пек кăпăксем. Кĕвçек шăршă тапать.

Арман умĕнчи пысăк лаптак чул çине пĕр йĕкĕт канма ларнă. Ку — Евлен, Каçликка мăнукĕ, вупиккĕрех авлантарса янăскер.

Ун умĕнче тĕл-тĕл ăтăр шăтарнă арман пĕви, Сурăм шывĕ.

Тăварахран мăн çул килсе, арман тĕлĕнчен Сурăм урлă кĕре-каçăпа хыр тăвайккине, çăваша, каçать. Етĕрне, Шашкар таврашĕнченех, унтан аяккарахран та килеççĕ кунта çын пытарма.

Евлене Сибура сасси ура çине тăратать.

— Мĕн эс çăлтăр суса ларатăн?— тет Сибура.— Мĕлкӳ пур та сан — ĕçре ӳркенчĕк иккен... Атя, михĕ тултар. Мĕн хăлхуна шăмаратăн?

— Паян ман ахаль те ĕçлесе алă хăпарса тухрĕ.

— Алă вăл ĕçре пиçменнипе хăпарать.

— Ак кур... Кĕпе те йĕп-йĕпе.

— Ӳркенчĕкĕн унăн ĕçлемесĕрех тар юхать.

Евлен çулталăк ытла ĕнтĕ Сибура арманĕнче ĕçлет. Сибура хушнă тăрăх тырă кайса сутăн илет. Михĕсем тултарать, вĕсене пасара кайса сутать. Шупашкара кайса леçет. Арман пĕви сыхлать. Нихçан та хăйне ӳркенчĕк тенине илтменччĕ-ха вăл.

— Кантăкăн çеç ĕçлемесĕр тар юхать, Сибура хуçа,— тет Евлен, арманалла утнă май.

Сибура халĕ те хăй йӳн хакпа туяннă тырра Атăл тăрăх ăсатма авăртать-ха.

— Икĕ михĕ тултар та урапа çине тухса хур,— хушать Сибура, Евлен хыççăн кĕрсе.

Евлен чĕнмесĕрех ĕçлет, васкамасăр миххине тултарать...

— Якăр шăл!— тет Сибура, пӳлме тĕпне пырса пăхса.

Сибуран паян кăлăхах шăртланас килнине сисеççĕ.

— Çăнăхĕ юхсах тăрать-çке,— тет Евлен.

— Сире кала ан кала: чул çине шыв сапнă пек,— чăркăшланать Сибура, паян темшĕн кăмăлсăрскер.

Евлен чĕнмесĕрех пилĕкшер пăт кĕрекен икĕ миххе пĕрер хул хушшине хĕстерет те йăтса тухса каять, Сибурапа Маттян та ун хыççăн тухаççĕ.

— Кур — икĕ михĕ уншăн хул вăйĕи çеç!

— Ачи вăл лаччăн пекех правур-ха. Ахалех вăрçса илчĕ ăна хуçа.

— Ачи вăл çапла... Турă патне хăпарма пусма та, шыв туратне те тупĕ. Йăх тымарĕ çапла. Кунăн та кăмăл килĕш йăлт ашшĕн. Сăнĕпе те ун месемлех. Кăткăс, ăслă калаçатчĕ. Чĕлхи хитре, талпаслăччĕ.

— Улттăллă çын ун сăмахне ăнкара та илейместчĕ.

— Ку та аптрамасть ăспуç енчен, Ӳсе киле вăл ак ашшĕ йĕрнех пусать. Ун çинче кантра çĕрес çук. Шывран та турпас кăларĕ.

— Шел ачана... Кĕрĕве лартмасăрах авлантарса ячĕç. Арăмĕ — чĕр шуйттан ун. Евленĕ ачарах чух янкăса вĕреннĕскер, вăл халĕ те çаплах çӳрет.

— Евленĕ унпа выртса та курман, тет.

Евлен кĕрсен, шăпланчĕç. Евлен сăхманне илчĕ те каллех алăкалла утрĕ.

— Мĕн пит ăмăр эс, Евлен?— тет Патиар.

— Ма хирĕç кăшкăрмарăн ăна?

— Тӳпелешӳ пуçламаллаччĕ-им?— тет Евлен.— Ар-

çурие хирĕç кăшкăрма хушман. Кăшкăрсан — тăват-пилĕк хут кăшкăрас пулать.

Евлен урăх калаçмасăрах тухса каять.

Вунсаккăр çинче пырать вăл. Кĕлетки çатам. Кăçал тата яшланса-мăнаçланса кайрĕ.

Çӳлте çерем çинче унта та кунта пĕрер ывăç пек качака тăварĕ текен шурă таса хăйăр куписем курăнкалаççĕ. Аялта, ейӳ чупакан çĕрте, йӳç лапăштан, катка-пичке çартисене хуракан лаптак хăмăш.

Евленĕн паян кăмăлĕ пăтранчăк. Ăшчикĕ йăлтах вĕрет. Вăрахчен тăчĕ Евлен çыранта.

Кĕпер авăннине ут сисмест. Çавăн пекех калаканĕ те хăйĕн йывăр сăмахĕ çын чунне епле тивнине сисмест.

Сибуран усал сасси халĕ те янраса тăрать ун хăлхинче. Вăл пĕрремĕш хут Сибура хăйĕнпе тӳрккес калаçнăшăн кăмăлĕпе хуçăлса юлчĕ. Паян вăл арман умне чул йăта-йăта йăлтах салпăрланнăччĕ.

Шыв хĕрринче тăрса та кӳреннĕ кăмăлĕ лăпланмарĕ ун. Вара вăл — Сибура йăтса пĕтерме хушнă чулсем енне урăх çаврăнса пăхмасăрах килнелле утрĕ.

Каçликка килĕ вар хушшине вырнаçнă Пакăш ялĕн пĕчĕк юппинче. Пĕчĕк хура пӳрт. Ăна хирĕç хура сысна пек лаç. Унтан кĕлет. Лупас. Улăм витнĕ лупас хăлхасĕ айĕнче çерçисем йăва туса тултарнă. Лупас çумне лартнă вăрăм шăчă тăрринче çурла: хĕрен, хурчка, чăх-чĕп тытма анасран. Кантăр ани çине çерçисем тапăнасран — курак вилли çакса янă. Сайхалăхра — урапа. Тикĕт тăпи. Ут хатĕрĕсем.

Çенĕкре кĕрмĕшнĕ, аврăçнă каткана витнĕ хăма çинче тимĕр кăшăллă, тимĕр кăканлă йывăç витре. Ун хĕррине юман патинчен чавса тунă алтăр, çĕрĕшсе кăмрăк пек хуралса ларнăскер, çакса янă. Пĕрмере — йыт чĕлхи пек ăшăх йывăç кашăксем.

Пӳртре алăк патĕнче ларать çăпата хуçса шурă çӳçлĕ, чалланнă сухаллă кăптăрмаш ватă, тăхăрвунă çула çитнĕскер. Вăл, хĕртсурт пек, килтен ниçта та тухмасть. Çулла хăйсен çул хĕрринчи кĕслеллĕ ани çине тухкаласа кĕрет, кун-куç çутинче сурăхсене, ĕнене тухса пăхать. Çанталăк улшăннă чух пилĕк тытнипе аптрать. Ӳнерĕ ун — пушăт шăйрасси. Тăванĕ ун — мăнукĕ çеç: Евлен. Ĕç тĕлĕшпе Евлен — хастар. Ĕçлеме çын. Вăл сакăр-тăхăр çултах ĕç ĕлкерне илчĕ. Ырă ут пек çӳрет чалăхса, вутчуль пек ниçта кайса кĕреймест. Чĕрни хăпăнса тухать ĕштелене-ĕштелене ĕçлесе.

Арăмĕ Евленĕн — Укане — канас. Евлен ĕçе кайнă чух вăл ыйхине çĕклеймесĕрех çывăрса юлать. Ниçта та путĕмлĕ ĕçлени çук. Ĕç тумалла пулсан, çурри вилсе çӳрет. Пур япалана те ĕрех вĕçтерет. Вăл, малтанхи упăшки вилсен, ача пăрахса, качча килнĕ. Кунта килнĕ чухнех хĕр чухнехи илем ун лĕм те юлман. Тутине хăй яланах сысна тути пек тăсса çӳрет. Пичĕ-куçĕ — тутăр çыхтарнă кăвас чĕресĕ пек. Тирпейрен кайнă. Çӳçпуçне те пуçтараймасть. Çӳрет лăпсăртатса тикĕт лакăм тулаш пек. Вăл унанă çăкăра çăвара чикме те ăш кĕлемест Евленĕн, вăл юрнă юрмана çиме те чун çĕклемест.

Евлен сăмахне лӳ те тумасть хăй. Хăйнех ăсла хывать. Пур ĕçе те — виле çинчи пек — кутăнла та тирĕс тăвать. Тухса каять те тăван ялне — Хурасана — эрниэрнипе унта пурăнать. Мĕн тăвать вăл унта — никам та пĕлмест. Евлен ăна тахçанах ама çури вырăнне çеç шутланă. Евлен çук чух вăл Каçликкана юмăç çăкри пек татăк çăкăр пăрахса парать. Ун кăмăлне юраса пурăнас тесен, ун умĕнче утса мар, упаленсе çӳрес пулать. Вăл янрама тытăнсан — алăк хăлăпне тытса тăр. Киле те кĕрес килмест—сивĕ киремет пек чуна çӳçентерсе тăрать упта Укане пурри.

— Ку кин пирĕн алă мар,— тее пуçларĕ Каçликка ăна лартса килнĕ çулах.— Таçтан тупрăмăр ăлапа арăм. Хам мăтăк. Çынсем пăхмарĕç хурласа, эпир илтĕмĕр мухтаса. Качакаран усал выльăх çук, ман кинрен усал çын пĕлместĕп. Йытă та вăл ман кин пулать темен çав. Картми пулчĕ. Пит çӳлтен пуплет. Пулать кутлĕ-валлĕ ăслă çын... Сехремет!

Турткăрах пурнăç Евленĕн. Тахçантанпах херĕп пурăнаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх хунамасть, тӳлемест. Качаки те сĕтлĕ пулмарĕ. Юр-вар çиме те çитмест. Пĕр лашаллаcкер пур, чухрахскер, хăй кĕлеткине те чух сĕтĕрекенскер, çур лаша.

Тырри-пулли начар — çĕр ыврăннă.

Çире кĕç-вĕç ĕçлĕхрен тухас тумтир çеç. Тӳрĕ çӳремелли çипуç çукпа пĕрех. Шар çарамас юлас патнех çитнĕ... Нихăш енчен те çителĕк çук, çăтлăх çеç.

Мĕнле ункайламалла пурнăça?

Ĕмĕрех тарçă пулса пурăнмалла-и? Сибура патĕнче ĕçлесе çие кĕпе те туса тăхăнаймарĕ Евлен. Мĕн ĕçлени— çисех пĕтет... Çын выçса вилсен — ĕçлемен, теççĕ, выльăх вилсен — тăрантарман...

Эй, мăнтарăн çынна çити-çитми тăракан телейĕ, пурнăç çитменни! Чăмлать! Хăш енчен сиксе ларсан, тӳнмĕ-ши ун урапи?

Ăçта ан çит — ах-ахлатни çеç. Ах-ах тенисем хуйхах пуль çав.

Пĕрремĕш хут çакăн пек шухăш ӳкрĕ Евлен пуçне.

Хĕвел анать хĕрлĕ пукан пек.

Пӳрте кĕрсе пăхрĕ Евлен — аслашшĕ çывăрать. Укане — амăшĕсем патне Хурасана кайнă та — эрнене яхăн ĕнтĕ килте çук.

Евлен лаши патне пырса тăчĕ, ăна йĕвенлерĕ те çавăтса килкартинчен тухрĕ. Унтан урам урлă каçса сăрт çине улăхрĕ.

Сăрт çинче—пĕчĕкката. Ун витĕр вăрман пиçиххийĕ пек сукмак. Сукмак хушши çулçăсем сарăлнипе тăварланнă: куç уçайми вĕт çулçă. Йывăç тăрринчи кайăк пек, ешĕл çӳпçери пек пырать ун витĕр Евлен.

Анакан хĕвел урисем çӳлелле кайрĕç.

Ялта ĕнтĕ путек-сурăх йыхăракан карчăк-кĕрчĕк те ача-пăча — май ӳкнĕ чух сасăсене тĕрĕслесе пăхас, уçас тенĕ пек—пăтăка-а! та пучи-и! тесе юрласа ячĕç.

Катаран тухсан, Евлен пуçĕ тăрринченех, çӳлте; «çаран вăрăм пуласса» вĕтĕ шăна ушкăнĕ—тӳкĕчĕ тӳме тапратрĕ.

Евлен пуçĕнче те, шалта, шухăш тӳкĕчи тĕвет.

«Çак лашана çитерсе чĕртсен, тен, ăçта та пулин лава кĕрĕшме каймалла?..»

Камшăн, мĕншĕн тата мĕн туса пурăнмалла ман кунта?

Асаттешĕн çеç... Çавна шел...

Вĕççĕр шухăш çаврăнать пуçра, майĕпен хуйха çаврăнать.

Евлен улăха çитрĕ те утне ячĕ, чылайччен ним хускалмасăр пурнăç хуйхипе пуçне çĕмĕрсе ларчĕ. Курмарĕ вăл хăй кунта ларнă вăхăтра яла пĕр çĕнĕ çын килсе кĕнине...

ИМ ЧЕЧЕК

Çу ешерет.

Тухăçра ирхи ачаш тĕс.

Хĕвел çунатланса, сарăлса тухать. Лăпкă. Ăвăс çулçисем çеç ăшă çумăр çунă пек шăпăртатса илеççĕ.

Хурама-йăмра тăррисене çерçисем сăраннă. Хӳмесем çине те вĕсем шăрçа ярăмĕ пек ларса тухнă та пĕрне-пĕри

çавранкаласа кăтартаççĕ, хӳрисене пăр та пăр вылятаççĕ.

Таврара пурте ташлать, сикет.

Хĕр, шыв витрисем йăтса, урама чупса тухрĕ.

Çăл пури кĕтессинчен шевлесе юхса тухать тăрă шыв.

Пусса янă витре, шывпа тулса, вĕрен вĕçĕнче урхамах пек туртăнса карăнчĕ, вылярĕ.

Хулпуççи çине хунă картлам кĕвенте çинчи тулли витресем, виçеллĕ карăнтарнă кĕсле хĕлĕхĕ пек кăрн! та кăрн! янраса пычĕç. Йывăр кĕвенте айĕнчи çамрăк, пиçĕ кĕлетке те ука хĕлĕх пек карăнчĕ. Унта сасăсăр янăрарĕ çамрăклăх.

Тулли витресене хĕвел пĕрер ылтăн çĕрĕ пăрахрĕ. Пĕркенчĕк айĕнчи хĕр ашшĕ-амăш килĕнче хăйĕн тантăшĕсене, вĕсенчен ĕмĕрлĕхех уйрăлнă май, хӳх юрри юрласа, сăра курки тыттарнă чух тантăшĕсем çапла курка ăшне е укçа, е çĕрĕ ярса лараççĕ. Çутçанталăк паян, Сайитене качча парса, туй тăвать тейĕн. Анчах Сайите чунĕ хӳх юрри мар, мухтав юрри юрлать. Туй хыççăн шыв çулĕ уçма тухнă çĕн çын çул çинче хирĕç пулнă ял ваттине тулли шыв картламĕпех ура çине кăшт та кăшт лăпчăнса салам панă пек, çакăнайса саламлать вĕсене Сайите. Йывăççисем, ял ватти пил панăн, тайăлса юлаççĕ.

Хĕр витрисене киле кĕртсе лартрĕ те улăха чупса анчĕ. Савăнăçлăн пуçне çĕклесе, ытараймасăр, тĕнчене пăхса тăчĕ.

Тавралăх ешĕлĕн пĕр ешĕлĕн курăнать. Çумăрсем хыççăн кĕр-р кайнă калча исенет. Ыраш шăркара. Улăх чечекпе тулнă.

Сипетлĕ сывлăмпа чечексем тасалнă, çĕнелнĕ. Вĕсем — сасă мар, шăршă саракан шăнкăравсем пек, вĕсенчен пуринчен те харпăр хăйне уйрăм шăршă тухать. Ăшă çилпе пылĕ сарăлать.

Хĕр кăкрине ирхи сиплĕ сим шерпет пек юхса кĕчĕ. Чăмăр кăкăр хумханчĕ, çĕкленчĕ. Авăк çил, йăвашлăхпа тухатса, çамрăк кĕлеткене çупăрларĕ.

Хĕвел çути пӳлĕх патĕнчи темĕнле çын пĕлмен хӳхĕм те асамлă япала çине ӳксе хуçăлнă та каялла ука улăх çине тăкăнать, çав асамлăх чуна сăрхăнать.

Чечеклĕ улăх çамрăк хĕрарăм пек. Вăл амаланать, киленет. Сайите те — унăн пĕр пайĕ. Ун кĕпи арки çеçкесене тивет, чечеке пĕтĕçтерет.

Çутçанталăкра çамрăк вăхăт: пĕтĕмпех пĕтĕçет, амаланать, çуралать. Пур çĕрте те çĕнĕ чун сасси. Çутçанталăк çуралу уявлать.

Тин кун ҫути курнă кайăк чĕпписем амăшĕсене кĕтсе чăйлатса лараҫҫĕ, тин шăтнă йывăҫ-курăк хĕвеле чĕвеннĕ.

Йĕри-таврах йăмăх ҫутă; пур ҫĕрте те ҫутҫанталăкăн тулашри хӳхĕм тĕнчипе унăн шалти ҫамрăклăхĕ пĕр килĕшĕве кĕресшĕн ăнтăлни, вĕсен килĕшĕвĕ. Ҫак тавралăха йăлтах пӳлĕхҫĕ сывлăшĕ, пархатарĕ тулнă. Пĕтĕм чĕрĕ чуна вăл ырлăх пиллесе тăрать. Ăна мухтаса юрлать тавралăх.

Чун, сисмесĕрех, тĕнчен савăнăҫ имне хăй ăшне ĕмет. Ҫутă, шевле, чечек хĕр сăн-пичĕпе, чунĕпе тавлашать. Вăл — йăлт илем. Унра йăлт урăх туйăм, унăн йăлт урăх виҫĕм.

Амăшĕ ăна тиветлĕхе пысăк чун пилленĕ, чĕрине тĕнче илемне курма-туйма та, пулас савнине юратма та пысăк хастар хунă. Тĕнче вăрттăнлăхне ăнланаслăх пӳрсе панă.

Мăнастирте вăл, нуша курнипе пĕрлех, хут вĕренсе ăс та пухнă. Вĕренсе ăсланнăҫемĕн чĕри чăнлăх сĕткенĕпе, чунĕ пысăк туйăм-сисĕм симĕпе тулнă.

Ăспа калаҫакан хĕре пурте савнă. «Пирте пулман ун пекки» тенĕ.

Купăста пек чăмăртанса ҫӳренĕ вăл, шăрҫа пек яка тумланнă.

Ҫак ҫутҫанталăк уншăн йăлтах вăрттăнлăхпа тулнă. Ҫынсене тахҫанах йăлăхтарма ĕлкĕрнĕ япаласем те уншăн — вăрттăнлăх, ҫĕнĕлĕх, мĕншĕн тесен вăл ҫамрăк-ха, нумай япалана пĕрремĕш хут курать-ха, пур япалана та вăл хăй курса пăхса ăнланасшăн-ха.

Утать Сайите...

Таҫта ҫӳлте, пӳлĕхҫĕ патĕнче, илемлĕ ташă ҫемми калаҫҫĕ те, ҫав ҫемĕпе ташлаҫҫĕ кунта чечексем, хĕвел шевлисем. Анчах кĕвви-ҫемми хăй ҫын хăлхине илтĕнмест, ăна чечексем, кайăксем ҫеҫ илтеҫҫĕ. Тата Сайите чунĕ туять. Ҫав кĕвĕ-ҫемĕпе ĕнтĕ паян кайăк чĕпписем уҫăм папки тытса ташлаҫҫĕ.

Пĕтĕм тавралăх хӳхĕм янрав пулса кĕрет хĕр чунне.

Ҫырмари хăмăш пĕвĕ те, ӳсекен хурăн вулли те, ик ҫыран хушшинчи шыв та, тăп тăракан шыв та янрать пек.

Таҫтан ҫĕр айĕнчен ылтăн, кĕмĕл, ахах, ĕнчĕ янăраса килет. Тепĕр енчен юрлаҫҫĕ тахҫан ҫĕр ҫинче пурăнса иртттернĕ пысăк чун сассисем. Ҫав тахҫанах чарăннă сасăсене паян акă хĕвеллĕ кун ырлăхĕ ирĕк панă — сисме-илтме пултаракана илтĕнмелле янрама.

Пăхасчĕ çут тĕнче çине ĕмĕрех çак уяр кайăксен куçĕ витĕр! Сывлăм тумламĕ хăех — тĕлĕнтермĕш. Унта — çав çеçкерен çакăнса тăраканскерĕнче — ишсе çӳреме те, пĕр енчен чăмса тепĕр енне тухма та пулать. Сар чечек чашки ăшĕнче пӳртри пек утса çӳреме те пулать. Мĕн тери тирпейлĕ те таса унта!

Сайите, хăй çын иккенне те самантлăха манса, хăйне хăй те туйми, курăнми пулса, йăлтах çак çутçанталăкра ирĕлсе çухалать. Чун, кайăк туйăмĕпе туйма пуçласа, кайăк савăнăçĕпе савăнать.

Урапа çинче ларса пынă чух урапа çул çемми май чĕтренет те — çынна та чĕтретет. Кĕлеткене, юна, чупа куçать çав чĕтрев. Çапла ларса пынă çĕртех ху урапа çинче иккенне, кĕлетке-юн чĕтреннине самантлăх манатăн, чунри кăмăл чĕтревĕ çеç çул çеммипе, çĕр, çул кăмăлĕпе пĕр кĕвве кĕрет. Акă улăхра пынă чух та хĕвел, çутă, сывлăш, чăмăртанса, тавралăх кăмăлĕ пулнă та, пĕр кĕвве çаврăнса, Сайите чунне кĕпĕ. Вăл çак тавралăхпа хутăшса кайнă.

Çак асамлă тĕлĕкрен чăн тĕнчене тухсан та, çак çынсăр улăхра Сайите пĕчченлĕхпе пусăрăнчăк мар. Ун утти-тăрринче, сăнĕнче, хусканăвĕсенче, кăмăлĕнче — йăлтах нимпе те чăлханман, йывăрланман ирĕклĕх. Çынсем хушшинче çавсене пурне те тем çыхса тăрать. Пĕтĕм ӳт-пӳ, чун, кăмăл, сасă, пит-куç кунта тĕрлĕ йăла-йĕркесенчен канать. Ку — хуçалла пĕччеплĕх. Кунта ху мĕнле пур çапла, хăвăн турă панă илемӳпе тăрса юлатăн: юрлас тесен — юрлатăн, кулас килсен — кулатăн. Хăвăн шухăш-кăмăлупа, хăвăн çын тивĕçĕн мăнаçлăхĕпе тăрса юлатăн.

Ку вăл — чуна тасатакан, çынна вăйлă тăвакан пĕччеплĕх. Ним те вараламасть кунта чун ырлăхне. Ним те кăмăла тăвăрламасть, хĕсĕрлемест.

Телей, ирĕклĕх, тасалăх, тӳрĕлĕх, юрату тĕслĕхĕсем — вĕсем чи малтан çутçанталăкра-çке. Акă кайăксем... Вĕсем юрласа саваççĕ, юрласа йăва çавăраççĕ, юрласа ĕрчеççĕ, юрласа чĕпписене тăрантараççĕ. Ним те кансĕрлемест вĕсене савăнма, юратма, ĕçлеме... Ĕç вĕсемшĕн чуна хĕнемесĕрех, хăвна ху ирĕксĕрлемесĕрех пулса пырать. Ĕç вĕсемшĕн пĕрне-пĕри саваканçынсем савăшнă туйăмпа пĕрех — киленчĕклĕ...

Çук, çынсем патне каясшăн мар паян Сайите. Пĕлет: çынсемпе пĕрле килет тӳрĕмарлăх, кăнттамлăх, йăлтах виçепе те усăлăхпа шайлакан ăс, çын тивĕçне путаракан

«йёркелёх», çын хăй туса хăех пăхăнса пурăнакан йăлайёрке, илеме палламан, çыннăн чун, туйăм-сисĕмĕсем пуррине пачах пĕлмен саккун, чун тасалăхне варалакан ирĕксĕр ĕç...

Утать Сайите. Унăн чунĕ ырлăхпа тулнă. Унăн сăппичĕ шалтан хунар çутнă пек çутăлса хĕрелнĕ, йăл-йăл çиçет, унтан хăйĕнчен çутă тухса тăрать.

Чĕрепе ачалăх таврăннă. Унта сапăр, хавас.

Хĕр, савнăçне пытараймасăр, сассине эреветлет те «а-у-у!» тет. Çамрăк сасă çуралать те вылять сывлăшра пĕр самант, пурăнать, унтан, хăйĕн кĕске ĕмĕрне вĕçлесе, арман пĕви сăртĕнче пĕтет.

Варкăш çил вĕрнипе пĕве пичĕ ылтăн тăпри сухаласа пăрахнă евĕрлĕ. Хумĕ куçни те палăрмасть. Аялта — илĕрсе, тĕл-тĕл тĕлĕрсе юхать тулăх шыв. Ун çинче хĕвел çутисем пăтранса кайнă. Юхăм çинчен сăрт арки çине шевле ӳкерсе, хĕвел ачисем антăрлă-чĕнтĕрлĕ тĕрĕ тĕрлеççĕ.

Ярăнайса утать Сайите.

Ура айĕнчи çĕр пусмассерен вĕлтĕр-вĕлтĕр вылять, лĕмпĕртетсе чӳхенет. Сывлăша карса хунă шăналăк çийĕн утнă пек. Ура пакăлчакĕ таранах путса кĕрет те тӳрленсе юлать, ура хырăмĕ таранах путать те тӳрленет.

Хĕр авăнакан çĕр айĕнче пылчăк лăмпăртатнине тăрса итлет.

Сасартăк хĕр хăрах урине сивĕ çапнине туйрĕ, унтан теприне... Ура пакăлчакне те сивĕ çапрĕ. Урине туртрĕ хĕр — тухмарĕ, аялаллах анса пычĕ. Ура хырăмĕ таран анчĕ хĕр, чĕркуççи таран... Çĕр ăна хуллен хăй ăшнелле ĕмсе илет.

Кун пек пулмасть пулĕ... Сайите çамрăк-çке-ха. Пурнăçĕ те пуçланчĕ çеç-ха. Вилĕм çинчен вăл нихçан та шухăшламан.

Е ăнсăртран, пӳлĕхçĕ сисмен хушăран, шуйттан усал шӳт тăвас терĕ пулсан та, вăл асăрхамаллах ĕнтĕ. Халь ун ятне çеç асăнмалла. Вăл халех анать.

Авă-çке вăл... Ав килет те... Хĕр хăй инкеке лекнине те ĕненесшĕн пулмасăр, пачах та сехĕрленсе ӳкмесĕр, аялалла анса пырать. Мĕнех-ха сехĕрленмелле... Авă, пӳлĕхçĕ пулăшма янă çын çитрĕ те... Юланутпах.

Акă вăл... Чăн та, çын — çăлакан. Йĕтĕн пир кĕпеллĕ йĕкĕт, пĕç тĕп таран пахилкке тăхăннăскер, лаши çинчен сиксе анчĕ те, çирĕксене авса, хĕр патнелле çывхарчĕ, аллинчи вăрăм путавăçне хĕр умне пăрахрĕ, темиçе çирĕк

авса хучӗ, хӑй утса пычӗ те Сайитене пилӗкрен ҫавӑрса тытса ҫӗклесе кӑларчӗ, ҫитти пек ҫӳхе си ҫеремпе витӗннӗ лачакаран ҫыран хӗрнех кӑларса тӑратрӗ.

Сайите пӗр самант йӗкӗте куҫранах пӑхса тӑчӗ. Унтан савӑнӑҫлӑн ҫиҫекен ик вӑр-ҫавра куҫне хӑйӗн урисем ҫине куҫарчӗ, вӗсем хура чӑлха тӑхӑннӑ пек хуп-хура пулнине, сараппан арки варланнине курсан, питне намӑс сӑрри йӑмӑхса тухрӗ, пиҫнӗ ҫырла пек хыпса илчӗ. Хӗр вӑрт ҫаврӑнчӗ те ҫырмана чупса анчӗ. Кӗпи аркине ҫӗклесе шывах кӗрсе тӑчӗ.

Ах, мӗн тери амалан пӑхрӗ вӑл! Йӑл кулнӑ чух епле илемленчӗ вӑл. Пит-куҫӗ йӑлт йӑлтӑртатса кайрӗ.

Тав тумаллаччӗ пуль йӗкӗте. Эп ҫӑвӑнса пӗтеричченех кайӗ-ши?.. Тен, тав тума та кирлӗ мар... Вӑл хӑй ирӗкӗпе мар килчӗ-ҫке. Ӑна Сайитене пулӑшма пӳлӗх ячӗ. Ун куҫӗ умне чи малтан курӑннӑ ҫын ҫеҫ ҫавӑ пулнӑ. Вӑл мар пулсан, урӑххине яратчӗ. Вӑл пӳлӗх хушнине ҫеҫ турӗ...

Ҫапла шутлать хӗр ҫӑвӑннӑ май, хӑй ҫапах ҫыран хӗррінелле чӑтӑмсӑррӑн пӑха-пӑха илет, хӑвӑртрах ҫӑвӑнса хӑпарма васкать.

Йӗкӗт ҫыран хӗрринче хӗр ҫӑвӑннине куҫ хӗврипе пӑхкаласа илет. Пӑхмассерен юнӗ вӗресе каять, сывлӑшӗ чарӑнать. Кӑкри пӳлӗнейсе хӑпарса анать.

Ун умӗнче — юмахри хӗр.

Хыҫалта пуҫ ҫинчен сар пурҫӑн ука пек, тулӑ пучахӗ пек явнӑ ик ҫивӗт анать, мӑшӑр туй ҫӗлен пек вылянать. Кӑшт уҫӑ ҫухапа кӗпе арки хӗрринчен ҫурта пек шурӑ черченкӗ ӳт курӑнать. Шур акӑш пек ик кӑкӑр. Иҫӗм ҫырли шывӗпе ҫунӑ пек хӗрлӗ пит — шерпет сапать. Сӗт сыпнӑ пек шурӑ шӑлсем. Ик хӑнтӑр майлӑ куҫ харши айӗнче тӑр шывран таса кӑн-кӑвак куҫ. Варринчи куҫ хури — ик энӗҫ вӑрри. Ҫутта курса ӑсланнӑ куҫ — ӑрӑмласа пӑхнинчен тӳрех паллӑ. Вӗсенчен тавраналла ылтӑн вир пӗрчисем пек саланаҫҫӗ савӑнӑҫ ҫутисем.

Хӗр ҫӑвӑнса пӗтерет те кӗпе аркине пӑрса типӗтет, ерипе хӑпарать йӗкӗт ларнӑ тӗле.

Вӑл хӑпарнӑ май куҫне илеймесӗр пӑхать йӗкӗт ун ҫине. Кӑкӑрне хӑпартса сывласа та сывлӑш ҫавӑрса яраймасть. Самантлӑх тавраринe ним курми суккӑрланать.

Хӗр йӗкӗт умӗнче чарӑнать, хӑй те ним чӗнмесӗр пӑхса тӑрать. Хӗр умӗнче те ҫурхи кӑлкан пек илемлӗ, яр пӳ-силлӗ, кӗререх сӑнлӑ, кӗре йӑлтӑр ӳтлӗ, кӗрнеклӗ,

йатсан — карап йатас пек, тапсан тăва ватас пек йĕкĕт. Тура кĕми çăра йалкăн хура çӳç. Йĕс чашăк пек çамка. Мăшăр туй пĕкки майлă икĕ çĕмĕрт хура куç харши айĕнче мăшăр хура урхамах пек ташласа, выляса тăракан икĕ куç... Çав куççем инçе йывăр çула тухнăн туйăнаççĕ, тилмĕрсе, халланса пăхаççĕ.

Йĕкĕт чĕри сиксе кĕрккет.

Пĕр хушă мăшăр хире-хирĕç пăхса ним чĕнмесĕр тăрать.

Каччă, именĕвне çĕнме тесе, юри çăмăлрах сăмах хатĕрлет, кулайса куçран пăхма тăрăшать. Тинех хăйса сăмах хушать.

— Эй, таса тур амăш, хăш ялсем эсĕ? Мĕн ятлă? Сăмах хушма юрĕ-ши сана?— тет вăл.

— Сайите ятлă,— тавăрать хĕр.— Мĕншĕн эс ята ыйтатăн? Пире ятпа шырас çук. Шырасан шырĕç атте-анне ячĕпе.

— Пуян таврашĕ пулĕ? Катанпирпе тытнăскер-тĕр? Сехетсĕр, тĕкĕрсĕр килте, чухăн арки çинче кун пек пĕр айăпсăр хĕр ӳсес çук.

— Çапла. Пуян çын хĕрĕ эпĕ. Шурă пӳртре пурăнатăп. Чăлан çумĕнче тĕкĕр пур — сăн пĕтнине пăхмашкăн, стена çумĕнче сехет пур—ĕмĕр иртнине пăхмашкăн.

— Чăн та, сăну сарă. Кĕлеткӳ вăрăм. Çийӳ çутă. Пит çумасăр пăхаймăн сан çине... Хирĕç пăхма та именмелле.

— Пĕр туратсăр йывăç ӳсмест. Мулла хĕрĕн те айăп пур, тет... Эп мĕн сарри? Сибура хĕрĕ çеç... Хура ĕне пăрушĕ сарă пулайман пуль çав. Улăх тăрăх сарамак çисе çӳресе саралтăм. Тата мĕн тĕлĕшрен кăмăлна килтĕм-ши?

— Пасар урамĕнчи аршăнланă ука пек эс... Кирек кам та савмас çĕртен савмалла.

— Пур çын кăмăлне килме чечек мар. Сăмахху-ахахусене ылтăн арчана хурса çеç усрамалла. Çын ырласса кĕтсе çамрăк ĕмĕр ватта çаврăнĕ. Хамăр чухрахран ахаль те чунăм хурланать. Хура тесе хурланасран тĕкĕр витĕр те пăхмастпăр.

— Сибура хĕрех пулсассăн, ăçта пурăннă эсĕ? Епле пулма пĕлнĕ çапла?

— Усал куç тивмен. Мăнастирте куçăхмасăр ӳснĕ пуль. Анчах эсĕ тĕсне пăхса ан сăхлан. Сарă — канлĕ пурнăçран килет, теççĕ. Çăмарта шурă тесе шуратмасăр çиеймĕн. Вăрăммин те усси çук, пур вăрăма çил тивет. Чиперлĕх туйра çеç аван, ăна акана кӳлсе тухас çук, ăслăлăха куллен ыйтаççĕ.

Каскаласан — турпас, калаҫсан — сӑмах. Евлен хӑй камне манса кайсах сӑмах хыҫҫӑн сӑмах вӑлтать.

— Санран чӑн сӑмах илтсе пулӗ-ши?

— Саншӑн чӑн хаклӑ-и? Утлӑ ҫынна чӑн хаклӑ пулакан. Мӗн сӑмах ыйтатӑн?

— Каласам уҫса... Пур-и сан чун тӳрри?

— Пулсан?

— Чӗкеҫ те килет мӑшӑрӗпе... Сар кайӑк та мӑшӑрсӑрах мар-тӑр. Ҫын-ҫын урлӑ, ҫур пӗркенчӗк айӗнче курӑнатӑн эс мана. Хӑвӑнтан малтан хыпарӗ ҫитрӗ. Чулхулари ҫар ҫынни, теҫҫӗ...

— Апла чӑннех калам... Каччӑ тӗлне пӗлместпӗр. Ҫук тусӑма ҫылӑха ан кӗрт. Ӑҫтан илем ӑна... Пире тенӗ ачасем... пурччӗ — калаҫа пӗлмесӗр сивӗтрӗм. Ыр ҫын ачипе паллашма, сарӑ каччӑсене ҫавӑрма чӗлхем евӗк пулмарӗ.

— Ачаллах яла пӑрахса ял-ял урлӑ кайнӑскер, халь тин яла каяс хӗр-ҫын мар-тӑр ҫав. Ҫӑлтӑрусем хула тӗлӗнчех, улпут ачисен пуҫӗсем тӑрринчех пуль.

— Ҫӑлтӑрсем нумай та — ҫумӑрӗ ҫуса яни ҫук, пӗри те хӗвел пулса анни ҫук. Ятӑм аслӑ мар — ыр ҫын умнех тӑраймӑпӑр. Тӗрре пӗлмене сар пурҫӑн ҫип кирлӗ мар, ишe пӗлмене юхӑм шыв кирлӗ мар. Хитрене палламана мӗне кирлӗ хитре ҫын? Улпута шанса упа тутарӗсӗр юлӑн. Пурнӑҫ хуйхи пуҫ ҫине ӳкиччен хӑраххӑн та иккӗнтен пуян.

— Мӑнастиртисем качча каймаҫҫӗ, теҫҫӗ. Эсӗ те хӑраххӑнах ӗмӗр ӗмӗрлӗн-и?

— Иртес ӗмӗр ҫавах иртет. Чун ҫуралса, ӳт ӳссе — мӑшӑрсӑр пурӑнни мӗн усси? Пире унта ирӗксӗр илсе кайса усранӑ.

— Офицеру хыҫҫӑн килмесен, ялах та качча тухӑн-и?

— Вӗрене ҫулҫи катӑкшӑн кайӑк ҫӗре ларас ҫук. Кашкӑр — кашкӑр хыҫҫӑнах каять, упа — упа хыҫҫӑнах утать, пурте харпӑр хӑй мӑшӑр пулать. Тусӑм пулмин, мӗн калассу пурччӗ?

— Иккӗн тӳрӗлешер-и тейӗттӗм.

— Мӗн тӑвӑттӑн эс манпа — пуян таврашпе тӳрӗлешсе?

— Мӑкӑнь чечекӗ туса йӑтса ҫӳреме май пулсан, йӑтса ҫӳрӗттӗм... Пурнӑҫ пӗрле тытасчӗ.

— Эс капла мана ҫавӑрсах яратӑн. Каснӑ салма кастарӑн-и вара?

— Сан пек чипер хӗр эп картин ҫинче те курман...

Ыталăттăм пĕтĕм пĕвĕмпе, çавăра-çавăра чуптăвăттăм.
— Капла эп сан мăюнтан çакăнса вилме те пултарăп.
— Анчах сан пек хĕре арăмлăха илме арман хуçи мулĕ кирлĕ çав. Çĕр сум парса хĕр илсен, чарайма та çук, теççĕ. Эсĕ ман патра виçĕ кун та пурăнаймăн.
— Тыта пĕлсен — ĕмĕрлĕх, тыта пĕлмесен — виç кунлăх, теççĕ,— тутипе çеç кăшт куланçи турĕ хĕр.— Чĕлхӳ тутлă, çу пек çемçе. Пыл-çу кирлĕ мар эсĕ калаçнă чух. Санăнни пек çемçе чĕлхе-çăвар пулсан пулĕ хура чĕкеçре. Çавăрăнман çын та çаврăнмалла. Хăш кайăкран илем-ши чĕлхине санпа калаçма?.. Хăвăн ахаль те сар варли çĕрĕ-çĕрĕпе çыварăймасăр вуртать пуль.
— Ай-хай пысăк эсир, кăмăлăр юлсан — тупаймăн çав. Çийӳ ука, сăну-пуçу уйăхпа хĕвел те, кăмăлу кĕмĕл çĕрĕ пулин аванччĕ...
— Хăвăн та-çке кăмăлу хĕвел ăшши, каçалана сулăнсан, уйăх сулхăнне çаврăнминччĕ. Пуриншĕн те уйăхпа хĕвел пулма хушман. Пирĕн вăхăтра ăшă кăмăлли те кил ăшшĕн çеç хĕвел ăшши. Туснаях тăватăн пулсан — шухăшĕпе кăмăлĕ пĕр пултăр. Куçу курса чуну савăнтăр, курмассерен кăмăлу ирĕлтĕр. Эсĕ илес хĕр хĕвел витĕр курăнать-тĕр.
— Çамрăк пуклак тăм чĕлхе çавăраймасть, юпленет, ыр хĕрсем çумне çыпăçаймасть. Мана, хура чăваша, курсан — хура лаша та шуять. Сарă лаша кӳлнипех сарă хĕр лартса килеймĕн, илес тенине илеймĕн, илмессинех ху илĕн.
— Сирĕн пек ачасем хĕлĕх алапа алласа, таканапа авăсса хĕр шыраççĕ. Пирĕнешкеллисем çумне хура пурçăн пиçиххи пек явăнаççĕ те сӳтĕлеççĕ, пилĕке çыхăнаймаççĕ, пире каймас çĕрех яраççĕ.
— Эсĕ маншăн шăлсăра панă шăмă пек пултăн: шăл витмест, икĕ куçăм курса ал çитмест. Сан пек ăслă çынпа пĕрре калаçма пĕр ăшкул. Пуплессĕм килсе тăрать.
— Юрĕ, виле масар çинчех пултăр. Ăслă ача ялта ăслă çын тупаймасăр сыснана пуç тайнă, тет. Ăсăмăр кĕске — хамăра çеç. Çăварунтан тухнă сăмахунтан пăхсан, сан чĕлхӳ чăн-чăн ăстăн çеçки темелле.
— Эпир — вĕренмен çынсем — сирĕн пек чĕлхене çавăраймастпăр çав. Пирĕн кунта вĕрене кăна хут вĕренет.
— Хурăн çулçи те çырулăх. Ăслă çуралнă çын вĕренмесĕрех шухăшла-шухăшла ăс илет.
— Вĕреннĕ çынна илемлĕ тĕс кĕрет. Вăл тăн-н итлет

те — ылтăн хăлхаллă, чăр-р пăхать те — ылтăн куçлă. Сикет те — урхамах çине лекет. Пирĕн вара пăхатăн та — куç шăтать, итлетĕн те — хăлхасăр пулатăн. Сикетĕн те — шалча çине. Пурăнатпăр кăнтăр кунĕнче çутса лартнă çурта пек ним тĕллевсĕр çунса, никама ним усăсăр. Пĕлменĕн пĕр тĕрĕ тенĕ пек: пилĕке хуçса ĕçлени çеç пире ăшăтать, типĕтет, тумлантарать. Ĕçĕн алли хытă. Йывăр ĕç шăмшака пусарать, чуна тĕнтсе лартать. Эпир тем чул тапаланни те тӳпене тӳнтер тавăрма ăнтăлнă пек усăсăр... Вилессĕм те килмест: рая каяс — сăвапăм çук, тамăка каяс — çылăхăм çук...

— Пирĕн те — çын çине кĕресси пулĕ-и, пулмĕ-и — çынлăхран тухасси час пулĕ. Вĕренсе те — хам пуçа телее çырма та, халăхшăн саккун çырма та вĕренеймерĕм. Пирĕн вĕренесси нумай пулĕ. Ваттисем çеç хăйсем мĕн пĕлнипех пурăнаççĕ. Эсĕ вара халех тĕнче шухăшĕпе арпашнă. Çамрăк ачасен чĕре патĕнчи шухăшĕсем урăхла пуланччĕ. Калаçатăн пулсан, ĕмĕтне шанса калаç, унсăрăн ӳпкелешӳ çеç пулĕ. Хурçă пуртă та тĕрĕнет. Сана час тĕрĕнтерĕç.

— Ман ним çухатассăм та çук. Асатте мĕресĕ çеç ман — тип нуша. Эпĕ халăха лекнĕ нушана йышăнса систерекен вăлта хăйхи çеç... Манăçлă çын.

Хĕр, пуçне шухăш ӳкнĕ пек, пĕр хушă шăпăртах тăчĕ.

— Мĕнех калам... Çĕр çинче пурин те пĕлме юраман чăнлăхсем те пур. Вĕсене пĕлсен — пурнăç çав тери кичем. Кăшт чухлакансем Ейĕк таврашĕнче тăвăл çĕкленĕ...

— Кунта та кăлармалла-и ăна?

— Мĕн шутланине — ăшунта тыт. Çăварупа каланине сăмсупа туртаймăн. Тăвăла ăна, киремет карчăкки пек, шăпăр çунтарнипех кăлараймăн. Шăварнă тимĕр пек çирĕп пулмалла... Ну, çитĕ... Капла санпа калаçса каç та тăвăп паян. Тавах сана... Ырă та — эсĕ тытрăн. Вилес вилĕмрен юлтăм. Эс ман çăлаканăм пултăн. Пурнăçăма упрама пӳлĕх сана юри ман умран ячĕ пулĕ. Сана ман мĕн ырлăх тăваяс? Куллен ал тупанĕ çинче икерчĕ пĕçерсе çăварна хыптарсан та — çак парăм сапланас çук. Сан çине уншăн пӳлĕх çутă сăнĕпе пăхтăр. Ангелу умăнта пытăр. Сан ырлăхна манмăп. Тайма пуçăм — умăнта. Мана хăтарнăшăн сана сăвап пулĕ.

— Ку тем мар. Путнине кăларма, ӳкнине тăратма хушнă. Кунпа нумаях сăвапа кĕреймĕп. Сирĕнпе чухламасăр сăмах хушаяс çук. Ан кӳрен.

— Çулçă ӳксех шыва пăтратмĕ,— терĕ хĕр.— Асăрхамасăр ӳкнĕ сăмахах çамрăк кăмăла хуçмĕ...

— Ах... Пăхман çынна та пăхтаратăн эс, чĕмсĕр çынна та чĕнтеретĕн. Санпа самант калаçса ĕмĕр çитнĕн туйăнчĕ. Тĕл пулайăпăр-ши тепре?

— Чĕлхӳ мамăкран çемçе. Кĕске çĕр ыйхи пекех тутлă сăмахусем... Мутлăхран килет-ши ку сан, шухлăхранши — пĕлеймерĕм... Палла тăран паха. Пĕле тăран çынпа сăмах килĕшет. Теп, тĕл пулăпăр та. Ман сана пуççапса пуç та çитес çук... Пичче выртăнне эп сана хисеплĕпех. Чипер кай. Курайман тăшману хура çĕлен пулса хырăмĕпе шутăр. Ытах курайласан — куçĕ шăттăр, тӳсеймесен — тӳшĕ шăттăр,— шӳтлесе илчĕ хĕр сăмах ункайĕпе.

Сăмаххисем чĕре çумнех çыпçăнаççĕ.

«Епле усă, çыпăçтарса калаçать вăл. Йывăр тухакан сăмаха та çăмăл çавăрса калать»,— шухăшлать йĕкĕт, учĕ çине утланса.

— Урхамаху пит маттур-çке сан,— йăл кулать хĕр.

— Çапла,— тет Евлен.— Ир-каç çырла çиййĕн каçарса çӳресен те, сан туйна пыма юрăхлă пулаймĕ çав.

Чĕре хĕрĕннĕ, чун хыпнă йĕкĕтĕн.

Çук, çăвар уçаймарĕ вăл хĕр умĕнче хăй авланнă çын пулни пирки.

Пăлханса кайрĕ яш чунĕ. Чĕри кăкăрне ватса-çĕмĕрсе тухасла, çӳрен ут пек тĕпĕртетсе тапрĕ.

ВАЙА

Панулми пек палăрмасăр ӳсрĕ Сайите. Пĕвĕпе те, чунĕпе те çитĕнчĕ. Сисĕнмесĕр чăмăртанчĕç туйăмĕсем.

Хăййĕн чĕринче вăл хăй савас чун тусĕ валли сăвапла кĕтес типтерлесе хупă: вак айван-ашанран тасатнă, хĕрӳ чĕре вучĕпе çутатнă, юратаслăх симне пылланă.

Çак чĕре симĕ ун халь никамшăн та уйрăм çыншăн тăкăнман, тӳпеми тулни çеç çутçăнталăка юратни урлă вĕçĕмсĕрлĕхе саланнă.

Юратас тусĕ ун ĕмĕтре çеç сăпарланнă-ха. Куç умĕнче ун сăнĕ те пур, пĕвĕ те пур: Сайите ăна курсанах паллапă пулĕччĕ. Ăна вăл халь пĕрре те курман-ха. Анчах чун ăна часрах тĕл пуласшăн хыпса çунать.

Çаванпа пуль чун ваййа туртать.

Çырла пиçнĕ вăхăт — вылявлăх.

Кам сăхланмĕ яш чух ваййа вылама! Иртет ĕмĕр —

иртетех, ылтăн-кĕмĕл парса та çаврăнмĕ. Çамрăк чух выляса юл — ӳкĕнĕçе ан юлтăр.

Каçсерен кӳршĕ ялта Сĕвĕшре ташлаççĕ — çухрăмран сывлăш чĕтренет, çур çухрăмран çĕр кисренет. Сикнĕ çĕртен сим тухать, вылянă çĕртен вăй тухать.

Ял çумĕнчи сăртлă лапара — вăййă. Аялта — улăх, Сурăм шăвĕ. Сăрт хĕррипе тупăлха.

Вăййа вилĕ-чĕрĕ, мăнĕ-кĕçĕнĕ йăлтах тапранса тухнă.

Ваттисем аякра курса лараççĕ. Çамрăк инкесем тăраççĕ — ăмăрт пек: масмаккисем — тӳпекки, сурпанĕсем — çунатти.

Хĕрĕсем çап-çутă та хĕп-хĕрлĕ тухнă. Суса хунă сар ылтăн пек сар хĕрсем — чĕкеçсем пек ларса тухнă йĕркипе. Пуçĕсенче пуç йăтайми тухъясем. Тенкисем çĕре тивмен кĕмĕл пек йăлтăртатса çутă тăкаççĕ, тумлаççĕ, тумлаççĕ — ӳкеймеççĕ. Чăн тӳпинче сулăк тенки. Ал тытти тутрисем — хул урлă. Кăкăр умĕсем — кĕрчĕллĕ кĕскĕ. Хĕрлĕ пиçиххисем юп тăкаççĕ. Пурçăнĕсем хĕлхем сапаççĕ. Хăмачă сарă, ука хӳре. Çурăм хыçне майĕран ялав çакпă. Пĕçĕсем тăрăх — яр тутри. Пилĕкĕсенче хырăм ули. Хăйăклă аркăсем вăр-вăр çаврăнаççĕ. Хĕмленсе çунаççĕ сафьян атăсем. Ал сыпписенче вĕлтĕртетеççĕ сулăсем, пӳрне сыпписенче — çырулла çĕрĕсем.

Йĕкĕчĕсем урисене шăхăр сырнă, кĕпе ум тĕррисем — сĕвек кĕперри. Ташласа ăшша пиçнипе — пыр çыххисене салтнă. Çӳçĕсем туснă.

Улăха — çава, хире çурла çĕкличчен вылява-кулма май ӳкнĕ чух пурте выляса юласшăн.

Акă вăйă карти ик еннелле сирĕлсе сарăлчĕ. Хĕрĕ-яшĕ хутăшса алла-ал тытăнчĕç. Шăнкăртатса утаççĕ шăрçа ярăмĕ пек. Тăхăр тĕрлĕ утти пур вĕсен, çăрхи пур. Шыв картламĕпе утнă пек уççăн ярăнса пыраççĕ. Çаврăнаçаврăна тăраççĕ, тытăна-тытăна шăваççĕ. Тенкисем кĕвĕ калаççĕ. Сассисем купăс çемми майĕпе çаврăнаççĕ. Вăйăçисем тупăшса кĕвĕ калаççĕ. Тренчĕлĕ янрать, палнайĕ шăхăрать, шăпăрĕ какăрать.

Куçа çисе тăраççĕ витĕр курнан шăрçа пек вунçич çулхи сар хĕрсем. Чиерен хĕрлĕ пичĕсем. Куçĕсем выляççĕ, тутисем кулаççĕ. Чăр пăхаççĕ те — пуçа чиктереççĕ. Вĕсен тĕлĕнче сакăр кĕтеслĕ атăсем те тумхахсăрах такăнаççĕ.

Акă хĕрсем пĕр енне, каччисем тепĕр енне уйрăлса тăчĕç. Купăс çĕнĕ кĕвĕ пуçларĕ.

Ах, уçă-çке купăсĕн кăкри!

Йынăшать, макăрать, варне-хырăмне хыпалать. Камăн алли çапла калама пĕлет-ши? Мунчара вĕреннĕ-тĕр калама. Кӳршĕ мунчинче вĕреннĕ-шим ăна Евленĕ? Тренчĕл, шăпăр сассисем те купăс кĕввине кĕреççĕ.

Илемлĕ кĕвĕ çатăрах тытать, ăша-вара ыталать, чуна хускатать, ăшри ӳте макăртать; сар хĕр чĕри арчисене уçса, чунĕсене рай пахчине илсе тухать. Кĕвви чарăнсан та, çыннисем çав пахчаран чăн тĕнчене тухасшăн пулмасăр чĕри тĕлне алă тытса тăраççĕ, çак тĕнчере кун пек пурнăç пурри-çукки пирки шухăша каяççĕ.

Именчĕккисем пуçĕсене çĕклеççĕ, юратаканнин юратни палăрса пырать, хăяйманнисем хăйса хĕр умне пыраççĕ, савнисене çумне ларса палăртас теменнисем те пĕрне-пĕри алран тытаççĕ. Савниллисем куçран куçа пăхса ялтраççĕ, ташша чĕнеççĕ. Хĕрĕсем именкелесе тухаççĕ. Хускавĕсем çамрăк юрату туйăмĕ çиеле тапасран шикленнипе чăлханнă.

Яшсем хĕрсене пĕрерĕн-пĕрерĕн ташлатаççĕ, хĕре хĕр улăшать, каччи çавах.

Пăхса тăма савăк, инкерлĕ. Килĕшӳпе илем куçа кăмăллă.

Эй, Евлеп! Вăйă хушшине кĕртмеп-им сана? Е уксаххсем кӳренме пултарĕç тесе ташламасăрах тăратăн-и? Чĕлхесĕрсен кăмăлне хуçас мар тесе юрламастăн-им? Шăл хушшинче усранă сăвву арчара-им? Арчин уççи арăмунта-им?

Выляса-кулса чĕрене пымасть çав санне. Выляни-кулни юлнă çав сан хуп сăпкапа. Выляса йăпанма тухман эсĕ... Йĕри-таврах ялтăртатсан та, пур ялтăртатакан янтал мар çав саншăн. Куçу курни, чуну савни — пĕр хĕр çеç çунтарать чĕрӳне... Ăшран тухмасть вăл — тымар янă пек. Вăл çеç çак вăйăра хывăх çинчи пĕрчĕ ахахăн курăнать. Сарă чечек хушшинче хĕрлĕ чечек хитререх. Çак вăйăра Сайите.

«Эй, пӳлĕхçĕ! Ма асаплантаратăн эсĕ мана çапла!..»

Çук, тем çинчен шухăшласан та, шухăшу каймасть ун çинчен, ăшчикӳ уншăнах çаврăнать.

Юн хĕмленет, вутпа вĕрет.

Эй, калăм каç çуралнă пек кăвак куçлă Сайите. Кулмасăр кулса тăрать-çке тути! Чечек тăрри пуçтарма тесе, чăпар куккук валькăшса анĕ; хĕвелпе пиçнĕ чие тесе чие кайăкĕ килсе ларĕ.

Кăкри кăп! тапса тăрать, анать-хăпарать, кĕпипе

пăвăнать, кăкăр кĕскĕ тĕрри кăнт! карăнать. Пилĕк авăнчăкĕ палăрса тухать.

Серепери çăрттан пек авăнать пиçĕ пӳ, турткаланать. Хуплама тунă тум ăшĕнче тăвăр пуль çав чăн-чăн илеме. Малалла каять, каялла каять. Витĕр выляса çиеле тапать, ар шăмшакне хумхатса, çут тĕнчене йăлт мантарать.

Ар куçĕ-пуçĕсем çу пек ирĕлсе саланса кайрĕç. Татăлаймаççĕ хĕр çинчен. Анчах ытла именнĕрен хăйса пăхаймаççĕ куçĕнчен, хăймаççĕ ăна ташша пырса чĕнме. Куç ӳкмелле ан пăхчăр тесе, пӳлĕх хăй ăпа хӳтĕлесе илнĕ пуль.

Йĕри-таврах сар хĕрсем — пĕрине те куç курмасть Евленĕн, Сайите çинчен çеç куçĕ каймасть. Анчах Сайите...

Уçман арча ун чунĕ. Ун уççийĕ ав тӳпери симĕс çăлтăр! Илсе антар — уçайăн.

Кам çавăрайĕ ăна куç вĕлтсе! Маттур каччăран пулманни пулайĕ-ши çыппа çӳç çыхнă йĕкĕтрен?

Эй, мăнтарăн чиперри! Вутпа шыва ӳкерет-çке йĕкĕте.

Сăмах та хушаймăн-им савнă çынна? Пĕр сăмах хушмасăр кам тус пулĕ? Çитет-ши мехелӳ?

Асăрхарĕ хĕр пĕр йĕкĕт хăйне пуринчен ытларах сăнанине. Пĕвĕ витĕр çиçĕм тухса кайрĕ тейĕн — шарт! сикрĕ. Ик кăвак куçĕнче ик кăвак хĕлхем çиçсе илчĕ. Пичĕ вутпа хыпса илчĕ. Чунра вĕри шевле вылярĕ.

«Чăнахах кăмăлне килейтĕм-ши эп унне? Çырлахсам, пӳлĕхçĕ, вăл ман ума килет-çке.»

Йĕкĕт хĕр умне пуçне тайрĕ... Хĕр килĕшсе пуçне пĕкрĕ... Ах, ĕмĕр çитнĕн туйăнчĕ Евлене.

Евлен пĕррех урине тапрĕ. Хĕр юхса, ярăнса хирĕç тухрĕ. Утни-чупни пĕрех пуль. Çăмăл кĕлетки сулăмĕпе вăр çаврăнса сулăнать. Хумханайса ташлать, ярăнайса юхать, саркаланать сарă хĕр сар чечек пек.

Çут тĕнчере мĕн килĕшӳллĕ?

Шуçăма — хĕвел, аçана — çиçĕм. Хăлат чĕреллĕ йĕкĕте маттур сар хĕр килĕшет.

Ташлать Сайите, кĕлетки хĕрет, чӳк хурăнĕ пек чӳхенет, хунав юман пек хумханать.

Чăтаймарĕç кĕвĕç чунлă яшсем, хитре мăшăра кӳлешсе, ичентерме шутларĕç, авланнă çын каччă шутĕнче çӳрени çинчен екиет такмак хайларĕç, намăслă юрă пуçларĕç:

Хӗрлӗ, хӗрлӗ хӗрӗсем
Хӗрлютине каяççӗ.
Вир, вир, вир, шан, шан, шан —
Хӗрлютине каяççӗ.

Вӗт-вӗт çумăр çитсессӗн,
Вӗтлӗх айне кӗреççӗ.
Вир, вир, вир, шан, шан, шан —
Вӗтлӗх айне кӗреççӗ.
Аçа-çиçӗм çитсессӗн —
Яш ытамне кӗреççӗ...

Хӗрсем, вăтанса, авăк çилпе хурăн тăрри хумханса илнӗ пек тайăлайса, пуçӗсене чикеççӗ, аяккалла çаврăнса илеççӗ те, каччăсем енчен пăрăнса тăрса, хăйсем юрă пуçлаççӗ:

Шăпчăк юрлать,
Тул çутăлать,—
Епле час çутăлан çӗрсем пур...

Юрри-сăвви чуна уçать.

Чӗкеç пек юрлаççӗ, чӗлхи вӗçӗсем тула тухмаççӗ.

Ярăм-ярăм янкăс юрă юхать.

Сайите те хӗрсемпе юрра тăрать. Ма юрлас мар вăййа тухсан. Калаçмасан — чӗлхе хытать, юрламасан — юн сывăрать.

Вăййа тухакан юрри-сăввине манса хăвармӗ çав.

Çамрăкла вăййа тухман пулсан,
Эпӗ сана савмăттăм.
Сарă кайăк, кăвакарчăн,—
Чӗрем çунать ман саншăн,—

эреветлӗн юрлать Сайите çамрăк кăмăлӗпе.

Мӗн тери уçă ун сасси — итлекене куккук сасси пек. Епле кăкри çаврăнать-ши, епле сывлăшӗ çитет-ши?

Уйрăлаççӗ çамрăксем мăшăршарăн.

Сар ачисем тус тунă — калаçиччен кулса тăраканне, хăйсем вылятарах панине. Куçӗпе пăхсан — куçӗ ирӗлет, шухăшласан — чунӗ савăнать.

— Çирӗмре çирӗм,— тет вăййа вӗçлес текен.

— Ик вуннăра та çирӗм,—тет вăййа татах выляс текен.

Хуллен килелле саланаççӗ. Чашки-чашки шăрçа пек тантăшсем сапмасăрах саланаççӗ.

— Мӗн салхуланса тăратăр?— тет Сайите.

— Ман салхăвăм пӗтес çук,— тет Евлен.— Çулăмăрсем киле пӗрле пулинччӗ.

Сайите чухлайса пуçне пӗкет.

— Пĕчченрен иккĕн аванрах пулĕ.

Ырăпа çӳçенет яш чунĕ. Хĕр сăмаххи ăша çу пек сарăлать.

Эй, ăраскалсăр йĕкĕт... Ăраскалсăррин кĕсри вилет, тет... Тантăшу тана килменни ĕмĕрлĕхе хуçнă çав сана...

...Лĕпшĕннĕ каç. Тавралăха тĕтре те ӳпре пусса илнĕ.

Утрĕç çамрăксем улăх тăрăх.

Йĕкĕт ĕнтĕ тек шӳтлеймест, хăюлланас вырăнне хăюсăрланса пырать. Чĕлхеленес вырăнне чĕмсĕрленсе пырать. Чĕлхи те такăнать, сăмахĕсем йывăр тухаççĕ.

— Сан çинчен шухăшăм пулман чухнех лайăхчĕ,— тет вăл ним шӳтсĕр.

Хĕр те малтанхи çăмăл калаçăва кĕреймест:

— Сăмахна турă итлесе тăнă вăхăт ап пултăр...

Çăра тĕтрере вĕсен сасси лупасайĕнчи пек илтĕнет. Пĕлĕт шăналăкĕ çинче шăрçа-çăлтăр йышĕ — шĕвĕ ылтăн тĕтре пек, вĕт ала пек.

— Чăн, Сайите,— тет Евлен.— Эсĕ аса килсен, эпĕ ура тăрринченех тĕлĕк куратăп ĕнтĕ. Урлă-пирлĕ çӳресех çĕр каçатăп,— çук, шӳчĕ тухмасть йĕкĕтĕн.

— Ак ĕнтĕ асра-пилте те çук çын тус пулчĕ-и?— йăл кулма пăхать хĕр тути.— Эсĕ ырăран ырă калаçа пуçларăн-çке.

— Хĕвел çути эс, Сайите. Эсĕ тухсан çеç хĕвел тухнăн туйăнать. Эсĕ кĕрсен — хĕвел аннă пек. Ăса та туйăма вăратрăн.

— Эсĕ турчка пур çинчех аллуна вута чикетĕн-им ĕнтĕ. Сан кăмăлунта эпĕ-ши? Мĕн тесе çапла икĕ пуçланса çӳрес? Епле-ха арăмна ытарса тухрăн вăййа?

— Ăна ытарăпин ытарăп... Сана ытарма çук çав, Сайите.

— Миçе çаврăнса выртрĕ-ши кĕçĕр?..

Мĕнех калайтăр ĕнтĕ йĕкĕчĕ...

Сисĕни-сисĕнми лĕм килет. Ăна питĕ вичкĕн сисĕмлĕ ăвăссем çеç, çамрăк пуян чун евĕр, туяççĕ — хуллен çӳçенсе шăпăлтатса илеççĕ.

— Асту, çылăхунтан ӳкĕнмелле ан пултăр,— тет Сайите.—Пирĕн çине турă тĕл пуличченех хура çыру çырнă.

— Эп çĕв-чăваш... Турă çырнине пăхăнса пурăнма çуралман. Кунçулăмра пăрăнăçсăр пурнăç пырамастăп. Çылăхсăр кам пулать? Виçĕ кунхи ача та амăш чĕччине çыртса çылăха кĕнĕ... Сайите! Çак ăш çуннисем ман йăлтах шӳтте кайĕç-ши? Халĕ ĕнтĕ пылĕ кайсан та, пылакĕ каймĕ. Эпĕ айăплă мар чунăмпа. Ку таранччен ка-

нăçлă иртнĕччĕ ман кун-çĕрсем. Çырма пек тулса çитрĕ ман ăшра...

— Эй, мăнтарăнăм. Çырми тулли юхсан, çыранне йывăр килĕ. Санра ман ӳпки-сапки пулас çукчĕ, халĕ йĕркеллĕ калаçмантан ӳпкевĕм пур. Эсĕ хамăр выля-кула калаçнисене йăлтах чăна çавăрасшăн-и? Ху çавăртăн пулсан, хăвах ан сивĕт. Мĕнле эс сасартăк улшăнтăн?

— Тумлампа тумлам та сивве, ăшша, сывлăш пусăмне кура пĕр мар... Сана курнăранпа мана ийе улăштарчĕ тейĕн. Калас сăмахăмсем — чун тулли... Чăн та, пур ман арăмласкер. Хăйсĕр пуçне никам та çын картĕнче мар уншăн. Тĕсне курмăттăм. Иккĕн пĕр пӳртре пурăнатпăр пулин те, телейсем расна. Çынлăхран кăларчĕ вăл мана... Эсреле хунăскер. Унран ырă ят çук ăна. Текех кил ăшчикне пăтратать. Йăлт тискерленчĕ. Вилсен — чĕринчен çĕлен тухать пуль çав. Курăкран усал — куршанкă, йывăçран усал — кăпчанкă. Арăмран усал — ху ухмах чух чун савман çынна илсе панă хĕрарăм. Çул çитмесĕр авлантарчĕç те — ăс кĕмесĕр ăн кайрĕ. Яш ĕмĕрпе пурăнма май килмерĕ. Яш ĕмĕр вĕçне кăларнă мана вуник çул туличченех. Хăналăх та пулаймарĕ вăл. Ача пурнăçĕ иртсенех тĕнче халне чухларăм. Анчах ĕненетĕн-и, Сайите... Пĕр хупăри çăмартан шуррипе сарри хутăшмаççĕ. Эпир те çаплах. Ун çарамасне алă тивмен ман. Савăнăç кӳмен хĕрарăм вăл — алă усăмĕ. Çав усала парăнса пурăнас-и? Усал арăм ар-пиртен усал. Ар-пир сăхсăхсан уйăлать, теççĕ, куна сăхсăхса уйăраймăн. Çав усал çумне выртиччен — ыррăн ури вĕçне выртасчĕ. Анчах пӳлĕх пилпе паман телейĕме ыйтса илме мехел çук, улăхса хăпарса антараймăн...

— Турă пĕлет ĕнтĕ сирĕн хушшăра,— тет Сайите.— Ытла вĕри эсĕ. Çамрăк пуçна та шеллеместĕн. Арăмĕпе упăшки хирĕçни — шывпа хăйăр пăтранса кайнă пек çеç-çке. Катанпир типиччен тăрălĕ те.

— Э çуралтăм,— терĕ Евлен,— çăлтăрăм тухмарĕ тӳпепе. Çынна-çке хăй çăлтăрĕн çутипе хаклаççĕ. Пуçра телей пулмасан — ĕмĕр вăрăммин усси çук. Ырă курса пурăнакан çеç ĕмĕр иртнине сисмĕ. Пирĕн вăл ăшă ыйхăра курнă тĕлĕк пекех иртмест çав. Кĕçĕнрен артакра ӳсмен. Качака мана аннерен ытла сĕтпе тăрантарнă. Нуша ман аттеçĕм, хуйхă — аннеçĕм, хурама — хурăнташ... Тутлă пурнăç вăл — ăсра сăнарланни çеç-мĕн. Ĕмĕт — ĕмĕр тăршшĕнче, шухăш — кунçул ăшĕнче. Чăх сăхмалăх телейшĕн ĕмĕр мăкăрланатăн тислĕк пек. Тем

чул ватăрлансан та, пурнăçĕ çуна тупанĕ хура çĕрте шунă пек. Пурăнатăн такам ырлăхĕшĕн путавăç пулса, такам енчĕкне мул путавласа. Çынсем тăван çумне таяннă чух хусах юпа çумне таянан. Çынсем хăна-вĕрле пухнă чух, çиле хирĕç çăвар карса, çăлтăрсем суса тăран. Сумассерен сиксе юлать. Çăлтăрсем кĕмĕл укçа пулса анни çук. Сассăмăр турă патне çитеймест. Мĕн çапла, тепĕр тесен, тĕнче çĕртес? Чăн та, юрăра каланă пек, ман шăмат кĕпçи пулас-мĕн те, пĕр хĕр татса çитĕр-мĕн...

Утаççĕ хĕрпе каччă.

Кĕçех Элкер çăлтăр та, Курка çăлтăр та шупкалчĕ; сайралчĕç çăлтăр йышĕсем. Ĕнтĕ тул çути пуçĕ — шурăмпуç шуралса килчĕ. Кунпа çĕр — хăнана килсех тăракан икĕ йăмăк пек: пĕри — хури — тухса кайма ĕлкĕреймерĕ, тепри — сарри — килсе те шаккарĕ.

— Эй, чарусăр ача,— терĕ Сайите.— Эс ытла юйкăн чунлă. Сăмаххусене урăх çын умĕнче ан асăнах... Хăвăнта тăман сăмах çынта тăраймĕ. Салатнă сăмаха пухасси хĕн. Вĕри чĕре чипер ырă эчелпе, хăй вилĕмĕпе вилеймĕ. Ман чун малтанах сисет. Хуйхи вăл, шурă чул çеç хуйхăсăр, теççĕ. Телей хăйне уйрăм çÿремест. Вăл инкекпе мăшăр. Вутра чух — сивви телей, шартламинче — вучĕ телей. Эсĕ мана килĕштеретĕнех пулсан, ку вăл сан пуçна пÿлĕхçĕ çырнă асап çеç пулĕ. Шăпи çапла пуль ĕнтĕ вăл пирĕн.

— Хамран та санран килме пултаракан япалана эпĕ çырнă шăпа теметтĕм. Телейшĕн турăпа та тапăшмалла пулĕ.

— Унăн таптăшĕ çук... Ăсна ан вылят эс.

— Пур шыв та хăйĕн çыранĕнчен тухасшăн ĕмĕтленетех пуль, анчах сахалăшĕ çулне улăштарать... Хамăр шухăшласа кăларнă тискер йĕркесене шăпа тесе, хамăрăн пÿрнĕ телейĕмĕртен те пăрăнатпăр... Кайран туррах айăпа хыватпăр...

— Çу пек çемçе чĕлхе те, тутлă сăмах та мана çылăх картине кĕртеймĕ теттĕм,— терĕ Сайите, йăлтах çутăлса кайнă тул çутинче киле кĕме васкаса.— Акă эсĕ хăв арăму тĕлĕшĕнчен йĕркесĕр ĕç турăн, эпĕ те санпа калаçса сăвапа кĕреймерĕм-тĕр. Анчах эпир ырă калаçнă çĕре çу тумласа юлмĕ çав, тем чул ырă калаçнисем те сурчăк пулса çеç саланĕç. Кăмăлу ăшă, ху та чипер. Савăттăм — савма мехел çук.

— Эп калаçнисенче çылăхăм нумай пулсан — каçарсам,— тет Евлен, чарăнса тăрса.— Ăшши те, сивви те

тухрĕ пуль ман çăварăмран. Ним те калаçмасан, ним те çук. Апла калаçмасăр, капла çук. Çапах та, Сайите, асăнмăн-ши мана асна килнĕ чух?

— Чĕлхӳ айĕнче пăр çук пулсан, сăмаххунта чăнни чăх турттăш пурах пулсан... Мĕнех калам... Ачинчен малтан амăшĕ çурални çук. Ĕçĕн пуçламăшĕ çуралмасăр вĕçне ан шыра. Çапах та çава çитмен улăх çук, çурла çитмен апа çук. Туррăн ирĕкне кам пĕлес? Тен, пире вăл юри çапла тĕл туса калаçтарать пуль.

— Сайите, кӳреймĕн-ши чунăма кăшт шанăç çути? Каласам виç ăш сăмах.

— Пурĕпĕр эпĕ сан шаннă йăвунтан вĕçсе каяс кайăк çеç пулăп. Шанчăка никам та нухрат пек пырса хывмĕ сан чунна. Ман кăмăлăм та сана ытлах хирĕçлемест... Пурĕпĕр ытлашши ан ĕмĕтлен. Малтан ĕмĕтленсен, кайран типсе юлас пулать. Кăмăлсăр ан кай... Мĕнех ăш сăмах калам сана... Усала тӳртĕн, ырра хирĕç пул.

— Сайите! — тилмĕрсе пăхрĕ йĕкĕт хĕр куçĕнчен.

— Ан хистесем, — терĕ хĕр. — Хĕвелпе ирĕлес пăр пулсан, вĕри шыв тухса сапмасăрах ирĕлĕ. Ну, уйрăлар... Тем чул калаçса та — чĕлхе вĕçсем пурçăн пулаймĕç.

Кайрĕ Сайите.

Каччă хĕр куçран çухаличченех пăхса тăрса юлчĕ йăмра хыçĕнчен.

Улăх тăрăх шур упа кĕтĕвĕ пек тĕтре куçать.

Арман пĕвинчен те тĕтре юпаланса хăпарать. Çăваш сăрчĕ ирхи епе, сипетлĕ сывлăмпа пас тытнă лаша пек курăнать. Кĕçех сывлăм пĕрчисем ирхи хĕвелпе мерчен çутă çутрĕç.

ÇЫРНИПЕ ПӲРНИ

Ик çыран хушшине хĕсĕнсе, хура çăрха ут пек, çăрхалать, качалать Сурăм шывĕ.

Кăнтăрла хуралтăсем, йывăçсем, çырансем çумне лăпчăнса тăнă мĕлкесем унтан ерипе шуса тухрĕç, каçаллана хирĕç шурĕç, ырă сулхăнĕпе тавралăха саврĕç.

Сайите хăрах аллипе учĕн çилхине çивĕтлет, якатать. Лаши хăлхипе «çип арлать», ик урипе çĕре кукалет.

Хĕр çут тур утне чĕлпĕрлет.

— Çил çунатлă вăл: çумăра хирĕç тăрать, — тет хĕр. — Шăхăрмасăр шыв ĕçмест, алламасăр сĕлĕ çимест. Кун пек ута тытма кайăк чĕреллĕ çын кирлĕ.

Евлен те ут патне пырать, аллине ут çипе хурать.

— Хăрушă мар-и?

— Хăраман çынна хăрушă мар. Эсĕ хăвна чăтайĕ-ши тесе ал хурса пăхатăн-и? Ура хуçсам, утланаймастăп.

Евлен хĕре, сылтăм урине хуçса, лаши çине утлантарать. Учĕ параппансăрах параппан ташши ташла тăрать.

— Хамăн савни те çакăн пек маттур пулсан, ăна эпĕ çакна парнелĕп,— тет Сайите.

— Эй, Сайите,— куçне вăйрăса пăхать йĕкĕт хĕр çине.—Сана курнăраппа выртса та ыйхă килмест-çке ман.

— Мĕн тери хĕрхенмелле сана. Хурт сăхнипе пĕрех пулчĕ-ши эпĕ санпа ăшă калаçни?

— Хурт сăхни хурлăх марччĕ, пыл çукки хурлăх-çке.

— Акă, кур, шĕвĕр пӳрне чĕрни çине шурă тухать... Хуйхă. Санпа калаçнăран ĕнтĕ,— тет хĕр, шур шăлан çеçки пек хĕрлĕрех чĕрнине кăтартать.

— Кулатăн эс манран, Сайите.

— Çук, кулмастăп... Чĕлхем юнăшасран хăратăп.

— Эпĕ тăнăшаймастăп-çке куна.

— Мĕнех тăнăшмалла марри... Юмми юман, туппи селеп. Чипер юл...

— Тăрсам, Сайите, кăштах...

— Эпир тем чул тăнă вырăна та чăн мамăк шăтса юлмĕ. Сăмах тӳнипе çу ӳкмĕ. Çук, Евлен... Шухăшласа ăса кĕрем-ха, манăн та ăсăм кайрĕ санпа. Чунăма, тархасшăн, ан пăчăрта. Сан арăму, чăнах, ăшă çын мар. Çапах кампа çӳç сыхнă, çавăнпах ĕмĕр ĕмĕрлемелле пулĕ. Ятăмăрсене ярар мар. Кун пек усал ят çĕклесси йывăр мана. Хĕре сăмах ытларах тивет. Ырă ят юлниех аван пулĕ. Ватăсем ăспа асăнĕç. Хăв хыççăн ырă ят юлни — йывăçĕ ӳксе çутă мĕлке юлнă пек илемлĕ.

— Ах, Сайите.. Вăйăа та пулин тухсам, эппин. Аякран та пулин пăхса тăрам сана.

— Эсĕ халех капла хушатăн та, теплерен тепле пулас пулсан — кĕсре сума та хушăн?— йăлтăр кулать Сайите.— Арăму шăл хушшинчен хĕм сирпĕтме тапратсан? Тухăттăм та — упа ямасть... Ĕç нумай, Евлен...

— Çаплах телейсĕр-ши вара эпĕ, Сайите?

— Телейӳ пурах пулсан, çичĕ тинĕс уттинчен те çаврăнĕ... Хăвна ху эсĕ ытлашши телейсĕре ан хыв. Симĕс шапа та хăйне çапла яланах кăвак тет. Чунăм та йăлтах сăмахăм çине ӳкрĕ ĕнтĕ...

— Сайите!!.

— Шăпрах эс... Çын хăлхине кĕрĕ. Пирĕн тĕлĕмĕртен хуранăн та хăлхи пур. Чипер кай!

Учĕ тапса сикрĕ Сайитеп. Евлен тăра юлчĕ.

Эй, Сайите... Ашă сасси чупа вылятать-çке, хуйхăллà кăмăла та çĕклет-çке...

Йĕкĕт, чăн пурнăçа йăлтах манса, юмаха путать.

Çамрăклăх!

Такам чĕринчен те хĕм кăларакан, пурнăçа илем кӳрекен çамрăклăх!

Тумлам çуралать те — хăйĕн чăп-чăн кӳлепипе, йывăрăшĕпе çӳлтен татăлса анса çĕре ӳкиччен çеç пурăнать. Унăн тулли пурнăçĕ пĕр куç хупăмра. Çамрăклăх та çав тумлам ӳкнĕ чухнехи чăлăм вăхăт çеç мар-и... Чечекленет те çын, çамрăклăх çеçки чĕрĕ чух çеç тулли пурнăçпа — вĕри туйăмпа, ĕмĕтпе, савăнăçпа, юратупа пурăнать. Темĕнле ĕмĕт те ун чух шанчăкпа шăварăнать.

Анчах пурнăçĕ — хăйне маях шăвать çав.

...Евлен алăк урати урлă каçсанах, унăн арăмĕ, Укане, шăртне шăнараймасăр, кăшкăрашма тытăнчĕ.

— Мĕн эс урлă пурт аври çеç тытса пыратăн манпа,— тет Евлен.— Çынĕ паян çултан килпĕ. Хырăм та выçă.

— Ак, ме, йытă хӳри çи!— çухăрать Укане.— Кайса сăйлан Сибура хĕрĕ патне! Вир пăтти пĕçерсе, куçне сар çу хывсах кĕтсе ларать сана.

— Мĕн ийеленетĕн эс?— тет Евлен.— Сан, тупата, çичче пĕрре çитмест пуль.

— Сайитепе курнă сана, усланкă! Мĕлки хитре те-ха лешĕн... Хĕрарăм чиперри вăл — пĕр-ик хырăм çĕклесе, ача çуратса куртăр-ха...

— Киремет пек, ырăпа вăрçа-вăрçах ватăлтăн ĕнтĕ эсĕ,— тет Евлен.— Чуну ĕйелес çук...

— Шатра шапа! Каччă-и эс юпахла тиха хыççăн вайăкланса çӳреме!— çухăрать Укане.

— Эс ман мĕнле арăмне хăвах пĕлетĕн,— тет Евлен.— Юмахри пек ик енне ик хуран лартас пулсан, сан маншăн пĕр тумлам куççуль тухмĕ, тепри тулса тăкăнса кайĕ.

— Эсир мана йытта кăлартăр та — халĕ арăм мар тетĕн-и?— çĕхĕрет Укане.— Хĕрлĕ çавра питĕм пурччĕ, кунта килсе шуратрăм. Типĕтрĕр мана. Пирĕштеччĕ— киремет турăр. Çынсем арăмĕсене тĕрексĕр савăт-сапана тытнă пек ăслă пăхса усраççĕ. Ара çитрĕн, авлантăн пулсан — ват çын ĕретне кĕр.

— Çук, Укане,— тет Евлен.— Эп вунсаккăр тултартăм, эс хĕрĕхе çитетĕн... Эсĕ хăвăн çамрăклăхна савăнса юлнă... Эп вăййа та тухса кураймарăм. Халех ват çын ĕретне кĕреймĕп...

— Пĕрре те пĕр кăмăлтан каласмастăр,— хушша-хуппа кĕрет Каçликка.— Сирĕн хушша тупăлха шăтрĕ-ши... Текех урлă-пирлĕ пуплешетĕр те питлешетĕр. Алăка хытăрах хупса çӳрĕр-ха. Ялйышран намăс. Эс те, Евлен, кин çилли енне хӳре пăратăн. Мĕнле иленсе, мĕнле пурăнăр-ши капла? Ун пек чух ĕç-пуç типтер пулсан та, пурнăç ăнăçмасть.

— Мĕн тăвас-ха ман, асатте, унăн кăмăл килĕш çавăн пек пулсан? Эсĕ те мана айăпа хăваратăн. Ман айван тĕттĕм ăс чухлаймасть. Ăна ĕнтĕ, ама сĕчĕпе ăс кĕмене, кам сĕчĕпе ăс кĕтĕр? Ăçтан пурнаям çав мертессĕр амаçурипе арăм тесе? Пире вăйпа çыхнă пулсан, сурпан уйăрар. Иксĕмĕр хушшăмăра тăвансем татса паччăр.

— Манран уйрăлсан, сан авланма ум усăлĕ тетĕн-им?—сиксе тăрать Укане.— Пусăма йытă çитĕр сана касармассăм çинче! Хамăн вăй çитмесен, тара тытăп! Йытă вилли тутарăп санран, шăмму-шаккунтан мур карти тытĕç! Сайитене качча илме хапăл туса тăратăн пуль. Савать-ха ку, тетĕн пуль хăв ухмах ăссĕн. Сана, çын усаллине, куçпа кĕтсе, куç хӳрипе ăсатать вăл. Пăхать-ха ку мана тесе пуçна мăнатса çӳретĕн-и? Таса пĕлсе тăратăп: чĕри ун саншăн кăлт! та тумасть.

Ним тума та алă ĕç çине выртмарĕ Евленĕн.

Чĕре çине кулленех авранса пыракан çакнашкал вак сăмах пусăртрĕ ăна. Ăшĕ çунать. Ир те салху, каç та салху çапла ăшĕ çуннăран.

Чунĕ тулашнă енне — урăх ним те чĕнеймерĕ Евлен. Тухрĕ те утрĕ.

Эй, хур тумăш самани, тискер йăли-йĕрки!

Çын сӳретне кĕричченех арăм пăтавкки йăттарнă та — выляс пек вăйăйине те выляса юлаймарĕ, çӳрес пек çулне те çӳресе юлаймарĕ йĕкĕт! Çамрăк ĕмĕр кĕске килчĕ.

Киле кĕрсе ăшчикне çеç тултарса тухрĕ Евлен.

«Чăнах каламарĕ-ши вăл Сайите пирки?..»—вăр-вăр вăркать ăшчикки.

* * *

Сайите умĕнче — шăрчăкăн-шăрчăкăн çип выртать, темиçе хур майра пирри, тĕрлĕ тĕслĕ ука эреш.

Алă-тăвĕç хӳхĕм ун, тытни-тунипе, йĕппи-çиппипе тĕлĕнмен çынна тĕлĕнтерет. Тĕрĕ тăвать — хут çыру.

Мĕн-мĕн тĕрри пĕлмест Сайите: упа çупкăмĕ, сурпан тирекки, хантăс, çулăк; виçĕ тĕрлĕ ăсма, тӳр эрехле; кĕпе умне — кĕпĕм тĕрĕ, кĕскĕ валли — уйăх карти. Тĕрлет Сайите, эрешлет, шараçлать; сар хĕррине сар шерепи

ярать, тĕпреннĕ укине улăштарать; хул урлă çакма — касите хатĕрлет, уяв тутри хĕррине хур шăлĕ хăварать. Пĕр йăнăш çук тĕрри-çĕввинче. Пыл хурчĕ пек тĕрĕ тăвать.

Юрлать çип хĕр аллинче, юрлаççĕ тĕссем, тĕссен килĕшĕвĕ юрлать. Тĕрле-тĕрле йĕппи те хĕрсе кайнă.

Ун умĕнче аялта ывтăнса юхать Сурăм шывĕ. Ик еннелле хумсем çапаççĕ, çырана çăраççĕ те тĕрлесе хăвараççĕ.

Юратать Сайите çак кукăра. Сурăм çыранĕ ку тĕлтен аяккалла пăрăнать, çыранĕсене ик еннелле тапса сарса ярать — шывне çаврăнма ирĕк вырăн тăвать, вара çак лапара çаврăнса илсе «саккăр» тăвать те кăнтăралла пăрăнать.

Çанталăк çиçет вылянса. Ир пĕчĕк сипетлĕ çумăр çуса иртнĕ те — уçă. Шывра вылять хĕвел, унта такам ылтăнланă йĕвенпе ăйăр вылятать тейĕн. Çӳлте чĕкеç явăнать, йĕс хачă унки пек вĕлтĕртетсе. Тӳперен ука сарри çăвать, сар хĕрри пек вылять çаран çинче шевле. Вĕлтрентăрри юрлать, лис кайăк юрлать.

Çакăн пек санталăкра пуç эрехсĕр мухмăрлать. Тухату пусартать. Çутсанталăк сăнĕ асăрхас темесен те кайран килес аса илӳсем валли ирĕксĕрех аса купаланать. Пур япала та — савăнăç йăви. Вĕсенчен пуринчен те, сарă чĕкеç пек, савăнăçсем вĕçсе тухса Сайите тавра çаврăнса çӳреççĕ. Çакăн пек ырă куншăн савăнăçлă сăппа тăрса пӳлĕхçе мухтас килет.

Ларать хĕр çыранта тĕрĕ тĕрлесе. Сăнĕ — çырла супăнь пек. Пĕвĕ — ăстаптан тухнă сурта пек. Çуркунне пайĕ вăл, хĕвел пĕр пайĕ, пурнăç йĕпкенĕ. Вăл ăшшăн пăхсан — чĕрери пăр ирĕлет, çуркунне пулать, сар чечек — туйăмсем çеçке çураççĕ. Хытă çын чĕри çемçелет. Чунра тасалăх вăранать. Туйманнине туятăн, сисменнине сисетĕн.

Кун пек хĕре чуптусан, сурчăкусем те пыла çаврăнĕç. Пурнăç сутăрах пек, кунçул тĕллевлĕрех.

Сайите... Ячĕ те ирĕлейсе тăрать-çке чĕлхе çинче. Çӳрет вăл — хăй сисмесĕрех сар ача чĕрисене хускатса.

— Вăй патăр, хĕрĕм,— илтрĕ сасартăк Сайите, пуçне çĕклерĕ, хăй умĕнче суккăр карчăк тăнине курчĕ.

— Тĕрĕ тĕрлетĕн пулас,— тет карчăк.— Çип шăрчăкне çĕлен майраки кĕтĕр-и...

— Ма апла калатăн, кинемей?— тет Сайите, карчăк çине тĕлĕнсе пăхать.— Тата эпĕ мĕн тунине епле пĕлтĕн?

Ку вăл — Наçтак, юмăç карчăк.

— Çĕлен майраки кĕрсен, çип час пĕтмест, теççĕ, хĕрĕм. Мĕн тунине йĕп-çип сассинчен тавçăртăм. Масмак тĕрлетĕн-и, сурпан-и? Тĕрĕ — куç çутине пĕтермĕш вăл.

— Масмак-сурпан тĕрлесе те — тутăр-кĕпе хутне кĕреймĕç, хĕр ĕмĕрне çеçирттерĕç,— тавăрать сăмахне Сайите.— Наçтак кинеми... Манăн паян темшĕн ăш çунать... Тата тĕлĕкре йĕп хуçăлчĕ ман. Хам çарранах шыв çиййĕн ним путмасăр чупатăп пек. Ăнласа пар-ха ман тĕлĕке. Пăхса парсам мана юмăç...

Наçтак туйи çине икĕ аллипе тĕренсе тăчĕ.

— Урли-тĕрли сан çук курнать-ха — им-юмăм çилех пулмĕ-и... Пăхса парам, эппин. Анчах ним те илмесен, юмăç усăлмасть. Эсĕ мана çав аллунти кив кĕмĕл тенкĕне те пулин пар. Ячĕшĕн илем. Эп ун çинче сан пулассипе пăхса пĕлем.

Ăрăм пĕлекен карчăк тенкĕ илчĕ те, юмлав сăмахĕсене шыранă май, ăна аллипе хыпаласа тăчĕ, шăппăн çапла мăкăртатрĕ:

— Эй, малаллине тĕкĕр çинче курса тăракан... Илтелесе хапăл ту кĕллĕме... Ăслă çын ăсĕнчен, майлă çын майĕнчен ăнтарса пар, çак Сайитен чăнне уçса пар... Умăм усă, хыçăм тĕтре пултăр.

Çапла калана хыççăн карчăк тенкине хăрах алла илчĕ те тепĕр аллипе хĕрĕн юн тымарне хыпаласа тупрĕ. Юмлама пуçларĕ.

— Чӳккӳ-кĕллӳ çырлахнă. Турă панă, пӳлĕхçĕ пӳрнĕ сана, кепе те кумчавламасть. Турри лайăха çырнă, пӳлĕхçĕ ырра пӳрнĕ. Сан кунçулу урлă тăшман ылханлă ăншăрчĕ çеç.

Пурнăçра ытă пулмăн. Турă пек хисепленĕ икĕ чĕреллĕ çынну пур, ик мăн чĕри тулли вĕри юн... «Ылтăн-и? мĕн?» тесех ыйтмĕçĕ, çапах шур ăшчиклĕ, кайăк чĕреллĕ çын вăл. Калта курсан — картне илĕ, çĕлен курсан — çуне илĕ. Чунĕ тĕрĕслĕхшĕн тăрĕ. Вăл çын сан капашна та килнĕ. Уйăхпа хĕвел сăпарсем, икĕ мельюн иккĕ сăмахăрсем. Хăнкăрма сасси те, шăнкăрав сасси те илтĕнмест: туйла каясси çук... Çапах ун урлă сан йăх хăварма тухнă. Арку çине пӳлĕх ача парĕ.

Ырлăхлă кунсем час иртĕç. Курайман тăшмантан хуйхă пур. Сан тĕлĕшрен кăмрăк тĕлне кăмрăк ларать. Вутпуççи пек вĕри чĕрӳне вутсăр çунма панă. Сан çине ĕмĕрлĕх хуйхă юлĕ. Ыйхусем килĕç — çывăраймăн, сар çу касса хыпăн — çăтаймăн. Эсĕ уп чух макăрнă чухлĕ макаш чĕппи те макăрмĕ. Кăмăлу çемçе — тӳсеймĕн,

тăхăр тăшмап çисе чарăниччен чăтаймăп. Çамрăк пуçу çын çуррине çитиччен хур пулĕ. Яштак пĕвӳ ят çĕклеме, ăраскалсăр пуçу хурлăх курма çеç пулĕ. Ĕмĕрӳ иртĕ вутра çунса. Чĕрӳ тип сисĕм тивнĕ măйăр пек хуралса кăмрăкланĕ. Ман хăват ăна çĕнеймест.

Сана пӳрнĕ çын çинче юп пур, вăл юн тăкăнĕ. Юнĕ çине хĕвел тухса сарăлнă — вăл юншăн вăл хăй айăплă. Мăн кăмăлне хуçĕç. Пуçĕ çĕрĕ çамрăклах. Чунĕ тимĕр витĕр тухĕ. Хăй асапне хăй çеç çĕклемĕ. Вăл юна санран та шырĕç. Иксĕре те иксĕтĕç. Ала таталсан — çыпçăнĕ, сăмах таталсан çыхăнĕ, пĕр таталнă чун сыпăнмĕ. Ăна элчелсĕр вилĕм, хăвна пӳкле вилĕм кĕтет. Хĕр-камалсăр пулăн... Ман сăмахăм çак анчах... Ĕçĕ ман, хуйхи сан...

Сан тĕлĕке ăнласси çакă: тĕлĕкре йĕп хуçăлни — савнирен уйрăласса. Уйăрĕç сире — çеçкинчен çырлине уйăрнă пек. Тĕлĕкре шыв курни — кулянасса, хуйха пĕлтерет.

Хĕр пĕр хушă пуçне лăш усса ларчĕ. Вăл арçын сассине илтсен тин йĕпеннĕ куçпе çĕклерĕ, аллипе хĕвеле картласа пăхрĕ. Паçăрах килнĕ-ши вăл, халь сеç-ши? Ăна курсан Сайитен пичĕ, тата йăмăхрах çутă ӳкнĕ евĕр, кĕтмел çырли пек пăчăрр хĕрелсе тухрĕ.

— Эс мĕн шеппе килтĕн?— тет Сайите, йĕкĕт çине вăрăммăн пăхса.

— Çулăм кунтан иртетчĕ,— тет Евлен.

Хĕр пуçне чикет те тĕрре пикенет. Пӳрни вĕçĕсем — çеçке пек: хĕрлĕн-хĕмĕн юп килнĕ. Кашни пӳнеслу пукане пек.

Çак йĕкĕте курнăранпа — хĕлле икĕ кантăк хушшине йĕп вĕçĕ кĕмелĕх хушăкран пĕчĕккĕн юр алласа тултарнă пек — хĕр чĕрине сисмесĕр тулса, тулса пырать хăй те пĕлмен туйăм. Вăл вара хăйĕн ăсĕпе канашласа пăхмасăрах, ирĕксĕрех çав ырă та ыратуллă, кăшт эрлĕ кăмăл чĕрене хумхатнине парăнать.

— Наçтак кинеми,— тет Евлен, çерем çине ларса.— Чăрманнă-чăрманнах, мана та пăхса памăн-ши юмăçна?..

Карчăк лаш сывласа ярать те йĕкĕтĕн çӳçĕнчен аллипе хыпаласа пăхать.

— Евлен пулчĕ-çке ку,— тет. — Сассу та пит улшăннă-çке сан...

Наçтак йĕкĕт умĕнче шухăшласа тăрать-тăрать те çапла сăмах пуçлать:

— Савăнасси пулĕ, савăнмасси пулĕ. Çын-çын урлă курăнап ырă хĕр пур, унран сăваплă парпе пур. Сăхлантарĕ тĕсĕпе, ăмсантарĕ пĕвĕпе, илĕртейĕ чунĕпе.

Чул аҫи пур, чул ами пур, вӗсене ҫапӑнтарсан, вут тухӗ. Ик вӗри чӗре сӗртӗнсен—юн хыпӗ, имленми-юмланми чир ерӗ. Имҫампа та, хӑватпа та сӳнтереймӗн. Ним ӑрӑмпа та юсанмӗ. Чултан тухнӑ вут усал-тӗселе хӑвалать, чӗресенчен тухни канӑҫа хӑвалать... Ҫиҫӗм чӗртнӗ вута сӳнтермеҫҫӗ, вӑл ҫылӑхлӑ вут, чӗресенчен хыпни — сӑваплӑ вут. Вута авалтан таса тытма хушнӑ. Ҫав вута хыптараканни хӗр иккен. Анчах ҫав хӗр патне ҫитме сана хӗн пулӗ. Телейӳ тӑшман умӗнче. Тусу — пӳлӗх аллинче. Пӗвӳ ҫитсен — ҫавӑрӑн, чӗлхӳ ҫитсен — кӑмӑлне ҫемҫетӗн, чуну ҫитсен — чунне хускатӑн. Хӑйӗнчен начар пулсан — хӑйӗн хыҫне тӑратӗ, хӑйӗн пек маттур пулсан — хӑйӗн умне тӑратӗ...

Илтес кунта илтесси нумай, курас кунта курасси нумай. Ылханлӑ ҫилӗ нумай. Турӑ санӑн вӑрттӑн шухӑшна яппа ярӗ.

Турӑ пиллемен тӑкӑс ҫул пур... Хӗвел амӑшӗ пӗҫертсе ярӗ, ҫил амӑшӗ типӗтсе ярӗ. Хысран хуйхӑ хуса ҫитӗ, умран шухӑш пӳлсе илӗ. Аллу тӑшманун ҫурӑмӗ ҫинче пулаймӗ. Ҫылӑха кӗрӗн. Ҫылӑху касарӑнмӗ, пурнӑҫу ҫӑлӑнмӗ... Ҫырни пур, пӳрни пур... Турӑ пуҫпа ҫырнине шурӑ сӗтпе ҫуса та яраймӑн. Нимӗнле хӑват та сиреймӗ... Пуҫу ҫине кайӑк каяшӗ ӳкнӗ.

Хӗл уйӑхӗ улт уйӑх. Ултӑ уйӑх хушшинче утмӑл тӗслӗ кун килӗ. Утмӑл тӗслӗ кун ҫинче пӗр киревсӗр кун килӗ. Ҫав кун ҫӑвару тулли юн пулӗ. Ҫӑв уйӑхӗ ҫич уйӑх. Ҫичӗ уйӑх ӑшӗнче ҫитмӗл тӗслӗ кун килӗ. Ҫитмӗл тӗслӗ кун ҫинче ҫил-тӑвӑллӑ кун килӗ. Ҫавӑн чухне пуҫна ҫийӗн эс... Хӑвӑн тӑшманунтан пӗтӗн... Чӗрӳ татӑк, ҫамку шӑтӑк. Шӑтӑку-шӑхӑрӑву питӗрӗнмӗ...

Кунтан ытла сӑмахӑм ҫук...

Евлен те, хӗр пекех, шухӑша кайса тӑчӗ...

...Икӗ ҫамрӑк пуҫ ҫине арман чулӗ пек йывӑр пурнӑҫ хуйхи ӳкрӗ...

СИБУРА ЁҪКИ

Сибура тӑванӗ-пӗтенӗсене пуҫтарса ятлӑ ёҫкӗ ёҫесшӗн. Ёҫки мӗн сӑлтавпа пулнине тӗплех каламан — Чулхуларан хӗр ҫураҫма килмелле тесе ҫеҫ сӑмах ҫӳрет.

Уйӑх малтан кӗҫҫеленчӗ салат — ҫемҫе сӑра тума. Аҫа чулӗ ярса тунӑ ҫулталӑкри сӑра та пичкерех тӑтӑхса тӑрать. Чари-чарипе управ пыл, тин юхтарнӑ пек йӑмм тӑсӑлать. Виҫ ҫулхи кӗрпекленнӗ хӑла пыл та нӳхрепрех. Кӑрчами пичкере тӑра пӗлмест. Чашкӑрса ларать ӑвӑс

пăрни — пичкене çурас пек. Çĕлен пек чашкăрса, кĕçенсе, хăмлапа тапса йӳçеççĕ сăрисем.

Ĕçкĕ хатрисене ĕнтĕ хатĕрлесе çитерпĕ. Тăванĕ-пĕтенĕсене икĕ эрне каяллах «ик йыхрава ан кĕтĕр» тесе йыхрав янă.

Туй хуранĕпе яшка çакнă. Эрне хушши ним ерçмен ĕнтĕ Сайите кил-çурта тирпейлесе, апат-çимĕç хатĕрлесе.

Кĕçех килсе çитрĕç хăнисем.

Ах, тур-валли! Ӳре ăйăр пек урхамахсем тапăçаççĕ витере, шар! та шар! кĕçенеççĕ — вите тăррисем тăр! та тăр! чĕтренеççĕ. Карăнса пăхаççĕ хӳме урлă маттур утсем.

Сибура хăйĕн уявра тăхăнмалли кашкăр чĕрни тӳмеллĕ тумне тăхăннă.

Хăнисем пуçĕсемпе тайăла тăраççĕ хуçи умĕнче. Хĕрарăмĕсен пуçĕсенче — хушпу, чалма. Çийĕсенче — шупăр, хыс, каптал.

«Çурт хăтлă пултăр», «Никĕс питĕ пултăр»,—тееççĕ арçынсем. «Эсир калашле пултăр»,— теейсе тăрать хуçа. Ырă сăмахсем тăванра мар-им, çемçе чĕлхерен тăван сивĕнет-им?

Ĕçкĕ тапранать.

— Ваттисен аллинче курка чух пехилне илер,— тееççĕ. Сибура йĕрке тăвать, аллинчи мăн çăкрине таткалать. Пурте ура çине тăраççĕ.

— Эй, перекет амăш,— тет Сибура.— Ылтăн хаклă — виçене хурсан, тăван хаклă — хисепе хурсан. Çак тăванпĕтенсемпе ĕмĕрех пĕрле ĕçсе-çимелĕхне пӳрсе пар пире... Сĕтел çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр. Тытнă çăнăх-кĕрперен усăлăхне пар. Тӳпеми парса тӳпелесе илме пар. Панă çĕртен ан палăрт, илнĕ çĕртен ан иксĕт. Эрех-сăраран татăк ан ту. Куна-çула вăрăм туса, яланах сыхă усра. Туманнине туса пар, тунине ӳстерсе, ӳсĕнтерсе пыр. Курайман тăшмана ан яр. Усала сир, синкертен сыхла. Ĕмĕтленмелĕх ĕмĕте çитер.

Сăхсăхаççĕ, ӳксе пуççапаççĕ, унтан ваттисене асăнаççĕ.

— Эй, ваттисем! Виçĕ вĕретĕм сăра турăмăр, кукăльçăмах пĕçертĕмĕр. Сирĕн умăрта та пултăр, ертсе çӳрекене те тивтĕр. Пĕр турамĕ пĕр çăк пултăр. Киле килсен, киле савăнтарăр, çул çине тухсан, çула савăнтарăр. Ак сире аçа курки, ак сире ама курки... Сире йӳçĕшĕ, пире тутлăшĕ... Канăçлăхра çӳрĕр. Эпир сире асăнатпăр, эсир пире ан асăнăр.

Çапла каласа, хăшĕ сĕтел çине, хăшĕ урайне куркаран

кăшт та кăшт сăра тăкрĕç, çăкăр çыртрĕç, куркисене ĕçрĕç те вырăнĕсене ларчĕç. Катăк Ваçка çеç, хăйĕн кĕллипе кая юлнăскер, те хуçине хăй пуринчен ытла юратнине кăтартас тесе, те хăнасем умĕнче хăй те этем шутĕнчех пулнине палăртас тесе, пĕчченех урай варринче мăкăртатса тăчĕ:

— Эй, турă... Инкекрен-синкекрен, йывăр хуйхăран хăтарса, витсе, хупласа усра çак Сибурана. Ирттере пар ăна. Тулли марри тулли пултăр. Мала ĕмĕт пар.

Ятлă куркине Сибура хăй пуçласа ярать. «Сăри сана, курки мана»,— тет. «Хăна выçăшăн çӳремест»,— тет. Хистет: «Алтăртах йӳçсе каять сан»,— тет.

Тарçи-тĕрçине те, хĕрне те сĕтел патне çывхартмасть: «Ĕнисем шыв ĕçнĕ чух пăрушĕсем пăр çуласан та пырĕ»,— тет, ĕрет сиктерет.

Ĕçкĕ вăхăтĕнче чĕнмесĕр пырса кĕнĕ «хăна» та ӳпкеве юлмасть. Сибура «мулна перекет» е «тав сăя» илтессишĕн — хăй тенĕ çынна — такама та сăрапа сăйлать. Кама — шыв сăра, кама — пыл сăра. Кăшт хисеплĕреххине уйăрса, «сана ăшши кирлĕ пуль-ха, сиввине ĕçекен мар» тесе, пĕр алтăр пыл сăра ăсса тухать. Хăйĕн тăванĕ мар çыншăн алли кĕске ун: валĕ те тивмест ăна. Чĕр тăшманне те сăйлать Сибура. «Выçса килекене тăрантса ямалăхне те, шăнса килекене ăшăтса ямалăхне те панă мана»,— тет. Кайран вара: «Ырă сунса мар, пырне хура юн кĕвĕлтĕр тесе ĕçтертĕм эп ăна»,— тесе çӳрет.

Хăнасене чысла-чысла ярса кĕреки витĕр чыс çапнă унăн. «Асăнса килекен ĕçсе-çисе кайтăр, курайманни çаврăнса кайтăр»,— тет Сибура.

Ĕçки-çики хаяр ун тӳсмешкĕн. Ĕçни-çини ялан ват хурт пылĕсем. Пуçран тытса ĕçтерессĕ.

Ĕçессĕ, çиессĕ Сибура патĕнче. Туй хуранĕ пек ян янраса ларать Сибура аслă çурчĕ.

Аслисене пуç таяççĕ, кĕçĕннине тав тăваççĕ. Утса ĕçни — урана каять, тарăхса ĕçни—вĕчене каять, савса ĕçни — чуна кайтăр, теççĕ. Юрлаççĕ: «Ют кирлĕ мар, тăван, эс пур чух»,— теççĕ.

«Сар хăйăр пек тăванăмсем
Алмас пулас сасси пур»,—

тесе ыталанса юрлать Сибура.

Тăвантан тăван тăранни пур-и? Ыр çынна хурăнташ тăвакан ĕмĕр иртсе кайнине сисмест çав. Ĕçсен-çисен хытă кăмăлĕ çемçелсе каять те Сибуран, вара хăйне телейсĕре хывса юрлать вăл:

Ыткăнас мар, ылтăнăм пур тесе,
Кулянас мар, телейĕм çук тесе...

Вара ыталать тăванне, йĕпе тутипе питне сĕрет, юмахлать.

— Эпир ăрăссăр çынсем: турă ăçталла — унталла. Арăм вилсе алăсăр юлтăм çав. Сирĕн çинче те хĕрĕм çинче шанăçăм. Ырă çĕре качча кайса, мана, суптăрканăскерне, ватăлмалăх кунăмра ура кани кӳрĕ-и çеç... Каччи килеймерĕ-çке-ха, ашшĕ çеç килчĕ.

Пĕр пички те эрнесĕр тайăлмасть Сибуран. Хăшĕсем эрне çĕр выртса ĕçеççĕ ун патĕнче; «Эпир ларнă вырăна хĕрт-сурт ларса юлтăр», теççĕ.

Çисе пĕтми, ĕçсе иксĕлми ĕçкĕ Сибуран.

Çапла ĕçсе-çисен, çичĕ çул юлнă кăмăл та çаврăнать тăванăн. Унта ĕçсе çини халь те шăл хушшинче пур пекех нумайччен асăнса пурăнаççĕ.

Виççĕмĕш кунне Сибура хăйĕн Чулхуларан килнĕ чи хаклă хăнине пахча курса çӳреме ертсе тухрĕ.

Сибуран кукши хĕвелпе тул чусти пек çутăлать. Лешĕн — çăхан ури пек, картлă-картлă атти йăлкăшать. Кĕлетки — урлăш-тăрăш пĕрех. Хырăмĕ йĕкĕр, янахĕ йĕкĕр. Сайите те пĕрре курнă ăна мăнастире пырсан.

Сибура ăна пикенсех хăйĕн хĕрĕ çинчен мухтанса кăтартать.

— Кил-çуртра вăл çеç йĕп пек — йăлтах пуçтарать, чăмăртать, витĕр тухса çӳрет... Хулана памасан — ăçта парас? Ĕмĕрне — пирĕн пек — ура салтса-сырса çеç ан ирттертĕр... Хăй киличчен тепрер уйăх тăхтамалла пулсан, тăхтас. Сайите те йăпанса юлтăр хĕр чухнехи ырлăхпа. Çамрăк чухне кун сахал та ырлăх нумай...

Сибура юлашки сăмахĕсене юриех Сайите умне çитсен каласа пĕтерет.

— Мĕн эс, атте, чĕлхӳне тавăрса ятăн? — тет хĕр.— Çӳрен ут пекех юраттаратăн-çке.

— Эсĕ кĕр-ха пӳрте,— тет лешĕ.— Сăмах пур.

Хăнапа Сибура пӳртелле утаççĕ.

Ĕçе йывăр хушмастăп... Тытрăш-таврăш паха,— калаçсах утать Сибура.— Çыпăçать алли-ури... Тĕрĕ тăвать — пыл хурчĕ пырса лармалла...

Сайите крыльца çине чупса хăпарать те пăлчăраран çакса янă икĕ сăмсаллă кăмкана тайăлтарса аллине çăвать. Хăнасенчен уйрăм пӳлĕме кĕрет.

Сибура таййине саран пустарнă креслă çинче яланхи пекех, чавси айне кӳпчĕк-минтер, ури айне пĕчĕк пукан хурса, хăйĕн кĕске пăкăллă чĕлĕмне ĕмсе ларать.

— Ну, хĕрĕм,— тет Сибура, хĕрĕ кăшт сывлăш çавăрсан.— Пĕрех хĕр эс ман. Усрăттăм сана çӳпçе тĕпĕнчи пир пек... Эс çеç куç тулли... Ĕнтĕ малашлăху пирки те шухăшлама вăхăт... Ав çав, куртăн-ха, Чулхулари хĕсметре тăракан тӳре сана хăйĕн ывăлне валли калаçасшăн. Ачи офицер,— вĕреннĕ, ăслă каччă. Ленккес çумне алтăр килĕшет, теççĕ. Иксĕр — пĕр кункăраран... Туйлашма тăрать. Капмар пурăнаççĕ. Çĕр çĕклейми шурă çурт ларать ун. Хула çурă, вĕçсе каяс акăш пек. Харпăрин валли — курница. Алăк уçса пăхсан — çырла пиçни курăнать, чӳрече уçса пăхсан — пулă выляни курăнать. Хам та шалтан-тултан та парăп. Сан май мана та лайăх пулĕ. Ĕçме-çиме, ĕç çӳретме — уçă. Эп пырăп та — умăртан-хыçăртан ачăр-пăчăр чупнине курса киленĕп. Хăвăр — кĕрекĕр умĕнче — тайăла тăрăр.

— Аттеçĕм,— тавăрать Сайите.— Çичĕ ют килне кĕмесĕрех çичĕ ют ăсне тытма тăхтар-ха. Кĕреке умне тăрас тесе, хĕр ĕмĕрне те хĕрхенес мар-и? Хĕр чухнехи пурнăçа пурăнам-ха пĕр-ик çул. Ӳссе пĕвĕм çитмерĕ, хĕр çулĕ те тулман-çке — çич ют куçа тăрăнать.

— Автанĕсем авăта пуçласан, чĕп амăшĕ те чĕпписене пăрахать. Авалхи йăла тăршшĕнченех çапла. Сан туйăнта ман кăçал упăльтăк! тесе ĕçесчĕ. Сăнпуç пур чух каяс пулать. Хăвăра пăхсан — пӳ пултăр, килĕре кĕрсен — чыс пултăр. Сăнĕ-пуçĕнчен çын тиркес çук ăна.

— Сăнĕ-пуçĕ, кама мĕнле, маншăн масар çинчи кĕлетке пек.

— Ытла ача шухăшĕпе шухăшлатăн эсĕ,— вăйăрхана пуçлать Сибура.— Ун патне мерчен сапса кĕреççĕ.

— Çын хитри, атте, сăнĕ-пуçĕнче çеç мар. Пукра хура — варри шурă, вĕçкĕн сарă — варри хура. Ачи ăсне пĕлмесĕр эпĕ тухса каяймăп.

— Ун пек кăмăллă, йăваш çынна хĕрĕх йытăпа шыраса тупаймăн.

— Çич ют лайăхĕ виç кунлăх. Хаярĕсем вĕсен тулашĕнчен пăхсан мар, пурăнса пăхсан тин паллă пулĕç, атте. Калаçса курнă эп унпа мăнастиртех. Ун пек этем вăл сисмен çĕртен систерет.

— Кампа пурнăç тытăн-ши капла эс? Ĕмĕре тулли пурăнса ирттерес тĕлсем килĕшмеççĕ иккен-ха.

— Атте, эсӗ хӑвӑн урапунах кустаратӑн. Ман ӑна куҫӑмпа та курас килмест.

— Эпӗ сӑмах панӑ! Панӑ сӑмаха каялла тума юрамасть.

— Юмахра, ҫунаттисене вутпа ҫунтарса, хуркайӑка та ирӗксӗр арӑм тӑваҫҫӗ. Вӑл ҫавах хуркайӑксем иртнине курсанах вӗсем хыҫҫӑн тухса чупать.

— Ай-ай айван пуҫ!— ура ҫинех сиксе тӑчӗ Сибура.— Кам сӑмахӗпе ӑн кӗрӗ-ши сана?.. Ҫийӳ тулли —тумтир, ытмалу — пилӗкрен... Куҫунтан пӑхтарасшӑн-и? Кукӑрмакӑрна пӑрах эсӗ!

Сайите аялти тути хӗррине ҫыртрӗ те пуҫне чикрӗ, каллех тӳрленсе тӑчӗ.

— Ахӑрса-шӑхӑрса пыман акапа хӗпесе-ҫапса пыртараймӑн, атте.

— Майра пӑрчӑканӗ пек усрӗ вӑл сана!

— Ап апӑршалан, атте... Ман йӑлт ӑс пӑтрапса кайрӗ,— пӑрӑпма тӑчӗ Сайите, анчах Сибура пырса алӑка пӳлчӗ.

— Ӑс пӑтранмалӑх эс пурӑнман-ха. Пуҫна нуша килсеп, ӑс кӗрӗ.— Сибура тепӗр пӳлӗмелле хускалчӗ.— Тӑр ҫакӑнта, эп ун ашшӗне чӗнсе кӗртетӗп.

— Атте!.. Эпӗ санран пӗрре те ӑш таврӑнмалла сӑмах илтмерӗм. Сӑмахху чӗре варне кӗрсе ҫурать. Эп качака мар, сӑмахлӑ ҫӑкру пыр урлӑ ларать. Ар ывӑлӗ мар, ама хӗрӗ-ха, ҫурт тытас ҫук тесе, эс мана ӑсатасшӑнах пулсан, вӑхӑт пар, хам упӑшкам пулассине хам суйлам.

— Юплӗ саламатчӗ сана!— кӑшкӑрса ячӗ Сибура.— Кӑмӑлу туртнӑ еккипе ӑҫта кайӑн-ши? Ӑста вӑл кӑмӑлу кӗленӗ ҫӗр? Эх, кайри ӑс малтан пулсанччӗ!

Сайите урӑх ним те чӗнмерӗ, хӑрах аллипе кӑкӑрне ярса илчӗ те хӑвӑрт тепӗр пӳрте тухрӗ, тулалла чупрӗ.

Ниҫта кайса кӗре пӗлмерӗ хӗр. Канӑҫ тарчӗ. Чӗрине хуйхӑ хускатрӗ. Ахаль мар чӗри сикетчӗ. Макӑрасса сиссе, куҫ тӗкӗсене шыв килнӗччӗ. Пӗр хускалнӑ ӑшчик ним туса та лӑпланмарӗ...

Хӑнисене мӗн — пыл пылакӗ те эрех йӳҫси пултӑр. Йӳҫӗ эрех тутлӑ пуличчен ӗҫеҫҫӗ. Йӳҫӗ ӗҫеҫҫӗ те тутлӑ калаҫаҫҫӗ. Ҫак ҫуртрах пӗр ҫамрӑк пуҫ ҫине йывӑр хуйхӑ пусса тӑнине те сисмеҫҫӗ...

...Сайите малтанхи хут улӑхпа утнӑ чухне те, вӑйӑа кайнӑ чухне те хӑйӗн чӗре хумханӑвӗшӗн уйрӑм сӑпар тупса палӑртайманччӗ-ха. Нимле уйрӑм ҫыншӑн та тап-

ман çамрăк чĕре пĕтĕм çутçанталăка савса ынатлатчĕ. Хăйĕн чĕринче такам валли тулса кайнă туйăмсене тĕнчене савса иксĕтетчĕ.

Кĕçех çутçанталăка савни урлă вĕçĕмсĕрлĕхе саланакан туйăмсен çырми пĕвеленчĕ, чăмăртанчĕ, пĕр çĕрелле тапа пуçларĕ. Анчах та ку хĕре хăйне пачах сисĕнмелле мар вăрттăн, чунăн хăйĕн ирĕкĕпе пулса пычĕ. Сайите хăй те малтанах чĕри камшăн çапла хытă тапнине пĕлмерĕ. Мĕншĕн тесен хăйĕн пулас савнийĕ кирек кам пулсан та, каччă пулнине çеç çирĕп пĕлчĕ вăл.

Унăн сăнĕ сывăрнă чух та курăнчĕ, сасси те хăлхарах янраса тăчĕ. Хăйĕн чунĕ суйланă çын чăнах çавă иккенне те Сайитениепле те ĕненесшĕн пулмарĕ. Халь ашшĕ каччă пирки сăмах пуçарнă хыççăн тин Сайите чунне ыраттарсах çав чăнлăха йышăнчĕ. Ĕнтĕ тек унран пăрăнма мар, унпа тĕлпулу шырамалла пулнине ăнланчĕ.

«Мĕн тăватăп эпĕ, çырлахсам, пӳлĕхçĕ»,— пăшăлтатрĕ хĕр, ăшĕ тулса çитнипе пахчара йывăç çумне пуçне чикрĕ. Карта çумĕнче çывăхрах ура сасси илтĕнсен, пуçне çĕклесе пăхрĕ те — хĕр кăкринчен ирĕксĕрех чуна çывăх ят хĕсĕнсе тухрĕ:

— Евлен!

— Сайите!..

— Ах, Евлен,— терĕ хĕр, карта çумне пырса.— Ман паян ăш çунса вĕлерет... Салху пусахларĕ, кăмăл хуçăк...

— Мĕн, хуйхă пулчĕ-им, Сайите?

— Хуйхах мар, килес хуйхă... Паян капла, ыран тепле... Иртейĕç-ши ĕмĕрсем пĕр тикĕс... Пуçри хуйхăсем курмасăр иртсе кайинччĕ. Аттене йăлăхтартăм пулас эп килте...

— Сайите, кам йăлăхĕ санран!

— Ах, Евлен... Ӳпкевĕм те пур ман сан çинче... Килсессĕнех сана курман пулнă пулсан, эп паянах хам ăçтан килнĕ çавăнта тухса кайăттăм,— чĕрипех кулянать хĕр.

— Сайите... Хĕвел пăхман чух эсĕ пур, уйăх пăхман чух, ак, лашам пур... Сана çеç чун пек куратăп. Калаçайăттăм пĕрре тунсăха...

— Итлемĕттĕм сăмахна, Евлен... Чунăм чухлĕ куратăп кăмăлна. Ман кăмăлăм та сан çинех ӳкрĕ. Хама та темле хам та пĕлмен кăмăл сан еннех туртать... Асилмессерен мĕлкӳ куç умне ӳкет.

— Сайите, тух халех кунта! Калаçар-ха чунти-варти сăмахсене пуçăмăрти хуйхăсем сӳниччен.

— **Кайран, Евлен...**

— Кӑтартса хур вӑхӑтна!

— Хӗвел анас умӗн... Киремет тӑвайкки хӗрринче, Оккай варӗ патӗнче,— тет хӗр, пичӗ хӑйӗн ҫунӑхса тӗлкӗшет.

— Сайите!..

— Каҫчен, Евлен...

ТЕЛЕЙЛӖ КАҪ

Хӗвел анать хӗрлӗ хапха пек. Таврана ӗнтрӗк хыпрӗ.

Арман пӗви сарлакӑшпех сарӑлса хумсем кусаҫҫӗ, ҫыран мӗлкине сӑпка пек чӳхентереҫҫӗ. Тӑрӑ шыв ӑшӗнче шалта хум мӗлкисем чӑмса ҫӳреҫҫӗ. Кӑштах шыв сулхӑнӗ ҫапать.

Ҫыран леш енчи ҫын мӗлки, анакан хӗвелпе вӑрӑм тӳнсе, шыв урлах Сайите умне каҫса ӳкет. «Тусӑм»,— хӑй сисмесӗрех пуҫ мӗлки ӳкнӗ тӗлти курӑка ачашласа илет хӗр...

Хӑйӗн темшӗн чун вырӑнта мар...

Халь-халь пулас тӗлпулу ыррӑн та, хурлӑн та ҫӳҫентерет, шиклентерет... Пурнӑҫра паян темле хатарлӑ улшӑну пулас пек. Айӑпа хӑваракан, чупа ырату кӳрекен телей килес пек. Кунпа пӗрлех чӑтма йывӑр хуйхӑ та, ял тӗлӗнсе хытмалла намӑс та...

Анчах — ҫук... Чун ҫавсенчен пӗринчен те пӑрӑнасшӑн мар. Ҫынсем «телей» текен енне алӑк уҫса хурсан та, ҫак «инкек» еннех чун туртать. Ҫав ҫылӑхра халиччен никам тутанса пӑхман телей пылакӗ пур пек. Пӗрре иметнет чун, тепре ирӗлет; хӗсӗнет вӑл ыратса, унтан каллех телейпе хыпать.

...Евлен уҫӑлса килекен ир пек ерипе, хуллен утса ҫывхарчӗ. Вӑл ҫывхарнӑҫемӗн Сайитешӗн тавралӑх ҫутӑлса, хитреленсе, савӑнӑҫпа, иментерекен телейпе тулса пычӗ...

Чӗре танлатать. Кӑкӑр — кайӑк кӑкӑрӗ пек пӑчӑрана-пӑчӑрӑна ҫӗкленсе анать.

— Сайите,— чӗнчӗ Евлен.

— Ах, Евлен...

Вӗсем Киремет тӑвайккине ларчӗҫ. Кунта хытӑ калаҫма та юрамасть. Ҫуркунне пуп ҫак вырӑна сухалаттарнӑ чух касӑ тӑрӑх шанкӑр-шанкӑр-шанкӑр! янраса тенкӗ, нухрат юхать.

— Сайите,— тет Евлен.— Кам тӗл турӗ пире? Манӑнах-ши эсӗ?

— Манăн та тăн салапсах кайрĕ ĕптĕ, Евлен. Шухăшсем çĕмĕреççĕ пуçа... Вăйă мар-çке ку...

— Эй, Сайите... Икĕ чун пулнă пулсан, парăттăм сана пĕрне. Ман сапа асăнман сехет те иртмест. Ниçта ларассăм-тăрассăм килмест сансăр. Ик куçăм та пĕр пуçăм сана куç умне ўкерешсĕн çеç тĕмсĕлеççĕ. Каçхине выртатăп та — тĕллепетĕп: текех саппа çўретĕп... Анчах тĕлĕкĕн тĕлĕ çук, ир тăрсан, эс умра çук...

— Маншăн та сана курсан тин тĕнче тулать, Евлен. Пĕр сан сăмаххусем çеç ăшăтаççĕ чупа.

Куçран куçа пăхса калаçаççĕ хĕрпе каччă. Мăшăр вутăш пек лараççĕ вĕсем çыранта.

Кўлнĕ урхамах пек сике-сике юхать ик çыран хушшинчи шыв пур аслăшпе. Çырана çăрать, чултан чула çапăнать, хăйăр юхтарать, хыççăн сулхăн хăварать.

Хĕвел анчĕ. Сил лăп пулчĕ. Сывлăш ăшă сумăр çăвас умĕнхи пек тăпă. Шыв çийĕ тĕтрепе туртăннă. Нўрелнĕ йĕпеннĕ йывăç-курăк йывăрланса, ыйхăласа ларать.

Шыльăкри пек... Симĕ пур — çăра тутлă сывлăш. Çĕп çынĕсем те пур — таяннă пĕр-пĕрин çумне.

— Шăлсăр шăши кăшлать-çке мана, Евлен. Намăс. Çын севрĕмне кутерсех, çылăха кĕрсех саппа явăçатăп-çке... Ăçта кайса чикем çылăхлă пуçа? Вутсăр çунан чĕресене сапла выляса йăпатар-и?

— Ўкĕнсе шухăшласа ан вăйăрхансам, Сайите.

— Пирĕншĕн — çылăхлă чунсемшĕн — ырă пўлĕхсĕ те симĕс алтăрпа сим тытса тăмĕ çав. Ăраскалсăр пуçăмăрсем хур пулĕç...

— Сайите, çăмăлтарах шухăшласам... Итле, ав, ялта епле пир çапаççĕ.

Чăнах та, Пакăшра пир çаппă сасă, Сĕвĕшре, Панклире пир çаппă сассипе пĕр кĕвве туртăнса, çывăхри çырана çапăнать те — яп кайнă сассисем, хĕрпе каччă умĕнчи сăрт çипе ўксе, хăйне евĕр кĕвĕ тапши туса хураççĕ.

Шыв урлă тĕтре уртăнать. Улăхра улăм урисем пек, урасăр кĕлетсем пек курăнать тĕтре — чикансен тапăрĕ килсе вырнаçнă тейĕн.

Сăмсана кĕрет ыраш тусанĕн шăрши. Шăркари ыраш кăмăлне тенĕ пек — сывлăшра сипетлĕ лăм.

Тăр-уяр каç. Хĕрлĕ арпус пек тулса уйăх тухрĕ. Тўпере ĕнтĕ пирĕшти ачи-пăчи унта та кунта çăлтăр çутрĕ. Мăшăра хирĕçех хĕве хупман хĕрĕн сулахай кăкри çинчи кĕскĕ тĕрри пек вылять Ала çăлтăр. Лутра тĕмĕсем кутне ĕнтĕ хура ĕне пек пырса выртрĕç хура мĕлкесем.

— Тупайӑпӑр-ши эпир пӳрмен ырлӑха, Евлен?

— Хамӑн сумсӑр пурнӑç çулӗ çине эпӗ шанчӑклӑ çынсӑр тухаймӑп, Сайите. Шанчӑксӑр çынпа тупнӑ ылтӑн муклашкине те паман, теççӗ.

— Хамӑр аларан килсен, çырӑттӑмӑр пуçӑмӑрсене ырлӑха çеç, турӑ ямӗ çав пире пӗрле пулма.

— Турӑ çырни тӑрӑх эпир пӗрлешеес çук пулсан, вӑл мӗн çырнипх лӑпланса пурӑнас-и? Пӗр эсӗ çеç ман туррӑм, Сайите! Эп çапла калаçнинче çылӑхӑм çур мӑскал та çук.

— Шанатӑп сана ӑшри чун пек... Чунӑм савса кӑмӑл килнӗрен çеç тухрӑм ӗнтӗ. Анчах усал ят айне пулмӑпӑр-и, элек ӑшне путмӑпӑр-и... Ятӑмӑрсем çӗрӗç. Курайман тӑшмантан пуçӑмӑрсене хӑтараймӑпӑр. Эсӗ каччӑ пулнӑ пулсан, эп юратнӑ пек эс юратсан, сан çинчен эп ик куçӑма та илмӗттӗм.

— Ман тӳрӗлӗхӗм пирки ан иккӗленсем, Сайите. Эп санӑн хӳттӳ пулӑп. Пӗтмеллех пулсан — яр! çунса каяр! Эпир, тен, ыттисемшӗн кӑшт çутӑ парӑпӑр. Мӑкӑрланма тислӗк те пултарать... Сайите, мӗн калас сӑмахна халь кала! Пурнӑç малашӗ пӗрле пулас пулсан, санпа эпир пӗр мӑйӑра та çурмалла çинӗ пулӑттӑмӑр.

— Эй, Евлен... Мӑйӑрне çикелӗпӗр çурмаллах, вӑл уйӑлать, çийӗпӗр-ши çурмалла вир пӗрчи?

— Сайите! Пуян пулмасан та — юр-варлӑ, ырӑ ятлӑ пулмасан та — телейлӗ пулӑпӑр... Атя ӗмӗрлӗхе пӗр пулар, ӗмӗр уйӑлмасса ант тӑвар.

— Ытла тутлӑ калаçатпӑр-çке, Евлен. Тутла тутансан, йӳççе юратмаççӗ... Малаллине ним те шутламастпӑр-çке...

Лараççӗ хӗрпе каччӑ...

Вӗсен ятне килнӗ каç — чӑн тухату. Ун ырлӑхӗ — пин мӑскал.

Тӳпери уйӑх кӑвак хӑмӑр йӗрӗлче витӗр пӑхакан куç пек. Куç шӑрçи—ылтӑн, куç тӗкӗ—кӗмӗл. Уйӑх çутинче, сывлӑмлӑ курӑк çинче, мӑшӑр пуç мӗлки. Вӗсен юратупа хӗрнӗ пуçӗсем çурта пек çутатаççӗ тейӗн — мӗлкесем тавра кӗмӗл калпак пек таврӑринчен йӑмӑхрах çутӑ курӑнать.

Çӑлтӑрсем вылянаççӗ — пуç çине татӑлса анас пек. Çӑлтӑрӗ пӗри хӑйне уйрӑм сасӑпа кӗвӗллӗн-кӗвӗллӗн янрать пек. Аялта та, çырмара, чулсем хушшине хӗсӗннӗ юрӑ тухма хӑтланса шӑнкӑртатать.

Мӑшӑр чӗрисенче — асамлӑх.

Телейпе тулса пыракан пуçсем пысăкланса, пысăкланса пыраççĕ те, пĕтĕм çăлтăрлă тӳпе хушшу евĕр пуç çине шăнăçать пек.

Çĕр вĕсем айĕнче — пукан çеç, пĕтĕм тĕнче кĕкремĕ — вĕсен пуçĕнче... Иккĕш çеç вĕсем çак тĕнче хуçисем...

Çапах та, чӳрече витĕр тултан пӳрте най туртнă пек, хĕр чĕрине ырату та хĕсĕнсе кĕрет çав.

— Сайите, ылтăнăм. Манăн эс — тĕнче тӳниччен.

— Уйăх курнине хĕвел илмĕ-и, Евлен?

— Эпĕ памăп сана никама та...

Ытарайми пуплеççĕ хĕрпе каччă. Куçран куçа пăхаççĕ.

Çаплах вылять-ха шывра тулли уйăх. Çемçелсе кайнă вăл унта уначă пек. Çăрать ăна чӳхенекен çырма шывĕ, унать кункăрари пек. Уйăхĕ муталанать, чăмăртанать, сарăлать.

Пĕр-пĕрин ăшшине туйса, мăшăр пĕр-пĕрин çумне тачăрах çыпăçать.

— Ытла ир савăнатпăр мар-и?

— Элле, уйрăлмалла пулĕ-ши?..

Таçта, аякра, икĕ ту качаки сĕкĕшеççĕ те, мăйракисенчен вут-хĕм сирпĕнет тейĕн — пĕлĕт-тусем хушшинче тип çиçĕм çиçет... Аслати авăтни илтĕнмест. Уйăх ĕнтĕ тӳпери вучахри хуран пек çакăнса тăрать,— аялтан пĕлĕт тивсе илнĕ. Аялта вара ăшă çил пăшăлтатнă пек шăппăн икĕ юратнă чун калаçни илтĕнет:

— Ан ухмахлан, Евлен... Питĕмĕре пĕçерĕ.

— Сайите...

— Ыран хĕвел çине епле пăхас?..

...Шыв леш енчи улăхра ĕнтĕ карăш ире хыпарлать. Çак илемлĕ улăхра юрату пархатарĕ çӳрет,— йĕркелĕхрен те, урă тăн-пуçран та, шуйттанран та кулакан юрату пархатарĕ...

— Хĕрĕн кĕттĕне кĕт...

— Хăçанччен-ши?

— Кĕвеличчен кĕтекен турăхсăр лармĕ...

...Шыв çийĕн вĕркĕç вĕсе иртет — çунаттисем шывах перĕнеççĕ. Шурта шыв чăххи макăрать. Çыранта — телейпе хыпнă чĕресем ирĕлеççĕ.

— Чипер, Евлен... Эс юс пекех ачашланма юрататăн-çке... Ах, Евле-ен...

...Тавралăх хĕрринче пĕр енчен каç, тепĕр енчен ир, икĕ тус пек, хире-хирĕç пăхса тăраççĕ — çăлтăр куçĕсене хĕссе. Каçхи шуçăмпа ирхи шуçăм пĕрлешсех кайнă.

Хушшăн-хушшăн намăсланнă пек хĕрелнĕ уйăх тухкаласа пăхать, çутă сапать те каллех пытанать.

Вăхăт иртет, иртет...

Тухăçран ĕнтĕ кăвак лаша пек ирхи кăвак çутă карăнса пăхать. Çывхарнăçемĕн учĕсене тăвара-тăвара улăштарать: кăваккине çутти улăшать, çуттине — хĕрли...

Ир çутипе каç тĕттĕмĕ пăтрашăнчĕç, тĕттĕм шĕвелчĕ. Уйăх çутипе ир çути таплашрĕç. Шыв çийĕн мăшăр кăрăпчак кăлăрт! кăлăрт! та кăрп! кăрп! тесе калаçса вĕçсе иртет. Уйра тăри вăранма хăтланать. Кăшт тăрлатса илет те, ыйхи тĕлĕшпе пĕр куркине ниепле те çавăрса ярайман пек, фию! фию! фи-ю-ю! тесе шăхăрса тăрать.

Вак ĕшнере ичăк! ичăк-чăк-чăк! тесе юрласа ячĕç шăпчăксем. Пĕри пĕр ĕшнере юрлани теприн тепĕр ĕшнере юрланин ян! кайнă сасси пек илтĕнет. Шĕвĕ сĕт пек кăвакрах катара ял палли сăнĕ палăрса тухрĕ. Унта пуçланнă куна мухтавласа автансем ярăнса авăтса ячĕç.

Хĕрпе каччă çаплах çав вырăнтах-ха. Кăшт çех калаçни илтĕнет:

— Ах, мĕн тери çылăх амăшĕ эпĕ...

— Лăплансам, Сайите... Ĕнтĕ ĕмĕрлĕхех эпĕ—санăн, эсĕ — манăн...

Вĕсен умĕнчи сăрт çамкинчен тĕп тухать. Курăксем çинче хĕр куççулĕ пек тап-таса сывлăм...

Кĕçех ир çути каç тĕттĕмĕнчен уйрăлса пĕтрĕ. Тул янках çутăлчĕ. Шуçăм — вучах пек, унта çĕнĕ кун хĕвелĕ пиçет.

— Сывă пул, юнăм каччи...

— Сывă пул, Сайите...

Хĕр кайрĕ. Хĕр ăшши çеç каччăн сăхманĕ çумĕнче чылайччен тăчĕ.

Акă хупăртан кĕтӳ те тапранчĕ. Çил йăшăлтатрĕ. Выляса тухрĕ хĕвел. Шыв çийĕн майĕпен йăсăрланса тĕтре саланать.

Каллех тăрă ăппуçлă пӳлĕхçĕн никам шăпишĕн те пăшăрханман кунĕ пуçланать.

ЫЛХАН

Укапе ĕнтĕ анне тĕлне пĕлмест.

Кунĕпех çӳрет туллăн-шаллăн. Куç уçтармасть никама та: çилсĕр çумăр кăларать, кил ăшчикне пăтрататать. Япаласем кăлара-кăлара сутать. Ир каять те Панклие —

кунĕпех çӳрет «кĕл алласа», уптан кӳршĕсем тăрăх «ухмах ăсатать». Ăçта та пулин çынсем калаçнине курсанах чарăнать те, ухмах пек, кĕллĕн-келлĕн пăхса, таррăн-тăррăн итлесе тăрать.

— Килтĕн-и-ха, эсрелĕ пусса кайман пуçна!— тет, Евлен килсе кĕрсен.— Эс Сибура хĕрĕ патне киле кĕнĕ теççĕ-çке... Хура юну юлчĕ-им сан кунта татах? Çавна илме килтĕн-и? Курăпăр-ха епле кипенсе пурăнайăн унпа. Пĕр хăми те ирĕк мар Сибуран саншăн. Ула куракпа чакак тус пулĕç, сапа, çара çерçие, ертмĕç.

— Усал кĕнĕ пуль сан ăшна,— тет Евлен.— Юрĕ, çитĕ сан енчен мана пăçласа пурăнни...

— Кайса тăрăн! Пăчлан,— çухăрать Укапе.— Паянах кирек те тухса кай, кирек те вил. Кай ерĕшкӳ патне. Курассу пур-ха сан, çавăнпа асатăн...

Евлен, йӳçĕхнĕ çăмах çисе лараканскер, ура çине тăрать.

— Ăпăр-тапăрна пуçтар,— тет вăл.— Эпĕ ут кӳлсе тăвану-пĕтенӳсене лартса килетĕп...

Евлен çапла калать те йиленне тăхăнса пӳртрен тухать.

— Каях! Умăнтан хыçу!— тесе юлать Укапе.

Евлен ут кӳлсе тухса кайсан, Укапе, кĕпине юмăç карчăкĕ пек кĕске туртса çӳрекенскер, кĕске туналлăскер, Наçтак юмăç патнелле туналарĕ.

Наçтакĕ килтех пулчĕ.

— Наçтак инки,— терĕ Укапе.— Евлен савмасран-сивĕнесрен чун çук. Сан пăсташу витмĕ-ши?.. Упăшкам мăшкăлĕ пулас марччĕ... Çын патне чупать.

— Чăхсем кашта çине ларсан, юмăç уçăлакан мар вăл... Чашăк-тирĕк таврашне тирпейлесе лартса хăвартăн-и ара?— тет Наçтак.

— Камшăн тирпейлес мап,— тавăрать Укапе.— Вилес старик пур та — ватă тесе ватса тăкма çук... Хам кĕпене те çуса тăхăнма ерçместĕп.

— Апат-çимĕç тыткалаканăн кĕпи хура пулсан та, йĕмĕ шурă пултăр... Юрĕ, эппин. Уçăлнă таран уçăлĕ... Калам.... Сан упăшку ик чĕреллĕ вăл. Ик чĕрелли пĕр çыншăн çуралман. Пĕр алăран вĕçерĕннĕ тăмапана тытаймăн. Хăвăн ална ӳкереймĕн эс ăна, каялла çавăрса кӳреймĕн. Кĕреке сыппăр уçах юлĕ. Килĕр-çуртăр саланĕ. Сире пăсмăçсем тухатса пăтранмалла тунă. Сана туй вăхăтĕнчех, тухатнă сăра ăшне çичĕ çулхи эрешмен ярса парса, ăшунта хура çĕлен пулмалла тунă. Пĕвĕ те пур,

сасси те пур. Эс ху ăна асăрхас çук: куçунта карав — курмастăн, хăлхунта пурçăн — илтместĕн. Çав çĕлен хăратса янă упăшкуна сан çумран.

Хура халăха хура хуйхă пуснă, хăçан та хăçан çавна хаяр аçа çапса сирсе ярĕ, çавăн чух тин çĕнтерӳпе таврăннă упăшкуна эсĕ сăкăтпа кĕтсе илейсен, вăл хăвăн тенĕ çынах пулĕ. Ăшунти çĕлен хаярлансах пырать. Иç чăтаймĕ вăл сана. Хĕрлĕ юну — хура. Хăçан та хăçан таталăн — çавăн чух тин таврăнĕ вăл сан çумна. Эпĕ вĕрнисурни витеймест. Хăвăнтан та пӳлĕхрен килет. Сан — вĕсен ăшĕнче вут çунтăр тесе — ылханмалли çеç юлнă. Пилĕк сăмсаллă, хĕреслĕ питлĕ пашалу пĕçерсе, таткаласа пăрах, хĕрĕх те пĕр пĕрчĕ шăрçа сапала...

— Таврăнмастех-ши ĕнтĕ Евленĕ?

— Çĕнĕ тырă умĕн хур пуссан та, пăтă пĕçерсен те, виçĕ тĕслĕ выльăх-чĕрлĕхпе асăнсан та — çырлахмĕ. Килĕшпе те килĕшмĕ. Кун пирки уралашаймăпăр. Тирĕке тирĕк мунчали хурса ӳпĕнтерсе пăх,— тен, мур çавăрĕ.

— Кам-ши, ача, ун чун саврăш? Тата ача тупма çукши ман Евленрен?

— Куна ман юмăç калаймасть. Чунĕ саврăш — хĕр иккен. Хĕрĕ — çичĕ савни умĕнче, тăхăр тăшман аллинче... Сан тип вару — тухатниех мар. Шур çăмартан çĕвви çук, аçасăр ывăл-хĕр пулмĕ. Мăшăр тупсан — тип вару та уçăлĕ, анчах ачусем — кайăк ячĕ хурсан та, йывăç ячĕ хурсан та — пурăнаймĕç, хăвăн ăшунти çĕленех пĕтерĕ вĕсене... Турă мала ятăр сана...

— Ну, тавах-ха сана,— терĕ Укане.— Сывă пул-ха, эппин... Эс каланине чăнласа пăхам тепре...

...Укане, армана пырса, Евлен Сайитепе çыхланни çинчен Сибурана чухса парсан, Сибура урсах кайрĕ. Евлене лăскаса пăрахас терĕ — лешĕ куç тĕлне пулмарĕ, вара вăл, хăйĕн хĕрне шыраса, килнелле вашкăртрĕ.

Кил хушшине кĕрсенех ăна хирĕç йытти чупса пырса тăрăх чĕвенчĕ. Хӯрипе хăй ĕçчен инке кăшкар çине çип чĕркенĕ пек пăлтăртаттарса çавăрчĕ. Тарăхнă Сибура ăна тапса ячĕ те, йытти айинк! тесе аяккалла сиксе ӳкрĕ.

Урлă каласан, Сибура никамах та уяса тăмасть. Çилли ун авăк. Вăл хушни тăрăх пусас çĕре пусмасăр — ăна юраймăн.

— Сайите,— терĕ вăл пӳртне кĕнĕ-кĕменех.— Санăн пушмакна ылмаштарса тăхăнмалла мар-и?.. Тăну улшăна пуçланă-çке...

— Мĕн ара, атте? Тăн-пуçăм ман йĕркеллех-çке,— тет Сайите.

— Шаккамасăр сасă тухмасть. Çĕркаç эсĕ Евленпе пулнă тет-и?

— Пулнă, аттеçĕм.

— Ахрамат хĕр! Вăл авланнине пĕлместĕн-и эсĕ?

— Ăна мĕнле авлантарнине те пĕлетĕп, атте.

— Вăл ларнă вырăна саваламасăр ан лар! — чĕтренме тапратрĕ Сибура.— Çухрăмран пăрăнса ирт. Сăнĕ-пуçĕ пур-и? Çийĕ çутă-и? Мулĕ пур-и? Хул айĕ те шăхăрать ун.

— Аттеçĕм, унăн тулĕ çуртри пулсан та, ăшĕ тăпăрчă. Чипер тумлантарсан, нимле хут çыракан тиек те унпа танлашаймĕ. Мана вăл вилес вилĕмрен çăлчĕ.

— Эс апла, кĕштек пулса, ун хулĕ айне юлма та хатĕр? Унпа варлашса эсĕ варна тытса макăрăн. Яла намăс ан кӳр. Вăл турă умĕнче юрăхсăр çын! Арлан пек ăрлатса сикет пуп таврашĕсене, тиексене хирĕç. Ратти çапла. Мăп аслашшĕ те унăн Разин хурах шайккинче çĕмĕрсе çӳренĕ... Сăмаххисене йăлт айран калать. Çын ăшне кĕрсе витĕр тĕпчесе тухать. Ман хĕре хĕрĕннĕ-и вăл, этем юлашки! Туянтаратăп эп ăна авăрлă кулач.

— Атте, таса çынна ма кăлăх тупалас? Çĕр çинче ахаль те этем нумай, çын сахал.

— Ун еккипе кайса пуçна çийĕн! Эсĕ пуян хĕрĕ, чаплă хĕр. Чухăн хĕрĕн ят каять, пуян хĕрĕн чап каять, теççĕ. Çырлан курăнать-и, çеçкеп курăнать-и ку сысна кăнтăрли сана? Мĕн куçпа пăхрăн ун çине! Малтан çын йăрăсне тĕпчесе пĕлес пулать. Вăл йытă, уп хӳри кукăр — шанма çук.

— Ах, аттеçĕм, юну сивĕннĕ иккен сан. Кăкрунта чĕре мар, сак айĕнчи сар такмак çакăнса тăрать пуль. Çамрăкпа çамрăк пĕр сăмах туппăшăн мĕнех сан тулхашмалли?

— Çапла... Мамăк минтер çине таянсах кĕтет сана Евлен. Ăна çын ямăчĕ кирлĕ. Пурпĕрех вăл сана арăмлăха илес çын пулаймĕ. Ура ярса пустармастăп хам киле. Яратăп эп ăна аnаталла... Ĕнер килнĕ тиексем сăнама хушрĕç, Ейĕк таврашĕнче хресченсем пăлханаççĕ...

— Ах, атте,— терĕ Сайите, вырăн çине кайса ӳкрĕ, чунĕпе чăтаймарĕ, эрленейсе макăрса ячĕ.

— Ан макăр,— терĕ Сибура.— Йĕрессӳ-макăрассусем сан малалла... Епле чĕрӳ савать, çапла пурăнăп тетĕн-и? Çук, пулаймĕ!..

...Çӗрӗпех çывӑраймарӗ хӗр — пуçӗ çине йывӑр шухӑш ӳкнипе.

Хура çӗрлех тӑчӗ, уткаларӗ. Кантӑка илем-тилӗм çапсанах, шухӑшпа хӗрнӗ пуçне, вӗриленсе кайнӑ кӗлеткине усӑлтарма тесе, тулалла тухрӗ. Чылайччен тӑчӗ пахчара, унтан вӑрманалла çул тытрӗ.

Уçланка çитсен, хӑй умӗнче темӗнле мӗлке мӗкӗлтетнине курса, шарт! сикрӗ те йывӑç тӗми хыçне кукленсе анчӗ.

Амаран тӑван хӗрарӑм тӑрать. Çӳçне-пуçне сапаланӑ — пилӗк таран, сӑнӗ те курӑнмасть.

«Çырлахсам!— пӑшӑлтатрӗ хӗр.— Çакӑн пек-и вӑл арçури? Хӑтар мана, пӳлӗх!»

Сайите сывлӑш çавӑрма та хӑраса хытса тӑчӗ. Куçне чарса çатта çарамас арçури çине пӑхрӗ.

Арçури чӗркуçленчӗ, хӗрелсе килекен шуçӑм еннелле пичӗпе çаврӑнчӗ те — мӑкӑртатма тытӑнчӗ.

Акӑ мӗн илтрӗ вара Сайите.

...— Ар ывӑл-хӗрӗн чарӑнасси пур... Çав Евленӗн пурнӑçӗ, манран уйрӑлсан, малалла мар, куталла кайса пытӑр. Килти килте пӗттӗр, хирти хирте пӗттӗр, çири çире пӗттӗр. Тырри-пулли ывӑçпа пухни ывӑçпа салантӑр, аркӑпа пухни аркӑпа салантӑр. Алсапа сапса пӳрнескепе пуçтартӑр. Выльӑххи-чӗрлӗххи тӗкӗнчен-çӑмӗнчен те тӗкӗнсе пытӑр. Карти кутне кашкӑр пар, вити кутне вӑрӑ пар. Çула тухсан, çул хаярӗ пӳлсе хутӑр, киле килсен, кил хаярӗ каçӑртса хутӑр. Тӗпел сыппа илмесӗр виле пар, алӑк сыппа вутлӑ сехмет пар. Ӗçес шывӗнчен тӑррине ил, çиес çиминчен тутлӑхне ил. Мӗн çини-ӗçни ӑшне кӗрсе, усса ан пытӑр. Алли-урине лӑп-лап çыхса чулласа ларттӑр. Ӑншӑртлӑ тул хаярӗ çапӑнтӑр, синкер вӑрӑнтӑр. Çичӗ çул ура çине тӑраймасӑр мерччесе выртттӑр. Турӑран ырлӑх, этемрен сиплӗх ан куртӑр. Вилмесӗрех йыт сассипе çӳретӗр, мӗлке пулса хӑраттӑр.

...Хӗрарӑм пашалу таткаласа пӑрахрӗ, çӗр кӑшларӗ, унтан малалла тӑсрӗ хӑйӗн ылханнӗ. Çак вӑхӑтра хӑйне пӗр çемçе чун итлесе тӑнине сисмерӗ вӑл.

Малалли ылханӗ ун çапла пулчӗ.

— Турӑ парса, пӳлӗх пӳрнипе çав Сайите хӗр пуççӑн хырӑм йаттӑр. Алла ача тытмасӑр качча ан кайтӑр. Каяс каччине туйла та мар, тухса та мар — вӑйпа кайтӑр. Упӑшки эрехе тӑрӑнтӑр, эрехӗ çиллине арӑслантартӑр, çав Сайитене кӑвакарман пит-куçпа ан çӳреттӗр, халне пӗтерсе шара кӗрттӗр... Хӗрле юлнӑ ачине йывӑр çурат-

тăр. Ача амакăпе каçăрăлса вырттăр. Вăрах хĕне кайтăр. Елтресе тăран шăтан-юханĕ ним ăрăмпа та ан тӳрлентĕр. Пĕтевĕ хыттăр, кăх пултăр. Юхха илентĕр, вутлă усал ертĕр. Типпи çулăхса типĕтсе ятăр. Пĕвĕ-сийĕ хурама хуппи пек пĕрĕнтĕр, сăнĕ-пуçĕ вĕри çĕлен хыçĕ пек ирсĕр пултăр. Урама тухсан, ула йытă та хăраса тартăр. Хăйне çĕр йăтайми çылăх юнаса çӳретĕр. Çырмара шапа сасси мар, ялта йытă сасси мар — Сайите чапĕ янратăр...

Тăрать итлесе Сайите... Çамрăк япала — нумай кирлĕ-им ăна...

Çамрăк пуç çын хурламасăрах хурланать, çын хурласан епле тӳстĕр? Ăш çунса пиçет. Хăйĕн ятне илтсенех чунĕ кĕв-в турĕ. Чĕрере сăркăланса кайрĕ. Чĕрĕлĕх аманчĕ. Çав ылханаканĕ Евлен арăмĕ иккенне пĕлсен, куçсенчен кĕç юн тапатчĕ. Çамрăк чухнехи мĕскĕнлĕх — ним тăва пĕлмест, çын хурри пулса, итлесе тăрать. Çаплах-ха витĕр çурса янраççĕ ылхан сăмахĕсем.

— Эй çĕр çăтти! Çăт çав Сайитепе Евлене.

Эй, юлавçă амăшĕ, юлавçă, эй, тупавçă амăшĕ, тупавçă! Юла юпса, тупа туса каланă йĕркепе çырлах.

Эй, алчамуй алпастăсем! Тур-сулу!

Сире салатнă пуçпа, амаран тăван асăнатăп, çĕр кăшласа йăлăнатăп. Куççуль тăкса парне кӳретĕп, юхтарса парне хыватăп. Сулатăп. Сĕкел тăвăр ман ылхана.

Çак хĕрĕх те пĕр пĕрчĕ шăрçана кам хăçан та хăçан шыраса тупса, пĕр çĕре пухса, ярăмласа мăя çакса, туйра ташлĕ — çавăн чух тин ман çак ылхан пăрахăç пултăр.

Аça чулĕ, аслати çапсан, çĕре каять, çичĕ çултан тин каялла тухать. Çакăн пекех ман ылханăм та çичĕ çулсăр çын çине ан тухтăр.

Эй, турă, кĕллĕм вĕçпе ан хăвар.

Ыран та мар, паян та мар, халь те пулин халех Евленпе Сайите çине çитер çак ылхана.

Каçхине каçах пултăр, ирхине ирех пултăр. Ылханнă ылханăм вырăнлă пултăр... Тьфу! тьфу! тьфу!..

Сайите темĕнле усал тĕлĕк тĕлленĕ пек итлесе тăчĕ çак ылхана...

Ах... Вуник çулта тĕлленнĕ тĕлĕкĕсем çите пуçларĕç-им?

Сăмахран тутли те, йӳççи те çук çав. Питĕ йывăр-çке сăмахĕсем. Чĕре варне кĕрсе çунтарать ун хытти, чĕре тĕпнех ларать йывăрĕ, çурать çамрăк чуна.

Ăшчик тухсах ӳкет.

Ылхана итлесе пĕтериччен вăйран сулăнса ӳкрĕ Сайите.

Эй, мĕскĕн пуçăм!

Мĕншĕн çапла хаяр ылхан ӳкрĕ пуç çине? Мĕншĕн йывăр ята кĕтĕм? Мĕн усал ĕç турăм-ши?

Сивĕ сунманччĕ-çке никама та, урлă тăман... Çинçе пĕвĕме ӳстертĕм-мĕн тăшман шăлĕ хушши сайраран.

Вăйăрханать хĕр.

Пуçра йĕс чан пек янăрать шухăш.

Вăрман шавĕ те тунсăхлă шухăш-кăмăл ӳкерекен пир пек... Унта Сайите салхăвĕ тĕрлепет.

Утрĕ, утрĕ улăх тăрăх. Унăн çунакан чĕрине темиçе çухрăм улăх тăршши те кĕске пулчĕ. Сурăма çитсе чиркĕве кĕрсе турра кĕлтурĕ. Каллех тухса утрĕ.

Çунман чун çунчĕ, ванман чун ванчĕ ун паян. Ăш шăнать çав ылхан сăмахĕсенчен. Ăçта кайса кĕрес? Мĕн тăвас?

Теветкеллĕх çук çав пирте, теветкелли-çке тимĕре те пăта çапса кĕртĕ, шуйттана та тытса хĕртĕ.

Утать Сайите. Тавралăхра та чиркӳри пек туйăнса тăрать: хатарлă та, кăштах канăçлă та.

Улăх çийĕнче, шăпах хĕр пуçĕ тăрринче, пĕр татăк хĕрлĕ пурçăн евĕрлĕ витĕр курăнакан пĕлĕт тăрать — кĕлĕ чатăрĕ пек. Хĕвелĕ хĕресленсе пăхать — ылтăн хĕрес пек. Чĕре чиркӳри пек кăмăлпа тулать.

Пӳлĕхçе кĕлленет Сайите. Эй, пӳлĕх, сир эс çав ылхана ман пуçăм çинчен! Эп çав териех çылăхлă пулсан, çакăнтах кăмрăк пек хуралса каям, пĕтем пуçăмпа!.. Йытă килсе улатăр пуçăм çине...

Хĕрхенчĕ-шим пӳлĕх? Кăшт лăпланăç килчĕ чĕрене.

Ылханччăрах, çиччĕрех! Ятпа пуçăм пĕтес пур-и? Пĕтсен пĕтĕ — хĕрлĕ сăн...

Ирхи куна кaçчен çӳрерĕ хĕр.

Кайми хуйхă тулнăран шавлать пуç, янрать. Шăмăсăр чĕлхе шăмă хуçать çав.

Ку каçхине выртсан та — ыйхи килмерĕ: пит шухăшлă иккен хĕр пуçĕ.

Аçтăрханта шыв çунать. Сайите ăшĕнче вут çунать. Малаллине асăнса, чун йĕрет. Умри апат та анмасть ун: çими те çийĕнмест, ĕçми те ĕçĕнмест.

Эй, вунçиччĕри хĕр хуйхи!

Сан хуйхуна кам çĕклĕ? Чăтайĕ-ши пуçу кунтан та хаяр ят çĕклеме?

ХИРЕÇУПЕ СЫВПУЛЛАШУ

Сайите ăшĕ хуйхăпа çунса пиçнĕ вăхăтра арманта та лăпкă пулмарĕ... Ирех персе çитрĕ те кунта ун ашшĕ — тӳрех тăрăнчĕ Евлене.

— Евлен! Ман хĕре хĕрĕнетĕн-и эс, учала куç! Çылăхунтан ӳкĕн! Кăвапунтан туртса çип арлам!..

Евлен ĕçне пăрахать те михĕ çине ларать.

— Тăна кĕр, Сибура хуçа,— тет вăл йăваш кăмăлпа.— Калаçман — палаç пулнă, теççĕ. Вилсен, чĕлхе ахалех çĕрет... Çынна епле сăмах хушмасăр иртĕп? Вăл хăй мана сап пекех сивлемест.

— Тен, авланма сапăр туса тăратăн? Тен, хăтана пырасшăн?

— Хĕрӳ килĕшсен — манра ĕç тăмĕ те,— тет Евлен лăпкăн.

Ахăрса кулса ячĕ Сибура.

— Пыйту çине утланса пырăн-и? Кăсăя пĕççипе туй ӳкерĕн-и? Туйна нӳхреп çинче сиктерĕн-и?.. Çăва тункати! Сана хамăн таса киле ура ярса пустарса ирсĕрлессĕм çук. Йăх-йыш таса ман! Каçликка таврашсемех Сибура хĕрне çулăхаймĕç-ха. Авланма сан — хĕр хĕрĕх пуса юласса кĕтес пулать. Çĕтĕк-çурăк! Асăхнă ăсупа çавăртăн-и эс ман хĕре?

— Çĕтĕк-çурăкра, Сибура, ылтăн пур,— Евлен хутне кĕрет Маттян.

Мăл-л çаврăнса пăхать ун енне Сибура.

— Сан та кĕнекӳ çĕтнĕ иккен, Маттян!.. Хĕвелпе уйăха уйăраймастăн. Евлен вăл мап хĕр çумĕнче ĕне çинчи йĕнер пек килĕшӳсĕр!

— Тен, вĕсен ку юрату йĕркипех пырать пуль,— тет Маттян.

— Эс мĕн пирĕн хушша-хуппа кĕретĕн,— кăшкăрса пăрахать Сибура.— Çынсем вăрçнине сурса иртсе кайма хушнă, эсĕ пур — ху сĕкĕнетĕн, анкана йытă!

— Ну, Сибура,— тет Маттян.— Ватран йӳçĕ сăмаххусем. Эс хăвна ытла патшаран тăван пек тыткалатăн. Ĕмĕрӳ тикĕс килнĕ сан. Ан тив, эпир чухăн пулар, сана та ылтăн çутатман, кăвакартнă çеç, чунна пăнтăхтарнă, таракан пек юнсăр хăварнă. Тавах, эпир хамăр ĕмĕреирттерĕпĕр—сан пек çын ĕмĕрне йышăнмасăрах.

— Ярам ак çак туяпа. Çич шăтăкла каску саланса кайтăр,— çиллин чаракне пĕлмесĕр, туя ярса тытать Сибура, анчах Евлен хăвăрт туян тепĕр вĕçĕнчен ярса илет.

— А-а...— ним тăвайман енне тăпăртатса тăрать Сибура.— Эсĕ те пуçран тытасшăн-çке мана...

— Çил арманне çеç хӳререн тытаççĕ, Сибура хуçа,— тет Евлен.

— Халех тухса кай ман патран!— кăшкăрать Сибура.— Тăрансан, йытă йышне тапăнать, тет... Шыв кутне çăкăрсăр лартатăп эп сана!

— Эпир ахаль те пур тăккаланчăкпа тăранса пурăнатпăр,— тавăрать Евлен.— Сан патра çулталăк çурă ĕçлесе çурхи авăн йывăççи пек çурхахпа тăрса юлтăм.

— Ай, кăвак ут! Сĕвек тăвайккине те тиркетĕн-çке! Кунтан чики те пур! Хӳрӳ йывăрланчĕ-ха сан. Турат вĕçне çитсе лартăн. Çулу — йытă йĕрĕпе. Кутăна та юсать ку тĕнче!

— Çын умне ытла тарăн ан алт, Сибура хуçа,— тет Евлен.— Эсĕ çын пуç тӳпинчен пусса çӳресшĕн, пурне те хăвăн аллуна ӳкересшĕн. Мĕнле çĕкленсе кайрăм тетĕн? Пире çаратса пуйрăн. Мушни пек чее эс. Анчах халăхран ылмаш утса нумай мала кяймăн. Халăх ăса кĕре пуçларĕ.

— Халăх вăл — шав-шав хăмăш. Вăл шавлать çеç, вăл ашак. Ашак пуçне патак та çĕклем кирлĕ. Сан пек халăхранах хăрамăпăр. Эсĕ — çын патĕнчи çын çеç... Аватăп-ха эпĕ сана. Сĕт шăлĕ тăкăнман — мăн аслаçу параппанне çапатăн. Улатимĕр хапхи витĕр кăларатăп. Тан пăр çине тăрататăп. Сивĕ кĕле те алсапа тытăн!

— Асту, Сибура,— тет Евлен.— Хăвăн сăмаххусем хăвăн умнах пырса вăрăнĕç. Кăмăлна халăха хирĕç ан яр. Ытла хăвна çеç аслăлатăн. Ейĕк таврашĕнче сан пек пуян килĕсем йăлтах ăшша кайнă ав, хăйсене йывăç тăлăп тăхăнтартнă.

— А-а... Эс мана вĕлерессипе хăрататăн!.. Мана вĕлерекен хăйĕн юннех тăкĕ.

— Çапла... Вăрăмтунана вĕлерекен хăйĕн юннех тăкать, — тет Евлен.

Сибуран аллисем те чĕтреççĕ.

— Тăхта,— тет вăл.— Капла пӳкле кайса эс час пӳлĕнĕн... Хусан алли кĕскен тыткалать. Чулхулара чул çуртра икĕ пукан хушшинче ларăн! Пуçиллех ярaтăп! Виллӳне те çĕр йышăнмĕ.

Евленĕн сисĕм тымарĕсем, шăнăрĕсем хирлӳ пек карăннă. Ăшĕ-чикки тулашать.

— Эсир — чун хĕнекенсем те чун кĕтекенсем!— тет вăл.— Эпир кайса тĕрме тултараймăпăр. Пĕтĕм тĕнчи—

тӗрме. Ҫапла, эп чухӑн! Паян вилсе выртам — ҫул ҫутилӗх пӗр пус ҫук. Атте-анне хӗвӗнчи пиллӗх ҫеҫ ман — тӗрӗс ал-ура. Юрӗ, калаҫу карӑ пултӑр: эп урӑх ӗҫлеместӗп сан патра.

— Ман умах килсе упаленӗн-ха,— тулхашать хуҫа.

— Килес ҫул юр илме килӗп,— тет Евлен.— Эсӗ ун чухне хӑвӑн телей кипкӗвӗнче пӑчӑхӑн. Сан умра—чикеленсессӗн те, упаленессӗм ҫук.

— Каях, каях, тахҫанах каяс сасси пурччӗ!— ҫухӑрать Сибура.— Ахӑракан ӑйӑр акара пусӑрнакан... Анчах ака тавра ҫаврӑнман юпахӑн таҫтах каймалла...

— Шыв ҫулне тупӗ, Сибура...

Тухрӗ те утрӗ Евлен.

Ах... Ӑшӗ-чикӗ ҫунса тухать...

Килне ҫитрӗ — Укане тӑванӗсем кӗтсе лараҫҫӗ. Килҫурта мӗнлерех пайлас пирки канаш тытаҫҫӗ.

Япаласене уйӑрса ик енне хучӗҫ. Лашине Укане илчӗ, сарайпа кӗлетне те вӑлах илчӗ.

— Йӑлӑмра, вӑрӑм варлӑ сӑрт ҫинче, вирелле туратлӑ хыр нумай, тет. Кайса тураттисене ирт — сан валли те кӗлет пулӗ,— ҫухӑрчӗ Укане.

— Пуҫлар пулӗ?— терӗҫ.

Вара шаракат пуҫланчӗ.

Евленпе Уканене ҫурӑмпа-ҫурӑм туса тӑратрӗҫ те иккӗшне пӗрле пилӗк тӗлӗнчен Укане пуҫӗнчен салтнӑ сурпанпа ҫыхса лартрӗҫ. Каҫликкапа Укане тӑванӗ икӗ енне тӑчӗҫ. Тем мӑкӑртатрӗҫ, сурчӗҫ те сурпана хачӑпа касса татса ячӗҫ. Укане Евлене хыҫалтан урипе тапса ячӗ те ийе путекки пек тапӑлтаттарчӗ тӑванӗсем еннелле: капла тусан, усал ерсе пымасть имӗш.

Евлен аслашшӗ ҫумнех тӑрса юлчӗ.

Укане вара пӗрехмай хӑйӗн им-юм юррине юрларӗ:

— Сана тавӑрас ҫук ҫинче — сӑмсана йытта касса парам. Еккӳ ҫитӗ-ха сан, шалчу тулӗ. Хӗвел чартӑр сана, турӑ чухлатӑр! Лӗпкӳ ҫине ҫӑлтӑр антӑр! Кепе тивтӗр сана! Эсӗ ху тӗллӗн тӗтӗм те кӑлараймастӑн. Лайӑх асӑнтарӑп-ха сана. Кай, ан курӑн! Мӗн пӑхан вилнӗ шапа куҫӗпе! Эс ман сӑнӑма тепре курнӑ кун вилмелле пулӑн. Тӑну-пуҫу ҫуталӗ-ха ак... Хӑвах чупса пырӑн-ха ман пата ҫӑмӑллӑх кӗлленме...

— Тайӑлан пуҫпах пымӑп,— тет Евлен, тухать те утать хӑй ӑҫта кайнине хӑй пӗлмесӗрех...

Чĕри шăратса çунать. Ăшĕ вăр-вăр тăвать, тулашать. Унта йӳçсе кăпăкланать. Тăнлавра юн шĕлкет, вăл пĕвенсе ларнă. Пуçĕ тавра шухăш çаврăнать.

Каçпа килне çитрĕ Евлен — çап-çара: лаçне, витине, сарайне пăсса кайнă... Тăрса юлнă пĕр качака, тӳнсе каяс пек пӳрт те пӳртре старик...

...Иртрĕ çапла темиçе кун.

Сайитене те тĕл пулаймарĕ Евлен — вăл ниçта курăнмарĕ.

Каçхине арман патĕнчен иккĕн тухса килкарти патне çитиех хăваларĕç Евлене, юрать-ха хыçалтан вăркăнтарнă чукмар урараан кăшт ыратмалла çеç пырса тиврĕ.

— Ах, асатте, кала-ха, мĕн тăвас? — тет Евлен.— Сибура хĕрĕшĕн ăш çунать ман... Анчах Сибурапа урлă-пирлĕ пултăмăр. Эпир ĕнтĕ унпа ĕмĕрлĕх курайман тăшмансем...

Çунать йĕкĕт, ăшне-чикне пĕтерет.

— Евлен,— терĕ ăна паян Маттян, урамра тĕл пулса.— Сибура санпа ман пирки, патшана хирĕç каласççĕ, халăха пăлхатаççĕ тесе, тӳресем патне хыпар çитернĕ. Паян-ыран — кĕтсех тăр... Эпĕ кĕçĕрех Атăл тăрăхне тухса каятăп...

...Пуринчен ытла Сайитешĕн пăшăрханчĕ Евлен. Аслашшĕпе канашласа пăхма шутларĕ.

— Купăста — пуçлă, этем ăслă пулни лайăх,— терĕ аслашшĕ.— Пур пӳрнене те юракан çĕрĕ тупаймăн. Сибура хĕрĕпе килĕштеретĕр пулсан, хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр. Йăнăш хĕр мар... Чăн та, пит ачалла авлантарса ятăмăр сана — хăвна пăхма тесех. Арçын артакне кăтартаймарăн эс ăна. Тухса ӳкрĕ артакунтан. Яру кайрĕ...

— Асатте,—тет Евлен.— Йывăр мана... Ĕнер каçхине Укане пиччĕшпе тепĕр çын хăваларĕç... Пĕтĕм тăванĕ-пĕтенĕпех юнăхса çӳреççĕ халь. Сибура анаталла ярас сăмаххипе тупалать. Виличченех маякласа çӳреççĕ ĕнтĕ халь вĕсем мана... Пурнăçĕ хĕрхӳ... Сайитене эп Сибура чĕрĕ чух качча илеес çук. Тухса каям пĕрех хут... Тĕнче курса çаврăнам...

— Эй, мăнукăм,— тет Каçликка.— Кирек ăçта кайсан та, аршăнта тăвата шитех пулĕ. Хăвăнтан малта ăсу пытăр. Манăн ĕнтĕ автансăр лутра яла çеç каймалла. Турăран тепрер çуллăх сывлăх-кĕрлĕх çеç ĕмĕтленетĕп. Кил тытма та арçын кирлĕ. Икĕ ывăл — çур ывăл, пĕр ывăл — çук ывăл, теççĕ. Хама элчел касса

кайиччен ман сана куçлă-пуçлă туса хăварасчĕ. Сибура хĕрне илеймĕн. Тĕнче хĕсĕр мар. Урăх та тупăпăр.

— Сайите мар пулсан, мана урăх никам та кирлĕ мар, асатте. Вăл мар пулсан, арăму-япалу — арăм пăтавкки çĕкличчен арман чулĕ çĕклем.

— Тухса курах, эппин, тĕнчине... Ман ĕнтĕ суппăм çитрĕ. Ват шăмшак çĕрте канса выртни те килĕшӳллĕ. Вилсен те вăрах тăсăмлă вилĕмпе вилес марччĕ çеç. Çулу ăнăçлă пултăр. Сибурипе татăл вара — укçан парать-и, тыррăн-и... Хаяр çын вучĕ çине вут хурса ан аманлантар, лăпкăрах калаç. Ун, урнă йыттăн, ури те çыртĕ... Турă тăнлăхĕпе çутатса пытăр ăспуçна.

— Эсĕ, асатте, унран хăвах ил, эпир хирĕçсех кайăпăр. Çынна хĕнесе алă тупанне çу килмĕ—тытăçас килмест ман халь...

...Эх, юнсăр çынсем!.. Юн мар, сăмала вĕрет пуль ăшĕсенче!.. Çĕр çинче утса çӳреме те сехер.

Евлен кантăк умĕнче Сибурасен пахчи еннелле пăхса ларчĕ, ларчĕ те хăй мĕн суннине кĕтсе илсен — хăвăрт пӳртрен тухрĕ.

— Сайите,— чĕнчĕ вăл карта хушăкĕ витĕр.— Кăнтăрла тĕлне тухса тăр мăн çул тăваткалне, вăрман кĕтессине...

— Мĕн пулнă, Евлен?

— Кайран пĕлĕн. Ав, аçу килет... Уйрăлар хăвăртрах. Пыратăн-и?

— Хаваспах, Евлен.

— Кăнтăрлахи кӳлĕм тăварнă тĕле... Ан вăрахла, Сайите...

...Кăнтăрла тĕлне Евлен, çурăм хыçне кушел çакса, хăй кăтартнă вырăна тухса тăчĕ. Сайите кăшт каярах юлса çитрĕ. Евлен сăн-пичĕ, ăна курсан, телейлĕн йăлкăшса илчĕ. Анчах унăн питĕнче çеç хĕвел пулчĕ, чĕри çинче — тăвар.

— Сайите,— тет Евлен.— Килте савăнса çӳресси иртрĕ ĕнтĕ манăн. Тухса кайма май ӳкрĕ.

Кăларас сывлăшне кăкăрта чарса итлерĕ хĕр. Аллине кăкри çине хĕреслесе тытрĕ. Пĕр самант ним калаймасăр пăвăнса тăчĕ.

— Хĕрĕн кăмăлне татсах тухса каятăн-им ĕнтĕ, Евлен? Кам çине шанса хăваратăн ят тивнĕ тусна?

— Çул çинче каялла çаврăнса пăхсан, тепĕр ăс кĕрет, теççĕ. Пуçа ӳкнĕ шухăшăма каялла тăваймăп, Сайите.

— Ах, Евлен, ман тӗлӗмрен кун пӗтрӗ. Аттене те ҫичӗ ют сӑнӗ ҫапрӗ, текех ӗнтӗ ӑшне-чикне кӳлетсе ҫӳрет. Ун кӑмӑлне нимпе те юраймӑн. Ватти пил памасӑр ҫамрӑка чыс пулмӗ. Эсӗ умра пулас пулсан, эпӗ те ҫичӗ ют умӗнче хур пулмӑттӑм. Мӗн тӑвас ман?.. Пул-ха эс манӑн тел*. Уҫса кала, пулӑш ӑспуҫ ҫавӑрма...

Евлен сӳленке тӑрать. Сӑнӗ ӗнтрӗкленчӗ.

— Эй, тусӑм, пӗрех чунӑм. Санпа чухне ҫеҫ тӗнче ҫине ҫут хӗвел пек пӑхатӑп. Пурӑнасчӗ пӗрле, юп курасчӗ... Пӗрле пурӑнма мел кирлӗ. Пырӑттӑм сирӗн пата... Ӑшӑ тӗпеле пуҫ тайӑттӑм. Аҫуна икӗ хулӗнчен тытса тайӑлӑттӑм...— аҫу мана ҫыпӑҫтармасть кӑмӑлне. Ирӗклӗ кунтан каяссӑм ҫук. Пурӑнма хурлӑх-ҫке. Пурнӑҫӗ чӗр тамӑк. Ирхи тӑм пекех турат вӗҫӗнче пурӑнатпӑр— ҫил вӗрсенех татӑлса анас пек. Ӗҫленӗ чух ӗҫ айне ӳксе вилетӗн. Ӗҫлетӗн — куҫ чармакилле: ҫӑкӑр татӑкӗшӗн те уйраншӑн. Ҫӳретӗн вара ҫӑпатупа шаплатса вӗлтӗр-вӗлтӗр. Пуяншӑн пурте кӑмӑл кӗленӗ тӑрӑх. Пирӗншӗн ырӑ кун сайрарах. Чакалан, тымар пек, ӗмӗрех тӑпра ӑшӗнче те ҫӳре ура таптав айӗнче! Эй, тӗнче! Ҫак тӗнчере уйӑх та вупӑр чури, ав. Шыв та икӗ ҫыран тыткӑнӗнче. Ҫулталӑк ҫурӑ ӗҫлерӗм аҫу пекки патӗнче — ҫулталӑк ҫурӑ типӗ тыттарчӗ. Ӗҫне лайӑх тусан, умах тӑрӗ тесеттӗм. Ман, ют ҫыннӑн, мӗн чухлӗ ӗҫлесе юраяс ӑна, тӑванӗ те юраймасан... Илсе кайӑттӑм сана та хампа пӗрле — кирек ӑҫта кайсан та, кӗленче урамсем курраймӑпӑр. Ырлӑхра пурӑнни хурлӑха тӳсес ҫук. Манӑн ҫиес ҫӑкӑр та виҫеллӗ, ӗҫес шыв та хисеплӗ.

— Ах, Евлен... Эсӗ мана ӳпкелетӗн. Атте-анне ҫинче ырӑ курни каяймӗ ҫав ӗмӗр тӑршшине. Телей тикӗс тивмест. Ӗнтӗ иккӗн пулатпӑр ик ҫӗрлӗ. Атте патӗнчи пурҫӑн пурнӑҫӗ ҫичӗ ютри йӗтӗн пурнӑҫне ҫаврӑнасшӑн. Ҫичӗ ют артакӗ кӗтет мана.

— Ҫыннине ху курнӑ-и?

— Куҫпа та курман тесрен — пӗрре курнӑ. Кӑмӑлӑма лармасть. Курма тӑран ҫынах мар. Ятне асӑнсанах чӗрем ҫине сивӗ мӗлке ӳкет.

— Аҫу парсан, йӗрӗн те — кайӑн ҫав. Вӗрене ҫулҫи вӗҫсе ӳкӗ те ют пулӗ. Чӗн пушӑ та тӑван аркинчен ачашрах пулӗ. Ют тути те пылакланӗ. Эп таврӑннӑ ҫӗре эс те маншӑн ҫич ют пулӑн.

Сывлӑшне тайса итлет Сайите чун тусне.

---

* Тел—советник.

— Евлен!.. Хам ирĕкĕмрен тухса, çын ирĕкне парăнса, çурри-çуртми вилсе-чĕрĕлсе çӳриччен — ирхи сывлăм шывĕпе кимĕ юхтăр. Кала, Евлен, тунсăх мар-и эс манран?

— Кăмăлăм санран тăранаймĕ, Сайите.

— Евлен... Тĕнче тăвăр çав пирĕн тĕлтен. Эпир курас нехек вĕçĕ çук. Ютсем йышлăн — калĕç те хăртĕç. Иккĕн тӳрĕ пурăннинчен те кĕвĕçеççĕ... Мĕнле пурăнас ман сансăр?

— Эпĕ кунта юлсан та, пуçăмăрсенчен хуйхă сӳнес çук. Эс маншăн ан хуйхăр. Хуйхăрни сиппе пымасть. Çӳрекелем... Кăштах çĕвек хыпар сирĕлтĕр... Тен, укçа та тупса таврăнăп.

Ăмăрланчĕ хĕр сăнĕ. Ăшĕ-чикки çулăмсăр çунать — шерне кăмпи пек.

— Ах, Евлен... Мĕнех хăвалан ăна, пӳрмен телее? Вăл — малти кустăрмана кайри кустăрма хăвалана пек — тарсах пырать. Тем чул чупса та, ура лаппи çеç сарăлĕ. Шерпет юхан çĕрсем тупаймăн. Ăçта кайсан та, саккун арчи çине таяннă патша кĕтет. Сĕт çулпа кайса, пыл çулпа килĕп тетĕн-и? Ниçта та пире лайăх пурăнма ирĕк пулмĕ. Ахах-мерченсĕрех пурăнăпăр-çке. Мерчен çутисем çамкасене çапмĕç. Мулпа телей сутмаççĕ. Кăвак пуçлă аттен кăвакарнă укçи те мана сансăр телей кӳрес çук. Вилесем çеç укça çутипе çӳреççĕ... Пуринчен пуянни — чунĕпе, ăсĕпе пуянни. Ĕне те йĕтĕрмесĕр сĕт памасть. Канашсăрах картиш çавăраймăн. шухăшсăрах шур пӳрт лартаймăн. Вăрманта пурăнакапăн кайăк лармалăх карти çук, ут кăкармалăх юпи çук пулсан — чĕрĕ çынах-ши вăл? Пурăнкалăпăр-çке кунта та.

— Эй, Сайите... Ман халь ниепле те ялта юлма майĕ çук çав. Патша тӳрисем пуçăма шыраççĕ. Укане тăванĕсем те, аçу та мана тăрăнчĕç. Вĕсен таптавĕ айне лексе — курайман тăшмана савăнтарасси ман ăс килттипе мар. Эй, тусăмçăм, тус... Сан пуçу çине йывăр хуйхă ӳкнĕшĕн йăлтах ĕнтĕ эпĕ айăпра. Каçарсам ĕнтĕ мана эсĕ.

— Ӳпкевĕм пулсан та, эпĕ халĕ тин, Евлен, санпа çыхланнăшăн ӳкĕнĕçе юлаймăп. Эп хурлăха юлнишĕн эсĕ çеç-им айăплă? Ман шухăш та, чунăм та сан умăнта. Мĕн инçĕшне каятăн ĕнтĕ, ăçта? Усал çынсенчен пăрăнса тăрсам-и, Евлен. Тулайра тăван çук: тутлă чĕлхене те пыл тивмĕ, тайăлан пуçа та хĕç касĕ.

— Эп хăрамăп... Çĕлентен те саламат явăп, Сайите...

Тухатмăш та хăраман çынна сиен тăваймасть, тет... Эй, кăмăл çунатăм! Халĕ пĕрле пулнисем — пулĕç-ши кайран сан асăнта? Чи хакли — шанчăклă сăмах... Ăшăм шăннă вăхăтра сан сăмахун ăшши çеç инçетренех ăшăтĕ. Манмăн-и эсĕ мана?

— Ах, Евлен... Чĕре те ялан пĕр тикĕс тапмасть... Ăшăма çурса кăтартăттăм. Чĕлхем калаçать, тутам кулать, эс курмастăн çав — епле ман ăш çунать. Пуçăм сывă пулсан, асăнăп сана асăм пĕтиччен, шухăшăм çути сӳниччен. Ан тив, пĕтĕм кунçул тăршшĕнче тĕнче умĕнче айăпа юлам — кун çути курнă пĕр пуçăм ĕмĕрлĕх санăн, эсĕ çеç чунăм çути...

— Эсĕ те каймăн ман асран — чул çине курăк шăтиччен, тинĕс тулса тăкăниччен.

— Тăрăн-ши, Евлен, çак пĕр ăс çинчех?

— Эп пăрахмăп сана виличчен те... Хушшăмăрта сăмах вылямĕ. Ĕнтĕ ман, тусăм, утмалла.

— Уйрăлмаллах пулсан, уйрăлар.— тет хĕр, пĕтĕм ăшран-вартан кулянса.— Турă ырри çавнашкал пуль. Кил, курса юлам сана куçăм туличчен...

Хĕр чĕрине шалтан тапратрĕ çак кĕтмен уйрăлу. Сиксе тухать çамрăк чĕре хуйхăпала, çурăлса икке уйрăлать.

Куçран пăхса сассăр йĕрет хĕр. Йăрлатса куççулĕ юхать.

Евленĕн те макăрмасăр куççуль тухать. Вăл та пуç йăтайми хуйхăра. Анчах, шур юр çинчи шур çăмарта пек, тултан пăхсан палăрмасть вăл кулянни-хуйхăрни.

— Ме сана шурă тутăр,— тет Сайите.— Шухăшласа çӳреме... Юрилесе асăнма пултăр.

— Сайите... Ăшă кăмăлпа панă парнӳ — кăмăл тумламу... Вăл юнăм çĕре ӳкесрен пултăр... Пĕр çултан ытлах çӳремĕп... Килме пулнă вăхăтра килеймесен те — хыпар тукалăп...

Çук, темле тутлă калаçса та хуйхăсем иртсе каймарĕç, ăшчик выртмарĕ, таврăнмарĕ кăмăл: çур кăмăл тулчĕ. сур кăмăл юлчĕ.

...Йĕрсе, ыталанса уйрăлать ик савнă чун.

Тăсаясчĕ ыталашу самантне, пĕр чуптăвăм пылакне ĕмĕр тăршшĕ! Тăрасчĕ çапла ватăлса виличченех!.. Анчах... уйрăлаççĕ çав — çурмаран каснă улма пек.

— Кĕт мана...

— Чун пек кĕтетĕп, Евле-ен...

Куçран куçа пăхса илчĕç юлашки хут. Эй, çĕр кăкри! Пилле çула тухнă йĕкĕте!..

Тăрса юлчĕ Сайите... Умĕнче — тăшман, хыçĕнче — куштан. Утать, утать хĕр, ура утса та çул юлмасть.

Шухăш-туйăмĕсем пит кĕреллĕ.

Ĕнтĕ куллен куран савни — тĕлĕке тăрса юлчĕ. Ĕнтĕ куçран çухатрĕ Сайите савнине.

Чĕре кавсăлать. Куççуль чыхăнать.

Тутлă вăхăтсем иртрĕç. Савăнăçсем саланчĕç. Çитрĕç çунас вăхăтсем.

Çу мар çав эпир — шывра путатпăр, кăмрăк мар çав— çĕрте çĕретпĕр. Телей юнтарать—ача пек йăл кулса хирĕç утмасть.

Шухăшлатпăр малалла, ĕмĕрĕ иртет каялла. Шухăшĕ сирĕлет, ырлăхĕ тăра юлать.

...Пĕлĕте çӳхе çурхах пек хĕрлĕ лĕм çапрĕ. Вĕсен хушшинче пĕлĕт таткаланчăкĕн çурăкĕсем витĕр кăваккăн палăракан юн тымарĕсем пек кăвак пĕлĕт курăнкалать — йывăр çын шутне кĕре пуçланă хĕрарăмăнни евĕрлĕ...

Сайитепе çав пĕлĕт сăнарĕ хушшинче халлĕхе пӳлĕх çеç пĕлекен темĕнле вăрттăн пĕрпеклĕх пур...

Евлен...

Сана, куç кĕски пек тусăма, куçран кăларса ятăм-и?

Шухăшламан хуйхă сулăнтарчĕ-çке пуçăма.

Кĕрсе кайрĕ хĕр вăрăм шухăша...

Çак самана йывăррине пĕлнĕ пулсан, выртаяс-мĕн нушасем иртиччен анне хĕвĕнче.

Пуç пĕтти çĕр çак тĕнче хĕрӳ вутлă чĕрешĕн!..

ХАНАСЕМ

Кĕркунне те çитрĕ...

Вăрман симĕс, сарă, хĕрлĕ тĕссемпе хыпса илчĕ. Йывăç çулçисем кунран-кун сайрарах. Çĕрте çитмĕл тĕрлĕ çулçă кĕтĕвĕ чупать.

Сайитене пӳрте чĕнтерчĕç. Сĕтел умĕнче Сибура ларать, кĕрекере—Чулхула хăнисем.

Лаша куçĕ пек пысăк, сывă шакмак куç, чӳрече куçĕ пек мăчлатмасăр, хĕр çине тинкерчĕ. Сайите чунĕ тӳрех пĕлчĕ — çакă иккен ăна качча илме юнсăхлакан.

— Ну, Сайите,— терĕ Сибура.— Çакă ĕнтĕ вăл манăн кĕрӳ, сан упăшка пуласси... Сĕтелĕр çинче сирсе сирĕлми сим вылĕ. Хатăр туй шеплер пĕрре!

Сайите хускалмасăр урай варринче тăрать.

— Унта апла, атте, пуç çĕклейми чыс курмалла?

Мĕншĕн кун пекех чыс мана, аттеçĕм?.. Савса туман туса, атте, епле тухса каям эп? Ун умĕнче ырлăх тупăп-ши? Ан аппалансам хурăн шывĕнчен пыл тăвасшăн.

— Çитĕ санпа чĕлхе виçме!— кăшкăрса ячĕ Сибура.— Пулмасть ача-пăча айванĕ хыççăн кайса! Парасах тесен, сан хуру витмест кунта.

— Аттеçĕм, пĕрре те ăш пилпе калаçмастăн-çке эс манпа. Ан тимлесем мана. Кăмăл савман çынна тухиччен — хĕреслĕ юпана качча каям...

— Айван ăс!.. Кун пек çĕре паманнине ăçта парас? Качча каймасăрах кĕрчейсе лар, эппин! Пуçна шухăш килсессĕн — хура çĕлен пек авăнăп-ха, хура куççульпе ларса макăрăн.

— Ай, атте... Хăнкăрмана тем чул хăнкăртаттарсан та, шăнкăрав сасси кăлармĕ. Урунтан тытса тайăлсан, пил парăн-ши, хулăнтан тытса тайăлсан, пехиллĕн-ши?.. Эс мана ырă сунатăн пулсан, ирĕк пар, сан кĕрекери кĕрĕвӳ Евлен пултăр...

Сибура чĕтресе кайрĕ.

— Епле калама чĕлхӳ çаврăнчĕ сан! Кайри-малтине шухăшласах пуплетĕн-и? Çав кĕлмĕç çӳпçине, çын суйланчăкне, качча тухасшăн? Çын ан илттĕрех сăмахна! Эпир илтмен!

— Атте, ан хаярла мана. Кăмăлĕ ун мана юрăхлă.

— Кăмăлне ытараймарăн! Тупăлха хуллипе хĕнемелле сана — тухтăр ăшна кĕнĕ усалу. Мĕн хайлапа куç хыврăн çав кĕрлемие*? Пур йăлăхтарчĕ-и сана? Е ырлăхран ыртăн-и?

— Аттеçĕм... Хурама вĕлле хурт тытнă, çын хурланă ача çурт тытнă... Чун тусĕ вăл ман.

— Чун тусу чунна илет вăл! Унта кайса эс тĕпĕлтĕк сиксе çӳрĕп тетĕн-и? Çупа шăлса çывратĕç те ачашласа вăратĕç-и?

Сайите тутине çыртрĕ те пăрăнма тăчĕ, куçне тартма пăхрĕ, çапла систерĕ:

— Савăп — кайăп, мĕн тăвăн? Ман унран... улпут килмелле...

Сибура шанкрайса кайрĕ. Куçĕ юнпа тулчĕ. Çилли шăмалса килчĕ. Таларса хĕрелсе кайрĕ. Айĕнчи пуканне çĕклерĕ... Капитан ашшĕ пукана ярса тытрĕ: «Эпир йĕркеллĕ çынсем»,— терĕ. Çамрăк офицер кăрчама тултарса шалт хучĕ.

---

* Кĕрлеми — хĕр тиркенĕ каччă.

Самант иртрĕ — шăпăртах, тепĕр самант — шăпăртах. Унтан тин сӳлтен кайнă пек шăппăн чĕтрекен сасă илтĕнчĕ.

— Араскалу пысăкчĕ... Каях, эппин... Пусми пустав, сакки сатин вĕсен. Саншăн палас сарсах хунă вĕсем крыльца умне. Хăй хурах кĕретсе ҫӳрет халь! Хураха качча кай! Асу пĕтиччен асăнăн-ха ман ҫак сăмаха... Анчах... ман килте вăл хăй тенĕ ҫын тупаймĕ! Хурахшăн пуҫланă пичкеме сим тулса юлас ҫук... Ах...—чĕрине ярса илчĕ Сибура.— Аҫун шур пуҫĕ курман хуйхă ан юлтăр терĕн пуль. Пархатар ан кур унта кайса! Тар-шуртан ан хăтăл! Урунти тăлуна сурпан вырăнне сыр! Йытă ҫимен ҫимĕҫе ҫи! Татăкăн ҫăкăр тыттарччăр! Нимĕн чух аса килменни ҫавăн чух асна килĕ аҫу сăмаххи. Анчах... Ҫын ҫураҫнă хĕре илĕртсе, улталаса выртса ҫывăрнăшăн хĕр хулăмми чухлĕ укҫа тӳлетĕр! Унтан эп ăна хура юпа ҫине хам аллăмпа хам ҫактарăп!.. Тахҫанах шыраççĕ ăна!.. Тытсан — малтанхи йывăҫ ҫинех ҫакма хушнă!..

— Атте,— терĕ Сайите.— Вăл мана ирĕксĕрлесе тытса ҫывăрман. Уншăн турă умĕнче хам явап парăп...

— Хураха пурпĕрех памастăп сана! Вĕлеретĕп!— куҫĕпе ҫиҫсе, чышкине чышмăрласа пукан ҫинчен ҫĕкленчĕ Сибура, сĕтел ҫинче алла лекнĕ алтăра ярса илсе Сайите ҫине вăркăнтарчĕ. Хĕр ахлатса лăчăрăнса анчĕ, питне аллипе хупларĕ те чакса, чакса пычĕ, тулаллах тухса кайрĕ...

..Муртăхнă питлĕ капитан урас умĕнхи ҫын пек тĕлĕрсе, салхуланса пăхрĕ, курка хыççăн курка ӳпĕнтерме пикенчĕ. Вара, лачкам ӳсĕрскер, турăш ҫине пăхса анасла тăчĕ, кĕрекере ыйхипе вăрҫса ларчĕ, ăна ҫĕнеймесĕр, тӳнчĕ, хăсрĕ. Тути ҫĕпре кăкшăм ани пек...

АР ҪĔКЛЕЙМИ АЧА

Пусма ларнă акăш пек ларчĕ ҫĕр ҫине юр...

Упа вачĕ те, мучавăр курăкĕ те тупса килсе пачĕ эпеҫĕ — хĕр йышăнмарĕ: пăрахас-им шăпа ҫырнă ачана?

Хĕр хаяр ята пăхмасăрах ача хатĕрĕшĕ турĕ: пуҫне— пухча, кутне — ҫитак, пуҫ айне — купчăк.

...Кăвак ҫутă килнĕ чух — «улпут» килчĕ. Тĕреклĕ, куптăл пек, ҫăмха пек, кĕсъене кĕрес пек.

— Ҫĕнĕ кайăк ҫуралнă.

— Ылтăн-и вăл, кĕмĕл-и?— тет апăс.

— Ылтăн, ылтăн... Пин тенкĕ.

«Ылтăн» ача — ывăл ача — кĕпеллĕ те тухъяллă çуралнă. Муллă, суса кăларайми укçаллă пулĕ.

Апăс кăвапине çыхать, сăмах калать:

— Хăмла пек çăмăл пул, тутлă салат пек — çынпа варлă пул, шур çăнăх пек тасалса çӳре. Вăрăм çулпа килнĕ пек вăрăм ĕмĕрлĕ пул. Сĕтлĕ кăкăрти, варти пиллĕх! Тивлетлĕ, кунлă-çуллă тăвăсăнччĕ пирĕн ачана. Çăпатине кутăн сыриччен пурăнтăр. Çак ачаран пин çын ĕрчесе кайтăр. Ун урлă аслă йăх çуралтăр. Йăхĕ хăйĕн тăшманĕсен çуртне тытса тăтăр. Çĕрĕ çине усал кайăка каяш ан саптартăр, çĕршыв урлă хĕç ан каçартăр.

Чун çуратан ама! Çӳлтен пиллĕхне антарса пирĕн пиле çитер çак ача çине!..

Пурăнать ача...

Турра ачашăн ула тăпа парне кӳреççĕ.

Хаяр ӳксен, куç ӳксен, хирĕç вăрăнсан — хăватлă сăмахсем пур:

— Ырă вут ами, вĕрсе кăлар, шăтăклă кăмпи, тĕтĕрсе кăлар. Пĕвĕнчен-сийĕнчен, чĕрнинчен, чĕрни вĕçĕнчен тухса кай... Ӳпнер куç, чалăш куç, чапрас куç, симĕс куç... Хура çынти хура куç, сарă çынти сарă куç... Юман кăмпи çинче вут тăмасть, çак Сариле çинче куç тăмасть...

Сайите ачашăн чунне парать. Кăвак кӳкен шатринчен кӳкен çырли шывĕпе чăпăллать. Ӳслĕке ерсен — карак хуранĕ ăшне хырса парать. Чирлесен — армути шывпе чăпăл тăвать, тĕрлĕ лĕпĕшсене шыв çинче чӳхесе шывне ĕçтерет. Кăкăр ĕмĕртет те тутлă чуптăвать.

Ар пулайăн-ши эсĕ, ырă айван? Мĕн хурлăхшăн çуралтăн-ши? Аçу тытса тăп-тăп савайĕ-ши сана...

Ачине Сайите эпеçĕ патĕнче çуратрĕ, киле виç эрне каймарĕ. Сибура ăна, хăй вилес пек чирлесен, килех чĕнчĕ хăйне пăхма.

Шупашкартан таврăннă чухне Сибурана хурахсем хĕненĕ, аяк пĕрчине хуçнă. Çĕрĕпе шăнса выртнă вăл тулта... Тăраймасть ури çине.

Çилли хăйĕн çавах çаврăнмасть.

Вăл чирлипе усă курса, Сайите кăшт ерçсенех Каçликка патне кил-тĕрĕшре пулăшма чупса каçать. Хăй сĕт-çу йăтнă.

Каçликка та чирлĕ.

— Кил, ирт тĕпеле... Аслă çын пул,— тет Каçликка.— Чăрмантарасси те сана...

— Эп ал ылмашӗпе ҫеҫ-ҫке, асатте,— тет Сайите, Куҫӗ йӗрет хӑйӗн, питӗнче ҫутӑ йӗр выртать.

Сайите пӳртре йӗке пек ҫаврӑнать, кускалать. Шур шӑлаппа урай ҫӑвать, кӑчӑр курӑкӗпе чашӑк-тирӗк тасатать, сӑвӑр чулӗпе тупмӑрса хурана сӑтӑрать.

Хӗрлӗ пӑру пек ҫулать хурана ҫулӑм, йӗп ташланӑ пек сикет. Ҫатма ҫинче упа выртса йӑваннӑ пек шӑн ҫу ирӗлет. Кӑмака ҫинче кушак пек вылять ӑшӑ.

— Эй, кинӗм, куйкӑрӑш,— теейсе ларать ватти.— Килсе лар ир пек, каҫ пек... Хур-шурпа тапӑшмалли пайтах пулӗ — ачуна та илсе кил... Мӑш-мӑш пулсан та — анне-тӗнне тупкалӑпӑр-и. Ялти ҫӗвек хыпарӗ... Мӗн тӑвӑн? Калаҫчӑрах лапӑрчӑк ҫӑварсем.

— Килӗп-ҫке, асатте... Сан кӑмӑлна та пулин ман хӑварас марччӗ.

Ҫук, пуҫа килсе вӑрӑннӑ хуйхине ӗҫ те, ырӑ сӑмах та ҫӗклеймест Сайитенне.

Кӗрен ҫеҫке пек кӗрлесе иртеҫҫӗ ҫамрӑк кунсем. Выляни-кулнисем шухӑша тӑрса юлчӗҫ — тӗлӗкре ҫеҫ ӳкеҫсӗ куҫ умне... Хура тутӑртан хура кӑҫал ҫунчӗ ун чӗри. Никам йӑпатса та йӑпанмасть. Вӑрӑм шухӑш та вӑрӑм хуйхӑ ирӗлтерет чӗре ҫӑвӗсене.

Улма хӗрлӗ нар пичӗ шурӑхрӗ, ҫӳҫӗ тӑсӑлчӗ хуйхӑпа. Кӑҫал ыйхӑ вӗҫнисем — пӗрле илсен, вӑранмасӑр уйӑх ҫывӑрма ҫитет пуль.

Самани те самана — ҫыннисем-ҫке пит усал. Ҫитмӗл тӗрлӗ сӑмах кӑларса утмӑл ҫӗре ҫитерчӗҫ. Ҫичӗ юта юрама ҫитмӗл ҫулхи ӑс кирлӗ ҫав. Ҫил вӗрет те тамалать, йӗр пулать те ҫухалать, пӗр сарӑлнӑ хыпар ҫеҫ пӗтмест.

Ушкӑн-ушкӑн ӑш ҫунать, кичем пусать. Тӑван килне кӗчӗ Сайите — ҫӗлен йӑвине кӗнӗ пек...

Ашшӗ кӑткӑ упи пек пуҫне чикнӗ те уткаласа ҫӳрет. Пыр ҫыххине салтса янӑ, кӗпе исӗвӗ хушшипе ҫӑмлӑ кӑкӑрӗ курӑнать.

Куҫӗ сӳннӗ, пушаннӑ, куҫ айӗ усӑнса тӑрать. Хӑй лӗрке сурать, анас пуснипе аптрать.

Кунӗн-ҫӗрӗн чашлатать вӑл мунча чулӗ пек. Ҫывӑрнӑ чухне те, чӗрӗп пек, хӑй тӗллӗн лӑкӑртатса выртать, тути ӑшӑнса курмасть. Хӗрне качча парас пиркиех ӗмӗшлет ун пуҫӗ. Унӑн «шӑмӑ картинче» Сайитешӗн пӗр ӑшӑ сӑмах ҫӗр каҫмарӗ. Сӑмаххипе касать — чӗренех тивертет.

— Кĕçĕн пуçна чарайман, мăн пуçа хĕн килчĕ... Çамрăкран пуçтарнă ăсу çитмесен, ваттин ăсĕ анлă, ăна итлемеллеччĕ. Чап йăт ĕнтĕ халь... Сахал мар ăшу писĕха... Пăха пĕлмен çавра куç — иккĕшĕ те хĕп-хĕрлĕ.

— Ай, аттеçĕм-ырăçăм! Эп йăлăнса ыйтнă чух мана хавас пулмарăн. Ăс ыйтрăм та — хĕн патăн. Санра кăмăл курмарăм. Çилленнĕ çиллӳ иртиччен, хаярру çаврăниччен — хĕр ĕмĕрĕ те иртсе кайрĕ. Ман халь те чун ăшăнса çитмест.

— Тăрру шăтăк сан! Тăпă пусман! Ман сăмаха ăшна хыв. Пĕр пуçа виçĕ пуç пулăшни кирлĕ. Ырă çын çинче ят тăмасть, тет... Каян хыççăн каяс çук, вилен хыççăн вилес çук... Евленĕ ĕнтĕ — йытă вăл килте вилмест. Ăна ĕнтĕ хальччен леш тĕнче çĕрне пуç туса хучĕç-тĕр. Хăй мана пĕтерме антаса тăратчĕ-ха... Ан хуйхăр. Йыш тухĕ... Чулхулари капитан ачуна та пăхса тăмăп, тет.

— Ан аппалан, атте, пĕкĕрен турта авасшăн. Çынлăхран тухнă, хур тивнĕ пуçăма тек шурă лармĕ. Ăна кайса та — телейне хирĕç шӳтти çеç пулĕ.

— Ан ăссăрлан... Итле мана. Туй хускатар. Укçа нумай памасан та, пиллĕх парăп...

— Сăва-тăран ĕнӳ мар, типсе-ĕнсе юлас çук тесе, эс мана ăсатасшăнах... Пиллĕхне те патăн... Пиллĕхӳ çитеймесен çеç ырă курăп, атте.

— Эс ху, ватăран иртсе, хăвăн çине пиллĕх вырăнне ылхан кӳтĕн.

— Ах, атте, ӳпки-сапки нумай ман сан çинче. Евлен пуçне те эс ятăн. Мана та эсех пĕтеретĕн... Юлтăм ăрша тивнĕ хăртăк пек.

— Юрĕ! Хăв ăсна ху тыт. Эп каласа ăса кĕмерĕн. Пурăн, хăвăн пуçу çине шанатăн пулсан!

— Ах, атте, елеме тымарĕ çинĕ пуль эс — юну шĕвелнĕ... Чĕрӳ кăлт та тумасть-çке çын хуйхишĕн.

Пӳртрен тухрĕ Сайите... Ниçта кайса кĕре пĕлмерĕ. Тăчĕ сивле пусарнă пек. Чĕри юнăхать. Куллен-кунах çапла йывăр сăмах выртать чĕре çумне.

Юлнă кăмăла тултарма чĕре çумĕнчи çын умра çук. Аякри вут ăшшипе алла ăшăтаймăн.

Евлен... Ытарайми ылтăнăм...

Пăхса та курăнмасть-çке, кăшкăрса та илтмест. Калаçассисем нумайччĕ — курассисем пĕтрĕç.

Пуçĕ епле çӳрет-ши?

Мăнтарăн самани йывăрри! Мĕн чул маттур йĕкĕтсене, сайра сар ачасене сайрататать.

...Хӗвел анать. Пӗлӗт хӗрри макӑрса хӗрелнӗ куҫ пек юнӑхнӑ.

Пуҫ тӑрринче ҫӑхан кар та кар! карлатать.

Такам йытти, хулӑн сасӑллӑскер, чуна ҫуйхӑнтарса ярса, хатарлӑ шик ӳкермелле ӳркевлӗн, ерипе, тӗлӗрсе вӗрет...

Каҫ выртсан, тӗрлӗ тискер тӗлӗк пусмӑрлать Сайитене. Ыйхӑ ҫавӑрниччченех вӑратать ӑна вӑрӑм шухӑш... Амӑш савкипе ачи ҫеҫ канлӗ ҫывӑрать.

ҪУРКУННЕ

Хӗл алли-ури, шӑмми-шакки хуҫӑлнӑ.

Кӑнтӑртан килсе ҫитнӗ ҫил, хаваслӑхне пытараймасӑр, кама тӗл пулнӑ, пурнӗ те чуптӑвать, пуринне те вӑл тутисене кушӑрхантарса янӑ, сӑнӗсене хуратса янӑ.

Шар сивӗпе пуҫланнӑ ир хаярлӑхӗ кӑнтӑрла тӗлнелле хуҫӑлчӗ. Вичкӗн хура ҫилсем хулӑн ӳкнӗ юра ҫисе ҫӳхетрӗҫ. Сӑрт-ту хысаккисем шӑртламас чӗрчун ҫурӑмӗ пек. Кӑшӑл-л тутарса шӑрчӗсем тӑкӑнаҫҫӗ.

Улӑх леш енчи хӗрлӗ хӑва вуллисем хӗрелчӗҫ, ӑвӑс вуллисем симӗсленсе кайрӗҫ. Мӑн шыв ҫинчи пӑр кӑвакарчӗ. Юр айне шыв килчӗ.

Хӗвел пӑхрӗ те, ҫурт-йӗр арки-ҫунаттисенчен малтанхи тумламсем таса юр ҫине тумласа илемлӗ чӗнтӗр пек тӗрӗ ӳкерсе хӑварчӗҫ. Пӑр хӳрешкисем сӗтлӗ ӗне ҫилли пек тумласа лараҫҫӗ. Тин ҫуралнӑ ҫуркунне, пӗчӗк ача пек, тумла ӗмет вӗсем тӑрӑх. Хӗвел йӑмӑхтарать, куҫ тула юлать.

Юр лашт та лашт анса пырать, хӗвелпе кӗшлесе ирӗлет, ҫилпе иксӗлет. Ҫурхи ҫулсем ҫӳлелле юлаҫҫӗ. Ирсерен ут пакӑлчисене сан ҫиет, ҫӑпатана шӑн касать.

Тӑрнасем питӗ ҫӳлтен — юр ҫинченех иртрӗҫ: кӗр вӑрӑм килессе, пӑрҫа вӑйлӑ пуласса систерчӗҫ.

Кӑҫал малтанхи хут тӑри юрри илтнӗ ҫынсем юр ҫинче выртса йӑваланаҫҫӗ: шӑмшак ҫӑмӑл пултӑр, теҫҫӗ.

Тапхӑр-тапхӑр асамлӑ шур шӑна-пӑван вӗҫет тейӗн — юр ҫӑвать, ҫӗре выртса вӑйкӑнать те шыва ҫаврӑнать.

Кӗҫех вӑрман шывӗ те анчӗ. Сиксе, ывтӑнса юхать шыв. Ҫырмара пӑрлӑ сан йӗшкет. Вӑрманта лаша чӗрни пек йӗс тӗслӗн йӑлтӑртатакан ӑвӑс тымарӗ-кучӗсем палӑрса тухрӗҫ. Улӑхсем ейӗве кайрӗҫ.

Ҫул ҫинче ӗнтӗ пылчӑк нимӗрленет.

Ирсерен шурă карав пек тăм ӳкет. Кăчăрах шăнтать.

Вĕтĕ тĕтре пек шăши çумăрĕ вĕскесе иртрĕ те — çеремсем пĕр кунтах ешĕлленчĕç. Лĕпĕш чĕрĕлчĕ. Аслати авăтрĕ — йывăççене сĕткен кĕчĕ.

Анасем çавах тачка-ха, çăтать. Çынсем ака тырри хатĕрлеççĕ. Чи чухăнни те ака айнех акасшăн мар — çĕр пиçессе кĕтеççĕ.

Юман çулçисем вакша хăлхи пек пулчĕç те, тĕтре анчĕ те — шăпчăкран тĕксĕмрех, хĕрлĕрех мăйпăрансем, юпасем ăшне хĕлĕхрен йăва çавăрнă май, пи-пи-пи-пи! мăй-мăй-мăй-мăй! тесе юрласа ячĕç. Вара ватăсем: акана тухма, тырă акма юрать, терĕç.

Çурхи ăшă çумăрпа çĕр ларсан, акана тухрĕç. Ватăсем хăйсем пĕлнĕ таран çĕр йышĕнчен, перекет амăшĕнчен, уй сыхчинчен — хунаççи, хумхаççи, тăваççи таранах асăнса — пулăшу ыйтрĕç.

«Эй, нумай ырлăхлă çĕр йышĕ, эй, çĕр кăкри!

Ана вăйне пар. Утне-тумне кӳлсен, тĕрен хăпартма парăсăнччĕ. Ака тăвасси хăмла пек çăмăл пултăр.

Эй, перекет амăш! Ывăçланă чух ывăç перекетне, тырă акнă чух кунтăк перекетне пар».

Уйсенче ăçта пăхнă унта пĕрмечеллĕ сăхман пек касăсем тăсăлса выртрĕç. Чĕрĕ çĕрлисен — кассисем суха хыççăн чĕн пек татăлмасăр явăнса пыраççĕ, çутăлса выртаççĕ.

Парлак вырттаракан анасем çеçенленеççĕ. Тавралăха ешĕл пусрĕ. Йĕри-таврах ешерлĕх. Хăпарать калча, кăвакарать уçăм.

Ака хыççăн чашлама та тумак çумăрсем куçлантарса çăва пуçларĕç. Касă-касă килет çăра пĕлĕт. Ут-куç пек хăмпăланать, кăпăкланать ăшă çумăр шывĕ. Урамра кăптăланнă чăхсем те çумăр çинчех çатлаттарса утса çӳреççĕ.

Савăнтарать кăçал акăм айĕ.

Вăрман тумланчĕ, çăралчĕ. Хĕлле каснă тункатасем — тымарĕсене сĕткен кĕнипе — кĕсел тирĕкĕсем пек елтĕресе лараççĕ. Курак йăвисем йăмрасем çинче палăрми пулчĕç.

Çĕмĕрт çеçке çурчĕ шап-шурă — çăвăр уйăрнă хурт çемйи, шурă пыл хурчĕсем, пырса ларнă, тейĕн.

Ăмăртланса юрлаççĕ кайăксем.

Кĕçех ыраш авăрланчĕ, тăпсан ларчĕ, хытрĕ, сыпăкĕ сарăлчĕ.

Çуркунне халăх ĕмĕчĕ те чечекре. Ырă çанталăка,

тикĕс шăтнă тыр-пула курса савăнать вăл, мала ĕмĕт тытать. Ыррине çеç ыйтать вăл пӳлĕхрен.

Пӳлĕхĕ вара пурнăç урапине хăйĕн йĕрĕпех кустарать.

Вăхăтсăр ӳкнĕ Виççĕмĕш Петĕр патшаран çыру пур, тет... Темле çынсем вăл çырăва ялсем тăрăх вуласа парса çӳреççĕ, тет. Ейĕк патĕнче икĕ çул çĕмĕрсе çӳренĕ Петĕр патша халĕ кунталла çывхарать, тет. Пуп таврашсене пурне те вĕлерме, пурлăхне туртса илме хушнă, тет. Хресченсене алманчăран хăтарма тата нумай çăмăллăхсем пама пулнă, тет.

Тапранать хуллен вăрах тӳсĕмлĕ халăх... Унта та кунта вут ама сиксе тухать... Çапах та Пакăшра лăпкă-ха.

Вырăс Сурăм пасарĕнче ĕнер пĕр касак çĕлĕк çавăрттарнă; «патша» указне вуланă.

— Пухăнăр, эртеллешĕр! Алă шăнăрне хытарăр. Çĕкленĕр пупсене, улпутсене хирĕç! Хамăрăн патша çывхарать...

Çапла каланă, тет. Калаканне — Евлене урпанлаççĕ.

Пуп халăх умĕнче «Петĕр патша» указне çунтарса янă.

— Вăл суя патша,— тенĕ вăл.— Вĕсем каскăн-пăлхавçăсем. Вĕсене Пăкача хурах ертсе пырать. Мĕн чул алама ĕç туса вараламарĕç ĕнтĕ вĕсем çĕре. Çĕре ирсĕрлекене хăй халăхĕ хушшинчен, хăй çĕрĕ çинчен пĕтермелле. Çĕр усал ĕçпе тулса ан ирсĕрлентĕр...

Шăваççĕ кунсем. Иртеççĕ салтаксем, патша отрячĕсем. Ялсенче ик-виç çынтан пĕрнех вăрттăн хыпар çитернĕ: ют çын килсе кĕрес пулсан, тӳрех тытса памалла. Чăваш Сурăм пупĕ хăш ялтан кама тытмаллине чиркӳре амвон çинчен каланă. Чи хăрушши — Пакăшри Евлен, ăна тытсан, пысăк сăвап пулать, турă парни тивет.

Урăм-сурăм вăхăтсем.

Пакăш çыннисен пурнăçĕ херĕпрен херĕпе кайрĕ. Çĕр ĕшеннĕрен тырри пулмасть: çĕр шăмачĕ тума — парлак выртармалли ана çук. Тыррин тухăçĕ мар, çăтлăхĕ çеç. Выльăхĕ юмăç пăхать. Чавăхса çитрĕç.

Ик эрне çумăр пулмарĕ.

Тăпра çумăртан илсе юлнă лăмĕ те пĕтсе пырать.

— Эккей, çанталăк!— теççĕ ним тума аптраса ватăсем. Кам вăй çитĕш — вăрманта, хăвăл уçса, хурт çăллинчен пыл илеççĕ. Хăшĕсем, вăрă-хурахран хăраса, выльăх-чĕрлĕхне пĕр чĕрне юлми сутнă.

Пирĕн пӳрт хыçĕнче мăн шыв çи —
Полкăн-полкăн пулă иртет,
Çавна пăхса кун иртет.
Пирĕн ял хыçĕнче мăн çул çи —
Полкăн-полкăн çар иртет,
Çавна пăхса кун иртет...—

çапла юрлаççĕ Пакăшпа Панкли ялĕсенче.

Ĕнер ял урлă акăш вĕçсе каçса кайнă-мĕн, ку — ял çунасса, теççĕ.

Кĕçех ак виççĕмĕп Петĕр патша — Пăкача — Чăваша çывхарни çинчен сас-хура сарăлчĕ.

Пăкача хыпарĕ Пакăша, ĕне-сурăх кĕтĕвĕ пек, каç енне тĕрлетсе пырса кĕчĕ те килсерен саланчĕ. Шухăшсăр çынна та шухăша ячĕ, шухăшланине куç хуптармарĕ. Пĕриншĕн вăл пулчĕ — хура хыпар, теприншĕн пулчĕ — ĕмĕр кĕтни.

КĔТНĔ ТĔЛПУЛУ

Шăнкăрч пек вĕçсе иртрĕç кунсем, çăмарта пек кусса иртрĕ пĕр çул...

Евлен, хăйĕн çулçи тăкăннă йывăç пекех йышĕ сайралнă отрядне Сурăм вăрманне хăварса, хăй тăван ялне кайса килме пулчĕ. Ялне кунтан вунă пĕчĕк çухрăм çеç.

Йĕкĕт хурлăхан пек хура утне хуллен хăй еккипе уттарса ячĕ. Малтан çăмарта пек чăмăр пулнă ут вăрçăра çӳресе туртăннă, ури пакăлчакĕ те çемçелнĕ.

Пĕр пĕчĕк касă, пĕлĕтсĕрех тенĕ пек, хĕвеллĕ çумăр çуса иртрĕ. Аякра пурçăн тилхепе пек илемлĕ лутра та лапчашка карăннă асамат кĕперри лапамалла анчĕ.

Евлен, тăшман экемечĕ çине пырса тăрăнасран сыхлапса, пуç чикми чăтлăха кĕчĕ. Кунта куç хăйиччен тĕттĕм. Вăрманĕ тискер кăмăллă. Хушшăн-хушшăн хуртпуççи курăкĕ çеç, ут ури айне лексе, çартлатса çурăлать. Евлен çулне тĕл-тĕл улăм ури пек çапă куписем, кăмăрлăхсем пӳле-пӳле хучĕç. Курăксем çинче елтресе тăракан «упа сĕлекипе» ут ури исленнĕ, чĕрни сарăлнă пек, тăп! тăп! пусать ут.

Кĕкрем çырма умĕнче Евлен ута сĕвек çĕрелле çавăрчĕ. Ут тăвайккинчен аннă чух, урине тупăт хӳнĕ пек, чĕрне вĕççĕн утрĕ.

Вăрмантан тухса мăн çул çине ӳксен, лаша чăмăртанса юртса вĕçтерчĕ. Çил ачисем хăлхаран çухăрсашăхăрса çеç пычĕç. Çул тусанĕ — çăм сарнă пек çемçе

те ут пусмассерен пашт! ҫĕкленсе каять, хыҫа лупас пек-лупас пек тусан юлать, кăкăра ларать.

Ку тӳпем вырăнтан йĕри-тавралла куҫ витми инҫет уҫăлать — вăтăр-хĕрĕх ҫухрăм таран. Ҫавăнпа Евлен хир каҫса Куканар вăрманĕ хĕрне ҫитиех утне хăваларĕ, Куканар хĕрне ҫитсен, ҫуралнă ҫĕршыв илемлĕхĕпе киленсе, тĕнчере хăрушлăх пурри ҫинчен те манса кайрĕ.

Умра сăрăннă сĕлĕ, калакланнă ясмăк, юн тымарланнă урпа; сукмака хăрах енчен тайăлса ыраш витсе пырать. Путенесем улт-ҫич хут пĕр чарăнмасăр авăтаççĕ.

Шăп. Пысăк ҫунаттисене сайран пăçлап! пăçлап! тутарса, чавка майлă кăрльăк, кун каҫа пулă тытса ĕшенпĕскер, каялла таврăнать.

Евлен лашине ҫеремлĕ ҫул ҫинчен вăрман хĕррине пăрчĕ те, лаши ҫинченех кăшт ҫĕкленсе темиҫе сапака ҫĕмĕрт татса илчĕ. Тăван ял патне, вăрман ăшшĕн тухса, улăх тăрăх ҫывхарма шутларĕ.

Тăван вăрманта мĕн хавас!

Юман тăрринчен пуса йĕкелсем тăкăнаççĕ. Ҫил кашланă пекех хурт сĕрлет.

Е тĕкĕлтура, е пăван, харпăр тĕрлĕн нăйлатса, ут тавра тимĕр карта ҫавăрса каять. Йĕри-таврах чăйлатни те чăрлатни. Ăҫта пăхнă — симĕс, кăвак, хăмăр ҫăмарта хуппи, кайăк каяшĕ ӳксе тулнă.

Уҫă сывлăш, ырă сулхăн пĕтĕм ҫанҫурăма эпеклет.

Йăвинчен ҫĕтерес текен кайăк ҫеҫ, турат ҫинчен турат ҫине сиксе, хăй чĕлхипе тем ятласа ăсатать йĕкĕте.

Евлен чĕринче — хаваслăх. Ҫакăн ҫинех Сайитене тĕл пулас савăнăҫ ĕстенет.

Евлен ҫак юлашки ҫул кĕлеткипе татах сарăлса мăнаҫланнă. Пĕвĕ ҫăтам, хул-ҫурăмĕ — нăк! Ҫич хĕл каҫнă пăши пек.

Тĕттĕмленчĕ.

Евлен учĕ, кăлкан тĕмисене хускатса, улăх тăрăх кустарчĕ.

Сĕвĕш енчен ут ури сассисем илтĕнчĕҫ. Кĕтмен ҫĕртен пăшал сасси кĕрлесе кайрĕ. Евлен лаши хартлатрĕ, таканĕ хăпнă пек, сăкăлтăкласа илчĕ те уксахла пуҫларĕ. Евлен лашине тăвайккинелле хистерĕ. Нумай пулмасть ҫумăр ҫуса иртнипе — тăвайкки йăпăлка. Лаша малти урипе хут ҫырать, кайри урипе пичет пусать, пуҫне ухлать, хăпараймасть. Хыҫалтан ĕнтĕ кăшкăрашнисем илтĕне пуҫларĕҫ. Евлен ӳкнĕ лаша ҫинчен хăвăрт

сиксе анчĕ те, ут айне хĕсĕннĕ аллине туртса кăларса, лутра вĕтлĕхе чăмрĕ...

Тепĕр самантран вăл вĕтлĕх витĕр ял патнелле çывхарчĕ, часах пĕр тăрăх хӳме патĕнче чарăнса тăчĕ.

Ут айне пулнă алă сыппинче ӳт хĕсĕннĕ пулас — юн тымарĕ пăлтлатса тапать, тапхăр-тапхăр пĕçерсе килет.

Евлен пахча карти урлă каçрĕ те, сурăх кĕтĕвĕ пек ӳссе ларнă купăста йăранĕ хушшипе иртсе, хăй пĕлнĕ чӳрече патне çывхарчĕ.

Хăйă çути пур. Пĕр пӳлĕмĕнчен ӳсĕр сасăсем илтĕнеççĕ. Тепĕр пӳлĕмре, сăпка умĕнче, пуçне чиксе... Сайите ларать.

Кантăка тăкăртаттарнине илтсен, вăл пуçне çĕклерĕ те вăраммăн пăхса тăчĕ... Пырса пăхрĕ те шалтах каялла кайрĕ, кăкăрне аллипе ярса илчĕ... Пĕр хушă çапла хытса тăрсан, вăл ерипе тутăр илсе пĕркенчĕ, васкамасăр тулалла тухрĕ...

Вăл çывхарнăçемĕн Евленĕн чĕри кăрттăн-кăрттăн тапрĕ.

— Сайите!— ыталаса илчĕ ăна Евлен.

— Ах, Евлен...

— Сайите...

— Шăпрах эс... Атя, пăрăнар кунтан... Санăн никам куçĕ тĕлне те пулма юрамасть...

— Хамах пĕлетĕп... Атя кăвакал кӳлли патне.

— Ах, мĕнле эс ним хыпарсăр килсе кĕтĕн?..

— Сайите,— ик хулĕнченех ярса илет Сайитене Евлен.— Мана хĕç те витмерĕ. Сан куçусем хĕçрен те çивĕчрех пулчĕç... Куçăма хупсан та — сан мĕлкӳ курăнать. Çĕкле-ха пуçна, курам сана ик куç туличчен...

— Ах, Евленĕм... Эсĕ аса килсен, вăрăм çĕрсем те иртеççĕ ыйхăсăр. Çĕрĕ çĕр талăкăн, кунĕ пин талăкăн туйăнать-çке. Эс çумра пулас пулсан, çын сисмĕччĕ эп йĕнине. Çын сăмахĕпе пуçăм çаврăнать. Хĕрлĕ сăнăма та хуйхă шуратрĕ. Çĕр çинче пĕр эсĕ пурри çеç йывăра та çăмăл туйтарать.

Евлен, утăмсерен тенĕ пек чарăна-чарăна тăрса, Сайитене куçран пăхать, ăна хăй çумне чăмăртать. Сайите те пуçне ун кăкăрĕ çине чиксе хаштăн сывлать. Лăпсăр-р иртсе каять чун ыратăвĕ, лăштах пулать пăшăрханса кӳтнĕ ăш.

Çумăр хыççăн çул кушнă. Унта та кунта çеç, çăпата йĕрри çинче, кĕмĕл укçа пек-укçа пек йăлтăртать çĕр çути.

— Ах, Евлен,— тет Сайите.— Саншăн хатĕрленĕ сăмахăм-ахахăмсем сана курсан таçта çĕтрĕç. Кĕтсе тунсăхларăм.

— Сайите, çĕнĕрен çуралнă пек эп санпа чух... Атя, ларар,— тет Евлен, кăвакал кӳлли хĕрринче.— Сайите, кала — мĕнле хыпарсем пур... Асатте мĕнле пурăнать? Эсĕ качча кайма хатĕрленетĕн, тет имĕш. Мана питĕ вăрçатăн, тет, мар-и?

— Евленĕм... Ĕнтĕ ман кача пӳрне те, вăта пӳрне те кĕскелчĕ... Калакан çăварне картламан. Ют сăмахĕ, хыт сăмах, чĕре çуне шăрататать... Хамран сивĕ илтмесен, ан сивĕнсем ют сăмахĕпе... Çынсем çиеççĕ —илемлĕхрен тухтăр, теççĕ. Çын-çын урлă килет те çын сăмахĕ — чĕрене питĕ çунтарать. Калас тесен, мĕн каламăн, шухăшла пĕлмесĕр каласан... Усал сăмаха таптама эсĕ çук-çке çумра, Евленĕм. Ылтăнпа сăрласан та, сансăр пуçне мана никам та кирлĕ мар.

— Эх... Юнĕсем пăтранса тăраççĕ вĕсен,— тет Евлен.— Анчах улшăнать ку ăш çунтармăш самана. Ав, кур, Сайите, епле ăшăнаççĕ лере улпут килĕсем?!. Унти вут çутисенчен кунти чӳречесем те вĕриленсе пыраççĕ... Ыран-паянах хыпса илет...

Чăн та, аякра пушар çути пур. Тепĕр енчен те çутă чĕлкĕмĕ ялтлатса илет, ылтăн мĕлке пек йăл-йăл-йăл! выляса тăрать. Хушшăн-хушшăн кăнтăр çутинчен те уçă — шевле выляса илет.

Уйăх тĕтре пек витĕр курăнакан çемçе пĕлĕтпе шăлăпать. Пĕлĕтсен, хăйсен хыçĕнчи уйăхпа çуталнăскерсен, кашни йĕрĕ палăрса тухнă. Сайитен сăнĕ-пичĕ те Евлен таврăннă хаваспа çавăн пек шалтан çуталнă та,уншăн кашни туйăм йĕрĕ яр-уççăн палăрса тухнă.

— Евлен,— тет вăл.— Каласа парсам ху çинчен.

— Пĕр пус укçа та тупса таврăнаймарăм, Сайите... Хаяр çапăçу пырать халь... Çак çапăçура эпĕр çĕнтерсен çеç — пирĕн пурте пулĕ... Çĕр те, çурт та... Эсĕ те манпа пулăн, Сайите. Эпĕ — отряд пуçлăхĕ. Пирĕн ыран хамăра хирĕç янă патша çарне Вырăс Сурăмĕнче çавăрса илмелле, вара эпир ыранах кунта çитĕпĕр...

— Вăйна чухласа тытăç, Евлен. Унти пĕр отряда çĕнтерсен те — патша тытăмĕ арканмĕ-ха çав, элле. Вăл пĕтиччен пирĕн виçĕ тимĕр туя та туяланса пĕтĕ... Арăслан ăмăрткайăка тапăннă пек çеç, ерне... Паян тата тепĕр отряд килчĕ Чулхуларан, вăл та сире хирĕ-

çex каять... Пуçлăхĕ пирĕн патра халь... Ача вăранмасан, шĕкĕрччĕ — шырама тухĕç.

— Курасчĕ ман ăна, Сайите...

— Сан сăнарнах ӳкернĕ, Евлен. Паян, ăна курма хăтланса, пуçна çийĕн... Палланă çынсен куçĕ тĕлне пулма та ан ятăрах сана... Ах, Евлен... Кунта çĕнтерсен те, килте тăпланса пурăнаймăн çав... Кил тĕлĕнче çапăçнипех ĕç пулмĕ.

Сайите, Евлен мăйĕнчен уртăнса, пуçне ун кăкри çине чикет.

Кукăрăлса, пĕрĕнсе ӳснĕ хурамасем темле элес-мелес курăнаççĕ. Теме сиссе-ши — тăмана кăшкărать, ухухлатать, хӳхĕлет те ӳхĕрет.

— Сайите... Эс сухан мар-çке — пăхатăн та йĕретĕн.

— Эй, тусăм... Хурланас вăхăтра савăнатпăр-çке. Ăшăм çулăмпах çунать, Евлен. Уйрăласси çурать чĕрене. Эс таврăнмасран чунăм çук. Сана тепре куриччен алри ачам та ар пулĕ. Мĕнле ытарса кăларса ярас сана? Мĕн чунпа уйрăлам? Халăм çук уйрăлма. Вилĕм çулне пыл сапнă, теççĕ... Çавăнпа пуль ху та, ав, ăратлансах тухса каятăн. Ку ĕç — ăнăçмасан — пуç сутти сан.

— Эп услама çӳреместĕп-çке, Сайите...

Вăрманпа сăрт хушшинче лĕртмес пĕлĕтсем чарăнса пĕлĕт аслăкĕ туса хучĕç мăшăр пуçĕ тăрринче. Уйăх çути çаплах пур-ха. Ун айĕнче йывăççем те хăйсен мĕлкисемпе ыталаннă.

— Ав, кур. Уйăхран инçе мар пĕр çăлтăр хытă вылянать,— тет Сайите.— Çын вилессе теççĕ ăна.

— Ман тăшман чĕри çурăласса вăл,— тет Евлен.

— Кала, Евлен, тăкăнас куççуль халь тăкăнтăр, эсĕ манран йăлăхмарăн-и?

— Хĕрлĕ тăпра таран çĕр çунса килсен те, эпĕ санран тăранас çук. Ман хамăн та тĕнче тавра шухăш çаврăнать. Вилес кунăмăра пĕлместпĕр. Пулма пултарĕ — икĕ аллăм хушшине кĕсле карĕç, касмăклĕç... Эс пурĕпĕр кĕт мана...

— Апла ан кала, Евлен...

Чылайччен чĕнмерĕç...

Шурăмпуç хапхи çĕкленичченех чĕнмерĕç...

— Каяс пулать,— тет Евлен, Сайите чĕрçи çинчен пуçне çĕклесе.— Кăнтăрла çӳрессисем кансĕр халь...

— Утпа-и эсĕ?

— Учĕ ман — урара. Çул çинче утсăр юлтăм.

— Апла эп сана хамăранне парса яратăп. Кĕт мана... Эп час киле кайса утланса тухатăп... Атте ман халь пĕр утне хатĕрех тытать — апла-капла пуласран...

— Сайите... Ĕçӳ тухмасан, кураймастпăр-çке?

— Ан пăшăрхан маншăн. Эп самантрах.

...Вăрмантан ĕнтĕ кайăксем çиçкĕнсе туха-туха пăха пуçларĕç. Кăвакал кӳлли хĕррине пĕр мăшăр акăш ӳкрĕ. Малтан çĕре ларчĕç, тĕкĕсене тӳрлеткелерĕç, унтан, çĕп çын пек ярăнса утса, хăмăр çип йĕки пек чаканлă хăмăшсем хыçĕнче пытанчĕç. Кӳлĕ çийĕн, чупса кайнă пек, шыв чăххи вĕçсе иртрĕ.

Йывăçсене çил çĕрĕпех лăсканă, çулçи-тумĕ муталанчăк, вулли ĕшенчĕк.

Евлен те ĕшенчĕк.

Кĕçех хир енчен ут ури сасси илтĕнчĕ. Çичĕ сывлăш çавăриччен тенĕ пек çитсе те тăчĕ Сайите юланутпа.

Улма кăвак, кашкăр тĕслĕрех, хитре те мĕнлетлĕ урхамах ташла тăрать. Ури сакăл — шур турилкке хĕрри пек, чĕрнисем — сар алтăр пек.

— Васка, Евлен... Ман хыççăнах алăк сасси те атте сасси илтĕнсе юлчĕ...

— Пиллĕх пар мана...

— Ах, Евлен... Уйрăласси паян кун иккен... Пирĕн ĕмĕр пĕрле пурăнасси çак пĕр каçа юлчĕ-ши? Еле, курăпăр урăх, еле, çук. Ăш тем ырă мара сисет. Хама хам çав тери мĕскĕнĕн-мĕскĕнĕн туйăнать,—пуçне лăш усрĕ Сайите.

— Эй, чунăм... Мĕн калам сана чуну пусăрăнсан çĕкленме... Чун та шалккă мар саншăн... Çур чунăма çурса парса хăвараттăм.

— Шанатăп сана, Евлен, ăшри чун пек.

— Ан татăлсам, Сайите, ан хуçăлсам. Куçна маншăн ан йĕпет. Ăш вутне куççульпе сӳнтереймĕн. Куççульпе арман тытас çук. Асăмра эс — чунăм тухиччен, тăнăм сӳниччен...

— Хăвна ху уясарах çӳре, Евлен...

Пĕр хӳтлĕхсĕр юлакан Сайите, хăй хуйхине тайпăнса, хупăсăр пулнă çурхах çăмарта пек чĕтренейсе кайрĕ. Евлен мăйĕнчен уртăнса, ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ...

Уйрăлчĕç... Алă илчĕç...

— Васка, Евлен... Ав, ялта шăв-шав...

Евленпе пĕрлех хăмăш ăшĕнчен карăнса пăхакан тăрнасем тринклетсе сывлăша çĕкленчĕç — ăна ăсатма кайрĕç тейĕн.

Çул тăваткалĕнче Евлен кăшт чарăнса тăчĕ те утне малалла çиçкĕнтерчĕ...

Янра юлчĕ вăрман ут ури сассипе.

Ах, Евлен... Телей пĕтнĕ вăхăтра çуралнă-тăр эпир...

Ăша йӳçсе тулнă хурлăха иксĕтме пĕртен-пĕрех курка пур — хурлă юрă... Юрри те юрланмасть хуйхăпа тăвăнса.

ВĂРÇА

...Ирхи вăрман шăплăхне кавал[1] сасси çурса ячĕ. Пурте тăчĕç, утлисем — учĕсене утланчĕç, çураннисем — кам пăшал, ухă, сăнă, кам айпăлта, чут[2], сенĕк çĕклерĕç.

Евлен, кăкăрне сăпарлă[3] тум тăхăннăскер, учĕ çине утланса, отряд умĕн юртса иртрĕ.

Отряд хускалчĕ.

Сала вырăс ялĕ — Вырăс Сурăмĕ шăп...

Ирхи ялта кĕçех пăшал сасси кĕрлесе кайрĕ. Ку — пăлхавçăсене хирĕç янă патша çар отрячĕн хуралĕ хăрушлăх çинчен систерни пулчĕ.

Пӳртсенчен салтаксем сиксе тухрĕç. Пăлхавçăсем кĕтмен çĕртен тапăнни вĕсен сехрисене хăпартрĕ. Вунă салтакăн пĕр качака чухлĕ ăс çук, тенĕ пек — хăшĕсем ут утланса, теприсем çуранах тарма пикенчĕç.

Кĕçех сенĕксем, хĕçсем, айпăлтасем те ĕçе кайрĕç. Пĕр самантрах патша çар отрячĕн пысăк мар ушкăнĕ хирĕлсе илчĕ. Сакăр-тăхăр утлă салтак çеç тарса хăтăлчĕç.

Çапăçăвăн малалли ĕçне ял халăхĕ хăех тăрларĕ. Икĕ пупа, пĕр тияккăна, тепĕр тиечука çакрĕç. Эрех лавккине çĕмĕрчĕç. Вут ялкăшма тытăнчĕ... Часах унта та кунта ӳсĕрĕлнĕ пăлхавçăсем кăшкăрашни илтĕне пуçларĕ. Вилнисене пуçтарса тирпейлеме те халăх ерçмерĕ.

Евлен, хăйĕн учĕпе пĕр кил патĕнчен тепĕр кил патне çӳресе, халăха малалла кайма йыхăрчĕ. Халăхĕ кил таврашĕнчен аякка уйрăласшăн мар. Отряд çыннисенчен те хăшĕсем çак ялтан пулнипе — кунтах юлчĕç.

Кăнтăрла тĕлне тин Евлен отрячĕ Чăваш Сурăмĕ енне çул тытрĕ.

---

[1] Кавал—çар шăхличĕ.
[2] Чут — урлă пуртă.
[3] Сапар — кольчуга.

Отряд пырса кĕрсенех Чăваш Сурăмĕнче халăх çĕкленчĕ. Тапăнмалли вĕсен чиркӳпе пуп çурчĕсем те çил арманĕпе Етĕрне купцин шыв арманĕ пулчĕç. Пĕр пупа, икĕ тияккăна, тиечукпа пономаре, унтан карета çинче ларса тарма тухнă таçти улпута вĕлерсе арман пĕвине пăрахрĕç. Халăх армантан тырă, пуп таврашĕсен килĕсенчен япаласем сĕтĕрме тапратрĕ.

Ваç-кăнтăрли тĕлне Евлен хăйĕн тăван ялĕ енне хускалма хатĕрленсе çитнĕччĕ кăна — Йӳçкасси енчен Чăваш Сурăмне пĕр пысăк мар тупăллă отряд çывхарни курăнчĕ. Пăлханнă халăх, хуркайăк йышне хурчка арпаштарнă пекех, сапаланса кайрĕ. Евлен отрячĕ çеç хастаррăн çапăçрĕ.

Шилесе, шăхăрса, йăмса вĕçрĕç ухă йĕпписем, пăшал сассисем кĕрлерĕç. Тискер кайăка ĕрленĕ пек хăваларĕç патша çарĕн салтакĕсем пăлхавçăсене. Ӳксе пулнă тырăсем таптанса пĕтрĕç.

Тăкăнчĕ халăх... Тĕшĕрчĕ яла вут. Куштансем салтаксене хăйсен курайман кӳршисем çине уçкăртрĕç, тыта-тыта пачĕç.

Выртса юлчĕ вăрçă вăрçнă çĕре пăшал, сенĕк, чут, хресчен виллисем... Юн шăршипе шуйнă утсем, кайăклансах кайса, хартлата-хартлата тарчĕç çынсенчен.

Ĕшенчĕ кун... Ĕшенчĕ ял... Чиркӳ умĕнче хĕненипе сĕлтен кайнă çынсем ах-ахлатса йынăшса, юн юхтарса выртрĕç. Çул çинче урапа тукăнĕ йĕррисенчи тусан юнпа çăрăлса чусталанчĕ.

Ваттисем çеç, тухăç еннелле пăхса, этем ăнланмалла пĕрер сăмах çавăрса калама пултарчĕç: «Эй, хурçă антаракан турă, каçар таса çĕрте вăрçнине, канăçлăха йышăн мĕскĕнӳсене».

...Каç. Юман.

Çĕрлехи сулхăнпа шăпса халтранă çынсем унта та кунта кăвайтсем умне пухăннă. Çатма çинчи кăвăрчă пек çемçе те тикĕс çатăртатса, çу пек ирĕлсе çунать хурăн хуппи.

Пĕчĕк шăнкăравсем — тункăрсем сасă панă пек шăнкăртатса çунать тепĕр тĕлте тип вутă. Салма пек-салма пек вакланать кăвар, юрласа шăранать.

Хĕрлĕ така пашкаса выртнă пек шĕлленсе сывласа выртать виççĕмĕш кăвайт.

Ку вырăна Евлен отрячĕ хăйĕн станĕ турĕ.

Пăлхавçăсем сăмах-юмах çаптараççĕ, ханлăх тытăмĕчченхи ырă пурнăçсем çинчен халап яраççĕ. Асли аслине кура, кĕçĕнни кĕçĕннине кура ларнă. Хурал çеç тек-текех йывăç çине кутекленсе хăпарса йĕри-тавралла пăхать. Тата тĕмĕсем хушшинче пĕр аманнă казак йынăшса выртать. Вăл йынăшмассерен кăвайт умĕнчисен ăшчикĕсем хускалаççĕ. Казакăн — аманман çĕрĕ те юлман темелле.

— Усăллах пулĕ-ши ку ăнкайсăр ĕç пирĕн? — теççĕ вăтăраххисем, чĕлĕмĕсене лăпăртаттарса.

Вĕсем отряд пуçне — Евлене кĕтеççĕ. Ăна темшĕн Пăкача хăй патне чĕнтернĕ.

Çур çĕр иртсен, Евлен ялсене халăха ура çине тăратма янă çынсенчен пĕри, Сартан, вăтам çулсенчи тĕреклĕ çын, каялла таврăнчĕ.

— Ну, мĕнпе килтĕн? — тапăнчĕç ăна.

— Йытă сăмси çинче, — тет Сартан. — Очăкассинче пирĕн ним тумалли те юлман. Пупĕсене çакса пĕтернĕ, эрехне ĕçсе янă. Мана Евлен Шетмĕпуçне кайса халăха çĕклеме хушрĕ. Мĕн сĕтĕрĕнсе çӳретĕп эпĕ унта...

— Сысна кăнтăрли эс апла...

— Яту хăвăн пикре çӳрет.

— Евлен килсен, алли ĕçленине çийĕ çĕклĕ. Санрап — мăкланнă чултан — вăл пăчăртаса кĕл тăвать.

— Тен, хăйĕнчен те хальччен йывăç кукăль турĕç пуль-ха, — тет Сартан. — Тивĕшрен те çар килмелле терĕ... Мĕн тахăш ял çыннисемшĕн хăрт çĕклесе çӳремелле ман? Хамăр ялта çĕмĕрнĕ, çитет... Малалла ыттисем хăйсем туччăр.

— Чăн та, мĕн çур талăк вăрман суса ларатпăр кунта? Йытă та вĕре пуçларĕ ман.

— Апат ырлăхран никам та ашăхаймарĕ-ха кунта.

— Килелле уттарар...

Çынсем хăйсем сисмесĕрех пĕр шухăша ӳкеççĕ...

Кĕçех çуллахи хĕвелтухăç енĕ кăшт кăвакарма тытăнчĕ, хĕллехи хĕвелтухăç енчен те шуçăм пек вут çути çĕкленчĕ.

Пăлхавçăсем, виçшерĕн-тăватшарăн пуçтарăнса, килĕсене салана пуçларĕç...

...Çак вăхăтра Пугачев станĕнчен тухнă Евленпе унăн икĕ юлташĕ — Сатлай ертсе пыракан отряда тĕл пулма тесе — Çатрана çити кайрĕç те, Сатлай отрядне çĕ-

мӗрсе тăкнине пӗлнӗ хыççăн, çуталиччен хăйсен станне çитес тесе, лашисене пур вăйран каялла хистерӗç.

Пугачевран Евлен çакăн пек приказ илчӗ.

Пугачев çумӗнчи казаксен отрячӗ станран тухса кирлӗ еннелле хускалса кайиччен ирпе Евленӗн, ытти отрядсемпе пӗрлешсе, Пугачевăн тӗп çарне хирӗç янă патша çар отрячӗсене Вырăс Сурăм çулӗ çинче май килнӗ таран ытларах чарса тăратмалла.

Тул çутăлса килчӗ.

Евлен, Какаç тӗлӗнчен иртсен, ям çулӗ çинче тусан юпаланса тăнине асăрхарӗ. Унта çар сӗмсӗлет. Тата тепӗр лăстăк кайсан, Чăваш Сурăмӗ енчен юланутлă çар курăнса кайрӗ.

Евлен хăйӗн ушкăнӗпе мăн çул çинчен пăрăнса Хурасан çуммипе тӳрех ана урлă çул илчӗ. Унтан хăйăк çул çине ӳкрӗ. Юлташӗсем унран юлмасăр ут-виттӗн пычӗç. Мăн çул çинчи юланутсем вӗсем хыççăн хăвалама пикенчӗç.

Хура çилхеллӗ, кăчкан тӳртлӗ, хурарах сарă ут, çинçе пӳллӗскер, ыттисенчен уйрăлса тӳрӗ çул илчӗ.

Лаши ывтăнса пычӗ Евленӗн. Кӗлте пек хӳри ут тӳрчӗпе тан вӗлкӗшрӗ. Çук çилех, лаша чупнипе пулакан çил, çӗкленсе куçа чӗпӗтрӗ, куç тӗкне туртрӗ.

Хыçран хăвалакан лаша юсталлăскер пулмарӗ, çăрхаланчăкскер, выртса чупать пулин те — часах юлчӗ.

Евлен тырă ăшшӗн килсе кăпăка ӳкнӗ лашине, Сурăм вăрманӗ хӗррине тухсан, тапăрласа чарчӗ те çул пăхма пуçларӗ. Умра пӗчӗк çырма, аялта шыв илӗрсе юхать. Лаша, шыв курсан, шуйма тапратрӗ, сӗтӗрчӗ — вӗриле пуласран Евлен ăна шыв ӗçме ямарӗ.

Ытла хытă килнипе куçран çил, пучах çапса, куç ылмаш кăтартрӗ, хытă тинкерсе пăхса пынăран — куç вăйӗ те чакнă пек. Евлен, хăйсем ăçта çитсе тухнипе ăнкарсан, утне вăрман сукмакӗ çине тытрӗ.

Сывлăш çавăрччăр тесе, учӗсене вӗсем уттарса ячӗç. Евлен пистолетне, хӗçне тӗрӗслерӗ.

Чӗнмесӗрех пычӗç. Кунтан хăйсен отрячӗн станне çитме çухрăмлă-çурăллă çеç, çавăнпа пурин те кăмăлӗсем уçăлчӗç.

Учӗсене вăрман таранрах курăнакан тӗлти сукмакпа уттарчӗç.

Çумăр тăкса ячӗ.

Ут урисем айӗнче атайми курăк чăлханать.

Учӗсен пурин те хырăмӗсем питӗ ӳкнӗ. Вӗсем текех

йĕпе курăка çиесшĕн ăвăнса пычĕç. Çумăр пуçлансан, пĕр вăхăта кайăк сассисем те пачах чарăнчĕç. Сыпăклă-сыпăклă, çинçе те катăрка кашкăр курăкĕсем çеç, хăвăл та хытă, пĕр çулçăсăр пулаканскерсем, пĕр-пĕрин çумне сĕртĕнсе темле кайăк юрланă пек чĕвĕлтетсе чăйăлтатрĕç.

Çири тумтирсем витĕрех йĕпенсе шапарчĕç, тăвăрланчĕç, Евленĕн ĕнер айăпланнă сулахай хулĕ сура пуçларĕ, йывăрланса пычĕ.

Вăрман мăн çулĕ çине тухсан, Евлен учĕ кĕтмен çĕртен хайрĕ те карт! сиксе ÿкрĕ. Вĕсен çумĕпех ăвăс пек сарă ут ĕрĕхсе иртрĕ, тепĕр çул юппинчен пăшаллă юланутçăсем курăнса кайрĕç. Кĕре-çÿрен ут çинче офицер ларать. Пăшал кĕрĕслетрĕ. Евленĕн пĕр юлташĕ çавăнтах ут çинчен тайăла-тайăла пачĕ...

Евлен лаши хăех çул урлă сикрĕ те ĕрĕхсе, туласа кайрĕ. Темиçе юланут ун хыççăн сиктерчĕç. Евлен çаврăнса пăхрĕ те хăйĕн пĕр юлташне те курмарĕ, вăл, пистолетне хыçалалла çавăрса, хăй хыççăнах пыракан улма кăвак ут çинчи юланутçа тĕллерĕ. Персе ярсан, ут, чикеленсе кайса, юланутçа хăй айне кукалесе чикрĕ.

Евленĕн ĕшенчĕк тивнĕ утне алталаннă вăрман çулĕпе тарма çăмăл маррине хыçрисем сисрĕç пулас. Вĕсем çывхарнăçемĕн çывхарчĕç.

Айри ут, чăн та, питĕ хăвăрт лапсăрăнса пычĕ, пăшăхрĕ, пÿлĕнчĕ.

Евленĕн пĕр ĕмĕт çеç: хăвăртрах юман патне отряд станне çитсе ÿкесси...

Акă ĕнтĕ юман та курăнса кайрĕ.

Евлен кĕтмен çĕртен ĕрĕхтерсе тухнине кура, икĕ хуралçă харăсах ун çине пăшалĕсемпе тĕллерĕç. Евлен:
— Ура çине!—тесе кăшкăрса ярсан, хуралçăсем Евлене палласа, пăшалĕсене самантрах çĕрелле усрĕç. Çак вăхăтра пăшал сасси янраса кайрĕ те, пĕр хуралçи тÿрех йăванса кайрĕ.

Отряд çыннисем кĕпĕрех ура çине сике-сике тăчĕç, чупкалама, учĕсем çине утланма, перкелеме тытăнчĕç. Евлене хăваласа килнĕ драгунсем чарăнчĕç те, учĕсене çавăрса, каялла сиктерчĕç.

Евлен отрячĕ самантрах йĕркеленсе тăчĕ. Евлен ăна васкасах Вырăс Сурăм çумĕпе иртекен Мăн çул çине илсе тухрĕ. Отряд кĕçех çул айккинчи шĕшкĕ тĕмисем хушшине пытанса тăчĕ.

Çапăçу малтанах çула тĕрĕслеме тухнă вунă-вуникĕ драгунпа пулса иртрĕ. Отрядри çынсем сисмен хутран сиксе тухрĕç те утлă салтаксем çине тапăнчĕç, лешсем ним туса та ĕлкĕреймерĕç, çапах та икĕ салтак тарса ўкме ĕлкĕрчĕ.

Тепĕр темиçе минутранах çул çинче малтанхинчен ик-виçĕ хут йышлăрах отряд курăнса кайрĕ. Çав вăхăтрах тепĕр çирĕм-çирĕм пилĕк юланут çырма тăрăх пăлхавçăсен отрячĕн хыçнелле ыткăнни курăнчĕ.

Хаяр çапăçу Евлен отрядĕнчисем пăшал персе янинчен пуçланчĕ. Икĕ енчен пĕрер хут харăс персе янă хыççăн нихăшĕ те урăх пăшал авăрлама вăхăт тупаймарĕ. Вара хĕçсем, пуртăсем ĕçе кайрĕç. Тăшманпа тăшман пăтранса хутшăнса кайрĕç, кĕçех кам кама каснине те уйăрса илме пулмарĕ, хĕçсем чăнкăртатни, ут кĕçенни те ахлатни çеç илтĕнсе тăчĕ. Евленĕн отрячĕ сайралсах пычĕ, хăшĕсем çапăçăва те кĕмерĕç, теприсем хĕçсем чăнкăртата пуçласанах пăрахса тарчĕç, ыттисем аманчĕç, вилчĕç. Çул çинчи отряда çĕмĕрсе тăкнă çĕре Евлен хăйĕн çыннисене пĕтĕмпе те пĕр вунпилĕк-çирĕм çын кăна шутласа кăларчĕ.

Хăшĕсем пăшалĕсене тепĕр хут авăрласа та ĕлкĕрейменччĕ — çырма тăрăх хыçа тухнă юланутсем те килсе çитрĕç, çак вăхăтрах çул çинче салтаксен тĕп отрячĕ курăнса кайрĕ.

— Маттян! — терĕ Евлен хăйсен ял çыннине.— Эсĕ паян сывă юлас-тăвас пулсан, итле... Ан пăрахсамччĕ ман Сайитене. Ан пăрахсам ачана. Йывăр вĕсене халь...

Евлен отрячĕ пăшал пере-пере вăрман ăшнелле чакса пычĕ.

Пасăр тухнă юман патне çитерехпе, патша çар салтакĕсем пăшал персе ярсан, Евлен айĕнчи ут сасартăк ĕрĕхсе кайрĕ те вунă-вуникĕ утăм тусанах малти урисем çине тирĕнсе анчĕ.

Евлен, учĕ çинчен хăвăрт сиксе анса, хăйне хăвалакан пилĕк юланутçăран пĕрне пистолечĕпе лайăх тĕллесе персе ячĕ те хĕçне туртса кăларчĕ. Çак самантрах тăвата юланут ун çинех пырса кĕчĕ. Малтан çитсе ĕлкĕрнине Евлен меллĕнех касса ўкерчĕ. Çак самантрах кĕрĕслетнĕ пăшал сассипе пĕрле, сулахай ура туни хытă пĕçерсе кайнине туйрĕ, хăрах чĕркуççи çине кукленсе ларчĕ, вара аллинчи хĕçне хăй йĕри-тавралла мĕн пур вăйĕпе сулкалама тытăнчĕ... Çак вăхăтрах вăл хăй салпăрланса пынине, куçĕ хуралса килнине туйрĕ...

ШУХАШ

Шăнкăр уяр кунсем. Сарă çанталăк. Витĕр-витĕр хĕвел пăхать. Тип шăрăх чĕпĕтет.

Парлакра лапĕ-лапĕпе çырла. Ача-пăча кăмăлне хĕрсе хурăн çырли пиçет. Пиçсе ирĕлсе тăрать çĕр çырли — çĕрĕ палăрми, юн тумласа анас тумла пек.

Сайите, ывăç тупанĕпе картласа, уяра кайнă тӳпенелле пăхать. Пӳрне хушшисем хĕвелпе юнăн-хĕмĕн курăнаççĕ. Тӳпере хĕвеле çĕр çине пăхма пачах чарман, ылтăн пыл карасĕ пек шăтăклă пĕлĕтсем хытса тăнă.

Тип сăмсаран вĕрекен çилпе пусă-хир тăпри шултра тетел пек чĕнтĕрленсе çуркаланнă. Кăрачă анасем типсе шурă кĕл пек пулса тăнă. Ӳсентăран çумăрсăр çуйхăннă. Тырă хĕллисене, ăшă тивсе, шурăхтарнă. Кăлкан шĕленкисем тăкăннă.

Пуç урлă çил-тăвăл пек кашласа чанасем вĕçсе иртеççĕ. Хушăран сарăхнă курăк ăшĕнче çил вăшăрхать, тусана авăсать.

Кунĕ ăршаллă. Аякра сĕрĕм пек тĕтреллĕн янкар çăвать.

Ăшă тивнипе пуç ыратать. Чуна вĕчĕх.

Улăхра парланайса выртакан çаран çинче хурт вылять. Хутра-ситре парлак çиййĕнче хăмăр хĕрхи, кăвакарчăнран кăшт пысăкрахскер, шăши шыраса, тăри пек пĕр вырăнта хытса тăрать те, ним те тупаймасăр, хурлăн ти! ти! ти! ти! тесе вĕçсе каять. Çӳлте, пĕлĕт тӳпинче, ăшĕ хыпнă шаланкă, вĕçĕмсĕр шĕлин! шĕлин! шĕлин! тесе макăрса, çунат тăррисене хытарса, сарăлса, пĕлĕте тĕкĕнсе, вĕçсе çӳрет. Чуна салху ӳкерет.

Çыранта — картлашка пек сукмаксем, нихçан улшăнми ĕмĕрлĕх япаласем пек туйăнса, хыçри тата малти вĕçĕмсĕрлĕх вăхăт пирки шухăша яраççĕ. Умри сукмак таçта пĕлĕт хĕррипех пĕрлешсе каять. Сайите хăй те çав сукмакпа пĕлĕтелле каять пек.

Чăваш Сурăмĕнче чиркӳ чанĕ çаппи илтĕнет. Чанне — кĕвĕллĕ çапаççĕ. Сасси тӳрех таталмасть — кĕслехĕлĕхĕн сасси пек ирĕлейсе каять, чуна çемçен пырса тивет. Пуçра та темĕнле шухăшсем, çак сасса май, тумлам пек чăмăртанса чан çине ӳкеççĕ те хуллен янăраса сӳнеççĕ пек.

Канăç çук кунта та...

Текĕрлĕксем Сайитене, хăйĕн шухăшне кайма парас мар тенĕнех, ашкăнчăк ачасем пек хăлхаранах кăшкăра-кăшкăра иртеççĕ.

Унӑн чунӗнче те ҫак тавралӑх пекех вӗри те пӑчӑх, хурлӑ та канӑҫсӑр. Асра-тӗсре текерлӗк хурлӑн йынӑшса янӑ пек, сӑвӑлми чун ыратӑвӗ капланса килет.

Асаппа тӗнне чун текех нимӗнпе те телей картне лараймӗ. Чун пуринчен те ютшӑнать, тунса ҫитнӗ. Чӗре тӗпне — кӑвак сӑрӑ вӗретсен хуран тӗпне тӑрӑлакан ӗнӗл пек — тӑрӑлса ларчӗ асап.

Ҫамрӑк ӗмӗр чечек пулса тӑкӑнать.

Ука ҫӳҫӗ те тӑкӑнчӗ хуйхӑпа. Шухӑшпа шурнӑ сӑнӗ юлчӗ шур хут пек. Чӗри ҫурта пек шӑранса ҫунать...

Сайитене хирӗҫ ҫырмаран Каҫликка старик тухрӗ. Сайите чарӑнчӗ те, ватӑ ҫынна салам парса, виҫӗ хутчен ура ҫине ҫӑмӑллӑн лӑпчӑна-лӑпчӑна ҫӑкӑнчӗ.

— Кӗҫӗн кинӗм, тавах пул,— терӗ Каҫликка, унтан пуҫне усрӗ те:— Чипер пурӑнатӑн-и, кинӗм?— терӗ.

— Ах, асаттеҫӗм,— терӗ Сайите.— Евлен хыпарӗ сана та пулмарӗ-и?

— Пулмарӗ ҫав, кинӗм.

Каҫликкан каласма та тӑтӑрхи пӗтнӗ. Чух ҫеҫ утать. Хӑй — кӑмака нишне кайнӑ пек ырхан. Куҫӗ ҫеҫ панулми пек пысӑк та—ҫунать, тарӑн.

— Ах, асаттеҫӗм,— терӗ Сайите.— Эсӗ чипер пурӑнатӑн-и, тетӗн... Хурлӑхантан хурлӑхлӑ йывӑҫ ҫук, манран ӑрӑссӑр тӑванӑр ҫук. Эпӗ ӗнтӗ йӑлтах хуйхӑпа кӗлерӗнтӗм. Шанчӑк вӑйӗ иксӗлчӗ. Чун асаплӑхӗ кӳленчӗ. Ӗҫсе-ҫисе те чӗреме пымасть. Ҫамрӑк пуҫ ҫине ӳкнӗ чамасӑр чапӗ — вилӗмрен те хӑрушӑ. Тӑван атте те ӗнтӗ — ячӗ пур та хӑй ҫук маншӑн. Вут пек хыпса илнӗ сас-хурана мӗнпех сӳнтерейӗп? Мӗнле явап тупас, мӗнпе тӳрре тухас? Мӗн тумаллине шухӑшлама кӗҫӗнтен пуҫтарнӑ ӑс та ҫитмест. Чӗрем ҫунса татӑлать. Асапӑм чӑтас чӑтӑмран та ытларах. Тулса ҫитнӗ ӑшӑм-чикӗме уҫса яма никам та ҫук. Ма ҫак куна курмалла тунӑ-ши? Хам ухмахпа пулчӗ-ши? Турӑ хӑй алӑ туртрӗ пуль мана ҫапла нехеке кӗме. Тухман чун, сӳнмен вут эпӗ халь. Йывӑр шухӑш ҫаврӑннипе мӑйӑм хӑех пӑвӑнать. Ах, асаттем, пехил ту хӑвӑн телейсӗр кинне.

Сайите сӑмахне ывҫи ҫинче шӑршламалли табак ӑвса итлесе тӑчӗ Каҫликка.

— Ҫапла, кинӗм,— терӗ вӑл.— Пире телейӗн ятлӑ курки тивмерӗ ҫав — еххӗм! тесен те тыттармӗҫ. Чунӑмӑрсем — чӗн ҫинче, чӗнӗ татӑлсан — вута тӑкӑнать. Тимӗр чӗре кирлӗ ку хуйхӑсене чӑтма, кинӗм. Анчах эс илӗмсӗр шухӑшна хӑвала пуҫӑнтан. Хӑв пуҫу ҫине ху

алă çĕклеме пиле ан ил. Çырлахтăр турă! Эпир пурте ун урлă пиллĕхлĕ... Эпĕ ĕнтĕ шурă турпасран та такăнатăп. Тăнпуçран та иксĕлтĕм. Мана месерле яла мемеле кĕтет. Ура канли çавăнта тупăп. Çынсене йывăрлантаракан çын çеç пулас марччĕ. Сана та пулин турă аратăр, ун ырлăхĕ сан çинче йăлтăртаттăр. Çан çăмăллăхне, пуç сывлăхне, чун канăçлăхне патăр. Мала ĕмĕт тунине ĕмĕте çитертĕр, килес синкере инçе уйăрса ятăр... Евлен вилчех пулсан — чунĕ тутлăхра, канăçлăхра çӳретĕр çеç... Чунĕ те канăçлă çӳремест-тĕр çав, канăçлă вилĕмпе вилменскер, камалсăр та çӳрет-тĕр, хуйхăрать-тĕр: çурта лартса пăхрăм — çурти те уçă çунмасть. Пуçĕ сывă çӳрет пулсан, Упраççи хăвачĕпе управлă тăрса, хĕвел çаврăннă пекех çаврăнĕ, кун таврăннă пекех таврăнĕ... Каймa çул пулчĕ пулсан, килме те çул пултăр. Каламасăр калакан кĕсле çук, касмасăр касакан хĕç çук. Каймаллах пулнă пуль. Халăхшăн хĕç йăтни сăваплă. Турă чипер таврăнмалăхне патăр çеç. Питех ан кулян, кинĕм. Пӳлĕх парни кайăкне пусса çимен эсĕ. Çичĕ ют, ан тив, ăшнечикне кӳлетсе çӳретĕр. Сана та турамăш курки çаврăнса çитĕ-ха. Хуйху-суйху пĕлĕт сирĕлнĕ пекех сирĕлĕ. Пурнăçу та тăпăль-тăпăль пулĕ. Пулăшăмран пулăшма ыйт. Çылăхсăр чун мĕнтен кĕленине вăл хуш курса хапăл илекен... Телейӳ уçăлса пытăр, хĕрĕм. Сăмахăма — çемçе чĕлхе-çăварăмпа та ăшă питпе калатăп.

Эй, нумай ырлăхлă, вăрах тӳсĕмлĕ Тăхтаççи! Пире хура куççульпе макăртакансене хăйсене те куççуль айне ту эсĕ...

Вĕсем уйрăлчĕç.

Сайите чылайччен сăртăнкă çыран хĕрринче пĕчченех ларчĕ. Сăрт айĕнчи пăнтăх шур йӳçет сăра пек. Сăртĕнче тĕл-тĕл юсанман суран майлă хĕрлĕ шывлă çĕр елтресе тăрать, симĕсĕн-кăвакăн-хĕрлĕн сăрхăнать, хăймаланса пуçтарăнать.

Курăк ăшĕнче шăрчăксем чăрăлтаттараççĕ. Вĕсен сассине итлесен-итлесен, таçта, курăк ăшĕнче, куçа курăнман ял пур пек, çав ялта шултăрканă чӳречесенчен çынсем шаккаççĕ пек туйăнать.

Хĕр кăкрине йывăр хуйхă ăвать. Чĕри юнпа çăвăнать.

— Çын пур-и ара кунта?— илтрĕ Сайите хыçран. Ку Наçтак юмăç пулчĕ.

— Эпĕ-ха, Наçтак кинеми,— терĕ Сайите.— Ах, кинеми, эсĕ пĕлтĕр пирĕн хушшăмăра кĕскĕ çинче курса тăнă пек, малалла мĕн пулассине турăпа чаршав витĕр

калаçнă пек пĕлтĕн-çке... Тепре пĕлтерсем-и чăнне... Мĕн калĕ-ши сан юмлаву Евлен пуçĕ пирки... Сан хăвату кӳреймĕ-ши ман асаплă чуна чăштах та пулин лăпланăç?..

Наçтак туйи çине икĕ аллипе таянчĕ те шухăша кайса тăчĕ.

— Э, ăрăссăр хĕрĕм,— тавăрчĕ Наçтак, пуçне лăш усса.— Сан чун патĕнчи çын тĕлĕнчен янракан йывăç сасси илтĕнет... Лаши алси-алсипе утă çимĕ, алси тулли мул хăвармĕ, юн ăшĕнче ишет. Урхамахĕ пек урхамах тата пулĕ, ун хуçи пекки урăх пулмĕ. Икĕ куçĕ тулли ыйхи пур. Куç уçайми куç хупнă. Çиçĕм çиçсе те, аçа çапса та вăратаймĕ. Пичĕ çине пир витмен, пĕвĕ çине çĕр витмен... Çапах купĕ пĕтнĕ ун ĕмрин. Хăй тайăнĕпе асăн ăна.

Çак сăмахсем тамăк алăкĕ çине çырса хунă пек янăрарĕç.

— Ах, Наçтак кинеми, сăмахху йывăр чăтмашкăн... Хам пирки тата мĕн калăн-ши?

— Хăвăн тĕлĕшпе,— терĕ Наçтак.— Çитĕ ютран хăна пур... Сан çарамасу ун умĕнче уçăлмĕ. Сан валами*— хура тăпра, сăваплă пĕркенчĕкӳ — хурăн ешĕлĕ... Малалли куну хăвăн та татăлнă... Лăпланăçна кӳме — çак курăка пама пултарăп,— Наçтак, çерем çинчеп ыйхă курăкĕ татса илсе, ăна хăй ăшĕнче тем каласа вĕрсе-сурса Сайитене тыттарчĕ.—Пуç айне хурса вырт... Тутлă çывăрăн, ырă тĕлĕк курăн...

...Сайитен ăшĕ-чикки хуранти вĕреме кĕнĕ сĕт пек тулса улăхрĕ. Урăх вăл ним те чĕнеймерĕ. Урисем хуçăлчĕç-анчĕç. Сăнĕ кĕл тĕслĕ пулса кайрĕ... Пĕр хускалнă чĕре чăтаймарĕ, кӳтсе, пăвăнса çитрĕ чун...

Ах, Евленĕм... чĕлхе вĕçне çеç тăрса юлтăн-çке. Çухатрăм-çке санăн пуçна... Утмăл çыннăн уттине утамçитем терĕн-ши? Сар ылтăн пек пуçна пĕтерчĕç-им? Хĕвел те сансăр пуçнех тухса-анса тăрать-им? . . . .
. . . .

Ӳстертĕм пĕвĕме — хурлăх урлă ырлăх курас пек. Тивлетреччĕ çамрăк пуç. Хĕр йăрăсне илтĕм те — çу çурта пек пĕвĕм авăнчĕ. Пӳ мĕнле, ĕмĕр çапла килет тени тĕрĕсе килмерĕ.

Çак ĕмĕрте пурте-çке пурнăç тайлăкне лексенех ерипе пĕтес еннелле сулăнтаракан çулпа ăсатма тăрăшаççĕ.

Çамрăклах çын шăлĕ айне хĕсĕнтĕм.

---

* Валами — туй тумĕ.

Вара-васака çапрĕ йӳç тĕтĕм пек сăмах. Ыĭрă çын апачĕ те пулаймарăм, пур ăçтиçук çеç çиет. Хăлха çĕрчĕ. Улшу пулнă пурнăçа тĕнче хурлăхĕ тустарчĕ, самана йывăрĕ лăскарĕ. Пуçа хуйхă пусрĕ, типĕтрĕ. Мăн вăрăм сывлăш кĕскелчĕ. Мĕн çамрăкран тытнă ылтăн ĕмĕтсем суя ахах çеç пулчĕç, мĕн шухăшлани çил çине саланчĕ.

Ай, ырлăхăм! Ылтăн пекех ывтăнать-çке, тăхлан пекех ирĕлет...

Юн çывăрчĕ çамрăк чĕрепе.

Куна пĕлнĕ пулсан, çуралас-хĕленес те мар-мĕн... Амăрткайăк пулас — сарăлса вĕçсе çӳрес, çырла пулас — пиçсе ирĕлсе ларас...

Ĕмĕр тăршшĕпе курас асапа пĕр çулта куртăм. Телейĕм хыпса çунса кайрĕ.

Евлен...

Сайите куçпе хупрĕ те — ун умне Евлен сăнĕ тухса тăчĕ. Куçне уçрĕ — умрах Евлен хăй курăнса кайрĕ... Кăвакал шыва чăмсан, çапла пĕр самантлăха куçа шыв çинче кăвакалĕ хăй пур пек курăнса каять...

«Эй, пӳлĕхçĕ,— пăшăлтатать Сайите хуйхăрса-çунса кушанă тутипе.— Куç умне тепре кӳрсе тăрат савни сăнне! Хăвăн ырлăхлă аллуна тăсса тӳрлет чĕрем суранне, пуçăм хуйхине иксĕт, пусар сикекен чунăма, сир асапăма.

Эй, ăрăссăр аçа-ама ар-хĕрĕ! Мĕн ырлăхшăн çурататăр-ши пĕр телейсĕр пуçа?

Тĕттĕм хăватра çеç-шим ман çамрăк ăш çуннин лăпланăçĕ? Ма кепе алли тивсе вилмен эпĕ?

Мĕн тума яла таврăнас?

Кун çук пурăнма. Пурнăçăм — пăтравлă тĕлĕк пек. Çын хурланă пуçăм тин мухтава тухаймĕ.

Пурăнса тăраннă; хуралса килет кун çути. Чăтăм миххи — тăп-тулли. Усал пусса çĕнтерчĕ пуçăма. Пурнăç майкăчи пуранчĕ. Анчах сывлăш пур-çке кăкăрта...

Çамрăк пуçăм-айванăмçăм!

Пурĕпĕр сыхлаймăп ăна. Кун курмасси паллах. Малти ĕмĕр кĕске... Вунсакăр çул пурăнса йăлăхтарчĕ, сакăрвун çул пурăнасси аякра.

Çухатаям, иçмасса, çак хура кара карнă тĕнчене куçăм умĕнчен. Хамăн çылăхлă пуçăма хамах ярам тамăк хуранне...

Эй, ашшĕсен айăпне ачисем çинче таварăкан! Пĕтерсем мана!..»

...Йывăç тăррисене хускатса, мерчен куçĕсене вылятса та валькăшса вĕçсе килчĕç йăпартан та чăпар ик куккук, ларчĕç çамрăк хурăн тăррине, ярăна-пăрăна авăта пуçларĕç, ютсене аса илсе — пăчăрна-пăчăрна, тĕнче ырлăхĕшĕн — çаврăнса-сиксе, сарăлайса авăтрĕç. Авăтса ывăнсан, кукăлама тапратрĕç: Ку-ку-ку! Кахахак! Ку-ку-ку! Кахахак!.. Ахăрчĕç куккуксем арçури шăллĕсем пек, унтан çывăхри катана вĕçсе кайрĕç. Янраса юлчĕ хурăн вулли...

Сайите сасартăк хăйĕн илемсĕр шухăшĕсенчен чăн тĕнчене таврăнчĕ.

Ах, тем чул тараплансан та, чун тени темĕнле тутлă вырăнтах çав. Пурнăç — тарапçă...

Куккук сассине илте-тăрах çак çĕртен-шывран, кун çутинчен уйрăлмалла-и?

Кĕске ăсăм, айван пуçăм!..

Вăрăм хурлăх курмах çуралнă-тăр!

Çӳлти пиллĕхрен ман аркăм тулли ача пур-çке... Ӳтĕм татăкĕ, чун йăпанчăкĕ...

Эй, пурнăç панă кепе! Палăртас теменччĕ айван-ашанăма... Каçар... Е пĕтер мана — эп çылăхлах пулсан... Çутат ăсăма... Тӳсĕм пар.

...Пĕр авăк çил те çукчĕ. Такамăн авăн йывăççи çеç çил тухасса систерсе шăхăратчĕ те хурсем—çумăра — шывра чăмса лăпăртататчĕç. Тата кăлкан йĕпене сиссе лăпчăннă, кураксем, çанталăк пăсăласса, çиле хирĕç ларса кăшкăраççĕ. Парлакра сăсар тин çуралнă ача пек макăрать.

Аякра кăвакарчĕ, хуралчĕ... Çил килет те, çил каять. Йывăç тăрри кашлать. Уйри кăпчăр хурама тахăш тĕлтен çурăлнă, чĕрпĕленнĕ те пĕчĕк çилпех силленсе кайăк юрланă пек сасă кăларать.

Часах хĕвел тĕлне пĕлĕт туртрĕ. Çумăр тымарланать. Хĕвел пĕлĕт хушшинчен вутлă куç шăрçи пек пăхать, такам куçне хĕссе пăхать, тейĕн.

Çине-çинех курак ушкăнĕ пек кашласа ирте пуçларĕç çил кассисем, курăксене кĕнчеле арланă пек пĕтĕрчĕç, тырăсене туларĕç, çӳçе муташларĕç. Урнă йытăсем пек тулаша пуçларĕç шывра хумсем.

Кăвак тӳпери йăрăмлă, туратлă, юн тымарланнă, çӳхе сар ука пир пек куçман пĕлĕтсем айĕн йĕркесĕр, лапка-лапка пĕлĕт куписем юхаççĕ, шăваççĕ — капан пек-капан пек.

Çанталăк амакланса кайрĕ.

Ял сывăхĕнчи хурăнсем уйран уçлакан хĕрсем пек авăна-авăна илеççĕ. Кĕçех вĕсем çĕре тивесле авăна пуçларĕç. Уй варринчи тĕпĕнченех туратлă уй улмуççи, «çил çăварне» лексе, ухмах этем пек ташлать, ырă ут пек качалать, çăрхалать.

Шăмалать пĕлĕт, йăтăнать.

Уççи-хупписĕр çумăр килет. Аслати тур лашисем кĕçенеççĕ — пĕлĕт тӳпи чĕтрет. Пĕлĕте вĕçĕмсĕр аçа уххи тирĕнет. Мĕн аслати авăтать, мĕн çиçĕм çиçет! Çăвинччĕ ку ушкăн çумăр сырма тăршшипе!

Аслă çумăр тăвăллă килет.

Çанталăк патне çитнĕ йывăр сын пек канăçсăрланать. Шартлаттарса çиçĕм çиçет — аслати çуралать... Пĕлĕт-ту çурăмĕсем çинче çиçĕм — саламат пек урлă-пирлĕ явкаланать.

Пĕччен çӳреме тискер.

Кĕçех пысăк çавраçил, хĕвеле май çаврăнса, иеленсе, туласа кусса кайрĕ. Вуникĕ пар çавраçил-урхамах кӳлнĕ хаяр çумăр, куçпуç курми тусан тусса, кĕмсĕртетсе, вут сирпĕтсе, ял витĕр тухса кайрĕ те — тапратрĕ тăкма. Йĕс тӳме пек татăлса çумăр çăвать, çумăр кантрисем çилпе сыхланаççĕ. Пăра пек, пăра пек пăр çăвать.

Акă çиçĕм — аçа çапас умĕнхи пек—хĕреслĕ çиçрĕ, унтан аялалла чăмрĕ, шатăртатрĕ. Шалкăмлатса, касса, хирĕç çапса, çăва пуçларĕ пăрлă çумăр — çурт çумĕнчи вĕçĕмсĕр тумла пек, юхлăх тăрăх шыв юхнă пек.

Сайите çурт çумне тăрса çумăр çунине пăхса тăчĕ.

Çӳлте вĕлт тăвать, турпас пек сирпĕнет, хĕç пек вылять çиçĕм.

Эй, хăватсем тăвакан! Аçа-çиçĕм! Авăт, аçат, çунтар! Тасат çĕре-шыва усал-тĕселтен. Пулăш хуру тавăрайманнисене! Эсĕ — тасалăхпа аслă!

Манăн та çапла аçа-çиçĕм пулас-мĕн, тăват кĕтеслĕ çанталăка авăтса-çиçсе çӳрес-мĕн!

...Çумăр тăтăшласа çумарĕ. Кĕçех ту пек пĕлĕтсем хушшинче аяккалла кайса пыракан çиçĕм çиçрĕ, илтĕни-илтĕнми аслати авăтрĕ, пĕлĕтсем ирĕлсе, шăранса кайрĕç, çемçелчĕç, тĕтре пек çӳхе юлчĕç. Елпешке хĕвел курăнчĕ, çулăм чĕлхи пек выляса тăчĕ.

Çумăр çĕре йăлтах кĕпĕрлентерчĕ, çула лӳшкентерчĕ, çул тусанĕсене, ана тăприсене юхтарса, сукмак пек те çатма пек çĕр хытти кăларчĕ. Сӳнчĕç хĕмрен хĕрлĕ чечексем, хурăн çулçисем çиçĕмпе шурăхрĕç. Улăхра та

куръка вырттарса шыв юхнă. Лупашкасем çумăр шывĕпе хăймаланса тăраççĕ.

Эй, çĕр! Эсĕ çеç татмастăн халăх шанчăкне — паратăн мĕн ыйтнине, улталамастăн. Сана çеç шанать халăх.

ТĔЛĔК

Лăпсăр-р ыйхă килчĕ... Ыйхăласа вăл часах хăйне хăй курăнми пулчĕ, канлĕ ыйхă пусăртнипе ăшăнса çывăрса кайрĕ. Ăна ик-виç хутлă ыйхă пусрĕ: кăтăш пулнине çăмăлтараххи, çăмăл ыйхине тарăнтараххи витрĕ. Пĕр ыйхинчен тепĕр ыйхи пусăртнă май пĕр тĕлĕкрех кăмăл улшăнса пычĕ. Çав тĕлĕкĕн чăнлăхĕ-тĕлĕклĕхĕ йăлтах пăтранса кайрĕ...

...Акă вăл ирпе вăранса йывăç пахчине тухрĕ.

Улăм витнĕ сарай хыçĕнче пĕр кĕтессинче— çамрăк ăвăслăх. Аялта туратсем çук, çулçăсем çӳлтен аслăк пек витсе хунă. Тепĕр енче — улмуççисем. Кӳршĕ пахчисенче те — йывăçсем. Ялти пӳртсем пĕри те курăнмаççĕ. Уçă еннелле — темĕнле вăрттăн инçет. Вăл халь тĕтре ăшĕнче.

Ăшă... Пĕр варкăшсăр сывлăш ăшши — лĕп; ӳт ăшшипе пĕр танах, çавăнпа ӳт-пӳ тулти сывлăша пачах сисмест. Ху хăвна астуман вăхăтри вар ăшши пек... Çавăнпа та сывлăшĕ те сан хăвăн ӳт пек. Пĕтĕм тĕнче эс ху пек. Эсĕ вара — çав тĕнчен чунĕ.

Сайите пахчара хăйне утма вăй кайнине те, ярса пусма ура çĕклемеллине те туймасăрах çӳрет... Пулă çеç хăйне шывра çапла туять-тĕр: унăн ӳт ăшшипе шыв ăшши пĕр танах-çке.

Сайите йывăç вуллисем хушшинчи тĕтрере асамлă хунар пек çӳрет: ун таврашĕнчи çеç курăнать. Унран темĕнле пайăркасем тухса çăра тĕтрене ун таврa виçтăват утăма каялла чакараççĕ пек.

Хĕвел тĕтре хыçĕнче пачах курăнмасть. Кайăк сассисем пур — хăйсем çук.

Сайите паян йăлтах çак асамлă ир тĕнчинче пăтранса кайнă. Унăн чунĕнче ак-ак тем ырăскер килсе çитессе систерсе кăмăла саракан туйăм...

...Таврара темĕнле хурланăç пур. Сайите чĕринче те тĕлĕкре ӳссе кайнă хурлану, çав тери хаклă та ырă эрлĕк.

Ун таврa Сайите пекех тепĕр çын, çав тери юрата-

канскер, пысăк чуплă-туйăмлăскер, çӳрет пек. Çавăнпа хурлă-мĕн. Тӳррипе, çак таврара йăлтах унăн тунсăхлакан, таçта ырлăх-пиллĕх, телей, юрату патне туртăнакан чунĕ сапаланса кайнă. Вăл асапланать, пăвăнать. Анчах вăл чунĕпе пăвăнни — пĕр асаплану çеç мар, хуйхăрни те тип хуйхăру çеç мар, çыншăн та ăмсануллă, хурлантаракан эрлĕк вăл. Сайите чĕринчи хурлану та пĕтĕмпех ун пирки. Кун пек хурлану Сайите хăй те хитре, вăл та Сайитене тивĕçех хитре пулнинчен, анчах çав çын, Сайите савнă çын, текех çĕр çинче çукран, анчах унăн сăнарĕ Сайитене çав тери юратнипе кунта килнĕрен, анчах Сайитене курăнмасăр, пытанса çӳренĕрен килнĕ пек. Сайите шырать, пăхать — курăнмасть, тупăнмасть çынĕ хăй. Ăна ĕнтĕ тем тери юратсан та, хăй çакăнтах çӳрет пулин те — нихçан та урăх курма çук. Вăл хăй те Сайитене вилесле хытă юратнă, анчах халĕ вăл хăй çук та, унăн сада килнĕ сăнарĕ Сайитене паллямасть, сасăран та Сайитене уйăраймасть. «Эпĕ Сайите»— тесен, вăл кирек кама та «эсех ку» тесе ыталама пултарать, чăн савнине те «эс мар пуль ку» тесе, унран пăрăнса кайма пултарать.

Сайите чĕринче çавăнпа — эрлĕк те хурланăç. Ĕнтĕ вăл хăй сăмах хушма пултарас çуккишĕн, тем каласан та, тем парсан та, темле йăлăнсан та — хирĕç пĕр ăшă сăмах та тавăрма пултарайманнишĕн, вăл халь Сайитене палламаннишĕн, ытти çынсенчен уйăрманнишĕн хурлă. Сайитеуншăн пачах ют, пачах çук, вăл халĕ çак садра Сайите пуррине те пĕлмест. Уншăн ним те хитре мар. Уншăн пĕтĕм хитрелĕх—Евлен кунта чух савнă хĕр... Анчах хĕрне вăл палламасть, мĕншĕн тесен ку — тĕлĕкре. Çавăнпа вăл асапланать. Ак халь кунтах çӳрет вăл Сайитене шыраса — тупаймасть. «Мĕнле эп ăна чĕрĕ чух ăнланман,— тет вăл.— Вăл мана çав тери юратнине пĕлнĕ пулсан, эп каймăттăм та... Анчах ĕнтĕ кая пулчĕ. Мĕнле туйăмпа хурланса кайнă, çав туйăм хытса юлнă ман ăшра ĕмĕрлĕх. Манран ĕнтĕ вăл çак тавралăха çак эрлĕклĕ туйăм сапаланать. Маншăн халь пурте Сайите пек, анчах нихăшĕ те Сайите мар. Мĕншĕн тесен эп чĕрĕ çынсене хăйсене кураймастăп»,— тет çав сасă.

Çапла калать Евлен. Сăмахне вăл хăлхаран мар, ним сасăсăр калать, каламасть те — хăй мĕн калас тенине тӳрех Сайитен чĕри тĕпне хурать. Вăл калас çав сăмахсене Сайите чунĕпе çеç туять.

Сайите ун хыççăн утать. Чĕри хăйĕн сиксе тапать.

Унта тăтăш, сăпран. Йăр-йăр юхать куçран эрленĕç куççулĕ. «Тăхта, Евлен, эпĕ сана юрататăп-çке»,— тет Сайите.

«Кая пулчĕ,— тет Евлен, сасартăк чĕлхеленсе.— Иртнине аса илтерсе, ан вĕрĕлтер тип хуйха. Эпĕ — çук халь. Хам савнă чухнехи пек те курăнма юрамасть ман сана. Манăн хурланчăк сăн çеç юлнă. Эсĕ халĕ çак пахчара хурланăç, эрленĕç туятăн пулсан, ку вăл — эпĕ...»

Сайите утать, утать... Пĕтĕм тавралăхра пылак эрлĕк, таврипех — хурлă кĕвĕ. Кашни япалах çакăнта çав эрлĕ кĕвĕри пĕр найĕ пек... Чуна тытса илет вăл, тĕнчене парăнтарать. Акă, кăмпана кайнă хĕрупраçсем çав кĕвĕ тыткăнне лекнĕ те хăйсем ăçта, мĕн тума кайнине те манса кайнă — кăмпасăрах, ним чĕнмесĕр, хурланса, каялла таврăнаççĕ.

Таçта çӳлте — чиркӳри пек — хурлă юрă çакăнса тăрать. Сăмаххисем илтĕнеççĕ:

Çур тĕнче хуйхи
Çавăрчĕ пуçа.
Вилĕмлĕх ыйхи
Хупрĕ ик куçа.

Урăх яшăсем
Явăçĕç сана.
Хурт-кăпшанкăсем
Сырăнĕç мана.

Курмăп эп текех
Ешерен çаран.
Çитрĕ хĕн-нехек,
Пăврĕ мăйăмран.

Тайăлми пуçа
Чикрĕç çĕр айне.
Ман чамасăр чап
Юлчĕ çĕр çине.

Çут хĕвелпеле
Ăшăнаймăп эп.
Чун савнипеле
Йăпанаймăп эп.

Çапрĕ пĕвĕме
Чĕр тăпра шăрши.
Чапсăр вилĕме
Шăпчăк юрлĕ-ши?..

— Ах, ытла хурлă юрлатăн-çке эс, Евлен.

— Пуçăма тĕрнеç калпак тăхăнтартрĕç çав. Хурлă юрă çеç хурлăхран сыватать,— тет Евлен.— Анчах хурлă юрă та хуйхăма чакараймасть.

Сайите, ун сасси хыççăн утса, ял тулашĕнчи сайра катана пырса кĕрет. Кунта та хĕвел çук-ха. Лăпкă, çилсĕр. Шĕвĕ тĕтре ăшĕнче, йывăç кутне таянса, кулянса, Евлен тăрать. Тăрать вăл, хурланчăкскер, çур турăпа танскер, тек нихçан та таврăнас çукскер... Вăл Сайите еннелле пăхмасăр, ял еннелле çаврăнса, тем шырать куçĕпе, такама кĕтет.

«Эсĕ мана тем пек савсан та, хам тем пек савнă пулсан та — ĕнтĕ çывхараймăпăр,— тет вăл.— Мĕншĕн тесен эп ар-хĕр йăх тĕпĕнчен уйрăлнă. Ан çывхар эс ман пата, унсăр эпĕ йăлтах çухалатăп».

Сайите, Евлен çухаласран хăраса, унран аякра чарăнать те пĕр вырăнтах хытса тăрать. Сайите умĕнче, чăн та, пĕвĕ те пур, сăнĕ те пур — Евлен тăрать, анчах тытма тăрсан — ним те çук... Сăнĕ шурăх. Куçĕ анса, путса ларнă. Куçĕнче уйăх тĕсĕ. Хăй пĕтсе кайнă. Курăнасса та — уймăлăн-уймăлăн курăнать. Çурăмĕ çинче çунат пек хутланса тăрать кĕпи.

— Мĕншĕн пăхрăн? Мерченлĕ мар-çке çунат вĕçĕсем. Ман çунатăмсене çын курма юрамастчĕ,— тет вăл.

Чунах тивет ун сăмаххи.

— Ах, Евленĕм, мĕншĕн сан куçунтан куççуль юхать? Ылтăн витĕр те куççуль тухать-им? Çамрăк кăмăлна кам хуçрĕ? Мĕншĕн ырханлантăн?— тет Сайите кăмăлĕ çав тери хускалнипе.

— Пăлхавçă ячĕ пыл мар çав,— тет Евлен.—Çăвара хыпсан ирĕлмест, пылак тути каламсть. Халăх хуйхипе, вĕри хуйхăпа çунтăм. Пĕчĕкрен кĕнĕ хĕрлĕ сăн пурăннăçем чух пулчĕ. Çӳçĕм çилпе тапранчĕ. Хура-шур шухлăха лăплантарчĕ. Ярăна-пăрăна йĕрсен те, пуçăма тек шурă тивес çук. Усал самани çамрăк пуçа час пĕшкĕртет. Эс маншăн ма кулянан? Ахаху путмĕ, кĕмĕлӳмерченӳ юхмĕ... Ăраскалу çĕртен сĕтĕрĕнет. Эп кайсан, чĕрӳ урăх савни валли пушă юлчĕ.

— Ах, Евлен, санран чăн сăмах илтсе пулмарĕ-çке ман.

— Пĕр писмен çеç чăнлăхпа пурнать çĕр çинче,— тет Евлен.

Сайите пуçне лăстах ярать.

— Мĕн чунпа çапла калатăн эс, Евлен? Астуса илха. Чунăм саврăш эсĕ-çке. Мана асран çухатрăн-им? Пыл виçене лармасан — унта тикĕт хушас çук. Юлнă кăмăлна эп мĕнпе тултарăп-ши? Эсĕ хăвăн арăм пулнинех мала хуратăн пуль-çке. Каçпа пĕрре килсе кайрăп та — сывлăм пек — урăх çук эсĕ,— тет Сайите йăлăнайăлăна.— Саватăп-çке эп сана. Ан тив, эппин, сан хурлă хăну пулам эп паян.

— Санăн савассипе савмассине куçран пăхсах пĕлетĕп. Ан çывхар. Пĕрре кĕвелнĕ турăх сĕт пулмĕ.

Пуç усса тăрать Сайите. Евлен калаçать.

— Пуçăм сывă пулнă пулсан та, ырлăх курĕччĕ-ши вăл? Çын вилет те ăсанать, унта урăх йыш пулать. Вилсен — хуртсем çеç юлташ. Унта çĕртен çĕрех çĕр килмест, кунран кунах кун килмест. Ĕмĕр — каç. Çут çăлтăртан çутă çеçке пур, саркайăкран сарă кайăк пур

тетчĕç... Пӳлĕхçĕ чунăма çăтмахра канăçлă вырăн тупса памарĕ.

— Ах, хур витнĕ тăванăм! Вăрăм кăна сывлăш, йывăр хуйхă типĕтрĕ-çке мана та. Хуйхăпа çӳç кăтри те кунчĕ. Кайăк ларсан турат савăннă пек, ман чун та эс çума ларсан çеç савăнатчĕ. Ман асăмлăх пылтан тутлă. Ёнтĕ калаçас сăмахăм пыра юлать. Эпир калаçнă çĕре юн тумларĕ-çке. Кĕтрĕм сана... Кĕтсе ларах иккен кĕлтен кĕмĕл пуличчен... Эс пĕртен-пĕр çăлтăрччĕ маншăн чăн çутти.

— Çăлтăрĕ санăн ахалех нумай-тăр,— тет Евлен.— Ёçĕн-ха пурнăç ырлăхне. Перчеткепе алă тытĕç, ылтăн çĕрĕ витĕр чуптăвĕç. Чĕрӳ çине алă пусĕç. Тĕлĕкре те курмастăп — асăнмастăн пулмалла эс мана.

— Ах, Евлен... Выртнă вырăну та пушах юлчĕ-им?— тет Сайите.— Эсĕ утнă вырăнта ишлĕ курăк çулаççĕ-çке. Хаяр яту çеç ял çинче... Эпир акă чун час тухмасăр асапланса пурăнатпăр. Тĕнче хуралчĕ-çке маншăн та.

— Çутă тĕнче ĕмĕрлĕх,— тет Евлен.— Çынсем валли çеç вăхăтлăх.

— Мĕнле каçарттару кĕлленем эп сан умра, Евлен? Халĕ те эсĕ Сарри ĕмпӳ хыççăн юлнă парала* шыратăн-и? Ăна тупса ĕмпӳ пуласшăн-и? Ан аппалан, Евлен. Тип юмантан тупан авăнмĕ, сар чашăкран сар çу ирĕлмĕ.

— Ăна Сурăм вăрманĕнчи Сарри варĕнче теççĕ... Çĕнтерӳпеле таврăнсан та, сăкатпа кĕтсе илекен кам пулĕ? Мана хам тăван тенĕ çынсемех иккĕн-виççĕн пĕр пулса пĕтерчĕç. Патмассисем** юмантан çакрĕç. Çавсене пĕтерме çĕлен пулса шуса тухăттăм, калта пулса касса тухăттăм... Çĕленпе калаçма калта чĕлхи кирлĕ çав. Кунта кăрал*** тытнине юратмаççĕ.

Евлен чĕнмест пĕр хушă.

— Татах кала,— тет Сайите.— Сассуна çеç илтем.

— Эсĕ мана саватăнах пулсан, ху килме тăрăш,— тет Евлен.— Çăлтăру антăр.

— Ах, Евлен, çăлтăрăм çӳлте çав — пичетленĕ пулĕ анмасса. Сан чун татăкĕ манпа пурăнать — çĕр çинех сăнчăрларĕ çав вăл асап тӳсме.

— Çитĕ ĕнтĕ калаçса,— тет Евлен.— Шывра кĕмĕл ирĕлмĕ. Чĕлхем çине ларчĕ пыл тути, тутам çине юлчĕ

---

* Парал—булат.
** Патмасси—палач.
*** Кăрал—хĕç-пăшал.

çу тути. Эсĕ кепе — санпа вăрçма юрамасть. Каятăп ĕнтĕ...

— Ах, Евленĕм, эп сана арантан куç умне ӳкертĕм. Канăçланса кай. Куккук-чĕкеç сассипе çӳре. Ăсатам-и хамăр çĕртен-шывран тухса кайиччен? Çӳресем-и час-час манăн савнăçăм пулса ман умра. Юну терĕш çырла пултăр, чуну терĕш лĕпĕш пултăр...

Пăчах çухалчĕ Евлен... Ун хыççăн хурлă юрă янраса юлчĕ таврана.

Ялтан тухрăм, тайăлтăм,
Ялйышăмран уйрăлтăм.
Чикĕрен тухрăм, тайăлтăм —
Çĕртен-шывран уйрăлтăм.
Хĕл те иртĕ, çу та çитĕ —
Эп вĕсене курас çук.
Шăпчăк юрлĕ, куккук автĕ —
Эп вĕсене илтес çук...

Сайите утать пуçне усса. Ак каллех вăл паçăрхи йывăç пахчинех пырса тухрĕ.

Хĕвел тухнă иккен. Çути ун йывăçсем витĕр те янках ӳкет. Йывăççисем йăлтах — мĕлкесĕр...

Авă таçта Евлен урхамахĕ шартлаттарса кĕçенсе ячĕ. Ку вара — юмахри паттăра пичĕ çине вĕри куççуль тумламĕ ӳксе вăратнă пекех пулчĕ... Сайите хăйĕн ыйхинчен инçетрен-инçетрен вăранса килчĕ... Вăрансах кайрĕ... Тăчĕ... Минтерне митевлерĕ.

Ним макăрмасăрах икĕ куçран куççуль тап юхать. Вăрансан вара — пĕтĕм вĕри куççуль анчĕ. Татăлать чĕрипе Сайите, асапланать чунĕпе. Ăш кӳленнĕ. Ку тĕлĕк чун суранне вĕрĕлтерчĕ.

Пуç тулли хуйхăран çунать Сайите чĕри хура çулăмпа.

Вăл алăри ача пек макăрса ячĕ. Вăрах йĕчĕ хурланса. Тĕлĕкре пĕр юха пуçланă куççуль чарса та чарăнмасть, пурĕпĕр вăл чĕрене тулнă хурлăха ирĕлтерсе юхтарса кăлараймасть.

Евленĕм!.. Çын-çын урлă çын курăнать, эс курăнас çук. Чун çитмерĕ-ши сана, эсрел, унсăр?

Эй, пӳлĕхçĕ! Вăрат асăма çак тĕлĕке тепре тĕлленме!

Ку, чăн та, темĕнле асамлă тĕлĕк... Чун тĕлĕкĕ... Чун çĕнĕ туйăм тĕлленни... Вăл, телей пекех, тарать, çухалать. Ăсра шухăшланиех-шим çапла çĕнелсе, улшăнса куç умне тухать?

Сайите, чăн та, сарай хыçне, йывăç пахчине чупса тухрĕ. Чăн та, çанталăкĕ те — çав тĕлĕкриех... Сайите

йӑлтах ҫав тӗлӗкри туйӑмпа халь кунта! Кунта, чӑнах та, Евлен чунӗ ҫӳрет пек.

Сывлӑшӗ те — ҫав тӗлӗкри пекех — ӑшӑ... Ху ӑшӑнса ҫывӑрса кайнӑ чухнехи пек. Пӗр варкӑш, пӗр сулӑм ҫук. Лӗп. Ӳт ӑшшипе тан ӑшӑ... Таврара чуна пӑлхатакан хурлӑ шӑплӑх. Ҫав-ҫавах куҫҫуль юхать Сайите куҫӗнчен. Ача чух хытӑ-хытӑ хурланса макӑрнӑ хыҫҫӑнхи пек — чӗре ҫемҫе эрлӗкпе, хӑйне хӑй хӗрхеннипе тулнӑ.

Сайите утать... Те ҫав тӗлӗкрех ку, те чӑн-чӑнах. Вӑл хӑйӗн паҫӑрхи тӗлӗкӗпе пӗрлех вӑранса кайнӑ та — ҫав тӗлӗке, тӗлӗкри пурнӑҫа йӑлтах илсе тухнӑ чӑн тӗнчене... Тӗлӗкре тупнӑ япалана ҫухатмасӑрах алра тытса вӑранса кайнӑ, япали — эрлӗк, хурлану, Евлен сӑнарӗ. Сайите ӑна тӗлӗкрен чӗрине пытарса илсе тухнӑ... Халь ӗнтӗ вӗсем Сайитерен уйрӑлас ҫук нихҫан та. Ӳлӗм яланах Сайитешӗн тӗнчере ҫакӑн пек хурлӑ, эрлӗклӗ, Евлен сӑнарлӗ сывлӑш ҫеҫ ӗнтӗ. Вӑл ӗмӗрех ҫапла юлӗ; хурланчӑк, ытлашши асаплах та мар, мӗншӗн тесен тулашри ырату — суран та, ҫиес-ӗҫес килни те, хуйхӑ та, асап та — нихӑшӗ те ҫак чӗрери ыратуран вӑйлӑрах пулас ҫук уншӑн.

Тавралӑх Сайитешӗн йӑлтах ҫепӗҫ юрату сывлӑшӗпе тулнӑ.

«Кая пулчӗ,— илтӗнет ӑна Евлен сасси.—Анчах пӗрле пулма пултаратпӑр...»

«Мӗнле майпа?»— тет Сайите.

«Эсӗ ӗнтӗ ӑна хӑвӑн чи юратнӑ япалуна пӑрахмасӑр пӗлеймӗн».

«Мӗн вӑл?»

«Ху чухла».

«Тупайӑпӑр-ши эпир пӗр-пӗрне?»

«Тупатпӑр».

— Тупатпӑр!— тет Сайите сасӑпах.

Сайите чӗрине кинетех кӗтмен шанӑҫ таврӑнать, темӗнле чирлӗ савӑнӑҫ ҫупӑрлать чӗрине... Кӗтмен ҫӗртен чӗрери ырату лӑштах пулать. Ҫав тери аван! Хурланӑҫ та — ку ҫапла кирлӗ пекех.

Май пур! Тахҫантанпах асаплантарнӑ пуҫватмӑшӗн тупсӑмӗ те пур!

Пӗрлех пулатпӑр! Ӗмӗр-ӗмӗр пӗрле... Ӗмӗр-ӗмӗр вара ҫак пахчара, ҫак таврара ҫӳрӗпӗр иккӗн... Ҫӳрӗпӗр сывлӑшра ирӗлсе кайса, ҫын куҫне курӑнмасӑр, анчах ҫын чӗрине кӗрешӳ хавалӗ кӗртсе ҫӳрӗпӗр... Ку хавала хӑй чунӗпе тытма, ӑна чунӗпе тытса шухӑша кайма, те-

лейшĕн çĕкленме пултаракан — вăл пысăк чунлă çын, ĕлĕш çын пулĕ.

«Пыратăп, Евлен... Кĕтсе ил!..— пăшăлтатать Сайите.— Пыратăп...»

КАÇ ТĔТТĔМĔНЧЕ

Хитреленчĕ ача, ӳт хыврĕ, илĕхе пуçларĕ. Вăранать те тутлă карăнать. Каç-каç-каç! тет амăшĕ, хырăмĕнчен шăлать, тăсăлать ача, ынакланса йăл кулать. «Кулсах мăнтăрланать пуль ку ача сан»,— теççĕ. «Ырă çынпа ырă çын пĕрлешсен — ырă ачах пулĕ»,— теççĕ.

Сайите хăй унта-кунта тухкаласа çӳренĕ чух ачине астума Каçликка старике парса хăварать.

Пурăнать ватти ял илемĕшĕн.

Сарилене вăл шăтăклă ама хупран сăпка туса çакса пачĕ:

— Сана пурнăç пилленĕ. Ӳс, ырă çын хисепне кĕр, ырă кун çути кур,— терĕ.

Сикет сăпка çӳрен ут пек.

Тĕтре витĕр тулта хĕрлĕ вăкăр пек хĕвел пăхать. Каçликка ачана учикка ярăнтарать, такмак сĕтет:

Крак-крак! тес ачине,
Куракне тытса пусăпăр,
Маçакне пар(ă)пăр пыршине,
Амăшне пар(ă)пăр пуçне,
Ачине пар(ă)пăр çунатне:
Вăштăн-вăштăн вĕçтерме,
Лăпăш-лăпăш сиктерме.

Ачи чĕме кĕчĕ: тем пакăлтатма хăтланать. Каçликка ăна çăпата калăпĕнчен пукане туса парать. Кĕпе тăхăнтартать, калпак тăхăнтартать.

— Кĕпи пĕттĕр, ачи ӳстĕр, калпакĕ çĕтĕлтĕр, пуçĕ юлтăр.

Кĕтеççĕ-кĕтеççĕ — килеймест амăшĕ.

Каçликка çаплах юрă юрлать:

Çывăр, ачам, çывăрах,
Аннӳ кайнă çырлана;
Татнă-татнă — ывăннă,
Унтах выртса çывăрнă.
Пиçнĕ яшки тутлă мар,
Çунă кĕпи шурă мар.
Аçа çаптăр, çиçĕм çиçтĕр,
Пирĕн аннене вăраттăр.
Эс çывăрса тăриччен
Çырла татса таврăнтăр.

Ачи чăпать, çывăрса каять... Каçликка хăй те сак çине выртать, çулĕсем те пусаççĕ ăна, чир-чĕрĕ те аптратать.

Кĕçех Каçликка вырăнпах выртрĕ.

Сывлăшĕ кĕскелчĕ. Кăйăн-кăйăн пăхать. Тăнĕ-пуçĕ шĕвелчĕ: илте-тăран япаланах манса каять...

Чĕрни кăвакарчĕ. Ал тымарĕ тапранчĕ: малалла та, хыçалалла та ылмаш-ылмаш кайса тапать.

Вилмеспех вилчĕ старик.

Ах-ахлатса вилнĕ çынна ахах хыптарчĕç, ялйышпа кивçен ĕçе кайрĕç...

Каçликкан юпи те çитменччĕ-ха... Пĕрре уйăхлă каç, çĕрле, Куканар вăрманĕнчен пĕр çичĕ-сакăр çынлă отряд тухрĕ те шăппăн Пакăш еннелле уттарчĕ.

...Çак вăхăтра Сибурасен килĕнче Сайите çеç çывăрса кайманччĕ. Сайите пĕчĕк пӳлĕмре уйăх çутипех ачана кăкăр ĕмĕртсе ларатчĕ.

Çĕр çурринче такам хапхана пырса шаккарĕ... Сибура тăчĕ те тулалла тухрĕ. Сайите, чунĕпе ырă марра сиссе, вăйăрхана пуçласа, ачине васкавар чĕркесе тытрĕ те кантăк умне пычĕ. Пахчара ним те курăнмарĕ, Сибуран хальхаççăн йĕнерленипех, йĕвенленипех пахчара тытакан лаша çеç тăрать.

Кил хушшинче пĕри тискеррĕн йынăшса ячĕ...

Кăрт! турĕ Сайите чĕри...—вăл ашшĕ сассине уйăрса илчĕ.

«Ача,— вĕлтлетрĕ Сайитен пуçĕнче чи малтан.— Ун вилĕмне çеç курам мар...»

Сайите ачана çирĕпрех чĕркесе тытрĕ те, чӳрече уçса, пахчаналла тухрĕ. Хуллен ут патне çывхарчĕ. Каска çине хăпарса тăрса, утне утланчĕ. Ута хистесе сасă турĕ. Учĕ çын кăкри çӳллĕш карта урлă пĕрех сикрĕ...

Хыçалта вăрçса илчĕç, кăшкăрашни илтĕнчĕ. Пăшал сасси кĕрслетрĕ те, иккĕн учĕсене çавăрса таракан юланутçă еннелле сиктерчĕç.

Сайите, ачине хытăран хытă кăкăрĕ çумне пăчăртаса, текех ута айтаса пычĕ.

Ялтан та тухрĕ Сайите, сăрт çине хăпарса тырă ăшшĕн анасем урлă та каçрĕ. Сăрт хĕрринчи хурăн катинелле çывхарчĕ. Хурăн кати умне, çырма патне çитсен, çул пĕлме ирĕксĕрех лашана чарса тăратмалла пулчĕ. Çак вăхăтра каллех пăшал сасси кĕрслетрĕ, унтан тепре...

...«Ах!»— тесе яма çеç ĕлкĕрчĕ Сайите. Алли чĕлпĕртен вĕçерĕнчĕ, икĕ аллипе ачине хытă пăчăртаса тытрĕ

те хуллен ут ҫинчен тӳнчӗ, хӑрах ури йӗнер пускӑчинчен вӗҫерӗнмерӗ. Ачине пӑчӑртаса тытнипех, ура йӗнертен ҫакланнипех ут ӑна темиҫе утӑм сӗтӗрсе кайрӗ.

Каҫхи хурӑн кати шӑплӑхне ача хӑватлӑн ҫухӑрса ярса хускатрӗ.

Юланутҫӑсем ҫитрӗҫ.

— Ку хӗр-ҫке,— терӗҫ.

— Сайите?..

— Ак епле пурнӑҫларӑн иккен, Маттян, эс Евлен сӑмахне...

— Эпӗ арҫын тарать тесе... Тиексем пулакан вӗсем патӗнче...

— Ачи те унӑн-и?

— Унӑн...

Иккӗш те пуҫӗсене усрӗҫ, калпакӗсене хыврӗҫ... Ним калама аптраса тӑчӗҫ...

...Кӗҫех пӗтӗм отряд хурӑн катине пычӗ. Васкасах хурӑн айне, тӑвайккине, шӑтӑк чаврӗҫ... Антарчӗҫ Сайитене:

— Инкӑр-ханкӑра кайтӑр. Чунӗ ҫӑтмахра ҫӳретӗр,— терӗҫ. Сӑвап тӑпри ячӗҫ. Канӑҫлӑх парни кӳчӗҫ...

Тӗтреллӗрех тӳпе витӗр тӑват еннелле пайӑркасем ярса ылтӑн хӗрес пек пӑхакан тӑп-тулли уйӑх еннелле тайӑлса сӑхсӑхрӗҫ. Пӗчӗк ачана чӗркесе урхамах ҫине лартрӗҫ те, ҫутӑличчен ку вырӑнтан аяккарах каяс тесе, учӗсене юрттарсах каялла хускалчӗҫ.

Тепӗр кунне яла патша ҫар отрячӗ килчӗ те пӑлхава хутшӑнакансене шыра пуҫларӗ. Евленпе Маттян килӗсене вут тӗртсе хӑварчӗҫ. Салтаксем кайсан, сӳнсе ҫитеймен ҫуртсенчен ҫӗнӗ вут амаланса тухрӗ, вӑйлӑ штурм вут-хӗме вӗҫтерчӗ.

Кунӗпех ҫунчӗ вара Пакӑш ялӗ — пӗр кил ҫеҫ юлчӗ, тепӗр ик лаҫ... Ҫынни урӑх яла куҫса кайрӗ, ҫурчӗсене пӑсса пуҫтарчӗҫ, тасатрӗҫ..

* * *

...Ҫултан-ҫул ял палли ҫухалса пычӗ. Ун вырӑнӗ хурама, шӑлан, шӗшкӗ йывӑҫсемпе ӳссе ларчӗ. Каҫликка варӗ терӗҫ Панклисем ку вырӑна. Ачи-пӑчисене унта кайма та «Сибура тытать» тесе хӑратрӗҫ.

Иртрӗ вунтӑхӑр-ҫирӗм ҫул...

Ялсенче сехмет юписем, хура юпасем халӗ те ларасҫӗ-ха.

Тĕнче хĕсĕке кайрĕ. Çут тĕнчерен тамăк пулса тăчĕ.

Хытăркана алăсем чĕтреççĕ, ĕçлесе минтелнĕ ӳтсем тӳсеймеççĕ.

Мĕскĕн халăхăн каллех çĕлĕкĕ — хул хушшинче, пуçĕ тайлать — тӳре умĕнче. Чăнлăхпа тĕрĕслĕх хунавĕсене каллех касаççĕ... Анчах çав халăхранах туратланать тепĕр ушкăн — пуçа пĕкмен ушкăн. Паттăр халăх тымарĕ вăй илет.

Пугачев хыпарĕ халăхра йăммарĕ, хăй çук пулсан та, хахачĕ çӳрет.

Час чарăнмасть халăх шавкăнĕ. Унта та кунта сике-сике тухать вут-ама, унта та кунта улпутсене çĕмĕреççĕ. Пугачева вĕлереймен, вăл халь те çĕмĕрсе çӳрет, теççĕ...

...Акă пĕррехинче персе çитрĕ Пакăш ялĕ вырăнне пĕр вунпилĕк-вунултă çынлă отряд.

Иртрĕ отряд вар пуçĕпе хыт ана урлă Хурăн катине... Кунта сăрт айĕнче сăрт выртать — амăш ачине кăкăр ĕмĕртсе выртать тейĕн...

Чарăнчĕ отряд пĕчĕк хурăн кати умĕнче. Лăс тураттисене çĕре тиви-тивми усса ларать кунта ката илемĕшĕн пĕр яру ӳснĕ кăптака хурăн.

Чарăнчĕ отряд çакăнта.

Учĕсем пуçĕсене ывăтса, урисене манса тăраççĕ.

Отряд пуçĕнче — шур лаша çинче хура тумтирпе, хĕçпе, пăшалпа ларать çамрăк та хитре, тĕреклĕ йĕкĕт. Кăс çĕлĕкне хуçса лартнă. Лашин çилхи те, хӳри те хура. Кайăк пек урхамах йĕкĕт айĕнче ташла тăрать, çĕре чавать, пусас çĕре пусаймасть.

Хурăн патĕнче пурте лашисем çинчен анчĕç, çĕлĕкĕсене хыврĕç. Сăхсăхрĕç.

— Чӳклев вырăнĕ пултăр кунта! — терĕ йĕкĕт.— Виçĕ çын çак сăваплă хурăнсене сыхлама юлĕ... Кам хăй ирĕкĕпе хапăллать?

— Эй, утаманăм, — терĕ пĕр старик.— Эпĕ — Маттян... Сан аçупа пĕрле çапăçнă, сан аннӳне те хам алăпа çак вырăна пытарнă... Ирĕк пар мана, Сариле, çакăнта юлма...

— Юл! — терĕ йĕкĕт.— Ял пуçласа яр çак тĕлте. Канăçлăхра ĕрчетĕр çĕнĕ йăх, кĕрешӳ йăхĕ. Çулçă пек сарăлтăр, хăмла пек хăпартăр унăн телейĕ!...

...Иртрĕ çул... Виçĕ пӳрт ларчĕ çав хурăн çывăхне. «Хурăнкасси» терĕç çав яла...

Иртрĕ тепĕр темиçе çул... Çуртсем хушăнчĕç, çынсем хушăнчĕç.

Çулсерен çу варринче, çӗн уйăха кӗрсен, çав кăптака хурăн патне чӳклемене тухаççӗ, чӳк ирттереççӗ. Кунта ял сурăмӗ пулса тăчӗ... Сайите ырри теççӗ ку тӗле, вăл — ял амăшӗ, пурнăç амăшӗ, теççӗ. Çапла каласа параççӗ.

...Телей шыранă вӗсем иккӗш. Анчах татнă вӗсен ӗмӗрне. Пӗтнӗ вӗсем хăйсен çамрăк пуçӗсемпе. Хăйсен ӗмӗрӗсене çитеймесӗрех пурнăç асапӗнче çунса кайнă, анчах кӗл пулман — сăваплă сывлăша, сăваплă çутта куçнă...

Ӳсет ял... Çав хурăн чӳкне тухсан, хӳхлӗ те кӗлтăву çеç мар пулать: çамрăксем карталанса вăйă выляççӗ, кӗвӗсăвă калаççӗ.

Çулсерен çулталăкра пӗрре вара çав сăрт çинче, хурăн патӗнче, çӗрле, тулли уйăхăн, Сайите вилнӗ каç, шур урхамахлă, çар тумлӗ çамрăк йӗкӗт курăнать, тет. Вăл Сайитепе Евлен ывăлӗ, теççӗ, хăшӗсем — Евлен мӗлки хăех теççӗ.

Çакăн пекех Сурăм вăрманӗнче те, Шӗвӗр валта, Сарри варӗнчен инçех мар, çул çинче пӗчӗкçӗ уçланкă пек уçă кукăр пур.

Кунта, çулталăк çинчен калакан тупмалли юмах пек, ларать пӗр лаштра юман. Вуник туратлă, тураттисем çинче йăвасем, йăвисенче — çăмартасем... Çак юмантан çакнă, тет, Пугачевăн пӗр утаманне...

Чӳк юманӗ ку çавăнтанпа... Йӗри-тавра темиçе хăлаç. Юман амăшӗ теççӗ ăна. Сурăм киремечӗ, теççӗ.

Яшсем салтака кайнă чух ун тавра пырса çаврăнаççӗ: тăван çӗре-шыва астума, каялла тӗрӗс-тӗкел, телейлӗ таврăнма хăват парать, тет, вăл...

Вăхăт иртет... Ырри те, хурли те майӗпе манăç айне пулать... Ку ӗçсем хăçан пулнине куракансем те вилсе пӗтнӗ.

Юманпа хурăн çеç, мӗн пулса иртнисене сума суса, манмаççӗ-ха кусене... Вӗсем çеç тӳрӗ кăмăллă, ӗçчен Пимен* пек — хăйсен вуллисем çине çулсерен пӗрер йӗр типтерлӗн картса хураççӗ...

---

* Пимен—А. С. Пушкин çырнă «Борис Годунов» трагедири монах, летописец.

ТУПМАЛЛИ

Хĕрлĕ măкăнь (повесть) . . 5
Сăвaплă вут (повесть) . . 168

Юрий Илларионович Скворцов

СВЯЩЕННЫЙ ОГОНЬ

Повести

На чувашском языке

Составитель Аркадий Илларионович Скворцов

ИБ988

Редактор Г. Г. Чаржов
Художник А. А. Макаров
Художественный редактор Е. Е. Михайлова
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректоры Р. К. Куприянова, Л. А. Иванова

Сдано в набор 27.08.81. Подписано к печати 15.02.82. НТ 10117. Формат 84×108¹/₃₂. Бумага типографская № 2. Гарнитура обыкновенная новая. Печать высокая. Физ. печ. л. 8,50. Усл. печ. л. 14,28. Усл. кр.-отт. л. 14,54. Учетно-изд. л. 15,25. Тираж 15000 экз. Заказ № 4314. Изд. № 74. Цена 1 р. 10 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

1 тен. 10 пус.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ